
63.3(2Рос-5Бат
К64
Ч-45653


Дмитрий Коннов

Юхма енчи Тӑрӑн ял тӑрӑхӗ




Национальная библиотека ЧР
4-045653

Карта Чувашской Республики



РОЗА ВЕТРА ПО НАПРАВЛЕНИЯМ
В % ПО МЕТЕОСТАНЦИИ с.БАТЫРЕВО



ЗИМНЯЯ
ЛЕТНЯЯ
ГОДОВАЯ

ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА

БАТЫРЕВСКИЙ РАЙОН

ТУРУНОВСКОЕ СЕЛЬСКОЕ ПОСЕЛЕНИЕ

ТЕРРИТОРИАЛЬНАЯ КОМПЛЕКСНАЯ СХЕМА ГРАДОСТРОИТЕЛЬНОГО ПЛАНИРОВАНИЯ РАЗВИТИЯ ТЕРРИТОРИИ

РЕЗУЛЬТАТЫ АНАЛИЗА КОМПЛЕКСНОГО РАЗВИТИЯ ТЕРРИТОРИИ И РАЗМЕЩЕНИЯ ОБЪЕКТОВ КАПИТАЛЬНОГО СТРОИТЕЛЬСТВА МЕСТНОГО ЗНАЧЕНИЯ С УЧЕТОМ РЕЗУЛЬТАТОВ ИНЖЕНЕРНЫХ ИЗЫСКАНИЙ

ДОЛГООСТРОВСКОЕ СЕЛЬСКОЕ ПОСЕЛЕНИЕ БАТЫРЕВСКОГО РАЙОНА

НОВОАЛГЕРДИНСКОЕ СЕЛЬСКОЕ ПОСЕЛЕНИЕ БАТЫРЕВСКОГО РАЙОНА

Нов. Котяково

БИКШИКСКОЕ СЕЛЬСКОЕ ПОСЕЛЕНИЕ БАТЫРЕВСКОГО РАЙОНА

Мал.Батырево

Туруново

НОВОАЛГЕРДИНСКОЕ СЕЛЬСКОЕ ПОСЕЛЕНИЕ БАТЫРЕВСКОГО РАЙОНА


БАТЫРЕВСКОЕ СЕЛЬСКОЕ ПОСЕЛЕНИЕ БАТЫРЕВСКОГО РАЙОНА

ШЫГЫРДАНСКОЕ СЕЛЬСКОЕ ПОСЕЛЕНИЕ БАТЫРЕВСКОГО РАЙОНА

1:10 000

Сплошные горизонтали проведены через 1 метр

Балтийская система высот



К К63.3(=5Бат)
Обязат. экз. К64

Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ӳнер академийĕ

Дмитрий КОННОВ

Ч/р

ЮХМА ЕНЧИ ТĂРĂН ЯЛ ТĂРĂХĔ

Истори тĕрленчĕкĕсем

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2013

63.3(2Рос.Чув-5Бат-2Туруново)
К63.3(-5Бат-2Туруново)

УДК 908
ББК 26.89(2Рос.Чув)
К 64

Кĕнекене Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе
ӳнер академийĕн президиумĕ ырланă

Рецензент:
В.П. Станьял (Никитин), Чăваш халăх ăсчахĕ, Чăваш таврапĕлӳçисен пĕрлĕхĕн хисеплĕ ертӳçи, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.

«ООО Агрофирма «Исток», А.И. Самакин предприниматель, ООО«Возрождение» предприяти пуçлăхĕ Н.А. Кошкин тата ытти ентешсем пулăшнипе çак кĕнеке кун çути курнă.

К 64 **Коннов Д.Н.**
Юхма енчи Тăрăн ял тăрăхĕ. *Истори тĕрленчĕкĕсем.*
Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2013.– 468 с.

Ёмёртен ёмёре куçса пырса ялсенче тăванпа тăван, кӳршĕпе кӳршĕ яланах пĕрле пурăннă, савăнăçне те, хуйхи-суйхине те пĕрпĕринпе пайланă. Ял çынни виç-тăватă ёмёр хушши чир-чĕре, выçлăха, вăрçăсене тата ытти инкек-синкеке пула пысăк çухатусем тӳссе ирттернĕ пулин те, малаллах ăнтăлнă, ывăл-хĕр çуратса ӳстерсе хăйĕн ăрăвне малалла тăснă. Пирĕн тăрăхра сахал мар пултаруллă çĕр ĕçченĕ, вĕрентӳпе литература, культурăпа искусство каçалăкĕнче тата ытти енĕпе вăй хурса чапа тухнă ентешсем пурăннă, вĕсем паян та пур, малашне те пулĕç.

Çак кĕнеке паян пурăнакансемшĕн кăна мар, пирĕн хыççăнхи ăрусемшĕн те хальхи вăхăтри, çаван пекех иртнĕ ёмёрсенче пурăннă тăванĕсем çинчен пĕлни усăллă пулĕччĕ, тесе шутлатăп. Таврапĕлӳçĕсемпе историксем, шкулта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем, тăван тавралăх çинчен çырнă кĕнеке вулама юратакансем хăйсене кирлине çак кĕнеке страницисенче тупса вулĕç.

К-856653
Национальная библиотека Чувашской Республики

ISBN 978-5-4246-0176-7
© Коннов Д.Н., 2013



Чăваш халăх ăсчахĕ,
РФ суд тытăмĕн хисеплĕ ĕçченĕ,
ЧР хисеплĕ тавраплăçи
Дмитрий Николаевич КОННОВ

ТӖРЁСЛЁХРЕН ХАКЛИ ҪУКАХ

Тӑван халӑхӑн авалхи çул-йӗрӗ, уйрӑм ялсемпе вырӑнсем çинчен хальхаççӑн çырнӑ кӗнекесене пайтах вуланӑ пулсан та, Дмитрий Коннов хатӗрленӗ «Юхма енчи Тӑрӑн ял тӑрӑхӗ» пухӑри тӗрленчӗксене тӗнче хутлӑхне пӗрремӗш хут курнӑ пек тимлесе тухрӑм. Патӑрьел енчи Пӑла хӗрринчи Тӑрӑнсен тымарӗ Шупашкар патӗнчи Ункӑ шывӗ çинчи Тӑхӑр Тӑрӑнтан пулнине кӑтартакан йӗркесене «вирьял – хура ура» тесе йӗкӗлтешекен тусӑмсене вулаттарас килсе кайрӗ, «Кур-ха, эсӗ ху та вӗт хамӑр ялтанах, аслаçу ятне манса кайрӑн-им?» – тейӗттӗм. Тачӑ пӗр тымарлӑ халӑха «хура ура» та «купӑста купарча» çине пайлама хӑтланса е тата эпир чӑваш мар – «чутайсем чечен», «турисем тутар», «пӑрӑнчӑкрисем пӑлхар», «анатрисем сӑвар» тесе пайлакансене те кӗнекен «Ӑçтан эпир, камсем эпир?» тӗрленчӗкне йӗрлесе илме сӗнӗттӗм. Унта чӑваш халӑхӗн ӗмӗрсенчи çул-йӗрне çутатакан ӗçсене тишкерсе тухнӑ, вара пӗтӗмлетсе шкул вӗрентекенӗ пекех çыпӑçуллӑ ӑнлантарнӑ. Ӑна вуласан пӑлхарсемпе сӑварсем камне пӗлсе лӑпланма та пулать. Тӑван ялӗсене те ӑсчах тӗплӗ сӑнарланӑ. Лайӑх та кирлӗ кӗнеке çырнӑ.

Таврапӗлӳçӗсем такамсене шанса лармаççӗ, тӗрёссине хӑйсем шыраса тупасшӑн. Çавӑнпа ял историйӗсен чылай кӗнеки чӑваш аваллӑхне шыранинчен пуçланать. Хальлӗхе чӑваш халӑхӗн вӑрӑм историне уçӑмлӑ кӑтартакан шанчӑклӑ тӗпчев çуккинчен килет çакӑ. Пулинччӗ çав кӗнеке кашни килте, кашни класра – вара таврапӗлӳçӗсене текех «Америка уçма» тивмӗччӗ! Пысӑк чӗнӗмлӗ те çӳллӗ вырӑнта ларакан нухрат сумлӑ историçӗсем В.Ф. Каховскипе В.Д. Димитриев ӑсчахсен тахçанхи чиккинчен ниепле те мала иртеймерӗç. Анчах ӑс-тӑн шыравӗ пӗр вырӑнта пӗрре те тӑмасть, çавӑнпа тӗрёссине таврапӗлӳçӗсем çине тӑрсах хӑйсем шыраççӗ. Тӗрёс тӑваççӗ.

Д.Н. Коннов çавсен ретĕнчен. Патăрьелĕнче теçетке çул ытла миравай судьяра тăрăшнă паллă çын вăл. Раççей Федерацийĕнчи суд тытăмĕн хисеплĕ ĕçченĕ. Чăваш халăх ăсхакăлĕпе ӳнер академийĕн чăн пайташĕ. Дмитрий Николаевич Коннов таврапĕлӳçĕ вăрăм пурнăçăн ĕçри çулĕсене чăтăмлăн та тӳррĕн утса тухнă. Вăл Чăваш Ишек ялĕнче 1950 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче çуралнă, шкул çулĕсенчи ачалăхне Тăрăн ялĕнче ирттернĕ. Сакăр çуллăх шкултан вĕренсе тухсан «Путь Ленина» колхозра ĕçленĕ, комсомол путевкипе кайса Çĕнĕ Шупашкарти хими комбиначĕ никĕсне хывнă. Икĕ çул Байкал леш енчи çар округĕнче хĕсметре тăнă. Çартан таврăнсан, 1972 çулта, Свердловск хулинчи Шалти ĕçсен шаралăхне ĕçе вырнаçнă та, тăрăшатăрăша вĕренсе вăтам шкул аттестатне алла илнĕ. Ӳывăра парăнман, малалла вĕреннĕ. 1980 çулта Свердловскри юридика институтĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă, вара тăван Чăваш Республикине таврăннă.

Пурнăç тути-масине курнă çамрăк юриста адвокатсен коллегин пайташне йышăнаççĕ, вара вăл Шупашкарта, унтан Патăрьелĕнче ваккатра виçĕ çул туптанать. Дмитрий Николаевич тимлĕ те тăрăшуллă, чунлă та шухăшлă, ăслă та тĕплĕ çын. Çакă унпа пĕрре тĕл пулса калаçсанах курăнать. Районта 17 çул прокурор пулăшуçи пулнă, следовательпе прокурор тивĕçĕсене тытса пынă. Çынсене саккун йĕркисене ăнлантарма ӳркенмен вăл. Пин хут та тĕл пулса калаçнă, çĕр хут та хаçатсенче çырса кăтартнă. Çак ĕç уншăн çăмăл пулман пулĕ тесе шутлатăп. Çын шăпине татса панă чухне тĕрĕс чунлă çынна пачах та ансат мар. Тĕрĕслĕх пĕрре, анчах çав тĕрĕссине нихăш саккун валли те малтанах виçсе хуман-çке! Фемида тарасине унталла та, кунталла та пăрăнтарса пăхма пулать. Айăплисем те, айăплакансем те тĕрлĕрен. Чурăс чунлисемшĕн этем шăпи чӳпĕк татки кăна. Каснă та татнă. Ĕлĕк те касса татнă, халĕ те пур ун пекки. Вуласа пăхăр-ха Д.Н. Коннов кĕнекинче колхоз тунă вăхăта, кулаксемпе «халăх тăшманĕсене»

тăпăлтарнă тĕслĕхсене. Мĕн чухлĕ тĕрĕсмарлăхпа тискерлĕх! Вĕсене Мускавран килсе туман. Мускавран хушнă, кунта вара хамăрăн ухмахсемех – çуккинчен пур туса – пĕр-пĕрин пуçĕсене тăпăлтарнă! «Васильев Алексей Васильевич, 1897 г.р., зам. председателя ЦИК ЧАССР. Подвергнуть высшей мере наказания – расстрелять с конфискацией имущества». «Илюткин Дмитрий Афанасьевич, колхозник... Илюткин Илья Афанасьевич, колхозник, обвинительные статьи не указаны. Приговор вынесен Тройкой при НКВД ЧАССР 08.09.1937, расстрелять с конфискацией лично принадлежавшего имущества. Дата смерти: 17.09.1937 г. Причина: расстрел». «Степанов Петр Степанович, 1910 г.р., д. Новое Котяково, колхозник колхоза «Красный Октябрь». Дата смерти: 09.02.1938. Причина: расстрел». «Петров Петр Петрович, 1887 г.р., учитель Туруновской неполной средней школы. Приговор: заключить в ИТР сроком на 10 лет, считая срок с 24.12.1937 г.». Çыннисен патшалăх умĕнче чĕптĕм айăпĕ пулсанччĕ хăть! Çапма пĕлмен пушă каялла тивет. Пуç касансене хăйсене каснă. Малашне те касĕç. Ытахальтен мар тек-текех Лермонтов аса килет, «Но есть и божий суд, наперсники разврата! Есть грозный суд: он ждет!»

Синкерсемпе инкексем çинчен кăна мар Д.Н. Коннов кĕнеки. Пурнăç çинчен вăл. Çĕршывпа халăхсен пурнăçĕ çинчен. Тăрăн тăрăхĕнчи çынсен шăпи, ĕçĕ-хĕлĕ, ывăлĕхĕрĕ, ĕмĕчĕсем çинчен. «Тискер уй» пулнă вăхăтранпах. XXI ĕмĕрченех, паян кунченех. Патăрьел, Кĕçĕн Патăрьел, Сăкăт, Тăрăнсем, Треньел, Аслă Арапуç тата ытти ялсем мĕнле пулса кайни çинчен çырнисене пухса тишкернĕ, тĕрлĕ çулсенчи «ревизские сказкисене» (çырав хучĕсене) шыраса тупнă, чăнлавсемпе пулăмсене, чăваш ячĕсене çыра-çыра илнĕ. Шупашкар уесĕнчи Тăрăн вулăсне кĕнĕ Хирти Тăрăн ялĕнче 1722 çулта кам-кам пурăннине кăтартакан хут хăй кăна тем чухлĕ шухăш çуратать. Адип, Алдуган, Андреш, Азен, Апрас, Апмер, Багатна, Байгир, Байдуш, Байменей, Икседер, Илендей,

Иртул, Изен, Изенгул, Итмен, Еделяк, Кодеряк, Леветер, Тарабей, Теряк, Савар, Савидер, Савдимер, Салгаман, Салтубай, Саман, Серен, Чорбай, Чондай, Ябрай, Яндубай, Янедер, Ярбулат... Ăçта халĕ çав ятсем, тутарсене парса янă-им? Тĕппипе манса кайма вĕсем, элле, çав териех начар пĕлтерĕшлĕ те тискер пулнă-ши? «Нарспи» ячĕ пекех илемлĕ переписре кăтартнă чăваш хĕрарăмĕсен авалхи ячĕсем, Сарпи, Савнешпи, Селенби, Сильби, Азенби, Анетпи, Илемпи, Тетеби, Шереби, Сеся, Стреся, Серине, Енесли...», – тесе хуравлать Дмитрий Коннов тĕпчевçĕ. Кĕнекере православи тĕнне йышăнтарни çинчен нумай çырнă. Хальхи тапхăрти чиркӳçĕсене те самаях мухтанă. Пĕрех те, историçĕн тĕрĕслĕх умĕнче шикленсе тăрас çук – чиркӳçĕсене Н.В. Никольский профессор пекех тĕрĕссине уççăнах калас пулать. Ахальлĕн вĕсем, пирĕн чăн тĕне таптаса, вăтанмасăрах çĕнĕ йăнăшсем тăва пуçларĕç.

Ял историйĕ колхозсемпе шкулсен ĕçне, Тăван çĕршыв Аслă вăрçин (ĕлĕкхилле каласан – Чалтан вăрçин) хăрушă çулĕсене лайăх кăтартмасăр пулмасть. Тĕпчевçĕ колхоз тунă вăхăтри хутсене тупнă, кĕнекене кĕртнĕ. Вĕсем ăнлантармасăрах (комментарисемсĕрех) ун чухнехи лару-тăрăва витĕр кăтартаççĕ. Ку чăнлавсене вуласан та калле-малле шутламалли тем чухлех. Питĕ йывăр асап витĕр иртнĕ хресчен пурнăçĕ. Мĕнле кăна чăтнă-ши пирĕн маçак-мамаксем (прадедсем)?!

Вĕренӳ ыйтăвне тавраплӳçĕ икĕ сыпăкра çутатнă, пĕри – «Ялсенче удельни шкулĕсемпе училищĕсем уçни», тепри – «Шкул пурнăçĕ. Пире вĕрентекенсем». Пуян та тулли ку сыпăксем. Кĕçĕн Патăрьел, Тăрăн, Треньел шкулĕсен ертӳçисемпе вĕрентекенĕсен ятне-шывне йăлтах шута илнĕ, историйĕсене çулсем тăрăх уçăмлă сăнаса тухнă. Республикăра хăйсен историне çырайман шкулсем сахал мар-ха. Патăрьелсен ырă тĕслĕхĕ çавсен куçне кăштах уçтăрччĕ тесе те шутлатăп.

1939 çултанпа (хаяр вăрçă çулĕсенче те) Патăрьел районĕ Чкаловски район ячĕпе тăнă. Район тăрăх

пăхсан «вăрçă хирĕнче выртса юлнисемпе хыпарсăр çухалнисен шучĕ киле таврăннисенчен те пысăкрах, 8377 çынран 6034-шне çĕнтерӳ кунне кĕтсе илме тӳр килмен», тенĕ кĕнекере. Çĕршывĕпех çапла. Пуç хунисене йăлтах шута илсе пĕтермен-ха. Кăтартусем çулсерен пысăкланса пыраççĕ. Ваттисемпе вĕттисен, хĕрсемпе арăмсен тылра çапăçу хирĕнчипе танах юлашки вăя хума тивнĕ. Улатăртан Етĕрне таран канавсем чавма Роза Люксембург ячĕллĕ колхоз 250 çын, 10 лаша янă. «Путь Ленина» колхозран – 225 çын, 20 лаша, «Красное Батырево» – 220 çын, 9 лаша, «Октябрь ялавĕ» – 120 çын, 7 лаша тупма пултарнă Качаллă кивĕ трактор-семпе хĕрсем ĕçленĕ. Кунта мĕн чухлĕ нуша пулнине хальхи çамрăксем ăнланма та пултараймаççĕ. Вĕсем ăна кинора та курман, кăтартсан та пăхасшăн мар. Тен, чăнах та, иртнине манса каймалла та, нуша çамкаран çапиччен аса илмелле мар... Апла-и, капла-и, кĕнекере çав вăхăтри паттăр ентешсене (фронтрисене те, тылрисене те) ятран палăртса тухнине чĕререн ырлатăп. Чăваш Ишек трактористкисемпе пĕрле Дмитрий Коннов хăйĕн амăшне – Маргарита Куракова плугаре медальпе чысланине палăртать. Эппин, вăл амăшĕн паттăрлăхĕпе мăнаçланать. Кирек камăн та несĕлсен ырă ячĕ умĕнче пуçне таймаллах. Камăн та пулин ячĕ тивĕçсĕр сиксе юлнă пулсан, ăна кĕнекене пăрăнми çырса хумалла – çапла хушать пирĕн халăхăн авалхи йăли. Унсăрăн кил-йыша, ял-йыша сăвап пулмасть.

Хаçатсенчен илнĕ хыпарсем, кĕнекесенче пичетленисем, асилӳсем, ун чухнехи чăнлавсем, сăнӳкерчĕксем ку пайра та выраăн тупнă. Иккĕшне çеç кăтартса хăварам. «Протокол заседания бюро Чкаловского райкома партии и райисполкома от 1942 года. Слушали: по колхозу «Октябрь ялавĕ» т. Эльмуков умышленно затягивает обмолот хлебов. Постановили: За саботаж в деле выполнения хлебозаготовок председателя колхоза отдать под суд. Поручить райпрокурору привлечь его к уголовной ответственности по законам военного времени». «Умыш-

ленно» тенине эпĕ ĕненместĕп. Пулнă-ши ун пек председатель Чăваш çĕршывĕнче çав асаплă вăхăтра. Тепĕр протоколĕ 1945 çулхи нарăсра çырнăскер: «Председатель колхоза «Октябрь ялавĕ» Игорев Т.В. за избиение подростков осужден к 5 годам меры социальной защиты; Юманов И.Ф. – бригадир этого колхоза за нанесение побоев колхозникам осужден к 2 годам такой же меры наказания». Вăл вăхăта манман-ха эпĕ. Пирĕн енче те çавах пулнă. Аса илсен чĕре ыратса каять. Куратăр-и – аслисене ун пек те тĕрме, кун пек те тĕрме, ачасене итлесен те, итлемесен те чĕр нуша. Кам айăплă? Вăхăт иртнĕçемĕн тĕрĕслĕх тусан айне пулса юлĕ-ши е пирĕн тăхăмсем ăна чăннипе тупса хак пама пултарĕç-ши? Иртнĕ вăхăтсене паянхи пурнăçпа танлаштарса вулакан, малалла тарăнрах тĕпчекен çын тупăнатех тесе тăратăп.

Тăрăн тăрăхĕнчи ялсен историне Дмитрий Николаевич Коннов таврапĕлӳçĕ-юрист çичĕ çул тăрăшса çырнă. Тăрăшни выраннă пулса тухрĕ. Çак паха ĕçшĕн ăна «Хисеплĕ таврапĕлӳçĕ» ят панă.

Ытти чыс-хисеппе пĕрле пулса, республикăри таврапĕлӳçĕсен ырă сунăмĕ ăна малашнехи тĕпчевре тата хастар пулма хăват парса тăтăр.

Виталий Станьял,
Чăваш таврапĕлӳçисен пĕрлĕхĕн
хисеплĕ ертӳçи,
Чăваш халăх ăсчахĕ

2012, чӳк, 24.
Шупашкар.

УМ СĂМАХ

Этемлĕхе ĕлĕк-авалах хăйĕн мăн аслашшĕ-асламăшĕ ăçтан тата мĕнле ăруран тухни интереслентернĕ. Тăван-хурăнташ пĕрпĕринпе уявсенче, ĕçкĕ-çикĕре тĕл пулсассăн кам енчен епле тăван тивнине пĕлме тăрăшнă, пĕр-пĕрне йыхрав янă, салам калама хушнă. Çут тĕнчерен уйрăлса кайсан вара мĕн авалтан пыракан чăваш йăлипе ăна тăван-пĕтенпе, кӳршĕ-аршăпа, ялйышпа пухăнса, юлашки çула ăсатнă.

Тăванлăх, пĕр-пĕрне хисеплесси, ача-пăчаран тытăнса ĕçе хăнăхтарасси, тăван çĕршыва юратасси – чăвашăн ламран лама, ашшĕ-амăшĕнчен ачи-пăчине ĕмĕртен ĕмĕре куçса пынă. Паянхи кунччен историн мĕнле кăна пăтăрмахлă та тертлĕ саманчĕсене чăтса ирттерме тивмен пуль чăваш халăхĕн. Çавăн пекех тепĕр чухне савăнăçне те курнă вăл. Тата мĕнле кăна паллă та мухтавлă ывăл-хĕр ӳстерсе çитĕнтермен-ши чăваш çĕрĕ. Ялта çуралса, çаран çинче чупса çӳресе килти йăваран анлă çул çине тухнă яшкĕрĕм паллă çынсен шутне кĕнисем те сахал мар. Вĕсем çинчен мĕн пĕлетпĕр-ха эпир, паянхи кун çĕр çинче утса çӳрекенсем. Пирĕн несĕлсем историн пĕр тапхăрĕнче хăйсем пурăннă чухнехи тĕрлĕ пулăмсене хăйсен куçĕсемпе курса çав вăхăтрипе хак панă. Паян вара, пĕр ĕмĕр маларах пулса иртнĕ самантсене курнă çынсенчен ыйтса пĕлеймĕпĕр, вĕсем тĕрлĕ вăхăтра халь пурăнакансенчен уйрăлса кайнă. Пурнăç кустăрми шав малаллах ыткăнать: паян пирĕн хушăмăрта пурăнакан ватăсем те кунран кун чакса пыраççĕ. Сăмахран, граждан вăрçин çил-тăвăлĕ пирĕн тăрăхра епле кĕрлесе иртнине, колхозсем ялсенче йĕркелесе ярса малалла аталаннине, вăрçă нушине курнă çынсем пирĕн хушăра ыран пулмĕç те, паллă пулăмсем çинчен малашне никамран та ыйтса пĕлеймĕпĕр. Халь шухăшлатăп та, хăй вăхăтĕнче, 20-30 çул каялла та пулин, асăннă историн пулăмĕсене пурăнса ирттернĕ ял çыннисенчен вĕсен аса-илĕвĕсене çырса илме мĕн кансĕрленĕ? Хамăр çамрăкрах чухне çавăн çинчен шутламастпăр пуль çав.

Тен, паян тăвас ĕçе ырана хăварни, е хамăр тавралăхпа, мăн асатте – асаттесен кун-çулĕпе интересленменни. Çак йывăр шухăшсем мана вара паян канăç памаççĕ. Кĕнеке кăларас ĕç

çăмăл пулас çуккине ăнлансах эпĕ çак йывăр та темиçе çул хушши пыракан тĕпчев ĕçне кӳлĕнме шутларăм. Çак кăсăк та интереслĕ ĕç çичĕ çул хушши пычĕ пулин те, хам çине тиенĕ йывăр лава вĕçне çитиччен йăтса çитерес терĕм. Тен, çак вăхăт историн хăш-пĕр тапхăрĕсене тишкерсе тухма, ялсенчи ятлă-сумлă ентешĕмĕрсен пурнăçĕ çинчен сăнласа пама пуçтарнă материал çителĕксĕртерех те пулчĕ пуль, хам умри хăш-пĕр ыйтусем çине историлле документсем пулманнипе хурав параймарăм. Ĕлĕк-авалхи ялсен шăпине, çав ялсенче пулса иртнĕ пулăмсем, вĕсен çыннисен кун-çулне тĕрĕс-тĕкел уçса пама çăмăл мар, малашне тата та йывăртарах пулĕ. Çак кĕнекере, тен пĕлсе çитермесĕр, йăнăш çырса кайни те пулма пултарĕ, çавăнпа вулакансенчен эпĕ ун пек тĕслĕхсем пулсассăн, каçару ыйтасшăн. Ваттисем калашле, кам ĕçлемест, çав йăнăшмасть. Йăнăшсем, е мĕнле те пулин çитменлĕхсем пулсассăн, асăрхаттарусене эпĕ хаваспах йышăнма хатĕр.

Тĕпчев ĕçĕ, паллах, шухăшласа та юптарса пĕччен тумалли ĕç мар. Çак кĕнеке валли материал пуçтарнă чухне мана уйрăмах Тăрăн ялĕнче пурăнакан Петр Васильевич Самакин пысăк пулăшу пачĕ. Вăл пухса панă паллă та ĕçпе хисепе тивĕçнĕ ял çыннисем çинчен, историлле сăнӳкерчĕксемпе ытти материалсем пулман пулсан та паллах, çак кĕнеке кун çути куратчĕ, анчах та вăл историлле пулăмсемпе чухăнрах тухнă пулĕччĕ. Çак ĕçре мана ĕçпе вăрçă ветеранĕсем: Алексеев Александр Ивановичпа ял тăрăхĕнчи чи ватă çын – 96 çулхи Гордеев Дмитрий Романович, Воробьева Анна Тимофеевна, Лазарев Николай Иванович, Треньелĕнчи учительница-пенсионерка Валентина Даниловна Алексеева, Патăрьел район администрацийĕнче эксперт-специалист пулса ĕçлекен Логунова Полина Леонидовна тата ыттисем те ялсенче пурăннă, е халь пурăнакан паллă çынсем çинчен, историлле пулăмсенчи аса илӳсемпе тата тĕрлĕрен материалпа тивĕçтерчĕç, ырă сĕнӳсем пачĕç.

Архив документчĕсемпе паллашас ĕçре мана уйрăмах Мускаври Раççей патшалăхĕн авалхи актсен архивĕ, Чăваш Республикинчи тата Тутарстан тĕп архивĕсемпе Ульяновск облаçĕнчи архив, тĕрлĕ библиотекăра ĕçлекенсем, Патăрьел районĕнчи архивра тăрăшакан Т.И. Казначейпа, хамăр республикăри паллă

тавра пĕлӳçĕсем В.Н. Николаевпа Г.Н. Ксенофонтов, И.М. Матросов журналист çак тĕпчев ĕçĕнче пысăк пулăшу пачĕç. Тавах вĕсене ырă ĕçĕсемшĕн. Шел пулин те 2008-мĕш çулта асăннă ентешсенчен хăш-пĕрисем: Матросов И.М., Алексеев А.И., Гордеев Д.Р. çут тĕнчерен уйрăлса кайрĕç, вĕсен тăпри çăмăл пултăр.

Кĕнеке содержанийĕ вулакана ĕненмелле пултăр тесе хăш-пĕр архиври документсене вырăсларан чăвашла куçармасăрах, çавăн пекех тĕрлĕ вăхăтра хаçатсенче тухнă статьясене пĕтĕмпех, е кĕскетсе кăларнă вĕсен авторĕсене кăтартса. Тепĕр чухне хаçат-журналта çапăннă статьяра, е пĕр-пĕр кĕнекере пичетленнĕ йĕркесенче йăнăшсем пулма пултарĕç, вĕсемшĕн, паллах, çак кĕнеке авторĕ явап тытмасть, çав çăлкуçсем çине çеç кăтартса хăварать. Историре пулса иртнĕ пĕр-пĕр пулăм, сăмахран: Тăрăн ялĕ-и вăл, е Сăкăт ялĕ, çав-çав çулта пуçланса кайнă, – тесе çырмашкăн тĕпчевçĕн истори документчĕ çине анчах кăтартса çирĕплетме тивет. Ун пек документсем пулмасассăн вара, ман шухăшпа, паллă историк-тĕпчевçĕсен ĕçĕсем çине таянса ял, е хула хăçан пуçланса кайнă пирки – калăпăр: 1580-мĕш е 1632-мĕш çулта – тесе çырма пулать.

Хаклă вулаканăмсем!

Сире, чăтăмлăх тупса, Тăрăн ял тăрăхĕн историйĕпе, унăн ывăл-хĕрĕн кун-çулĕпе паллашма ăнăçу сунатăп, çавăн пекех малашне те ăна пархатарлă ĕçĕрпе пуянлатасса, самана анинче кашни ял, ăру, çемье, уйрăм çын хăйĕн пурăнан пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварасса шанас килет.

Автор

ĂÇТАН ЭПИР, КАМСЕМ ЭПИР?

Пирĕн тата ют çĕршыв ăсчахĕсем тĕпчев ĕçĕсем ирттернĕ тăрăх, чăвашсем тĕрĕк халăх ушкăнне чĕлхе енчен кăна мар, йăла-йĕркипе, культура тата ытти хăйĕн пĕрпеклĕхĕпе çывăх пулнине тупса палăртнă. Авалхи тĕрĕк чĕлхипе калаçакан йăхсем, çак ушкăна авалхи чăвашсем те кĕнĕ, пирĕн эрăчченхи темиçе ĕмĕр каяллах хунну ятлă йăхсен шутĕнче хальхи Алтай çĕрĕнчен тухнине тĕрлĕ вăхăтри ăсчахсем хăйсен тĕпчев ĕçĕсенче çирĕплетеççĕ. Тепĕр çăлкуçсем тăрăх Алтай çĕрĕ çине çак шумер халăхĕ Месопотамирен хĕвел тухăçа куçса пырса чарăннă. Вĕсен хушшинче чăвашсен авалхи аслашшĕсем – огур йăхĕсем, хунсен ушкăнĕн хĕвел анăç пайĕнче пурăнакан йăхсем те пулнă. Хуннсен Державин çĕрĕсем çав тери пысăк лаптăк йышăннă: тăрăшшĕ пилĕк пин те сарлакăшĕ икĕ пин çухрăма яхăн. Унăн çĕрĕсем тухăçра Пысăк Хинган тăвĕсем патĕнчен пуçланса çурçĕр енчен Байкал, Алтай, Балхаш таврашĕнче тăсăлса выртнă, анăçра вара Арал тинĕсĕпе Памир, Гиндукуш тăвĕсем тăрăхĕнче, кăнтăр енче Куньлунь тăвĕсемпе Хуанхэ юхан шывĕ патне çитнĕ.

Пирĕн эрăри иккĕмĕш ĕмĕрте огурсем – пăлхарпа сăварсем (унгурсем е вуногурсем) хунну йăхне кĕрекен ытти халăхсемпе пĕрле тухăçран Хĕвел тухăç Европăна куçаççĕ, темиçе ĕмĕр тăршшĕ Азов тинĕсĕ енче тата çурçĕр Кавказри çеçен хирсенче пурăнса Хазар каганачĕ, Гуннсен, Савирпа Аслă Пăлхар патшалăхĕсем çине пайланнă.

V-мĕш ĕмĕрте Азов енче темиçе йăх пĕрлешсе пăлхарсен патшалăхне туса хунă. Каярах, пăлхарсемпе хазарсен хушшинче хирĕçӳ тухсан, пăлхарсен пĕр пайĕ уйрăлса Дунай юхан шыв тăрăхне куçса кайнă. Дунайçи пăлхарсем пурăна киле славяна тухнă. VII-мĕш ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче пăлхарсен тепĕр пысăк ушкăнĕ Вăтам Атăл тăрăхне çитнĕ, хальхи Самара тата Ульяновск облаçĕсенче, Тутарстанăн Кама Чулман Атăл) юхан шывĕ леш енчи кăнтăр-хĕвел анăç тата хальхи Чăваш Республикин çĕрĕсем çине вырнаçнă. Атăлçи

Пăлхар патшалăхĕ çĕнĕ выраńта аталанса кайнă май пăлхарсемпе сăварҳалăхсем финн-угор йăхĕсемпе чăмăртанса пураńма тытăнаççĕ, уйрăмах çакăн пек çыхăну çĕршывăн çурçĕр пайĕнче, Атăлăн сылтăм çыранĕнче, Сĕвепе Сăр юхан шывĕсен таврашĕнче палăрать. Пăлхарсемпе сăварсем кунта куçса киличчен тĕпленсе пураннă мари, ирçе, удмурт халăхĕсем, çавăн пекех хальхи Ульяновск облаçĕпе Чăваш Республики пĕтĕмпех, Атăлçи Пăлхар патшалăхне кĕреççĕ, Хазар каганатне, вăл пуç пулса тăнă май, куланай тӳлесе тăма тивет. Пăлхарсен ханĕ Алмуш каганат пусмăрĕнчен ирĕке тухас шутпа Багдад халифачĕпе килĕшӳ тăвать, 922-мĕш çулта пăлхар патшалăхĕ ислам тĕнне йышăнать, анчах çăлăнăç Киев Руçĕн княçĕ Святослав хазарсене 965-мĕш çулта тĕппипех аркатсан çеç çитет. Çакăн хыççăн вара Пăлхар патшалăхĕн хăй тĕллĕнех экономика тата суту-илӳ енĕпе аталанма май пулнă; вăл Киев Руçĕпе, Кавказ енчи тата Вăтам Азири çĕршывсемпе, хăш-пĕр вырăс кнеçĕсемпе политика тата экономика çыхăнăвĕсене йĕркелесе ярать. Киевпа Пăлхар çĕршывĕсен хушшинчи суту-илӳ çулĕсем хальхи Чĕмпĕр облаçĕпе Чăваш Республикин кăнтăр районĕсем урлă иртни те паллă. Археологин тĕрлĕрен çăлкуçĕсем тăрăх, çав вăхăтра Пăлхар, Пӳлер, Сăвар тата ытти хуласем ӳссе ларнă, тăшман тапăнасран тĕрлĕ выраńта кармансем (крепоççем) туса лартнă. Çак феодалла çĕршыв пуçĕнче хан тăнă, ăна удельни тата ăру кнеçĕсем пăхăнса тăнă. Ăру кнеçĕсен аллинче çурма ирĕк хресченсемпе ремесленниксем пулнă. Халăха тĕрлĕрен куланай хурса нушалантарнă. Хан влаçĕпе килĕшмен кнеçсене тискеррĕн пусарнă. Анчах та Сăвар хулинче пураńакан сувазсем е сăвазсем (хальхи чăвашсен ăру пуçараканĕсем) хăйсен кнеçĕпе хана пăхăнман, вĕсем хăйсене ыттисенчен ирĕкрех правапа усă курнă.

Тĕрлĕ археологи экспедицисен тĕпчевĕсем тăрăх Патăрьел районĕнчи Тикеш тата Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпа хулашĕсене вара X–XII ĕмĕрсенчи феодалсен карманĕ (крепоçĕ) тесе шутлаççĕ. Çав кармансем, тĕпчевçĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, ĕлĕкхи Атăл Пăлхар

çĕршывĕнчен Киева каякан суту-илӳ çулĕнчи Пăла шывне тĕрĕслесе тăнă. Асăннă Тикеш хулашĕ Пăла юхан шывĕн сылтăм çыранĕ çинче вырнаçнă. Ăна йĕритавра 4 рет валпа тата виçĕ рет канав чавса çавăрнă. Ун çумĕнче тата виçĕ ял ларнă. Çак карман ăшĕнче пурăнакансем хушшинче тимĕр шăратакансем, çав тимĕртен тĕрлĕрен ĕç тата вăрçă хатĕрĕсем, тăмран савăт-сапа тума пĕлекен ăстасем, платниксем пулнă. Археологсен тĕпчев ĕçĕсем тăрăх çакăнта пурăнакан халăх мăйракаллă шултра выльăх, лаша тата кайăк-кĕшĕк ĕрчетнĕ, çĕр ĕçĕпе ĕçлесе пурăннă. Тикеш хулашĕнчи пурнăç Пăлхар патшалăхĕнчи тĕрлĕ ушкăнсен хушшинче иртнĕ шалти вăрçăсене пула XII–XIII-мĕш ĕмĕрсенче вĕçленнĕ. Пăлхар ялĕсем пулнă вырăнсене çавăн пекех Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç тата Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк, Патреккел, Çĕнĕ Пăва ялĕсем çывăхĕнче те тупса палăртнă.

Пăлхар çĕршыв территорийĕ Вăтам Атăл тăрăхĕнче кăнтăрта – Самар шывĕн кукăрĕнчен пуçласа, çурçĕрте – Вятка шывĕ таран, тухăçра – Вăтам Камăран пуçласа анăçра – Сăр шывĕсем таранах сарăлса выртнă. Çапла вара, пăлхарсемпе сăварсен тĕп халăхĕсем хальхи Самара тата Ульяновск облаçĕсенче, Тутарстанăн Кама леш енчи кăнтăр-хĕвел анăç тата хальхи Чăваш Республикин çĕрĕсем çинче вырнаçнă.

Аслă Атăлпа Кама юхан шыв тăрăхĕсем çийĕн урăх çĕршывсемпе суту-илӳ çулĕ тума питĕ меллĕ пулнипе çак юхан шывсем Пăлхар патшалăхне кăна мар, Владимир-Суздаль княжествине те канăç паман. Çавна пула пăлхар çарĕсемпе Владимир-Суздаль дружинисен хушшинчи тытăçусем 1107–1219-мĕш çулсенче темиçе хутчен пулса иртнĕ. 1220-мĕш çулта Владимир Суздаль кнеçĕ Юрий Всеволодович пăлхар çĕршывне тапăнса кĕрсен пĕтĕм Атăл тăрăхĕнче вырнаçнă хуласемпе ялсене аркатса тухнă, нумай çынна вĕлерсе пĕтернĕ, чĕрĕ юлнисене тыткăна илнĕ. Асăннă патшалăхсен хушшинчи мирлĕ пурнăç 1229-мĕш çулта, вĕсем çине монгол-тутарсем тапăнас хăрушлăх тухса тăрсан çеç, йĕркеленсе кайнă.

ЫЛТĂН УРТА ПУСМĂРĔНЧЕ. ХУСАН ХАНСТВИ, ĂНА ВЫРĂС ПАТШАЛĂХĔПЕ ПĔРЛЕШТЕРНИ

XIII ĕмĕр пуçламăшĕнче монгол феодалĕсем хăйсен çĕршывне туса хураççĕ, çĕршыв пуçĕнче чее те хаяр çар пуçĕ Чингисхан тăрать. Монгол-тутарсем кĕске вăхăт хушшинчех Вăтам Ази, çурçĕр Иран, Кавказ, Крым çĕрĕсене пăхăнтараççĕ, çавăн хыççăн вĕсен çарĕсем Хĕвел тухăç Европăри çеçен хирсене çитсе тухаççĕ. 1223-мĕш çулта Калка юхан шывĕ патĕнче вĕсем вырăссемпе половецсен çарĕсене аркатса тăкнă. Çĕнтерӳ тунипе хавхаланса монгол-тутарсен пысăк çарĕ çав çулхинех кĕркунне Атăл юхан шывĕпе юнашар çурçĕрелле çул тытать. Пăлхарсем тăшман тапăнса килессе тĕплĕ хатĕрленнĕ: Пăлхар тата Сăвар хулисем патĕнче пăлхар çарĕсем вĕсене чее меслетпе улталаса, пайăн-пайăн пĕтерсе пынă. Монгол-тутарсен çарĕсене хупăрласа илсе пуçĕпех аркатса тăкнă. Юлнă çар ушкăнĕ каялла чакса Каспи çеçен хирĕсем патне çитнĕ, унтан хăйсен тăван çĕр шывнех кайнă.

1227 çулта, Чингисхан вилнĕ хыççăн монголсен империйĕ улуссем (княжества) çине пайланса каять. Тепĕр çулхине вара пĕтĕм монголсен куралтайĕнче (съездра) Пăлхар çĕршывĕ çине тапăнас пирки йышăннă, похода ертсе пыма Чингисхан мăнукне Батыя шаннă. Анчах та Батый хан хăй улусĕпе кăна 1229, 1232 çулсенче Атăлçи Пăлхарне çĕнтереймен. 1235 çулта монголсем хăйсен куралтайĕнче Европăна пăхăнтарас пирки план йышăннă. Хальхинче похода вĕсем питĕ лайăх хатĕрленнĕ, пĕтĕм улусри çарĕсене пухнă. Вĕсен çарĕсенче стена çĕмĕрмелли машинăсем те пулнă.

Пăлхарсем, çĕршыв умне тухса тăнă пысăк хăрушлăха ăнланса, вырăс кнеçĕсене тăшмана хирĕç тăма пĕрлешӳллĕ вăй пухма чĕннĕ. Анчах та пĕрпĕринпе килĕштереймен кнеçсем пĕр шухăш патне пырса тухайман.

Пăлхарсем монгол-тутарсенчен хӳтĕленес тесе хуласене крепоҫсемпе çирĕплетнĕ, тăшмана тивĕҫлипе кĕтсе илме хатĕрленнĕ.

1236 çулта кĕркунне Батый хан пысăк çарпа Атăлçи Пăлхар çĕршывне пырса кĕрсе малтан унăн тĕп хулине (Биляр) пĕтĕмпех çĕмĕрсе тухнă. Пăлхар, Сăвар хулисене илессипе уйрăмах хаяр çапăҫусем пулса иртнĕ, çав хуласенчи хӳтĕленекенсем хирĕҫ тăнине кура хуласене йăлтах аркатса-çунтарса, çыннисене тăшмансем вĕлерсе пĕтернĕ. Çулталăк вĕçленнĕ çĕре монгол-тутарсен çарĕсем Атăлçи Пăлхар çĕршывĕ витĕр тухса пĕтĕм хуласене-ялсене ишсе-çунтарса хăварнă. Вырăс летописĕсенчен тата Тухăç çăлкуçĕсенчен çакă паллă: 1236 çулта монгол-тутарсем Атăлçи Пăлхара аркатса питĕ нумай халăха пĕтернĕ хыççăн пăлхар-чăвашсен пĕр пайĕ Хусан çывăхне тата Атăлăн сылтăм çыранне, Аслă тата Кĕçĕн Çавал тăрăхне тарса кайнă. XIII-мĕш ĕмĕр варринче Батый хан монгол-тутарсен Ылтăн Урта ятлă феодалла патшалăхне йĕркелет. Çак патшалăха Атăлçи Пăлхар çĕрĕсĕр пуçне: Хĕвел анăҫ Çĕпĕр, çурçĕр Хорезм, çурçĕр Кавказ, Крым кĕнĕ. Ылтăн Урта пулса тăнă хыççăн анăҫ кыпчаксем (вырăс летописĕнче вĕсене половецсем тенĕ) тутарсемпе пĕрле унăн çарĕнче тĕп вырăн йышăннă. Кыпчаксемпе тутарсен чĕлхи пĕр евĕрлех пулнă. XV ĕмĕр пуçламăшĕнче Уртара анăҫ кыпчаксемпе тутарсем пĕрлĕхлĕ тутар халăхĕ пулса тăнă. Пĕтĕм Урта валли тырă парса тăракан Пăлхар çĕрĕнче монгол-тутарсен даругĕсемпе баскакĕсем хуçаланнă. Кыпчак-тутарсем те пырса кĕме пуçланă унта. Пăхăнтарнă халăхăн кашни çулах Уртана теҫеттин хырçи – ясак, çавăн пекех темĕн тĕрлĕ налук тӳлеме, тырă парса тăма, ямшăкра çӳреме, çул-йĕрпе кĕперсем, крепоҫсем тума, монгол-тутар çарне салтак ачисем пама тивнĕ. Пусмăрçăсем пăлхар-чăвашсене чура пулма тыта-тыта кайнă, ал ăстисене Ылтăн Уртан Анат Атăл хулисене ĕçлеме ăсатнă.

Национальная библиотека
Чувашской Республики
Ч-45653

XIV-мĕш ĕмĕр варринче Ылтăн Урта эмирĕсен çар ушкăнĕсем, куçса çӳрекен хурахсем Пăлхар çĕрне тăтăшах тустарнă. XIV ĕмĕр вĕçĕнче – XV ĕмĕр пуçламăшĕнче ăна йăлтах çаратса хăварнă. 1391 тата 1395 çулсенче пăлхарсен кăнтăр тата кăнтăр хĕвел тухăç енĕсене Уксах Тимур аркатса тухнă. Кунсăр пуçне, летопиçсем çирĕплетнĕ тăрăх, çав вăхăтсенчех вырăс кнеçĕсем пăлхарсен улусĕсем çине походсемпе килни, Новгород ушкуйникĕсем – боярсен Атăл çинче суту-илӳ хурахĕ тума йĕркеленĕ дружинисем киле-киле çаратнисем те пулнă. Çакă вăл пăлхар-чăвашсен историйĕнчи чи синкерлĕ, хĕн-хурлă, геноцид алхаснă тапхăр шутланнă. Çавăн пек аркатса-вĕлерсе пĕтернине пула, Пăлхар çĕрĕнче чума тата ытти чир анлă сарăлнипе пăлхар-чăвашсен пилĕк пайĕнчен тăватă пайĕ пĕтнĕ тесе шутлаççĕ историксемпе тĕпчевçĕсем. XIV-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче хальхи Чăваш çĕршывĕн кăнтăр тата кăнтăр-хĕвел тухăç пайĕсенче юлнă халăх, малашне йăлтах пĕтесрен сыхланса юлас тесе, ку вырăнтан çурçĕр енне тарса кайма, унта çĕнĕ ялсем никĕслеме тытăнать. Хырлапа Кĕтне юхан шывĕсем хушшинчи чăвашсем (çавăн пекех пирĕн мăн асаттесем те) хăйсем тымар ярса пурăннă вырăнсене хăварса, хальхи Чăваш Республикин çурçĕр енче вырнаçнă районĕсене тарса каяççĕ. Пĕтĕм Вăтам Атăл тăрăхĕ: хальхи вăхăтри Тутар Республики, Чăваш Республикин кăнтăр-хĕвел тухăç пайĕ, Ульяновск тата Самар облаçĕсем – çаратса пушанса юлнă çĕрсем («тискер уй» – «дикое поле») пулса юлаççĕ. Вырăс летопиçĕсенче Пăлхара юлашки хут 1431 çулта асăннă. Хальхи чăваш халăхĕ (маларах вĕсене сăвар тенĕ) Хусан ханлăхĕнче (1438–1551) пулса кайнă.

XIV-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче тата XV-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче Урта вак ханĕсемпе эмирĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçме тытăнаççĕ. Урта Çĕпĕр, Крым, Аçтăрхан тата ытти пĕчĕк ханствăсем çине пайланса каять. Хусан ханстви Пăлхар патшалăхĕн ишĕлчĕкĕсем вырăнĕнче 1438-мĕш çулта йĕркеленсе XVI ĕмĕр вар-

ринелле вăй илсе пырать. Хусан ханĕ аллинче Урта тутарĕсемсĕр пуçне: чăвашсем, мордвасем, марисем, удмуртсем, пушкăртсен хăш-пĕр пайĕ тăрса юлаççĕ. çĕнĕрен йĕркеленнĕ çак патшалăх çĕрĕсем хĕвел анăç енчен Сăр юхан шывĕнчен тытăнса хĕвел тухăçра Белая ятлă юхан шыв таранччен, çурçĕрте – Ветлугăран пуçласа кăнтăрта Сызранка шывĕсем таран сарăлса Ногай ханстви патнех çитнĕ. Хальхи Чăваш Республикипе Ульяновск облаçĕн çĕрĕсем пĕтĕмпех Хусан ханствине кĕнĕ.

Хусан ханĕпе унăн феодалĕсем Ылтăн Урта чухнехи пекех вак халăхсене пусмăрланă, вĕсене тĕрлĕрен налуксем хурса нушалантарнă, ирĕксĕр мăсăльман тĕнне йышăнтарнă. Малтанхи вăхăтра Хусан ханлăхĕнче тутар халăхĕ нумай пулман. Анчах та вĕсен шучĕ чăваш халăхне тутарлантарса, ислам тĕнне куçарса пынипе куллен ӳссе пынă. Чăваш чĕлхипе тутар чĕлхин пĕрпеклĕхĕ, культурăри çывăхлăхĕ тата икĕ халăхăн пурнăçри хутшăнăвĕсем чăваш халăхне тутара тухма майсем панă.

Феодалсен, мăсăльман тĕн пуçлăхĕсен, чиновниксен, çар çыннисен тĕп йышĕ, ремеслапа сут тăвакан çынсен ытларах пайĕ тутарсенчен тăнă.

Ханлăхра асли хан шутланса тăнă; унсăр пуçне ытти феодалсем те: эмирсем, биксем (кнеçсем), мăрсасем, турхансем – халăха пусмăрланă. Хан хĕсметĕнче тăрасси те питĕ тертлĕ пулнă.

Чăваш феодалĕсем вăл вăхăтра ĕмпӳсем (аслă кнеçсем), пӳсем (кнеçсем), çĕрпӳсем (çĕр çын пуçлăхĕ), вунпӳсем (вун çын пуçлăхĕ) шутланнă. Вунпӳсемпе пĕр тан е вĕсенчен аслăраххисем турхансем пулнă. Анчах та ытларах чухне тутар феодалĕсем ертсе пынă. Малалла аталанса вăй илнĕ май Хусан ханстви Крым ханлăхĕпе тата Турци патшалăхĕпе тачă çыхăнусем тытма пуçлать. Кăнтăр енче вырнаçнă асăннă патшалăх феодалĕсем хĕтĕртнипе Хусан ханстви вырăс патшалăх çĕрĕсем çине тапăнма тытăнать, хулисене тытса илет.

Вырăс çарĕсем те Хусан çине темиçе хут тапăнаççĕ. Летописсене ĕненес пулсан, 1439 çултан пуçласа 1543 çулччен чăваш çĕрĕ урлă Хусан ханĕн çарĕсем вырăс çарĕсем çине 31 хут вăрçăпа кайнă. Вырăс çарĕсем вара Хусан ханлăхне чăваш çĕрĕ урлă 33 хут тапăнса кĕнĕ. Çак икĕ çĕршыв хушшинче пĕр ĕмĕр хушши час-часах вăрçă пулса иртнĕ пулин те, Хусан ханствинче пурăнакансем ака-суха тунă, выльăх-чĕрлĕх усранă, алă ăстисем хура тата тĕслĕ тимĕртен вăрçă тата ĕç хатĕрĕсем ăсталанă. Хусан хули Хĕвел тухăç Европăри суту-илĕвĕн тĕп хули пулса тăрать: ытти çĕршывсенчи купсасем Хусан ярмăркине тĕрлĕрен ĕç хатĕрĕсем, кăнтăр енчен апат-çимĕç продукчĕсем, выльăх-чĕрлĕхпе илсе килсе суту-илӳ тунă. Тутар-монголсен вăхăтĕнчи пекех тĕрлĕ халăхран тăракан тыткăна илнĕ тарçăсем вара тупăшлă чĕрĕ тавар шутланнă, вĕсене Хусан феодалĕсем ют çĕршывсен купсисене лайăх хакпа сутса янă.

Вырăс патшалăхĕ хĕвел тухăç енчен Хусан ханстви, кăнтăр енчен Ногай ханстви пыра-пыра тапăннипе килĕшсе тăма пултарайман. Çавăнпа та чикĕсенче пысăк çар гарнизонĕсем тытма, крепоççемпе хӳтлĕх линисем тума тивнĕ. 1523 çулта Сăр юхан шывĕ вăрринче Васильград (Васильсурск) крепоçне хăпартса лартнă. Çавăн хыççăнах Шацк, Темников, Улатăр хула-крепоçĕсене тума тытăнаççĕ. Çапла вара Мускав çĕрĕсем Сăр енчи мордвасемпе чăвашсем Раççей патшалăхне кĕнĕ хыççăн Хусан ханстви чиккисем патнех пырса тухаççĕ.

Хусан ханстви вара хăй йĕркеленсенех вырăс патшалăхне хирĕçле политика тытнă.

Хусан патшалăхĕ пуçĕнче тăракан феодалсен тăшманла политики Мускав патшалăхне Атăл тăрăхĕнчи çĕрсене тытса илме хистенĕ.

Хаяр Иван патша çарĕсем 1547–1548, 1549–1550 çулсенчи хĕлле Хусан хули çине походпа тухнă. Анчах та хĕллехи шартлама сивĕ пулнипе, вырăс çарĕсен йышĕ сахалтараххипе тата хулана хӳтĕлекенсем паттăрăн çапăçнипе Атăл сылтăм енне, Сĕве вăррине

куçма тивнĕ. Истори документченĕсем тăрăх, 1551 çулхи çу (май) уйăхĕнче асăннă вырăнта, е урăхла каласан Сĕве шывĕ Атăла юхса кĕнĕ çĕрте, Хаяр Иван патша Свияжск ятлă карман ларттарнă. Çак ĕçре вырăнти халăхсем: ирçесемпе чăвашсем, çармăссемпе тутарсем те – хутшăннă. Чăвашсен çĕрĕсене вырăс патшалăхĕпе пĕрлештересси çав вăхăтран тытăнса пĕр уйăх хушшинче вĕçленнĕ.

1552 çулхи çулла Хаяр Иван патша ертсе пыракан 150 пин çынлă вырăс çарĕсем Хусан çине юлашки похода тухаççĕ. Çак походра вĕсен çулĕсем мордва тата чăвашсен кăнтăр-хĕвел тухăç çĕрĕсем урлă выртнă. Вырăнти чăвашсем, ирçесем тата тутарсем çарсене тĕрлĕ майпа пулăшма тăрăшнă: апат-çимĕç, фураж панă, кĕперсем тунă, тĕрĕс кайма çул кăтартса пынă. Çул çырăвĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, вырăс çарĕсен хăш-пĕр пайĕ Хырлапа Пăла шывĕсем тăрăхне канма чарăннă.

1552 çулхи августăн (çурла) 20-мĕшĕнче Хусана вырăс çарĕсем йĕри-тавра хупăрласа илсе, ăна юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче парăнтарнă. Çакăн хыççăнах Хаяр Иван патша, Хусанти мăсăльман правительствине салатса ярса, православи правительстви йĕркелет. Ханство пулнă çĕрсенчи пĕтĕм влаç унăн аллине куçать.

Раççей патшалăхĕшĕн çак хулана илсе Атăл тăрăхне хăй çумне пĕрлештерни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă: ĕмĕртен ĕмĕре пыракан вăрçăсем лăпланнă, кăнтăр енчи çеçен хирсенче куçса çӳрекен халăхсем Атăл тăрăхĕнчи тулăх çĕрсем çине пырса тапăнасси палăрмаллах чакнă.

Хусан ханлăхне парăнтарни вăл пирĕн хальхи Патăрьел район тăрăхĕнчи «тискер уйсене» те каллех пурнăç килессине пĕлтернĕ.

Чăваш, туçи мари, мордва халăхĕсем вырăс патши Хусан хулине вăрçăпа иличчĕнех хăйсене Раççей патшалăхне кĕртме ыйтнă. Хаяр Иван патша 1551 çулта вĕсен ыйтăвне тивĕçтернĕ. Çак халăхсене вăл ясак тӳлессинчен вăхăтлăха хăтарнă, çĕрсем уйăрса

пани çинчен «кӗреп» хучӗсем панӑ. Ку Хусан ханлӑхӗн хӑвачӗ чакса пынине, вырӑс патшалӑхӗ вӑй илсе пынине кӑтартса панӑ.

Хусантан каялла Мускава таврӑннӑ чухне Иван IV патша юпа уйӑхӗн 12-мӗшӗнче Сӗве хулине чарӑнать те сӑртри, çаранри тата Арск халӑхӗсене Хусантан ертсе пыма хушать: «...боярину и воеводе Петру Ивановичу горних людей управляти и ясаку имати... И горним людям всякую управу велел чинити в Свияжском городе, а луговым и Арским в Казани чинити», – тенӗ çул çырӑвӗнче. Çапла вара, ӗлӗкхи Хусан ханствин çӗрӗсем икӗ пая – Сӗве тата Хусан уесӗсене пайланнӑ. Пӗрлештернӗ çӗрсен пӗтӗм сӑртри – Атӑлӑн сылтӑм çыранӗнчи çӗрсем, çав шутра пирӗн таврари çӗрсем те, Сӗве уесне кӗнӗ.

Пӗрлештернӗ çӗрсемпе ертсе пыма пӗр пек йӗрке тӑвас тесе Мускавра 1570 çулта правительствӑн аслӑ учрежденине – Хусан керменне – туса хураççӗ. 1599 çулта ӑна Хусан керменӗн Приказӗ (Приказ Казанского дворца) тесе ят параççӗ.

Хусан ханлӑхне кӗнӗ чӑвашсен çӗрӗсем çинчен пӗрремӗш «Писцевая перепись» 1555–1556 çулсенче çырма пуçланӑ. Çак переписе, урӑхла ӑна ревизи тенӗ, И.Пожарский кнеçпа И.Морев ертсе пынипе пурнӑçласа пынӑ. Малтанхи тапхӑрта виçӗ уес кӑна пулнӑ. Вӗсен шутне Хусан, Сӗве тата Шупашкар уесӗсем кӗнӗ. Кӗтне юханшывӗнчен кӑнтӑралла сарӑлса выртакан çӗрсенче, çавӑн пекех пирӗн хальхи Патӑрьел районӗн таврашӗнче, вӑл вӑхӑтра «тискер уйсем» пулнӑ. Çавӑнпа та малтанхи перепиçсем тӑрӑх çак çӗрсем çинчи çавçав ялсем Сӗве уесне кӗнӗ тесе калама нимӗнле архив документчӗсемпе те çирӗпленмеççӗ. Уес ытла пысӑккине пула тата унпа ертсе пыма йывӑррине шута илсе 1555 çултах Сӗве уесне пайласа Шупашкар тата Улатӑр, каярахпа Етӗрнепе Çӗрпӳ уесӗсене йӗркеленӗ.

XVI ӗмӗрӗн варринче, Хаяр Иван Хусана çӗнсе илнӗ тапхӑрта, халӑхсем вырнаçнӑ кӑнтӑрти чикӗ Кӗтне

шывĕн çурçĕр çыранĕсем тăрăх çеç иртнĕ. Маларах та асăннăччĕ, Кĕтне юхан шывĕнчен кăнтăртарах çĕрсем: хальхи Комсомольски, Патăрьел, Елчĕк, Шăмăршă районĕсен, Тутар Республикин кăнтăр-хĕвел анăç пайĕ, Ульяновск, Самара, Пенза, Саратов облаçĕсен çĕрĕсем – пурте халăх пурăнман «тискер уй» пулнă. Ку вырăнсенче куçса çӳрекен йăхсен уртисем çеç хуçаланнă, вĕсем час-часах вырăс патшалăхĕн çĕрĕсем çине кĕрекĕре çаратнă. Çак çаратусенчен хăйĕн çĕрĕсене сыхлас тесе вырăс патшалăхĕ çĕршывăн кăнтăр чиккисем тăрăх çирĕплетнĕ йĕрсем – «засечные черты» – тума тытăнать. Чи малтанхи йĕрне XVI ĕмĕр варринче Кĕтне шывĕ тăрăх ăсталанă. Кунта засека сыххинче тăма Ока шывĕ çыранĕнчен куçса Мещера çĕрĕ çинче вырнаçнă Касим ханствинчи мишерсене илсе килнĕ. 1578 çулта Темников-Улатăр-Тетĕç çирĕплетнĕ чикĕ йĕрне çав çулхинех туса пĕтернĕ, кунта та чикĕсене сыхлама мишерсене йышлă илсе килнĕ. Улатăрпа Тетĕç хушшинчи лини Тетĕç, Хырла тата Улатăр засечнăй йĕрĕсенчен тăнă.

ЮХМА ЕНЧИ ТĂРĂН ЯЛ ТĂРĂХĔНЧИ ЯЛСЕМ ПУÇЛАНСА КАЙНИ

Историксемпе таврапĕлӳçĕсем çирĕплетнĕ тăрăх паянхи Патăрьел районĕнчи çĕрсем çине пирĕн мăн асаттесем XVI-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче Чăваш Республикин çурçĕр пайĕнче вырнаçнă ялсенчен куçма тытăннă, вĕсенчен ытларах пайĕ Пăла юхан шывĕ хĕррине вырнаçса тĕпленнĕ. Пăла ун чухне пулăпа тата шыври тискер кайăксемпе пуян пулнă, çывăхри вăрманта кайăк-кĕшĕк йышлă ĕрченĕ, тыр-пул туса илме ура айĕнче паха хура тăпраллă çĕр илĕртнĕ. Çакă ĕнтĕ пирĕн мăн асаттесене ку тăрăхалла килме туртса тăнă. Тен, вĕсем хăйсен мăн аслашшĕсем монгол-тутарсем тапăнса килсен çурçĕр енче вырнаçнă вăрмансене тарса пытаннă хыççăн тепĕр виçĕ-тăватă ĕмĕр иртсен каялла, тĕп вырăна, таврăнма шутланă. Маларах асăнса хăварнăччĕ ĕнтĕ: Пăла юхан шывĕ хĕрринче вырнаçнă Тикеш хулашĕ таврашĕнче археологсем виçĕ ял вырăнне тупса палăртнă. Анчах та вĕсенчен пĕри хальхи Тăрăн ялĕ вырăнĕ пулнă тесе никам та çирĕплетсе калама пултараймасть. Апла пулсан ăçтан килсе вырнаçнă-ха Юхма енчи Тăрăн ялне пуçласа яракансем, камсем пулнă-ши вĕсем? Ку ыйту паянхи кун çак ялта пурăнакансене интереслентермелле пек туйăнать, вĕсенчен чылайăшĕн мăн аслашшĕсем малтанхи ял çыннисем шутланнă-çке!

Патăрьел, Кĕçĕн Патăрьел тата Тăрăнпа Треньел ялĕсене пуçарса яракансем пирки Чăваш Республикин ăслăлăхпа ӳнер наци академийĕн академикĕ, истори наукисен докторĕ В.Д. Димитриев хăйĕн «Чувашские исторические предания» кĕнекинче çавăн пек çырать: *«Заселение территории Батыревского района началось в последней четверти XVI века. Одним из старинных селений на Буле является село Батырево (Патăрьел). По преданию, его основали переселенцы из дер. Богатырево (Патăрьел), ныне село в Цивильском районе. Позднее из Батырева выселилась дер. Малое Батырево. Дер. Старое Котяково, по преданию, ос-*

новали 350–400 лет назад из дер. Котяки (ныне дер. Топнеры Цивильского района). Позднее из Старого Котякова выселились в лес несколько семей и образовали дер. Новое Котяково. Возглавлял переселенцев крестьянин Трень, от имени которого деревня получила чувашское название **Тӗрӗньял**. *С территории Чебоксарского района, из дер. Туруново (ныне село) были основатели дер. Туруново (ныне село) на Буле. Здесь в то время были дремучие леса. Вначале на поляне жили в землянках шесть семей. Однако они покинули это место. Вскоре сюда пришли четыре семьи чебоксарских туруновцев. Предания повествуют, что деревни Большие Арабузи (ныне село Первомайское) и Малые Арабузи были основаны одновременно переселенцами из дер. Арабоси (ныне Урмарского района). К тому времени Туруново уже существовало. Туруновские женщины во время стирки белья увидели, что по Буле сверху плывут щепки. Сообщили мужчинам и они из любопытства пошли вверх вдоль реки и только на другой день дошли до Малых Арабузей. Однако вначале возникли, наверное, Большие Арабузи. Жители этого села вплоть до 1916 года ездили в гости в дер. Арабоси к своим родственникам, и оттуда приезжали в Большие Арабузи. По месяцу жили в гостях»* (стр.187–189).

Çак халăх хушшинче сарăлнă халап ăруран ăрăва куçса пынă, анчах та ăна пĕтĕмпех тĕрĕс тесе мĕнле те пулин фактсемпе çирĕплетсе калама çук. Архивсенчи истори документчĕсем тăрăх çакна курма пулать: XVII-мĕш ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчех пирĕн мăн асаттесем çемйи-çемйипе Шупашкар районĕнчи Тăрăн ялĕнчен тата унпа юнашар ялсенчен, çĕр çухрăм хыçа хăварса, темиçе эрне хушши утпа е çуран çурçĕртен кăнтăралла куçса пырса, Пăла хĕррине çитсе тĕпленнĕ. Амăшĕн ятне хĕрне панă пекех, çĕнĕ выränти ял ятне те Тăрăн ят панă. Çак ятăн пĕлтерĕшĕ, паллах вулакана кăсăклантарма пултарать. Мĕне пĕлтерет-ха вăл? Шупашкар районĕнчи Анаткас Тăрăн ялĕнче çуралса ӳснĕ Чăваш Республикинчи паллă таврапĕлӳçĕ В.Н. Николаев хăйĕн «Тури чăвашсем» кĕнекинче ун пирки хăйĕн шухăшне çавăн пек палăртать (стр. 33–37):

«...тăрăн сăмахăн пĕлтерĕшне чăваш чĕлхинче мар, венгрсен чĕлхинче шырама тивет. Венгрсен чĕлхинче торонь сăмах башня (çӳллĕ çурт) тенине пĕлтерет. Эппин, ахальтен каламан иккен кунти (тури – Д.К.) чăвашсем çак ялăн ятне Мăн Çорт тесе – кунта тахçан-авал питĕ чаплă пысăк кил-çурт пулнă. Эппин, хальхи Тăрăн ялĕ вырăнĕнче çак таврари аслă пуçлăхăн пысăк кил-çурчĕ ларнă. Таврари нумай-нумай ялти çынсем кулленхи ыйтусемпе çак пуçлăх патне, Мăн Çурта çӳренĕ. Вырăс çул çыравĕнче (летопись) ку тăрăхра хуçаланакан улпутсене турунсем тенĕ. Çапла ĕнтĕ, Тăрăн ялĕ 925–1000 çулсенче пуçланнă. 1236 çулта Атăлçи Пăлхар патшалăхне хĕвел тухăçĕнчен тапăнса килнĕ монгол-тутарсем пăхăнтарнă та хăйсен Ылтăн Урта ханлăхне кĕртнĕ. Пурăна киле Тăрăн таврашĕнчи ялсене Тăрăн улусне пĕрлештернĕ, ку ялсенчи йĕркене тытса тăма хан Тăрăна хăйĕн çыннине лартнă. Питĕ пысăк та сапаланчăк пулнă Тăрăн улусĕ. Пĕр-пĕринчен инçетри ытти вулăссенчи ялсем урлă выртакан ял ушкăнĕсенчен тăнă вăл. Аякра вырнаçнă ялсене тахçан пĕр-пĕр ялтан уйрăлса тухнă çынсем пуçарнă та, çавăн пирки вĕсене шута илнĕ чухне тĕп ялпа пĕрле çырнă.

1552 çулта Хаяр Иван патша Хусан ханлăхне Раççейпе пĕрлештерсен те Тăрăн вулăсĕ хăйĕн ячĕпех юлать. Малтан вăл Сĕве, кайрантарах Шупашкар уесне кĕнĕ. 1781 çулта ăна Етĕрне уесне куçараççĕ. 1797 çулта Тăрăн вулăсне пачах пĕтереççĕ.

Хальхи вăхăтра Чăваш Енте тата виççĕ пур çакăн пек ятлă ял: пĕри Патăрьел районĕнче Пăла шывĕ хĕрринче вырнаçнă, тепри Канаш районĕнче Кĕçĕн Çавал хĕрринче, виççĕмĕшĕ Шăмăршă районĕнче, вăл Вăрманти Тăрăн (вырăсла Новое Буяново) ятлă. Халĕ çакна асăрхаттарни вырăнлă, маларах асăннă икĕ ялне Тăрăн (Мăн Çорт) çывăхĕнчи ялсен çыннисем пуçарса янă. Вăрманти Тăрăн ялне вара кайрантарах Пăла хĕрринчи Тăрăн ялĕнчи чăвашсем никĕслеме пултарнă. Çапла ĕнтĕ, чăвашсем хăйсем ăçтан куçса килнине асăнмалăх çĕнĕрен никĕсленĕ ялсене Тăрăн ят панă».

Вулакана кунта çакна асăрхаттарса хăварас килет. Шăмăршă районĕнче вырнаçнă ял Вăрманти Тăрăн мар, Çĕн Тăрăн ятлă. (Д.К.)

Пăла шывĕ хĕрринчи Тăрăн ялне малтан Хирти Тăрăн тесе ятарлă хут çинче çырнă, çавăн пекех каланă пуль. Вăл Шупашкар уесĕнчи Тăрăн вулăсне кĕнĕ. Пĕрремĕш Тăрăн ял ушкăнĕнчи хальхи Анаткас, Енĕшкасси, Кучак çыннисем Алексей Михайлович Романов (1629–1675 çулсенче) патшара ларнă вăхăтра пĕр 1640–50-мĕш çулсенче никĕсленĕ пулмалла. Çакăн пек шухăш патне пырса тухать хисеплĕ таврапĕлӳçĕ В.Н. Николаев. Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕ, çак кĕнеке авторĕ шучĕпе, асăннă вăхăтринчен маларах та пуçланма пултарнă.

Архив материалĕсем тăрăх тишкĕрсе тухсан, çакна асăрхама пулать.

1722 тата 1744 çулсенче Раççей халăхне шута илсе çырса тухнă чухне (ревизские сказки) Тăрăн вулăсне 1-мĕшпе 2-мĕш Тăрăн, тата ытти ял ушкăнĕсемпе Хирти Тăрăн (хальхи Патăрьел районĕнчи) ялĕ те кĕнĕ. Асăннă çулсенче Шупашкар уесĕнчи Тăрăн вулăсне кĕнĕ Хирти Тăрăн ялĕнче пурăннă çынсен шутне илнĕ. Вăл вăхăтра православи тĕнне кĕрейменнипе хушаматсемпе ятсем хальхи пек пулман. Асăннă документсенче çавăн пек çырса хунă:

Материалы ревизских сказок (перепись населения)
в 1722 и 1744 г.г.
(По документам ЦГА ЧР, фонд №2, опись №1, дело №6;
ф.146, оп.5, д.1)
Деревня Степное Туруново Туруновской волости
Чебоксарского уезда

№№	*Жители в 1722 году*	*Возраст*
1	Андрешка Янедерин	53
2	у него сын Кеми	20
3	Салдий Салдинов	39
4	Селеней Мурзалин	80
5	Камынка Тоткешев	38
6	у него брат родной Илбарис	28

7	Васет	13
8	Пронка Тойдеев	43
9	у него брат Микита	28
10	Байменей Байтушев	38
11	Байтуш Идеряков	64
12	у него сын Кармыш	20
13	Апрас Чондаев	33
14	Поминка Чондаев	28
15	Иртула Адипов	68
16	у него сын Ябрай	9
17	Осип Изеников	28
18	у него брат родной Хорспулат	20
19	Салтубай Тобоев	73
20	Чорбай Чебокаев	88
21	Иван Ишменеев	63
22	Охин Кодеряков	4
23	Михапар Кодеряков	5
24	Мокей Андрешкин	8
25	Трошка Торабаев	45
26	Салгаман Етмеев	35
27	Катей Ярбулатов	29
28	Байдеряк Тойдеев	55
29	у него сын Теве	15
30	Алдуган Яндубаев	50
31	Леветер Исменеев	20
32	Изенгуда Килгоев	35
33	Охондей Осипов	10
34	Похтан Байменеев	11
35	Икседер Трошкин	12
36	Илендей Трошкин	9
37	Савар Теряков	7
38	Багатна Теряков	6
39	Итмен Азенмурзин	5
40	Еделяк Азенмурзин	4
41	Орка Пронкин	6

Умершие:

1	Кустонка Апмерев
2	Торынка Колбеев
3	Томкоев Алконеев

4	Серен Савидеров	
5	Азенмурза Байгиреев	
6	у него брат родной Килдеряк	
	Из бегов явлишиеся:	
1	Захар Васкин	50
2	у него сын Савдимер	10

Итого в деревне Степное Туруново 49 душ

Хирти Тăрăн ялĕнче çак документ тăрăх 1722 çулта 28 хуçалăх пулнă, унта 49 арçын (арçын ачасене те кĕртнĕ), 9 хуçалăхра çемье пуçĕсем хĕрарăмсем шутланса тăнă. Хĕрарăмсемпе хĕр ачасене халăх йышне шута илнĕ чухне 1722 тата 1744 çулхисен переписĕсем çине кĕртмен. Çак асăннă 9 хуçалăхри арçынсем тĕрлĕрен сăлтава пула пурăннă килтен аякра пулма пултарнă. Тепĕр сăлтавне тен, 1700–1721 çулсенче арçынсене Çурçĕр вăрçине илсе кайса унтан тавăнайманнипе çыхăнтарма пулать.

Малтанхи переписри çынсен çулĕсене пăхсан Хирти Тăрăн ялне пуçарса яракансен, е малтан куçса килнисен йышне ултă çынна кĕртме пулать. Вĕсем çаксем, пуринчен те ватăраххисем: Чорбай Чебокаев – 88 çулта, Селеней Мурзалин – 80-ра, Салтубай Тобоев – 73-ре, Иртула Адипов – 68-та, Иван Ишменеев – 63-ре, Андрешка Янедерин – 53-ре пулнă. Паллах, çак яла куçса килнисен йышне, хăш-пĕр улшăнусемпе 1722 çулхи переписри список тăрăх (вĕсем унта вилнисем улттăн) кам та пулин кĕме пултарать.

Тăрăн ялĕнче пурăннă Тит Павлович Коннова (1915–2003 ç.ç.) ача чухне ашшĕ каласа хăварнă тăрăх, çак яла хальхи Шупашкар районĕнчи Тăрăн ялĕнчен çичĕ çемье куçса килнĕ. Вĕсенчен пĕри унăн мăн аслашшĕн аслашшĕ Катăркас Кевĕрли хăйĕн çемйипе пулнă. Паянхи кун Катăркас Кевĕрлин ăрăвне малалла тăсаканĕсем

Медведев, Коннов, Крылов, Петров, Илеменов, Орлов хушаматсемпе çӳреççĕ. Çак ăру пуçĕн мăнукĕсемпе вĕсен кĕçĕн мăнукĕсем мĕн ĕлĕк-авалтан пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ, уявсенче тĕл пулсан пĕр-пĕрне ырă сунса та хисеплесе, хăйсене кам ăрăвĕнчен иккенне палăртса вĕсен малтанхи сăмахĕ «Катăркас» пулнă. Çак ырă йăла-йĕрке паянхи кун та пĕтмен-ха.

Маларах асăнса хăварнăччĕ ĕнтĕ, 1722 çулта Хирти Тăрăн ялĕнче пурăнакан çынсене шута илнĕ чухне хĕрарăмсемпе хĕр ачасене шута илмен. Вĕсене те кĕртес пулсан, çак ялта мĕн пурĕ 100 çынтан кая мар пурăннă. Çынсен йышĕ хăвăрт ӳссе пынин сăлтавне çакăнпа ăнлантарса пама пулать.

Хальхи Шупашкар районĕнче вырнаçнă Анаткас Тăрăн, Енĕшкасси, Кучак тата вĕсен çывăхĕнчи ялсем çырма-çатраллă та хĕсĕк, тыр-пул начар пулакан çĕрлĕ вырăнсенче пулнипе, çав ялсен çыннисем пурăнма лайăх вырăн шыраса кăнтăр еннелле 100 çухрăм хыçа хăварса Пăла юхан шывĕ хĕррине çитсе чарăннă. Ун чухне, паллах, çуртсене çумма-çумлăн, хире-хирĕç лартса урамсемпе кассем туман. Çуртсемпе хуралтăсене хăш-пĕр çемье хăйне мĕнле кăмăла кайнă, çавăн пек çапса-хăпартса лартнă, теприсем çĕре чавса çĕрпӳрт тунă. Çĕнĕ вырăнта хура тăпраллă çĕр çинче лайăх тырпул туса илме шанчăк пулнă, çывăхри вăрмантан вутăшанкине те, çурт-йĕр валли кирлĕ материал хатĕрлеме те май пулнă. Ун чухне тулли юхакан Пăлара тĕрлĕрен пулă, шыври чĕрчун ĕрченĕ, вăрман кайăк-кĕшĕкрен, кăмпа-çырларан пуян пулнă. Çак çурçĕр енчи асăннă ялсенчи тăванĕсемпе Хирти Тăрăн ял çыннисем çыхăнăва татман, пĕр-пĕрин патне аякра пулин те хăнана кайса çӳренĕ. Паллах, çĕнĕ вырăн Шупашкар уесĕнчи Тăрăн вулăсне кĕрекен ял çыннисене кăна илĕртмен хăйĕн илемĕпе. Кунта ытти уесри (Хусан, Чĕмпĕр) ялсенчен те куçса килме тытăннă. Хирти Тăрăн ялĕнче пурăнакан çынсен йышĕ ӳссех пынă. Çакна 1744 çулхи перепиç (ревизские сказки) тăрăх та асăрхама пулать.

Туруновской волости государственные ясашные
новокрещены иноверцы в деревне Степное Туруново
ис чуваш крещеные и некрещеные

№№	*Жители в 1744 год*	*Возраст*
1	В прошлой переписи Толтит Байменев, а во крещении Иван Григорьев	33
2	Байменей Байтушев	60
3	у него крещеный сын Алексей Гаврилов	19
	Да в оной деревне Степное Туруново чеваш как отцы, так и дети их некрещеные	
4	написано в прежней переписи Кеми Андрешкин	42
5	сын Митропан	8
6	написано в прежней переписи Илбарис Тоткешев	50
	дети после переписи родились:	
7	Макарин	23
8	Егор	18
9	Скорын	10
10	Микурин	0,5
	утаенные от нынешней переписи	
11	Самарин	10
12	Амли	3
13	у Макарина сын Самарин	2 недели
14	Микита Тойдеев	50
15	Кармыш Байтушев	42
16	Илотка Санбаев	50
	у него дети:	
17	Симушка	19
18	Самушка	8
19	Ябрай Иртулаев	31
20	Хорспулат Изеников	42
21	сын Ялук	14
22	Охин Кодеряков	26
23	Мокей Андрешкин	30
24	Трошка Торабаев	67

25	сын Илинка	20
26	Салгаман Етмеев	57
	дети:	
27	Баксим	15
28	Вечон	4 недели
29	Катей Ярбулатов	51
30	Байдеряк Тойдеев	77
31	сын Тевен	37
32	Алдуган Яндубаев	72
33	Икседер Трошкин	34
34	Илендей Трошкин	31
35	Еделяк Азенмурзин	26
36	Килдеряк Байгиреев	72
	его дети:	
37	Андеряк	20
38	Илмет	10
39	Изван	8
40	Изанка	5
41	Илсубай	1,5
42	у Андеряка сын Айдук	8 недель
43	Савдимер Захаров	32
	дети:	
44	Еванча	15
45	Саман	2
46	Сали	0,5
	умершего написанного в прежней переписи	
	Ивана Исмєнеева дети:	
47	Яков	10
48	Ярус	0,5
	умершего Салдия Салдинова сын:	
49	Молостов	18
	ум. Селенея Мурзалина сын:	
50	Ромашка	19
	ум. Захар Васкина дети:	
51	Ваней	14
52	Юванис	1
	ум. Осип Изеникова сын	
53	Янат	1

собой перешед поселялись тоже Туруновской волости из деревни Перво Туруново (д.Кочаки) наличного написанного в прежней пере-

писи в той деревне Калина Мурзабаева (1687–1744) дети после переписи рожденные:

54	Канушка	20
55	Юванук	18
56	Васинка	7
57	Калмет	2
58	Вазин	0,5

Переселенец из Казанского уезда Казанской дороги Мустаево сотни из деревни Хардаковы умершего написанного в прежней переписи в той деревне Тоймурзы Тойдарева после переписи рожденный сын

59	Ямук	20

переселенец из Симбиркого уезда Турущуткиной сотни Пометьева из деревни Татмышево

60	Шохи Юванкин	30
	дети:	
61	Тохтар	8
62	Тохмат	6
63	Ахмат	4,5
64	Хозандай Изеняков	50
65	сын Ярхуна	3
66	Васик Костинин	45
67	Иванушка Сахаев	40
	его братья	
68	Пуляко	38
69	Самоко	35
70	Изако Мидяков	60
71	сын Езен	19
72	Мастек Твенеев	40
73	сын Саврилей	18
74	Стенка Тодеев	60
75	Васет Костенкин	40
76	сын Ишутка	4
77	Итман Иттин	29
78	Борис Изеняков	55
	дети:	
79	Григорий	17
80	Яков	8
81	Мастен	3

Всего в оной деревне Степное Туруново 81 душа,
из них крещеных 2 души

Çак 1744-мĕш çулхи перепиç тăрăх Хирти Тăрăн ялĕнче хĕрарăмсемпе хĕр ачисене шутласан çав вăхăта мĕн пурĕ 200 яхăн çын пурăннă тесе калама пулать. Вĕсенчен хăшне-пĕрне вырăс ячĕпе çырса православи тĕнне çак яла куçса киличченех кĕртме пултарнă, мĕншĕн тесен Тăрăн ялĕнче ун чухне чиркӳ пулман-ха.

Асăннă перепиçсем пирки чарăнса тăрас пулсан кунта çавна асăрхама пулать: малтанхи перепиçре Хирти Тăрăн ял çыннисем хăш сословине кĕни пирки кăтартман, çапах та вĕсем Атăл, Урал тата ытти тăрăхсенчи XV–XVII-мĕш ĕмĕрсенчи вырăс мар халăхсем пекех натурăпа налук (ясак) тӳлесе тăнă. Иккĕмĕш перепиçре вара ку ял çыннисене «государственные ясашные» тесе çырнă. I-мĕш Петĕр патшана лариччен Раççейре хресченсем çичĕ сослови çине пайланнă: дворцовăй хресченсем, ясачнăй хресченсем, однодворцы, половниксем, служивые люди по прибору, черносошнăй хресченсем – ку сословисенчи хресченсем хăйсене ирĕклĕх панă прависемпе усă курма пултарнă. 7-мĕш сословине кĕнĕ çĕр улпучĕсен хресченĕсем вара чи нушаллă та правасăр хресченсем шутланнă. Çак сословисене кĕнĕ хресченсем мĕн ĕçлесе пурăнни çинче чарăнса тăмăпăр.

I-мĕш Петĕр патша 1718–1724 çулсенчи указĕсемпе хресченсене çакăн пек пайланине пĕтерсе çĕршывра виçĕ тĕрлĕ сословие кăна хăварать. Дворцовăй хресченĕсемпе çĕр улпучĕсен хресченĕсен сословисем çавăн пекех юлнă пулсан, ясачнăй хресченсене, служилăй çынсене, половниксене, однодворецсене, черносошнăй хресченсене пĕрлештерсе патшалăх хресченĕсем туса хунă. Патшалăх хресченĕсем патшалăх çĕрĕ çинче ĕçлесе пурăннă, патшалăх тивĕçĕсене пурнăçланă. Эппин, Пăла юхан шыв хĕррине куçса килнĕ Хирти Тăрăнта тата ытти таврари ялсенче пурăннă пирĕн мăн асаттесем чи ирĕклĕ хресченсем шутланнă. Ун чухне арçынсем 8 теçеттин таран ят çĕрĕпе усă курма пултарнă. Пĕр теçеттин 1,45 гектарпа танлашать.

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш перепиҫсенчен тытăнса кашни ялта арҫынсен шутне пăхса хырҫă-куланай тӳлеттернĕ, перепиҫрен пăрăнса юлнисене те тупса шута илнĕ. Хирти Тăрăн ялĕнчи иккĕмĕш перепиҫ (ревизские сказки) тăрăх, çын шутне илессинчен пăрăннă 15 арҫынна тупса палăртнă. Виҫҫĕмĕш перепиҫрен вара хĕрарăмсене те шута илме тытăннă.

Чăваш Республикинчи тĕп архиври фондсен хушшинчи кăтарткăчĕ тăрăх, кашни ялта пурăнакан çынсене шута илсе çырса пырасси (вырăсла ăна ревизские сказки тенĕ) çак çулсенче пулса иртнĕ: 1-мĕш ревизи (1718–1727 çç.), II-мĕш ревизи (1743–1756), III-мĕш (1761–1767), IV-мĕш (1781–1787), V-мĕш ревизи 1794 çулта, VI-мĕш ревизи 1811 çулта, VII-мĕш – 1815 ç., VIII-мĕш – 1833 ç., IX-мĕш –1850 ç., X-мĕш ревизи 1856 çулта.

Тăрăнпа Треньел ялĕсем тăрăх XVIII-мĕш ĕмĕрте ирттернĕ I-мĕш–III-мĕш «ревизски сказкисене» Хусанти наци тата Чĕмпĕр облаҫĕнчи архивсенче тупма май килмерĕ. Унти архивсенче ĕҫлекенсем каланă тăрăх, XVIII–XIX ĕмĕрсенче, уйрăмах 1864 çулта, Чĕмпĕр хулинче темиҫе хутчен пулнă пысăк пушарсенче патшалăх архивĕсенче упранакан истори документчĕсем те çунса кайма пултарнă. Çапах та Чăваш истори патшалăх архивĕпе Мускавра вырнаҫнă Раҫҫейĕн авалхи актсем упранакан архивĕнче малтанхи «ревизски сказкисем» пур-ха. Паллах, çав XVIII-мĕш ĕмĕр пуҫламăшĕнче çырса пынă кĕнекесенчи сăмах çаврăнăшĕсене ăнланма, унти сас паллисене вулама питĕ йывăр: виҫĕ ĕмĕр тăрăшшĕпе вырăс чĕлхи те палăрмаллах улшăннă. Асăннă архиври 1717-мĕш çулта Шупашкар уесне кĕнĕ Тăрăн вулăсĕнчи ялсенче (вĕсен шутĕнче Хирти Тăрăн ялĕ те) пурăнакан ясачнăй хресченсене шута илнĕ чухне перепиҫ кĕнеки çине арҫынсен ячĕсене кăна мар, хĕрарăмсемпе хĕр ачасен ячĕсене те çырнă. Чăваш поэзийĕн классикĕ К.В. Иванов хăйĕн çулăмлă «Нарспи» поэминчи хĕрарăм ятне XVII–XVIII-мĕш ĕмĕрсенче чăваш ялĕсенче анлă сарăлнă çавăн евĕр ятсенчен илни куç кĕретех паллă.

Нарспи пекех илемлĕ ят переписре кăтартнă чăваш хĕрарăмĕн авалхи ячĕсем: Сарпи, Савнешпи, Селенби, Сильби, Азенби, Анетпи, Енешпи, Илемпи, Тетеби, Шереби, Сеся, Стреся, Серине, Енесли...

Пирĕн тăрăхри ялсем икĕ ĕмĕр ытла Чĕмпĕр кĕпĕрнинче шутланса тăнă май Чĕмпĕр хулипе çак асăннă кĕпĕрне пуçланса кайни, малалла аталанса пыни, вĕсен малашнехи кун-çулĕ те хăйне кура интереслĕ.

А.А. Зерцалов «Материалы по истории Симбирского края XVI–XVIII в.в., стр.2» историллĕ очеркра Чĕмпĕр хули пирки çаван пек çырнă: *«1647 год. Стольник и воевода Богдан Матвеевич Хитрово строит между реками Барыша и Суры казанскую засеку на 53 верстах. Строительство окончено 1657 г.».*

Ульяновск облаçĕнчи патшалăх архивĕнчи «Справочник административно-территориального деления Симбирской губернии – Ульяновской области за 1648–1985 годов» ятлă документпа паллашма пулать. Унта çырнă тăрăх, çавна пĕлме пулать.

Чĕмпĕрпе ун çумне çирĕплетнĕ çĕрсемпе ялсем 1570-мĕш çултанпа шутланса тăракан Хусан Керменĕн Приказĕ тăрăх административлă йĕркепе Хусана пăхăнса тăнă.

1708-мĕш çулхи кĕпĕрне реформипе килĕшсе уессене пĕрлештерсе Раççее 8 кĕпĕрне çине пайланă, Чĕмпĕр уесне Хусан кĕпĕрнине кĕртнĕ, ку вăл I-мĕш Петĕр патша вăхăтĕнче пулса иртет.

22.11.1717 çулта вăл кăларнă Указ тăрăх Чĕмпĕр хули уесĕпе пĕрлех Аçтăрхан кĕпĕрнине куçать.

1728-мĕш çулта Чĕмпĕрпе унăн провинцине (провинция – это территориальная единица между уездом и губернией – справочникре çапла ăнлантарса панă) каялла Хусан кĕпĕрнине куçараççĕ.

II-мĕш Кĕтерне патша 15.09.1780-мĕш çулхи грамотипе килĕшӳллĕн Чĕмпĕр наместничествине йĕркелесе янă; унта Улатăр, Ардатов, Буинск, Ставрополь, Сызрань тата ытти уессем (мĕн пурĕ 13) кĕнĕ. 26.10.1796-

мĕш çултан тытăнса, I-мĕш Павăл Указĕ тăрăх, Чĕмпĕр кĕпĕрни шутланса тăрать. 1798-мĕш çултан тытăнса Улатăр, Буинск, Карсун, Самара, Ставрополь тата Сызрань хулисем Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи уес хулисен ятне илеççĕ.

Малтанхи тапхăрта Хусан кĕпĕрни Шупашкар, Çĕрпӳ тата Сĕве уесĕсенчен тăнă пулсан, XVIII-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче вара Чĕмпĕр уесне йĕркелесе янăран хальхи Комсомольски, Патăрьел тата Шăмăршă районĕсенчи ялсем Чĕмпĕр уесне куçнă. Хирти Тăрăн ялĕ те Чĕмпĕр уесне кĕрсен малтанхи ятне çухатать: малашнехи официаллă документсенче Тăрăн ялĕ ятпа çырăнма тытăнать. 1747-мĕш çулта ялта чиркӳ уçсан ку яла халăх хушшинчеЧиркӳллĕ Тăрăн тесе калама тытăнаççĕ.

Кунта çакна палăртса хăварсан выраннă пулĕ: пирĕн енне куçса килнĕ чăвашсемпе тутарсем малтанхи перепиççем хыççăн XVIII-мĕш ĕмĕрте ирĕклĕ патшалăх хресченĕсем шутланса тăнипе улпут хресченĕсемпе удел хресченĕсен пурнăçĕнчен çăмăлтарах пулнă пулсан, тепĕр ĕмĕрте вĕсем хăйсен ирĕклĕхне, пур-çук прависене çухатаççĕ, вĕсен те пурнăçĕ йывăрланать. Асăннă ĕмĕр вĕçĕнче Чĕмпĕр кĕпĕрнинче чăвашсем йышлă пурăннă, Пăва уесĕнче кăна пĕтĕм халăх шутĕнчен 85 проценчĕ чăваш шутланнă, анчах та тĕне кĕмен чăвашсене тутарсен муллисем каярах тĕрлĕрен меслетпе илĕртсе те хăратса мăсăльман тĕнне йышăнтарса тутара кăларнă.

Маларах эпĕ асăннăччĕ ĕнтĕ, Треньел ялĕ хăçан пуçланса кайни пирки историллĕ документсем сыхланса юлман. Чăвашсен паллă историкĕ Димитриев В.Д. академик та хăйĕн «Чувашские исторические предания» кĕнекинче хальхи Патăрьел районĕнчи Катек ялĕнчен темиçе çемье, Тĕрен ятлă хресчен ертсе пынипе вăрман пулнă выраăна куçса ларса, ял пуçарса янă пирки çырать. Кайран çав хресчен ячĕпе ял ятне Тĕреньел панă. Çак ялпа унта пурăнакан ял çыннисем çинчен çырнă малтанхи хăш-пĕр архив документĕсемпе манăн

Чĕмпĕр хулинчи архивра паллашма тӳр килнĕччĕ. Ун пирки тата çирĕммĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи ял çыннисен пурнăçĕ, истори асаилĕвĕсем çинчен çак ялтах пурăнакан учитель-пенсионер Мясников А.М. районти «Авангард» хаçатра 31.08.1974 ç. çырнă.

I-мĕш Павăл 1796 çулта патшана ларсанах Раççей çĕршывне кĕпĕрнесем çине пайлас пирки указ кăларнă хыççăн патшалăх хресченĕсен ялĕсене вулăссене пĕрлештерес пирки йышăну кăларать. 1797 çулта ытти вулăссемпе пĕрле Патăрьел вулăсĕ те йĕркеленет, çакăн пек административлă ятпа вăл 1927-мĕш çулхи нарăс уйăхĕнче ВКП(б) XV съезчĕ вулăссемпе уессене пĕтерсе районсем йĕркелесе яричченех шутланса тăнă.

1835-мĕш çулхи кăрлачăн 25-мĕшĕнче I-мĕш Микула патша Раççей империнчи кĕпĕрнесенче патшалăх хресченĕсене удел ведомствине куçарас пирки Указ кăларнă. Çак Указ тăрăх Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесне кĕнĕ пирĕн енче пурăнакан ялсенчи патшалăх хресченĕсем те удел аллине лекеççĕ. Паллах, асăннă улшăну хресченсене çăмăллăхсем паман, ахальтен мар удельнăя куçассинчен пăрăнса, Пăва уесĕнчи ялсенче хресченсем вăйпах хирĕç тăнă, çавна пула пăлхавсем пулса иртнĕ. Асăннă уеса кĕнĕ Сăкăтри пăлхав çинчен тата ăна хаярăн пусарни пирки çак ялтах пурăнакан паллă таврапĕлӳçĕ И.Н. Ильин «Район 80 çул тултарать» ятлă статйинче тĕплĕнрех çырса кăтартнă. («Авангард» хаçат – 3,6.10.2007 ç.), каярах 2009-мĕш çулта «Сăкăт» ятпа кăларнă кĕнекинче.

Удел хресченĕсене ертсе пырас енĕпе Чĕмпĕр тата ытти кĕпĕрнесенче удел кантурĕсем, уессенче – удел кантурĕн пайĕсем, маларах пулнă вулăссем вырăнне удел приказĕсем (Патăрьел удел приказĕ 15.07.1839 ç.) йĕркелесе янă. Ун чухне Патăрьел ял ятне патшалăхăн çыру ĕçĕсенче Хăмпуç Патăрьел ятпа çырнă. Сăмах май, Хăмпуç Патăрьел ялĕ Мăрат вулăсĕнче те пулнă вăл вăхăтра (халь вăл Йĕпреç районне кĕрет). Хальхи Патăрьел район территорийĕпе илес пулсан, виçĕ вулăс

вырăнне – виçĕ приказ: тутар ялĕсем – лашман приказĕ, чăвашсен удел приказĕ пулса тăраççĕ. Уделсенчи ялсем участоксем çине пайланса кайнă: Треньел ялĕ 47-мĕш участока кĕнĕ пулсан, Тăрăн ялĕ вара 48-мĕш участокра шутланса тăнă. Чĕмпĕр удельни Кантурĕн управляющи Чĕмпĕр кĕпĕрнин начальникĕ патне тăратнă «Ведомости об учетности об общественной запашке» по Симбирскому удельному имению в Буинском уезде по Батыревскому приказу» текен отчет тăрăх Треньел ялĕнче 91 çын, Тăрăн ялĕнче 172 çын пурăннине кăтартнă. Архиври документсем тăрăх, Патăрьел удел приказĕн малтанхи пуçлăхĕ Матвей Яковлев, каярахпа Трофим Кирилов пулнă (ГАУО, фонд 318, опись 4, дело 25, л.л.65,66, 184). Анчах та çак кăтарту вăл асăннă ялсенче пурăнакан арçынсен шутне илни пирки кăна пырать. Сăмахран, Тăрăн ялĕнчи удельни хресченĕсен пĕтĕмĕшле шучĕ: хĕрарăмсен ячĕсемпе çырнисем 202 çын, арçынсем 171 çын.

Кунта çакна асăнса хăварсан та вырăнлă пулĕ: Патăрьел удел приказне йĕркелесе янă чухне те, 1838-мĕш çулхине Чĕмпĕр кĕпĕрни тăрăх ялсенче пурăнакан çынсен хисепне шута илнĕ чухне те (ревизки сказки тăрăх), Кĕçĕн Патăрьел ялĕ çинчен çырса кăтартман, çак ял тата унта пурăннă çынсем çинчен çырнине архивсенче те тĕл пулма май килмерĕ. Паллах, çак вăхăта Патăрьел ялĕнчен хăш-пĕр çемье Пăла юхан шывĕ тепĕр енне айлăм, шыв илекен çаранлă вырăна куçса ларса çурт-йĕр çавăрнă, çĕрпе усă курнă. Ахальтен мар ĕнтĕ каярах çĕнĕ вырăнта Кĕçĕн Патăрьел ят илнĕ, ял халăх хушшинче Йăлăм ятпа сарăлнă. Анчах та малтанхи çулсенче куçса ларнă çемьесем Патăрьел ял çыннисемех шутланса тăнă. Кĕçĕн Патăрьел 1840-мĕш çулсенче уйрăм ял пулса тăма пултарнă.

1834-мĕш çулхи «ревизски сказки» çинче çырнă тăрăх, тĕне кĕнĕ чăвашсем Тăрăнта 170 арçынпа 197 хĕрарăм, Треньелĕнче 91 арçынпа 100 хĕрарăм пурăннă. (*ГАУО, фонд 156, опись 2, дело №95, листы 401-414; д.*

№159, л.л. 122-141; д.160, л.л. 173-184, д.161, л.л.396-419.)

XIX ёмёр варринче Раççей империнчи кашни кĕпĕрнерех ялсенче план тăрăх пăхса урамсемпе çуртсене генеральнăй план тăрăх тăвассине йĕркелесе янă. Ялпа ял хушшисене çĕр касса чикĕ палăртнă.

1868-мĕш çулта Кĕçĕн Патăрьелĕнче (Йăлăмра) 35 хуçалăх, Тăрăнта – 78, Треньелĕнче – 37, Аслă Патăрьелĕнче – 179, Шăнкăртамра вара 376 хуçалăх пулнă. (*Патăрьел районĕн энциклопедийĕ тăрăх, стр. 208.*)

1.01.1851-мĕш çултан тытăнса Чĕмпĕр кĕпĕрни 8 уесран (вĕсен шутĕнче Пăва уесĕ те) тăнă. Пăва уесне 1913-мĕш çулччен мĕн пурĕ 19 вулăс: Аслă Патăрьел, Çĕпрел, Мăрат, Турхан, Хăмпуç Патăрьел, Шăмăршă, Шăнкăртам, тата ыт. хальхи Патăрьел район тулашĕнчи вулăссем кĕнĕ, вĕсенче 240 ял тата 40 поселокпа хутор шутланнă. (*ГАУО, Справочник административно-территориального деления Симбирской губернии – Ульяновской области за 1648–1985 г.г.*) Çак вăхăта илес пулсан, Кĕçĕн Патăрьел хăй уйрăм ял шутланса Тăрăнпа Треньел ялĕсемпе пĕр танах Аслă Патăрьел вулăсне кĕме пултарнă.

1897 çулта Патăрьел вулăсĕнче Патăрьел хăй чи пысăк ял шутланса тăнă. Ку ялти 288 килте 863 арçынпа 914 хĕрарăм пурăннă, Сăкăтра 242 килте 660 арçынпа 681 хĕрарăм, Çĕнĕ Ахпӳртре 238 килте арçынсемпе хĕрарăмсен шучĕ 694-па 703, Еншикре 133 килте 324-па 353 çын, Кивĕ Катекре – 124 кил, 348-па 326, Кивĕ Ахпӳрт – 112 килте 329-па 330 çын, Тăрăнта 111 кил, 314-па 294 çын, Кивĕ Туçа – 103 кил, 294-па 287 çын. Ытти ялсем пурте 100 килрен сахалрах пулнă (*Список населенных мест Симбирской губернии. 1897*).

ПИРĔН ТАВРАРИ ХАЛĂХСЕНЕ ПРАВОСЛАВИ ТĔННЕ КĔРТНИ. ПИРĔН ЕНЧИ МАЛТАНХИ ЧИРКӲСЕМ

Хусана тытса илсенех кунти вырăс мар халăхсене православи тĕнне йышăнтарас тесе, Хаяр Иван патша 1555 çулта Хусан Епархине туса хунă.

Святейший Синодăн 1742 çулхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнче пуçланă 385-503 №-лĕ ĕçĕ тăрăх, пирĕн район территорийĕнчи ялсенче мĕнпур ватти-вĕттине 1747 çулхи авăн уйăхĕнчен пуçласа 1748 çулхи кăрлач уйăхĕ пĕтиччен православи тĕнне кĕртнĕ. Виççĕмĕш хут ревизи туса çынсене шута илнĕ чухне вара вĕсен тĕне кĕрипченхи тата тĕне кĕнĕ хыççăн панă ячĕсене çырса хунă, халăха тĕне кĕртнипе пĕрлех хăш-пĕр ялсенче чиркӲсем те лартма тытăннă. Святейший Синодăн 1747-мĕш çулхи çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, çак çулхинех Тăрăнта «Николай Чудотворец» святой ячĕпе чиркӲ уçнă. Ку вăл Патăрьел районĕнчи пĕрремĕш чиркӲ пулнă. Ун хыççăн 1749 çулта Сăкăтра «Рождества Христова», Турханта 1751-мĕш çулта «Богоявления Господня» ятлă чиркӲсем çĕкленнĕ. Çак вăхăталлах Тури Туçа ялĕнче те чиркĕве хута ярсан, çывăхри ялсем çак Туçа прихутне кĕреççĕ. Каярах чиркӲсем ытти ялсенче те ĕçлеме тытăннă. Сăмах май, таврари ялсенче «Николай Чудотворец» святой ячĕпе чиркӲсем виççĕ таранчченех шутланса тăнă: ун пек чиркӲ 1909-мĕш çулта Çĕнĕ Ахпӳртре, 1928-мĕш çулта ун чухне пирĕн района кĕнĕ Карапай Шăмăршăра уçнă.

Н. Баженов 1900 çулта кăларнă «Статистическое описание соборов, монастырей, приходских и домашних церквей Симбирской епархии по данным на 1900 год» кĕнекинче çакна пĕлме пулать.

Тăрăнти йывăçран тунă чиркĕве каярахпа 1798 тата 1885 çулсенче унта çӳрекенсен укçи-тенкипе çĕнĕрен пăсса тунă. Николай Чудотворец святитель тата Дмитрий Солунский сăваплă великомученик ячĕпе икĕ престол (двухпрестольная) пулнă. Притча икĕ священни-

крен, тияккăнран тата икĕ псаломщикрен тăнă. Шалу священника 300 тенкĕ, тияккăна 150 тен., псаломщике 150 тен. хыснаран тӳленĕ. Вĕсен пурăнмалли çурчĕсем чиркӳ çĕрĕ çинче ларнă.

Чиркĕве Тăрăн ялĕнчи 96 килтен 277 арçынпа 276 хĕрарăм, Кĕçĕн Патăрьелĕнчи 45 килтен 158 арçынпа 151 хĕрарăм, Кивĕ Катекри 110 килтен 297 арçынпа 272 хĕрарăм, Татмăшри 65 килтен 208 арçынпа 274 хĕрарăм, Кĕçĕн Арапуçĕнчи 70 килтен 189 арçынпа 197 хĕрарăм, Çĕнĕ Упинчи 14 килтен 44 арçынпа 52 хĕрарăм, Аслă Çĕрпӳелĕнчи 61 килтен 162 арçынпа 143 хĕрарăм, Треньелĕнчи 56 килтен 157 арçынпа 157 хĕрарăм, Еншикри 98 килтен 252 арçын, 274 хĕрарăм, Хирти Пикшикрен 4 килтен 16 арçынпа 3 хĕрарăм, Ыхра çырминчи 1 килтен 3 арçынпа 1 хĕрарăм (паллах, кунта ачисене те шута илмелле – *Д.К.*) çӳренĕ. Сăмах май, кунта çавна каласа хăварсан выränлă пулĕ: Хирти Пикшикпе Ыхра çырми тутар ялĕсенче хальхи вăхăтра пĕтĕмпе тенĕ пек мусульман тĕнне ĕненекен тутарсем пурăнаççĕ пулсан, XVIII–XIX-мĕш ĕмĕрсенче çак ялсенчи хăшпĕр тутарсем (православи тĕнне кĕрекенсене хавхалантарас тĕллевпе тĕне кĕмен тутарсемпе чăвашсене çĕр валеççе панă) православи тĕнне йышăннă. Унсăр пуçне çар прихутĕнчен те Тăрăн чиркĕвне 161 килтен 452 арçынпа 453 хĕрарăм çӳренĕ. Çавăн пек вара Тăрăн прихутне таврари 12 ял кĕнĕ.

Çак ялтан виçĕ çухрăмра вырнаçнă Патăрьел ялĕнчи çынсем те (унта 1884-мĕш çулта чиркӳ уçнă) Тăрăн чиркĕвне çӳренĕ.

Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесне кĕрекен Тăрăн ялĕнчи Никольски чиркĕвĕнче тĕн енĕпе ĕçлекен служащисемпе вĕсен çемйисене 1782 çулхи «ревизски сказкипе» (перепись) шута илнĕ чухне çакна курма пулать. Çак чиркӳре ун чухне икĕ пачăшкă: Михаил Ивановпа Алексей Тимофеев, виçĕ тияккăн: Григорий Федоров, Петр Иванов тата Матвей Андреев, пономарь Василий Тимофеев пулнă. 1789 çулхи метрика кĕнеки тăрăх, виççĕмĕш пачăшкă – Семен Захаров та тĕн службине ирттерни курăнса тăрать.

1795 çулта ку чиркӳре священниксен хушшинче улшӑнусем пулса иртеççӗ:

Пӗрремӗш священник – Михаил Иванов, 49 çулта;

иккӗмӗш – Семен Захаров, 1793 çулта Загудаевкӑна куçса кайнӑ;

виççӗмӗш – Алексей Тимофеев, 41 çулта.

Пӗрремӗш тияккӑн (диакон) – Тимофей Федоров, 52 çулта. 1789 çултан тытӑнса пономарь ӗçне туса пынӑ.

Иккӗмӗш тияккӑн – Петр Иванов, 42 çулта.

Тиечук (дьячек) – Матвей Андреев, 38 çулта, иккӗмӗш тиечук – Сава Федоров, виççӗмӗш тиечук – Егор Миронов, вӑл 1788 çулта тухса кайнӑ.

Пономарь – Василий Тимофеев, 35 çулта.

(*ГАУО, ф.№156, оп.2, д.11*)



Тӑрӑн ялӗнчи «Николай Чудотворец» святой ячӗпе чиркӳ.

Л.Ю. Браславский «Православные храмы Чувашии, изд. 1995 г.» кӗнекинче асӑннӑ чиркӳ пирки çаврӑн пек çырать: *«Церковь деревянная, главный храм холодный, придел теплый, длина с колокольней 14 сажень, наибольшая ширина 5 саж., высота до верхнего карниза 4 саж. На церкви одна глава. Иконостас в главном храме: длина 4 саж., высота 3,5 саж., в приделе: длина и высота по 1 саж. 2 арш., колокольня 3-ярусная, высота 8 саж. Приходских поселений 10, штат притча: два священника, диакон, псаломщик».*

ЯЛСЕНЧЕ УДЕЛЬНИ ШКУЛĔСЕМПЕ УЧИЛИЩĔСЕМ УÇАÇÇĔ

Пирĕн район территорийĕнче малтанхи шкулсене удел департаменчĕ 1839-мĕш çултан уçма тытăннă. Патăрьелпе Çĕньял удел приказĕсем 1840-мĕш çулта тăратнă рапортсем тăрăх, удельни хресченĕсен хăшпĕр ĕçĕ-хĕлĕ тата ялсенчи удельни училищĕсем çинче чарăнса илсен ытлашши пулмĕ. Асăннă рапортсенчи уйрăм пункчĕсенче çавăн пек çырса кăтартнă.

«1) В ведомстве Батыревского приказа селений 23, в них числится ревизских душ всех наименований 3906.

...7) В сем 1841 году на устроенном при селе Туруново кирпичном заводе чрез посредства рабочих 13 человек выделено сыраго кирпича 125 тысяч, который приготовляется к обжигу, оставалось онаго от прошлого года налицо 127 тысяч 50 штук; из этого числа продано крестьянам на поправку печей 12 тысяч, затем ныне состоит налицо 115 тысяч 50 штук.

...11) Сельские удельные училища открыты:

а) Туруновское Августа месяца в 12 день 1839 года.

Успех преподавания обучающимся в оном ученикам, кроме 1-го и 2-го классов то есть 36 человек, занимаются изучением книг священной истории и пространнаго катехизиса, а 14 человек (1 и 2 классы) только священную историю, из арифметических разрядов ученики 7 класса 7 человек занимаются делением простых чисел, 6-го и 5-го классов 14 человек вычитанием простых чисел, 4-го и 3-го классов 14 человек сложением простых чисел, а 2-го и 1-го классов только познанием цифрей, то есть нумерацию и все пишут прописи по бумаге довольно порядочно.

б) Сугутское Августа в 30 день1840 года.

Успех преподования ученикам именно: 15 человек знают из Закона Божия все молитвы и 10 заповедей, учат священную историю, из арифметики вычитание и сложение простых чисел и пишут на бумаге, 19 тоже все знают молитвы и заповеди продолжают книги правоучительныя разговоры, из арифметики учат нумерациюи пишут прописи на досках, 8 проходит 28 № ланкастерских таблиц и знают все молитвы, пишут на до-

ских склады пасхальныя, проходят 25 ланкастирских таблиц знают молитвы и пишут азбуки на досках.

Еще в Тойсях училище основано будет в 1841 году...

С сведениями приказа верно: Писарь Романов.»

Рапорт Шаймурзинского приказа. 3 июля 1841 года.

1. Селений 29, муж. 2741, жен. 4209, всего 7950 душ удельных крестьян и 30 душ отставных выдворенных солдат.

...11. Открыты сельския училища 1-ое Тарханское 31 августа 1839 в коем учитель 1, учащихся удельных мальчиков 50 из коих по катехизису истории и арифметике и в письмом обучаются весьма хороших 20, хороших 6, посредственных 14, плохих 7. За болезнею 4.

2-ое Старо-Айбесинское училище 4 декабря 1840 года в нем учитель 1, учащихся удельных мальчиков 50 и Новое-Айбесинское училище то же числа, в нем учитель 1, учащихся мальчиков 50.

Но об успехах по им двум училищам...приказ сей объяснить не может.

Правящий должность Головы Казенный заседатель Яковлев по безграмотству приложил звание своего печать».

«Сведения по Батыревскому приказу. 04.06.1841 г.»

(*ГАУО, ф.536,оп.1, дело № 44*).

Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесне кĕрекен пирĕн енчи пуçламăш училищĕсенче вĕрентес ĕç мĕнле пынă-ха? Ун çинчен Чĕмпĕрти земски хаçатра 28.03.1882 çулта Пăва уесĕнчи XVII-мĕш черетлĕ пуху отчечĕ тăрăх çавăн пек çырнă:

«О состоянии начальных училищ Буинского уезда за 1880–81 учебный год:

1) Число учебных заведений к 1 января 1881 г. состояло начальных народных училищ – 37, в т.ч. мужских – 11, женских – 2 и смешанных – 24.

2) Число учащихся:

Общее число учащихся равняется 1610 лицам, в т.ч. мальчиков – 1340 и 270 девочек, против прошлого года прибавилось 29 мальчиков и убавилось 21 девочка.

Причины: Крестьянские девочки слишком дороги в домашнем быту своим матерям, которые поручают им нянчить маленьких детей, и разные домашние работы.

...Училища наши далеки от совершенства, особенно в иногородних училищах. Наставники Сугутского училища пишут, чтокрестьяне, особенно крестьянки, несмотря на все меры убеждения их и побуждения, совершенно отказываются представлять девочек в училище в настоящем году, будто бы неурожая хлеба и просят дозволитьим вместо девочек набрать и усилить количество обучающихся мальчиков до 60 человек. Счастливым исключением может быть названа Тарханская школа, выпустившая ныне 4 девочекс весьма хорошими успехами по всем предметам. Из них Татьяна Павлова и Дарья Наумова написали прочитанную статью без ошибок, тогда как из 14 представленных на экзамен учеников Туруновского и Хомбусь Батыревского училища, со льготными свидетельствами выпущено только 4, и там по письму сделано экзаменной комиссией большое снисхождение.

Учащиеся разделяются по сословиям:

крестьян – 1280 мальчиков и 255 девочек;

городских – 45 мальчиков и 7 девочек;

духовных – 14 мальчиков и 8 девочек.

По народностям: русских – 623, чуваш – 936, мордва – 51, итого – 1610 чел.

Из всего числа учащихся окончил полный курс в отчетном году 200 чел., из них 117 мальчиков и 6 девочек получили свидетельства.

Почему столько же выбыло из училища по разным причинам: по болезни, бедноты и т.д. Некоторые проучились год, другие два, три и более.

Учащих было: законоучителей – 29, учителей – 32, учительниц –4 и помощница учительницы – 1. Все законоучители получили полное богословское образование, за исключением 4 неокончивших курсов в духовной семинарии».

Тăрăн ялĕнчи земски шкулĕпе Еншик ялĕнчи чиркӳ грамотин шкулĕ 1892 çултанпа, Кивĕ Катекпе Татмăшра – 1895, Аслă Çĕрпӳелĕнче 1898 çултанпа ĕçленĕ. Шкул-

сем валли уйрăм çуртсем пулманнипе ачасем хваттерсенче вĕреннĕ. Хăш-пĕр ялсенче вара: Алманчă (1892 çулта), Аслă Патăрьел (1894), Пăлапуç Пашъел (1893), Çĕньял (1893), Çĕнĕ Ахпӳрт (1899) ялĕсенче – шкулсем валли уйрăм çуртсем туса ачасене вĕрентме тытăнаççĕ. 1902 çулта Аслă Патăрьелĕнче хĕрачасене вĕрентме уйрăм шкул уçаççĕ. 1905 çулта Треньелĕнче хресченсен обществи шучĕпе грамота шкулĕ хута каять.

Тăрăн шкулĕн кун-çулĕ тата унта вĕрентекенсемпе вĕреннĕ паллă çынсем çинчен тĕплĕнрех пĕлме çак тулли мар вăтам шкул 150 çул çитнине паллă тунă чухне шкула 36 çул хушши директор пулса ертсе пынă Иван Григорьевич Илехметов аса илĕвĕ çинче чарăнса тăрасшăн эпĕ. Паллах, унăн аса илĕвĕнчи хăш-пĕр фактсем архив документĕсемпе пĕр килмеççĕ, çавăнпа та 1989-мĕш çулта «Авангард» хаçатра тухнă «Районти чи ватă шкул» статьяри уйрăм пулăмсем пирки автор йăнăшма та пултарнă. Вĕсем çинчен аяларах чарăнса тăрăпăр. Апла пулин те, вулаканшăн çак аса илӳ хăйĕн историлле пĕлтерĕшне çухатмасть пуль тетĕп.

«Тăрăнти тулли мар вăтам шкул 150 çул тултарчĕ. 1839-мĕш çулхи октябрьте патша указĕ тăрăх уçнă ăна. Ун чухне ăна уделри пуçламăш халăх училищи тенĕ. Унăн тĕп задачи халăхсене Христос тĕнĕ çинчен тĕплĕ вĕрентесси, шутлама, çырма, вулама хăнăхтарасси пулнă. Хресчене хуçалăха тытса пырас ĕçре кирлĕ сĕнӳсем парасси те кунтах кĕнĕ.

1839-мĕш çулта вунă ялтан хресчен ачисене пуçтарса вĕрентме тытăннă. Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьел, Патăрьел, Кивĕ Катек, Треньел, Çĕрпӳел, Еншик, Тикеш, Татмăш, Кĕçĕн Арапуç çамрăкĕсем çӳренĕ унта. Чылай хресчен хăйĕн ачисене вĕренме ирĕк паман. Çавăнпа та малтанласа унта ачасем питĕ сахаллăн вĕреннĕ. Ачасене вырăс чĕлхипе çеç вĕрентни те йывăрлăх кăларса тăратнă. Ку вăхăтра чăвашсен хăйсен алфавичĕ те, букварĕ те пулман. Вырăс чĕлхипе çырнă чиркӳ кĕллисене пăхмасăр калама вĕреннĕ. Çакна тума пултарайманнисене

тĕрлĕрен наказани панă. Малтанласа шкула арçын ачасене çеç илнĕ, каярахпа – хĕрачасене те.

1872 çултанпа кĕçĕн классенче тăван чĕлхепе вĕрентме тытăннă. Çак çулта чăвашсен паллă ученăйĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн директорĕ И.Я. Яковлев чăвашсен алфавитне йĕркелет, букварь кăларать. Çакă чăвашсемшĕн пысăк савăнăç пулнă.

Малтанах Тăрăн шкулне чиркӳ укçипе тытса тăнă. Учительсене те, кĕнекесем илме те, вутă-шанкă туянма та укçа чиркӳ тӳленĕ. 1861 çулта Раççейре крепостла йĕркене пăрахăçа кăларнă. Çакăн хыççăн крепостла хресченсем те ирĕклĕх илнĕ. Çĕршыва ертсе пырас ĕçре хресченсем те хутшăнма пултарнă пек кăтартас тесе патша влаçĕ земство органĕсене йĕркелет. Вĕсен тĕп ĕçĕ халăха вĕрентесси, шкулсем уçасси тата вĕсене укçа-тенкĕпе пулăшасси пулнă. 1865 çулта пирĕн шкула земствăсен аллине панă. Шкула тытса тăма халăхран укçа пуçтарнă.

Чăваш халăхĕн культурине аталантарас тата унăн пĕлӳлĕхне хăпартас ĕçре В.И. Ленин ашшĕн Илья Николаевич Ульяновăн тӳпи те пысăк. Вăл Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисене тĕрĕслесе тăракан инспектор пулнă май, 1872 çулхи июнь уйăхĕнче Тăрăн шкулĕнче те пулнă, унăн пурнăçĕпе тĕплĕн интересленнĕ. Çак вăхăтра пирĕн шулта 40 арçын ача, 19 хĕр ача вĕреннĕ. Вĕсем пурте чăваш, учительсем вырăс пулнă. Священникĕ Петр Знаменский, учителĕ – Разумовский. Ачасен пĕлӳ шайне тĕрĕсленĕ хыççăн И.Н. Ульянов çакăн пек çырнă: *«Аслă классемсĕр пуçне пур арçын ача та ăнланмасăр вулаççĕ. 8 арçын ачаран 2-шĕ çеç «3» паллăлăх çырнă. Арифметика учителĕ ăсра сахал шутлаттарать. Учителе асăрханă çитменлĕхсем çине тимлĕх уйăрма хуша хăвартăм».*

И.Н. Ульянов шкула килсе кайни усă панă. Çакăн хыççăнах укçа-тенкĕ, кĕнеке-журнал, вĕренӳ хатĕрĕсем ытларах уйăрнă, пĕлӳ шайĕ те ӳснĕ. Малтанах ачасене пĕчĕк пӳлĕмре çеç вĕрентнĕ пулсан, 1892 çулта чиркĕве

хирĕçле ятарласа шкул çурчĕ туса лартнă. Вăл халь пурăнакан П. Воробьев выränĕнче пулнă. Шкул виçĕ пӳлĕмрен тăнă. Иккĕшĕнче ачасем вĕреннĕ, пĕринче учитель пурăннă. Кĕçĕн класра эпир хамăр та çак шкулта вĕреннĕ. Шкул çумĕнче пысăк семсад пурччĕ тата вутă хумалли сарайсем, тирпейлĕ картиш. Е. Борисов учитель те çак çуртрах пурăнатчĕ. 1930–1932 çулсенче ялта çĕнĕ шкул çурчĕ тума тытăннă. Шăпах колхозсем йĕркелеме пуçланă тапхăр пулнă вăл. Чылай çемьесене кулаксем тесе çуртран кăларнă. Çав çуртсене пуçтарса кивĕ масар çине çурт туса лартнă. Вăл (шкулта – Д.К.) сивĕ пулатчĕ, хĕллехи вăхăтра класрах шыв шăнатчĕ. Çапах ачасем вĕренесшĕн çунатчĕç.

Чăваш ачисене вĕрентес тата çĕнĕ шкулсем уçас ĕçре Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пĕлтерĕшĕ пысăк пулнă. Çак шкултан вĕренсе тухнисем чăваш ялĕсенче ачасене тарăн пĕлӳ парассишĕн ырми-канми тăрăшнă. Варвара Павловна Горшкова, Петр Петрович Петров, Егор Борисович Борисов пире те вĕрентнĕ. Ваттисем аса илнĕ тăрăх, эпир Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен шкултан вĕренсе тухнă Александр Макарович Полетаев 20 çул ытла Тăрăн шкулĕнче ĕçлени çинчен те пĕлетпĕр. Вăл ял çыннисемпе питĕ çывăх пулнă. Ун патне Татмăш шкулĕнче ĕçленĕ П.Е. Крепков та пĕрре мар килнĕ. А. Полетаев вĕрентнĕ ачасем хăйсен ирĕкĕпе революцие хӳтĕлеме тăнă. Вĕсенчен пĕри Алексей Васильевич Васильев вăрçă хыççăн республикăра паллă вырăнсенче ĕçленĕ. 1937 çулта суя жалобăпа ăна аресленĕ, 17 çул тĕрмере ларнă.

Октябрьти сциализмла Аслă революциччен пирĕн шкулта пĕр учитель çеç ĕçленĕ, революци хыççăн иккĕ. Шкултан вĕренсе тухнă çынсем малалла вĕренсе чаплă çынсем пулса тăнă. Акă, Илья Николаевич Ашмарин, Трофим Григорьевич Одиноков, Мария Ильинична Мясникова, Екатерина Андреевна Козлова, Данил Васильевич Ситов, Екатерина Захаровна Лялькина учительсем пулнă. Григорий Сидоров вăрман улпучĕ, Матвей Никитич Лялькин землемер тата ытти те.

Ял-йыш Петр Петрович Петров учитель çинчен ырăпа асăнатчĕ, Тăрăн шкулĕнче вăл 1910–1937 çулсенче вĕрентнĕ. Кунтанах ăна суя элекпе тĕрмене хупнă, унтан таврăнайман. Революци хыççăн пирĕн шкулта Петр Петровичпа пĕрле Екатерина Захаровна Дерякова та ĕçленĕ.

1932 çулта çак пуçламăш шкултан тулли мар вăтам шкул туса хунă. Ун чухне шкул директорĕ Филипп Васильевич Акимов, вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Петр Петрович Петров пулнă. Пĕрремĕш кăларăмра 18 ача вĕренсе тухнă. Камсем-ха вĕсем? М.Д. Алексеев, В.В. Казанцева, И.И.Алексеев, Ф.В. Краснов, Е.Л. Шуряшкина тата ыттисем те. В.В. Казанцевапа М.Д. Алексеев пенсие кайичченех хамăр шкулта учитель пулса ĕçлерĕç. Тулли мар вăтам шкул туса хунăранпа 75 кăларăм тухнă. Çак вăхăтра 2 пин ытла ача пĕлӳ илнĕ. 1917 çулччен кунта Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьел, Треньел ачисем вĕреннĕ. Ун хыççăн треньелсем Ыхра çырмине куçнă. Шкулта ĕçленĕ И.А. Коромыслов, Н.И. Стеклов, М.П. Никитина, П.П. Петров, Е.Б. Борисов, П.Т. Дмитриев, И.Я. Наумов, Бабайкин, В.П. Горшкова, Н.И. Миловидова, Е.З. Дерякова учительсем халĕ те асра.

Ф.В. Акимов, Н.П. Павлов, П.Т. Дмитриев, А.М. Захаров, А.И. Раськин, И.Н. Николаев, Е.З. Дерякова, К.И. Сапожников, Т.О. Еслюков, В.К. Шихранов, В.А. Карягин, С.Г. Алексеева тата эпĕ тĕрлĕ çулсенче шкул директорĕнче ĕçлерĕмĕр. Хальхи шкул çуртне 1959 çулта туса лартрăмăр, вăл 12 класлă. 1965 çулта Кĕçĕн Патăрьелĕнчи кĕçĕн классем валли кирпĕчрен тăватă класлă çурт купаларăмăр. ...Мухтанмасăр калатăп, пирĕн шкул нумай енĕпе лайăх енчен палăрса тăчĕ. Чылай учитель тĕрлĕ наградăна тивĕç пулчĕç...».

Тăрăн (училищинче) шкулĕнче ĕçленĕ мухтава тивĕçлĕ хăш-пĕр учительсен кун-çулĕ çинче чарăнса тăнă май, И.Г. Илехметовăн асăннă асилĕвĕнче А.М. Полетаев çинчен йăнăш çырнине палăртса хăвармалла. Александр Макарович 1863 çулта Патăрьел районĕнчи Пӳртлĕ ялĕнче çуралнă. Тăрăн шкулĕнче вăл 1909-мĕш

çулччен мар (архив документчёсем тăрăх, 1910 çулта Тăрăн чиркёвёнче вёсем кёçён ачине тёне кёртнё), 1931-мёш вёренӳ çулё вёçленичченех ёçленё. Çавăн хыççăн кăна вăл Комсомольски районёнчи Аслă Çёрпӳел ялне куçса кайнă. Архив документчёсем тăрăх, Петр Петрович Петров Тăрăн шкулёнче 1935-мёш çул таран директор пулса, каярах вара 1937 çулта хăй репрессине лекиччен учитель пулса ёçлени курăнса тăрать.

Тăрăнти паянхи кун ларакан икё хутлă шкула хăçан туса пётерсе унта вёренме тытăнни çинчен эпё каярах районта тухса тăракан «Авангард» хаçатри материалсем тăрăх паллаштарăп.

Тăрăнти хёр ачасен училищи çинчен çӳлерех асăннăччё ёнтё. Чёмпёр Департаменчён справки тăрăх çакна пёлме пулать: *«Справка по приказанию Господина Председателя Департамента Уделов Управляющим конторою Г.Глинкою были заведены по Симбирскому имению в конце 1857 г. в каждом селе девичьи школы на 20 девочек каждая.* (Кун пек шкулсем хăш-пёр уесра 1843 çултанах уçма тытăннă.)

... 46. В с.Туруново – 16, священники Дмитрий Добронравов, Иван Алмазов». (И. Ильин «Сăкăт», стр. 560.)

Дмитрий Иванович Добронравов Тăрăн чиркёвёнче 1891 çулта та священник пулса тăрăшнă (*ЧИА, ф.557, оп.7, 105-мёш ёç*).

Чёмпёр кёпёрнинчи чăваш удельни училищисем пирки тата унăн инспекторё (каярах директорё) И.Н. Ульянов çинчен тёпчевçё М.П. Макаров çырнă «Илья Николаевич Ульянов и просвещение чуваш» литература ёçё çинче чарăнса тăрасшăн. Унта вăл çавăн пек çырать:

«*...Среди чувашского населения начальные удельные училища стали открываться в 30–40 годах прошлого столетия, согласно уставу училищ в удельных имениях, утвержденному 25 октября 1828 года.*

В Симбирской губернии было открыто более 30 удельных училищ: из них в Тарханах, Шемурше, Турунове – 1839 г., Той-

сях, Сугутах и Шераутах – 1840 г. и других селениях. Всего же в России к 1841 г. было 194 удельное начальное училище.

Зачисляли детей в удельное училище в принудительном порядке. Крестьяне сами должны были содержать своих детей в период пребывания их в училище (питание, одежда, обувь, квартира). Для большинства из них это было просто обременительно. В училищах был установлен суровый школьный режим, учителя мало интересовались умственным развитием детей.

Начальные народные училища Министерства народного просвещения стали открываться среди чуваш лишь с 1867 года. Симбирская чувашская школа стала выпускать учителей лишь с 1879 года.

Всего населения в Симбирской губернии в 1869 г. насчитывалось 1300 тыс. чел., в т.ч. в Буинском уезде – 161 населенных пунктов, где проживали 49531 чел.

25.10.1869 г. (по старому стилю) «Симбирские ведомости» сообщили, что учитель Нижегородской гимназии И.Н. Ульянов утвержден инспектором народных училищ Симбирской губернии, а затем директором народных училищ, т.е. в 1874 г.

Сметы расходов 1879 г. по Буинскому уезду:

	Суммы содержания		Количество учащихся	
	от земства	от крестьянского общества	мальчиков	девочек
Тойсинская	160 руб.	334 руб.	46	18
Сугутская	160 руб.	306 руб.	40	18
Туруновская	160 руб.	281 руб.	50	–
Туруновское женское училище	–	65 руб.	–	15
Тарханское женское училище	–	95 руб.	–	19
Тарханская	260 руб.	271-50	40	–

Следует отметить, что на содержание женских училищ средства из государственной казны не отпускались: они содержались за счет уравнительных сборов с крестьян, принятых на сходах сельских обществ.

Из таблицы видно, что земства к выделению средств на содержание школ чаще всего подходили формально, без учета действительных нужд той или иной школы. И.Н. Ульянову приходилось на мирских сходах крестьянских обществ часто выступать с обоснованием о выделении более значительных сумм, чем отпускались земствами. И если население в большинстве случаев проявляя доброжелательное отношение к школе и к обучению своих детей, брало на себя дополнительное бремя по содержанию их, обеспечению учебными пособиями, оборудованием и т.д., то в этом бесспорная заслуга принадлежала И.Н. Ульянову.

Инспектирование И.Н. Ульяновым чувашских училищ (стр. 60).

За 1872 год им лично было проверено и проинспектировано 52 училищ, в т.ч. следующих чувашских школах и училищах.

8 июня 1872 г. в Туруновской земской школе и женском училище, Тойсинской земской школе, Чурачикской земской школе (Комсомольский район), Хомбусь-Батыревской (Ибресинский р-н) земской школе – 9 июня и Ходаровском министерском училище (Шумерлинский р-н) – 11 июня 1872 г.

В 1879 году директором и инспекторами, говорится в отчете И.Н. Ульянова, осмотрены училища: Алатырское городское... Туруновское, Тарханское женские училища, Шемуршинское и др. Учебно-воспитательная работа в Алатырском частном училище Цветковой, Туруновском, Тарханском женском и Шемуршинском училищах была оценена неудовлетворительным, т.к. личная проверка знаний учащихся показала их крайне слабую подготовку по русскому языку и арифметике (стр.62).

И.Н. Ульянов большую заботу проявлял о введении обучения детей ремесленным занятиям в чувашских училищах. Это вытекало непосредственно из его стремления сблизить школу с жизнью. Он очень высоко оценил постановку рукоделия в Тойсинском чувашском женском училище (8 июня 1872 г.).

«...Девочки обучаются рукоделию: они вышивают полотенца, делают обшивки к рубашкам и полотенцам, умеют делать ковры (половики). Словом, занятия рукоделия идут весьма хорошо».

1911 çулта Пăва уесĕн Земски пухăвĕнче тĕрлĕ училищĕсемпе шкулсен 1910 çулхи ĕçĕсене пăхса тухнă. Авăн уйăхĕн 25–27-мĕшĕсенче шкулсене земствăран пособи парас пирки сăмах хускатнă.

«Буинское уездное отделение Симбирского Епархиального Училищного Совета ходатайствует о назначении, до введения в уезде всеобщего обучения, ежегодно от земства пособия следующим школам духовного ведомства: Васильевской, Новокотяковской, Нововыселковской, Верхне-Бюртли-Шигалинской и Сугутской по 60 руб. на каждую, так как школы эти ни от земства, ни от крестьянских обществ никакого пособия не получают» «Сăкăт», 661 стр.).

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен 1868–1919 çулсенче 595 арçын ача, 505 хĕр ача вĕренсе тухнă. Пирĕн районтан вара 35 çамрăк учитель ятне илнĕ, вĕсенчен 4 çамрăк Тăрăн ял тăрăхĕнчен тухнă. Вĕсем çаксем:

1. Васильев Алексей Васильевич – Тăрăн ялĕнчен;
2. Сорокин Илья Терентьевич – Тăрăн ялĕнчен;
3. Никифорова ИринаНикифоровна – Тăрăн ялĕнчен;
4. Григорьев Трофим – Кĕçĕн Патăрьел ялĕнчен.

(«Авангард» хаçатран – 23.04. 2008 ç.)

XX-МĔШ ĔМĔР ПУÇЛАМĂШĔ: СТОЛЫПИН ÇĔР РЕФОРМИ. РЕВОЛЮЦИ. ГРАЖДАН ВĂРÇИ. СОВЕТСЕМ ЙĔРКЕЛЕННИ

XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ çĕршывра революци юхăмĕ сарăлнипе, Японипе Раççей çĕршывĕсен хушшинчи вăрçă пулнипе тата Столыпин çĕр реформипе палăрса тăрать.

1906-мĕш çулта Министрсен Совечĕн Председателĕ пулма П.А. Столыпина лартсан, вăл хресченсене хăйсен ятак çĕрĕсемпе община çĕрĕ çинчен хуторсене тухма, çĕршывăн хĕвел тухăç енчи ирĕк çĕрсем çине куçма ирĕк парать, ун пирки саккунсем кăларать. Çак саккунсемпе усă курса пирĕн районта та хăш-пĕр ялсенчи хресченсем хуторсене туха-туха ларнă, хресчен банкĕсем вĕсене çĕр сутăн илме кредит панă.

Çĕпĕрти районсене Пăвапа Кăрмăш уесĕсене кĕрекен 9 чăваш вулăсĕсенчен хресченсем уйрăмах 1909-мĕш çулта йышлăн куçса кайнă. Паллах, çав 300 хуçалăх шутĕнче хальхи Патăрьел районĕнчи Тăрăн ял тăрăхне кĕрекен ялсенчи хресчен çемйисем те пулнă. Тен, пирĕн аякри тăвансем паянхи кун Çĕпĕрти Иркутск, Тĕмер облаçĕсенче, Красноярск крайĕнче тата ытти тăрăхра тăван чĕлхене пĕр сăмах пĕлмесĕр, мăн аслашшĕсен çуралнă Чăваш ен çинчен нимĕн те чухламасăр пурăнаççĕ. Çавăн пекех эпир те вĕсем çинчен тăванла çыхăну пĕр ĕмĕр хушшинче татăлнипе пĕлес те çук. Аякри тăвансем пирки кăна мар, чылай чухне виççĕмĕш сыпăкри тăвансем пирки те пĕлместпĕр вĕт. Хуласенче пурăнакан çамрăксенчен чылайăшĕ ашшĕ-амăшĕ калаçнă чăваш чĕлхине ăнланмаççĕ те. Ентешлĕх, тăванлăх туйăмне çухатса пымастпăр-ши малашне?

1910–1911-мĕш çулсенче Чĕмпĕр кĕпĕрнинче килрен киле çӳресе халăх йышне (перепись) шута илессине йĕркелесе янă, çавăн пекех унăн ĕçĕ-хĕлĕ çинче те чарăнса тăнă, ку ĕç Пăва уесĕнчи ялсенче 1911-мĕш çулта пулса иртет.


1914-мĕш çулта кĕпĕрне земствин статистикă пайĕн асăннă перепиç пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх Пăва уесĕнче 19 вулăс, вĕсенче 284 ял тата 40 поселокпа хутор пулнă. Чи пысăккисен шутне ун чухне Турханпа (29 ял) Патăрьел (28 ял) вулăсĕсем кĕнĕ пулсан, чи пĕчĕккисен шутне Шăнкăртам вулăсĕ (6 ял) кĕнĕ. Халăха наци енĕпе илес пулсан асăннă уесра чăвашсем 43,6%, тутарсем 36,61%, вырăссем 15,8%, мордва 4% шутланнă.

1913-мĕш çулхи январĕн 01-мĕш тĕлне Чĕмпĕр кĕпĕрнинче 2000097 çын пурăннă, вĕсенчен арçынсен шучĕ – 987296, хĕрарăмсем – 1012801. Пăва уесĕнче 123447 арçын, 120772 хĕрарăм пурăннă. Чĕмпĕр хулинчен 102 çухрăмра, Пăва хулинчен 42 çухрăмра вырнаçнă Тăрăн ялĕнче 146 хуçалăхра (килте) 395 арçынпа 378 хĕрарăм шутланса тăнă. Ку ялта чиркӳ, земство шкулĕ, обществăлла арман пулнă. Кĕçĕн Патăрьелĕнче 83 килте 236 арçынпа 209 хĕрарăм, Треньелĕнче 86 килте 266 арçын, 242 хĕрарăм пурăннă, ку ялта чиркĕвĕн прихут шкулĕ пулнă.


Шкулта вĕренекен кашни ача-пăча пĕлет ĕнтĕ, Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче чăваш халăхĕн легендарлă комдив, Георгий хĕресĕн тулли кавалерĕ В.И. Чапаев паттăрлăх кăтартнă. Вăл вăрçăччен патша çарĕнче хĕсметре тăнă. Салтака кайма ят тухсан, çывăх тăванĕсенчен, ял-йышран уйрăлса патша çарне салтак тивĕçне пурнăçлама кайма тивнĕ.

Ĕлĕкхи вăхăтра чăваш çынни ялтан аякка пĕр пĕлмен çĕре тухса кайма хăранă пулсан, теприсем вара вырăсла калаçма-çырма пĕлекенсем, хăюллăраххисем аякри хулана та çитме пултарнă. Унта пĕр-пĕр кантура е патшалăх учрежденине ĕçе вырнаçнă. 1904 çулта ӳкерттернĕ тепĕр сăнӳкерчĕкре ятарлă тумтир тăхăннă ура çинче тăракан Самакин Петр Николаевича курма пулать. Вăл ун чухне Мускавра Бутырка тĕрминче надзиратель пулса ĕçленĕ. Унпа юнашар лараканни – Василий шăллĕ.





Сăнӳкерчĕк çинче патша çарĕн салтак тумне тăхăннă виçĕ çамрăк хушшинче сылтăм енче Тăрăнта çуралса ӳснĕ Самакин Василий Николаевич ефрейтор хăйĕн юлташĕсемпе тăрать. Сăнӳкерчĕке 1905–1909 çулсенче чикĕ сыхлакан чаçра хĕсметре тăнă чухне ӳкерттернĕ.



Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче пирĕн ентеш В.И. Чапаев пек паттăрлăх кăтартнă чăваш çамрăкĕсем сахал мар пулнă. Вĕсен хушшинче Тăрăн ялĕнче пурăннă А.П. Лялькин та çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Çав вăрçăра вăл лашапа турттаракан тупă артиллерисчĕ пулнă, тăшмана хирĕç çапăçса паттăрлăх кăтартнăшăн Георги хĕресне тивĕçнĕ. Александр Павлович (Çăпата

Санюк) мăшăрĕпе икĕ хĕр ӳстерсе çитĕнтернĕ, ĕмĕрне ялта ирттерсе 94 çула çитичченех пурăннă.

1917-мĕш çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче Петербургра буржуалла-демократи революцийĕ çĕнтернĕ, çакна Раççейри чылай политикăлла партисемпе юхăмсем кĕтмен те. Пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче Г.Е. Львов кнеç пуçарнипе Вăхăтлăх правительстви йĕркелесе янă. Çав куннех II-мĕш Микула патша хăй патшалăха ертсе пырассине пăрахăçланă. Çĕршывра икĕ влаç пуç пулса тăрать: революцинче çĕнтернĕ рабочисемпе салтаксен Совечĕсемпе Патшалăх Думин буржуази йĕркеленĕ Вăхăтлăх Комитечĕ. Эсерсемпе меньшевиксем хĕтĕртнипе Вăхăтлăх правительстви йĕркеленет, ăна А.Ф. Керенский ертсе пынипе вăхăта вăраха тăсмасăр кĕпĕрнесемпе уес центрĕсенче хăйсен çыннисенчен тăракан комиссарсем лартма пикенеççĕ. Вĕсем уес пĕлтерĕшлĕ пур хулара тенĕ пекех влаça алла илеççĕ. Чĕмпĕрте Вăхăтлăх Правительство Комиссарĕ пулма Пăва уесĕнчи Ф.А. Головинский çĕр улпутне, Пăва уесĕнче – Земски Управа председателĕ пулнă Персианов çĕр улпутне лартаççĕ. Çĕртме уйăхĕнче уесра та, вулăссенче те, çав шутра Патăрьелĕнче те çĕр комитечĕсем йĕркелеççĕ. Вулăс правленийĕ вырăнне вулăс комитечĕ туса хураççĕ. Кĕске вăхăт хушшинче ялсенче те çĕр комитечĕсем йĕркелеççĕ, вырăнти влаç вĕсен аллине куçать.

1917-мĕш çулхи утă (июль) уйăхĕн 20–28-мĕш кунĕсенче чăваш интеллигенцийĕ пуçарнипе Чĕмпĕр хулинче Пĕтĕм чăваш нацин съезчĕ иртет. Унта Хусан, Чĕмпĕр, Самар, Уфа, Саратов кĕпĕрнисен представителĕсем (учительсем, юристсем, священниксем, офицерсемпе салтаксем, хресченсем) хутшăнаççĕ. Делегатсем икĕ пая уйрăлса кайса, ытларахăшĕ эсерсен енне куçнă. Çавна пулах ăна каярах буржуалла-националистсен съезчĕ тесе йышăннă, эсерсем 1918-мĕш çулхине те Граждан вăрçиччен Советсен органĕсенче ертсе пынă.

1917-мĕш çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕнче Петроградра социализмла революци çĕнтерет, влаç В.И. Ленин (Ульянов) ертсе пынипе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ аллине куçать. СНК пĕрремĕш председателĕ те вăлах пулать. Çак асăннă революцие пирĕн ентешсем те хутшăннă. Кун пирки пирĕн паллă журналист И.М. Матросов районта тухса тăракан «Авангард» хаçатра 1976 çулхи утă (июль) уйăхĕн 31-мĕшĕнче пичетленнĕ «Атте революцие хутшăннипе мухтанатпăр» ятлă статьяра Кĕçĕн Патăрьел ялĕнче пурăннă И.В. Хураськин Октябрьти революцие хутшăнни пирки çапла çырать:

«Пурăннă вăхăтра Иван Владимирович Хураськин, тен, каласа панă та пуль хăйĕн флотри службби çинчен кама та пулин. Анчах та халь никамран та ыйтса пĕлеймĕн. Пĕр вăхăталла çуралнисем пурте вилсе пĕтнĕ. Ашшĕн аслă пиччĕшĕ Тихон Владимирович Владимировран ыйтса пĕлнĕ вĕсем, вăл мĕн илтни-астунине. Çынран çынна куçса пыракан сăмах тăрăх, тăванĕсем – Яков Хураськинпа Дмитрий Владимиров тата Никита Долматов – ывăлне Александр Ивановича ашшĕ çинчен кăштах каласа кăтартнă. Юрать-ха, амăшĕ тирпейлĕ хĕрарăм пулнă. Упăшкин хăш-пĕр документчĕсене упраса хăварнă. Çавсем тата архивран ярса панă документсем каласа параççĕ те ĕнтĕ Кĕçĕн Патăрьел çынни И.В. Хураськин Октябрьти революцие хутшăнни çинчен.

Тĕреклĕ хул çурăмлă, çирĕп чун-хавалăлă, вашават каччăна 1915 çулта Балти флотне службăна илнĕ. «Петропавловск» линкор çинче унпа пĕрле ытти чăвашсем те пулнă. Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче халăх юнĕ ахаль юхнине рабочисемпе салтаксем тата матроссем уçăмлăн ăнланса илнĕ. Çар çыннисем те пăлханма пуçланă. Карапсем çинче те большевиксем революци ĕçне вăйлатнă. Листовкăсем сарнă, патша саманине çапса аркатмашкăн тимлесех хатĕрленме чĕннĕ вĕсем матроссене. Вĕсен хĕрӳ сăмахне пирĕн ентешсем те хапăл туса йышăннă. «Рюрик», «Олег», «Баян», «Богатырь» крейсерсемпе ытти карапсен команди, Ревельти рабо-

чисем, 1917 çулхи март уйăхĕнче забастовка пуçласан, вĕсемпе пĕрле восстание хутшăнни тата хавхалантарса янă вĕсене. Хураськин службăра тăнă «Петропавловск» линкор çинчи матроссем те кĕрешĕве çĕкленнĕ. Карапсем çинче те, портра та, крепоçре те хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшме пуçланă. Пур çĕрте те командирсене, судовой комитетсене суйлама пуçланă. «Петропавловск» линкор çинче большевиксен майлисем уйрăмах йышлă пулнă. Кунта парти организацийĕнче Октябрьти революцие хатĕрленнĕ кунсенче, большевиксен йышĕ 160 çынна çывхарнă. Вĕсем Вăхăтлăх правительство умне хресченсене çĕр парас тата империализм вăрçине чарас пирки ыйтăва çирĕп лартма чĕннĕ. Вăхăтлăх правительство июльти событисем хыççăн большевиксене хирĕç тата вăйлăрах кĕрешме тытăннă. Революци майлă чаçсене хĕç-пăшалсăрлантарма пуçланă. Влаçсем Ленина тытса хупма тата суд тума приказ панă. Восстание хутшăннă моряксене айăплама хăтланнă. Вăхăтлăх правительство кама та пулин арестлес пулсан, матроссем хĕçпăшал тытса кĕрешме хатĕррине пĕлтереççĕ. «Петропавловск» линкор командинчи моряксем Октябрьти революцие активлă хутшăнса Петрограда отряд яраççĕ. Хĕрлĕармеецсемпе пĕрле çĕр каçиччен Нева çинчи кĕперсене йышăнаççĕ, вара Тĕп почтамта, государство банкне, телеграф станцине, Балти вокзалне тытса илеççĕ. Восстание хутшăннисен вăйĕ хушăнсах пырать. Октябрĕн 25-мĕшĕнче, çутăлнă тĕле хулари чи кирлĕ объектсем пурте тенĕ пекех революци матросĕсемпе салтаксен аллине куçаççĕ.

Анчах та Зимний Дворецра Вăхăтлăх правительство пулнă-ха. Советсен иккĕмĕш съезчĕ уçăличчен ăна парăнтарса влаçа халăх аллине пама тивнĕ. Каçхине «Аврора» çинче тупă сасси кĕрлесе кайсанах, восстание хутшăннисем татăклă кĕрешĕве çĕкленнĕ. Çурçĕр иртсе икĕ сехет çитеспе пусмăр тĕнчине сирпĕтсе аркатнă. Октябрьти революци çĕнтерни çинчен хыпар çав кунах çĕршывĕпех çиçĕм пек сарăлнă. Çав хыпар çитсен ял-

йыш мĕнле савăнасса шутласа Хураськин матрос та революцишĕн малалла кĕрешме тупа тунă, чухăн хресченсем çĕрлĕ пуласси алăри хĕç-пăшала çирĕпрех тытма хистенĕ ăна. Революци тăшманĕсем пуç çĕклессе туйнă вăл. Октябрьти хĕç-пăшаллă восстани вăхăтĕнче фронта тарнă Керенский Петроград çине Краснов генералăн ултă корпусне ертсе килнĕ. Хулара юнкерсем пăлхав пуçланă. Пысăк хăрушлăх тухса тăнă революци умне. Балти морякĕсем ăна юн ăшне путарма паман. «Петропавловск» линкор команди те хастар кĕрешнĕ ирсĕр шухăш тытнă тăшманпа. Столицăра çĕнтернипе кăна мар, пур çĕрте те совет влаçĕ туса хумалла-çке. Балти морякĕсем çуралнă вырăнсене таврăнса революци майлисене хăйсем тавра пĕтĕçтереççĕ.

Тăван яла таврăнсан, Иван Хураськин матроса Патăрьел вулăс ĕçтăвкомĕн членне суйлаççĕ. Совет влаçне тĕреклетессишĕн ырми-канми тăрăшать вăл. Ытти активистсемпе пĕрле хресченсене çĕр валеçет, хула халăхĕ валли тырă хатĕрлет. Кулаксен тискер ĕçĕсене хирĕç кĕрешет. Тăван çĕршыв çине интервентсем тапăнсан, Граждан вăрçине каять. Балти матросĕ хăюллă çапăçать фронтра. Таврăнсан Сикасси тата Патăрьел вулăсĕсенче çар комиссарне лартаççĕ ăна. Каярахпа вулăсри милицире ĕçлет. Ялти суту-илĕве çĕнĕлле йĕркелес тĕлĕшпе нумай вăй хурать. Промысла союзĕнче, ун хыççăн облпотребсоюзра тăрăшать...»

Большевиксем влаça илнĕ хыççăнхи пĕрремĕш историлле документ вăл – çĕр çинчен йышăннă Декрет пулнă. Çак Декрет тăрăх çĕр улпучĕсемпе капиталистсен, чиркŭсемпе мăнастир çĕрĕсене туртса илсе патшалăх аллине параççĕ.

1917-мĕш çулхи раштав уйăхĕнчен тытăнса Чĕмпĕрте влаç Советсен аллине куçма тытăнать. 1918 çулхи кăрлач уйăхĕн 20–25-мĕшĕсенче Чĕмпĕр кĕпĕрнинче хресченсен съезчĕ пулса иртет, унта делегатсем Советсен влаçне йышăнаççĕ. Кĕпĕрне Совечĕн пĕрремĕш председателĕ пулма М.А. Гимов большевика

суйлаççĕ. Съезд уессемпе вулăссенче те Совет влаçĕн выраннти органĕсене йĕркелес пирки хушса хăварать. Çапах та 1918-мĕш çулхи ака уйăхчен вулăссемпе ялсенче Совет влаçĕ йĕркеленсех каяйман-ха.

Пăва уес Совечĕн пĕрремĕш председателĕ пирки пирĕн ентеш паллă таврапĕлӳçĕ И.Н. Ильин хăйĕн нумай пулмасть кăна тухнă «Сăкăт» кĕнекинче Иван Кузьмич Скрипинăн «Пăва таврашĕнче» аса илĕвне тĕпе хурса çапла çырать (стр.102): «*Пăва уесĕнче рабочисемпе хресченсен депутачĕсен пĕрремĕш съезчĕ 1918 çулхи нарăсăн 2-мĕшĕнче уçăлать. Съезд 12 кун ĕçлет. Чи малтанах съезд Пăвара «Халăхăн çирĕп влаçĕн Советне» – «Совет Народной твердой власти» туса хума тата нарăсăн 19-мĕшĕнче «Пысăк Совет» – «Большой Совет» ирттерме йышăнать. (Съезд ĕçлени 19 кун та пулса тухать – Д.К.) Съезд 26 çынран уес Совечĕн ĕçтăвкомне тата унăн президиумне суйлать. Президиум председателĕ Скрипин – вырăс, унăн çумĕ Крылов – чăваш, çыруçи Султанов – тутар. Съезд ĕçтăвком пайĕсен Комиссарĕсене те çирĕплетет. Вĕсем çаксем: Назаров – çар ĕç, Юркин – çĕр ĕç, Кочетков – шалти ĕççем, Космовский – финанс, Емельянов – халăх хуçалăхĕ, Карзанов – социалла пулăшу, Салабаев – апат çимĕç, Андронкин – сывлăх, Павлов – çут ĕç, Розов – судпа следствии пайĕсен комиссарĕсем*».

Кунта çакна асăнса хăварсан выраннă пуль тесе шутлатăп. И.К. Скрипин аса илĕвĕ тăрăх малтанхи съезд 1918-мĕш çулхи нарăс уйăхĕнче иртнĕ, тейĕпĕр, вăл уес председателĕ пулса вулăссенче тата ялсенче Советсем йĕркелесе ярас пирки хушусем кăларнипе те çирĕпленсе тăрать. Сăмахăм манăн акă мĕн пирки. И.К. Скрипин хамăр тăрăхри хальхи Шăмăршă районĕнчи Вырăс Чукал ялĕнче вырăс семйинче 1882-мĕш çулта çуралнă. Кайран вăл сулахай эсерсен партине кĕнĕ. Асăннă съезд çапах та юлашки пулман. «История Чувашии новейшей времени 1917–1945 г.г., кн.1», авторĕсем А.В. Изоркин, В.Н. Клементьев, Г.А. Александров.

ЧГИГН, Чебоксары, – 2001 г., кĕнекепе паллашсан çакна курма пулать: *«В Буинске последний съезд Советов состоялся 5 июня 1918 г.; среди делегатов было 12 большевиков, 38 левых эсеров, 54 беспартийных; крестянство идет за левыми эсерами; председателем избран левый эсер И.К. Скрипин»*.

Паллах, вăл вăхăтра большевиксем (кĕпĕрне председателĕ М.А. Гимов та большевик пулнă терĕмĕр) урăх партин членĕсем уессемпе вулăссенче Совет влаçне ертсе пыракан пулнипе килĕшме пултарайман. Çавăнпах-тăр тĕрлĕрен сăлтав тупса Пăва уесĕнче çав çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕнче тепĕр хут съезд ирттернĕ. Анчах та куратпăр ĕнтĕ, партинче тăман хресченсем ун чухне большевиксемшĕн икĕ хутчен ирттернĕ съездра та хăйсен сассисене паман.

Кун пек тĕслĕхсем Хусан кĕпĕрнинчи уессемпе вулăсри Советсене йĕркеленĕ чухне те пулнă. Çавăнпах ĕнтĕ, Пĕтĕм Раççейри Советсен съезчĕ большевиксем ертсе пынипе Советсенчен хăйсен унченхи союзникĕсене – сулахай эсерсене, кăларса яма йышăнать.

Пăва уесĕн председателĕ И.К. Скрипин, сулахай эсер пулсан, та хăйне суйланă делегатсен шухăшĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшнах пуль, вулăссемпе ялсенче Совет влаçне йĕркелес тесе васкавлă мерăсем йышăнас пирки вăл вулăссене телефонограммăсем ярать.

Срочно: Во все волости!

Телефонограмма от Совета солдат рабочих и крестьянских депутатов Буинского уезда.

24.03.18 г.

С получением сего предписываю немедленно сообщить: организованы ли на местах волостные и сельские Советы согласно Инструкции, высланной уездным Советом.

Председатель

Буинского уездного СНК Скрипин И.К.

(*Национальный архив РТ; ф.143, оп., ед.хр.11*)

Асăннă телефонограммăна илнĕ çĕре Патăрьел вулăсĕнче те Совет влaçĕн органĕсене йĕркелеме тытăнaççĕ; рабочисемпе салтаксен пĕрремĕш съезчĕ кунта пуш уйăхĕн 21–24-мĕшĕсенче иртет. Съезд протоколĕнче çапла çырнă: *«На Волостной Совет явились избранные сельскими Советами представители селений от 300 избирателей 1 представитель. Председателем Волостного Совета избран единогласно учитель Туруновского училища Петров Петр Петрович».*

Темĕнле сăлтава пула съезд вĕçленсе пынă кун П.П. Петров вулăс председателĕ пулма килĕшмест. Съезд вара ун выpăнне Л.Г. Селенина суйлать.

Патăрьел вулăсĕ Чăваш автономи облaçне куçиччен вулăс Совечĕн председателĕсем çаксем пулнă:

1. Петров Петр Петрович – 21.03.1918–24.03.1918 (Тăpăн шкул учителĕ).

2. Селенин Ларион Григорьевич – 24.03.1918–21.06.1918 (Патăрьелĕнчен).

3. Владимиров Тихон Владимирович – 21.06.1918–29.09.1918 (Кĕçĕн Патăрьел).

4. Волков Семен Ильич – 29.09.1918 – ...10.1918 (Чăваш Ишек).

5. Маллин Игнатий Ларионович – ...10.1918–2.02.1919 (Патăрьел).

6. Ершов Федор Петрович – 2.02.1919–5.04.1919 (Патăрьел).

7. Селенин Ларион Григорьевич – 5.04.1919–...12.1919 (Патăрьел).

8. Шаровский Яков Константинович – ...12.1919–15.06.1920.

(*Район 80 çул тултарать, автор Ильин И.Н. «Авангард» хаçатран, 20.10.2007 çул.*)

Малтанах палăртнăччĕ ĕнтĕ, Совет органĕсене Патăрьел вулăсĕнче кăна мар, çав вăхăталлах вулăса кĕрекен ялсенче те суйлаççĕ.

Патăрьел ялĕ тăpăх: Председатель пулма Петр Сафьянова суйланă;

Товарищ (заместитель – Д.К.) председателя – Степан Викторов.

Секретарь – Василий Маллин.

Кĕçĕн Патăрьел: Председатель – Егор Григорьев.

Тов. председателя – Семен Рубцов.

Секретарь – Яков Илюткин.

Тăрăн ялĕ тăрăх: Председатель – Матвей Искачкин.

Тов.председателя – Иван Грешев.

Секретарь – Дмитрий Лясихин.

Треньел: Председатель – Федор Юманов.

Тов.председателя – Федор Мясников.

Секретарь – Иван Юманов.

Патăрьел вулăс ĕçтăвкомĕ 1918-мĕш çулхи утă (июль) уйăхĕн 21-мĕшĕнче ялсенче чухăнсен комитечĕсем йĕркелес пирки ыйту пăхса тухнă. Асăннă ялсенчи чухăнсен комитечĕсен членĕсем çаксем пулнă:

Патăрьел ялĕ тăрăх: Василий Викторовпа Кирилл Маков.

Тăрăн ялĕпе: Николай Петров, Александр Ялуков, Василий Матвеев.

Треньел ялĕпе: Михаил Федоров, членĕсем: Тимофей Михайлов, Саватий Яковлев, Митрофан Иванов.

(*Из истории Батыревского района и Юго-Востока Чувашии, автор В.В. Владимиров (Наперсткин), стр. 31 – чăвашла куçарса – Д.К.*)

ПИРĔН ТАВРАРА ХĔРЛИСЕМПЕ ШУРРИСЕМ ÇАПĂÇНИ ÇИНЧЕН АСА ИЛӲСЕМ. ХĔРЛĔ ÇАР КОМИССАРĔ П.Е. КРЕПКОВ

1918-мĕш çулхи авăн (август) уйăхĕ. Çамрăк Совет республики умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă. Шурă гвардеецсем Çĕпĕре, Урала, Атăл тăрăхне туртса илнĕ те пирĕн çĕршыва чĕр таварпа апат-çимĕç çăл куçĕнчен татнă. Тăшман Тăван çĕршывăн тĕп хулине – Мускава çитме ĕмĕтленнĕ. Çак вăхăталла вĕсем Атăл тăрăхĕнчи чылай хуласене тытса илнĕ. Августăн 7-мĕшĕнче вара Хусана кĕнĕ.

Çак йывăр кунсенче Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Халăх комиссарĕсен Совечĕ тăшмана хирĕç кĕрешме халăха çĕкленĕ. В.И. Ленин Хĕвел тухăç фронта чи тĕп фронт тесе шутланă, çавăнпа та пĕтĕм вăя çак фронта çирĕплетме янă.

Шурă гвардеецсемпе шурă чехсем Хусана илнĕ хыççăн, Чăваш çĕршывĕ фронт çывăхĕнчех пулнă, шуррисемшĕн ку вара чи кирли шутланнă. Вĕсем Сĕве–Шăхран (Канаш), Шăхран–Улатăр чугун çулĕсене тытса илсе тата 1-мĕшпе 2-мĕш Арми чаçĕсене çĕмĕрсе тăкса, Мускава çитме тĕллев лартнă.

Контрреволюционерсем хăйсен планне хăвăрт пурнăçлама çине тăрсах тăрăшнă. Вĕсем Совет çарĕн Улатăр ушкăнне кĕрекен хĕрлĕ армеецсен отрячĕсене юлашки хут вирлĕн пырса çапма шут тытнă. Улатăр ушкăнĕн командованийĕ тăшман шухăшне вăхăтра сиснĕ те унăн çарне хирĕç Йĕпреç станцийĕнчен П.Е. Крепков комиссар ертсе пыракан отряда кăларса янă. çак отряд Аслă Патăрьел ялне çитсе вырнаçнă та кӳршĕ ялсене разведчиксем ярса сăнама тытăннă. Разведчиксем шурă гвардеецсен пысăк отрячĕ Пăва хулинчен тухса Аслă Патăрьел еннелле пыни çинчен пĕлтернĕ.

Августăн 27-мĕшĕнче П.Е. Крепков хăйĕн отрядне Аслă Патăрьелĕнчен Кĕçĕн Патăрьелне илсе пынă, мĕншĕн тесен Пăла шывĕ пӳлсе тăнă пир-

ки Аслă Патăрьелĕнче юлма хăрушă пулнă. Çак яла çитсенех комиссар хресченсене пухнă та вĕсен умне тухса хумхануллă хĕрӳ сăмах каланă. Хресченсем Совет влаçĕн декречĕ çинчен, шурă гвардеецсемпе интервентсен тата Хĕрлĕ çаран планĕсем çинчен каланине питех те тимлĕн итленĕ. Пуху хыççăн П.Е. Крепков часовойсене пăхса тухнă, пулеметсене тĕрĕсленĕ, пурте йĕркеллех пулнине кура канма кайнă. Çав каçхинех кулаксем шурă гвардеецсене хирĕç Хĕрлĕ çар ялта пурри çинчен пĕлтерме кайнă. Кĕçех тăшман хĕрлĕ армеецсем ăçта вырнаçнине пĕлнĕ те çула тухнă. Шурă гвардеецсен пилĕк çĕр штыкран тăракан отрячĕ Алманчă ялĕ таран пĕр ушкăнпа пынă, ял çывăхне çитсен вара икĕ пая уйрăлнă. Пĕрремĕш ушкăнĕ Тутарпа Чăваш Сăкăчĕсем тата Шăнкăртам патĕнчен иртсе, Пăла шывĕ урлă каçнă, Тăрăн витĕр тухса Кĕçĕн Патăрьел çывăхĕнче вырнаçнă, тепĕр ушкăнĕ вара Аслă Патăрьелĕнче вырнаçнă.

Кун каçиччен ĕшеннĕ хĕрлисен часовойĕсем ир енне тĕлĕрсе кайнă. Çакăнпа усă курса тăшман салтакĕсем наступлени пуçланă. Çывăракан хĕрлĕ армеецсем пулеметран пенĕ сасăпа вăранса урама чупа-чупа тухнă. Анчах та кая юлнă, йĕри тавраллах тăшмансем пенĕ. Çак хăрушă самантра комиссар хăраса ӳкмен, тăшман ункинчен хăюллă çапăçса тухма шут тытнă. Вăл ертсе пынипе боецсем малалла ыткăннă та пысăк йывăрлăхсем витĕр таса уя тухнă. Кунта вĕсем çил арманĕ патĕнче чарăнса тăшмана хирĕç пулеметсемпе пăшалсенчен пеме тытăннă. Комиссар аманнă, çапах та вăл аллине çыхса çапăçăва малалла ертсе пынă. Вăйсем ытла та тан мар пулнă. Хĕрлĕ армеецсен пĕчĕк ушкăнĕ шурă гвардеецсене хирĕç паттăрăн çапăçнă, анчах тăшман пулемечĕ П.Е. Крепкова вилмеллех амантнă. Кĕçех Хĕрлĕ çаран çĕнĕ вăйĕсем килсе çитнĕ те тăшман атакине сирсе янă.

Çапла харпăр хăй пурнăçне шеллемесĕр П.Е. Крепковпа унăн çапăçури тусĕсем тăшмана пирĕн страте-

гилле çар базисемпе коммуникацисем патне яман, ӗмӗр манăçми паттăрла ӗç тунă.

(*М. Румянцев. Ӗмӗр манми паттăрла ӗç. «Авангард» хаçат, 28.08.1963 çул.*)

XX-мӗш ӗмӗр пуçламăшӗнче историе кӗрсе юлнă Граждан вăрçин пирӗн тăрăхра пулса иртнӗ çапăçура Хӗрлӗ çарпа унăн комиссарӗ П.Е. Крепков паттăрлăхӗ пирки çулсем иртнӗçемӗн аса илсе хаçатсемпе кӗнекесем страницисенче сахал мар кун çути курнă, çав çапăçу паттăрӗсене, çывăхри ялсенче пурăннă çынсен асаилӗвӗсем тăрăх, паян пурăнакан ăрусем патне çитернӗ. Вӗсенчен пӗри – В. Владимиров, Патăрьел районӗнчи Кивӗ Катек ялӗнче çуралса ӳссе, чылай çул хушши районти шкулсенче учитель, директор пулса ӗçленӗскер, пирӗн тăрăхри паллă таврапӗлӳçӗ. Вăл Юхма енче çак Граждан вăрçин кӗске самантне курнă-илтнӗ çынсемпе тӗл пулса, пирӗншӗн истори пӗлтерӗшлӗ материалсем пухса хаçат страницисенче вулакан патне çитернӗ. Пӗтӗм Раççейри историпе культура палăкӗсене сыхлакан обществăн районти уйрăмӗн председателӗ пулнă май, вăл пӗрре кăна мар историлле пӗлтерӗшлӗ палăксене пăхса, вӗсене юсаса тирпей кӗртес, çамрăк ăрăва çӗнӗ пурнăçшăн çапăçса вилнӗ паттăрсене хисеплеме вӗрентес пирки выränти парти тата Совет органӗсен пуçлăхӗсене, хуçалăх ертӳçисене, шкулсенчи вӗрентекенсене час-часах хаçат страницисенче аса илтеретчӗ. Паян-ыран пурăнакансен, паллах, чылайăшӗн ячӗ-хушмачӗ пирӗншӗн паллă пулмасан та, çӗнӗ пурнăçшăн пуçӗсене хунă паттăрсене манас марччӗ.

Виталий Владимирович Владимиров 35 çул каялла «Крепков çулӗпе» ятлă документлă очеркра Кӗçӗн Патăрьел патӗнче пулса иртнӗ çапăçу çинчен çав вăхăтри çынсем аса-илӗвӗсем тăрăх хамăр районта тухса тăракан хаçатра çапла çырать. Вулакан патне ăна кӗскетсе пичетлес терӗм.

«... Петр Егорович Крепков çинчен пуçланă каласӑва малалла тăсиччен, хисеплĕ вулаканăм, 60 çул каяллахи Йĕпреçе, вăхăтлăха та пулин, хамăр ума кăларар-ха. Паллах, паянхи пек асфальт сарнă урамсем, капмар кӳлепеллĕ çурт-йĕрсем, промышленность предприятийĕсем пулман ун чухне. Шухă çиле икĕ еннелле çурса, хăватлă тепловозсем те Йĕпреç витĕр иртмен, талăкра пĕр е икĕ хутчен хăй вăл-халĕпе нимĕн чухлĕ те мухтанма пултарайман пăравус кăна, мĕскĕннĕн çухăрта-çухăрта, Шăхрана е Улатăра çул тытнă. Улатăр–Сĕве чугун çул тăрăх Йĕпреçе Улатăртан полк килсе çитнĕ. Ăна «Улатăр» ят панă. Ку вăл 1918 çулта, Йĕпреçре Совет влаçĕ çирĕпленнĕ хыççăн пулнă. Çав вăхăтра Йĕпреç Пăва уесĕнчи Хумпуç Патăрьел вулăсне кĕнĕ. «Улатăр» полка Хĕрлĕ çарăн Улатăрти çар ушкăнĕн командующийĕ В.Г. Пеньевский ертсе пынă. Полк хуçалăхĕ больница таврашĕнче вырнаçнă, унтах кавалеристсем те тăнă.

Кунта Йĕпреç поселокĕнче пурăнакан В.П. Крылов пенсионер асаилĕвĕ те выраннă. «Полк çулла килчĕ. Унпа пĕрлех И.С. Космовский, П.Е. Крепков тата ытти хĕрлĕ комиссарсем персе çитрĕç. Анчах эпир Космовскипе Крепков юлташсене çеç аван пĕлнĕ, вĕсем Пăвара чухнех çар комиссарĕсемччĕ».

Йĕпреçрен вăрман урлă Патăрьелнелле çул выртать. Çак çулпа «Улатăр» полк командованийĕ Юхма тăрăхне васкасах пысăк отряд янă. Ăна ертсе пыма П.Е. Крепкова шаннă, вăл ку тăрăха лайăх пĕлнĕ. Петр Егорович Патăрьел вулăсĕнчи Татмăшра виçĕ çул ачасене вĕрентсе пурăннă, пĕр вăхăт Треньел ялĕнчи шкулта та ĕçленĕ, Ишлĕ-Шетмĕре те çулталăк хушши пулнă.

Мĕншĕн-ха хĕрлисен отрячĕ Патăрьел енне васканă? Шуррисем çав вăхăтра Йĕпреç станцине тытса илессишĕн тапаçланнине пĕлсен, «Улатăр» полк командирĕ Кениг, Ваврженкович хĕрлĕ комиссар салтаксем умне çирĕп тĕллев кăларса тăратнă: тăшмана мĕнле пулсан та чугун çул çывăхне тухма памалла

мар, ăна станцирен аяккарах выränта хĕссе лартса пуçĕпех аркатмалла. Тĕп çулпа фронта хĕç-пăшал, чĕрĕ вăй ăсатакан пуйăссене «яланах симĕс» урам кирлĕçке. Акă мĕншĕн Крепков отрячĕ, Йĕпреçрен пăränса, Патăрьелне выртакан çул çине тухнă. Йĕпреçе килнĕ Космовский хăй отрячĕпе пĕрле каялла Улатăра кайнă, вăл Улатăртан Пăва çине наступлени тунă чух кирлĕ пулнă.

1918 çулхи çурла уйăхĕн юлашки кунĕсем тăнă. Кăвак çуттиллĕ тӳперен хĕртсе пăхакан хĕвел анкартисемпе йĕтемсем çинче авăн çапакан, тырă выракан хресченсене пĕр шеллемесĕр пĕçертнĕ. Крепков отрядĕнче хресченсем нумай пулнă. Вĕсен те халĕ пикенсех тырă вырасси, тăпачăпа авăн çапасси килсе кайнă. Анчах та нимĕн те тума çук, малтан тăшмана çапса салатмалла. Çак шухăшах канăç паман уйра ĕçлекен çынсене те. Вĕсем отряд иртсе пынине курсан тулли шанăçпа малалла пăхакан салтаксене ăшшăн-ăшшăн саламланă, чылайăшĕ алăри çурла-тăпачăна пăрахса, хĕç-пăшаллă çынсен йышне кĕнĕ. Вырăс Тимешпе Чăваш Тимеш ялĕсенчен кăна Крепков отрядне 20 ытла çын çырăннă. Каярахпа А.А. Лебедев, И.П. Рыжов Совет влаçне чи хастар хӳтĕлекенсем пулса тăнă.

Отряд малалла пынă, çулпа пысăк хăвăртлăхпа куçма май килмен. Тăшман Йĕпреç енне хăйĕн диверсанчĕсемпе разведчикĕсене яма ĕлкĕрнĕ. Вĕсене выränти кулаксем пулăшса тăнă. Çавăнпа та Крепков хăйĕн разведчикĕсене мала ярса пынă. Отряд пуçĕнче дозорсем куçнă. Салтаксен пĕтĕмпе те 3 станковăй пулемет çеç пулнă, вĕсене лавсем çине тиенĕ. Походнăй кухня та пĕрлех пынă. Юланутçăсен ушкăнĕнче 30 хĕрлĕ армеец пулнă, ыттисем çуран утнă.

Йĕпреçрен Патăрьелне çитме 45 çухрăм. Çул çинче тĕрлĕ чăрмавсемпе йывăрлăхсем тӳсме тивнĕ пулсассăн та, Крепков отрячĕ палăртнă выränа чиперех çитнĕ. Отряд Патăрьел вулăсĕ вырнаçнă çурт умĕнче чарăннă. Хĕрлĕ армеецсем вулăс ĕçтăвком çурчĕн крыльци

çине, унта вырнаçайманнисем вара çул çинех ларса тухнă. Патăрьелсем хĕрлисен отрядне тулли кăмăлпа, хапăлласа кĕтсе илнĕ.

Патăрьелĕнчи М.Д. Тибайкин пенсионер асаилĕвĕ интереслĕ: «Эпĕ çав вăхăтра 14 çулхи ачаччĕ. Атте çуртĕнче пурăнаттăм. Пирĕн пата Алеша тата Александр ятлă хĕрлĕ армеецсем пычĕç. Вĕсем Ростов хулинчен иккен. Питĕ хаваслă çынсемччĕ, хăйсем юланутçăсемччĕ. Тепрер сехетрен пирĕн ума кухня та çитсе чарăнчĕ. Пӳрте кĕрсе ушкăнпа чей ĕçрĕмĕр. Каç пулттипе вара хĕрлĕ армеецсен отрячĕ, Пăла шывĕ урлă хунă кĕперпе иртсе, Йăлăм Патăрьелĕнче вырнаçрĕ. Тăшман Пăва хулинчен тухса пирĕн еннелле çул тытнине пĕлчĕç пулас. Йăлăм Патăрьел ялĕ çӳллĕ вырăнта ларать, çавăнпа та кунтан тавралăх лайăх курăнать. Çĕрле эпир пăшал сассипе вăранса кайрăмăр. Атте картишне тухса кĕчĕ те: «Вăрçă пуçланнă. Переççĕ!» – тесе урай хăмине илсе пурне те тĕпсакайне анма хушрĕ, пульăсем пӳрте те кĕме пултарасран сыхланчĕ ĕнтĕ. Кăнтăрла иртсен пăшал пенисем чарăнчĕç. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, 51 хĕрлĕ армеец пуçне хунă иккен çак çапăçура. Каярахпа вара, Йĕпреçрен П. Крепков отрядне пулăшу пырса çитсен, шуррисемпе шурă чехсен ушкăнне каялла Пăва патне, унтан Атăл тăрăх хăваласа кайрĕç», – вĕçлерĕ хăйĕн калавне М.Д. Тибайкин.

Патăрьелĕнче пурăнакан А.Ф. Хохлов ватă пенсионер çапла каласа парать: «Эпĕ ун чухне вун çичĕ çултаччĕ. Отрядри салтаксене чей ĕçме чĕнтĕм. Виççĕн пычĕç, хăйсем Владимир хулинченччĕ.

1918 çулхи августăн 28-мĕшĕнче ирхине Йăлăм Патăрьелпе ытти ялсем çывăхĕнче пăшал пени, хăрушшăн кăшкăрашни илтĕнет. Патăрьелне те шуррисем лăках килсе тулнă. Эпĕ Совет ĕçтăвкомĕн секретарьне пулăшма тесе килтен тухсассăн, урамрах: «Эсĕ те Крепков отрядĕнчен пулĕ-ха»,– тесе çынсем умĕнчех хĕнесе тăкрĕç мана. Юн тухнине пăхмасăрах, иккĕшĕ карцера кайса хупрĕç. Кунта мансăр пуçне Патăрьел

вулăсĕçтăвком председателĕ пулнă Ларион Селенин, Пăва уес Совечĕн комиссарĕпе тепĕр учитель, пĕве те кĕреймен кĕтӳ ачи те пурччĕ. Патăрьел таврашĕнче çапăçу лăпланчĕ пулас: пăшал сассисем илтĕнми пулчĕç. Кун каç еннелле сулăнсан, пире пăшаллă çынсем урама илсе тухрĕç. Пăхрăм та, карцертан инçех те мар, кĕпер урлă урамра чиркӳ патне çитичченех лашасем кӳлнĕ лавсен черечĕ тăсăлнине куртăм. Сахалтан та 100 лав пур-тăр. «Шуррисем Пăва хулине тараççĕ», – мĕлтлетсе иртрĕ шухăш. Каярахпа, чăнах та, эпĕ шутлани тĕрĕсех пулчĕ. Йăлăм Патăрьел çывăхĕнчи паттăр комиссара вĕлерсен Йĕпреçрен хĕрлисене пулăшма пĕтĕм полк васканă-мĕн. Шуррисем, çакна сиссе илсенех, Пăва еннелле тарма тытăннă».

Карцертан илсе тухнă Хохловпа ун юлташĕсене те шуррисем хăйсемпе пĕрлех илсе кайнă. Çул çинче вĕсене пĕр сăлтавсăрах хĕнесе пынă. Пăва хулине каçпа çитнĕ. Уес Совечĕн хĕрлĕ комиссарне шуррисем çийĕнчех персе пăрахнă. Пăва хулине хĕрлисем икĕ эрнерен ирĕке кăларсан, Хохловпа унăн çывăх çыннисене те хамăрăннисем çитсе çăлнă. Ку вăл 1918 çулхи сентябрĕн 13-мĕш кунĕнче пулнă.

1918 çулхи августăн 28-мĕшĕнче ирхине пуçланнă тан мар тытăçура 51 (ытти çăлкуçсем тăрăх 53 – Д.К.) хĕрлĕ армеец вилнĕ. Вĕсен хушшинче Ыхра Çырминче учительте ĕçленĕ Кадир Апанаев та пулнă. Пирĕннисем юлашки юн тумламĕччен çапăçнă пулсассăн та, вăйсем тăшман енче пулнă. Пурте юратса хисепленĕ хĕрлĕ комиссар Петр Егорович Крепков та çав кунхине паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă. Кун пирки Вавренкович хăйĕн «От Свияжска до Тоболина» кĕнекинче тĕплĕн çырса кăтартнă. Паттăр комиссар сăнарне чăвашсен паллă писателĕн В.И. Краснов-Аслин «Шуррисемпе çапăçни» кĕнекинче те вуласа пĕлме пулать».

Хаçатсенчи тĕрлĕ çулсенчи статьясенче çырнă авторсем хĕрлисемпе шуррисем Кĕçĕн Патăрьел патĕнче çапăçнă чухне вĕсен йышĕ пирки тĕрлĕрен çырнă. Хĕрлĕ

армеецсен салтаксем 200-н пулсан, шурă гвардеецсен йышĕ 450-ран 600 çынна çитет. Вилнĕ хĕрлĕ армеецсем шучĕ пирки те çавах: 43-рен 53 çитет.

В.В. Владимиров 26.08.1989 ç. «Авангард» хаçатра «Паттăрсене манас марччĕ» ятпа çырнă статьяра хĕрлĕ армеецсемпе шурă гвардеецсен хушшинче çапăçу пуçланас умĕнхи тата пуçланнă вăхăтрине çывăхри ялсенче пурăннă çынсем каласа панă тăрăх çапла çырса кăтартать:

«1918 çулхи августăн 28-мĕшĕнче ватă çынсем каласа панă тăрăх, çанталăк тӳлек, каçĕ ăшă пулнă. Ир енне Сăкăт çулĕпе Патăрьелне юлануцсем, лавсем тата çуран чылай пысăк çар пырса кĕнĕ. Ку Мускав енне тапăнма хатĕрленнĕ шурă гвардеецсен малти отрячĕ пулнă. Вĕсем хăйсен умне Кĕçĕн Патăрьелĕнче вырнаçнă П.Е. Крепков комиссар отрядне çапса аркатса Хусан–Мускав чугун çул çине тухма задача лартнă. Кĕтӳ хăваланă вăхăтра Патăрьелне пырса кĕнĕ тăшмансем, Пăлан тулли шыв хĕррине Вотяков пуянăн шыв арманĕ çывăхне пырса тухнă. Çав вăхăтри событисем çинчен эпĕ тĕрлĕ вăхăтра ватă çынсемпе сахал мар калаçнăччĕ. Акă мĕн аса илнĕччĕ вĕсенчен хăш-пĕрисем:

Тăрăн ялĕнче пурăннă Алексеев: «Пирĕн çурт ун чухне Пăла хĕрринче ларатчĕ. Эпĕ ун чухне йĕкĕт çулне çитнĕччĕ ĕнтĕ, çутăласпа лупас хыçне тухрăм. Сасартăк асăрхарăм: карта урлă шинеллĕ, пăшаллă çын сиксе каçрĕ те пахча тăрăх Кĕçĕн Патăрьел еннелле чупрĕ. Ун хыççăн тепри, тата тепри... Эпĕ часрах картишне кĕрсе алăка питĕртĕм. Кусем шурă гвардеецсем пулнă иккен. Шăнкăртам енчен пырса Крепков отрядне çавăрса илме тĕллев тытнă вĕсем».

Паллах, Тăрăн ялĕ витĕр çав кун, 1918-мĕш çулхи çурла уйăхĕн 28-мĕшĕнче шуррисем ир-ирех Йăлăма куççа пынă чухне килсене кĕрсе тухнисем те пулнă. Пушăллах тухса кайман вĕсем тепĕр чухне. Пĕр тĕслĕх пирки эпĕ манăн асаттепе пĕр тăван – Коннов Тит Павлович хăйĕн ашшĕнчен илтсе каласа хăварнине

вулакан патне ҫитерес тетӗп. Унӑн ашшӗ – Куньккa Павӑлӗ, ялта пуян хресчен шутланса тӑнӑ, выльӑх-чӗрлӗх картара йышлӑ усранӑ, ҫурт-йӗр тӗреклӗ пулнӑ унӑн. Лашасем кӑна 4 пуҫ: иккӗшне вӑрман кӑларнӑ чухне, уй-хирте ӗҫсем пуҫлансан усӑ курнӑ, иккӗшӗ вара хӑвӑрт чупакан йышши лашасем пулнӑ. Вӗсене ҫулла тӑрантас урапа, хӗлле хыҫлӑ ҫуна кӳлсе аякри тӑванӗсем патне хӑнана ҫӳренӗ. Асӑннӑ кунхине шуррисем ирех тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлман вӗсен хапхине танлаттарма тытӑннӑ. Ахӑртнех, вӗсем камран та пулсан ыйтса пӗлнӗ, лайӑх лаша Куньккa Павӑлӗн пур. Кил хуҫи вӗсем патне тухсассӑн, вӗсем ун ҫине пӑшалпа тӗллесе лашине хӑй ирӗкӗпе парса яма хистенӗ. Павӑл вӗсене хирӗҫлесен, шуррисем ӑна персе пӑрахассипе хӑратнӑ, хӑйӗн юратнӑ ҫӳрен лашине унӑн ирӗксӗрех картаран кӑларса яма тивнӗ. Вӑй питти тӗреклӗ ҫемье пуҫӗ пӑшаллӑ хурахсене хӑйӗн чукмар пек аллисемпе кӑна хирӗҫ тӑрайман.

Ҫак ӗмӗрти Тӑрӑнта пурӑннӑ арҫынсенчен чи ватти Гордеев Дмитрий Романович, 1912-мӗш ҫулта ҫуралнӑскер (вӑл 96 ҫул тултараймасӑр вилчӗ), ҫапла каласа панӑччӗ пӗр тӗлпулура. Вӗсен килӗ-ҫурчӗ урам урлӑ хирӗҫ ларакан Самакин Дмитрий Васильевич ҫемйин ҫурт-йӗрӗ пекех вӑл ача чухне Йӑлӑм енчен пӗрремӗш хуҫалӑх шутланса тӑнӑ. Ҫак асӑннӑ кун ирхине ирех ҫывӑхра Тӑрӑнпа Йӑлӑм хушшинче харӑсах темиҫе пӑшал пенӗ сасӑпа вӑранса вӗсен ҫемйи ура ҫине сиксе тӑнӑ. Ашшӗ-амӑшӗ, инкек пуласран сыхланса ачисене ҫийӗнчех тӗпсакайне антарнӑ. Кӑнтӑрла иртсен кӑна, Йӑлӑм енче пӑшал-пулемет сассисем лӑплансан; малтан аслисем, кайран ачасем, кил-ҫуртран тухмакӗме тытӑннӑ.

Ҫак кун ҫапӑҫу мӗнле иртни пирки, В.В. Владимиров тӗпчевҫӗ Патӑрьелӗнчи Алексей Спиновран ыйтса пӗлнӗ тӑрӑх, вулакан патне ҫитерӗпӗр:

«Эпӗ ун чухне ҫамрӑкчӗ-ха, авланман та. Анне ӗнер ҫӑкӑр пӗҫернипе килте пӑчӑ. Ҫавӑнпа та лаша

вити маччи çинче утă çинче çывăртăм. Çутăласпа сасăсене, кăшкăрашнине пула вăранса кайрăм. Эпир ун чухне Патăрьелĕн хĕвел тухăç енче Пăла хĕрринче пурăнаттăмăр. Вите çинчен антăм та хапхана уçрăм. Пăхатăп, Алманчă енчен Пăла хĕрринелле шинеллĕ çынсем чупаççĕ, арман кĕперĕ урлă леш енне каçаççĕ. Шыв урлă ишсе каçакансем те пур. Патăрьел чиркĕвĕ çинчен Кĕçĕн Патăрьелнелле пулемет пере пуçларĕ. Эпĕ вара часрах алăка питĕртĕм те аннене кĕрсе каларăм. Вара хăраса тĕпсакайне анса лартăмăр. Кайран ыйтса пĕлнĕччĕ: пирĕн ялтан тата Катекрен чылайăшĕ çав ир пăшал пенинчен хăраса Çĕнĕ Ахпӳртелле, Çĕнĕ Ахпӳртсем Нĕркеçелле тарнă».


Архивра эпĕ Хĕрлĕ çаран Улатăрти ушкăнĕн командующийĕн Пеньевский телеграммине тупрăм. Августăн 28-мĕшĕнче вăл Арзамаса Вацетис главкома, Кобозев нарвоенкома, çавăн пекех Рузаевкăна пĕрремĕш çар командирне Тухачевскине, Куйбышев политкомиссара, Сĕве хулине пиллĕкмĕш çар командирне çапла хыпарлать:

«Йĕпреç станцийĕн комендантĕ Хусан полкĕн станцие пыракан çула сыхлама янă отрядне Патăрьел тата Вырăс Тимеш ялĕсем çывăхĕнче тăраканскере, паян 6 сехетре ирхине тăшман аркатни çинчен пĕлтерчĕ. 200 çынран Йĕпреç станцине çурри чакнă, тăшмана пулеметсем пăрахса хăварнă. Эпĕ Йĕпреç станцине пĕр пулеметпа çур рота ятăм. Пиллĕкмĕш çар Йĕпреç станцинчи лару-тăрăва пĕлмест, мĕншĕн тесен телеграф пăралукĕсем татăлнă. Эпĕ унта Йĕпреçре пулса иртни çинчен пĕлтерме штаб членне ятăм. Йĕпреçе васкавлă пулăшу пама ыйтатăп.

Çарсен Улатăрти ушкăнĕн начальникĕ Пеньевкий».

Кайран тĕпченĕ тăрăх, Патăрьел çывăхĕнчи çапăçура шуррисем хĕрлисенчен виçĕ хут нумайрах пулнине палăртма май килчĕ. Вĕсен 9 пулемет пулнă, хĕрлисен вара виççĕ çеç. Шуррисен çарĕ офицерсемпе юнкерсенчен, шурă чехсенчен тăнă».

В. Владимиров.



Граждан вăрçи вăхăтĕнчи геройсенчен пĕри, çар комиссарĕ Петр Егорович Крепков. Вăл 1890 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче Тутар Республикинчи Çĕпрел районĕнчи Кивĕ Тăван ялĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă.

1909 çулта Хăрнавар шкулĕнчен лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă хыççăн Петр Егоровича хамăр районти Шетмĕ ялне учителе янă. Кунта пĕр çул ĕçленĕ хыççăн вăл Чĕмпĕрти пĕрремĕш гимназире учитель ятне илме экзамен тытать. Ун хыççăн ăна каллех хамăр районти Татмăш ялĕнчи шкула янă, унта 1912–1914 çулсенче учительте ĕçленĕ.

Малтанах Крепков салтакра Чĕмпĕрте пулнă, каярахпа ăна Тифлис хулинчи прапорщиксем хатĕрлекен шкула вĕренме яраççĕ. Кунта вĕренсе тухнă хыççăн ăна тӳрех фронта ăсатаççĕ. Фронтра вăл пĕрмаях йывăр çапăçусенче пулать. Февральпе Октябрьти революцисенче те вăл фронтрах пулса ирттерет. 1918 çул пуçламăшĕнче, фронтран таврăнсан, Крепкова Катек ялне учителе янă. Июль уйăхĕн вĕçĕнче граждан вăрçин фончĕ Пăва çывăхнех çитнĕ. 1918 çулхи август уйăхĕ тĕлне вăл Пăва уесĕн çар комиссарĕнче вăй хунă май. унăн та уесри Советсен ĕçтăвкомĕпе Улатăра куçса каймалла пулнă. Пăва хулипе унăн çывăхĕнчи уес территорине шуррисем йышăннă. Йĕпреç еннелли Турхан, Мăрат, Хăмпуç Патăрьел вулăсĕсем анчах шуррисенчен ирĕкре пулнă. Ку выränта час-часах тытăçусем пулкаланă. Патăрьелĕн пĕр пайне шуррисем, тепĕр пайне хĕрлисем йышăннă. Шуррисемшĕн Йĕпреçпе

Шăхран еннелле тапăнса пынă çĕрте Патăрьел уйрăмах паллă выраăн йышăннă. Асăннă вулăссенче Совет влаçне çирĕплетсе, халăха мобилизацилесе хăвăртрах шуррисене çĕмĕрсе тăкса хăваласа ямалла пулнă. Çак ĕçе йĕркелеме Улатăртан Пăва уес Совечĕн членĕсене 6 çынна тата Питĕртен килнĕ икĕ рабочие Йĕпреç станцине яраççĕ. Вĕсем хушшинче П.Е. Крепков та пулнă. Йĕпреçре революциллĕ Комитет тăваççĕ.

Августăн 27-мĕшĕнче Крепков отрячĕ Патăрьел çывăхне çитсе Кĕçĕн Патăрьелĕнче вырнаçнă. Çакăн çинчен выраăнти кулаксемпе мулласем шуррисене пĕлтернĕ. Пăваран Патăрьелне тăшман офицерĕсен 500 çынран тăракан чаçне янă.

Августăн 28-мĕшĕнче, ирхине шуррисем Тăраăнпа Патăрьел енчен пăшалсемпе тата пулеметсемпе пеме тапратнă. Çапăçу Кĕçĕн Патăрьел урамĕнче те пуçланнă. Çапла персе тăнă вăхăтра Крепков отрячĕ уялла, çил арманĕ еннелле туртăннă. Анчах шуррисем Пăла шывĕ çинчи пысăк кĕпер патĕнчен урам вĕçне сарлакăшпех персе тăнă. Хĕрлĕ армеецсем тăшмана хирĕç вирлĕ кĕрешнĕ. Шуррисене малалла кайма чарса, Крепков хăй пулеметпа пенĕ. Ăна амантнă. Çак юнлă çапăçура вăл паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Йĕпреçпе Шăхрантан килсе çитнĕ Совет çарĕн чаçĕсем шуррисене çĕмĕрсе тăкнă. П.Е. Крепковпа унăн юлташĕсене чыс парса пытарнă. Иртнĕ çулсенче Кĕçĕн Патăрьелĕнчи ĕççыннисем çав геройла çапăçу пулнă выраăна палăк лартнă. Йĕри-тавра йывăççемпе чечексем ӳсеççĕ.

Чăваш халăхĕ хастар П.Е. Крепковпа унăн çапăçура паттăрлăх кăтартнă юлташĕсене ĕмĕр-ĕмĕр асра тытать.

«Авангард» хаçат, 29.06.1960 ç. «Пирĕн календарь».

«...Ку событисем пирки 1960 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра тухнă «Патăрьел патĕнче...» ятлă статьяра (авторĕ Ф. Ярков, 271-мĕш номер) тĕплĕн çырса кăтартнă.

(Тен, унта кăтартнă цифрăсем тĕрĕсрех те пуль – Д.К.). Унтан çакă паллă:

«Кĕçĕн Патăрьелне шуррисем Пăва хулинчен 1918 çулхи августăн 27-мĕшĕнче килсе çитнĕ. Вĕсен 350 çынлă çуран çар ушкăнĕ тата 100 кавалерист, 10 станковăй пулемет, 6 тупă пулнă. Шуррисен ретĕнче чехсем те çапăçнă. Хĕрлисен вара çын шучĕ икĕ хут сахалтарах, станковăй пулеметсем те 3 çеç пулнă. Тупăсем вара пачах та пулман. Çапла вара хаяр çапăçура 28 çын, вĕсен шутĕнче П. Крепков командир вилнĕ. Ф. Ярков тĕпчевçĕ çырса кăтартнă тăрăх, Патăрьел таврашĕнче 1918 çулхи август уйăхĕнче мĕн пурĕ 51 хĕрлĕармеец пуç хунă. Ватă çын Лампасов, Харитонов, Кадеев учитель-пенсионерсем тĕпчесе тата Булдыгин, эпĕ (В.В. Владимиров – Д.К.) архивсенче шыраса тупнă тăрăх, Туçа ялĕнче августра – 3, Вăрманхĕрри Шăхальте – 6 (8-тан иккĕшĕ чĕрĕ юлнă), Шăнкăртамра – 4 (И. Атнашкин ветеран аса илнĕ тăрăх), Еншикре – 1, Çĕнĕ Ахпӳртре – 1, Патăрьелпе Кĕçĕн Патăрьел хушшинче Пăла хĕрринче 2 хĕрлĕармеец вилнĕ. 28 вилнĕ хĕрлĕармееца тата вĕсен командирĕн Крепковăн ӳтне 1918 çулхи августăн 29-мĕшĕнче Кĕçĕн Патăрьел хирĕнче, Ыхра çырми шывĕ хĕрринче пытарнă. Треньелĕнче пурăннă Дмитриев учитель-пенсионер аса илнĕ тăрăх, тепĕр кун çак вилесем çумне тата 5 хĕрлĕармеецăн ӳтне пытарнă. Ку вырăнта 1918 çултах йывăçран палăк лартнă. Анчах 1949 çулхи кĕркунне хĕрлĕармеецсен виллисене Кĕçĕн Патăрьел çумĕнчи мăнаçлă палăк çумне куçарса килнĕ, кунта пытарнă.

Хĕрлĕармеец пулнă Г.А. Яин (отряд командирĕ, Патăрьел районĕнчи Шăхач ялĕнчен – Д.К.) аса илнĕ тăрăх, Норваш-Шăхаль ялĕнчи палăк айне ултă тата Шăнкăртамра вилнĕ 4 хĕрлĕармеец виллисен шутĕнчен иккĕшне турттарса килнĕ. Çапла вара Нăрваш Шăхалĕнчи палăк айне сакăр, Шăнкăртамри палăк айне 2 хĕрлĕармеец ӳтне пытарнă. Патăрьел масарĕ çинче кунта вĕлернĕ пĕр хĕрлĕармееца тата Туçа

ялĕнчен турттарса килнĕ виçĕ хĕрлĕармееца, Еншикре тата Çĕнĕ Ахпӳрт чиккинче вилнĕ хĕрлĕармеецсене вилнĕ вырăнтах пытарнă.

Тĕрĕссипе каласан, Кĕçĕн Патăрьел çумĕнче ларакан палăк çынсен юнĕ çинче ларать Н. Волков ветеран каласа панă тăрăх, çак вырăна вилесене турттара-турттара килнĕ. Кашнинчен çĕр çине чарăнмасăр юн юхнă.

Çакна каласа хăварас килет. Палăк та, йĕри-тавра тытнă картасем те кивелнĕ. Вырăнти самоуправленин, хуçалăх ертӳçисен ăна юсас тесе тăрăшасчĕ. Самани епле йывăр пулсан та, вилнĕ çынсем çинчен манас марччĕ. Вĕсене хисеп туни хамăра хисеп туниех пулĕ, сăваплă ĕç туни те хамăрах чыс кӳрĕ».

«Авангард» хаçат, 06.09.1994 ç. В.В. Владимиров.

Кĕçĕн Патăрьел ялĕнчи хĕвел тухăç енче хĕрлĕармеецсемпе шуррисен хушшинче çапăçу пулса иртни çинчен Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕнчи В. Люкин учитель хăй илтнĕ-пĕлнĕ тăрăх, 2008-мĕш çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕнчи 3-мĕшĕнче «Авангард» хаçатра «Паттăрсен ячĕ вилĕмсĕр» ятпа пичетленнĕ статьяра çавăн пек çырать. Унти хăш-пĕр йĕркисене кĕскетсе маларах асăнман тĕслĕхсене вулакан патне çитерĕпĕр.

«...Тан мар çапăçура хĕрлĕармеецсен отрячĕн чĕрĕ юлнă пайĕ Йĕпреçе чакса каять. П. Крепков тата унăн 53 юлташĕ çапăçу хирĕнче выртса юлаççĕ. Ку çеç те мар, тĕрлĕ енне тарма тăрăшнă хĕрлĕармеецсене Совет влаçне курайман çынсем тыта-тыта вĕлереççĕ. Шăхальте, Кивĕ Катекре (Кĕçĕн Патăрьелĕнче те – Д.К.) пулнă ун пек тĕслĕхсем. Уйрăмах хăрушă ĕç Çĕнĕ Ахпӳртре пулса иртет. П. Крепков отряднăчи пĕр аманнă салтак ялăн хĕвел анăç енчи çерем çине çитсе ӳкет (ку вырăна Макçăм тăвайкки теççĕ). Вăл вăхăтра çынсем кĕрхи çĕртме тунă пулнă. Çак аманнă салтака сӳре пуххи çине пăрахса çунтарса вĕлереççĕ... Халь ларакан палăка Октябрьти социализмла Аслă революци 50 çул тултарнине уявланă чух уçнă. Вăхăт яланах ма-

лалла шăвать. Çӳлерех çырса кăтартнă ĕçсем пулса иртни те августăн 28-мĕшĕнче 90 çул çитрĕ».

Мĕнле упранать-ха паянхи кун гражданла вăрçăн пĕр çапăçăвĕнче хĕрлисем паттăрсен вилĕмĕпе пуçне хунă хыççăн вĕсене асăнса лартнă палăк? Çав шухăшпа эпĕ çуллахи лăпкă çанталăкпа усă курса историллĕ çапăçу пулса иртнĕ хыççăн 91 çултан, Кĕçĕн Патăрьел ялĕн хĕвел тухăç енче вырнаçнă палăка, унран аякра та мар çурçĕр енче ларакан армана кайса пăхас терĕм. Асăннă палăкпа кивĕ армана курсан манăн кăмăл хуçалчĕ, эпир историе сума суманнине ăшри туйăмпа ăнланса илтĕм. Çапах та эпĕ малалла журналист шухăшне вырнаçтарас терĕм. Мĕншĕн тесен эпĕ «Авангард» хаçатăн корреспонденчĕ Альбина Егорова 2008-мĕш çулхи чӳк уйăхĕн (ноябрь) 22-мĕшĕнче «Истори çулĕ çине мăян ан пустăр» ятлă статьяра çырнă шухăшĕпе пĕтĕмпех килĕшетĕп. Çав историлле пĕлтерĕшлĕ палăкпа арман малашлăхĕ пĕр-икĕ çынна кăна мар пăшăрхантарать пуль. Вĕсем çине паянхи кун тимсĕр пăхнăран юхăнса пыраççĕ. Эппин сăмах парăпăр район хаçачĕн корреспондентне.


«Çак кунсенче хаçат редакцине Туçа тăрăхĕнчен пĕр хисеплĕ çын кĕчĕ. Хаçат тусĕ пулнăран е журналистсен ĕçне çывăх ăнланнăран-ши, вăл манпа чуна ыраттаракан çывăх темăсене хускатрĕ.


Пурнăçра самай хура-шур курнă арçынна паян истори йĕрĕ çине хыт-хура пусма пуçлани пăшăрхантарать. Саманан кашни тапхăрне чăн тӳрĕ куçпа, хăюллă хаклама хăнăхнă çак вĕри çын Кĕçĕн Патăрьелĕн хĕвел тухăç енче совет влаçĕшĕн çапăçса вилнĕ хĕрлĕармеецсен ячĕпе лартнă палăкран аякра та мар вырнаçнă истори пĕлтерĕшлĕ çил арманĕ (халăхра ăна Крепков арманĕ теççĕ) çулсеренех юхăнса, çаралса, çĕр çумне пусăрăнса пынă пирки пăшăрханса калаçрĕ.

– Ача чухне пире учительсем çак сăваплă вырăна курма экскурсие илсе килетчĕç. Ун чухне вăл тăн-тăн

та çирĕп ларатчĕ. Юнашарах арман çурчĕ те пурччĕ. Юлташсемпе арман йĕри-тавра пуля шăтăкĕсене мĕн чухлĕ шыраман-ши... – аса илчĕ вăл.

Вулаканăмăрăн калаçу хавхаланăвĕпе Кĕçĕн Патăрьелĕнчи çак истории пĕлтерĕшлĕ вырăна çитрĕм. Пĕчĕк тимĕр калиткерен кĕрсе чăн малтанах совет влаçĕшĕн, чăнлăхшăн çапăçса пурнăçне татнă паттăр салтаксен ячĕпе лартнă палăк умĕнче пуç тайма шут тытрăм. Ашкăрса та хунаса кайнă йывăçсем ăшĕнче палăкăн тăрри çеç курăнать. Чăтлăхри евĕр тĕмсем хушшинче алăкне шыраса тупрăм та пит-куçа çутăлтаракан туратсене сире-сире палăк çывăхнелле туртăнтăм. 4-5 метр кайсан чăнах та уçă вырăна тухрăм. Вăт кунта улах вырăн! Пĕр палăк çеç мĕскĕннĕн ларать. Ун йĕри-тавра вара мĕнле кăна пушă савăт, ăпăр-тапăр, çӳп-çап выртмасть-ши?! Пĕр «паттăрĕ» ĕçсе ярайман сăра кĕленчине палăк картлашки çинех лартса хăварнă. Сăра кĕленчи вырăнне çак сăваплă вырăна салтак тӳмминчен (ромашка) хатĕрленĕ чечек çыххине хурса хăварнă пулсан вăхăтĕнче тĕрĕслĕхшĕн хăюлăхпа паттăрлăх кăтартса пуç хунă салтаксене хисеп тунăн туйăнатчĕ. Нивушлĕ истори палăкĕ çамрăксемшĕн канупа иртĕхӳ вырăнĕ пулмалла?! Палăк çине вара пысăк саспаллисемпе çапла çырса хăварнă: «Совет влаçне шурă гвардеецсенчен хӳтĕлесе 1918 çулта пуç хунă П.Е. Крепков отрячĕнчи боецсене асăнса». Тепĕр енче хĕрӳ çапăçу вăхăтĕнчи саманта ӳкернĕ. Ăна пăхсан чăнах та чун сӳ! туса каять. Пулемет умĕнче 8-9 салтак. Чылайăшĕ вĕсенчен пăшал кĕпçине çирĕппĕн тытнă. Анчах тан мар çапăçура кĕпер урлă шуррисене каçарас мар тесе хĕрлĕ армеецсем пĕрин хыççăн тепри вилеççĕ. П.Крепков командир та йывăр аманать. Палăк çинчи ӳкерчĕкре ăна аманнă хыççăн кăкăрне сулахай аллипе тытса тăнинчен палласа илме пулать. Ӳнерçĕ-скульптор палăк çинчи çак çапăçу самантне чĕрĕ ӳкерчĕк пекех сăнарланă. Çавăнпа та нивушлĕ çак хисеплĕ вырăнта эрех-сăра ĕçме, ашкăнма хăюлăх çитмелле?





Кĕçĕн Патăрьел ялĕн хĕвел тухăç енче ларакан палăкпа çил арманĕ.

Палăк çумĕпе иртекен истори сукмакĕпе кăшт маларах утсан тепĕр чĕрĕ палăк – çунаттисене мĕскĕннĕн уснă çил арманĕ. Кунта вара чăнах та 1918 çулхи августра мар, темиçе кун каялла çеç хĕрлисемпе шуррисем çапăçнă тейĕн. Арманăн аялти пайĕнчи хăмисене йăлтах хăпăтса кайнă. Унăн варринчи тĕнĕлĕ те чалăшнă. Йывăр чула çеç этем алли вырăнĕнчен куçарма вăй çитереймен. Армана «салтăнтарма», паллах, çичĕ тинĕс леш енчен килмен. Пирĕн тăрăхра пулса иртни вăраха тăсăлтăр, ун çинчен пирĕн ачасем, мăнуксем тĕплĕн пĕлччĕр тесе вĕсен ĕмĕрне вăрăмлатмалла, пĕлтерĕшлĕ палăксене сыхласа хăварас тесе тăрăшмалла чухне эпир усал ĕçсем ытларах тăватпăр. Ман шутпа, иртнĕ ĕмĕрхи армана та сыхласа хăвармалла, палăка та кирлĕ пек пăхса тăмалла».

Паллах, журналист шухăшĕпе килĕшмесĕр тăма май çук, тесе калас килет манăн çакăн хыççăн.

Улшăнĕ-ши лайăх енне малашнехи ăрăвăн шухăшкăмăлĕ историлле палăксене пăхса-тирпейлесе тăрас енĕпе е çак истори пĕлтерĕшлĕ пулăм вăхăт иртнĕçемĕн манăça тухать – ăна вăхăт кăтартĕ.

Шуррисене Пăва хулинчен хăваласа янă хыççăн Улатăртан И.К. Скрипин ертсе пынипе Пăва уес Совечĕпе РКП(б) уес Комитечĕ каялла Пăвана тавраççĕ. Çавăн хыççăн вулăссемпе ялсенче Совет органĕсене суйлама тытăннă.

1918 çулхи авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнче Патăрьел вулăс Совет йышне çĕнĕрен 6 çынран суйлаççĕ. Вулăс ĕçтăвком председателĕ пулма Чăваш Ишек ялĕнчи Семен Ильич Волкова, унăн çумĕ пулма – Ершов Федор Петровича, вăл Патăрьелĕнчен.

Членĕсем:

Евдоким Яковлевич Иванов – Тикеш (внутр. распорядка),

Маллин Игнатий Ларионович – Патăрьел (прод. отдел),

Тинюков Иван Григорьевич – Сăкăт (земель. отдел),

Анисимов Василий – Треньел (земель. отдел).

1918 çулхи юпа уйăхĕнче Волков С.И. вилнине пула вулăс Совет председателĕ пулма Игнатий Ларионович Маллина суйланă. Çак çулхине те, каярах та вулăспа ял ĕçтăвком председателĕсем, Советсен йышĕсем улшăнсах тăнă. И.Л. Маллина Пăва уесĕнчи хресченсен 3-мĕш съездĕнче уес ĕçтăвкомне суйласан, ун вырăнне 1919 çулхи нарăсăн 2-мĕшĕнчи ларура вулăс ĕçтăвкомĕн председателĕ пулма Федор Петрович Ершова суйлаççĕ. Унăн çумĕ (ун чухне товарищ председателя тенĕ) пулма Иван Хураськина, членне Тимофей Спиридонова, секретарьне Алексей Иванова суйланă.

1919 çулта Тутар облаçĕнчи уессем кантонсем çине куçнине пула вулăссенчи ял Канашĕсенче çĕнĕрен суйлавсем пулса иртнĕ.

Тутар Республикинчи Наци Архивĕнче упранакан документсем тăрăх, паянхи ЧР Патăрьел районне

кӗрекен хӑш-пӗр ялсенчи суйлав пулса иртнӗ хыççӑн çырнӑ протоколсемпе паллашсан çакна пӗлме пулать:

Протоколы сельских Советов Буинского кантона.Батыревская волость.

...87 с. Большое Батырево: Председатель – Павел Кошкин

Тов. председателя – Иван Зайкин

Секретарь – Максим Спинов.

89 д. Новое Котяково: Председатель – Василий Михайлов

Тов. председателя – Федор Ильин

Секретарь – Петр Анисимов

...97 с. Туруново: Председатель – Никифор Петров

Тов. председателя – Григорий Лаханов

Секретарь – Дмитрий Лялькин

99 д. Малое Батырево: Председатель – Иван Фролкин

Тов. председателя – Василий Хураськин

Секретарь – Павел Илюткин.

дер. Ишаковской части чуваш (Тутар Ишек ялӗ те пулнӑ ун чухне – Д.К.)

Председатель – Егор Кулаков

Тов. председателя – Василий Сорокин

Секретарь – Матросов

с. Тойси: Председатель – Гордей Иванов

Тов. председателя – Петр Семенов

Секретарь – Афанасий Руссов

д. Ст. Тойси: Председатель – Александр Терентьев

Тов.председателя – Василий Пласкин

Секретарь – Данил Кузнецов

с. Сугуты: Председатель – Петр Милов

Тов. председателя – Никифор Вуколов

Секретарь – Федор Нарты.

1919-мӗш çулхи ака (апрель) уйӑхӗн 5-мӗшӗнче Кӗçӗн Патӑрьел ял пухӑвӗнче ял Канашне çӗнӗрен унӑн председателӗ пулма Николай Семенова, унӑн çумне Сидор Архипова, секретарьне Кузьма Абрамова суйланӑ.

Çав çулсенче уеспа (каярах кантон) вулăс ĕçтăвкомĕсенче кăна мар, ял Канашĕсенче те час-часах,

çулталăкне темиçе хут та, çĕнĕрен суйлавсем туса ирттернĕ. Çавăнпа та ял Канашĕсен председателĕсем, вĕсен çумĕсемпе секретарĕсем те улшăнсах пынă.

Тутар облаçĕнчи Пăва уесне кĕрекен Турхан вулăсĕ 1919 çулта хальхи Первомайскипе Турхан енчи ялсене кăна мар, хальхи Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç, Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршă, Комсомольски районĕнчи Йӳç Шăхаль ялĕсене те пĕрлештерсе тăнă. Вулăссенчен чи пĕчĕкки вара, Шăнкăртам вулăсĕ, 6 тутар ялĕнчен шутланса тăнă: Шăнкăртам, Тутар Сăкăт, хальхи Комсомольски районне кĕрекен Тутар Шурăт, Ыхра Çырми (Тутар Ишек ялĕ каярах Ыхра Çырмипе пĕрлешсе кайнă), Хирти Пикшик ялĕн пĕр пайĕпе тепĕр пайĕ. Каярах çак икĕ ял та пĕрлешсе пĕр ял пулса кайнă.

(*Тутар Республикинчи Наци Архивĕ, ф.143, оп.1, ед.хр.37.*)

ЧĂВАШ АВТОНОМИ ОБЛАҪНЕ, ПАТĂРЬЕЛ ВУЛĂСĔПЕ УЕСНЕ ЙĔРКЕЛЕНИ. ВЫҪЛĂХ ҪУЛĔСЕМ

1918-мĕш çулхи çу уйăхĕнче национальнăçсем енĕпе ĕçлекен Халăх Комиссариачĕ çумĕнче Чăваш пайне туса хунă, унăн заведующийĕ пулма Д.С. Эльмене лартнă. РКП(б) Хусан губкомĕн çав çул вĕçĕнче Чăваш секцине туса хунă, унăн председателĕ пулма В.А. Алексеева шаннă.

1920-мĕш çул пуçламăшĕнче Хусан, Чĕмпĕр, Уфапа Самар кĕпĕрнисенчи чăваш коммунисчĕсем Д.С. Эльмен сĕннипе Пăлаçи нимĕçсен коммуни тĕслĕхĕпе, уйрăм административлă территорине тухса, Чăвашсен ĕç коммуни тума шутлаççĕ. РКП(б) чăвашсен секцисемпе ячейкисен тата чăвашсен коммунисчĕсен активлă ĕçченĕсен Пĕтĕм Раççейри 1-мĕш съезчĕ нарăс уйăхĕн 4–8-мĕш числисенче Хусанта çак ыйтăва пăхса тухнă. Çак съездра пĕр шухăшлă пулса «Чăваш ĕç коммунине» туса хума йышăннă. Проект тăрăх коммунăна Хусанпа Чĕмпĕр кĕпĕрнинче чăвашсем пурăнакан çĕрсем кĕмелле пулнă. Чăваш Автономине туса хума кăтарту парас умĕн В.И. Ленин Наркомнацăн Чăваш пайĕнчи тата РКП(б) Хусан губкомĕн Чăваш секцийĕнчи ертсе пыракан работниксене йышăннă, вĕсемпе Чăваш Автономийĕн форми çинчен калаçнă. Вăл чăвашсене таврари кĕпĕрнесенче халăхăн ытларах пайĕ чăвашсем пурăнакан çĕрсене пĕрлештерсе автономи республикине йĕркелеме, унăн тĕп хулине Чĕмпĕре тума сĕннĕ. Анчах та Мускава кайнă делегатсем ытларахăшĕ Шупашкар енчен пулнипе те пуль, те пулас тĕп хула ытла аякра пуласран, çавăн пекех Чĕмпĕрти коммунистсем влаçа илсен, Шупашкар енчисем пысăк выränта ĕççĕр юласран шикленсе пуль, В.И. Ленин сĕнĕвĕпе килĕшмен, пĕчĕкрех кăна автономи облаçĕ йĕркелес çул çине тăнă. Пысăкрах автономи республики тусан экономикăпа хуçалăха ертсе пыма йывăр пулать тенĕ-ши? Чăвашсен

представителĕсемпе килĕшсе çав çулхинех çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче ВЦИК председателĕ М.И. Калинин, секретарĕ А. Енукидзе тата РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ В.И. Ленин Чăваш автономиллĕ облаçне туса хурасси çинчен Декрета алă пуснă.

Асăннă Декрет тăрăх Чăваш Автономи облаçне Хусан кĕпĕрнинчен Шупашкар, Çĕрпӳ тата Етĕрне уесĕсем, Козьмодемьянск уесĕн пĕр пайĕ тата Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăвапа Кăрмăш уесĕсен хăш-пĕр пайĕсем куçаççĕ. Пăва уесĕнчен Мăрат, Хумпуç-Патăрьел, Шамкай тата Шăмăршă вулăсĕсем куçаççĕ, анчах та Патăрьел вулăсĕ пĕтĕмпех Тутар Республикинче юлать-ха. Çĕрпӳ уес комиссийĕ 1920-мĕш çулхи çурла уйăхĕн 3-мĕшĕнче тунă доклад тăрăх Патăрьел вулăсне те Чăваш Автономи облаçне йышăннă тесе кăтартнă. Çакăн хыççăн ЧАО администраци комиссийĕ 1921 çулхи кăрлач уйăхĕн 31-мĕшĕнче Патăрьел вулăсне ЧАО йышне илнине çирĕплетет.

Чăваш облаçĕн территорийĕ вара ун чухне хальхи Чăваш Республикинчен те пĕчĕк пулнă – 15 пин тăваткăл километра яхăн, унта 811221 çын пурăннă, вĕсенчен вара 97 проценчĕ ялсенче, 3 проценчĕ хуласенче. Обласра наци енĕпе илес пулсан: чăвашсем – 86 процент; вырăссем, тутарсем, мордва, мари тата ыттисем – 14 процент.

Кунта çавна палăртса хăварсан та вырăнлă пуль тетĕп. Автономин мĕнле территорилле единица пулас пирки пирĕнпе кӳршĕллĕ Тутар Республикинче мал шухăшлă депутатсем ертсе пынипе 1920-мĕш çулхи çу уйăхĕнчех Тутар АССР-не йĕркелеççĕ. Вĕсем Автономилле Республика территорийĕ пысăк пулассинчен хăраса тăман, хăйсен территоринчи хальхи Пăва, Çĕпрел районĕсенче йышлă пурăнакан чăвашсем Чăваш облаçне куçассине хирĕç пулнă. Унти чăвашсем ыйтнине Мускаври влаçсем те Тутар Республикинчи влаçра ларакансене хирĕç кайман курăнать.

Чăваш Автономиллĕ облаçне туса хурасси çинчен

йышăннă декретпа килĕшӳллĕн, РКП(б) Тĕп Комитечĕн Оргбюровĕ 1920 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче облаçăн Революциллĕ Комитетне çирĕплетнĕ, унта çаксене кĕртнĕ: председатель – Эльмен, членĕсем: В.А. Алексеев, Л.М. Лукин, И.А. Крынецкий, Я.П. Соснин. Çав çулхинех утă (июль) уйăхĕн 6-мĕшĕнче Ревком,тепĕр 6 кунтан партин Чăваш обкомĕ (председателĕ Д.С. Эльмен) ĕçлеме тытăннă.

1920-мĕш çулта Патăрьел вулăсĕ Чăваш Автономи облаçне кĕрсен пĕрремĕш вулăс Советне суйлаççĕ. Совет председателĕ пулма Сăкăт çыннине Тинюков Никифор Федоровича, унăн çумĕ пулма Чăваш Ишек ялĕнчен Пушкин Сергей Николаевича, секретарьне Кивĕ Ахпӳртри Карягин Афанасий Григорьевича суйланă.

Ял Совет йышĕсене те çĕнĕрен суйлама тытăнаççĕ.

Çĕрпӳ уесĕ Пăва уесĕнчен вулăссем куçнă хыççăн çĕр лаптăкĕ ытла пысăк пулнипе çак вулăссене ертсе пырасси йывăрланса çитет. Çавна пула Çĕрпӳ уес ĕçтăвкомĕ Пăва уесĕнчен куçнă 6 вулăса ертсе пыма 1920 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче Йĕпреçре Ревтройка йĕркелет, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчен тытăнса унăн председателĕ пулма Д.З. Захарова лартаççĕ. Сăмах май, вăл пĕр вăхăт хушши хальхи Патăрьел районĕнчи Тăрăн шкулĕнче те ачасене вĕрентнĕ, кайран хамăр республикăра ответлă вырăнсенче, çав шутрах 1934–1937-мĕш çулсенче ЧАССР (Тĕп) Аслă суд членĕ, унăн председателĕ пулса та ĕçленĕ. Ун çинчен Чăваш Республикин Аслă Суд судйи Н.В. Яковлев 2008 çулта çырнă «Верховный суд Чувашской Республики» кĕнекере тĕплĕнрех вуласа пĕлме пулать.

1920-мĕш çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 24-мĕшĕнче 7 çынран тăракан вулăс Советне çĕнĕрен суйлаççĕ. Председателĕ хальхинче те Сăкăтри Никифор Тинюков пулать, ыттисем вара:

Афанасий Карягин – Кивĕ Ахпӳртрен,

Сергей Пушкин – Чăваш Ишекĕнчен,

Владимир Наперсткин – Кивĕ Катекрен,

Алексей Табаков – Туçаран,
Николай Иванов – Кивĕ Катекрен,
АркадийМилов – çар комиссарĕ.

Чăваш облаçне Пăва уесĕнчен куçнă 6 вулăсра пурăнакансем Çĕрпӳ уесне тĕрлĕ ĕçпе çӳреме аякра пулнипе тата Тутар республикинчех юлнă 6 вулăсри чăвашсем те Чăваш облаçне куçасшăн пулнипе делегатсем суйласа Патăрьелне çĕнĕ уес йĕркелес пирки съезд ирттерме янă. 1920-мĕш çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕнче иртекен съездра 10 вулăсран тăракан: Хăмпуç-Патăрьел, Мăрат, Турхан, Патăрьел, Шăмăршă, Упи, Шăмалак, Курнавăш, Тăмпаел, Алькеево-Патăрьел уесне йĕркелеме постановлени йышăнаççĕ. Çак постановление çирĕплетме çӳлти органсене ярса панă. Анчах та Упипе Тăмпаел вулăсĕсенчи ялсенче пурăнакан халăхсем Чăваш Автономи облаçне илме ыйтнине тивĕçтермен. Тутар республикинчен Патăрьел уесне вулăссем куçнине ВЦИК 1921 çулхи авăн уйăхĕн 22-мĕшĕнчи декречĕпе çирĕплетет.

Çак декрет тăрăх Патăрьел уесне 12 вулăс кĕнĕ: Патăрьел, Каçал, Кĕçĕн Елчĕк, Курнавăш (Новые Шимкуссы), Мăрат, Турхан, Хурамал, Хăмпуç-Патăрьел, Шамкай, Шăмалак, Шăмăршă, Шăнкăртам.

1921 çула кĕрсен, Чăваш облаçĕнче VIII-мĕш Раççей Совечĕсен съезчĕн йышăнăвĕпе килĕшсе, хресченсен хуçалăхĕсенчи тырă вăрлăхне пухса илсе обществăлла кĕлетсене хумалли йĕрке тăваççĕ. Çак тырă вăрлăхĕн кампанийĕ, паллах, хресченсен кăмăлне кайман. Вĕсем вăрлăх тырра обществăлла ампарсене (кĕлетсене) курайманнисем вут тĕртсе çунтарса е вăрланине пула çухатасран, çавна пула хăйсен çемйисене выçă вĕлересрен хăранă. Асăннă съезд йышăнăвне пурнăçа кĕртес ĕçре Чăваш облаçне ертсе пыракансем те, вырăнти влаçра ларакансем те, ял çыннин нушине шута илмесĕр вăрлăх фондне памалли нормине ытла пысăклатнă. Обществăлла вăрлăх фончĕ

усси пирки хресченсене ӑнлантарса паманни те çав çитменлӗхсенчен пӗри пулнӑ. Çав сӑлтавсене пула ӗнтӗ кӑмӑлсӑр хресченсем Совет влаçӗ çине урӑхла пӑхма тытӑнаççӗ, куштанраххисем хистенипе Шупашкар, Етӗрне, Çӗрпӳ уесӗсене кӗрекен вулӑссенче хресченсен пӑлхавӗсем пулса иртеççӗ. Малтанхи восстани Шупашкар уесӗнчи Акулево вулӑсӗнче 1921-мӗш çулхи кӑрлач уйӑхӗн 19-мӗшӗнче пуçланать. Çавӑн пек пӑлхавсем ытти уессемпе вулӑссене ярса илсе пирӗн тӑрӑха та çитеççӗ. Асӑннӑ уйӑх вӗçӗнче Аслӑ Каçал вулӑсӗнчи пӑлхав вӑхӑтӗнче (хальхи Комсомольски районӗ) 6 совет служащипе активисчӗсене тискерӑн вӗлернӗ. Хусантан килнӗ отряд Каçал ялӗнче пӑлхава пуçарса яракансене тата унта активлӑн хутшӑннӑ 45 çынна тупса палӑртнӑ, çак отряд штабӗ çумӗнчи çар участокӗ кӑларнӑ приговор тӑрӑх, вӗсене çавӑнтах перçе пӑрахнӑ.

Аслӑ Каçалта йӗрке тунӑ хыççӑн отряд Мӑрат ялӗнче чарӑнса çӗр каçать, вара малалла Патӑрьелне çул тытать, анчах нумай та вӑхӑт иртмен, Турханта пӑлхав пуçланни пирки телефонограмма çитет. Çак хыпар тӑрӑх, унта пӗр милиционера вӗлерес пек хӗненӗ, пӑлхава çӗкленнӗ халӑх коммунистсемпе вулӑс ӗçтӑвком членӗсене вӗлерес шутпа шыранӑ. Чӑваш обчекан (областная чрезвычайная комиссия) Çӗрпӳ уесне кӗрекен Йӗпреç районӗн уполномоченнӑйӗ çийӗнчех нарӑс уйӑхӗн 1-мӗшӗнче Турхана 20 çынран тӑракан хӗç-пӑшаллӑ отряд кӑларса янӑ. Пӑлхав пуçаракансене 25-шне тытса Патӑрьелне революцилле çар штабне илсе пынӑ, унта допрос тунӑ хыççӑн вӗсенчен 16-шне перçе пӑрахмалла постановлени кӑларнӑ.

Ытти уессемпе вулӑссенче обществӑлла вӑрлӑх фондне хирӗç пуçарнӑ пӑлхавсене нарӑс уйӑх пуçламӑшӗнче путарнӑ.

Чӑваш облаçӗнчи уессемпе вулӑссенче хресченсен вӑрлӑх фондне 1921 çулхи акана тухма çурхи тырӑ

уйӑрса обществӑлла ампарсене хурас пирки кӑрлачӑн 3-мӗшӗнче Инструкци кӑларнӑ. Çак Инструкципе килӗшӳллӗн районсемпе вулӑссенче тата поселоксенче вӑрлӑх фончӗ йӗркелеме комиссисем тӑваççӗ, вӗсене пысӑк правапа усӑ куракан уполномоченнӑйсем ертсе пынӑ. Паллах, çак ӗçре уполномоченнӑйсем те, районсемпе вулӑссенчи комисси членӗсем те, Чӑваш облаçне ертсе пыракансем те, çителӗклех йӑнӑш утӑмсем тунӑ. Ун чухне нумай ача-пӑчаллӑ хресчен çемйи çав çул пур-çук тыррине илсе тухса кайсан мӗнле пурӑнӗ çӗнӗ тырӑччен тесе шутламан. Çав çулах выçлӑх мӗн иккенне ачаран пуçласа мӗн ватти таранччен хӑйсен çывӑх çыннисене çухатнинченех туйса илнӗ.

Хресчене йывӑр шӑпа кӗтессине уессене ертсе пыракансем те ӑнланман мар, ун пирки вӗсем облаçри влаçра ларакансене те пӗлтернӗ.

Çакна Чӑваш АО Йӗпреç уес ӗçтӑвком председателӗ, вӑлах революционнӑй тройка председателӗ пулнӑ Д.З. Захаров 1921-мӗш çулхи нарӑс уйӑхӗн 2-мӗшӗнче доклад тунӑ чухне çапла палӑртать:

«1. Настроение населения спокойное, но подавляюще угнетенное, и отношение к распоряжениям власти за последнее время стало замечаться недоверчивым и нареканий за усиленную выкачку хлеба и за выполнение семенного фонда, т.к. некоторые граждане остаются без всякой надежды на просуществование.

2. Отношение населения к местным органам власти недружелюбно и недоверчиво, благодаря некоторым нетактичным и преступным выходкам отдельных советских работников.

3. За последнее время население ничем не интересуется кроме заботы о продовольствии, которое во всех шести волостях (Батыревская, Муратовская, Торхановская, Хомбусь-Батыревская, Шамкинская и Шемуршинская – Д.К.) состоит очень остро и выполнение семенного фонда за темность и непонимание населения действует подавляюще и порождает среди населения ропоты».

(*ГИА ЧР, фонд Р-22, опись 1, дело 27, л.л. 31-34*).

1921-мĕш çулхине çăва тухсанах Атăл тăрăхĕнче, уйрăмах Чăваш облаçĕнче, çумăр çуманнипе тата çанталăк шăрăх тăнипе, уй-хирсенче тыр-пул, пахча-çимĕç типсе-çунса кайнă. Çак çулхине облаçĕпе те кашни теçеттин (десятина – 1,09 га) пуçне 4,8 пăт (1 пăт – 16,38 кг) тырă çеç пуçтарса илнĕ.

Халăх выçлăхпа аптраса вилес хăрушлăх тухса тăнине кура выränти влаçра ларакан пуçлăхсем çын пурнăçне хăтарас тесе уйрăм столовăйсем уçма, ачасене тыр-пул лайăх пулнă тата апат-çимĕç продукчĕсемпе тивĕçтерме пултаракан республикăсемпе облаççене яма йышăнаççĕ.

Кунта Чăваш Автономи облаçĕн шайĕнче выçлăхпа кĕрешес пирки йышăннă мероприятисем çинче чарăнса илĕпĕр.

Протокол № 39

расширенного заседания областной комиссии по оказанию помощи голодающим совместно с Президиумом облисполкома Советов рабочих, крестьянских и красноармейских депутатов Чув.Авт.обл. от 18.10.1921 г.

Присутствуют: пред.облисполкома и председатель Комиссии помощи голодающим т. Коричев и представитель Центральной комиссии Пом.Гол. ВЦИК В. Чуканцев.

Повестка дня:

1. Общее положение в Чув.области в связи с голодом.
2. Положение детей в Чув.области. и т.д.

Постановили: 1 Признать, что работа всех органов по борьбе с голодом в Чув.обл. заключалась главным образом в засеве озимых полей и что непосредственная задача – питание голодающего населения. Отлаженная впредь до окончания кампании засева, в настоящий момент встает со всей остротой и застает местные советские органы при полном отсутствии необходимых ресурсов для непосредственной борьбы с голодом.

Окончательная гибель яровых хлебов, полное отсутствие предмета продовольствия, товаров для обмена, денежных знаков для покупки хлеба, отсутствие медикаментов и врачей, о чем несколько раз

доводилось до сведения Центра. Неполучения разрешения и продовольствия на производство общественных работ и т.д., ставят борьбу с голодом почти неосуществимой, ибо имеющиеся местные ресурсы все использованы, – необходима реальная и скорая помощь, о чем неоднократно возбуждалось ходатайство перед Центром в письменной и устной форме, но таковой помощи до сих пор не получено, а потому расширенное заседание Комиссии Пом.Гола совместно с Президиумом Облисполкома в присутствии Представителя Комиссии Помгола ВЦИК т. Чуканцева, лично убедившегося в отсутствии местных ресурсов для борьбы с голодом, постановляет:

Признать, что положение Чувашской области катастрофическое. 800 тыс. населения не имеет никакого продовольствия, питаясь исключительно вредными для здоровья суррогатами, население массами умирает с голоду. Целые семейства уже вымерли. Из 6-7 чел. семейства остались по 2-3 человека.В одном Чебоксарском уезде умерло 993 чел., ввиду сего категорически просить През. ВЦИК, Цека Помгол и Московскую Губкомиссию Помгол:

1) Немедленно отпустить продовольствия, дензнаков и товарного фонда для сохранения умирающего от голода населения...

2) Употребить все силы для получения до сих пор неполученных семгрузов, заготовленных путем товарообмена в Белоруссии и Гомельской губернии...

П. О положении детей в Чувашской области.

Вследствие полного отсутствия продовольствия, положение детей в Чув.обл. катастрофическое: 298 тыс. детей ничем не обеспечены.

Ввидусего просить Цека Помгола и Московскую губкомиссию:

1) Срочно отпустить для детского питания, продовольствия дензнаков, мануфактуру, обуви, медикаментов по представленной и прилагаемой смете и требованию.

2) Распределить детей по урожайным губерниям и отправить немедленно из Чув.обл.

Предложить немедленно принять Москве и Московской губернии, Нижегородской и Ярославской губерниям принять детей Чув. обл. на содержание.

3) В Чув.обл. по данным Облстатбюро, Облздрава имеется 72818 голодающих детей в возрасте до 3 лет, включительно.

Эвакуировать значенных детей не представляется возможным, а посему просить Цека Помгол и Наркомздрав РСФСР прийти на по-

мощь детям Чув.обл деньгами, продуктами и одеждой, медикаментами и пр. в срочном порядке.

(ЧГИА, ф.161, оп.1, д.5)

Облĕçтăвком уполномоченнăйĕ Павел Анчуков 1921-мĕш çулхи юпа (октябрь) уйăхĕнче Мускав кĕпĕрнине кайса килнĕ хыççăн хăйĕн докладĕнче çак кĕпĕрнере пурăнакан хресченсем выçăпа аптракансем валли тырăпа çĕрулми тата укçа-тенкĕ уйăрса пулăшни çинчен пĕлтернĕ.

Чăваш облаçĕнче уессенчи ялсенче пурăнакан кашни çемьене выçлăхпа кĕрешекен комиссисем килĕсене пырса мĕнле пурăннине тĕрĕсленĕ, ун пирки уессен центрĕсене акт тăратнă. Çавăн пеккисенчен аяларах пĕр тĕслĕх илсе кăтартма пулать.

Письмо

председателю многолавочного общества потребителей Б-Батыревского правления в Ибресинский Упродком отдел распределения обращается с просьбой об отпуске продовольствия на 15269 едоков за август 1921 г.

В семьях этих едоков хлеба не оказалось – из акта обследования инспектора по Б-Батыревской волости Александра Карасева.

(ЧГИА, ф.1584, оп.1, д.2-а)

Докладная записка в областную комиссию помощи голодающим при облисполкоме от зав.подотделом пайка и пособий Г.И. Орлова.16. X1.1921 г.

По вопросу о мероприятиях по борьбе с голодом.

Облсоветом совместно с Облисполбюро выяснено путем районирования число голодающих по Чувобласти, которое равнялось приблизительно 377564 чел., а также места поражения голодом. Была составлена смета по организации столовых в местах пораженных голодом. Смета была составленана общую сумму 644220614500 руб. на 377564 голодающих для открытия 375 пункт столовых, которые по местным условиям должны были разбиваться на более мелкие с пропускной способностью столовых, в первых числах сентября было созвано совещание заведовающих условиями для выработки единого

плана борьбы с голодом, приготовляются помещения для открытия столовых, а в некоторых местах по своей инициативе волостных комитетов взаимопомощи организованы столовые.

Облбпродком не имеет в запасе каких-либо продовольственных ресурсов. Дело помощи надо передать в одни руки, создав для этого работоспособный аппарат, что от наших междуведомственных трений ничего до сего времени не получается, а число голодающих с каждым днем увеличивается и увеличивается.

(ЧГИА, ф.161, оп.1, д.5)

Чăваш Автономи облаçĕнче выçăпа аптракан ачасене пулăшма комисси (Облдеткомисси) йĕркелеççĕ. Обласри ачасен комисси йышăннă Положени тăрăх уессенчи кашни шкулпа ачасен учрежденисенче столовăйсем уçаççĕ.

Пирĕн таврари вулăссенче 1921-22 çулсенчи выçлăха халăх мĕнле тӳссе ирттернине тата выçлăха хирĕç кĕрешес пирки мĕнле мерăсем йышăнни пирки Йĕпреç уес ĕçтăвкомĕпе выçăпа аптракансене пулăшакан комисси доклачĕсенчен пĕлме пулать. Вĕсенчен хăш-пĕрне малалли йĕркесенче илсе кăтартас тетĕп.

Доклад Ибресинского Уисполкома за ноябрь м-ц 1921 года.

Постигший неурожай в 1921 г. Чув. обл., в частности Ибресинский уезд, задушил окончательно граждан уезда. Жизнь в уезде замерла. Повсюду стоит стон от требований помощи и хлеба. Местное население поело все: картошку и другие овощи. В данное время питается исключительно суррогатами: соломой, желудями, древесной корой, ореховыми сережками и разными др., от чего сильно развивается заболеваемость и смертность.

Питающихся суррогатами за отчетный месяц было 73892 чел., больных 15888 человек, умерло от голода 178 чел.

Распродается все: домашняя утварь, одежда, с/х инвентарь, а скот уничтожается беспощадно, режется и на мясо и обменивается на хлеб в более благоприятных условиях по урожайности местностях. На почве голода развивается преступление: воровство, убийства, спекуляция и др. Спекулянты и скупщики наживаются на несчастье и нужде голодных. Помощи пока нет и не откуда. Единственный случай это отпуск населению 555 пайков для взрослых и 400 пайков для детей, которое распределено во 2-й половине ноября.

Население с нетерпением ждет организации столовых. Все приготовлено, но продуктов нет. Часть населения может спастись разработкой лесных материалов, но и тут препятствия. Отсутствие продфуража и несвевременная выдача их отталкивает население и принуждает сидеть дома, т.к. население своих продуктов не имеет.

Со стороны Уисполкома обращено особое внимание на сбор продналога. Для этой цели был объявлен продовольственный двухнедельник с 15 ноября по 1 декабря. В каждую волость были командированы по одному уполномоченному из ответственных работников. В данное время эта работа налажена и продналог поступает, хотя не очень сильно. По правде говоря, сильного поступления и не может быть, т.к. само население подыхает с голода.

Следующая крупная работа за отчетный месяц была произведена приемка волостей из Татарской республики согласно постановлению Президиума ВЦИК от 22 сентября 1921 года.

Председатель Ибресинского УИК

Подпись.

1921-мĕш çулхи çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче Йĕпреç уес ĕçтăвкомĕ выçăпа аптракансене пулăшма комисси йĕркелет. Вулăсссемпе ялсенче те выçăсене пулăшакан (Помгол) комиссисем ĕçлеме тытăнаççĕ. Анчах та пур тыр-пула, пахча-çимĕçе çисе янă, комиссисем те апат-çимĕç продукчĕсем тупайманнипе аптраса ӳкнĕ. Йывăç хуппи, мăян вăрри тата тĕрлĕрен суррогат çисе чылай çын, уйрăмах ача-пăча, чирпе шыçăнса вилме тытăннă. Вилнĕ выльăхсене те аптранă енне пĕçерсе çиекенсем пулнă. Спекуляци, вăрланă, çынна вĕлернĕ тĕслĕхсемпе çыхăннă преступленисем нумайланма тытăнаççĕ çав вăхăтра. Выçăпа аптранă хăш-пĕр çынсем ăсран тайăлнă тĕслĕхсем те пулнă. Сăмахран, 1922-мĕш çулхи пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче «Чувашский край» ятлă Чăваш облаçĕнче тухса тăракан хаçат Шăнкăртам вулăсĕнчи выçлăх тискерлĕхĕсем çинчен çапла пĕлтерет (статьяна кĕнеке авторĕ чăвашла куçарнă – Д.К.):

«Шăнкăртам вулăсĕнчи выçлăха хирĕç кĕрешекен комисси уесри комиссине доклад ярса панă, унта выçă граждансем урамсенчен йытăсене, вилнĕ кушаксене тата тĕрлĕрен выльăх, кайăк-кĕшĕк виллисене пуçтарни çинчен пĕлтереççĕ. Шăнкăртам

ялĕнчи София Ялальдикова хĕрĕ вилнĕ, унăн виллине кайран апат тума амăшĕ пытарса хăварасшăн пулнă, анчах та кӳршисем çакăн çинчен пĕлсе вилене çĕре кĕрттернĕ. Лайăх мар ĕç пулса иртнĕ хыççăн, вăл выçă вилесрен тăватă йытă вилли ашĕсене вут çинче ăшаласа çинĕ, темиçе кунтан вилнĕ. Хирти Пикшик ялĕнче те, пушарта пĕр ĕне çунса кайнă, ăна выçă граждансем çакăнтах пайланă та çисе янă.

Январĕн 25-мĕшĕнчен февралĕн 5-мĕшĕччен Шăн-кăртам вулăсĕнче выçăпа 105 çын вилнĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, вулăсри лару-тăру питĕ йывăр...».

1921–1922 выçлăх çулĕсенче Чăваш облаçĕнчен Харьков, Кременчуг хулисене, çавăн пекех Чехословакине 5889 ачана эвакуаци йĕркипе ăсатнă, çавăн пекех 1921-мĕш çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 9-мĕшĕнче Йĕпреçпе ытти уессенчен 101 ачана Мускава илсе кайса ача çурчĕсене вырнаçтарнă».

С.П. Ухьянкин «Спасенные жизни».

Чăваш Облаçĕнче пурăнакан выçăпа аптракансене, маларах та кăтартнăччĕ пĕр тĕслĕхпе, пулăшас тесе хăш-пĕр кĕпĕрнесемпе облаçсенчен апат-çимĕç продукчĕсемпе тата ытти таварсемпе тивĕçтернĕ.

Аяларах тепĕр актпа паллашма пулать, унта çапла çырнă.

Акт от 27.10. 1921 г. о передаче представителем Татоблисполкома РКП(б) Алексеевым представителю Чув.облисполкома о сдаче вагона продуктов для голодающих на основании накладной:

Ржаной муки – 90 пудов, сахар колотый – 30 п., кураги – 4 п., сухарей ржаных – 8 мешков (32 пуда), сала – 32 п., сельдей – 30 бочек (100 п.), фасоли 16 мешков.

(ЧГИА, ф.161, оп.1, д.5)

Çапах та кун пек пулăшу пирĕн облаçре пурăнакансемшĕн питĕ сахал пулнă, кашни çемьенех апат-çимĕç продукчĕсем кунран кун тăранса пурăнмалăх çитмен, сайра хутра кăна тивнĕ ун пек пулăшу.

ЧĂВАШ АВТОНОМИ ОБЛАҪĔН АДМИНИСТРАТИВЛĂ ТЕРРИТОРИ ЫЙТĂВĔСЕМ. УЕС ЦЕНТРНЕ ЙĔПРЕҪ СТАНЦИНЕ КУҪАРНИ

1921-мĕш çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 22-мĕшĕнче ВЦИК Президиумĕ йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АО-пе Тутар АССР хушшинче территорисемпе ылмаштарнă: Тутар Республикине 17 тутар ялĕ, Чăваш Автономи облаçне 69 чăваш ялĕнчен тăракан вулăссем куçнă. Çак куçнă вулăссем ыйтнипе 1921-мĕш çулхи утă (июль) уйăхĕн 30-мĕшĕнче облĕçтăвком çĕнĕрен йĕркеленĕ уеса Патăрьел ятне панă. ВЦИК хăйĕн 1922-мĕш çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 20-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе Чăваш Автономилле облаçĕн административла территорине пайласа 4 уес йĕркеленĕ, вĕсенчен пĕрне Патăрьел уесне 10 вулăса пĕрлештерсе тума килĕшет. Асăннă уеса кĕрекен 182 ялта 133782 çын пурăннă. Анчах та çĕнĕ уес йĕркеленĕ чухне Йĕпреç станцине вăхăтлăха тесе унăн центрĕ тунипех хăварать. Çакăн хыççăн Патăрьелсемпе Йĕпреçсен хушшинче уеспа унăн центрĕ пирки тавлашу тата хĕрсе кайать, унта та кунта съездсем пулса иртеççĕ. Патăрьел уес Совечĕн 11-мĕш съезчĕ 1922-мĕш çулхи чӳк уйăхĕн 7–10 кунĕсенче иртет. Унта уес ĕçтăвком çĕнĕ йышне суйлаççĕ. Ĕçтăвком хăйĕн ларăвĕнче председатель пулма Иван Васильевич Янаслова, секретарьне Михаил Крылова çирĕплетет. Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ялĕнче çуралса ӳснĕ И.В. Янаслов кун-çулĕ çинчен Патăрьел энциклопедине вуласа пĕлме пултарать.

Уес центрĕ Патăрьелĕнчех пулнипе РКП(б) Чăваш обкомĕ1922 çулхи раштав уйăхĕн 3-мĕшĕнчи 163 №-лĕ йышăнăвĕпе уес центрне Патăрьелĕнчен Йĕпреçе куçарма хистет.

Паллах, Патăрьел ялĕ уес территори варринче ларни, çавăн пекех унта вырнаçнă учрежденисенчи служащисене хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлама ĕç условийĕсем пулни, уес территоринче пурăнакан халăха ĕç

ыйтăвĕсемпе çӳреме меллĕ. Уес центрне Йĕпреçе куçарни вара административлă çуртсене, вĕсенчи пурлăха турттарасси пысăк тăкакпа çыхăннă, чылай вулăсрисенчи ялсенче пурăнакансене тĕрлĕрен ĕçпе çӳреме те, уйрăмах кĕрхи-çурхи шыв-шур вăхăтĕнче, инçе те кансĕр пулнă. Çак сăлтавсене тĕпе хурса ĕнтĕ Йĕпреç ĕçтăвкомĕ тепĕр вунă кунтан ирттернĕ ларăвĕнче уес центрне Патăрьелĕнче, Патăрьел уес ятпах хăварма облĕçтăвкомран ыйтать. Анчах та çӳлте ларакан пуçлăхсене халăх нуши ун чухне интереслентермен курăнать; облĕçтăвком Президиумĕ 1923-мĕш çулхи çуркуннехи шыв-шур пуçланиччен уес учрежденийĕсене Йĕпреç станцине куçарса пĕтерме хушать.

1923-мĕш çулхи ака уйăхĕн 17-мĕш тĕлне вара уесăн пĕтĕм учрежденийĕ Йĕпреçе куçса пĕтеççĕ, уес ячĕ ВЦИК-ăн 1922-мĕш çулхи нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕнчи постановленийĕпе килĕшӳллĕн Патăрьел уесĕ ячĕпех 1927-мĕш çулта районсем йĕркеличчен юлать. Анчах та уес ĕçтăвкомĕн ларăвĕсенче çырса пынă протоколсене Йĕпреç уес ĕçтăвкомĕн ячĕпе çырса пынă.

1922 çулхи Патăрьел вулăсне кĕнĕ хăш-пĕр ялсенчи (4 ялпа анчах илсен) хуçалăхсемпе çын йышĕн кăтартăвĕсем çавăн пек:

Патăрьел ялĕнче пурăнакан арçынсен шучĕ – 1133, хĕрарăмсем – 1145.

Тăрăн ялĕнче 148 хуçалăхра 419 арçын, 435 хĕрарăм пурăннă, 2 çил арманĕ, 1 кĕрпе çуракан арман, 1 çу çаптаракан машина, 1 шкул, 1 чиркӳ, 954 теçеттин сухалакан çĕр пулнă.

Треньелĕнче 104 хуçалăхра 257 арçынпа 284 хĕрарăм, 2 çил арманĕ, 2 кĕрпе çуракан арман, 1 шкул, 516 теçеттин сухалакан çĕр.

Кĕçĕн Патăрьелĕнче 92 хуçалăхра 251 арçынпа 267 хĕрарăм, 4 çил арманĕпе 4 кĕрпе çуракан арман, 502 теçеттин сухалакан çĕр.

Асăрхаттарни: 1. Арçынсемпе хăрарăмсен шутне çула çитмен ачасене те кĕртнĕ. 2. Çав çулсенче çĕр лаптăкне гектарпа мар, теçеттинпа (десятина) шутланă.

Выçлăх çулĕсем хăйсен хура ĕçне тунине 1917 çулта хуçалăхсен шутне илнĕ чухнехи (перепись) кăтартусенченех виçĕ ял тăрăх курма пулать: асăннă ялсенче 1922 çулта вĕсен шучĕ урăх çĕре куçса кайнипе те, выçăпа вилнипе те чакма пултарнă.

1917 çулта Тăрăнта – 154 хуçалăх, Треньелĕнче – 98, Кĕçĕн Патăрьелĕнче – 89.

1924 çулта январĕн 9-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчери пролетариат çулпуçĕ В.И. Ленин вилнĕ хыççăн çĕршывĕпех çамрăк ленинецсен организацийĕсем йĕркеленме тытăнаççĕ. Пионер отрячĕсем кашни шкулта тенĕ пек çуралаççĕ. Тăрăнти пуçламăш шкул заведующийĕ П.П. Петров пуçарăвĕпе ялта пĕрремĕш пионер отрячĕ йĕркеленет. Унта 4-мĕш класра вĕренекен шкул ачисем çырăнаççĕ. Пĕрремĕш пионерсенчен пĕри Петр Николаевич Кошкин пулнă. Каярах Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вут-çулăмĕ витĕр тухса вăл майор званийĕпе оставкăна тухать.

1929 çулта малтанхи пионерсенченех асăннă ялта пĕрремĕш комсомол ячейки туса хураççĕ. Комсомол ячейкине çырăнакан малтанхи çамрăксен йышĕ ун чухне пысăк пулман. Комсомолецсем хăйсен хушшинче Н.А. Сапожникова малтанхи комсомол ячейкин секретарĕ пулма шаннă. Ватăрах çынсем каласа панă тăрăх, çак ячейкăра тăракан Николай Сапожников, Федот Ситов, Илья Думилин, Осип Васильев, Петр Кошкин, Зинон Михайлов, Анастасия Сапожникова, Вера Гаврилова тата ытти комсомолецсем ял çыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тесе чылай усăллă ĕç туса ирттернĕ. Вĕсем ватăсемпе çамрăксене çĕнĕ пурнăçпа культура енне туртăнма пулăшнă. Клуб тăвассишĕн вăй хураççĕ, субботниксемпе воскресниксем

ирттереççё, спектакльсемпе концертсем хатёрлеççё. Çирёммёш çулсен вёçёнче вулама пёлменнисем те чылаях пулнипе тата П.П. Петров учитель ертсе пынипе комсомолецсем хут пёлменлёхе пётерес тёлёшпе нумай вăй хураççё. Çёршывёпех ялсенче колхоз йёркелес юхăм аталанса пынă чухне комсомолецсем айккинче тăрса юлман. Вёсем ялсенчи активистсем пулнă май тёрлёрен комиссисенче вăй хунă, хăйсем те (Николай Сапожников, Федот Ситов, Иван Васильев тата ыттисем те) çемйисемпех колхоза çырăннă. Малтанхи комсомолецсенчен чылайăшё: Илья Думилин поэт, Федот Çитта писатель-журналист, Зинон Михайлов, Осип Васильевпа Николай Лялькин, Тимофей Карпов – вăрçăра паттăрсен вилёмёпе вилнё.

Сăмах май, иртнё ёмёрён 90-мёш çулёсенче Совет Союзё саланса кайнă май пионер тата комсомол организацийёсене те пётерчёç, çавăнпа пёрлех ёлёкрен пыракан чăваш халăхён ырă йăла-йёркисем те манăça туха пуçларёç.

ЧĂВАШ АВТОНОМИ РЕСПУБЛИКИНЕ ЙЁРКЕЛЕНИ. УЕССЕМПЕ ВУЛĂССЕМ ВЫРĂННЕ – РАЙОНСЕМ

Чăваш Автономи облаçне Республикăна куçарас тата территорине пысăклатас тесе ЧАО ĕçтăвкомĕ ВЦИК Президиумĕ умне таврари облаçсенчи чăвашсем йышлă пурăнакан вырăнсене Чăваш Республики çумне çирĕплетес пирки ыйтусем тăратнă. Çавăн пекех Тутар Республикинче юлнă чăваш вулăсĕсемпе ялĕсем те хăйсене Чăваш Республикине куçарма ыйтаççĕ.

Çаксене шута илсе 1925 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче ВЦИК Чăваш Автономи облаçĕнчен куçарса Автономилле Республика йĕркелес пирки постановлени йышăннă:

«Преобразовать Чувашскую Автономную область в существующих границах в Чувашскую Автономную Советскую Социалистическую Республику, входящую как федеральную часть в состав РСФСР.

1. Включить в состав ЧАССР:

Из ТАССР селения Дрожжановской волости Буинского кантона:

Чувашские Ишлеи и Матаки, селения Убеевской волости того же кантона: Нижние Подлесные Шигали, Новые Убеи, Новые Шигали, Русское Дуваново, Старое Дуваново, Старые Убеи, Хорнвар-Шигали, Татарские Убеи и Коржанга Шигали и из Чирко-Кульдурасовской волости Тетюшского кантона – селение Антоновку.

2. Передачу упомянутых в пункте 1-м территории закончить к 15 мая с.г. в порядке инструкции ВЦИК и СНК от 8 октября 1923 года.

Пред. ВЦИК М. Калинин.
Секретарь ВЦИК А. Киселев

Москва, Кремль. 21 апреля 1925 г.»

Патăрьел УИК председателĕ Федоров Чăваш ЦИК-не çак ялсене йышăнса пĕтерни тата çурла уйăхĕн

30-мĕшне Упире вулăс ĕçтăвкомне йĕркелес ыйтупа съезд ирттерме палăртни çинчен пĕлтерет. (И.Н. Ильин «Сăкăт», стр.177.)

Çурла уйăхĕн 31-мĕшĕнче съезд Упи вулăс ĕçтăвкомне йышне суйланă, унăн председателĕ пулма Чебоксаров Федора шаннă.

Чăваш Республикине Тутар Республикинчи ытти чăваш ялĕсем те куçас шухăшлă пулнă. Чăваш Республикинчи Патшалăх Истори Архивĕнчи документсем тăрăх çакна курма пулать.

«Переписки и телеграммы. Акт от 18 августа.

Чувашские селения Буинского кантона Алешкино, Саплык Убеевской волости, новое и Старое Ильмового Куста, чувашское Дрожжаново Дрожжановской волости, Эшибенево, Новое Чекурово, Городищено и Большое Акса Городищенской волости возбуждают ходатайство о включении их в Чувашскую республику». (И.Н. Ильин)

Çапах та Тутар Республикинчи влаçра ларакансем чăваш вулăсĕсем ялĕсемпех Чăваш республикине куçса пĕтесрен, хăйсен территори калăпăшĕ чакасран сыхă тăнă. Пăва ĕçтăвкомĕ Тутар ЦИКĕн распоряженийĕпе килĕшсе асăннă вулăссемпе ялсене Чăваш республикине куçассине хирĕçленĕ. Кун пирки Патăрьел УИК председателĕ Федоров Мускава пĕлтернĕ, анчах ВЦИК Президиумĕ хăйĕн малтанхи постановленине пăрахăçласа 1925-мĕш çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнчи çĕнĕ постановленийĕпе Тутарпа Чăваш республикисен хушшинчи чикке 1925 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшченхи пекех хăварма йышăнать. ВЦИК Президиумĕнче ларакансем ахăртнех ытти облаçсенче йышлă пурăнакан чăвашсем те Чăваш Республикине куçасшăн талпăннипе Тутар Республикинчи тата ытти облаçри ертӳçĕсем хăйсен çĕрĕсене пама хирĕç пулнине шута илнĕ курăнать.

ВЦИК хăйĕн 1925 çулхи утă (июль) уйăхĕн 20-мĕшĕнчи постановленийĕпе Чĕмпĕр кĕпĕрнинчен Улатăр хулипе Улатăр уесне кĕрекен Улатăр, Кувакино, Пăрачкав вулăсĕсене куçарма йышăнать.

Улатăр хулипе асăннă уессенче пурăнакан халăхăн ытларах пайĕ вырăссемпе мордва наци çыннисенчен тăнă, паянхи кун та çавăн пекех. Çапла вара Чăваш Республики 5 уесран: Улатăр, Патăрьел, Çĕрпӳ, Шупашкар тата Етĕрне уесĕсенчен тăма пуçлать.

Чăваш Республикинчи Тĕп архиври (ЧР ПИА) документсем тăрăх, Аслă Патăрьел вулăсĕнче 1927 çул тĕлне 28 ял, вĕсенче 3870 хуçалăх пулнă, çав хуçалăхсенче 20248 çын: (ачи-пăчисемпе шутласа) 9650 арçын, 10598 хĕрарăм пурăннă.

- Тăрăн ялĕ тăрăх 160 хуçалăхра 828 çын, вĕсенчен 334 арçынпа 418 хĕрарăм (812 чăваш) пурăннă.

- Кĕçĕн Патăрьелĕнче 100 хуçалăхра 557 çын (275 арçын, 282 хĕрарăм);

- Треньелĕнче 101 хуçалăхра 484 çын (230 арçын, 254 хĕрарăм) пурăннă.

Вулакан статистикăна тимлесе пырать пулсан çакна асăрхамасăр иртсе каймасть, тесе шутлатăп асăннă ялсенчи хуçалăхсемпе вĕсенче пурăнакан çынсен йышĕ тĕрлĕрен ӳссе пырать. Çак виçĕ ялтан чи çамрăкки Кĕçĕн Патăрьел (Йăлăм) пулни каламасăрах паллă – вăл 1840-мĕш çулсенче пуçланса кайнă. Çирĕммĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче Кĕçĕн Патăрьелĕнчи хуçалăхсемпе унта пурăнакан çынсен йышĕ Треньелпе танлашма та пултарайман пулсан, тепĕр çĕр аллă çул хушшинче асăннă ялта уйрăм хуçалăхсемпе тĕпленсе пурăнакансен йышĕ Треньелĕнчен кăна мар, Тăрăнта пурăнакансенчен те иртсе кайнă. Каярах хăш-пĕр цифрăсем çинче чарăнса тăрăпăр.

1927 çулта кĕркунне республикăра виçĕ сыпăкран тăракан административлă-территори реформи пуçланать; вулăссемпе уессене пĕтерсе районсем туса хураççĕ те ял Совечĕсем, районтисемпе тĕп органсем йĕркелеççĕ. ЧАССР территорийĕ 5 уеспа 55 вулăс вырăнне 17 район çине пайланать. Ял Канашĕсен шучĕ те 1167-рен 812 çити чакать. Вĕсенчен 661 чăваш,

87 вырăс, 15 тутар, 11 мордва, 38 хутăш ялсенчен тăракан ял Канашĕсем чăмăртанаççĕ. Халичченхи Аслă Патăрьел уесне кĕнĕ территори çинче Аслă Патăрьел, Кĕçĕн Елчĕк, Йĕпреçпе Шăмăршă районĕсене йĕркелеме пăхнă. ЧАССР ЦИК-ĕ çумĕнчи Административлă комисси 1927 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 14-мĕшĕнче Аслă Патăрьел районĕнче 55 ял Канашĕ (Совечĕ) йĕркелеме йышăнать. Ун чухне хальхи Комсомольски районĕнчи чылай ял Канашĕсем, Елчĕк тата Шăмăршă районĕнчи хăш-пĕр ялсем те Аслă Патăрьел районне кĕнĕ. Çавна пула ун чухнехи пирĕн район территорине 62447 çынран тăракан 92 ял, 55 ял Канашĕ кĕрсе республикăри пысăк районсенчен пĕри шутланса тăнă. Çĕнĕрен йĕркеленнĕ районта ял Канашĕсенче 1927 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 24–27 числисенче суйлавсем пулса иртеççĕ. Тăрăн ял Канашĕ Кĕçĕн Патăрьелпе Тăрăна пĕрлештерсе тăнă, Треньелĕнче хăй уйрăм ял Канашĕ пулнă. Патăрьел районĕ йĕркеленсен Тăрăн ял Канаш ĕçтăвкомĕн малтанхи председателĕ пулма Крылов Михаил Димитриевича суйланă.

1928 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче çак виçĕ ял Канашне пĕрлештерсе, Тăрăн ял Канашне йĕркелеççĕ, унăн председателĕ пулма Тимофей Васильевич Васильева (Тăрăн ялĕнчен) шанаççĕ.Вырăнти влаç ертӳçипе унăн йышне суйланă пулсан та вĕсене ĕçлеме вăл вăхăтра уйăрса хунă çурт пулман. Çак ыйтăва Аслă Патăрьел райĕçтăвком ларăвĕнче пăхса тухнă, лару протоколĕ çинче çапла çырнă:

Протокол № 11 19–20.10.1928 ç.

Итленĕ:

...7. ТĔК (тĕпĕçтăвком) 1928 çулта чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче 1812/7/6 нумерлĕ хучĕпе Тăрăнти чиркӳ караулккине ял Канашĕ валли панине пăхса тухасси.

Йышăннă: Тăрăнти чиркӳ караулккине кĕнĕ çуртне сыхламан çын, проçвирĕ пурăнать, ăна унтан кăларма хушас.

Караулккăн пĕр пайне кĕлĕ çуртне сыхлакана пурăнма хăварас, тепĕр пайне ял Канашне вырнаçтарас.

Районри çĕр ĕç пайĕн пуçлăхĕ Карсаков. Председатель РИК Самуков.

(ЦГА ЧР, ф.2320, оп.1, д.3)

Çулсем иртнĕ май хăш-пĕр улшăнусем пулса иртнĕ хыççăн, 1991 çултан тытăнса паянхи кунчченех çак виçĕ ял Тăрăн ял Канашне (Советне) кĕреççĕ. Юлашки çулсенче асăннă выраннти влаç тытăмĕн ячĕ те çӳлти влаç органĕсен ячĕ пекех улшăнать.

1927 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 1-мĕшĕнче Аслă Патăрьел районĕнчи Советсен 1-мĕш съезчĕ пулса иртет, унта Тăрăнти шкул заведующийĕ Петр Петрович Петров та хутшăннă, ăна унта секретариата суйланă. Тепĕр кун Патăрьел райĕçтăвком пленумĕн ларăвĕнче ертсе пыракан органĕсене йĕркеленĕ; РИК президиумĕн членĕсене суйланă, кандидат пулма П.П. Петрова суйланă. Асăннă ларура Патăрьел райĕçтăвком председателĕ пулма А.В. Муллина, секретарьне А.А. Антонова шаннă.

ВĂТĂРМĔШ ÇУЛСЕМ: КОЛХОЗСЕМ ЙĔРКЕЛЕНИ. КУЛАКСЕМПЕ ЧУХĂНСЕМ – КАМСЕМ ВĔСЕМ?

Районсем йĕркеленнĕ хыççăн пирĕн тăрăхра, Чăваш АССРĕнчи ытти вырăнсемпе танлаштарсан, тутар ялĕсем ытларах пулнă. Çавна пула уйрăм тутар районĕ йĕркелес ыйту тухса тăрать. 1929 çулхи çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче ЧАССР Тĕп ĕçтăвкомĕ Шăнкăртам районĕ туса хурас пирки пăхса тухать. Çак района вара Аслă Патăрьел, Кĕçĕн Елчĕк, Шăмăршă, хальхи Комсомольски районĕнчи пĕр-пĕринпе чикĕпе пĕрлешсе тăман 22 тутар ялĕ куçаççĕ. Паллах, наци пĕлтерĕшĕпе уйрăм тутар районĕ йĕркелени йăнăш утăм пулнă. Хуçалăхпа экономикăна аталантарас ыйтусемпе ĕçлекенсене те, ял çыннишĕн районти учрежденисене çӳреме те, чăрмавсем кăларса тăратнă. 1931 çул тĕлне ку районта 16 тутар ял Канашĕ шутланса тăнă. Нихăш енчен те тӳрре кăларманран тутар ялĕсенчен тăракан çак района 1939 çулта пĕтернĕ.

РСФСР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1939 çулхи нарăсăн 22-мĕшĕнче ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн çав çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнчи «Калинин, Совет, Октябрьски районĕсене туса хурасси тата Патăрьелпе Шăнкăртам районĕсене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен» йышăнăвне çирĕплетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн Шăнкăртам районĕн тĕп тата Патăрьел районĕн кăнтăр пайĕсенчен çĕнĕ район туса хунă. Çĕнĕ администраци территорине ертсе пыма Шăнкăртам ĕçтăвкомне шаннă. Çав вăхăтрах Шăнкăртам ялне Чкаловски ят панă, район та Чкаловски районĕ пулса тăрать. Патăрьел районĕн çурçĕр пайĕнче вырнаçнă Чăваш Ишекпе Ыхра Çырми ялĕсем тата Йĕпреçпе Шăнкăртам районĕсене кĕнĕ ялсенчен Комсомольски районне йĕркеленĕ.

Чăваш Автономилле Республикăри ялсенче массăллă коллективизаци ирттерес политика 1929-

мĕш çула кĕрсен тытăнать. Анчах та ку çулхинех Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьел тата Треньел ялĕсенчи çĕр общинисен пухăвĕсенче колхозсем йĕркелес ыйтупа тивĕçлĕ йышăну тăвайман. Районтан çак ялсене килнĕ уполномоченнăйсем активистсене, чухăнсемпе вăтам хресченсене пухса пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене е колхозсене пĕрлешсен мĕнле çăмăллăхсем пуласса ăнлантарса панă. Пуянрах хресченсене хĕстерес пирки те манса кайман. Ялсенчи тĕреклĕ хуçалăхсемпе хăтлă çуртйĕрсем тытса тăракан çемьесене кулаксем тесе колхоза кĕртмен, çурчĕсенчен хăйсене кăларса ярса хăшнепĕрне ссылкăна та янă, пурлăхне, выльăх-чĕрлĕхне туртса илсе колхоза панă. Чылай чухне кун пек ыйтусене тата пуянтарах хресченсене налук хурассипе кредит укçи тӳлеттерессине ялсенчи чухăнсен пухăвĕсенче татса панă.

1929-мĕш çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче «Правда» хаçатра И.В. Сталин çырнă «Год великого перелома» ятпа статья тухать. Унти тезис тăрăх ял хуçалăха аталантарас ĕçре массăллă коллективизаци туса ирттернĕ чухне вăтам хресченсене колхоз енне çавăрас тесе çине тăрса ĕçлес пирки çырать çав статьяра. Влаçра ларакан пуçлăхсем вара çак ĕçе хăвăртрах пурнăçа кĕртес тесе ялсене хуласенчен 25 пин рабочи ярăççĕ.

1930-мĕш çулхи кăрлач-нарăс (январь-февраль) уйăхĕсенче пирĕн республикăна 105 рабочирен тăракан ушкăн, вĕсенчен ытларах пайĕ Чулхула крайĕнчи предприятисенчен, килсе çитнĕ. Пирĕн района Муром хулинчен килнĕ Ложкин рабочи колхозсем йĕркелес ыйтупа Тăрăн, Йăлăм ялĕсенче чухăнсен пухăвĕсене хутшăнать.

Кунта тата çакна палăртса хăварсан выränлă пулĕ тесе шутлатăп. Петр Петрович Петров Тăрăн шкулĕнче чылай çул хушши учитель, 20-мĕш çулсенче 1-мĕш сыпăклă шкул заведующийĕ, каярах пуçламăш шкул директорĕ пулса ĕçленĕскер, партипе Совет органĕсенче, çавăн пекех районти ялсенче колхозсем йĕркелес ĕçре активлă хутшăннă. Райĕçтăвком президиумĕн

членĕ шутланса тăнă. 1927–1928 çулсенче Патăрьел районĕнчи выраннти Совет органĕсене йĕркелесен пĕр вăхăт хушши ял Канашĕн ĕçтăвком председателĕн, секретарĕн ĕçĕсене те туса пынă. Чăваш Республикинче колхозсем йĕркелес юхăм сарăлсан, Тăрăн ял тăрăхне кĕрекен ялсенче вăл ертсе пынипе малтанхи колхозсем йĕркеленнĕ.

1930 çулхи кăрлач уйăхĕн 8-мĕшĕнче чухăнсен пухăвĕ Тăрăнта Тимофей Васильевич Васильев ертсе пынипе ушкăнлă хуçалăх йĕркелеме йышăнать. Тепĕр кунхине çак йышăнăвăн протоколне Тăрăн ял халăхĕн аслă пухăвĕнче (пуху пуçлăхĕ – П.П. Петров, çыруçи – В.Л. Çаваç, членĕ – А.Ибетов) çирĕплетнĕ. Пуянрах хресченсене кулак тесе пĕрлешӳллĕ хуçалăха е колхоза кĕртмен. Çав пухури (08.02.1930 ç.) протокол çинче пуян хуçалăхсен çемье пуçлăхĕсене кăтартса çырнă списока çаксене кĕртнĕ:

1. Медаков Александр Александрович
2. Медаков Александр Иванович
3. Медаков Иван Иванович
4. Воробьев Петр Васильевич
5. Кудряшов Петр Прохорович
6. Лаханов Иван Егорович
7. Шуряшкин Евдоким Тихонович
8. Ялуков Александр Максимович
9. Самакин Василий Васильевич
10. Самакин Иван Васильевич
11. Лялькин Николай Андреевич
12. Воробьев Осип Тихонович
13. Михайлов Василий Михайлович.

Тепĕр 10 кунтан 42 çынран тăракан Тăрăнти чухăнсен пухăвĕ районти ударлă бригада хутшăннипе çураки кампанине ирттерсе ярасси тата колхоза кĕрессине хăвăртлатас пирки ыйтусем пăхса тухнă. Унта çак ыйтупа районти агроном Любимов доклад тунă. Протокол çинче кам тухса калаçни тата пуху мĕнле йышăну кăларни çинче чарăнса тăрăпăр.

Барашкин (районтан килнĕ представитель – Д.К.): Хальхи пек уйрăм хуçалăх акакан çĕре пыра-киле пуçĕпех начарлатса хăварать. Пурнăç хăех колхоз тума чĕнет. Колхоза кĕме халех запись уçса çырăнмалла.

Петров П.П.: ...Колхоза куçсан пĕтĕм çĕр пĕр пек тикĕсленсе, çĕнелсе пырать. Колхоза халех çырăнмалла.

Коннов: Середняксем çырăнмасăр эпир лашасăрсем ĕç кăларма пултарайăпăр-ши? Середняксем çырăнсан эпир çырăнатпăр.

Любимов ответ парать: Бедняксене лаша илмелĕх укçа параççĕ. Бедняксем малтанах çырăнса пример кăтартмалла.

Йышăннă: Колхоза ялĕпех тăвас. Колхоза халех çырăнма тытăнас.

Итленĕ (Барашкин): Хресченсен хушшинчи ахаль выртакан укçасене район кредит юлташлăхне хывма ял çине пайласа тухасси.

Пайланă чухне пуянсем çине хумалла.

Содействи комиссийĕ кама мĕн чухлĕ хумаллине хурса тухнă списока пăхса тухнă.

Йышăннă: çак пуянсене çапла хурас:

1. Мидаков Александра (Александровича – Д.К.) – 750 тенкĕ.
2. Мидаков Александр (Ивановича – Д.К.) – 500 тен.
3. Мидаков Ивана – 200 тен.
4. Воробьев Петтăра – 500 тен.
5. Кудряшов Петтăра – 600 тен.
6. Каллина Пераскована – 300 тен.
7. Лаханов Ивана – 600 тен.
8. Александров Николая – 100 тен.
9. Шуряшкин Евдокима – 600 тен.
10. Самакин Ваççилийе – 300 тен.
11. Ялуков Александра – 500 тен.
12. Павлов Петтăра – 500 тен.
13. Яковлев Александра – 150 тен.
14. Карпов Ваççилийе – 100 тен.
15. Мясников Ильяна – 200 тен.

16. Шалунов Дмитрине – 150 тен.
17. Самакин Александра – 150 тен.
18. Арбузов Ивана – 125 тен.
19. Воробьев Осипа – 100 тен.
20. Воробьев Ивана – 100 тен.
21. Крылов Ваççилийе – 50 тен.
22. Илехметов Ваççилийе – 50 тен.
23. Илехметов Григорийе – 50 тен.
24. Самакин Ивана – 50 тен.
25. Кошкин Ивана – 50 тенкĕ.

Вулакан асăрхарĕ те пуль: пуянсен шучĕ пĕр уйăхрах 25 хуçалăха çитнине, çитес вăхăтрах вĕсен пурлăхне кулак тесе туртса илсе, хăйсене кил-çурчĕсенчен кăларма, выльăх-чĕрлĕхсене пĕр çĕре пуçтарма тытăнаççĕ. Ун пек пăтăрмахсем ытти ялсемпе районсенче те пулса иртеççĕ.

1930-мĕш çулхи кăрлач уйăхĕн 30-мĕшĕнче чухăнсемпе вăтам хрсченсен хуçалăхĕсенчен тăракан колхоз пухăвĕ пулса иртнĕ, колхоз активĕ 5 çынран тăракан вăхăтлăх правлени суйланă. Унта Петров Петр Петрович (Тăрăн шкул заведующийĕ), Васильев Тимофей Васильевич, Лазарева Агреппина, Петров Никифор, Воробьев Осип кĕнĕ. Çак пухура колхоз ятне «Красный паровоз» тесе параççĕ. Тепĕр уйăхра нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнчен тытăнса правлени ларăвне Медведев Семен Григорьевич колхоз председателĕ пулса ертсе пыма тытăнать. Колхоза кĕрес текенсем ун чухне нумай пулман-ха. Çапах та унта малтан кĕрекенсем (кăрлач-нарăс уйăхĕсенче) аяларах асăннă Тăрăн ял çыннисем пулнă тесен йăнăш та пулмĕ. Кунта Петр Петрович Петрова, Тимофей Васильевич Васильева, Семен Григорьевич Медведева, В.Л. Çаваç-Леонтьева, Никифор Петрова, Осип Воробьева, Агреппина Лазаревана, Иван Андреевич Илехметова, Петр Николаевич Кошкина, Григорий Илехметова, Андрей Павлович Коннова, Федор Степанович Груздева, Сергей Павлович Кононова

(Конновсен хушамачĕ малтан Кононов пулнă, 1930-мĕш çулсенчен тытăнса Коннов хушамат çине куçса каяççĕ), Петр Васильевич Крылова, Павел Тихонович Юнусова, Илья Ермолаева, А.Илеменова каярах тата ыттисене кĕртме пулать.

Колхозсем йĕркелес пирки чухăнсен пухăвĕсем Кĕçĕн Патăрьелпе Треньелĕнче те пулса иртеççĕ, çак ялсенче те пуянсен списокĕсем туса кредит юлташлăхĕ валли тесе вĕсене укçа тӳлеттереççĕ. Ялсенчи арман хуçисене кăна мар (Тăрăнта – Воробьев Петр, пĕр тăван Александрпа Иван Мидаковсем; Кĕçĕн Патăрьелĕнче – Тихонов Алексей, Воробьев Андрей Антонович, Воробьев Александр Сергеевич; Треньелĕнче – Митрофанов Иванпа Паймин Иван, Зайцев Александр, Захаров Петр – вĕсем 1929-мĕш çулччен уйрăммăн пĕччен, иккĕн, е виççĕн пĕрлешсе пĕр çил арманĕ, лашапа çавăрса кĕрпе авăртакан армансем тытнă) тĕрлĕ разрядлă сутуçăсене те кулаксен списокне кĕртнĕ.

1930 çулхи кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнчи чухăнсен пухăвĕн протоколĕ тăрăх, çураки компанийĕ тата коллективизаци ыйтăвĕсемпе Муром хулинчен килнĕ рабочий Ложкин тухса калаçнă. Çав пухури иккĕмĕш ыйту тăрăх пуянсен 25 хуçалăхран тăракан списокне туса çавăн пек йышăну кăларнă:

«Распределить денежных сумм для усиления средств кредитного товарищества среди следующих кулаков и зажиточных хозяйств»:

1. Тихонов Александр – 400 р.
2. Каллин Герасим – 400 р.
3. Романов Петр – 300 р.
4. Каллин Василий – 300 р.
5. Воробьев Андрей – 300 р.
6. Воробьев Павел – 400 р.
7. Воробьев Александр – 200 р.
8. Илюткин Николай – 400 р.
9. Каллин Павел – 300 р.
10. Илюткин Афанасий – 400 р.
11. Скрипачева Наталия – 300 р.
12. Марков Федор – 200 р.
13. Артемьев Макар – 200 р.
14. Ильин Федор – 300 р.
15. Гордеев Николай – 300 р.
16. Алексеев Павел – 300 р.
17. Илюткин Яков – 500 р.
18. Марков Димитрий – 100 р.
19. Илюткин Иван Игн. – 50 р.
20. Илюткин Семен – 100 р.
21. Илюткин Илья – 100 р.
22. Сидоров Иван – 50 р.
23. Алексеев Анисим – 100 р.
24. Михайлов Илья – 100 руб.

1930-мĕш çулхи кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕнче Треньел ялĕнчи халăх пухăвĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăх уçасси çинчен ыйту пăхса тухнă, унта колхоз ятне «Паянхи сас» панă, унăн председателĕ пулма Иван Юманова суйланă.

Çав çулхинех ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче Кĕçĕн Патăрьелĕнчи пухура çак ял çыннисем колхоз ятне ялăнни пекех – Кĕçĕн Патăрьел ячĕпе хунă, колхоз Уставне учредительсем 5 çынтан çирĕплетнĕ: Афанасий Яковлевич Соловьев, Сергей Тимофеевич Рубцов, Максим Андреевич Андреев, Григорий Николаевич Хураськин тата Анастасия Антоновна Михайлова, председатель тилхепине Афанасий Соловьева шанса панă. Çав пухурах тепĕр ыйтупа пушă выртакан çĕрсене йĕркелесе пыма комисси суйласа хăварнă. Кĕçĕн Патăрьелĕнчи малтанхи колхозниксен шутне çӳлерех асăннă колхоз Уставне йышăнакансемсĕр пуçне Егор Николаевич Хураськина, Арсентий Иванович Соловьева, Иван Михайлович Фролова, Егор Васильевич Ситова, Иван Маркович Волкова, Иван Владимирович Хураськина, Владимир Степанович Алякина, Марк Лентьевич Леонтьева, Кирилл Сергеевич Сергеева, Иван Петрович Акимова, Александр Маркович Маркова тата Федот Александрович Ситова кĕртме пулать. Вĕсенчен чи çамрăкки Федот Ситов колхоза кĕнĕ чухне 16 çулта çеç пулнă. Каярах пирĕн енчи паллă çыравçă, çар журналисчĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуçне хунă.

Кĕçĕн Патăрьел ялĕнчи «Малое Батырево» колхоз йĕркелесе яракансенчен 12-шĕ чухăн хресченсем шутланнă, 7 – вăтам хресченсем.

1929–1930 çулсенче колхозсем йĕркеленме тытăнсан, колхоза кĕнĕ чухăнсемпе вăтам хресченсен çемьери çынсен шутне пăхса ялсенчи çĕр обществинчен колхозсене усă куракан çĕр валеçсе панă. Кунта асăннă ял çинче чарăннă май çĕрпе усă курасси çинчен кăларнă актпа паллаштарас тетĕп.

Акт о землеуказании.

1930 года мая 8 дня, я землеустроитель отд. Мелпозема Наркомзема Чув. Республики Алексеев В.А. на основ. Инструкции о землеотводах и землеуказаниях НКЗ ЧАССР в присутствии членов комиссии в составе председателя Туруновского с/Совета Степанова, представителя от колхоза при дер. М.Батырево Соловьева, представителя от индивидуального сектора Прохорова и представителя Большебатыревского РИК – райагронома Любимова производил отвод земли колхозу при дер. М.-Батырево в паровом клину 1930 года из парового клина Зем. Общ-ва М-Батырево.

Площадь землепользования Земельного Общества Малое Батырево в паровом клину путем вычисления на плане планиметром установлено 176.00 гектар, а разверсточных единиц по Земельному Обществу включая и число членов колхоза ко дню отвода земли колхозу по данным передела земли под яровой сев с/г равняется 587 едоков из коих: в колхозе 73 едоков, а в индивидуальном секторе 514 едоков, следовательно норма на одного едока равняется 0,30 гектара.

Исходя из вышеуказанных данных следует отвести колхозу при дер. М-Батырево на 17 дворов с 73 едоками в первом клину 21,9 гектара.

По состоянию на 8 мая, т.е. ко дню отвода земли колхозу по Зем. Общ-ву М-Батырево, включая и членов колхоза значится 106 хозяйств, из коих три хозяйства правительственной комиссией отнесены к кулакам 1-й категории, земли домохозяев коих передаются колхозу при Малое Батырево на площади 0,90 гектара.

Следовательно, колхозу отводится в паровом клину земля в количестве 22,80 гектара. Колхозникам отводится из лучших земель Земельного Общ-ва, как указано в плане, при чем отведенная колхозу земля разбита согласно требований организации труда на 2 клетки: из коих в клетке №7 – 11,40 гектара, а №2 – 11,40 гектара.

При производстве передела земли в паровом клину 1930 года в индивидуальном секторе землеуказательная комиссия

обязуется поделить кулаков землей худшего качества, а бедняков при жеребьевке по возможности наделять близкими и лучшими землями. Пользование остальными угодиями, выгонами, улицами и т.д. колхозников дер. Малое Батырево остается совместно с индивидуальным сектором.

Проект отвода земли колхозу перенесен в натуру и местоположение, границы отведенной земли землеуказательной комиссии известно.

Землеустроитель: подпись В. Алексеев
Райагроном «»__»»__ Любимов
Председатель СИКа _»»_ Степанов
Представитель колхоза _»»_ А.Соловьев
Представ. индив. сектора _»»_ И.А. Прохоров
(Батыревский райархив ЧР, ф.189, оп.-1, д.-2)

Ял çыннисем колхоза кĕнине е колхозран тухнине пула, колхозниксем усă куракан çĕр лаптăкĕ те улшăнсах тăнă. 1930 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 4-мĕшĕнче çĕр ĕçпе ĕçлекен комисси колхозпа уйрăм хуçалăхсене (индивидуальный сектор) çĕр лаптăкĕсене виçсе шута илнĕ чухне колхоза 61 ятакпа (едоков) кĕрекен 12 хуçалăха 18,48 гектар çĕр уйăрса панă. Çав вăхăта уйрăм хуçалăхсенче 538 ятак, е кашни çемьери çын пуçне 0,30 гектар таран усă куракан çĕр шутланнă. Кĕçĕн Патăрьел çĕр общини çинче акса-лартса тыр-пул, пахча-çимĕç туса илекен çĕр лаптăкĕ 181 гектар пулнă.

Колхоз йĕркелесен малтанхи 17 колхозник камсем пулнине маларах çырса кăтартнăччĕ ĕнтĕ. Авăн уйăхĕ тĕлне вара вĕсен йышĕ чакса 12 анчах юлнă. 12 хуçалăхра çемье членĕсемпе 61 çын, вырăсла «едок» сăмахран ятак тейĕпĕр, шутланса тăнă. Список çинче вĕсем çаксем:

Соловьев Афанасий – 7 едоков
Хураськин Григорий – 4 ед.
Хурасьскин Егор – 5 ед.
Хураськин Иван – 5 ед.
Михайлова Анастасия – 7 ед.
Сергеев Кирилл – 2 ед.

Рубцов Сергей – 5 ед. Ситов Егор – 6 ед.
Андреев Максим – 5 ед. Акимов Иван – 2 ед.
Фролов Иван – 12 ед
Волков Иван – 5 ед. исключен (колхозран кăларнă – Д.К.).

Председ. правления: подпись А. Соловьев

Треньел ялĕ пирки çырнă акт тăрăх çакна пĕлме пулать:

Акт

1931 года марта 26 дня составил настоящий акт руководитель землеустроительных работ по Батыревскому району Сокольский И.П. в присутствии землуказательной комиссии дер. Новой Котяковой в следующем составе: от Туруновского с/Совета Юманов И.К., от колхоза «Паянхи сас» т. Краснова П. от ККОВ Логунов П., от земельного об-ва т. Романов П.Р.

Сего числа указанная комиссия производит землеуказание колхозу «Паянхи сас» в яровом клину 1931 года. Комиссия установила площадь поля, которая равняется 196.35 га., едоков в земельном об-ве 525, дворов 107. Норма на едока в яровом поле равна 0.376 га. В колхозе на 26 марта состоит дворов 10, едоков 30, коим причитается земля 11.28 га. Кроме того колхозу отводится земля отсутствующих граждан в числе 8 едоков, коим причитается земля 3.01 га., а всего колхозу отводится земля 14.28 га. Указанная земля отводится из лучших земель зем. общ-ва без расценки по существующей норме в земельном об-ве. Указанная площадь, в переводе на полузагонники, длиной 125 сажен и шириной 65 сажен, составляет 401/2 полузагонников площадью 812 кв. сажен. Несмотря на составление настоящего акта приток новых членов в колхоз не задерживать, т.к. дополнительную прирезку можно произвести перед производством передела в индивидуальном секторе, так же комиссия должна при производстве передела в индивидуальном секторе, наделять бедняков лучшей землей, а кулачество наихудшей.

Землеустроитель – подпись Сокольского, а также подписи представителя Туруновского с/Совета, от колхоза и от ККОВ.

Список
членов колхоза «Паянхи сас» при д. Новой Котяковой.

1. Юманов Иван 4 едока
2. Анисимов Василий 2 _»»_
3. Краснов Тихон 5 _»»_
4. Юманов Федор 8 _»»_
5. Галкина Ольга 1 _»»_
6. Паймин Иван 5 _»»_
7. Портнова Анисия 2 _»»_
8. Логунов Иван 1 _»»_
9. Краснов Павел 1 _»»_
10. Пыркин Иван 1 _»»_

30 едоков

Предколхоза: подпись 26/Ш-31 г.

Треньелёнчи «Паянхи сас» колхоз председателё 1931-мёш çулхи пуш уйăхён 26-мёшёнче çырнă список тăрăх çакна асăрхама пулать. 10 ял çыннинчен 4-шё хăйсем анчах, çемйисемсёр колхоза кёнё. Тен, хăшпёрин çемйи те пулман пуль, ун пек чухне хёрарăмсем пирки ытларах калама пулать, арçынсенчен илес пулсан вара, пёр-пёр çемьере ашшё-амăшё сённипе пёве кёнё (çитённё) ачи колхоза кёме пултарнă.

Колхозсем йёркелес ёçе районсенчи «тройкăсем» – чрезвычайлă органсем (унта парти райкомёсен, Советсен ёçтăвкомёсен тата ОГПУ представителёсем кёнё) ертсе пынă. Ялсенчи активсене коммунистсемпе комсомолецсем кёнё: вёсем колхозсем йёркелесен хресченсене çăмăллăхсем пуласси çинчен ăнлантарса панă. Уйрăмах чухăнсен колхоза кёрсен пурлăхлă пуласси вёсене пысăк шанăç панă. Паллах, вăтам хресчен ёçкё-çикёпе аташакан, ёçлемесёр çапкаланса çýрекен, чăх пуçне урăх выльăх та усраман, ака-суха хатёрё те тытман ял çыннипе хăйён пурлăхне, ут таврашне

пĕрлештересшĕн пулман. Çапах та влаçра ларакансен шухăш урăхларах пулнă.

1930-мĕш çулхи нарăс уйăхĕн 15–19-мĕшĕнче Обком Пленумĕпе ВКП(б) обласри контроль комиссийĕ йышăнăвĕ тăрăх, республикăн юбилейĕ (24.06.1930 ç.) çитнĕ çĕре колхозсем йĕркелессине 75 процента çитермелле, çулталăк вĕçĕнче вара çак ĕçе вĕçлемелле пулнă. Колхоза кĕрес теменнисене тĕрлĕрен меслетпе хĕсĕрлеме тытăннă. Патăрьел районне ун чухне кĕнĕ Кивĕ Сĕнтĕр ял Канашĕнче колхоза кĕрессине хирĕç тăнă 14 хуçалăха 500-шер тенкĕ налук хунă, ăна 24 сехет хушшинче тӳлемелле пулнă. Çакăн пек репрессилле меслетпе уйрăм хуçалăхсене колхоза кĕртес çул çине тăни, паллах, ял çыннисене тарăхтарнă, кашни районта тенĕ пек халăх пăлханма пуçланă. Тĕслĕхрен, 1930 çулхи пуш уйăхĕн 23-мĕшĕнче Кĕçĕн Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре ял Канашĕн çурчĕ умĕнче 200–250 çынран тăракан ушкăн пуçтарăннă, колхоза салатса яма хистенĕ.

Республикăри 15 районта колхозсем йĕркелеме тытăннинчен шутласа 1931 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 1-мĕшĕччен колхозсен активисчĕсем çине тапăннă тĕслĕхсем 379, пурăнакан çуртсемпе колхозсен кĕлечĕсемпе ытти хуралтăсене çунтарни – 96, колхоз выльăх-чĕрлĕхне наркăмăш парса вĕлерни 36 тĕслĕх таранччен пулнă. Кун пеккисем Патăрьел районĕнчи Тăрăн ял тăрăхне кĕрекен ялсенче те пулнă. Ирĕксĕрлесе колхоза кĕртни халăха пăлханасси патне илсе пынине влаçра ларакансем те ăнланса илнĕ.

1930 çулхи пуш уйăхĕнче И.В. Сталин çырнă «Головокружение от успехов» статья тата ЦК ВКП(б) «О борьбе с искривлениями партийной линии в колхозном движении» ятпа постановлени тухать. Асăннă документсене ĕненес пулсан вара хресченсене хĕсĕрлесе колхоза кĕртнинче вырăнти влаçсем айăплă пек пулса тухать. Вăтам хресченпе пĕрлĕх кирлĕ пирки, колхоз йĕркеленĕ чухне хресченĕн çак коллективлă хуçалăха

кĕме хăйĕн ирĕкĕ пулмалла тесе кăтартнă çак постановление. Асăннă уйăхрах ял хуçалăх эртелĕн Примерлă Уставне йышăннă. Правительство колхозсемпе унăн членĕсене çăмăллăхсем памалла тесе йышăну кăларнă пулин те, колхозсем саланса кайма, вĕсенчен хресченсем тухма тытăнаççĕ. Кун пек тĕслĕхсем паллах, пирĕн енчи ялсенче те пулса иртнĕ. Сăмах май, кӳршĕри Тикеш ялĕнче чылай çемье «Красный пахарь» ятлă колхоза кĕнĕ пулсан çав çулсенче, Сталин постановленийĕ тухсан çак пĕрлешӳллĕ хуçалăхра 7–8 çемье анчах тăрса юлнă.

Чăваш АССР Тĕп ĕçтăвкомĕпе ВКП(б) обкомĕн «раскулачивани тата коллективизаци вăхăтĕнче тунă йăнăшсемпе тӳнтерлĕ ĕçсем çинчен» кăларнă информацирен çакна пĕлме пулать:

«...Ял Совечĕсемпе райĕçтăвкомсем раскулачивани тата коллективизаци ирттернĕ вăхăтра питĕ пысăк йăнăшсемпе тӳнтерлĕ ĕçсем тунă. Раскулачивани ирттерме хресченсенчен нумайăшĕ (чухăнсемпе вăтам хресченсем) хатĕр пулман. Нумай районсемпе ялсенче раскулачить тăвасси асăрхаттармасăр, халăха хатĕрлемесĕр, аппарат йĕркипе иртнĕ, çавăнпа та парти линине пăсса кукăртни палăрать.

Раскулачивани ĕçне вĕçленĕ май, районта коллективизаци шайĕ 87 процента çитнĕ. Коллективизаци кĕске вăхăтра пысăк шая çитни вăтам хресченсемпе хăш-пĕр чухăнсем раскулачиванирен хăранипе çеç пулнă. Пĕтĕмĕшле коллективизаци тăвасси раскулачивани туса ирттермелле тенине пĕлтермест, пачах урăхла, чухăн та вăтам хресченсене, батраксене хăйсене ирĕккĕн колхозсене кĕме условисем туса памалла. Анчах та раскулачивани администраци меслечĕпе иртнĕ. Районта 806 хуçалăха раскулачивани тунă, вăл районти мĕнпур хуçалăхсен 9%. Хăш-пĕр ялсенче 28% та çитет (Пăлакасси – 28%, Çĕнĕ Ахпӳрт – 27%, Кĕçĕн Патăрьел – 22%, Тури Тăрмăш – 19%). Пысăк проце-

та çакăн пек ăнлантарса пама пулать, райĕçтăвком тата райком ялсенче кулаксен шутне кĕртекен бригадирсене тĕрĕс мар хушу панă. Ку директивăра çапла çырнă: «Раскулачивани çине пĕтĕм кулаксем кĕреççĕ, енчен те вĕсене суйлав правинчен хăтарнă пулсан, уйрăмах социаллă хăрушă, е йĕркене пăсакансем. Çирĕп хуçалăхлă вăтам хресченсен япалисене чухăнсемпе пĕр тан пуличчен конфискацилемелле». Çак директивăна пула раскулачиванине хăш-пĕр вăтам тата чухăн хресченсен, служащисен, учительсен, красноармеец пулнă çемьесен, тĕнпе çыхăнса ĕçлекенсен хуçалăхĕсем лекнĕ...».

(Информацие Патăрьел районĕнчи «Авангард» хаçатра 17.06.1990 çулта чăвашла «Документсем çирĕплетеççĕ» ятлă статьяпа Чăваш Автономийĕ 70 çул тултарнă май куçарса пичетленĕ – Д.К.)

Çӳлти влаç органĕсенче ларакансем коллективизаци вăхăтĕнче йăнăшсемпе тӳнтерле ĕçсем тунине пула хăш-пĕр колхозсен ĕмĕрĕ кĕске килсе тухнă.

Тăрăнти «Красный паровоз» колхоз та нумай тытăнса тăрайман, çирĕпленсе çитеймесĕрех тепĕр темиçе уйăхран саланса кайнă. Сăлтавсенчен пĕри – колхоз йĕркеленсе çитнĕ-çитменех колхоз активисчĕсем «раскулачивать тăватпăр» тесе пуянрах ял çыннисемпе пĕрле вăтам хресченсен çурт-йĕрне тустарни, хăйсене кивĕ хăтсăр çуртсене пурăнма куçарни, вĕсен пурлăхне, лайăх тумтир таврашне илсе тухни – ялти ытти хресченсене те колхоза кĕрессинчен сивĕтме пултарнă. Колхоз правлени ларăвĕсенче кăна мар, ялсенчи чухăнсен комитечĕсем те пухусем ирттерсе пуянраххисен пурлăхне, выльăх-чĕрлĕхе туртса илес пирки пысăк активлăх кăтартнă çав тапхăрта, вĕсемпе мĕнле усă курнă пирки протоколсемпе паллашсан тĕплĕрех пĕлме пулать.

Протокол № 1
бедняцкого собрания граждан с.Туруново
от февраля 1930 года.

Председатель: Леонтьев В.Л.
Секретарь: Петров П.П.

Слушали: ...2. Об использовании конфискованных мельниц.

Постановили: В целях плановой работы конфискованных ветряных мельниц в пользу колхоза, временно до подыскания мельника на ветрянку Воробьева Петра выделить Кононова Петра и Сорокина Терентия, а мельника на бывшей мельнице Медакова Александра оставить на месте.

3. О распродаже кулацкого имущества, отобранного во время ликвидации.

- расценки на распродажу кулацкого имущества назначить доступную для бедняков и ни в коем случае на торги не допускать середняков, желающих поживиться, а не в целях приобрести вещь, как необходимость.

4. О распродаже кулацкого имущества Медакова А. судоисполнителем в пользу Емельянова Ивана лишенца, вернувшего из переселения.

- не дать лишенцу поживиться достоянием колхоза, наложить 500 руб. в фонд колхозного товарищества на приобретение с/х.

Протокол
заседания правления Туруновского к-за «Красный паровоз»
от 23 февраля 1930 г.

Председатель: Медведев С.
Секретарь: Петров П.

Повестка дня:

1. Обобществление конфискованных лошадей и коров.

Постановили: Разместить конфискованный скот в следующем порядке:

1. В дом Медакова А.А. – 3 лошадей своих, 1 лошадь Кудряшова П., по 1 лошади Медакова И. и Воробьева П., всего 6 лошадей.

2. В дом Кудряшова Петра: овец его, Воробьева П., Медакова А.И., Медакова А.А., Шуряшкина Е., Медакова И.

3. В дом Медакова А.И. – лошадей: 1 Самакина В., 1 л. Самакина И., 2 своих, и 1 л. Лялькина А. – всего 5 лошадей.

4. В дом Самакина И. – коров Самакина В., Самакина И., Воробьева П. и Ялукова А.

5. В дом Самакина В. – овец Самакина И., Самакина В., Ялукова А.М., Лаханова И.Е.

6. В дом Медакова И. – всех яловых коров, телят и свиней.

7. В дом Ялукова А. – 2-х жеребцов.

Пуянрах пурăнакан хресченсене пурлăх енчен кăна мар таптанă ун чухнехи самана урапи, çĕршыври политика ĕçне хутшăнма, суйлав правипе усă курма та ирĕк паман, ун пеккисене лишенец тесе тĕрлĕрен налук хурса тинкене кăларнă. Çавăнпа та ĕнтĕ çемье пуçĕ хăй нушаланса тунă çуртран ачи-пăчипе урама кăларса тăратнипе ниепле те килĕшсе тăма пултарайман, çавăн пекех юлхав та çĕтĕк-çатăк тумтирпе çӳрекен, ĕçкĕпе аташакан кӳршĕ усă куракан правана унран туртса илни те ăна тарăхтарнă, çавăн пекех кӳрентернĕ те. Çакăн пек тĕрĕсмарлăхпа килĕшмесĕр ĕнтĕ кулаксен шутне кĕнĕ ялсенчи хресченсем Правительство комиссине хăйсен çурчĕсене каялла кĕртме, суйлав правипе туллин усă курма ыйтса, ялсенчи суйлав комиссисене заявленисем тăратнă. Паллах, пурин ыйтăвне те тивĕçтермен асăннă комиссисем.

Тĕслĕхрен, Тăрăнта пурăнакан Емельянов Иван хăйне лишенецсен списокĕнчен кăларма ыйтса комиссине заявлени çырса панă. Патăрьел райĕçтăвкомĕ 1932 çулхи ака уйăхĕн (апрелĕн) 14-мĕшĕнче хăйĕн

ларăвĕнче пăхса тухса унăн ыйтăвне тивĕçтермен. Протокол çине вара çапла çырса хунă: «Ходатайство гр-на с.Туруново Емельянова Ивана, лишенного как торговца по патенту 2-го разряда, оставить в списке лишенцев (иметь права голоса избрать и быть избранным в депутаты на выборах Верховного Совета и в местные органы власти – Д.К.).

Правительство комиссийĕ йышăннă тăрăх Тăрăн ялĕпе хăйсен çурчĕсене çак çынсене кĕртмелле тунă:

1. Яковлев Александр Яковлевич
2. Лаханов Иван Егорович
3. Воробьев Иван Сергеевич
4. Самакин Иван Васильевич
5. Арбузов Иван Прокопьевич
6. Самакин Василий Васильевич
7. Ибетов Алексей Максимович
8. Медаков Иван Иванович
9. Лазарев Андрей Никифорович
10. Лялькин Афанасий Иванович
11. Васильев Тимофей Васильевич
12. Каллина Перасковья Федоровна
13. Самакин Александр Степ-ч
14. Мясников Илья Иванович
15. Илехметов Григорий Леонтьевич
16. Ялуков Александр Максимович
17. Шекеев Александр Николаевич

Заявления в Сельизбирком Туруновского Сика (сельского исполнительного комитета – Д.К.) от лишенных избирательных прав о восстановлении в избирательных правах:

1. Воробьева Андрея Антоновича, имевшего 1/3 часть ветряной мельницы до 1928 года;

2. Каллина Василия Герасимовича – торговал по патенту;

3. Каллина Павела Васильевича – торговал мясом;

4. Воробьева Александра Сергеевича – имел до 1929 г. 1/3 часть ветряной мельницы;

5. Илюткина Николая – раскулаченного.

Райĕçтăвком 08.06.1931 ç. ларăвĕнче йышăннă постановлени çинчи протокол тăрăх çавна вуласа пĕлме пулать:

Слушали:	Постановили:
...4) Гр-н д.М-Батырево Тихонов Алексей владелец ветряной мельницы имел постоянного батрака, арендатель земли до 3-х десятин обложен налогом в индив.порядке (он был восстановлен Правительственной комиссией от 8/У-30 г.)	Лишить со всем семейством в правах голоса согласно Инструкции ст.15 п. «а» и «г» и просить ЦИК ЧАССР об отмене своего Постановления о восстановлении Тихонова в правах голоса.

Епле район шайĕнчи влаçра ларакансем Тихонов суйлав правине хăварнине пăрахăçлама ыйтнине çӳлерех райĕçтăвком кăларнă йышăну çине тинкерсен вулакан ăнланса илчĕ те пуль. Калăн, вĕсене Правительство комиссийĕнчен те лайăхрах курăнать тĕреклĕ хуçалăхпа пурăнакана çемьипех политика ĕçне малашне те хутшăнассинчен пăрасси, кулак тесе аялти йĕм таранччен хăварса çурт-йĕрĕнчен хăваласа кăларса ярасси.

Ялсенчи чухăнсемпе партире тăман активсен пухăвĕсен протоколĕсене вуласа пăхсан тĕреклĕ те пуянрах хресчен хуçалăхĕсене (кулаксене) тустарни, вĕсен пурлăхне чаппан таранччен конфискаци туса туртса илни, хăйсене мунча пек çурт-йĕре кăларса тăратни куç умне тухса тăрать. Малалла пĕр протокол çинче чарăнса тăрăпăр, ăна вырăсла çырнă.

Протокол
собрания бедноты, батраков и беспартийного актива
д.Новое Котяково Батыревского района от 12.02.1930 г.
Председатель собрания: Такмаков А.
Секретарь: Юманов И.

Повестка дня:

1. О раскулачивании.

2. О выделении бригадиров (звеньевых) по выдворению кулаков.

Слушали: Рассмотрение списка лишенцев и кулачества.

Постановили:

1) Паймин Леонтий – лишенец, бывший торговец, наложен вклад 2000 руб. Конфисковать всего движимого и недвижимого имущества и одежды.

2) Зайцев Александр – лишенец за то, что владеет 1/3 ч. ветряной мельницы. Конфисковать всего движимого и недвижимого имущ-ва, оставив 2 пары белья и старой одежды на каждого члена семьи.

3) Захаров Петр – то же.

4) Паймин Константин – лишенец, за торговлю наложен 300 руб. – то же.

5) Галкин Тарас – не лишенец, вклад 2000 руб. с конфискацией всего движимого и недвижимого имущества.

6) Анисимов Василий – не лишенец, вклад 1000 руб. с конфискацией всего движимого и недвижимого имущества.

7) Михайлов Василий – не лишенец, вклад 1000 руб. с конфискацией всего движимого и недвижимого имущества.

8) Эльмуков Александр – вклад 300 руб. Конфисковать 1 новую избу и 1 амбар.

9) Зайцев Егор – вклад 300 руб. Конфисковать лошадь, тарантас, амбар и исключить из колхоза, оставив 10 пудов хлеба.

Всего: 14 чел.

Протокол

особой комиссии по раскулачиванию кулаков от 14.02.1930 г.

(Треньел ялĕ тăрăх – Д.К.)

- Паймин Леонтий пирки чухăнсен пухăвĕнчи пекех хăварас;

- Зайцев Александр çуртне Савельев Ивана кӳртсе Савельев Иван çуртне Зайцева ярас;

- Захаров Петр çуртне Краснов Павелпа Федоров Михаила кӳртес.

- Паймин Константин çуртĕнчен: 1 кĕлет, 1 вите, лупассине, лашине тата хăйĕнчен ытлашши тыррине конфискацилес.

Вулакан асӑрхарӗ те пуль ӗнтӗ: пуянрах хуҫалӑхсен килӗсенчен (сӑмахран ҫӳлерех асӑннӑ Зайцевсен килӗнченех) конфискаци тесе пурлӑх шутне кивӗ ҫие тӑхӑнмалли тумтире кӑна кӗртмен. Апла-тӑк, лайӑх кӗрӗк, чаппан е сӑхман пулсан вӗсене пуҫтарса тухса кайнӑ ҫав килтен. Ӑҫта вырнаҫтарнӑ, кама тӑхӑнтартнӑши ҫав тумтире, ун пирки эпӗ архивсенче ятарлӑ документ тӗл пулмарӑм.

Сӑмах май, мана нумаях пулмасть 89 ҫулхи Анна Тимофеевна Воробьева ҫакӑн пек ӗҫ пирки каласа панӑччӗ. 30-мӗш ҫул пуҫламӑшӗнче Тӑрӑн ялӗнчи чухӑнсен пухӑвӗнче унӑн ашшӗне – Васильев Тимофей Васильевича, тӗреклӗ хуҫалӑхпа пурӑннӑ май, пуянсемпе кулаксен списокне кӗртнӗ. Пӗр кунхине вӗсен килне комисси членӗсем кил-ҫуртне, пурлӑхне конфискацилес шухӑшпа пӑхма пырсан Анюккан 4 ҫулхи Валя ятлӑ шӑллӗ те ҫавӑнтах пулнӑ. Ачаран ыйтнӑ пуль ҫав ашшӗ-амӑшӗ япаласене ӑҫта пуҫтарса хунине. Суйма пӗлменскер, калать те хурать аслисем сӑхмана лупасайӗнчи улӑм ӑшне пытарнине комисси членне П.П. Петрова. Калӑн, Павлик Морозов. «Ачам, кай выляма урама», – тесе ыттисен хӑлхине кӗриччен шӑпӑрлана пӳртрен кӑларса ячӗ тет Петр Петрович. Ахальтен мар пуль, ӗлӗкренех суйма пӗлменрен тата ҫав ҫулхи ача-пӑчан айванлӑхне шута илсе, ашшӗ-амӑшӗсем ҫула ҫитмен ачасем пирки «ҫак ачасем ӗнтӗ Ҫӗпӗре яраканнисем» тенӗ. Сахал-им пулнӑ кулаксем е халӑх тӑшманӗсем тесе, ачисене те ашшӗ-амӑшӗсемпе пӗрле ссылкӑна Ҫӗпӗре ӑсатни. Чылайӑшӗ каялла килӗсене таврӑнайман та ҫавӑнтах выртса юлнӑ.

Ялсенчи тӗреклӗ хуҫалӑхсемпе пурӑнакан хресченсене кулаксем тесе пурлӑхӗсене, ҫурт-йӗрне, выльӑхчӗрлӗхне туртса илсе хӑйсене мунча-витесене кӑларса яни, хӑшне-пӗрне Ҫӗпӗре ссылкӑна ӑсатни – тепӗр чухне районти партипе Совет органӗсем ытлашши тӑрӑшнинчен те сахал мар килнӗ. Пӗтӗмӗшле коллективизаци тӑвас тесе чухӑнсемпе активистсене явӑҫтарса

ял çыннисене тӗрлӗрен меслетпе хӑратса колхозсене кӗме хистенӗ. Кунта суйлав правине туртса илесси пирки те çӳлерех асӑннӑ ччӗ, çавӑн пекех инхозсене (колхоза кӗменнисене) ял хуçалӑх налукне (сӗт, çӑмарта, çӑм, ашкакай) колхоза кӗнисенчен икӗ хут ытла тӳлеттернӗ.

Шухӑшӑма малалла тӑсса кайнӑ май эпӗ çывӑх ялсенчи армансемпе вӗсен хуçисем çинчен кӗскен те пулин уйрӑммӑн чарӑнса илесшӗн. Çӳлерех асӑннӑ ччӗ ӗнтӗ, тӗреклӗ хуçалӑхпа пурӑнакан хресченсен пурлӑх шучӗпе арманӗсене те туртса илнӗ.

Архиври документсенчен тата ваттисем (Д.Р. Гордеев, А.Т. Воробьева тата пирӗн атте – Н.С. Коннов) каланӑ тӑрӑх, 1917 çулхи революциччен Пӑла тӑршшӗпе 16 шыв армань пулнӑ. Иван Данилович Вотяков Патӑрьел тата Шӑнкӑртам ялӗсем çывӑхӗнче темиçе шыв армань те тытнӑ. Тӑрӑн ялӗн кӑнтӑр пайӗнче паянхи кун та Пӑла хӗрринче Арман лаппи ятлӑ çаранлӑ лапам пур. Арман лаппи ята ял çыннисем И.Д. Вотяков ачин Ваçурккан халь пурӑнакан Михеев К.С. пахчи хыçӗнче лапам çумӗнчи Пӑлара шыв армань пулнипе панӑ. Пирӗн таврара, граждан вӑрçи кӗрлесе иртсен, шыв арманьсем те кивелсе юрӑхсӑра тухса пынӑ. Пурӑна киле вӗсем çинчен аса илме те пӑрахнӑ, Арман лаппи ят вара паянхи кун та сыхланса юлнӑ. Паянхи кун вӗсем те çук ӗнтӗ.

Тӑрӑн тата çывӑхри ялсенче иртнӗ ӗмӗрӗн пуçламӑшӗнче колхозсем йӗркеличчен тӗреклӗ хуçалӑхпа пурӑнакансем çил арманӗсемпе ут арманӗсем тытнӑ. Паянхи кун çак ялта иртнӗ ӗмӗрӗн 20-мӗш çулсен вӗçӗнче кулаксем тесе Воробьев Петр Васильевичӑн (хӗвел анӑç енчи) тата Медаков Александр Александровичӑн (хӗвел тухӑç енчи – унӑн çунаттисемпе çӳлти пайӗ юлман) туртса илнӗ арманӗсем анчах сыхланса юлнӑ. Çил арманӗ çавӑн пекех пӗр тӑван Александр Ивановичпа Иван Иванович Медаковсем тытнӑ. (Сӑмах май, паян Тӑрӑнта пурӑнакан Мидаковсен хушамачӗ иртнӗ ӗмӗрӗн 30-мӗш çулсенчи архиври документсем (прото-

колсем) тăрăх Медаковпа пырать. Тен, вĕсен хушамачĕ тата маларах «медь» (пăхăр) сăмахран Медяков пулнă. Ут арманне, вырăсла крупорушка тенĕ, (ут-лаша) лаша кӳлсе арман йĕри-тавра çӳресе çавăрттарса ĕçлеттернĕ. Çапла майпа авăртса вир, пăри тĕшне сĕлĕ хуппинчен уйăрттарнă пекех хывăхĕнчен уйăрттарса кĕрпе тунă. Тăрăн ялĕнчи виçĕ ут арманĕнчен пĕри П.В. Воробьевăн пулнă. Унăн çемйи Илехметов Иван Григорьевич хуçалăхĕпе юнашар пурăннă, ут арманĕ вара хăйсене хирĕçех пăралукра ларнă. Мидаковсене, П.В. Воробьева, Шуряшкин Евдоким Тихоновича, Кудряшев Петр Прохоровича тата ыттисене те тĕреклĕ хуçалăхсемпе пурăннă май кулаксен шутне кĕртсе арманĕсене, пурăнмалли çурчĕсемпе кĕлечĕсене туртса илсе, хăшнепĕрне ссылкăна Çĕпĕре янă. Çакăн пек шăпа тĕреклĕ хуçалăхпа пурăнакан ытти ялсенчи çемьесене те пырса тивнĕ.

Кĕçĕн Патăрьелĕнче Тихонов Алексейĕн хăйĕн çил арманĕ пулнă, Воробьев Андрей Антоновичпа Воробьев Александр Сергеевич пĕр арман тытнă.

1929 çулччен Треньелĕнче Паймин Иванăн хăйĕн çил арманĕ пулнă. Ку ялта та темиçешер хуçалăх пĕр арманăн 1/3, 1/2 пайĕпе усă курнă. Сăмахран, Митрофанов Иван çил арманăн 1/2 пайĕпе, ут арманĕпе (крупорушка) тата жнейкăпа хуçалăхри тĕрлĕ ĕçре усă курнă. Захаров Петр, Зайцев Александр тата Лысов Иван хуçалăхĕсем икĕ-виçĕ çемье пĕрле пĕр çил арманĕ тытнă.

Кĕçĕн Патăрьелпе Треньел ялĕсенче те кулаксен ретне кĕртсе пуянрах ял çыннисен арманĕсемпе çуртйĕрне тата тар кăларса пуçтарнă пурлăхне туртса илсе ссылкăна янă.

Вăтăрмĕш çулсенче кулаксен йышне кĕртнĕ ял çыннисем хăйсене суйлав прависене тавăрас, налук тĕрĕс мар хуни пирки Аслă Патăрьел райĕçтăвкомне çăхавсем тăратнă. Районти влаç мĕнле йышăну кăларни çинчен 1934 çулхи протоколсем тăрăх пĕлĕпĕр.

Протокол заседания Президиума Больше-Батыревского райисполкома от 30.03.1934 г.

Председатель: Иванов

1. Рассмотрение жалоб граждан на неправильное обложение сельхозналогом в индивидуальном порядке.

... 10) Илюткин Иван – из д. М-Батырево, до революции его отец имел вечную землю до 1 га, после революции в скрытом виде у бедняков. До 1930 г. имел жнейку и эксплуатировал ее в других хозяйствах по спекулятивной цене. Хозяйство кулацкое. Обложение считать правильным и в ходатайстве отказать.

Протокол от 14.03.1934 г. – заявление Лысова Ивана, д. Н-Котяково, который с 1917 г. по 1927 г. имел 1/3 часть мельницы с применением наемного работника –мельника. Как нетрудовика со всей семейством лишить избирательных прав и обложить сельхозналогом в индивидуальном порядке.

... имел жнейку и Анисимов Михаил, также лишен избирательных прав и обложен сельхозналогом.

Протокол от 18.09.1934 г. – заявление Воробьева Андрея. Обложен сельхозналогом в индивидуальном порядке как живущий на нетрудовые доходы от 1/3 части ветряной мельницы, аренда земли и 1/3 жнейки с применением наемных работников, с применением работника-мельника.

Постановили: в дальнейшем к индивидуальному обложению не привлекать.

Маларах асăннăччĕ ĕнтĕ, Тăрăнти малтанхи «Красный паровоз» колхоз ĕмĕрĕ кĕске пулнă. 1931 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнче çак ял çыннисем «Роза Люксембург» ятпа çĕнĕрен колхоз йĕркелесе ярăççĕ. «Кĕçĕн Патăрьел» тата «Паянхи сас» колхозсем те икĕ-виçĕ çултан хăйсен ячĕсене улăштарса, «Красное Батырево» тата «Октябрь ялавĕ» пулса 20 çул хушши, пĕр колхоза пĕрлешичченех, малалла аталанса пынă. Малтанхи виçĕ колхоз кĕске вăхăт тытăнса тăнă май, вĕсене

ваттисем те астăвакан çук, Шупашкарти архивсенчи документсем хушшинче те тупма май килмерĕ. Хамăр районти архивра çеç тĕплĕрех тишкерсен, çĕр ĕçĕсемпе çыхăннă документсемпе алçырăвĕсем тăрăх, паллашма тӳр килчĕ. Кун пирки çак кĕнеке авторĕ районта тухса тăракан «Авангард» хаçатра (13.02.2009 ç.) малтанхи колхозсене йĕркелени 80 çул çитнĕ май, «Манăçнă колхозсем» ятлă статьяра çырса кăтартнăччĕ. «Роза Люксембург» колхозăн малтанхи председательне Тăрăн ял çыннисем Тимофей Васильевич Васильева суйланă. Вăл маларах çак ял Канашĕн председателĕ пулса ĕçленĕ.

Кĕске справка: Роза Люксембург (1871–1919 çç.) пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн нимĕç, поляк халăхĕсен тата тĕнчери рабочисен юхăмĕн деятелĕ Польшăра çуралнă, унти социал-демократсен партине йĕркелекенсенчен пĕри пулнă. Германие куçсан унти социал-демократсен ретне тăнă.

1931 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче «Роза Люксембург» колхоз членĕсен пухăвĕ колхоза кĕнисене ятак тăрăх çĕр уйăрса парас пирки ыйту пăхса тухать. Аяларах кăтартнă пуху протоколне, колхоз членĕсен списокне тата çĕрйĕркелӳ комиссийĕн актне вырăсла çапла çырнă:

Протокол
собрания членов Туруновского колхоза «Роза Люксембург»
от 26 марта 1931 г. На собрание явились 12 членов.

Председательствует Васильев Т.
Секретарь: Петров П.

Повестка дня:
1) Выбор места под яровой посев 1931 года для колхоза.
2) Разное.

Слушали:
Выбор места под яровой
посев 1931 г. для колхоза

Постановили:

Под яровой посев весной 1931 года для колхоза отвести на 70 едоков по 0,45 га на едока – всего 32,20 га. Из них первые две карты с западной стороны села вдоль гумен в количестве 19,28 га на бывшей удельной земле 3,27 га, смещенной с югу от удельной земли 3,27 га, от Апсулхи рядом с колхозной землей 36 га, и по направлению к Буле 2,54 га, а всего 32,72 га. Для согласования данного вопроса с индивидуальным сектором выделить Крылова М.Д. и Петрова П.П.

Председатель: подпись Васильева Т.В.

Секретарь: подпись Петрова П.П.

Список
членов Туруновского колхоза «Роза Люксембург»
на 26 марта 1931 г.

Петров Петр Петрович – 4
Крылов Михаил Дмитриевич – 5
Лаханов Иван Егорович – 7
Васильев Тимофей Васильевич – 5
Воробьев Иван Сергеевич – 9
Сапожникова Мария Федоровна – 5
Карпова Ксения – 5
Ашмарин Иван – 7
Сорокин Терентий – 5
Груздев Федор Ст. – 6
Телегина Екатерина Захаровна – 1
Ермолаева Матрена – 2
Бородкин Сергей Васильевич – 3
Васильев Иван Васильевич – 1
Лялькин Матвей Никитич – 4
Михайлова Вера – 2
Итого: 70 едоков

Председатель: подпись
Секретарь: подпись

30.04.1931 çулхи хушма список тăрăх колхоза Михайлов Зинон Гавриловичпа Телегин Александр Константинович кĕнĕ, çав вăхăталлах – Сапожников Н.А., т.ыт. те.

Акт

1931 года 26 марта составил настоящий акт руководитель землеустроительных работ по Батыревскому району Сокольский И.П. в присутствии землеуказательной комиссии села Турунова в следующем составе: от Туруновского с/Совета т.Крылов М., от колхоза «Роза Люксембург» т.Петрова П.П., от Туруновского ККОВ т.Илехметов, от Земельного общества – т.Ашмарин Григорий.

Комиссия установила площадь ярового поля посева 1931 года, которая равняется 406.18 га. Едоков в земельном об-ве на 26 марта 1931 года 883, дворов 173. Норма на едока в поле 0.46 га. В колхозе «Роза Люксембург» значится 16 дворов, 70 едоковкоим причитается земли из расчета 0.46 га, всего 32.20 гектара. Указанная площадь отведена из лучших земель земельного об-ва без производства расценки по существующей норме земельной обеспеченности. Расположение участка показано на приложенной к сему чертеже. Перенесение участка в натуру возлагается на землеуказательную комиссию. Несмотря на составление настоящего акта, приток новых членов в колхоз не задерживать, так как землеуказательная комиссия имеет право прирезать землю по вступившему перед производством передела в индивидуальном секторе. Землеуказательная комиссия должна наделять бедняков лучшей землей, а кулачество наихудшей.

Землеустроитель: подпись Сокольского
от Туруновского с/Совета: подпись М.Крылова
от колхоза: подпись Петрова
от СККОВ: Илехметов
от зем.об-ва: Ашмарин

Асăрхаттарни: СККОВ – сельский комитет крестьян общественной взаимопомощи.

Колхоза кĕрекенсен йышĕ улшăнса пынă май çĕр виçекенсем çĕре çулталăкне 2-3 хут та пайланă. Паллах, ун пек чухне ял ĕçченĕ çĕр тухăçлăхне ӳстерес пирки тăхтаса тăнă. Тыр-пула хăçан, ăçта, мĕн чухлĕ акмаллине çӳлтен кăтартусем панă. Аслă Патăрьел районĕнче тухса тăракан «Паянхи сас» хаçатăн 26.01.1931 ç. номерĕнче 1932 çулхи çуракинче тĕрлĕ культурăсен акмалли планĕпе паллашма пулать. Ун чухне колхозсене кăна мар, уйрăм хуçалăхсене те махорка таранччен пахчара ӳстерсе çитĕнтерме план панă.

№	Культурăсен ячĕсем	гектарпа шутласа	
		колхозсенче	уйрăм хуçалăхсенче
1	Çурхи тулă	40	23,11
2	Урпа	30	–
3	Сĕлĕ	4333	7121,7
4	Хура тул	100	194,7
5	Вир	75	27,51
6	Пăри	900	1260
7	Пăрçа	850	687
8	Ясмăк	500	572,2
9	Виккă (тĕшĕлĕх)	190	205
10	Йĕтĕн	29,6	12,10
11	Кантăр	190	252,02
12	Корица	42,3	–
13	Махорккă (хирте)	50	–
14	(пахчара)	–	29,71
15	Улма	1630	2344
16	Пахча-çимĕç	17,45	–

Ялсенче коллективизаци мĕнле ирттернине, тыр-пул туса илес плана пурнăçланине тĕрĕслеме районти шайра парти, совет тата обществăлла организацисенчен 5 çын суйласа комисси йĕркеленĕ. Парти

райкомĕ, райĕçтăвком хушу кăларнисене вăхăтра пурнăçламасан колхоз председателĕсене, çавăн пекех ял Канашĕсен председателĕсене те явап тыттарнă кăна мар, ĕç выраннĕнчен те хăтарнă. Тĕслĕхрен: 1931 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 1-мĕшĕнче районти ял Канашĕсен председателĕсемпе секретарĕсен тата колхозсен правленийĕсен председателĕсен канашлăвĕнче райĕçтăвком председателĕ доклад тунине итленĕ хыççăн тырă пухса илес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес пирки йышăннă плана тултарманшăн Именкасси, Тăрăн, Аслă Арапуç, Анат Туçа тата Каçал (хальхи Комсомольски ялĕ) ялĕсенчи Канаш председателĕсене хăйсен ĕçĕнчен хăтармалла тесе йышăну кăларнă. Тен, колхозсем йĕркеленсе çитнĕ-çитмен тыр-пул тухăçĕ, выльăх-чĕрлĕх йышĕ пирки калама иртерех те пулнă пуль. Ун чухне ятарлă пĕлӳ илнĕ специалистсем – агроном та, ветеринар та пулман. Опыт çуккине кура колхозсенче ĕçе те тĕрĕс йĕркелеймен, çапах та ял Канаш председателĕсен, колхоз председателĕсенчен те ытларах, яваплăха туйма тивнĕ.

Вулакан асăрхарĕ пуль, пилĕк ял хушшинче Каçал та пур. 02.02.1932 çул тĕлне Аслă Патăрьел районĕн территорийĕнче 34 ял ĕçтăвкомĕ шутланнă, унта хальхи Комсомольски районĕнчи Каçал, Кивĕ Сĕнтĕр, Кивĕ Çĕрпел, Хирти Сĕнтĕр тата ытти ялсем, Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршă кĕнĕ.

Колхоз юхăмне малалла аталантарса пырас тата тунă йăнăшсене тӳрлетес ĕçре патшалăх колхозсемпе колхозниксене 2 çуллăха парăмсем тӳлессинчен хăтарнă, иртнĕ çулхи парăмсене чакарнă, техникăпа тата вăрлăхсемпе палăрмаллах пулăшнă. 1931–32 çулсенче Аслă Патăрьел районĕнче коллективизаци анлăн сарăлса пынă, колхозсенче уй-хир бригадисем, выльăх-чĕрлĕх фермисем йĕркелеме тытăнаççĕ. Ял çыннисене пурне те колхоза кĕртес агитаци ĕçĕнче район хаçачĕ «Октябрь ялавĕ» те айккинче тăрса юлмасть, малта пыма тăрăшать. Хаçатçăсен шучĕпе, кол-

хоза пурин те: шкулта вĕрентекеннисемпе техникумра вĕренекенсен те, патшалăх учрежденийĕсемпе Совет органĕсенче ĕçлекенсен те, кĕмелле.

Вулакана 21.11.1933 çулта асăннă хаçатăн малти страницинче çапăнса тухнă: «Района талккăшпе коллективизациллĕ район тăвассишĕн кĕрешер» передовицăри «Паянах колхоза кĕмеллисем» ятпа тухнă статьяпа паллаштарасшăн.

«1934 çул республика талккăшпех колхоза куçса çитнĕ çул пулмалла, тесе задача лартнă пулсан, пирĕн Патăрьел районĕ те унтан тăрса юлмалла мар. Анчах та пирĕн хăш-пĕр учительсем, профсоюз членĕсем, ялсовет председателĕсем колхоз тулашĕнче тăраççĕ. Акă, учительсенчен илсен: Титов – Çĕнĕ Ахпӳртри 1-ш сыпăклă шкул. Комсомолецсем: Санигеров – халăх сучĕн секретарĕ, Спиридонова – телефонистка, Еслюков – педтехникумра вĕренет т.ыт.».

Вĕрентекеннипе вĕренекенни, тен, каникул вăхăтĕнче колхоз ĕçне хутшăнма пултарĕç, анчах та суд секретарĕпе телефонистка хăйсен ĕçне пăрахса колхоза ĕçе тухмалла-и? Колхоза кĕтĕн пулсан, уйхирти е фермăри тата кохозри ытти ĕçе тума тивет-çке. Паллах, колхозсем йĕркеленĕ чухне те, ял çыннисене пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене илнĕ чухне те, каярах та, йăнăшсем пайтах пулнă. Çапах та, йывăрлăхсене çĕнтерсе колхозсем малаллах талпăннă, хуçалăхсене патшалăх техника енĕпе пулăшма тытăннă, машинăтехника лартма хуралтăсем, выльăх-чĕрлĕхсене выртса тăма, пухса илнĕ тыр-пула вырнаçтарма вите-кĕлетсем тума пуçланă.

Виçĕ колхоз пирки районти «Паянхи сас» хаçатра 1931 çулхи çурла (август) уйăхĕн 6-мĕш номерĕнче çапла çырнă:

«Кĕçĕн Патăрьел» колхоз 1930 çулта организациленнĕ, иккĕмĕш çул çине кайрĕ. Вăл çулталăк хушшинче чылай çитĕнӳ турĕ. Иртнĕ çул

тырă хатĕрлес плана 700% тултарчĕ, ытлаши тырра хирĕçле планпа тӳлесе татнăшăн колхоза пĕр тырă выракан машинă парса парнеленĕ. Хальхи вăхăтра колхозăн 12 пĕрлештернĕ лашисем пур. Ялхуçалăх машинисенчен: авăн çапмалли – 1, тырă вырмалли – 3, сăвăрмалли – 2, плуг – 11 тата ыт.те. Кăçал çулла колхозниксем 2 машин сарайĕ, 2 кĕлет, пĕрлештернĕ лашасем валли 5 вите лартрĕç. Колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй организациленĕ. Ачасем валли ясли уçнă.

Тăрăнти «Роза Люксембург» колхозра çуртри вырма июлĕн 27-мĕшĕнче тухса июлĕн 30-мĕшĕнче кĕчĕç. Сдельщинă çине куçнăранпа колхозниксен ĕçне шута илесси аванланчĕ. Колхоза халĕ çĕнĕрен 7 хуçалăх хутшăнчĕ.

Августăн уйăх пуçламăшĕнче Треньелĕнчи «Паянхи сас» колхоз хĕрлĕ опоспа 20 центнер тырă патшалăха леçрĕ».

Тăрăнти малтанхи колхоз «Красный паровоз» саланса кайнă хыççăн «Роза Люксембург» колхоз правлени йышне çирĕплетнĕ, çак хуçалăх ĕçне комсомолецсемпе çамрăксем тата ытти активистсем те хутшăнаççĕ. 1933–34 çулсенче çуркунне, тен, ака мĕнле ирттерес пирки правлени ларăвĕ ирттернĕ хыççăн сăн ӳкерттерме шутланă. Çак сăн ӳкерчĕкри мал ĕмĕтлĕ «Роза Люксембург» ячĕпе тăракан колхоз правлени тата комсомол активĕн членĕсен (10 çыннăн, вĕсенчен пиллĕкĕшĕ çамрăксем) малашнехи пурнăç шăпи тĕрлĕрен: пĕрисен телейлĕ, теприсен вара синкерлĕ пулса тухнă. Çавăнпа та хам мĕн чухлĕ пĕлнĕ таран тата архивсенчи документсем çирĕплетнĕ тăрăх кашнин кун-çулĕ çинче чарăнса тăрасшăн.



Малти ретре ларакансенчен сулахайран сылтăмалла:

1. Самакин Александр Степанович, (1903–1987 ç.ç.), вăрçăччен колхозри склад заведующи пулса ĕçленĕ, вăрçă хыççăн «Роза Люксембург», каярах Мичурин ячĕллĕ колхозсенче тĕрлĕрен ĕçсене хутшăннă.

2. Сапожникова (Гаврилова) Анастасия Александровна, ВЛКСМ комитечĕн членĕ, çывăхри ялсенчи вулавăш çурчĕсенче библиотекарь, шкулсенче учительница пулса ачасене вĕрентнĕ.

3. Васильев Тимофей Васильевич (1899–1983 ç.ç.), 1929 çулта ăна Тăрăн ял Канашĕн председателĕ пулма суйланă, 1931 çулхи нарăс уйăхĕнче ăна колхозниксем «Роза Люксембург» колхоза ертсе пыма шанаççĕ. 1932–33 çулсенче вăл счетовод, каярах полевод, сысна ферминче заведующи пулса ĕçлет. 1942–1945 çулсенче Тимофей Васильевич Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçнă. Вăрçăран таврăнсан колхозра правлени хушнă тĕрлĕрен ĕçре вăй хунă.

4. Крылов Михаил Димитриевич (1895–1946 ç.ç.), 1915 çулта ăна патша çарне илсен, Пăкăрăслан хулинче вăл 1918 çул вĕçленичченхĕсметре тăнă. 1919 çултан тытăнса, мобилизаци йĕркипе Хĕрлĕ çар ретне çырăнса, 1922 çул вĕçлениччен Мускавра кĕçĕн командирсене кадр енĕпе хатĕрлекен вĕренӳ

полкĕнче пулнă. 1925–26 çулсенче Патăрьелĕнче çамрăксене Хĕрлĕ çара кайма хатĕрленĕ. 1927 çулта вулăссемпе уессене пĕтерсе районсем çине куçиччен, ял Канашĕн председателĕ пулнă. Тăрăн ял Канашĕн председателĕ пулма М.Д. Крылова 1930 çулхи раштав уйăхĕнче те суйланă, çак яваплă выränта вăл 1931 çул вĕçлениччен тăрăшнă. Ял çыннисем ăна 1932 çулта «Роза Люксембург» колхоза ертсе пыма суйлаççĕ, 1936 çул вĕçлениччен ертсе пырать вăл çак хуçалăха. Çав çулхи раштав вĕçĕнче ăна тата виçĕ çула Тăрăн ял Канашĕн председателĕ пулма шанаççĕ. 25.12.1939 çулта ял ĕçтăвкомне тата Чкаловски район депутатне суйланă. Михаил Димитриевич Тăрăн ял ĕçтăвкомĕн председателĕ пулса 1936–1946 çулсенче, хăй чире кайса виличченех ĕçленĕ.

5. Михайлов Зинон Гаврилович (1916–1942 ç.ç.), колхозри комсомол организацийĕн секретарĕ, Тăрăн ял Канашĕнче счетовод пулса ĕçленĕ, 30-мĕш çулсен вĕçĕнчен тытăнса 1941 çулхи нарăс уйăхĕччен Чкаловски районĕнчи Осоавиахимра (ДОСААФра) инструктор пулса ĕçленĕ. Чкаловски ВКП(б) райкомĕн бюро ларăвĕнче З.Г. Михайлова 1941 çулхи нарăс уйăхĕн 27-мĕшĕнче Осоавиахим председателĕ пулма çирĕплетеççĕ. Вăрçă пуçлансан вăл çамрăксене çар ĕçне хăнăхтарать. 1942 çулхи авăн уйăхĕнче кĕçĕн политрук вăрçă хирĕнче паттăрла çапăçса вилнĕ. Зинон Гавриловича астăвакан ялти ватăсем ăна яштака пӳ-силлĕ те чипер сăнсăпатлă пулнипе кăна мар, çынпа ырă кăмăллă та сăпайлă, ĕçре вăр-вар пулнипе, яка çи-пуçлă, хăй çине тумтирне тирпейлĕ тăхăнса çӳренипе ырăпа аса илеççĕ.

6. Петров Петр Петрович, 1887 çулта хальхи Шăмăршă районĕнчи Чаткас (Чепкас-Никольское) ялĕнче çуралса ӳснĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренсе пĕтерсен, Чĕмпĕр кĕпĕрнине кĕрекен вулăссенчи шкулсенче ачасене вĕрентнĕ. 1918 çулхи пуш уйăхĕнче Пăва уесĕн пĕрремĕш съездĕнче Патăрьел вулăсĕн делегачĕ пулнă. Çав уйăхрах 24-мĕшĕнче Патăрьелĕнчи съездра ăна вулăс ĕçтăвком председательне суйланă, анчах вăл çак должноçра тем сăлтава пула ĕçлеме килĕшмен. Пирĕн тăрăхра вăл Совет влаçне тăвассишĕн тата ăна тĕреклетессишĕн чылай вăй хунă. 1910–1932 çулсенче Патăрьел вулăсĕнчи (каярах районĕнчи) Тăрăн ялĕнче земски училищĕре, 1-мĕш сыпăклă шкулта учитель, заведующи, 1934–35 çулсенче тулли мар вăтам шкул директорĕ пулса

ёçленĕ. Архивсенчи документсене пăхса тишкернĕ май, протоколсем тăрăх Петр Петрович Патăрьел райĕçтăвкомĕпе унăн пайĕсене туса хунă чухне активлă хутшăнни курăнать. Çавăн пекех хут ёçне лайăх пĕлнĕ май тата ялти хресчен нушине витĕр курнăран, политика енчен анлă тавра курăмлă пулнипе, 1920–30 çулсенче ял Канашĕсен ларăвĕсенче вăл секретарь пулса протоколсене çырса пынă, кирлĕ йышăну кăларма паха сĕнӳсем те панă пуль. Ялсенче колхозсем йĕркеленме пуçласан, Тăрăн шкулĕнчи шкул заведующине, П.П. Петрова, вăл райĕçтăвком членĕ пулнă май, Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьел тата Треньел ялĕсенче колхозсем йĕркелеме хушнă. Чухăнсемпе вăтам хресченсем пĕрлешӳллĕ пысăк вăя чăмăртансан, тыр-пул туса илме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме çăмăлрах пуласси пирки пухусенче ăнлантарса панă, малтанхи çулсенче ялсенчи пухусене хăех ертсе пынă е пуху президиумĕнче çыруçă (секретарь) ёçне туса пынă. Тăрăнта 1930 çулта «Красный паровоз», 1931 çулта «Роза Люксембург» ят парасси те П.П. Петров сĕнĕвĕпех пулма пултарнă. Ялти ватăсем аса илнĕ тăрăх, Петр Петрович ачасемшĕн те, ваттисемшĕн те хисеплĕ вĕрентекен, пысăк вырăнта ёçлекен вĕреннĕ çын шутланса тăнă, тĕрлĕрен ыйтупа ун патне пырсан, вăл кирлĕ те усăллă канаш пама, пулăшма тăрăшнă. Анчах та ун пек пулни пурне те кăмăла кайман; кĕвĕçекен, ăна курайман çынсем вăл вăхăтра пулнах çав. Халăх тăшманĕ тесе ун çинчен элек сарса, 1937 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче П.П. Петрова тытса кайса, Чăваш АССР НКВД Спецтройки судсăр-мĕнсĕрех айăпласа, 10 çула лагере яма постановлени кăларнă. Улатăр тĕрминчен ăна этаппа 1938 çулхи кăрлачăн 3-мĕшĕнче Бель-Балтлага (Беломор-Балти лагерьне) ăсатнă. Унтан вăл киле каялла тавăнайман, 1938 çулхи çĕртмен 30-мĕшĕнче çав лагерьтех вилнĕ. Петр Петровичăн юлашки кунĕ-çулĕсене тĕпчесе пĕлес шутпа эпĕ Чăваш Республикинчи Шалти ёçсен Министерствине тата РФ Хăрушсăрлăх службин ЧР Управленине архив документчĕсем ыйтса çыру та çырнăччĕ. Анчах та мана ШĔМ-рен айăпланнин учет карточкине çеç ярса пачĕç, справки çинче уголовлă ĕç çукки çинчен çырнăччĕ. Ман вара питĕ пĕлес килетчĕ: Петр Петровича кам элекленĕ, мĕнле преступлени тунă тесе айăпланă. Кам хура ёçне пула шар курма тивнĕ ялти хисеплĕ вĕрентекенĕн, обществăпа политика деятелĕн – çак ыйту çине çулсем ирт-

се пынă май хурав пуласси иккĕленӳллĕ. Ваттисем каланă тăрăх, 1937 çулхи кĕркунне пĕр курайман Улатимĕр ятлă ял çынни хĕтĕртнипе Тăрăн шкулĕнчи Матюк ятлă уборщицă çăхавĕ тăрăх, П.П. Петрова арестлесе тĕрмене ăсатнă. Ун пек репресси урапин кустăрми айне пулса пĕр айăпсăрах пĕтнисем сахал-им пулнă 1930–40 çулсенче Совет Союзĕпе? 1955 çулхи авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнче ЧАССР Аслă Сучĕн Президиумĕ Спецтройка постановленине пăрахăçласа Петров П.П. таса ятне каялла тавăрнă.

Хыçалти ретре тăраканнисем, сулахайран сылтăмалла:

7. Ялуков Алексей Александрович (1900–1942 ç.ç.), колхозри ветеринар, 30-мĕш çулсенче сысна фермине ертсе пынă. 1942 çулхи раштав уйăх вĕçĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи пĕр çапăçу хирĕнче пуçне хунă.

8. Ибетов Алексей Максимович (1917–1944 ç.ç.), вырăнти комсомол ячейкин членĕ, колхозра уй-хир бригадинче вăй хунă, асăннă вăрçа хутшăннă, 1944 çулхи çĕртме уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

9. Медведев Максим Григорьевич (1914–1987 ç.ç.), 1930-мĕш çулсенче колхозри комсомол комитечĕн членĕ, вăрçă хыççăнхи çулсенчен тытăнса колхозра тимĕрçĕ пулса ĕçленĕ.

9. Думилин Федор Петрович (1907–1942 ç.ç.), «Роза Люксембург» колхозăн 30-мĕш çулсенчи аслă конюхĕ, 1941 çулхине, вăрçă пуçлансан, ăна ятарласа вăрçа хатĕрленĕ лаша бригадин бригадирĕ пулма уйăрса лартнă. 1942 çулта фронта тухса кайсан, çав çулхинех вăл хыпарсăр çухалнă, килне таврăнайман.



Партипе совет органĕсем колхоз йĕркеленипе пĕрлех вĕсене хуçалăх тĕлĕшĕнчен çине тăрса тĕреклетме тăрăшнă. Çĕр пахалăхне ӳстерсе пынă. Колхозăн уставне сӳтсе явма йышăннă, ĕçлекенсене ĕç кунĕ тăрăх тӳлеме пуçланă.

Çапах та лаша вăйăпе те уйрăм хуçалăхсенчен пуçтарнă пĕчĕк техникăпа пĕрлешӳллĕ артельсен çĕрĕсене сухаласа тыр-пул çитĕнтерме, кĕске вăхăтра пухса илме йывăр пулнă. Çавăнпа та 30-мĕш çулсенче коллективизаци сарăлса пынипе пĕрлех çĕр-шывра индустриализаци хăватлăн аталанса пынă.

Çав вăхăтра çĕршывра промышленность тракторсемпе ял хуçалăх машинисем кăларма тытăнать. Ку техника, паллах, хресчен ĕçне чылай çăмăллатнă, çавăнпа пĕрлех хуçалăхри пĕтĕм ĕçе кĕске вăхăт хушшинче вĕçлеме май туса панă. Анчах та ăна хаклă пулнипе кашни колхоз илме вăй çитереймен. Çавна шута илсе 1930 çулта кĕркунне Чăваш Республикинче машинăпа трактор станцисем (МТС) Канаш, Улатăр, Вăрнар хулисенче йĕркеленме тытăнаççĕ. 1931 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 21-мĕшĕнче Аслă Патăрьел райĕçтăвком пленумĕнче Аслă Патăрьелĕнче машинăпа трактор станцине уçас пирки йышăну кăларнă. Çулталăк вĕçĕнче Чăваш республикин çĕрĕç пайĕн Комиссариачĕ МТС валли трактор бригадин бригадирĕсене хатĕрлеме Уржум хулине çамрăксене вĕренме ярать. 1932 çулхи кăрлач уйăхĕнче Патăрьелĕнче, Аслă Арапуçĕнче тата Аслă Каçал ялĕсенче тракториста вĕренме вĕренӳ курсĕсем уçаççĕ.

Чулхула (Горький) парти крайкомĕ 1932 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Аслă Патăрьелĕнчи МТС директорĕ пулма маларах районти çĕрĕç комитечĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ Иван Антонович Антонова çирĕплетнĕ. Çав уйăхрах Аслă Патăрьел, Аслă Арапуç тата Аслă Каçал (каярах çак ялсен ячĕсем улшăнаççĕ) ялĕсенче тракториста вĕрентме вĕренӳ курсĕсем уçаççĕ. МТСри трактористсене хатĕрлекен курсăн пĕрремĕш преподавателĕ И.В. Васильев пулнă. Ăна И.А. Антонов МТСа чĕнсе илсе трактористсен курсĕнче преподаватель пулса ĕçлеме сĕнет. Иван Васильевич Чăваш республикинчи çĕрĕç Халăх комиссариатне çав вăхăтра ертсе пынă Алексей Васильевичпа маларах асăннă Тимофей Васильевич Васильевсен шăллĕ,

1903 çулта Аслă Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче çуралса унтах пурăннă. Хĕрлĕ çара кайса килнĕ хыççăн 1936 çулта вăл МТСах тавăнать те механик пулса ĕçлет. Кунта Иван Васильевич вăрçă хыççăнхи çулсенче те ял хуçалăх техникине юсанă çĕрте вăй хунă. Трактористсен малтанхи курсĕнче 56 çамрăк пĕлӳ илнĕ, вĕсене çавăн пекех опытлă механиксем, агрономсем вĕрентнĕ.

Патăрьелĕнчи МТС тата унта ĕçлекенсем пирки унта аслă агроном пулса ĕçленĕ Ф.А. Архипов (каярах вăл Мичурин ячĕпе тата «Путь Ленина» колхозсенче çак ĕçпех, каярах сельсовет председателĕ) «Авангард» 23.11.1967 ç. хаçатра çапла аса илет:

«Патăрьел районĕнче МТС 1932 çул пуçламăшĕнче йĕркелерĕç. Унăн директорĕ пулма Иван Антонович Антонова лартрĕç. Ун чухне пирĕн тракторсем çукчĕ. «Фордзон-Путиловец» тракторсем те пурĕ тăваттă çулталăк вĕçĕнче кăна килчĕç. Вĕсем 1933 çулхи çур акинче çĕнĕ Ахпӳртре, Патăрьелĕнче, Чăваш Сăкăтĕнче тата ытти колхозсенче ĕçлерĕç. Эпĕ ун чухне МТСра аслă агроном пулса ĕçлеме тытăнтăм. Чи малтанхи трактористсем В.Н. Северов, И.В. Васильев механике çитиччен ӳсрĕç».

Çак йĕркесене вуланă хыççăн çавăн пек пĕтĕмлетӳ патне пырса тухма пулать. Тăрăн ял тăрăхĕнчи малтанхи тракторист Иван Васильевич Васильев (Шурпуç Иванĕ) пулнă. Çак ялти Матвей Карпова та вăл, механик пулса ĕçленĕ май, тракториста вĕрентнĕ ĕнтĕ.

1932 çулта çуркунне малтанхи «Интерн» ятлă трактора, пайĕсем çине салатнăскере, Канашран унти Скворцов хушаматлă трактористпа пĕрле лавсем çине тиесе, лашасемпе турттарса Патăрьелне МТСа илсе килнĕ. Ăна пуçтарнă хыççăн районти трактористсенчен пĕри П.О. Енилин ун çине ларса ял хĕррине тухса тĕрĕсленĕ. Паллах, нихçан трактор тавраш курман ял çыннисем, ватти-вĕтти тенĕ пек, пĕрремĕш тĕлĕнтермĕш трактора курса унăн хăватлă вăйĕнчен тĕлĕннĕ, хăюллăраххисем ăна тытса та пăхнă. Çакăн хыççăн виçĕ трактор «Ин-

терн» тата пёри «Фордзон-Путиловец» маркăллисем чиперех трактористсем тытса пынипе МТСа çитнё. Тăрăнти ватă çынсем каланă тăрăх, çавăн пек тракторсенчен пёрне çак ялти малтанхи трактористсенчен пёри **Матвей Яковлевич Карпов** (вăл тракториста 1932 çулта вёреннё) Канаш хулинчен Аслă Патăрьел МТСне хăваласа килнё. Кунта вăл 1937 çулта Хёрлё çара кайиччен тракторист пулса ёçленё.



1933 çулта МТС хăйён 21 тракторёпе тата ытти ял хуçалăх машинисемпе районти 55 колхозра хирсенче ака-суха ёçёсене туса тăнă. Çапах та çакăн чухлё техника хирти ёçсене вăхăтра вёçлеме çителёксёр пулнă. 1934 çулта тата «СТЗ» маркăллă 12 трактор, 2 прицеплă «Коммунар» комбайн тата ытти машинăсемпе саппас пайёсем илсе килнё. Çавăн пек вара тепёр çулта тракторпа машинă паркё çирёпленсех пынă: МТСăн 29 трактор, икё прицеплă комбайн, 6 тырă тёшёлекен молотилка, ытти нумай прицеплă техника уй-хир ёçёсене йышăннă план тăрăх вёçлеме май панă. Техникă шучё ӳснё май трактор бригадисем те хутшăнсах пынă. 1936 çулта уй-хирти ёçсене 46 трактортан тăракан 11 трактор бригади хутшăннă, çулталăк вёçленнё çёре МТСра 4 прицеплă комбайн, тата 8 молотилка шутланса тăнă.

Аслă Патăрьелёнчи машинăпа трактор станцийёнче пултаруллă трактористсемпе комбайнерсем, трактор бригадин бригадирёсемпе ытти специалистсем сахал мар пулнă. Вёсем хушшинче ёçре малти вырăнсене тухнă Кёçён Патăрьелёнче пурăннă Я.К. Хураськин

комбайнерпа А.И. Соловьев трактористăн, трактор бригадин бригадирĕсен, И.А. Ситовпа А.А. Михайловăн ĕçри çитĕнĕвĕсем çинче чарăнса тăрасшăн.



Хураськин Яков Константинович, 1911 çулта çуралнăскер, 1935 çулта Патăрьелĕнче МТС çумĕнчи трактористсен курсне вĕренсе пĕтерсен комбайнерта ĕçлеме тытăнать. 1940 çулта уйхирте хăйне шанса панă комбайнпа вăл 250 га. тырă вырса комбайнерсем хушшинче малти вырăна тухать. 1941–42 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Вăрçăран киле таврăнсан вăл каллех МТСа çул тытать. «Коммунар» маркăллă комбайнпа хастар ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ăна укçан преми парса та чысланă.

1946 çулта Я.К. Хураськина вăрçă вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн медальпе наградăланă. 1956 çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх вăл Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкин Кĕмĕл медальне илме тивĕçлĕ пулать. 1958–1971 çулсенче Яков Константинович МТСра тивĕçлĕ канăва тухичченех тракторсене юсакан слесарь пулса тăрăшать. 1971 çулта ăна Октябрьти революци орденĕпе наградăланă.

Соловьев Арсентий Иванович 1909 çулта çуралнă, МТС çумĕнчи трактористсене хатĕрлекен курса вĕренме малтанхи ушкăнпа лекет. 1932–36 çулсенче тракторист пулса тăрăшать. 1939 çулта ăна трактор бригадин бригадирĕ пулма шанаççĕ. Çав çулхинех Арсентий Иванович ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Мускава ял хуçалăх выставкине кайма тивĕçнĕ. 1946–53

çулсенче трактор бригадин бригадир пулăшаканĕ, 1953–58 çулсенче каллех трактор бригадин бригадирĕ пулса тăрăшать.

1958 çулта çĕршывĕпех колхозсене малалла аталантарасси тата МТСа пĕтерсе РТС (ремонтно-техническая станция) йĕркелес пирки саккун тухнă. Çак саккун тăрăх ЧАССР ял хуçалăх Министерствинчен 30.06.1958 çулта телеграмма çитет: Патăрьелĕнчи МТСра бригадирсемпе вĕсен пулăшаканĕсене, трактористсемпе комбайнерсене тата ытти специалистсен штатне пĕтермелле.

Çакăн хыççăн чылай уй-хир специалисчĕсем колхозсене хăйсем илнĕ специальнăçĕпех ĕçлеме вырнаçнă, теприсем вара РТСра техника юсанă çĕрте вăй хунă. А.И. Соловьев та çĕнĕрен йĕркеленĕ юсавпа техника станцийĕнче двигательсене юсанă çĕре куçать, унтанах вăл 1969 çулта тивĕçлĕ канăва тухать.



Ситов Иван Александрович 1911 çулта çуралнă, тулли мар вăтам шкул пĕтерсен ăна МТСа тракториста вĕренме яраççĕ. 1935–37 çулсенче вăл тракторист пулса ХТЗ-7 маркăллă трактормпа ĕçленĕ. 1938 çулта 5-мĕш трактор бригадин бригадирĕ пулма шанаççĕ. Тепĕр çулах Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкинче хутшăнма тӳр килет унăн, унта ăна Пысăк кĕмĕл медаль парса чысланă. 1940 çулта Иван Александровича 5-мĕш трактор бригадин бригадирĕ пулма çирĕплетеççĕ. Çулталăкри ĕç итогĕсем тăрăх, вăл Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкине хутшăнма тивĕçлĕ пулать. Тепĕр çул та И.А. Ситов ертсе пыракан трактор бригади уй-хирти ака-суха ĕçĕсене пысăк пахалăхпа вĕçлесе,

МТСра малтисен ретĕнче пынă. Йывăр вăрçă çулĕсенче те, вăрçă чарăнсан та 5-мĕш трактор бригади, хăй умне лартнă плана ирттерсе тултарса, тыр-пул пухса илессипе пысăк çитĕнӳсем тунă.

1955 çулта асăннă трактор бригади Мичурин ячĕллĕ колхозра пучахлă тĕш-тырă тата кукуруза туса илессипе малтисен ретĕнче пулнă. МТСа пĕтерсен, 1958 çулта И.А. Ситов çак колхозах трактор бригадин бригадирĕ пулса ĕçлеме куçать. Ахăртнех, вăл ăçта ĕç тупас пирки шутламан та пуль: Кĕçĕн Патăрьелĕнче унăн çемйи, колхоз председателĕ ун чухне унăн шăллĕ Ситов Александр Александрович пулнă. Иван Александрович çакăнта хăй тивĕçлĕ канăва тухичченех ĕçленĕ, колхозри трактор бригадине ертсе пынă.



Михайлов Алексей Александрович 1911 çулта çуралнă. 1930 çулта вăл колхоза кĕнĕ, каярах уй-хир бригадин бригадирĕ пулса ĕçлет. 1935 çулта трактористсен курсне вĕренсе пĕтерсен, 1938 çулччен Первомайскинчи МТСра тракторист пулса ĕçлет. Тепĕр икĕ çултан вăл Канашра механизаци училищинчен вĕренсе тухнă. А.А. Михайлов Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, унти çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă.

1946–58 çулсенче Алексей Александрович Патăрьелĕнчи МТСра трактор бригадин бригадирĕ пулса пĕр улшăнмасăр малта пыракан «Гвардеец» колхозра тăрăшать. Вăл ертсе пыракан бригада та çулран çул машинăпа трактор станцийĕнче малти вырăнсене

йышăнать, 1952–53 çулсенче А.А. Михайлова ёçри пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкине Мускава яраççĕ, унта вăл пĕчĕк ылтăн медаль илме тивĕçлĕ пулать.

МТСа пĕтерсен, 1958–1961 çулсенче унăн çак колхозрах трактор бригадин бригадирĕн тивĕçне малалла тăсма тивет. Малалли вунă çул хушши А.А. Михайлов Патăрьелĕнчи «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнчи мехотрядра трактор бригадин бригадирĕнче вăй хурать. ёçри çитĕнӳсемшĕн ăна «Ёçре палăрнăшăн» («За трудовое отличие») медальпе наградăланă тата ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕ Хисеп грамоти парса чысланă.

1930 çулсен варринче çĕр-шывĕпе колхозсем малалла аталанса пыни (ун пирки малтанах асăннăччĕ ĕнтĕ), индустри вăй илнипе, трактор-машина кăларакан заводсем хута кайнипе çыхăннă. Çавна пула колхозсене çĕнĕрен те çĕнĕ йышши тракторсемпе ял хуçалăх техники килсе тăма тытăнать. Çакă, паллах, колхозниксен пурнăç условийĕсене çăмăллăх кӳнĕ. Çапах та партипе правительствăна ертсе пыракансен çитменлĕхĕсем те сахал мар пулнă. Вăтăрмĕш çулчченех тĕреклĕ те вăтам хуçалăхпа пурăнакан хресченсене кулаксем шутне кĕртсе, çурт-йĕрне, пурлăхне туртса илсе, ачи-пăчи таранччен килĕсенчен кăларса янă, хăйсене ссылкăна ăсатнă. Китай компартийĕ çав енчен пачах урăх çулпа кайнă: нимĕнле репрессисĕрех хресченсене, пуяннисемпе чухăннисене уйăрмасăр, экономикăна аталантарса чухăн çĕршывран чип-чипер тухса, малта пыракан çĕршывсен ретне кĕме пултарчĕ.

1937-мĕш çул Чăваш республикишĕн кăна мар, Патăрьел районĕнчи колхозсемшĕн те пысăк тухăçлă тыр-пул пухса илесси çанталăк условийĕпе кăна çыхăнман. Ăнăçу тӳпи кунта МТСсен паркĕсене трактор-комбайн, ял хуçалăх техникипе тивĕçтерсе пынинчен те, трактористсемпе комбайнерсем, механизаторсемпе колхозниксен тăрăшулăхĕпе хастарлăхĕнчен, ертӳçĕсен

пĕлсе ертсе пынинчен нумай килнĕ. Çавăн чухне анчах çĕр çинче çĕрне-кунне канлĕхе çухатса, пилĕке авса ĕçлекен ял çынни пысăк çитĕнӳ тума пултарнă.

Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш республикипе 98, Патăрьел районĕпе 4 колхоз Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнма ирĕк çĕнсе илнĕ. Вăл çулхине районти «Звезда» колхоз 620 гектар çинчен тĕш-тырă вăтамран 24,9 ц пухса илсе республикипе 1-мĕш вырăна тухнă. Ыттисем: «Красные Тойси» – 671 га – 21,6 ц (4-мĕш вырăнта), «Октябрь Ялавĕ» – 279,4 га – 19,0 ц (27), Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхоз – 351,6 га – 18,9 ц (28-мĕш вырăнта).

Çураки, çавăн пекех уй-хирте тыр-пул пуçтарса илес умĕн, кашни колхоз ĕç планĕ туса, ăна правлени ларăвĕнче çирĕплетнĕ. Тĕслĕх вырăнне кунта «Çăлтăр» колхозăн 1940 çулхи утă уйăхĕн (июлĕн) 7-мĕшĕнче йышăннă ĕç планĕпе паллаштарма пулать:

«Колхозра тырă вырма 9 жнейка, 1 лобогрейка усă курмалла. Кашни машин çумне ыллаштарса ĕçлеме 4-шар лаша çирĕплетсе хунă. Вырнă тырăсене хыçĕнченех çыхса пуçтарса пымалла. Çавăн чухнех ӳксе юлнă пучахсене çамрăк ачасем пухса пыраççĕ.

Кĕлтесене çĕкĕрте турттарма вырмана тухсан виççĕмĕш кунĕнчех тытăнмалла, çав вăхăтрах авăн çапасси те пуçланать. Кĕлтесене пурĕ 6 йĕтем çине турттармалла, кашни бригадăн хăйĕн уйрăм йĕтем пулать. Бригада пуçне кашни звеноран пĕр лашапа икĕ çын кĕлте турттараççĕ. Мĕн пурĕ çак ĕçре кашни бригадăран: 6 çын кĕлте турттаракансем, 2 çын çĕкĕрт тăвакансем пулаççĕ. (Вĕсене хушаматсемпе çирĕплетнĕ.)».

Çавăн пекех, ĕç планĕ тăрăх МТСпа договор туса, «Коммунар» комбайнпа тырă вырнă çĕрте усă курнă. Тракторĕ СТЗ колхозăн пулнă. Комбайн патĕнче ĕçлекенсене тăма, бункертан тырă пушатса пыракансене, улăм пăрахса пыракансене, краççын тата шыв турттаракансене çирĕплетнĕ.

Улăма пухса, çĕкĕртсене пĕр йĕркепе лартса тухмалла. Çĕкĕрт тăвакансем кĕлтесене турттарса урана хунă (скирдовать тунă). Мĕн чухлĕ вырнине тата ĕç пахалăхне кашни кун бригадирсем учета илсе пынă. Авăн çапнă çĕрте молотилка МК-1100 усă курнă. Сортланă тырра Канаша патшалăха пама лашасемпе турттарнă.

Çӳлерех асăннă «çĕкĕрт, кĕлте, капан, улăм ури» ятсем, вĕсене ялхуçалăх техники, трактор-комбайн çĕнĕ модификацисемпе çĕнелсе, çыннăн алă вăйне улăштарнă май, малашне манăça тухса пыраççĕ.

Тăрăн ялĕнчи пуринчен те аслă ватăпа – Д.Р. Гордеевпа тĕл пулса калаçнă чухне эпĕ унран лобогрейка пирки çак сăмахăн пĕлтерĕшне ыйтсан, вăл мана çапла каласа ăнлантарнăччĕ.

Вăтăрмĕш çулсенче колхозсенче вырмана тухсан уй-хирте пур пек ял-хуçалăх техники тырă пухса кĕнĕ чухне хăй тĕллĕн çӳресе ĕç тума пултарайман.

Авăн çапмалли машинăсене (молотилкăсене), жнейкăсемпе лобогрейкăсене тырра вырнă-çапнă чухне лаша вăйĕпе усă курма тивнĕ. Лобогрейка пирки чăвашла калас пулсан, вăл çамкана хĕртсе пыракан япала пулмалла пек. Тырă вырнă чухне çав лобогрейкăна лашана кӳлсе тырра вырнă, лобогрейкăн площадки çинче лавçи тилхепене тытса лашана малалла уттарнă, вырса пынă тырă площадка çине пуçтарăннă, тепри ăна айккине ывăтса пынă. Вырнă тырра ывăтса пыраканнин çамки çине тар тапса тухсан, шăлса илме те вăхăчĕ пулман тет. Хĕрарăмсем çав тырра пуçтарса кĕлтесем тунă, кĕлтесенчен тăваткăл купаласа суратсем хунă. Пĕр сурата пĕр лав çурхи тыр-пул кĕлтинчен купаланă, çӳлелле хăпарса пынă май шĕвĕрленсе пынă. Пуçтарнă ыраш кĕлтисенчен çĕмел тунă, вăл çаврака пулнă. Пĕр капан тума пилĕк лав ыраш кĕлти турттарнă.

Вăрçă вăхăтĕнче çĕкĕртсене хирте хĕлле валли хăварнă. Хĕлле вара çĕмелти тырра хиртех юра хырса сарса тухнă. Хĕрарăмсем тăпачăпа хире-хирĕç тăрса (йыш шутне кура – улттăн, саккăрăн е ытларахăн

та), авăн çапнă, тырра пучахран уйăрнă. Вăл вăхăтра колхозсенче комбайнсем пулман-тăр, комбайнпа ĕçлеме пĕлекен чылай арçын вăрçăра пулнă. Тырра михĕсене тултарнă, çуна çине тиесе, лашапа колхоз кĕлетне турттарнă. Хăш-пĕр колхозсенче йĕтем çинче молотилкăна виçĕ лаша кӳлсе çавăрттарса тырра çапнă.

Комбайнсем пур чухне тырă вырма тухсан вĕсене кустăрмаллă е гусеницăллă тракторсемпе туртса пынă.

Вăтăрмĕш çулсен вĕçĕнче районта промышленнăçра усă куракан ялхуçалăх культурине акса ӳстерме тытăнаççĕ. Аяларах чарăнса тĕплĕнрех паллашăпăр çак кок-сагыз ятлă ӳсен-тăранпа. Акă мĕн çырать «Коммунизм байрагы» район хаçачĕ 11.07.1940 ç. пĕр статьяра.

«Кок-сагыз ӳсекен культура халăх хуçалăхĕнче питĕ те кирлĕ вырăн йышăнса тăрать, вăл резинаран тăвакан пур йыши япаласем туса кăларнă çĕре кает. Иртнĕ çулсенче кок-сагыз культурине пирĕн районри «Канаш» колхозра сăнас майпа акса пăхнă. Унăн тупăшĕ пĕр гектартан 7 пин тенкĕ ытла тупăш панă. Кăçал пирĕн районти колхозсенче ăна хĕллене хирĕç çĕр шăнта пуçличчен 1–2 кун малтан акса хăварmалла. Ăна кантăр вырăнне аксан лайăх.

Райçĕрĕç пайĕн гл. агрономĕ Ф. Архипов.»

Паянхи кун ялта пурăнакан çамрăксем тата вăтам çулхисем хирсенче пăри, ясмăк тата вир, çавăн пекех чĕр тавар валли кантăр мĕнле акса çитĕнтерни çинчен пачах пĕлмеççĕ пулсан, кок-сагыз тата йĕтĕн çинчен пĕлекене ялсенче ваттисен хушшинче те сайра тĕл пулма пулать. Колхозсем ял-хуçалăхĕнче усă куракан çак икĕ культурăна иртнĕ ĕмĕрти аллăмĕш çулсен пуçламăшĕчченех ӳссе çитĕнтернĕ. Çав çулсенче çуралнă паянхи ватăсем пĕлмеççĕ те ун çинчен.

ПОЛИТИКА РЕПРЕССИЙĔН СИНКЕРЛĔ ТАПХĂРĔСЕМ

Иртнĕ ĕмĕрĕн 30–40-мĕш çулĕсем Совет Союзĕнче истори страницинче нихçан шуралми йĕрпе çырăнса юлнă. Синкерлĕ тапхăр политика репрессийĕпе çыхăннă. Ученăй историксен çĕнĕ кăтартăвĕсем тăрăх, Чăваш Ен территорийĕнче çеç Совет влаçĕн тапхăрĕнче, 1918–1953 çулсенче, 50 пине яхăн çынна – писатель-поэтсене, ученăйсене, вузсемпе шкулсенче вĕрентекенсене, патшалăх тата парти кадрĕсене, çар тата тĕн çыннисене, рабочисемпе хресченсене, ватти-çамрăккине пăхмасăр репрессиленĕ. Коллективизаци çулĕсенчи массăллă репрессин, вăрçă умĕн çар кадрĕсене пĕтернĕ тĕслĕхсене паянхи кун та уçса паман-ха.

Репресси саламачĕ Совет Союзĕнче уйрăмах 1937–38 çулсенче нимĕнле нацие те уямасăр, мĕнле выраńта ĕçленине е вĕреннине пăхмасăр, çамрăк е ватă-и вăл – вирлĕ пырса çапнă. Ку саламатпа çав çулсенче СССР Шалти ĕçсен Халăх комиссарĕ уйрăмах вирлĕ шартлаттарнă: 1937 çулхи çурла уйăхĕнчи 15-мĕшĕнче оперативлă приказ тăрăх, кашни союзлă тата автономиллĕ республикăна, край, облаçпа наци округне халăх тăшманĕсене, репрессие маларах лекнĕ элементсемпе кулаксене хирĕç операци ирттерес пирки план ярса парать. Çак план тăрăх тăшманла элементсене икĕ категори çине пайланă: 1-мĕш категорие уйрăм хăрушă репрессие кĕрекеннисем; 2-мĕш категорие кĕрекен элементсем малтанхисем пекех хăрушă пулмасан та, вĕсем «наиболее злостные и социально опасные» ярлăкпа тăшманла элементсем шутланнă. Чăваш АССРĕнчи шалти ĕçсен Халăх комиссарне Совет Союзĕнчи ытти регионсем пекех асăннă категорисем тăрăх репрессие лекнĕ халăх тăшманĕсене Спецтройкăн миçе çынна персе пăрахмалла, миçе çынна лагере тата тĕрмене ăсатмалли çинчен цифрăсем антарса панă. Ун пек чухне выраńта, паллах, çӳлтисене

юрас тесе плана ирттерсе те тултарнă; репрессие ун чухне обком секретарĕ те, хресченпе сутуçă та, шкулта вĕрентекенпе мечет-чиркӳре кĕл тăвакан муллапа пачăшкă те лекнĕ.

Çакăн пирки «Плановые репрессии» статьяран хăшпĕр йĕркесене илсе кăтартасшăн.

Чăваш АССРĕнчи шалти ĕçсен Халăх комиссариатне ярса панă документсенчен («Совершенно секретно», экземпляр № 48 тесе çырнă) çакна курма пулать.

«Оперативный приказ народного комиссара внутренних дел Союза ССР от 30 июля 1937 г. № 00447, гор. Москва.

Материалами следствия по делам антисоветских формирований устанавливается, что в деревне осело значительное количество бывших кулаков, ранее репрессированных. Осело много в прошлом репрессированных церковников и сектантов. Остались почти не тронутыми в деревне значительные кадры антисоветских политических партий.

ПРИКАЗЫВАЮ – с 5 августа 1937 года во всех республиках, краях и областях начать операцию по репрессированию бывших кулаков.

1. Контингенты, подлежащие репрессиям.

... Репрессированию подлежат элементы, содержащиеся в данное время под стражей, следствие по делам которых закончено, но дела еще судебными органами не рассмотрены.

Репрессии подлежат все перечисленные выше контингенты, находящиеся в данный момент в деревне – в колхозах, совхозах, сельскохозяйственных предприятиях и в городе на промышленных и торговых предприятиях, транспорте, в советских учреждениях и на строительстве.

II. О мерах наказания репрессируемых и количестве подлежащих репрессии.

Все репрессируемые элементы разбиваются на две категории:

а) к первой категории относятся все наиболее враждебные из перечисленных выше элементов. Они подлежат немедленному аресту и, по рассмотрении их дел на тройках – РАССТРЕЛУ.

б) ко второй категории относятся все остальные менее активные, но все же враждебные элементы. Они подлежат аресту и заключению в лагеря на срок от 8 до 10 лет, а наиболее злостные и социально опасные из них – заключению на те же сроки в тюрьмы по определению тройки.

... Утверждаю Вам (Наркому внутренних дел Чувашской АССР – *Авт.*) следующее количество подлежащих репрессии:

1. по первой категории – 300 (триста)

II. по второй категории 1500 (тысяча пятьсот).

Утвержденные цифры являются ориентировочными.

III. Порядок проведения операции.

... На основании утвержденного списка начальник оперативной группы производит арест.

IV. Порядок ведения следствия.

1. На каждого арестованного или группу арестованных заводится следственное дело. Следствие проводится ускоренно и в упрощенном порядке.

2. По окончании следствия дело направляется на рассмотрение тройки...

V. Организация и работа троек.

... На заседаниях троек может присутствовать (там, где он не входит в состав тройки) республиканский, краевой или областной прокурор...

VI. Порядок приведения приговоров в исполнение.

... Приговора по первой категории приводятся в исполнение в местах и порядком по указанию наркомов внутренних дел, начальников управлений и областных отделов НКВД с обязательным полным сохранением в тайне времени и места приведения приговора в исполнение. (*Ахальтен мар ӗнтӗ паянхи кун та персе вӗлернисене ӑҫта пытарни пирки вӗсен тӑванӗсенчен чылайӑшӗ пӗлмеҫҫӗ – Д.К.*)

... Направление в лагеря лиц, осужденных по 2 категории, производится на основании нарядов, сообщаемых ГУЛАГОМ НКВД СССР.

VII. Организация операцией и отчетность.

... О ходе и результатах операции доносить пятидневными сводками к 1, 5, 10, 15, 20 и 25 числу каждого месяца телеграфом и подробно почтой»...

Халăх тăшманĕсене кăна мар, вĕсен арăмĕсемпе çывăх тăванĕсене те айăпламасăр хăвармалла мар, тесе СССР шалти ĕçсен Халăх комиссариачĕ 1937 çулхи çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче çĕнĕ оперативлă приказ кăларать.

«С получением настоящего приказа приступите к репрессированию жен изменников Родины, осужденных по первой и второй категориям, начиная с 1 августа 1936 года.

В отношении каждой намеченной к репрессированию семьи собираются дополнительные установочные данные и компрометирующие материалы.

На основании собранных материалов составляются:

подробная общая справка на семью (включая и всех лиц, состоящих на иждивении осужденного и вместе с ним проживавших)...,

характеристики, в отношении степени социальной опасности детей старше 15-летнего возраста...,

именные списки детей до 15 лет, отдельно дошкольного и школьного возраста.

...Аресту подлежат жены, состоявшие в юридическом или фактическом браке с осужденным в момент его ареста.

...Аресту подлежат также и жены, хотя и состоявшие с осужденным, к моменту его ареста, в разводе.

...После производства ареста и обыска арестованные жены осужденных конвоируются в тюрьму. Одновременно порядком, указанным ниже, вывозятся и дети.

Порядок оформления дел.

На каждую арестованную и на каждого социально опасного ребенка старше 15- летнего возраста заводится следственное дело.

...Жены осужденных подлежат заключению в лагеря на сроки, в зависимостиот степени социальной опасности, не менее как 5–8 лет.

Социально опасные дети осужденных, в зависимости от их возраста, подлежат заключению в лагеря или исправительно-трудовые колонии НКВД, или водворению в детские дома особого режима...

Осужденные жены изменников Родины, не подвергнутые аресту, в силу болезни и наличия на руках больных детей, по

выздоровлению арестовываются и направляются непосредственно в лагерь.

Так же поступать и с осужденными женами, имеющими преклонный возраст...

...Наблюдение за политическими настроениями детей осужденных возлагаю на Наркомов Внутренних дел республик, начальников Управления НКВД краев и областей.

О ходе операции доносить мне трехдневными сводками по телеграфу».

(«Советская Чувашия» хаçатри «Плановые репрессии» ятпа 18.11.2003 çулта О. Ефимов çырнă статьяран)

Чăваш АССРĕнче репрессие лекнĕ «çĕршыва сутакансен» ачисем, приказ тăрăх, Етĕрнери, Сĕнтĕрвăрринчи тата Çĕрпӳри ачасен çурчĕсенче вырнаçнă.

Маларах эпĕ Тăрăнти тулли мар вăтам шкул директорĕ П.П. Петров репрессие лекни çинчен, ăна айăпласа лагере яриччен Улатăр тĕрминче тытни çинчен çырнăччĕ. Ăна тăшманла элемент тесе, Шалти ĕçсен Халăх комиссарĕн приказĕ тăрăх, 2-мĕш категорие кĕртсе 10 çула лагере янă. 1-мĕш категорие кĕртнĕ уйрăмах хăрушла элементсене Шупашкарти тата Улатăрти тĕрмесенче Чăваш АССРĕнчи НКВД çумĕнчи спецтройка приговорĕпе пере-пере пăрахнă.

Улатăр тĕрмине республикăн кăнтăр пайĕнче вырнаçнă çичĕ районтан: Улатăр, Патăрьел, Йĕпреç, Каçал, Пăрачкав, Шăмăршă тата Елчĕк хутлăхĕнчен – 1937–1942 çулсенче илсе пынă миçе ар пурнăçне татнă – ăна никам та калама пултараймасть. Паянхи куна унта шар курнисен шутне Патăрьел районĕнчи Вăтаелĕнчи Ефим Савельевич Табакова, Кĕçĕн Патăрьелĕнчи Дмитрий Афанасьевичпа Илья Афанасьевич Илюткинсене, Ишлĕре пурăннă Григорий Семенович Краснова, Шăнкăртамри Айнетдин Шарафутдинович Шамбазова, Татмăшри Степан Ивановичпа Марк Алексеевич Дюкинсене кĕртсе хаçатсенче те çырнăччĕ. Улатăр хулинчи электроприборсен завочĕн территорийĕнче айăпсăр

персе вĕлернĕ çынсен шăммисем выртни пирки сасхура унчченех пулнă. Ку выраńта ĕлĕк районти НКВД çурчĕ пулнă тет. 2009 çулхине Шупашкар тата Чăваш епархийĕн митрополичĕ Варнава пил панипе çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнчен тытăнса çав завод территорине чавма тытăннă, çурла уйăхĕн 17-мĕшчен кĕреçепе чавса 3 виле шăтăкĕ тупса палăртнă. Персе вĕлернĕ 118 çын юлашкисене (вĕсен хушшинче 8 священник) – çитмĕл çул ытла çĕр айĕнче выртнă шăмăсене – тирпейлĕн пуçтарса тупăксене тултарса хунă, шăтăк чавса вĕсене унта вырнаçтарнă. Çавăн хыççăн траурла митинга Шупашкарти Свято-Троицки арçынсен монастырĕн наместникĕ Василий (Паскье) игумен уçнă. Тухса калакансенчен официаллă выраńта ĕçлекенсем, персе пăрахнă айăпсăр çынсен ачисемпе вĕсен мăнукĕсем пулнă, юлашки çула ăсатакансен ячĕпе кĕлĕ ирттернĕ.

Справка: СССР пулса кайнăранпа историксем шутланă тăрăх репресси саламачĕ 12,5 млн. çынна пырса çапнă. Чăваш енче 20-мĕш çулсен вĕçĕнчен тытăнса 1953 çул таран 14 пин çын ытла репрессине лекнĕ. Политика репрессине тӳсекенсем, Чăваш Республикинчи «Астăвăм» кĕнеки тăрăх, ăçта çурални, мĕншĕн айăплани, ăçта вилни çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă («Советская Чувашия» хаçата 15.10.2010 ç. куçарнă тăрăх – *Д.К.)*

Нумай пулмасть манăн Чăваш Республикинчи репрессие пула шар курнисене асăнса кăларнă «Астăвăм» кĕнекепе паллашма тӳр килнĕччĕ. Малалла çавăнта çырнă хăш-пĕр йĕркесем (стр. 23) çинче чарăнса тăрас тетĕп.

По приказу НКВД СССР № 00129 от 25.05.1935 г. в НКВД-УНКВД республик, краев и областей были организованы «Тройки».

В соответствии с приказами НКВД СССР № 00485 от 11.08.1937 г. и № 00593 от 20.09.1937 г. дела по спискам стали рассматриваться «двойками» и «тройками» в республиках, краях и областях.

В состав тройки входили: председатель – начальник НКВД, члены – прокурор и 1-й секретарь областного, краевого или республиканского комитета ВКП(б).

Количество подлежащих репрессии по ЧАССР по первой и второй категориям было утверждено 1800 чел.

По 1-й категории подлежат расстрелу, по 2-категории – в лагеря на срок от 8 до 10 лет, а наиболее злостные и социально опасные из них – заключению на те же сроки в тюрьмы по определению тройки.

Спецтройка ЧАССР в составе 1-го секретаря ОК ВКП(б) С.П.Петрова, наркома НКВД А.М.Розанова, прокурора И.С.Элифанова план по расстрелу 300 чел. перевыполнила уже к ноябрю, хотя по приказу Ежова это нужно было сделать к концу декабря.

19 сентября – 12 октября 1939 г. прошел процесс по обвинению группы работников Наркомата земледелия и других организаций Чувашии в причастности к «контрреволюцинной буржуазно-нациналистической организации», в количестве 16 чел., среди них зам. председателя ЦИК ЧАССР А.В. Васильев (*вăл вăхăтра пирĕн ентеш Алексей Васильевич çĕрĕç комиссариат комиссарĕ пулман ĕнтĕ – Д.К.*), наркомзем П.Ф. Юрьев, уполнаркомзаг по ЧАССР И.Я. Морозов, начальник животноводческим управлением Наркомзема ЧАССР М.Ф. Спиридонов и др.

Патăрьел районĕпе илес пулсан, 1930–1953 çулсенче 400 яхăн ял çынни репрессие лекнĕ, вĕсенчен 14-шĕ Тăрăн ял тăрăхĕнчен, айăпсăр айăпа кĕрсе шар курнăскерсене, тĕрлĕ çулсенче реабитацилесе таса ячĕсене каялла тавăрнă. Маларах асăннă Астăвăм кĕнеки тăрăх вĕсем çаксем шутланса тăраççĕ.

1. Васильев Алексей Васильевич, 1897 г.р., с.Туруново, зам. председателя ЦИКа ЧАССР.

Обвинительные статьи: ст.58 п.7 УК РСФСР, ст.58 п.10 ч.1 УК РСФСР, ст.58 п.11 УК РСФСР. Приговор вынесен выездной сессией Судебной коллегией по уголовным делам Верховного Суда РСФСР 12.10.1939 г. Приговор: «Подвергнуть высшей мере наказания – расстрелять с конфискацией имущества.»

Определением Судебной коллегии по уголовным делам Верховного суда СССР от 20.05.1940 г. «Приговор Судебной коллегии по уголовным делам Верховного суда РСФСР отменить и дело передать на новое рассмотрение. Меру пресечения оставить содержание под стражей».

Приговор Военного трибунала Приво от 13.02.1941 г. «Васильева А.В. по ст.58-7, 19, 58-8, 58-11 УК РСФСР оправдать». Определением Военной коллегии Верховного Суда СССР от13.05.1941 г.: «Оправдательный приговор по Васильеву отменить, обратив дело о нем на доследование».

Особым совещанием при НКВД СССР от 16.09.1941г. «Заключить в ИТЛ сроком на 8 лет, считая срок с 9 января 1938 г.». Освобожден из заключения с 9.01.1946 г. Место работы на момент ареста – не работает. Обвинительные статьи: ст.58 п.7 УК РСФСР, ст.58 п.11 УК РСФСР. Приговор вынесен Особым совещанием при МГБ СССР 23.02.1949 г. Приговор: «Сослать на поселение». Дата реабилитации – 21.10.1955 г.

2. Петров Петр Петрович. 1887 г.р., родился в д.Чепкас-Никольское Шемуршинского района. Учитель Туруновской неполной средней школы. Приговор вынесен Спецтройкой при НКВД ЧАССР 30.12.1937 г. Приговор: заключить в ИТЛ сроком на 10 лет, считая срок с 24.12.1937 г. Дата реабилитации – 12.12.1956 г.

3. Павлова Анна Александровна. 1905 г.р., с.Туруново, колхозница.

Приговор вынесен Особым совешанием при НКВД СССР 24.10.1942 г. Приговор: Павлову сослать в Коми АССР сроком на 5 лет, считая срок со дня вынесения настоящего поселения, с конфискацией имущества. Дата реабилитации: 22.09.1989 г.

4. Шалунов – Лялькин Дмитрий Алексеевич, 1891 г.р., с.Туруново, единоличник.

Обвинительные статьи не указаны. Приговор вынесен Спецтройкой при НКВД ЧАССР 05.12.1937 г. Приговор: «Заключить в ИТЛ сроком на 10 лет, считая срок с 22.12.1937 г.» Дата реабилитации: 29.08.1956 г.

5. Думилин Ефим Алексеевич. 1900 г.р., с.Туруново.

Обвинительные статьи: ст.58 п.8 УК РСФСР. Приговор вы-

несен выездной сессией Главного суда ЧАССР 11.01.1930 г. – за недоказанностью считать оправданным и из-под стражи освободить».

6. Шигалов Леонтий Александрович, 1901 г.р., с.Туруново, заключенный Батыревского арестного дома. Обвинительные статьи: ст.58 п.8 УК РСФСР.

Приговор вынесен выездной сессией Главного суда ЧАССР 11.01.1930 г. Приговор: «За недоказанностью считать оправданным и из-под стражи немедленно освободить».

7. Илюткин Дмитрий Афанасьевич, 1897 г.р., д.Малое Батырево, колхозник. Обвинительные статьи не указаны. Приговор вынесен Тройкой при НКВД ЧАССР 08.09.1937.

Приговор: «Расстрелять с конфискацией лично принадлежащего ему имущества». Дата смерти: 17.09.1937 г. Причина: расстрел. Дата реабилитации: 08.04.1960 г.

8. Илюткин Илья Афанасьевич, 1894 г.р., колхозник. Обвинительные статьи не указаны. Приговор вынесен Тройкой при НКВД ЧАССР 08.09.1937 г. Приговор: «Расстрелять с конфискацией лично принадлежащего ему имущества». Дата смерти: 17.09.1937 г., причина: расстрел. Дата реабилитации: 08.09.1960 г.

9. Илюткин Николай Егорович, 1880 г.р., д.Малое Батырево, единоличник. Обвинительные статьи не указаны. Приговор вынесен Тройкой при НКВД ЧАССР 08.09.1937 г. Приговор: «Заключить в тюрьму сроком на 10 лет, считая срок с 28 июля 1937 г.». Дата смерти: 1938 г. Дата реабилитации: 08.04.1960 г.

10. Прохоров Иван Андреевич, 1891 г.р., д.Малое Батырево, крестьянин. Приговор вынесен Тройкой при НКВД ЧАССР 08.09.1937 г. Приговор: «Заключить в тюрьму сроком на 10 лет, считая срок с 6 августа 1937 г. Дата смерти: 19.12.1941 г. Дата реабилитации: 08.04.1960 г.

11. Родионов Дмитрий Алексеевич, 1919 г., д.Малое Батырево, плотник. Обвинительные статьи: ст.58 п.1 «б» УК РСФСР. Приговор вынесен Военным трибуналом Туркестанского военного округа 27.12.1949 г.

Приговор: «Родионова Д.А. лишить свободы в ИТЛ сроком на 15 лет с поражением в политических правах сроком на 5 лет без конфискации имущества. Начало отбытия наказания с зачетом предварительного заключения исчислять с 1 ноября 1947 г.»

Определением Военной коллегии Верховного Суда СССР от 18.02.1948 г. приговор оставлен в силе. Дата реабилитации: 30.04.2002 г.

12. Тихонов Алексей Александрович, д. Малое Батырево, колхозник. Обвинительные статьи не указаны. Приговор вынесен Тройкой при НКВД ЧАССР 08.09.1937 г. Приговор: «Заключить в тюрьму сроком на10 лет, считая срок с 5 августа 1937 г.». Дата реабилитации: 08.04.1960 г.

13. Цветков Дмитрий Николаевич, 1879 г.р., д.Малое Батырево, единоличник. Обвинительные статьи не указаны. Приговор вынесен Тройкой при НКВД ЧАССР от 08.09.1937 г. Приговор: «Заключить в тюрьму сроком на 10 лет, считая срок с 5 августа 1937 г.». Дата реабилитации: 08.04.1960 г.

14. Зайцев Егор Михайлович, 1888 г.р., д.Новое Котяково, единоличник. Обвинительные статьи: ст.58 п.10 ч.1 УК РСФСР. Приговор вынесен Спецтройкой Главного суда ЧАССР 30.05.1936 г. Приговор: «Зайцева Е.М. подвергнуть лишению свободы сроком на 5 лет с содержанием в исправительно-трудовом лагере НКВД и с поражением в избирательных правах по ст.31 п. «а» УК РСФСР на 5 лет. Срок наказания считать с 12.02.1936 г. Меру прсечения оставить прежнюю, т.е. под стражей.

Определением Спецколлегии Верховного Суда РСФСР от 17.07.1936 г. приговор оставлен в силе. Дата реабилитации: 05.06.1992 г.

15. Степанов Петр Степанович, 1910 г.р., д.Новое Котяково, колхозник к-за «Красный Октябрь». Приговор вынесен Спецтройкой при НКВД ЧАССР 26.12.1937 г. Приговор: «Степанова П.С. расстрелять, конфисковать лично принадлежащее ему имущество». Дата смерти: 09.02.1938 г., причина: расстрел. Дата реабилитации: 09.09.1989 г.

Çӳлерех асӑннӑ «Астӑвӑм» кӗнекине 1920–1930 çулсенче тӗреклӗ хуçалӑхсемпе пурӑнакан хресченсене кулаксем тесе репресси çавипе çулнисем кӗмен-ха. Кам шутланӑ: кашни ялтан паянхи кун çак ушкӑна кӗрекен миçе çынна айӑпсӑр айӑпласа çемйисемпех Çӗпӗре тата çурçӗрте çын пурӑнман тайгана вӑрман каснӑ çӗре е

ытти вырӑна ссылкӑна янă. Сахал мар пулнă вĕт ватти-вĕтти каялла киле таврӑнаймасăр ĕмĕрлĕхех ҫавӑнтах выртса юлни те. Айӑпсӑр шар курнисен ячĕ-хушаматне уҫӑмлатни малашнехи ӑрусене кирлĕ.

Ҫапах та паян, май килнипе усă курса, эпĕ сире, хисеплĕ вулакансем, ҫав вăхăтра нуша курнă пĕр ҫемье ҫинчен Иван Пахомовӑн 2003 ҫулхи кӑрлач уйӑхĕн 16-мĕшĕнче «Хыпар» хаҫатра кун ҫути курнă «Хурлӑх курмах ҫуралтӑм пулĕ ҫав», – тет 87 ҫулти кулак хĕрĕ» очеркпа паллаштарасшӑн.

Анна Леонтьевна Паймина (Кошкина) Патăрьел районĕнчи Треньел ялĕнче 1915 ҫулхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче пуян ҫемьере ҫуралнă. 9 ача ӳстернĕ вĕсен ашшĕ-амăшĕ. Ашшĕ, Леонтий Федорович Паймин, Юхма тăрăхĕнче чи паллă сутуҫă пулнă, 4 лавпа тĕрлĕ хулана тавар сутма-туянма ҫӳренĕ. Икĕ пӳрт юнашар, ҫумĕнче тавар тытакан склад пулнă. Ҫĕрпе лайăх усă курнă: вăхăтра сухаланă, паха вăрлăх акнă ҫĕр яланах пысăк тухăҫ панă. Ҫакӑн чухлĕ ĕҫе Леонтий Федорович хăйĕн ывăл-хĕрĕпе тата Иван шăллĕпе пурнăҫланă. Ялтан пулăшакан (тарҫă) Федор Муськин ҫеҫ пулнă, «Аттене вăл питĕ хисеплетчĕ, юрататчĕ, мĕншĕн тесен атте ĕҫ хушса ҫеҫ тăман, тарҫăпа юнашар ирех тăрса лаша кӳлнĕ, хире кайнă, ĕҫлекене кӳрентермен, улталаман. Атте питĕ ĕҫченччĕ, пире те ҫамрăкла ĕҫе хăнăхтарнă. Эпĕ 13–14 ҫулта чухнех Комсомольски районĕнчи Шăхасан ялне (анне ҫав ялтан пулнă) хĕллехи, ҫуркуннехи вăхăтра ларма ҫӳренĕ, Улатăртан илсе килнĕ йĕтĕне арлаттăм, ҫемьери 11 ҫын валли кĕпе-йĕм кирлĕ-ҫке-ха», – аса илет 87 ҫулхи Анна аппа.

Хĕл кунĕнче кӑларса ячĕҫ

– Ҫапла пĕрре хĕл кунĕнчи сивĕре эпĕ, темиҫе эрне киле килмен 14 ҫулти хĕрача, пӳрте кĕтĕм. Пирĕн патăрта Аслă Патăрьел ҫынни Табаков ларать. Ачапча яланах ваттисем, ҫитĕннисем мĕн калаҫнине итлесшĕн, эпĕ те шкаф хушшинчен вĕсем мĕн калаҫнине тăнласа тăратăп. «Паян ялта чухăнсен пухăвĕ пу-

лать, унта сана раскулачить тăвас, ялтан кăларса ярасси пирки калаçĕç, ял çынни сана хирĕç пулмĕ-и?» – ыйтать хайхи. Чăнах та, чухăнсем йышлăн пухăннă. Анчах пĕри те аттене сивлесе калаçман, ун майлисем вара пулнă. Акă пуху протоколĕнче çырнисем: «2–3 çулхи парăмсене те вăл тӳлеме ыйтмасть, сӳнтерсе пырать, Мăнкуна кашни киле 20-шер аршăн пусма тӳлевсĕр валеçет, тырă пухса илнĕ вăхăтра лашасемпе пулăшать, хăйне хуçа пек тытмасть, пирĕнпе тан ĕçлет, ялтан кăларса ямастпăр, унпа юнашар пурăнма çăмăл. Кивçен 6 пăт тырă парсан та ӳстерсе илмест, 6 пăтпах çырлахать». Халăхĕ аттене ялтах хăварасшăн пулнине пăхмасăрах çĕрле 12 сехетре пăшаллă темиçе çын киле пырса кĕчĕ, пурне те тухса кайма ыйтрĕ, эпир (9 ача, манран çамрăккисем те пур) йĕме пуçларăмăр. Икĕ пӳрт, виçĕ кĕлет, сурăх пӳрчĕ – 18 сурăхпа 32 путек, 4 лаша, 1 тиха, сăвакан 4 ĕне, 60 вĕлле, складра темиçе 100 аршăн пусма, утăулăм, тыр-пур – пурне те пичетлесе илчĕç, хамăр çинчи тумтирпе урама кăларса ячĕç. Асаттесем патне куçрăмăр – юнашарахчĕ. Атте çĕрĕпе куç хупман, эпир йĕре-йĕре çывăрса кайнă пулĕ. Хутран-ситрен хуралçăсем хăйсем вырăнта тăнине систерсе пăшал переççĕ.

Лаша пуçне анне хул пуççийĕ çине хучĕ

Çутăлсан атте калать: «Хĕрĕм, хамăр пата каçса кил-ха, мĕн тăваççĕ унта выльăхсем». Эпĕ пус урлă картишне каçса кĕтĕм, лашасем выçă, мана курсан кĕçенсе ячĕç. Лупас çинчен утă антарса патăм. Пӳрт алăкне питĕрмен, алăка уçса кĕтĕм – пӳрт сивĕнсе кайнă.

Çав кун лашасене милицисем илсе тухса кайрĕç, лаша пуçне анне хул пуççийĕ çине хучĕ – пулăшу ыйтнă пек. Сасăпах йĕретпĕр. Кĕлетре 11-ĕн хĕл каçрăмăр. Сортировкĕсенче чухăнсене ĕçлеттерчĕç, çапман капансене çаптарчĕç.

Тăрăн çынни, ял Советĕнче ĕçлекен, аттене урăх хушаматпа хут туса панă иккен, вара атте Мускава пĕр завода ĕçлеме кайрĕ, вăрттăн. Килте пурăнма питĕ йывăрччĕ: аслă пиччен арăмĕ, инке, питĕ усалччĕ, пире тăраниччен çăкăр та çитерместчĕ, хăй наянччĕ, пире ĕçлеттеретчĕ. Ял Советĕнче ĕçлекен Крылов асатте патне кайрăм, çак нушана каласа патăм, мана урăх хушаматпа – Лимкина Анна Леонтьевна ятпа – хут туса пачĕ, эпĕ те

инкерен вăрттăн Мускава ĕçлеме тухса кайрăм. Асанне, инçех те мар пурăнаканскер, çул çине çăкăр, çу, какай, укçа парса ячĕ. 1931 çулхи кĕркунне 16 çултискер, Мускаври пĕр фабрикăна вырнаçрăм. Елчĕк район хĕрĕпе ĕçлекен машинăсем патне пырса тăтăмăр та йĕретпĕр, мĕнле ĕçлемеллине сăнатпăр.

Вăл вăхăтра аттепе пĕрле Якур тете те Мускавра ĕçлетчĕ. Эпĕ икĕ уйăхлăх курсран лайăхах вĕренсе тухрăм, 7 станока харăс ĕçлеттерме хăнăхрăм. Темле майпа Якур тете мана шыраса тупнă, ман пата килчĕ, каярах атте те пычĕ. «10 ятак çĕр панă ялта, Лисук йăмăкупа инкӳ ĕçлесе ĕлкĕреймеççĕ. Анна, санăн яла каймалла, акă 50 тенкĕ укçа тата çул çине билет», – терĕ вăл. Эпир аттене итлеме вĕреннĕ, питех те каяс килмест инке патне, Канаша çитиччен çул тăршшĕпех йĕрсе килтĕм.

Çав çул тырă ăнса пулнă, пăри, вир вырмалла. Инкен пилĕк пӳрни те шыçса кайнă, Лисук йăмăкпа выратпăр, турттармалла – лаша çук, тăвансем пулăшрĕç.

Качча кайса ссылкăран хăтăлтăм

1934 çул... Аттене Мускавра шыраса тупнă, Инçет Хĕвел тухăçне ссылкăна ăсатнă. Ялта та пире пăлхатма пуçларĕç, ссылкăна хăвалаççĕ. Манăн вара Катек ялĕнчи Наперсткина, салтакри каччăна, хăварса ялти Кошкина качча тухма тиврĕ. 19 çултискер ссылкăран çапла хăтăлса юлтăм. Кĕлетрен качча кайрăм. Мăшăрпа иксĕмĕр Шăмăршă вăрманĕнчен çăка турттарса пӳрт турăмăр, паянхи кун та ялта çав пӳрт ларать. 1937 çулта Лена, тепĕр çултан Лариса, 1940 çулта Саша ывăл, 1943 çулта Олимпиада çуралчĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсенчен виççĕшĕ вилнĕ. Питех те йывăр хăвăн чĕппӳсене юлашки çула ăсатма. Аслă хĕр Лена çеç пурăнать Шупашкарта.

Паянхи кун

Паймин хушамата эпĕ Треньел шкулĕнчи музейре тĕл пулнă. Виçĕ пĕр тăван иккĕмĕш тĕнче вăрçине кайса çухалнă. Анна Леонтьевнăн Лиза йăмăкĕ сăвăç, наука кандидачĕ, учительница. Геннадий Пласкин çыравçăн мăшăрĕ пулнă, 40 çула çитичченех çĕре кĕнĕ. Мĕн чухлĕ тăван пулнă унăн, пурте пиртен уйрăлнă, 4 ывăл-хĕрĕнчен пĕр 65 çулти хĕрĕ çеç пурăнать. Олимпиадăна (1943 çулта çуралнăскерне) мăшăрĕ тискеррĕн хĕнесе вĕлернĕ,

паянхи кун Анна аппа унăн хĕрĕпе, Таньăпа, пурăнать. Упăшки те, Иван Максимович Кошкин, вăрçăран питех те йывăр аманса таврăнать, 1945 çулта, 33 çулти çын çĕре кĕрет. Мĕн чухлĕ асап курнă çамрăклах, миçе çывăх çынна пытарма тивнĕ унăн, кулак хĕрĕ тесе мĕн чухлĕ сăмах илтнĕ. Тивĕçлĕ ятсем те, хаклă парнесем те, пысăк пенси те тивĕçмен ăна. Калаçу вĕçĕнче хăй çаплах пĕтĕмлетрĕ: «Хурлăх курмах çуралтăм пулĕ эпĕ çак çĕр çине».

Вăхăт сисĕнмест, çулсем те кĕрхи çумăр пĕлĕчĕсем пек хăвăрт шуса иртеççĕ. Синкерлĕ репресси çулĕсенче сăпкари ачасем пулнисем те паянхи кун сахал юлнă. çав вăхăтра тĕреклĕ хуçалăхпа пурăннă нимĕн айăпсăр миçе хресчен çемйине тăван ялĕнчен пин-пин çухрăма ссылкăна ярса ватти-вĕтти таранччен мĕн чухлĕ пĕтернине кам шутланă? Пĕр пĕчĕк ялтан тытăнса çĕршыв таранччен шар курнă çынсен шутне илнĕ статистика та çук.

Вăхăта вăраха ямасăр çавăн пек çынсемпе вĕсен çемйисем çинчен çырнă уйрăм кĕнеке тухасса шанас килет. Вĕсем çинчен ялсенче-хуласенче пирĕн хыççăн пурăнакансем те пĕлччĕр.

Маларах асăннăччĕ ĕнтĕ, 1929–30 çулсенче партипе Совет органĕсем çĕр-шывĕпех кĕске вăхăт хушшинче колхозсем йĕркелесси çинчен директивлă документсем йышăннă. Çӳлтен антарнă хушусене пурнăçлас пирки яваплăхĕ вара ял Канашĕсен председателĕсем çине тиеннĕ. Ялсенчи чухăнсен комитечĕсемпе пĕрле выränти Совет органĕсенче ĕçлекенсенсен пуянрах та тĕреклĕ хресчен хуçалăхĕсене кулаксен шутне кĕртсе, вĕсен çемйисене килĕ-çурчĕсенчен кăларса, пурлăхне туртса илнĕ çĕре хутшăнма тивнĕ. Чухăнсен комитечĕн членĕсем хăйсен тивĕçне шалу илмесĕр, çӳлтисен умĕнче явап тытмасăр пурнăçласа пынă пулсан, ял Канашĕнче ĕçлекенсен вара – пачах урăхла.

Колхоз аталанса пырассине тӳреммĕн хутшăнмасть, кулаксемпе вĕсен эшкерĕсене кăклас пирки нимĕнле мера та йышăнмасть тесе çӳлти органсем патне çăхав çитерсен, вăл вăхăтра ял Канашĕн председателĕ хăй

ларакан пуканĕпе кăна мар, ирĕклĕхпе е пурнăçĕпе те сывпуллашма пултарнă. Ку вăл – пĕр енчен илсе пăхсан. Тепĕр енне илсе пăхăпăр. Хисеплĕ вулаканăм, лартса пăх халь çак председатель вырăнне хăвна, вара пĕр-пĕр комиссипе пĕрле ялти кӳршĕ-аршă, тăван-пĕтен кил çуртне ухтарса, выльăх-чĕрлĕхне хăваласа, пурлăх-туприне тустарса тух. Çакăн хыççăн вĕсем сана мĕнле куçпа пăхнине каламасăрах паллă. Кун пек пархатарсăр ĕçе ун чухне те, халь те кашни çын пултараймасть. Ахальтен мар пуль ĕнтĕ ялсенче çакăн пек политикăпа хресченсем кăмăлсăр пулнă, Совет органĕсенче ĕçлекенсене тапăннă, кил-çурчĕсене вăрттăн вут тĕртсе çунтарнă тĕслĕхсем пулнă, хăш-пĕр çĕрте пăлхавсем çĕклени те çак сăлтавпах çыхăннă.

Çакăнта эпĕ Анна Тимофеевна Воробьева мана каласа панă пĕр тĕслĕх çинче чарăнса тăрасшăн. Унăн ашшĕ, Тимофей Васильевич Васильев, 1928 çулта Треньел ял Канашне пĕтерсе Тăрăн ял Канашĕпе пĕрлештерсен, ял Канашĕн председателĕн пуканне йышăнать. Тепрер çул иртсен райĕçтăвком хушăвне пурнăçлас тĕллевпе вăл Треньелĕнчи чухăнсен пухăвне колхоз йĕркелес ыйтупа хутшăннă. Тăрăна каялла киле çĕрлене юлса тăрантаса кӳлнĕ лашапа Треньелĕнчен тухнă чухне куштансем ăна пăшалпа хыçалтан пенĕ. Тилхепене пĕрре туртса илсе, тепре лашана пушăпа çунтарса илнĕ хыççăн вăл çĕмрен пек тапса сикнĕ çĕрлехи çулпа çак ялтан килелле.

Тепĕр тĕслĕх. 1933 çулхи хĕлле Т.В. Васильев çемйи каçпа сывăрма выртнă. Çемье пуçĕ тĕтĕм шăршине сиссе çурçĕр варринче ура çине сиксе тăрать. Пӳртрен алкумне тухсан, унта çулăм явăннă, çурт-йĕре хыçалти лупас енчен вут-кăвар хыпса илсе, пурăнакан çурт çинелле куçса пынă. Чӳречене çĕмĕрсе аслисен малтан ачасене, унтан пӳртри япаласене урама кăларма тивнĕ. Пушар тухас сăлтавĕ кунта курайман çын вут тĕртнипе çыхăннă – çавăн пек пĕтĕмлетӳ тунă Васильевсем те, ял çыннисем те. Вутра, паллах, кил хуçин çурт-йĕр, хуралтăсем, тупри те кĕлленнĕ, юрăхсăра тухнă.

ПАРТИПЕ СОВЕТ ОРГАНĔСЕМ ТĔН ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕНЕ ХИРĔҪ ПУҪАРНĂ ЮХĂМ

1929 ҫулта ҫӳлтен вырăнти Совет органĕсене директива ярса панă, ун тăрăх тĕн организацийĕсем Совет влаҫне хирĕҫ тăракан, халăх хушшинче хăй витĕмĕпе ун ятне варалакан вăй шутланса тăраççĕ. Ҫак директивăна вырăнти Совет органĕсем хăйсем мĕнле ăнланнă тата пурнăҫлама пултарнă таран чиркӳсене тата мечетсене хупас пирки саккуна пăсса, тĕн организацийĕсенче ĕҫлекенсене хирĕҫ репрессилле мерăсем йышăнма тытăнаççĕ. Ҫакăн хыççăн Чăваш Республикинчи пичет органĕсем те хаҫатсен страницисенче ҫав вăхăтра ĕҫленĕ тĕн организацийĕсене кĕске вăхăт хушшинче хупас пирки чĕнсе ҫыраççĕ.

РСФСРти ВЦИКпа СНК 1929 ҫулхи ака уйăхĕн 8-мĕшĕнче «Тĕн пĕрлешĕвĕсем ҫинчен» йышăннă постановлени тухсан, чиркӳсемпе мечĕтсене хупас ыйтăва малтанхи вăхăтра хулари тата ялти халăх хăй ирĕкĕпе татса панă теме пулать. Анчах та 1930 ҫулхи кăрлач уйăхĕнче тĕн пĕрлешĕвĕсене талккăшпех халăхран, турра ĕненекенсен шухăшне ыйтмасăрах хупма тытăнаççĕ. Тепĕр икĕ уйăхран Чăваш АССР территорийĕнче 16 православи храмĕ кăна хупăнмасăр юлнă. Кăмăлсăр юлнă турра ĕненекенсем, уйрăмах пысăк тĕн уявĕ Мункун ҫитсе пынă май, Чăваш республинчи Совет органĕсенчи яваплă вырăнта ĕҫлекенсем патне чиркӳсене уҫма ыйтса пыракансем те, ҫыру ҫыракансем те ун чухне сахал мар пулнă. Ҫавăнпа та ЧАССР Тĕп ĕҫтăвкомĕ районсенчи тата хуласенчи ĕҫтăвкомсене чиркӳсене саккуна пăхса хупнине тĕрĕслеме циркуляр ярса панă. Ҫак циркуляр тăрăх комиссисене 7 кун хушшинче тĕрĕслев ирттерсе саккуна пăсса чиркӳсене хупнă тĕслĕхсем тăрăх тивĕҫлĕ мера йышăнма хушнă. Асăннă комиссисен тĕрĕслевĕпе саккуна пăхăнса 36 чиркĕве хупнă, турра ĕненекенсемпе ялти (хула) ҫыннисен шухăшне ыйтмасăрах, тĕн ҫурчĕсем кивелнĕ, юхăннă тесе тата ытти сăлтава пула

вырăнти органсем саккуна пăсса 72 чиркĕве хупнă, 100 чиркӳ священниксем пулманнипе ĕçлемен. Çавăн чухлĕ тĕн çыннисем ĕçлеменнин сăлтавĕсем тĕрлĕрен пулнă: вĕсене кулаксен шутне кĕртсе арестленĕ, ссылкăна янă, персе пăрахнисем те пулнă (тĕслĕхрен: Улатăр тĕрминче кăна тĕн учрежденийĕсенче ĕçленĕ миçе священникĕн, муллан пурнăçне татнă), пысăк налук хунипе те çыхăннă, налук тӳлейменнисене вăрман хатĕрлеме янă.

Малтанах палăртнăччĕ ĕнтĕ, Патăрьел районĕнчи Тăрăн чиркĕвĕ района кăна мар, ытти ялла районсенчи чиркӳсен хушшинче сăваплă, чи ваттисенчен пĕри шутланса тăрать. Ăна хупас пирки ял çыннисен, çавăн пекех çак прихута кĕрекен турра ĕненекенсен шухăшне те тĕпе хуман курăнать. Райĕçтăвком представителĕ чиркĕве хупмалла тесе калани ял ĕçтăвком председателĕпе секретарĕшĕн саккун вырăннех шутланнă пуль. Паллах, вĕсем çӳлерех тăракан Совет тата парти органĕсен политикипе килĕшмесĕр тăма пултарайман.

Аяларах Тăрăн ял ĕçтăвкомĕн протоколĕ çинче чарăнса тăрăпăр.

ПРОТОКОЛ
расширенного Пленума Туруновского Сика Б-Батыревского района
от 23 января 1930 года.
Председательствует: Васильев Т.В.
Секретарь: Петров П.П.

Повестка дня:

... 2. О вреде церкви: – докладчик Ляукин А.О.

Постановили: Существование церквей при социалистическом переустройстве деревни является одним из крупных тормозящих моментом для нас, для жаждущих просвещения масс. Ради ускорения темпа коллективизации признать излишней существование церкви при с.Туруново, а потому закрыть ее под клуб. Резолюция принимается единолично.

Маларах асăннă директивпа килĕшмесĕр чиркӳ-мечетсене хупса тухнăшăн, вĕсенче усă курмалли хатĕрсене тĕп тунăшăн, тĕн пĕрлешĕвĕсенчен укҫа пуҫтарнăшăн район (хула) ĕҫтăвкомĕсенче яваплă выränта ĕҫлекенсене, ялсенчи Канаш председателĕсене 40 ытла ҫынна административлă йĕркепе явап тыттарнă. Хăш-пĕрне судпа та айăпланă. Ҫакăн хыççăн 1930 ҫулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 1-мĕш тĕлне 200 ытла тĕн организацийĕсем (вĕсен хушшинче Тăрăн чиркĕвĕ те) ҫĕнĕрен ĕҫлеме тытăнса каяççĕ. Чиркӳсене саккуна пăсмасăр хупас пирки тĕрĕслесе тăма ЧАССР Тĕп ĕҫтăвкомĕн Президиумĕ ҫумĕнче ятарласа комисси йĕркеленĕ. Чиркĕве хупас ыйтăва прихута кĕрекен ялсенчи ҫынсен пухăвĕсенче татса панă, пĕтĕм ялти суйлавҫăсем кун пек чухне чиркӳ вырнаҫнă ял ҫыннисен шухăшне тĕпе хунă. Ҫавăн хыççăн анчах ЧАССР Тĕпĕҫтăвком Президиумĕнче ҫирĕплетнĕ хыççăн чиркӳ хупăннă тесе шутланнă. Ҫапах та влаҫра ларакансем тĕн организацийĕсемпе чиркӳсем, унта ĕҫлекенсем революци идейисене хирĕҫ пыраççĕ тесе, тĕн службине ирттермелли ҫуртсене хупас пирки 30-мĕш тата 40-мĕш ҫулсен пуҫламăшĕнче ҫĕнĕрен кампани пуҫарса яраççĕ. Статистика кăтартăвĕсем тăрăх, Чăваш ен территорипе илсен 1931–1935 ҫулсенче 63 чиркӳ, 1936–1940 ҫ.ҫ. – 121, 1941–1942 ҫ.ҫ. – 49 чиркӳ хупнă. Ҫапла вара 1943 ҫула республикипе те 6 чиркӳ анчах: Иваньково-Ленино (Улатăр районĕ), Шăхран (Канаш), Гарт (Пăрачкав), Мăнҫырма, Патти разъезчĕ (Вăрмар), Тĕмер (Елчĕк районĕ) ялĕсенче ĕҫленĕ. Чылай чиркĕве хупнине пула унта усă курнă чиркӳ пурлăхне вырнаҫтарас пирки чăрмав сиксе тухнă. РСФСР Финанс Комиссариачĕ ятарлă циркуляр кăларнă тăрăх патшалăх фондне кĕрекен чиркӳ службинче усă куракан япаласене, тумтирсемпе иконсене Ленинград хулине ярса памалла пулнă. Тĕслĕ металпа чиркӳ чанĕсене «Рудметалл-торг» предприятине ăсатнă. Ылтăн, кĕмĕл тата хаклă йышши чулсенчен тунă япаласене РСФСР Финанс

комиссариачĕн уйрăм пайне сутма панă. Патăрьел районĕнче Тăрăн ялĕнчи чиркĕве ытти ялсенче хупнă хыççăн юлашкинчен 1941 çулта хупнă. Ваттисем каланă тăрăх, пĕчĕкрех чиркӳ чанĕсене антарнă хыççăн вăл вăхăтра ял Канашĕн председателĕ пулса ĕçленĕ М.Д. Крылов тăрăшнипе пысăк чанне хăй вырăнĕнчех хăварттарнă, иконсемпе чиркӳ службинче усă курмалли япалисене пĕр склада пуçтарса хунă. Чиркӳ çуртне колхоза ертсе пыракансем тырă вăрлăхне хумалли склад вырăнне усă курма тытăннă. Тепĕр тăватă çултан, чиркӳ çĕнĕрен ĕçлесе кайсан, чиркӳри иконсемпе чансем тата ытти усă курмалли хатĕрсем хăйсен вырăннех йышăннă: пачăшкăсемпе турра ĕненекенсем турă уявĕсемпе ытти кунсенче вĕсемпе усă курнă. Аяларах Патăрьел районĕнчи ялсенче чиркӳсене хăш çулсенче хупни тата уçни çинче чарăнса тăрăпăр.

	Ял ячĕсем	хупнă	регистрациленĕ
1.	Алманчă	1936	2000
2.	Пăлапуç Пашъел	1940	1993
3.	Патăрьел	1940	1990
4.	Аслă Арапуç	1938	1990
5.	Аслă Чемен	1939	1991
6.	Çĕнĕ Ахпӳрт	1937	1991
7.	Нăрваш-Шăхаль	1940	
8.	Сител		1991
9.	Сăкăт	1936	1991
10.	Турхан	1936	1989
11.	Тури Туçа	1937	1990
12.	Тăрăн	1941	1945

ЧАССР Совнаркомĕ 1944 çулта çу тата çĕртме уйăхĕсенчи ларăвĕсенче чиркӳсене уçма ыйтса панă 23 заявление пăхса тухса, вĕсенчен 13-не СССР Совнаркомĕ урлă Вырăссен православи чиркĕвне çирĕплетме ярса панă. Çав çулхинех, Правительствăн уйрăм йышăнăвĕ тăрăх, патшалăх органĕсем ирĕк па-

нипе тĕн организацийĕсем чиркӳсем, çурт-хуралтă тавраш тума, тĕн шкулĕсем уçма, транспортпа усă курма, тĕн çинчен литература кăларма май тупаççĕ.

Çӳлерех асăннă Тăрăн ялĕнчи чиркĕве 1945 çулта регистрациленĕ пулин те, ваттисем каланă тăрăх, 1944 çулта çак чиркĕве уçса унта тĕн службине ирттерекенсем турра ĕненекенсене йышăнма тытăннă, священниксем турă праçникĕсенче кĕлĕсем ирттернĕ. Çапах та аллăмĕш çулсен вĕçĕнче патшалăх политикин тĕн организацийĕсене хирĕç çĕнĕрен юхăм пуçланса каять. Вырăс православи чиркĕвĕсен Совечĕпе унăн вырăнсенчи уполномоченнăйĕсем тĕн организацийĕсем çинчен йышăннă саккуна пăхăннине тĕрĕслесе тăрас вырăнне айккинчен сăнаса тăма çеç тытăнаççĕ. Парти е комсомол ретĕнче тăракансен венчете тăма, ача тĕне кĕртнĕ чухне хутшăнма юраман, коммунистсемпе комсомолецсем чиркĕве пĕр-пĕр сăлтавпа пырса кĕнине пĕлсен, вĕсем çине турра ĕненме тытăнман-и ку тесе районти партипе Совет органĕсен ертӳçисем, атеистсем шанмасăртарах пăхнă. Чиркӳсене хирĕç атеизм уйрăмах 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче çивĕчленсе кайрĕ. Партипе Совет органĕсем тĕне хирĕç пуçарса янă кампанинче уйрăмах пичет органĕсен вăйăпе анлăн усă курнă, çав енĕпех ялсенче час-часах кино кăтартатчĕç, лекцисем вулатчĕç. Астăватăп-ха, çав çулсенче эпир, шкулта вĕренекен ачасем те, тĕне хирĕç пуçарса янă политикăна туяттăмăр. Пирĕн класра турра ĕненет тесе каланинчен пĕр хăрамасăр Анюкка ятлă хĕрача анчах мăйĕ çине хĕрес çакса çӳретчĕ. Хăйĕнчен куштанрах ачасем йĕкĕлтесе кулнине вăл пĕр хирĕçмесĕр-чĕнмесĕр ирттерсе яратчĕ. Унăн йăмăкĕсемпе шăллĕ хăйсен малашнехи пурнăçне тĕн енĕпе çыхăнтарчĕç. Тепĕр тĕслĕх аса килет тата. Сакăр вуннăмĕш çулсен пуçламăшĕнче манăн юлташăн анийĕшĕ вилсен, тĕне кĕнĕскерне масар çине илсе кайиччен православи чиркĕвĕн йăли-йĕркипе ăна тупăкпа Тăрăн чиркĕвне йăтса кайрĕç. Юлташ вара хăй коммунист пулнă май ыттисемпе хутшăнаймарĕ,

кĕлĕ пĕтиччен урамра кĕтсе тăма аван мар тесе айккине пăрăнчĕ. Халăхпа пĕрле масар çине кайнă чухне анчах хутшăнчĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60–70 çулĕсенче, влаçсем тĕне хирĕç пуçарнă кĕрешĕве пăхмасăр, халăх турра ĕненме пăрахман: партипе Совет органĕсенче тата выpăнта ĕçлекен пуçлăхсем вăрттăн та пулсан хăйсем пурăнакан выpăнтан айккинерех вырнаçнă чиркӳсенче венчете тăнă, ачисене тĕне кĕртнĕ тĕслĕхсем пулнă. Тăpăн ялĕнчи чиркĕве çывăхри ялсенчен пĕр-пĕр колхоз, учреждени ертӳçи е шкул директорĕ ача тĕне кĕртме килсен, районти партипе Совет органĕсене ертсе пыракансем пĕлме пултарнă. Ун пек чухне партбилетпа та, пуçлăх пуканĕпе те сывпуллашасси инçех пулман вĕсен. Патшалăха ертсе пыракансен политики мĕнле майпа улшăнса пырсан та, чăваш халăхĕ ĕлĕк-авалтан пыракан йăли-йĕркине тытса пынă. çавăн пек пысăк чиркӳ уявĕсенче: Çăварни, Мăнкун, Троица-Çимĕк тата ыттисенче те – ватти-вĕтти савăннă.

Чиркӳ праçникĕсем çулталăк хушшинче самаях шутланса тăpаççĕ пулин те, çак çӳлерех асăннă пысăк уявсене православи тĕнне ĕненекенсем чиркӳсене хупсан та тытса пыма пăрахман. Мăнкун вара пур уявсен уявĕ тесен те йăнăшмастăп пуль тетĕп. Мĕншĕн тесен вăл православи тĕнне ĕненекенсен чи пысăк та савăнăçлă уявĕ. Ăна ĕлĕк-авалтан пирĕн мăн асаттесем пăхăнса пурăннă. Хамăр ача вăхăтне аса илес пулсан, çак куна ял çыннисем тĕплĕн хатĕрленетчĕç. Кашни çемье хăй кил-çуртне тасатса илем кĕртетчĕ, ватти-вĕтти таса та çĕнĕ çи-пуç, кĕпе-йĕм хатĕрленĕ, мунча хутса кĕнĕ. Аслисем ача-пăча валли ярăнма урама вĕрлĕкрен таканкки (хăш-пĕр районсенче чуччу теççĕ) туса паратчĕç. Мăнкуна хуплу-кукăль, ытти çимĕçсем пĕçернĕ, сăра вĕретнĕ, çăмарта хĕрететчĕç. Шăмат кун каçхине çынсем çимĕçсене Тăpăн чиркĕвне илсе кайса светит туса килнĕ. Çак пысăк уява кӳршĕ районсенчи ялсенчен кăна мар, Тутар Республикипе Ульяновск облаçĕсенчен те чăвашсем йышлăн килетчĕç. Çурçĕр

çитсен çынсем чиркӳрен урама тухса чиркӳ йĕри-тавра утса çаврăнаççĕ. Пачăшкă: «Христос чĕрĕлнĕ!» – тесен: – «Чăн чĕрĕлнĕ!» – тесе савăнăçлăн хуравлаççĕ. Мăнкун эрнипех вара православи тĕнне ĕненекенсем пĕр-пĕрне çак сăмахсемпе саламлать. Хальхи вăхăтра çак уявра халăх хушшинчи хăш-пĕр йăласене тытса пымаççĕ те пуль. Хам çамрăк чухнехине аса илнĕ май пирĕн çемьере çичĕ ача тараннчен пулнипе килти хуçалăхра выльăхсем те йышлă усранă. Мăнкунра кӳршĕ-аршăсем килсен анне вĕсене кукăль, çăмарта, ытти çимĕçпе хăналатчĕ, шерпет пек сăра ĕçтеретчĕ. Малтан килнĕ ачана вара минтер çине лартатчĕ те: «Шăп лар, хур чĕпписем лайăх тухчăр», – тетчĕ. Çак аслă уяв эрни пуçлансан Мăнкун речĕ пуçланать: тăвансем пĕр-пĕрин патне хăнана эрнипех çӳретчĕç. Эпир, ача-пăчасем, атте-анне çак эрне хушшинче вăрçманнине кура ытларах та ашкăнаттăмăр. Пĕрре çапла хăнасем пирĕн пата килмелле чухне эпир (тахăш айванĕ) килте пӳрт алăкне уçсах хăварнă. Урамра выляса çӳренĕ вăхăтпа усă курса, картишĕнчен сысна пӳрте кĕрсе кайнă та кравать айне пысăк тирĕксемпе лартса хунă кукăльсемпе тата ытти çимĕçсемпе хăналаннă. Анне килсен патак лекессинчен шиклентĕмĕр пулин те, вăл пире уншăн вăрçмарĕ. Хăнасем киличчен апат-çимĕçе майлаштарса сĕтел çине вырнаçтартăмăр.

Маларах эпĕ асăннăччĕ ĕнтĕ, Мăнкун пекех пысăк пĕлтерĕшлĕ чиркӳ праçникĕ – Çимĕк (Троица). Хăш-пĕр ялсенче халь вăл ял кунĕпе пĕр кунта килет. Троицăна Мăнкун хыççăн тепĕр аллă кунран паллă тăваççĕ. Чиркӳре кĕлĕрен тухсан, ял халăхĕ кăнтăрларан масар çине вилнĕ тăванĕсене асăнма каять, вил тăприйĕсем çине пырса асăнса ĕçеççĕ-çиеççĕ. Тепĕр чухне çак кун масар çинче ӳсĕр çынна та тĕл пулма тивет.

Шухăшăма малалла шутарса, Тăрăн ял тăрăхĕнчи виçĕ ял масарĕ пирки кĕскен те пулин чарăнса илес тетĕп. Темиçешер ĕмĕр каялла, ялсем пуçланса кайсан, уйрăм хуçалăхсем хальхи пек урамсемпе ларса тухман. Тăрăн ялĕ хальхи ял варринче чиркӳ ларакан вырăнтан

айккинелле сарӑлса пынӑ тесе калама пулать. Чиркӗве 1747 çулта туса лартсан, Тӑрӑнти тата çывӑхри ялсенче пурӑнакансене тӗне кӗменнисене ватти-вӗтти таранчченех тӗне кӗртме тытӑннӑ. Каярах вара вилнисене чиркӳре кӗл тусан масара илсе кайман, тен ун чухне ятарласа масар уçман та – ял хушшинчех, чиркӳрен аякра та мар пытарнӑ. Ваттисем каланӑ тӑрӑх, иртнӗ ӗмӗрӗн иккӗмӗш çурринче чиркӳрен инçе те мар хӗвел анӑç енче вырнаçнӑ çырма ишӗлсе пынӑ май вырӑнвырӑнпа вилнӗ çыннӑн шӑммисем тухнӑ. Йывӑçран (тен юман йывӑççинченех) валашка евӗр ӑшӗ хӑвӑл тупӑк та пулнӑ теççӗ. Апла пулсан, çак малтанхи масар çине XIX-мӗш ӗмӗрте те вилнӗ çынсене пытарнӑ. Иккӗмӗш масар çак ялтах паянхи кун ларакан икӗ хутлӑ шкултан кӑнтӑр енче, шкул пахчи вырӑнӗнче пулнӑ. çак вырӑнта XX ӗмӗр пуçламӑшчен масар çине илсе килсе пытарнӑ пурнӑçран уйӑлнисене.

Паянхи масар Тӑрӑн ялӗнчен пӗр 300–400 метрта çурçӗр енче вырнаçнӑ. Кивӗ масар хальхи масар территорийӗнчи кӑнтӑр тата хӗвел анӑç пайне йышӑнать. Унти хӗрессем çӗрсе пӗтнӗ, йывӑççем анчах ӳсеççӗ. Ваттисем каланӑ тӑрӑх, кивӗ масар çине малтан Мидак Санюкне хальхи масар кӑнтӑр пайне 1924-мӗш çулта пытарнӑ. 35 çултан хӗвел анӑç енчен хӗвел тухӑç енне куçса çӗнӗ масар уçнӑ, унта малтан Петров Микиша 1959 çулта пытарнӑ. Пӗр-икӗ çул каялла масар йӗри-тавра тытнӑ картасене ял çыннисем юсаса тирпей-илем кӗртрӗç, хӗллехи сивӗ вӑхӑтра кӗрсе ӑшӑнма, çулла тата кӗркуннехи çумӑртан хӳтлӗх, вилене пытарнӑ чухне кирлӗ хатӗрсем хума кипӗчрен купаласа пысӑк мар кӑна çурт хута янӑ. Ку пархатарлӑ ӗçе ял çыннисем хӑшӗ строительство материалӗпе тивӗçтерсе, пӗрисем укçа енчен пулӑшса, теприсем çурта кӗмелле тӑвичченех хӑйсем вӑй хурса хутшӑнчӗç.

Ваттисем каланӑ тӑрӑх, Йӑлӑмра пурӑнакансем ӗмӗр-ӗмӗр çурӑ каялла пурнӑçран уйӑлса кайнӑ тӑванӗсене Треньел ялӗ тӗлӗнче Ыхра Çырмин (юхан шывӗн) кӑнтӑр енчи сӑрт çине пытарнӑ. Виçӗ-тӑватӑ çул

каялла çак юханшыв çыранĕ ишĕлсен çын кĕлеткин уйрăм шăммисем тухни çинчен «Хыпар» хаçатра та çырнăччĕ. Хальхи масар ялтан тухсан 200–300 метр çурçĕр-хĕвел анăç енче Канашран Патăрьелне килекен асфальт çултан инçе те мар вырнаçнă. Ку ялăн кивĕ масарĕ хальхи масар территорийĕн хĕвел тухăç пайĕнче вырнаçнă, хĕвел анăç енне куçса пырать. Хальхи карта тытнă масар территорийĕнче 1952 çулта, çĕнĕ масар уçсан, малтан унта Рубцов Иван Александровича пытарнă. Ку масар территорийĕ 2000-мĕш çулсенче пытарнă çынсемпе тулнипе 2009 çулта карта тытнă масар çумне хĕвел анăç енне çĕнĕ масар уçрĕç. Унта малтан Цветков Емельян Дмитриевича пытарнă. Масар çурчĕ кивелнĕ пирки ялта тата Мускавра пурăнакан предпринимательсем тăрăшнипе çавăн пекех ялти хастарсем хутшăнса 2011 çулта кирпĕчрен хăтлă кăна пысăк мар пӳрт лартса хучĕç. Çак ырă ĕç тăвакансене 2012 çулхи Тăрăн ял тăрăхĕнче ирттернĕ ял кунĕнче хушаматран-ятран асăнчĕç, вĕсене хисеп хучĕсемпе парнесем парса чысларĕç.

Треньелсен масарĕ ĕлĕкхи те, хальхи те, ялăн çурçĕр-хĕвел тухăç енче пĕр 500–600 метрта вырнаçнă. Ĕлĕкхи масар вырăнне паян пурăнакансем пĕлекен çук. Ун хыççăнхи масар пуçĕ – Алексеев Алякка. Шап-шурă кĕреçе сухаллă та кĕрнеклĕ ватă вăрçă хыççăн вилнĕ. Çĕнĕ масар çинче хĕллехи тăманран, çуллахи-кĕрхи çумăртан хӳтлĕх – кирпĕчрен хăпартнă пӳрт пур, сивĕ чухне е йĕпенсен типĕнме кăмакана хутса яма пулать. 1994 çулхи июнь уйăхĕнче Н.А. Кошкин тăрăшнипе сарнă асфальт çул ялтан масар патнех çитет, тепĕр виçĕ çултан унти ретсем тăрăх та асфальт сарнă. Масар йĕри-тавра тĕпрен юсаса тимĕр сеткăран карта тытнă, унăн территорине тасатса-тирпейлесе тăраççĕ ял çыннисем. çак юлашки масар çине 2001 çулта малтан Пчельников Максим Петровича (10.09.1920–06.12.2001) пытарнă. Çак çĕнĕ масар уçнă çĕре 1997 çулта Варнава митрополит та хутшăннă, ăна кĕлтуса тасатнă (святить тунă). Асăннă виçĕ масар çинче те вилнисене кашни эртел хăй пĕр йĕрпе, е пĕр вырăнарах вырнаçтарса пырать.



Митрополит Варнава Треньел масарĕ çинче.

Чиркӳн аслă уявĕ Троица çинчен пуçланă сăмахăма малалла тăсса кайнă май çавна палăртса хăварасшăн. Иртнĕ ĕмĕрĕн 30–40-мĕш çулĕсенче пирĕн таврари ялсенче те çулсерен каç енне сулăнсан малтанах палăртса хунă выраăна: хир енчисем ял хĕрринчи çаран çине, вăрман çĕррисем – вăрман хĕррине е уçланкăна пуçтарăннă. Тăрăн ял çамрăкĕсем вăрçăччен тата вăрçă хыççăн ваййа чиркӳ патне тухнă. 50–60 çулсенче Тăрăнпа Йăлăм çамрăкĕсем икĕ ял хушшине пуçтарăнса ваййă ирттернине манпа пĕр çулаллисем те лайăх астăваççĕ. Пиртен аслăраххисем ваййă картине тăрса юрланине, мăшăр каччăсемпе хĕрсем ташланине эпир шкулта вĕренекен ача-пăчасем ăмсанса пăхса тăраттăмăр. Епле хитреччĕ тĕрлĕрен тĕслĕ икĕ аркăллă кĕпе тăхăннă, умне тĕрленĕ чечеклĕ саппун çакнă хĕрĕсем. Вĕсен кăкăрĕсем çине çакнă теветсен кĕмĕл тенкисем ташланă май чăнкăртатса янранă сас купăс çемĕпе хутăшса, каçхи таврана сарăлса илем кӳретчĕ. Ваййă пĕтсен мăшăр çамрăксем тĕрлĕ еннелле васкамасăр саланатчĕç.

Çак чăннипе те савăнăçлă вăхăта чăвашсен классикĕ К.В. Иванов хăйĕн вилĕмсĕр «Нарспи» поэминче, А. Миттов художник хăйĕн картининче питĕ лайăх сăнласа панă. Вăйăа мĕн ĕлĕкрен пирĕн тăрăхри чăвашсем кăна мар, Хусан, Чĕмпĕр, Самар тата ытти кĕпĕрнере пурăнакан пирĕнпе пĕр чĕлхепе калаçакан, пирĕн йăла-йĕркене тытса пыракан чăвашсем те кашни çулах тухнă. Вĕсен вăйăа юррине вырăс тата ют çĕршыв çыравçисемпе çул çӳревçĕсем курса-итлесе тĕлĕннĕ.

Вырăссен паллă писателĕ Н.Г. Гарин-Михайловский Самар кĕпĕрнинчи чăваш ялĕсенче пулнă май вăйăа тухнă чăваш çамрăкĕсем çине пăхса тĕлĕннĕ. Çакăн хыççăн вăл хăйĕн «В сутолоке провинциальной жизни» очеркĕнче çапла çырнă. Вăл çырнă йĕркесене вырăсларан куçармасăрах вулакан патне илсе çитерес тетĕп.

«Подойдя, девушки взялись за руки, составили большой круг и начали петь: это было такое оригинальное пение и зрелище, какое я никогда не видал. То есть видел на сцене, в балете, в опере. Но это не был ни балет, ни опера, а жизнь.

Большой круг плавно и медленно двигался; девушки шли в пол-оборота, одна за спиной у другой. Один шаг они делали большой, останавливались и тихо передвигали другую ногу. На сцене это показалось бы, может быть выдумкой – а здесь же был естественен и непередаваемо красив этот хоровод молодых весталок...

Иногда громко поднималась песня среди аромата полей и улетала в небо, сливаясь там с песней жаворонка, нежная тихая песнь о промчавшемся...

Что оперы, что романсы?! Разве передадут они эту песнь народа, две тысячи лет сквозь всю ломку пронесшего с собой яркий образ прежней жизни. Разве можно выдумать такую песню.

Когда образовался круг, двое, разорвав его, отвели каждая в свою сторону концы круга, и все сразу опустились на землю. Они не то встали на колени, не то сели совсем. И вся эта гирлянда белых и красных цветов, все эти молодые глаза

так ласково, непринужденно и приветливо смотрели на меня. Унижения не было и следа – они только приветствовали меня, чужестранца.

Так две тысячи лет тому назад, может быть слушал какой-нибудь путник, в честь которого пели девушки, – путник, который попал на их и свой праздник. Так мог стоять и мой предок. И заколдованный песней, я видел теперь то, что скрыто от смертных...

Я пришел в себя и в ответ на их поклон снял свою шапку и, от всей души, проникнутый и сам приветом, уважением и признательностью, поклонился им. Я уехал, но долго еще перед моими глазами стоял нарядный луг с толпой языческих девушек, я все слышал их песен, и напев ее в моей душе так нежно звучал, что, право, я не принимаю, захватывало ли когда-либо что-нибудь так сильно, как эта промелькнувшая картина из давно забытой эпохи человеческой жизни».

Вырăс писателĕ авалхи чăваш халăхĕн пысăк чиркӳ уявне хăйĕн хайлавĕнче ытарлăн сăнласа панине эпĕ паянхи кунччен ытти писательсем çырнă произведенисенче вуласа курман. Вăл пĕр-икĕ ĕмĕр маларах мар, иртнĕ çулхи чăваш ялĕнчи пĕр вăйăра пулса, хăй курса тĕлĕннине хут листи çине ӳкернĕ пек туйăнать. Уйрăмлăхĕ, тен, çакăнта çеç: ĕмĕр каялла çамрăксем вăйăа тухнă чухне хальхипе танлаштарсан чылайăн та, чăнласах та чăваш тумтирĕсемпе, хĕрупраçсем ун чухнехи тĕрлĕрен эрешĕсене тăхăнса-çакса юрланăташланă. Çакă мар-и, чăваш халăхĕн авалтан паянхи куна çитнĕ хăйне евĕрлĕ искусствиĕ? Астăватăп-ха, иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче ялсенче вăйăа тухасси пачах путланса ларсан Шупашкартан «Уяв» фольклор ушкăнĕ Комсомольски районĕнчи Çĕрпӳел ялне килсе вăйă юррине çырса илсе радиопа пĕр кăларăмра юрласа панăччĕ. Çав юрра итленĕ май эпĕ хамăр çамрăклăха тавраннăн туйрăм, темиçе ĕмĕр тăршшĕ пынă чăвашăн ырă йăла-йĕрки çухалассине туйса чунăма тунсăх пусрĕ...

Иртнĕ ёмёрĕн 50–70 çулĕсенче Тăрăн–Йăлăм ялсенчи çамрăксем Троицăпа Тихвински уявĕсен хушшинче вăйă юррине çапла юрлатчĕç:

1. Кас суханне касмăттăм
Çиес килни пĕтерет.
Каçхи вăййа тухмăттăм
Тухас килни пĕтерет.

2. Каçма хутăм шыв çине
Шыв чӳхенсе тăмалăх.
Хĕрсем, юрлар юррине
Çын тĕлĕнсе тăмалăх.

3. И шыв юхать, шыв юхать
Шыв юхать те, чул юлать.
Шухăшлăр-ха, тантăшсем,
Ёмёр иртет, кун юлать.

4. – Утма ăçтан кăкарас?
– Çăка йывăç тĕпĕнчен.
– Савни сана ăçта курас?
– Каçхи вăййа тухсассăн.

5. Тăваткал çерем çĕр çырли
Çырли нумай, çĕр сахал
Атте-анне килĕнче те
Ырлăх нумай, кун сахал.

6. Çăмха ывăтрăм çӳлелле
Куç курмарĕ аннине
Çамрăк ёмёр иртнине
Сисеймерĕ вăйăра.

7. Сар хĕр анать шыв хĕрне
Сассипеле янратса.
Сасси акăш сасси пек,
Пĕвĕ Атăл хăмăш пек.

11. Куккук сиксе авăтать,
Вăрман хĕрри ян каять.
Сар хĕр сиксе вăй калать,
Хĕреслĕ урам ян каять.

12. Сикĕр-сикĕр шывалла
Шыв сирпĕнсе тăмалăх
Юрлăр халĕ юррине
Çын тĕлĕнсе тăмалăх.

13. Утăм та утăм ут кăшкар
Утсен ури айĕнче
Çинçе те пилĕк хура куç
Çын сăмаххи айĕнче.

14. Чĕппи те чĕппи чĕп курăк
Чĕп çимесĕр мĕн тутăр
Эпир çынни çаван пек
Çын çимесĕр мĕн тутăр.

15. Тарăн варта хур пусрăм,
Вăрă тесе ан калăр.
Юр пуçласа юрларăм,
Шухă тесе ан калăр.

16. Сар саппунна сарса çак,
Пиçиххине туртса çых.
Савни куртăр, савăнтăр,
Кĕвĕç куртăр, кĕвĕçтĕр.

17. Пăла шывĕ – тарăн шыв,
Чи тарăнни пилĕкрен.
Тăрăн хĕрĕ – сарă хĕр,
Сарă çӳçĕ пилĕкрен.

8. Сар хĕрĕн сарă саппун çук
Ирĕксĕрех çакать шур саппун.
Сар хĕрĕн ялта савни çук
Ирĕксĕр каять ют яла.

9. Чиркӳ тăрри ма çутă?
Уйăх çути çутăран.
Кĕçĕр хĕрсем ма шурă?
Шурă тутăр çыхнăран.

10. Ан авăт, куккук, хир урлă
Хир вăрман пек янрамасть.
Ан калаç, савни, ют хĕрпе
Ют хĕр ман пек калаçмасть.

18. Туллăм та тулăм тулашки
Тул кулачă юлашки.
Пирĕн те вăйă иртесси
Тихвинскинче юлашки.

19. Вăрман хĕрри йăс-пăслă,
Йăс пăсĕпе илемлĕ.
Тăрăн хĕрĕ лăс çӳçлĕ,
Лăс çӳçĕпе илемлĕ.

Киле кайнă чух юрламалла:

Çăка çулçи çиле май
Айтăр, хĕрсем, киле май.

Çак вăйă сăмахĕсене Патăрьел районĕнчи Тăрăнта пурăнакан Угасева Валентина Антоновнăран 2011 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче çырса илнĕччĕ.

1967 çулччен Йăлăмпа Тăрăн çамрăкĕсем вăййа икĕ ял хушшинчи лапам вырăна çерем çине тухатчĕç. Çакăн хыççăн Шупашкар енчен Ульяновск еннелле асфальт çул сарма тытăнчĕç. Йăлăмра çул сулахай енне



2010 çул.

хире-хирĕç çуртсем лартма пикенчĕç, çапла вара каярах Хĕветĕр Çитта урам пуçламăш çуртсенчен тытăнса Пăла енне тухакан Кĕпер урамĕ пулса тăчĕ. Пăла урлă хунă кĕпер 1969 çулта хута кайрĕ пулмалла. Тăрăн ял яш-хĕрĕ вăйăа Троицăпа Тихвински хушшинче ялăн кăнтăр енне Пăла хĕрринчи улăха тухма тытăнчĕ. 2010 çултан тытăнса тăрăнсемпе йăлăмсем «Олимп» спорткомплекс патне вăйăа ял кунĕнче тухаççĕ.

Каçхи вăйă çимĕкрен тытăнса утă уйăхĕн 12-мĕшчен (Питрав) пулса иртет.

1972 çулта эпĕ Совет çарĕнчен салтак тивĕçне пурнăçласа Питрав кунне киле çитрĕм. Килтисемпе калаçнă май, вăйăа тухасси пирки сăмах пуçарсан, вĕсем Тăрăнта тата çывăхри ялсенче вăйă вăхăчĕ иртсе кайни пирки пĕлтерчĕç. Вара эпĕ çав кунах 8 çухрăмра вырнаçнă Чăваш Ишек ялне кайрăм. Ишексем Комсомольски районĕнчи Хирти Выçли ял çамрăкĕсемпе пĕрле вăрман хĕррине вăйăа тухнă. Пысăк вăйă картине икĕ ял çамрăкĕпе пĕрле тăрса эпĕ те вĕсемпе пĕрле юрларăм-ташларăм, киле саланиччен вĕсемпе савăнтăм. Çавăнтан манăн пысăк ушкăнпа вăйă картине тăрса çамрăксемпе юрласа-ташласа савăнасси вĕçленчĕ. Хам умри малашнехи ĕмĕтпе çунатланса малалла вĕренес-ĕçлес шухăш тытса, эпĕ Уралти пысăк хулана çул тытрăм. Пирĕн ӳсĕмри çамрăксем çемьеллĕ пулса пĕтсен, ялсенче Сурхури, Çăварни, Çимĕк уявĕсене иртттересси хавшаса пыма пуçларĕ. Каярах вара 90-мĕш çулсенчи демократин пăтăрмахлă вăхăтĕнче чылай ялсенче вăйă тата халăхăн ĕлĕкрен пыракан уявĕсем вуçех пĕтсе ларчĕç. Çапах та, йывăр чирленĕ çынна ура çине тăратса лартнă евĕр, ырă йăлана çĕнĕрен чĕртсе ярса малалла аталантарса пырас тесе шухăшлакансем ялсенче пур-ха. Акă, Тăрăнта аслăрах çулхи арсем, çавăн пекех çак ял комитечĕпе хĕрарăмсен канашĕ 1988 çулта чăваш вăййине чĕртсе яма тĕллев тытнă. 24 çул каялла çак вăйă вара ун чухне те, паянхи куçпа пăхас пулсан та, питĕ лайăх иртнĕ. Асăннă уяв çинчен Тăрăн



Тăрăнсем Пăла хĕррине вăйăа тухнă. 2009 çул.

ялĕнче пурăнакан паллă обществăлла корреспондент Л.М. Лялькин хăйĕн «Юрă юхрĕ ян та ян!» очеркĕнче вулакан патне çапла çырса пĕлтернĕччĕ.

«Вăтам çулхи çынсем лайăх астăваççĕ: пĕр 20–25 çул каялла Тăрăн çамрăкĕсем Çимĕкпе Питрав хушшинче ял çумĕнчи улăха вăйăа тухатчĕç, карталанса тăрса вăйă кĕввисемпе такмаксем шăрантаратчĕç. Хĕрсен илемлĕ сассисем хуткупăс сассипе е ташă кĕввипе черетленсе, ылмашăнса Пăла тăрăх инçете-инçете саланатчĕç. Вăйăкулăпа киленме ватти-вĕтти пуçтарăнатчĕ. Анчах та çулсем иртнĕçемĕн çак ырă йăла пĕтсе ларчĕ. Ялта вăйă, улах кĕввисем шăпланчĕç. Ун вырăнне хăлхана çурас пек кĕрлекен, пуçа минретекен ют çĕршыв чĕлхипе çырнă юрăсем янăраççĕ. Çак кĕвĕпе хуçкаланакан çамрăксене курма никам та кăмăлламасть.

Тăрăн ял комитечĕпе хĕрарăмсен совечĕ ялта кăçалтан каллех чăваш вăййине чĕртсе яма шутларĕç. Май уйăхĕн вĕçĕнче, вырсарникун, ял çыннисем ĕлĕкхи йăлапа улăха пухăнчĕç. Йĕри-тавра тавралăх ешерет, кăмăла çĕклет. Пăла хĕрринчи хăвалăхра кайăксем

чĕвĕлтетеççĕ. Часах чĕрене хускатса, улăх çийĕн вăйă кĕвви янăраса кайрĕ. Чăваш тумĕ тăхăннă 30-40-50 çулхи хĕрарăмсем карталанса вăйă кĕввине хăюллăнах шăрантара пуçларĕç. Юрă вăй илсе çунатланса пычĕ. Вăйă картине пĕрин хыççăн тепри хĕрсемпе каччăсем хутшăнчĕç. Пурин сасси те пĕр юхăма пĕрлешсе улăх çийĕн вĕçсе саланчĕ. Тепĕр самантранах вăйă кĕвви шăпланчĕ те, хуткупăс янăраса кайрĕ. Чуна çĕклентерекен чăваш кĕввипе акăш пек ярăнса, темиçе мăшăр чăваш ташшинче çăмăллăн юхрĕç. Вăйăра тăракансем харăссăн алă çупрĕç. Ташласа ывăнсан, каллех юрлама пикенчĕç. Вăйă карти купăççă тавра çавраăна пуçларĕ.

Икĕ сехет ытла тăсăлчĕ чăваш вăййи – чăн-чăн халăх уявĕ. Вăхăт пĕр сисĕнмесĕр иртрĕ. Ял çыннисем улăхран тулли кăмăлпа саланчĕç. Вăйă ирттерме тата ăна йĕркелеме П. Михеев, П. Шекеев, Г. Тарасов, К. Сорокин, П. Краснов, П. Ибетов, Н. Крылова, А. Ибетова, В. Угасева, А. Медведева, И. Крылова, В. Кошкина уйрăмах активлă хутшăнчĕç, юрă-ташăпа савăнтарчĕç».

«Авангард» хаçат, 14.06.1988 ç.



Шел пулин те, çӳлерех асăннă Тăрăн ял çыннисенчен хăш-пĕрисем пурнăçран уйрăлса кайнă ĕнтĕ. Вĕсем пуçарнă ырă йăла-йĕркене çамрăксем малалла тăсса пыраççĕ теме вара манăн чĕлхем çаврăнмасть. Виçĕтăватă çул каялла вăйăа тухакансен ушкăнĕ Тăрăн ял çумĕнчи арман лаппи çурутравĕ çине тухсан, 24 çул каялла пулнă вăйă карти пек пысăк пулмарĕ пулин те, малашне çамрăксем аслисенчен вĕренсе юлас, малалла аталантарса пырас пек туйăнатчĕ. 2010 çултанпа ял кунĕпе вăйăа тухасси пĕр кунта – Çимĕкре (Троицăра) Йăлăм ял вĕçĕнче вырнаçнă Катек ялĕ енче 2009 çулта хута янă «Олимп» спорт комплексĕ çумĕнче пулса иртет. Çак комплексран хĕвел тухăç енче улмуççи сачĕ ешерет, кăнтăр енче Пăла юханшывĕ юхса выртать. Тĕрлĕрен спортпа культура мероприятийĕ ирттерме кунта меллĕ вырăн. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ çак пысăк уява çывăхри ялсенчен ватти-çамрăкки пуçтарăнать. Уяв эрешлĕ те тĕрлĕ тĕслĕ чăваш кĕпи тăхăннă, карталанса тăнă çак икĕ ял çынни йĕркелесе янă пысăках мар ушкăн вăйăа тухнипе пуçланса кайрĕ. Вăйă юррин кĕвви-сасси ĕлĕкхи пек темĕнле хăватлă таврана сарăлмарĕ пулин те, тунсăхланă чун-чĕре ăна ытарлăн йышăнчĕ. Пăхса савăнма тесе, куçсемпе вăйă картинче каччăсемпе хĕрсене шырарăм. Шел пулин те, тĕл пулаймарăм вăйă юррине юрласа ташлакан çамрăксене. Çавăн чухне манăн пуçа канăççăр шухăш пăраларĕ: «Кун пек пулсан малашнехи ăру ĕмĕртен ĕмĕре пыракан чăвашăн çак ырă йăлине те, вăйă юрри-кĕввине те, ташшине те, паянхи асатте-асаннесенчен вĕренсе юлмасăр пачах та манăça кăлармĕ-ши»? 2012 çулта та ял кунĕ Йăлăм ялĕн хĕвел тухăç енче пулса иртрĕ. Пысăках мар ушкăнпа та пулин ытларах çулланнă икĕ ял çынни вăйă картине тăрса вăйă юррине шăрантарчĕ. Анчах хальхинче те çамрăксем курăнмарĕç вăйă картинче. Çак ĕлĕкрен пыракан йăла-йĕркене малалла тăсас тесессĕн, шкул ачисене явăçтармалла. Ман шутпа, кунта ытларах шкулсенчи вĕрентекенсем, культура ĕçченĕсем пуçарулăх

кăтартмалла. Çак кун «Исток» хуçалăх ертӳçисем кооперативра уй-хир бригадисемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче вăй хуракан мала тухнă ĕçченсене палăртса хăварчĕç. Вĕсене Хисеп хучĕсемпе укçан преми парса чысларĕç. Ун хыççăн спорт мероприятийĕсем ирттерчĕç, ачасем концерт лартса пачĕç. Каçпа паллă артистсем хăйсен юррисемпе уява илем кӳчĕç, ватти-вĕтти тӳпене фейерверк янине пăхса савăнчĕ.

Треньел çамрăкĕсем аслăраххисемпе пĕрле вăййа çулсерен ялтан кăнтăр енчи Ыхра Çырмине пĕвеленĕ хыççăн пулнă çур утрав («Çамрăксен утравĕ») çине çу уйăх вĕçĕнче – çĕртме уйăхĕн малтанхи кунĕсенче тухаççĕ. Çак ял çыннисем каланă тăрăх, 40–50 çул каялла Зайцев Михаил умĕнчи лапама çак пысăк мар юхан шыв хĕрне вăййа пуçтарăнса юрланă-ташланă. Тăрăн – йăлăмсемпе танлаштарсан, треньелсен пуçарулăх пысăкрах пулнине палăртас килет манăн. Ушкăнпа вăййа тухасси, яла илем кĕртесси, пĕр-пĕрне пулăшасси – треньелсен ĕнер-паян кăна пуçланнă йăла-йĕрке тесе калаймăн. 20–25 çул хушшинче çак ял палăрмаллах хитреленчĕ вĕт. Çамрăксене те ачаранах тĕрлĕрен мероприятисене явăçтарма тăрăшаççĕ çутĕç, культура ĕçченĕсем тата аслă ăрури ял çыннисем. Хастар, вĕри чĕреллĕ халăха вырăнтан хускатма пултаракан çынсем пур-ха çак пысăк мар ялта.

Сăмах май, эпĕ Треньелĕнче пурăнакан 80-мĕш теçетке çинче пыракан ватăсен аса илĕвĕсем çинче чарăнса тăрасшăн.

Кошкина Александра Афанасьевна каласа панă тăрăх, Треньел çыннисен вăййи çимĕк каçран (вăл кĕçнерни куна килет) пуçланнă. Кăнтăрлахи вăййа тухиччен виçĕ каç çамрăксем каçхи вăййа тухса савăннă. Тройцă кунĕ – вырсарникун – кăнтăрлахи вăйă. Ялта пысăк уяв. Урам халăхпа тулать, пур çĕрте те çын хĕвĕшет, юрă-кĕвĕ шавĕ тăрать. Пуринчен ытла çамрăксем хавас, вĕсене вăйă илĕртет.

Тройцă кунĕ кашни касран ушкăнăн-ушкăнăн ял варрине пуçарăннă. Пуçарăнса çитсен юрă-ташă пуçланнă. Ял-йыш курма пуçарăннă, ватти-вĕтти уявра савăннă. Çавăн хыççăн ушкăн Катек ялĕ сывăхĕнчи тĕмеске çине кайнă. Тĕмески питĕ илемлĕ, аякранах çăкăр пичĕ евĕр курăнса тăрать, сип-симĕс тата хăй. Уйри тĕмеске çинче Йăлăм, Катек, Треньел çамрăкĕсем пуçарăнса виçĕ ял пĕрле вăйă ирттернĕ, пурте вырнаçнă вĕсем унта. Пĕрле выляса кулма, сăвă-кĕвĕ калама, ăмăртмалла ташлама питĕ хаваслă пулнă. Каччăсемпе хĕрсем пĕр-пĕрне куç хывнă. Хăйсем калас тенине вăйăра юрă-такмак урлă систернĕ, ташă-вăйăра пĕлтернĕ.

Уяв малалла тăсăлать. Виçĕ ял çамрăкĕ виçĕ ял еннелле уйрăлнă, юрласа ялĕсене утнă. Треньелсем мăшăрăн-мăшăрăн утса ялăн тепĕр вĕçне тухнă. Ял вĕçĕнче вара ватти-вĕтти ташланă, юрланă, савăннă. Хĕвел аннă чухне килĕсене саланнă. çамрăксем вара каçхи вăйăа тухнă. Вĕсем пĕр çĕрте выляман, тепĕр касса та кайнă, тĕрлĕ вăйă ирттернĕ. Юрă-ташă çемми ял тăршшĕпе инçете сарăлнă. Хаваслă кĕвĕ-юрă мĕн ирччченех янăранă. Кăшкăрашу-çапăçу, ӳсĕрпе çапкаланса çӳрени пĕрре те пулман. (Февраль 2013 çул.)

Александра Афанасьевна аса-илĕвĕ çумне Александра Александровна Краснова каланă тăрăх çырса илнине тата хушма пулать:

«Вăйă тесенех тĕлĕнмелле илемлĕ тĕмеске куç умне тухса тăрать. Хăпарту пек çаврака та симĕс çерем, йĕри-тавра чечек. Çутçанталăк юри вăйă ирттерме туса панă тейĕн. Вăл Ыхра (юхан шыв – Д.К.) хĕрринче сад тĕлĕнче пулнă.

Каярахпа ялăн хĕвел тухăç енне сад ĕрчетнĕ май тĕмеске таврашне сухаласа тăкнă. Вăйăа вара ял вĕçĕнче пухăннă, Ыхра хĕрринчи лапам меллĕ пулнă, халь вăл та шыв айне юлнă.

Юлашки çулсенче вăйă сăввине ял уявĕнче çеç илтме пулать. Ырă йăла ан манăçтăр тесе А.Т. Краснов тата Н.А. Кошкин тăрăшнă, вĕсем пуçарнипе Ял уявĕсем вĕренӳ çулĕ вĕçленсен иртеççĕ. Уяв вăйăпа пуçланать. Ял варрине хĕреслĕ урама юрласа пырса виçĕ касран пухăнатпăр та Кооператив урамĕпе утрав çине анатпăр. Унта вара вăйă картине тăратпăр».



Треньел ял-йышĕ вăйăа çамрăксен утравĕ çине анать.



Треньелсем вăйă картине тăнă.



Треньельсем Çамрăксен утравĕ çине вăйăа тухнă. 1998 çул.

Сăмах май, юлашки çулсенче чăвашсен ĕлĕкрен пыракан йăли-йĕркине чĕртсе малалла аталантарасси çине Патăрьел районĕнчи вăрман çĕрринчи хăшпĕр ялсенче тимлесе ĕçлени сисĕне пуçларĕ. Юлашки çулсенче Аслă Чемен, Пăлапуç Пашъел тата ытти хăш-пĕр ялсенчи хастарсем тăрăшнипе пулса иртекен ял кунĕсенче чăнах та хаваслă. Районта иртнĕ Акатуйсенче мĕн чухлĕ ватти-вĕтти хăйĕн пултарулăхне кăтартмарĕ-ши унта? Вăйă картине тăракансен йышĕ те самаях пысăк: ĕлĕкхинчен кая мар пуль.

Ĕлĕк чăваш халăх хушшинче сарăлнă, халĕ манăçа тухакан хăш-пĕр уявсемпе йăла-йĕркесем çинче чарăнса тăрас шухăшăм пур тата.

Паянхи кун пирĕн тăрăхра Хĕр сăри уявĕ манăçа тухнă тесен йăнăшмастăп та пулĕ. Ĕлĕк çитĕннĕ хĕрупраç калаçса ларма, юрлама-ташлама пĕр-пĕр тăлăх хĕрарăм е карчăк патĕнче пуçтарăннă, унтах алă ĕç тунă. Çамрăксем унта пуçтарăнса юрланă-ташланă, вăйăсем выляса савăннă. Хăш-пĕр чухне йĕкĕтсем улахра хĕрсемпе паллашса каярах çемье çавăрнă тĕслĕхсем ялсенче самаях пулнă.

Эпир ача-пăча чухне Сурхурипе Çăварни уявĕсене кашни ялтах хаваслă кĕтсе илсе ирттерсе янă. Каç пулсан çамрăксем ват çынсем пек аллисене патаксем тытса: арçын ачасем çĕлĕк хăлхисене антарса, аслисен кĕрĕкне тӳнтерле тăхăнса, ан паллаччăр тесе пите-куçа сăрласа, хĕр ачасем карчăк пек куçĕ патĕнченех пуçне пысăк тутăр çыхса, вăрăм сăхман тăхăнса, ушкăн-ушкăнпа урам тăрăх чупаттăмăр. Пĕр-пĕр кил умне пырса чӳречене шаккаса: «Ман арăм мĕн ятлă, ман упăшка мĕн ятлă?! – тесе кăшкăраттăмăр. Хăш-пĕр кил хуçисем алăк уçса кĕртсен пӳртне кĕрсе ташласа, юрласа е такмак каласа параттăмăр, çавăншăн вара ырă кăмăллисем ачасене канихвет-пĕремĕкпе хăналаса кăларса яратчĕç. Тепĕр чухне кил хуçисем пӳрте ташласа кĕрекенсене урай хăмине илсе хурса тĕпсакайне антарса яни те пулнă.

Иртнĕ ĕмĕрте тепĕр пысăк уява – Çăварнине те – ял çынни тĕплĕн хатĕрленсе савăнăçлă ирттернĕ. Астăватăп-ха, çак кун çитĕннисем колхозри пăхма хитре лашасене тата ут таврашне тĕрлĕ тĕслĕ алшăллисемпе тата илемлетнĕ хăюсемпе йĕри-тавра çавăрса, пĕкĕ çине шăнкăрав çакса яратчĕç. Лашасене хыçлă çунасем кӳлсе, шукăль тум-тир тăхăннă çамрăксем ялсенчи урамсем тăрăх çăварни юрри юрласа катаччи чупса савăнатчĕç. Вĕсем хыççăн вара ачасем ушкăнпа çуйхашса чупатчĕç. Çăварни юррипе шăнкăрав сасси вара таврана сарăлатчĕ. Капăр тумланнă хĕрарăмсем вĕри чейпе тата икерчĕпе уява хутшăнакансене хăналанă. Çак кунсенче халăха савăнăç кӳнĕ, юрă-кĕвĕпе савăнтарнă.

Авалтан пыракан çăварнин хăш-пĕр йăли-йĕрки çухалнă пулин те ялсенче çак уява паллă тăвасси манăçмасть-ха. Кашни çулах тенĕ пек ялсенчен Патăрьелĕнчи стадион патне Çăварние кĕтсе илме çывăхри-аякри ялсенчен халăх пуçтарăнать. Юрăташă кĕвви аякка сарăлать вара, çамрăксем юр çинче футбол, кире пуканĕ йăтассипе, алă вăй виçессипе тата ытти халăх хушшинче сарăлнă вăйăсем ирттереççĕ.

Улăмран чĕркесе катемпи тунă çын кĕлеткине çунтарса тĕтĕмпе пĕрле инкек-синкек, чир-чĕр, хуйхă-суйхă вĕçсе кайтăр, телейпе савăнăç, юратупа килĕшӳ пултăр тесе чĕнеççĕ.

2012 çулта, Юхма енсем Кĕçĕн Çăварние ирттерессине хĕле ăсатассипе пĕр кунта нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕнче Аслă типпе кĕрес умĕн ирттерме йышăннă. Районти выраннта ĕçлекен пуçлăхсем уяв ячĕпе саламласа ырă сăмахсем каларĕç. Çак кун уява ытти ялсенчи капăр тумланнă фольклор коллективĕсем, спорта юратакансемпе çак мероприятие курма пынă халăх район центрне пуçтарăнчĕ. Унтан халăх стадиона куçрĕ: спорт площадкинче çамрăксем спорт енĕпе вăй виçрĕç, тĕрлĕрен вăйăсем вылярĕç. Каншелĕнчен килнĕ «Çăлкуç» халăх фольклор ансамблĕ пуçтарăннă халăха юрă-ташăпа савăнтарчĕ. Хăш-пĕри суту-илӳ сĕтелĕсем патне пырса çу çинче пĕçернĕ икерчĕне вĕри чейпе тутанса пăхрĕ.

Уяв пынă вăхăтра ялăн аслă урамĕпе капăрлатнă лавсем пĕрин хыççăн тепри йĕс шăнкăравсене янраттарса чупрĕç. Вĕсем хушшинче коллективсем те, уйрăм хастарсем те пур. «Исток» агрофирмара тăрăшакан Иванов (Тăрăн ял тăрăхĕ) вара виçĕ урхамаха юнашар кӳлсе ярса çăварни катаччине тухнă. Çак хуçалăхăн тепĕр лашине капăрлатса уява Касьянов илсе тухнă. Унăн лавĕ çинчи пикесем вара ĕлĕкхи чăваш тум-тирлĕ «кукамай-асаннесем» пекех туйăнса кайрĕç. Çак яшкĕрĕм çăварни юррине шăрантарни мана çур ĕмĕр каялла ялсенче çăварни уявне ирттернĕ вăхăта тепре аса илтерчĕ. Авалхи йăла-йĕркене малашне те çамрăксем тăсса пырсан, пулас ăрусемшĕн аван пулĕччĕ.

Çак кун вара Патăрьелĕнче савăнăçлă уяв нумайченех лăпланмарĕ.

Юлашки çулсенче республикăри тата Патăрьел районĕнчи хăш-пĕр ялсенче ĕлĕкхи йăла-йĕркене çĕнĕрен вăй-хăват кĕртсе малалла аталантарса пырас енĕпе тăрăшса ĕçлени курăнать. Паллах, кунта




Лашасемпе Çăварние тухнă. Патăрьел сали, 2010 ç.

ял тăрăхĕсен, ял хуçалăх кооперативĕсен пуçлăхĕсем, культурăпа вĕренӳ ĕçченĕсем пуçаруллă пулни кирлĕ. Ытларах çамрăксене явăçтармалла, унсăрăн çав ĕлĕк-авалтан ăруран-ăрăва куçса пыракан йăла-йĕркесем пурăна киле вуçех манăça тухма пултарĕç.

Кăшарни уявне юлашки çулсенче хуласемпе ялсенче анлăн паллă тăва пуçларĕç. Православи тĕнне тытса пыракансемшĕн çак уяв Раштавпа Мăнкун пекех пысăк пĕлтерĕшлĕ. Турă кĕнекинче каланă тăрăх, çав кун Иисус Христос Иорданра шыва кĕнĕ. Çавăнпа та пирĕнтен нумайăшĕ çак пулăма ĕненсе, хисеплесе Кăшарни каçĕнче ятарласа хĕрес евĕрлĕ каснă вака пачăшкă кĕл тунă хыççăн виçĕ хутчен чăмса тухать. Паллах, шыва чăмса тухас пирки тухтăрсем асăрханма сĕнеççĕ; пурне те сывлăх енчен хĕллехи кун сивĕ шыва кĕме юрамасть.

Пачăшкăсем сĕннĕ тăрăх, чирлĕ çынсен çак кĕл тунă шывпа пите, алăсене йĕпетсе илни те çителĕклĕ.



Тăрăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ К.Ф. Михеев Кăшарни уявĕнче шыва кĕрет. 2013 ç.

Кăшарнире вакă касса шыва кĕресси паянхи кун республикăри ытти районсенчи пекех Юхма енче те анлă сарăлчĕ. Кашни çулах Сител ялĕ патĕнчи кӳлĕ хĕрринче ятарласа шыва кĕмелли вырăнта вакă касса шыва кĕме таврари ялсенчен халăх пуçтарăнать. Пачăшкă кĕл тунă хыççăн вакă касса, шыва кĕрекенсем унран пил илсе шыва виçĕ хутчен чăмса тухаççĕ. Çанçурăма çемçе алшăллипе сăртăннă хыççăн ăшă тумтир тăхăнса яратăн та, вара вĕри чейпе сăйланма та пулать. Çак уявра иртнĕ çултан тытăнса (2012 ç.) Тăрăн ялĕ çывăхĕнче Пăлара та пăр касса шыва кĕреççĕ.

Темиçе ĕмĕр каяллах пĕве кĕнĕ ял çамрăкĕн арçын тивĕçне – Раççей çĕршывĕн пĕр-пĕр кĕтесĕнче хĕсметре тăрассине пурнăçламалла пулнă. Патша саманинче чăваш салтакĕ тăванĕсенчен, ял-йышран уйрăлса кайса 25 çул таранччен вĕсене курайман. Çав вăхăтра вăрçă пулсан, киле тавăнайманнисем те пулнă. Çавăнпа та

салтака каякан яш-кĕрĕме ялĕпех ăсатнă, ăна килне чĕрĕ-сывă тавpăнма пилленĕ. Совет саманинче иртнĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче яшсен 3–4 çул, каярах 2–3 çул хушши хĕсметре тăмалла пулнă. Салтака каякан çамрăк юлташĕсемпе ял урамĕсемпе ал шăллисемпе сулкаласа салтак юрри юрласа çавpăннă. Тăванĕсем çамрăксене килĕсене чĕнсе кĕртсе хăналанă, савнă хĕрĕ пулас салтака асăнмалăх тĕрленĕ сăмса тутри парнеленĕ.

Çак ырă йăла-йĕркене, вăл 50–60 çул хушшинче улшăннă пулин те, ялсенче паянхи кун та тытса пыраççĕ. Çулталăкра кĕркуннепе çуркунне шавлă çамрăксен ушкăнĕ çар комиссариачĕ умне пуçтарăнать. Е çывăх тăванне, е юлташне, е савнине тăван çĕршыва сыхлама пĕр çуллăха ăсатаççĕ, каялла çавpăнса килме телейлĕ çул сунаççĕ.



Тăpăн ял çамрăкĕсем Василий Думилина Совет çарне ăсатма пуçтарăннă. 1957 çулхи юпа уйăхĕ.

1990–2000 çулсенче районти хăш-пĕр ялсенче те укçа пуçтарса çĕнĕрен чиркӳсемпе мечĕтсем халăх вăйĕпе тата предпринимательсем пулăшнипе туса лартма тытăнаççĕ.

Тăрăн ялĕнчи Свято-Никольски чиркĕвĕн настоятелĕ пулса Николай протоиерей 1991 çултан тытăнса хăй виличченех священник тивĕçне тӳрĕ кăмăлтан туса пычĕ. Ватти-вĕттипе çемçе кăмăллă, ăш-пиллĕ пулнăран чиркĕве çӳрекенсем, ăна пĕлекенсем хисеплетчĕç, паянхи кун та ырăпа асăнаççĕ. Хамăр республикăпа районта тухакан хаçатсенче ун çинчен статьясем те çапăнса тухнă.

Вулакана эпĕ Николай атте çинчен «Советская Чувашия» хаçатра 2005 çулхи ака уйăхĕн 9-мĕшĕнче кун çути курнă «Долгая дорога к храму» ятлă очеркпа паллаштарас тетĕп.

Прежде чем стать священником, отец Николай прошел войну, работал секретарем райкома комсомола, учителем сельской школы.

Его светская часть жизни всегда была нелогичной, противоречивой. Война и мир, жизнь и смерть, вера и безбожие, греховность и святость – вот между какими взаимоисключающими, ниспосланными жребием явлениями приходилось ему искать путь истины. Только на старости лет, став священнослужителем, за вратами храма Божьего обрел он умиротворение.

Николай Галкин вырос в незажиточной религиозной семье. Родителей все равно раскулачили. Видимо, пострадали за веру. Остались они с детьми в старой черной бане. Но сыновья не сломались под тяжестью обстоятельств. Старшие стали офицерами, а младший Николай, окончил Канашский педагогический техникум. В 1942 году учителя начальных классов мобилизовали на защиту Отечества. В Канаше он из военкомата поспешил в церковь, чтобы до отправки успеть помолиться. «Храни меня Господь. Если останусь жив, всю свою жизнь посвящу служению Богу и родному народу...». Царь небесный услышал глас воздевшего руки. Вернулся в родные пенаты, – говорит отец Николай. – Крест на шее уберег меня от гибели на войне».



Николай атте

Сначала он прошел военное обучение в Цивильске, затем в Подмосковье. Оттуда – на прикрытие знаменитой ленинградской «Дороги жизни», проложенной по льду Ладожского озера. Николай Яковлевич никогда не расставался с нательным крестиком. Но даже в бане старался не показывать его случавшимся рядом политрукам. Оставаясь наедине, мысленно молился Богу заскорейшее одоление врага, за упокой душ погибших. На «Дороге жизни» Николай Яковлевич заслужил медаль «За оборону Ленинграда» и орден Отечественной войны 1-й степени.

После освобождения города на Неве в боях вблизи финской границы Галкина тяжело ранило. Военные врачи в госпитале спасли ему жизнь, а на излечение отпустили в родную деревню. По состоянию здоровья он на фронт уже не попал. Сразу впрягся в работу. С утра обучал молодежь военному делу, а после обеда работал бухгалтером в колхозе. Тут еще случилось непредвиденное. Взяли да избрали его секретарем райкома комсомола. Вопреки своей вере пришлось согласиться. Но недолго

сидел он в райкоме. Через год-два перебрался в деревенскую школу преподавать русский язык и литературу. И 35 лет, до самой пенсии, трудился на педагогической ниве. Во внеклассной работе учитель-фронтовик нес ребятам слово Божие, учил творить добро, жить честно и смиренно. Среди его бывших учеников есть известные ученые, военачальники.

Они вырастили с женой семерых детей, воспитали их тоже в православных традициях. Бывая в отпуске, часто отправлялись по заповедным православным местам. Николаю Яковлевичу посчастливилось побывать у патриарха Грузинского Илии. Он трижды посещал известный Почаевский мужской монастырь с церквами в пещере, который находится в Тернопольской области Украины. Выйдя на пенсию, раб божий Николай свою оставшуюся жизнь решил полностью посвятить церкви. Вот уже почти двадцать лет он проповедует слово Божие. Сначала служил алтарником в Луцкой церкви в Комсомольском районе, затем – дьяконом в Новочебоксарском храме. Впоследствии его благословили настоятелем церкви Святителя Николая в с. Туруново Батыревского района.

Храм этот имеет давнюю историю. Открыли его еще в 1747 году. В 1909 году на нем установили отлитый в Нижнем Новгороде колокол весом 100 пудов и 14 фунтов. Атеисты в разное время пытались снять колокол. А саму церковь во время войны даже закрыли, превратив ее в так называемый «глубинный пункт государственного хлеба». Но в 1944 году врата храма снова открылись для мирян. Вот уже 14 лет принимает прихожан отец Николай в старинной церкви. Старания настоятеля отмечены в Епархиальной грамоте, врученной отцу Николаю по случаю его 80-летия. «В благословение за усердные труды во славу святой церкви», – сказано в ней.

В.Петров, газета «Советская Чувашия». 09.04.2005 г.

2009 çулхи майăн 31-мĕшĕнче 85 çулхи юбилейпа Варнава владыка ăна патриарх наградине – хаклă чулсемпе илемлетнĕ Хĕрес çакса янă.

Çав çулхинех июнĕн 11-мĕшĕнче Н.Я. Галкин пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Николай аттене Тăрăнти чиркӳ çумĕнчи симĕс йывăçсен айне пытарнă.

2002 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне Раççей Федерацинчи Юстици Министерствин Чăваш Республикинчи Управленийĕ урлă 190 православи прихучĕпе 6 монастырь тепĕр хут регистраци витĕр тухнă пулсан, 2011-мĕш çул тĕлне Чăваш енре 297 тĕн организацийĕ регистрациленĕ. Вĕсенчен 222 – православи, 49 – мусульман, 21 – протестантсен тĕн организацийĕсем. Ыттисем вара: баптистсен, евангели христианĕсен, старообрядецсен тата ыттисен ушкăнĕсем темиçешер штук регистрациленнĕ.


2012 çулта пирĕн республикăри тĕн организацийĕсенче улшăнусем пулса иртеççĕ. Кун пирки чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче «Хыпар» хаçатра «Епархи тытăмĕ улшăннă» статьяра вуласа çакна пĕлме пулать:

«Чăваш Республикинче турра ĕненекенсен шучĕ ӳснĕ тата прихутсем йышланнă май Варнава митрополит Кирилл Патриарх патне Шупашкар-Чăваш епархийĕнчен Чăваш митрополийĕ йĕркелеме рапортпа тухнă. Вырăс православи чиркĕвĕн Таса Синочĕн ларăвĕ унăн сĕнĕвĕпе килĕшнĕ: Чăваш Енре тата икĕ епархи пулĕ – (унта Канаш, Куславкка, Комсомольски, Красноармейски, Вăрмар, Елчĕк, Тăвай районĕсем кĕреççĕ) тата Улатăр (унăн йышĕнче – Улатăр, Патăрьел, Йĕпреç, Пăрачкав, Шăмăршă районĕсем). Канаш-Тăвай епархине малашне Шупашкар епархийĕн викарийĕ, Улатăр епископĕ Стефан (1966 çулта Шупашкарта çуралнă Сергей Гордеев) ертсе пырĕ. Иккĕмĕшĕн, Улатăр епархийĕн, пуçлăхĕ Феодор иеромонах (1960 çулта Дрезденра çуралнă Александр Белков), Шупашкар епархийĕн клирикĕ пулĕ.

Шупашкар епархийĕн тытăмĕнче Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисем, Муркаш, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри тата Çĕмĕрле районĕсенчи прихутсем юлнă. Чăваш митрополийĕн пĕтĕмĕшле ертӳçине Варнава митрополита çирĕплетнĕ».

А.Степанов.

Юлашки çулсенче пирĕн республикăра та ытти регионсенчи пекех, шкулсенче çĕнĕ «Тĕн культурисен тата харпăр хăйне тивĕçлипе тытмаллин никĕсĕсем» предмета вĕрентме пуçланă. Паллах, 30–35 çул каялла патшалăха ертсе пыракансенчен тытăнса шкул ачисем таранчченех чиркӳ енне çаврăнасси, турра ĕненесси çине тепĕр майпа пăхасса шутлама та пултарайман.



Анатолий протоирее асăнса – часовня.

«Çак кунсенче район пуçлăхĕ Н.Глухов автомобильсене техника тĕлĕшĕнчен тивĕçтерекен Патăрьелĕнчи (СТОА) ертӳçипе Н.Федоровпа Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешри Николай святитель ячĕллĕ чиркӳре пулнă. Ĕçлĕ çӳрев ахальтен мар. Аса илтеретпĕр, кунти чиркӳ картишĕнче, ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче, Шупашкарпа Чăваш Ен епархийĕн Кăнтăр V округĕн Благочиннăйне Анатолий протоиерее перçе вĕлернĕ. Тискер преступлени пирки Раççейри массăллă информаци хатĕрĕсем те пĕлтернĕччĕ. А. Сорокин прихута ертсе пынă хушăрах Патăрьелĕнчи Турă Амăшĕн Державная чиркĕвне çĕклессипе те ырми-канми тăрăшрĕ.

Н. Федоров предприниматель пуçарнипе тата ертсе пынипе Турра чунтан парăннă çыннăмăра, Анатолий аттене, асăнса вăл ĕмĕрлĕхех куçне хупнă выränта часовня çĕклесе лартнă. Сăваплă ĕçрен строительство организацийĕсен хăш-пĕр ертӳçи те пăрăнман. Акă З. Халитов (ТПК «Шыгырданы»), М. Янешев (Патăрьелĕнчи сельхозтехника), Р. Абдулвалеев (тулли мар яваплă пĕрлешӳ «Булат»), В. Миронов (тулли мар яваплă

пĕрлешӳ «Спецстройкоммуникаци»), О. Лаврентьев предприниматель витĕмлĕ пулăшу кӳнĕ. Часовньăна кĕркунне çеç уçма палăртнă пулин те, кунтан халăх татăлмасть: чечексем хураççĕ, çурта çутаççĕ, Анатолий протоирей чунĕ канлĕхре пултăр тесе кĕл тăваççĕ.

А. Иванов. «Авангард» хаçат, № 80, 28.07.2010 ç.»

Унăн ячĕ халăх асĕнче.

(Анатолий протоирей пиртен уйрăлса кайнăранпа çулталăк çитнине асăнса)



Чăваш Ен тата Шупашкар епархийĕн Кăнтăр округĕн благочиннăйне Анатолий Сорокин протоирее тискеррĕн вĕлернĕренпе çулталăк иртрĕ. Çак хурлăхлă куна палăртса çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче Аслă Пăла Тимешĕнче вăл ĕçленĕ чиркӳре тата Тăрăн чиркĕвĕнче ятарлă кĕлĕ тата панихида ирттерчĕç. Кĕлĕсене вуншар священник, монахсемпе чиркӳ çыннисем тата турра ĕненекенсем йышлăн хутшăнчĕç, çуртасем çутса, просфорăсем кастарса, пиртен вăхăтсăр уйрăлса кайнă Анатолий аттешĕн кĕл турĕç. Юлашкинчен асăну кĕллине хутшăннисем Тăрăн чиркĕвĕ çумне пытарнă Анатолий аттен вил тăпри çинче аслă панихида ирттерчĕç, ун ячĕпе хатĕрленĕ апат-çимĕçе тутанчĕç. Вил тăпри çинче кунĕпех çын татăлмарĕ.

Л. Лялькин. «Авангард» хаçат, № 50, 12.05.2011 ç.»

Çак йĕркесен авторĕ пулнă май эпĕ хам енчен Анатолий аттен çĕр çинчи пурнăçĕ сарăмсăр татăлнăшăн чун-чĕререн хурланса кăшт та пулин хушса тата пĕтĕмлетсе çакна асăнса хăварасшăн. Унпа эпир пĕр ял-

тах ӳссе çитĕннĕ май, ачаранах эпĕ вĕсен çемйине лайăх пĕлнĕ, унăн аслă Анюкка ятлă аппăшĕпе пĕр класрах вĕреннĕ. Вĕсем çемйипех иртнĕ ĕмĕрĕн 50–60 çулсенче чиркӳсене хĕснĕ чухне те хăйсем турра ĕненнине пытарман. Анюкка (православи тĕн йĕркипе Екатерина монахиня) паянхи кун та Израильти пĕр мăнастирте тĕн службине пурнăçласа пурăнать.

Анатолий протоиерее эпĕ 2010-мĕш çул пуçламăшĕнче çак кĕнеке валли Тăрăн чиркĕвĕн историйĕ, унта ĕçленĕ священниксем çинчен материалсем çителĕксĕртерех пулни çинчен пĕлтернĕччĕ. Чулхулан тĕп архивĕнче Тăрăн чиркĕвĕ çинчен çырнă документсем тупма май пулмĕ-ши, унта кайса килме машина пулсан лайăх пулĕччĕ тесе, эпĕ унпа тĕл пулса сăмах хускатрăм. Вăл пулăшнипе эпир А.И. Самакин предпринимательпе, чăнах та, Чулхула тĕп архивне кайса килтĕмĕр. Тавах вĕсене мана итленĕшĕн. Юлашкинчен эпĕ Анатолий аттепе Патăрьелĕнче ака уйăхĕнче тĕл пулсан, вăл мана чиркӳ енĕпе кĕнекесемпе тата ытти кирлĕ материалпа тивĕçтерес пирки шантарчĕ. Пирĕн çак калаçу хыççăн тепĕр эрнерен мана Владислав ывăлăм, РФ Следстви Комитечĕн Шупашкарти следстви управленийĕнче ĕçлекенскер, кĕсье телефонĕпе хăрушă хыпар пĕлтерчĕ: Анатолий аттене Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешĕнчи чиркӳ картишĕнче пĕр ăсран тайăлнă арçын пистолетпа персе вĕлернĕ. Çак хыпар çиçĕм пек Патăрьел тăрăхĕнче сарăлса ялсенчи кашни киле çитсен, ăна паллаканни-палламанни те çывăх тăванне çухатнă пекех чĕре патне илчĕ пуль. Анатолий аттене пытарнă кунхи пек Тăрăн ялĕнче нихçан та çавăн чухлĕ нумай çын пулман. Автомашинăсем кăна икçĕре яхăн, юлашки çула ăсатма пынă çынсем пин çын та пурччĕ пуль терĕç ял çыннисем кайран. Священниксем, республикăри ытти районсенчен килнĕскерсем, Шупашкар тата Чăваш епархийĕн митрополичĕ Варнава ертсе пынипе панихида ирттерчĕç, çапла вара Шупашкар епархийĕн V округĕн благочиннăйĕ Анато-

лий Сорокин протоиерей Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнчи чиркӳ çумĕнче канлĕх тупрĕ. Елчĕк районĕнче пурăнакансем Анатолий аттене пысăк выраăна хунăран, хисепленĕрен-юратнăран та пуль, ăна юлашки кунченех Аслă Пăла Тимеш ялĕнчи чиркӳре тĕн службине ирттернĕрен, çавăнтах пытарттарасшăн пулнă. Тăрăн ял çыннисем тата хăйĕн çывăх тăванĕсем çине тăнăран Варнава митрополит вара Анатолий аттене хăй çуралнă ялнех чиркӳ çумне пытарма ирĕк панă.

Архивсенче тĕрлĕрен документсене тишкернĕ чухне эпĕ Тăрăн чиркĕвĕнче Чăваш Енрен тухнă пĕрремĕш святой ятне тивĕçнĕ священник Герман епископ (Григорий Афанасьевич Кокель) ĕçленине тупса паллашнăччĕ. Унăн кун-çулне иртнĕ ĕмĕрти 30-мĕш çулсенче репресси саламачĕ вăхăтсăр татнă.

Çак чиркӳ çинчен çырнă май эпĕ хамăр районти редакцинче редактор çумĕ пулса тимлекен Н.Ларионов корреспондент очеркĕ çинче чарăнса паллашни выраăнлă пулĕ тесе шутлатăп. Ăна чиркӳ историне лайăх пĕлекен Л.М. Лялькин учитель-пенсионер каласа панă тăрăх çырнă.

«Кунта Герман çеттуй ĕçленĕ.

1946 çултан пуçласа 90-мĕш çулччен Тăрăн чиркĕвĕ Патăрьелпе Шăмăршă тăрăхĕсенче кĕлле çӳремелли пĕртен-пĕр кермен шутланнă. Унта Çĕпрел (Тутарстан) тата Чăнлă (Ульяновск облаçĕ – Д.К.) районĕсенче пурăнакансем те ача тĕне кĕртме, венчете тăма, вилене кĕл тутарма, ытти йăла-йĕркене тытма йышлăн килнĕ. Халĕ Юхмапа Пăла тăрăхĕнче 11 чиркӳ ĕçлет. Нăрваш Шăхальсем никĕс хураççĕ. Патăрьелĕнче собор тăвасси малалла пырать.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăнхи тапхăрта (65 çулта) чиркĕве çӳрекен Тăрăн çыннисенчен 5 священникпе 7 манах çитĕннĕ. Çав шутра митрофорлă протоиерей Иоанн Ашмарин, Мускаври Тĕн академийĕн



выпускникĕ Анатолий Сорокин протоирей, Венямин Искачкин иеромонах, Вячеслав Ашмарин протоиерей, Серафим Лялькин игумен... Екатерина монахиня (халăхра – А.Д. Сорокина) Иерусалимри хĕрарăмсен монастырĕнче манахăн çăмăл мар кун-çулне тăсать. Унăн йăмăкĕ Михаила монахиня (халăхра – Зинаида Сорокина) Серафим-Дивеево монастырĕн скит ертӳçи. Псков-Печора монастырĕн архимандричĕ Филарет атте ачаран Тăрăн чиркĕвне çӳресе ӳснĕ, халĕ те çыхăнăва çухатмасть. Мускаври Покров мăнастырĕн настоятелĕ Феофания игумения çамрăк чухне кĕлле Тăрăн храмне чупнă.

Асăннă кĕлĕ çурчĕ республикăри чи ватă вунă чиркӳ шутне кĕрет, ăна 1747 çулта Елизавета майра патша пулнă чухне хута янă. Вăл республикăри чи ватă вунă чиркӳ шутне кĕрет. Чиркӳ никĕсне 1885 çулта çирĕп чулсенчен янă, пурине сухăр юхтарман хулăн хыр пĕренесенчен купаланă.

Таврари пысăк чиркӳн алăкĕсем Пĕрремĕшпе Иккĕмĕш Александр патшасем вăхăтĕнче те, Пĕрремĕшпе Иккĕмĕш Микулай императорсем вăхăтĕнче те яри уçă тăнă. Прихутне вара таврари 12 ял кĕнĕ. Влаçа 1917 çулта вăйпа ярса илнĕ большевиксем кăна ун çине çичĕ ют пек кураймасăр пăхнă. 30-мĕш çулсенчи ахăрсамана вăхăтĕнче халăх кăмăлне ним вырăнне хумасăр, чиркĕве хупнă, алăкне пысăк çăрапа питĕрсе илнĕ. Çапла икĕ ĕмĕре капашакан таса çурта масаран кăларнă. Тĕнче ырă çынсăр мар – чиркӳ документчĕсемпе хаклă япаласене, тĕрлĕ, анчах хаклă вак-тĕвеке, çав шутра священник тумĕсене те

пулас ӑрусем валли сыхлас текен ун чухне тупӑннӑ – шанчӑклӑрах пӗр киле куҫарнӑ. Анчах Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫӑ хыççӑн тепӗр инкек сиксе тухнӑ – хайхи ҫурт вутра кӗлленнӗ. Пӗрлех икӗ ӗмӗр упраннӑ хаклӑ хутсем те пӗтнӗ. Акӑ мӗншӗн ватӑ чиркӳн авалхи историйӗ ҫинчен туллин каласа пама йывӑр.

– Эпӗ 1936 ҫулта ҫуралнӑ, – аса илет чӗрӗк ӗмӗр чиркӳре ӗҫлесе, пулӑшса пурӑнакан Леонид Матвеевич Лялькин. – Атте-анне каланӑ тӑрӑх, ун чухне чиркӳ ӗҫлемен. Ҫавӑнпа ачасене тӗне кӗртме пачӑшкана киле чӗннӗ. Влаҫ сыннисенчен тем пек шикленсен те чылайӑшӗ ҫапла майпа ачисене хӗрес ҫактарма меслет тупнӑ. Ҫавӑнпа та чиркӗве 1934 е 1935 ҫулсенче хупнӑ теме пулать. Чӑн та, кӑштах вӑхӑт иртсен ӑна ҫӗнӗрен уҫнӑ. Анчах ял халӑхӗн савӑнӑҫӗ нумая пыман. Хальхинче вара пачӑшкӑна хӳтерсе янипе кӑна лӑпланман кӑсӑруклисем. Пӗр айӑпсӑр ҫынна тытса кайнӑ та тӗрмене хупнӑ. Тавӑнайман мӗскӗн унтан каялла, те персе пӑрахнӑ... Ятне те лайӑх пӗлместпӗр, Ефим атте тенӗ пек астӑватӑп...

Официаллӑ йӗркепе Тӑрӑн чиркӗвне 1941 ҫулта хупнӑ. Паллах ӗнтӗ, хӗресне те касса антарса таҫта кайса пӑрахнӑ. Вӑрҫӑ ҫулӗсенче ӑна колхоз кӗлет вырӑнне усӑ курнӑ. Алӑкӗсем сарлака та ҫӳллӗ пулнӑран тырӑ пушатнӑ е турттарса тухнӑ чухне лаша урапипех, ҫунапах кӗре-кӗре ҫӳренӗ-мӗн. Пысӑк турӑшсене хӑпӑтса вӗсене саваласа хӑма тунӑ тени те шухӑшласа кӑларнӑ сӑмах мар. Вӑрҫӑ ҫулӗсенче чиркӗве пӑсас (вутӑ тӑвас) хӑрушлӑх та темиҫе хутчен сиксе тухнӑ. Хӗллехи пӗр шатӑр сивӗ кун Патӑрьелтен яла пӑчӑкӑпуртӑ тытнӑ ҫамрӑксен пӗр ушкӑнӗ (вӑтам шкулта е педучилищӗре вӗренекенсем, ахӑртнех) килсе ҫитнӗ. Хӑйсем тӗллӗн ҫула тухманни паллӑ-ха. Ҫаксем ял Канашӗн председателӗнчен чиркӗве ҫӗмӗрме ирӗк ыйтнӑ-мӗн. Ӑслӑ та мал курӑмлӑ ҫынах пулнӑ ҫав ял пуҫлӑхӗ Михаил Крылов (1895–1946 ҫ.ҫ.). «Ку чиркӗве пирӗн асаттесемех хӑпартнӑ. Ирӗк памастӑп. Чиркӳ

вăл пушар тухас пулсан чан çапса халăха систерме те кирлĕ», – тесе хăваласа янă тет яш-кĕрĕме.

Манман маттур та вăхăтне кура мар хăюллă сыннăн паттăрлăхне тăхăмĕсем. 1991 çулта, вăл çĕре кĕни çур ĕмĕр çитес умĕн, ял масарĕ çинчи хĕресĕ умне мрамор палăк лартнă, нихçан çĕрмен хаклă чул çине ылтăн шывпа «Тăрăн чиркĕвне тĕп тăвасран сыхласа хăварнăшăн», – тесе çырнă.

Ял сыннисем çине-çинех пуçлăхсене тархасласа çырусем çырнине тата хистесе ыйтнине шута илсе 1945 çул вĕçĕнче чиркĕве уçма ирĕк панă. Юсаса çĕнетнĕ çуртра Раштав умĕн пĕрремĕш хут кĕлле кĕнĕ. Ăна Леонид Матвеевич (вуннăри ача) хăй те кăштах ас тăвать: «Çын нумайччĕ, ярмăркка пек пуçтараннăччĕ. Пурин сăн-пичĕ те уяври хаваслăхпа çиçетчĕ, таврара чан сасси янратчĕ».

Çак кун Тăрăн чиркĕвĕ тепĕр хут чĕрĕлсе тăнă тесен те йăнăш мар. Текех пырса çулăхман ун çине усалсем. Ан тив, пĕр чиркӳ юлтăр республикăн кăнтăр пайĕнче, тенĕ пулинех Мускавра. Çапах пĕрре çеç мар çынсен канлĕхне пăсатăр тесе чиркӳ чанĕсене антарма хăтланнă, вăхăтра çĕнетсе юсама чăрмантарнă, чиркӳ тупăшне 30% таран Мир фондне куçарма хистенĕ. Ачасене тĕне кĕртнĕшĕн, венчете тăнăшăн выговор панă е ĕçрен кăларнă. Чиркĕве хупас тесе двадцатка членĕсене те салатса яма хăтланса пăхнă. Чиркӳ старостине район влаçĕсем суйласа лартнă. Çапах та чиркӳ тăррине çĕнĕ хĕрес хăпартнă, кĕлĕ ирттерессине йăлана кĕртнĕ. Кунта çĕнĕ пачăшкăн – Кивĕ Ахпӳрт чăвашĕн Петр Павловăн тӳпи те пысăк. Петĕр атте ку чиркӳре вунă çул тăрăшнă. Кайран чăн та, темиçе настоятель те улшăннă. Чи нумай ĕçлекенни (17 çул) вара – Николай атте. Икĕ çул каялла Аслă вăрçă ветеранĕ, турра ĕненекенсен сывăх тусĕ, Ленинград блокадине тӳснĕ ватă салтак пиртен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Чиркӳшĕн пысăк та пархатарлă нумай ĕç тунине шута илсе ăна картишнех, алтарь çумĕнчи ирĕклĕ вырăна пытарчĕç. Ун çумĕнче

республикăн Кăнтăр районĕсен благочиннăйĕ, çак ялăн пултаруллă ывăлĕ, пăшал пульлине пула çамрăклах куçне хупнă Анатолий атте те канлĕ выраН тупрĕ.

Чиркӳ таврара чи ватти пулнипе кăна мар, ытти хăйне евĕрлĕхĕпе те палăрса тăрать.

Пĕрремĕшĕнчен, унта икĕ ĕмĕр ытла ĕнтĕ (2012 çулта чиркĕве уçни 265 çул тултарчĕ – Д.К.) Турă амăшĕн Тихвин турăшĕ упранать. Ун ячĕпе çуллен июлĕн 9-мĕшĕнче чиркӳ праçникне паллă тăваççĕ. Ун чухне Тăрăна халăх йышлăн пухăнать. Хăватлă турăшсен шутне Греции сăваплă Афон тăвĕ çинчен XIX-мĕш ĕмĕртех илсе килнĕ çеттуй Пантелеймон, Таса Троица турăшсене тата ыттисене те кĕртмелле. Алтарьте упранакан Александр Невский çеттуй кнеç турăшĕ те чиркӳн чи хаклă асăнмалăх япали. Ăна ял çыннисем XIX ĕмĕр вĕçĕнче хăйсен вăйĕпе тутарнă.

Иккĕмĕшĕнчен, чиркӳ хăйĕн уçă та янравлă чанĕсемпе палăрать. Пурĕ вĕсем çиччĕ. Чи пысăкки 100 пăт та 14 кĕренкке таять. Ăна 1909 çулта Чулхулари Припаловсен заводĕнче шăратса кăларнă. Çав çулах ял хастарĕсем пилĕк лаша кӳлнĕ сарлака çуна çине лартса хурса яла илсе таврăннă, чиркӳ тăррине вырнаçтарнă. Леонид Матвеевич пĕлтернĕ тăрăх, пĕр пĕчĕк шăнкăравне шкула та панă пулнă, унпа урок пуçланнипе вĕçленни çинчен пĕлтерсе картишне тухса шăнкăртаттарнă. Шел те, 60-мĕш çулсенче ăна çухатнă. Чан çапма чаплă ăстасем, кĕвве-çемме чунпа ăнланакансем кирлĕ. Ун пек маçтăрсем Тăрăнта пайтах пулнă: Семен Макаев, Михаил Антонов, Владимир Медведев, Димитрий Лялькин, Василий Искачкин, Емельян Сорокин... Паян çак йышпа питех мухтанаймăн. Анчах виçĕ-тăватă çын чиркӳ чанне илĕртӳллĕ çемĕ кăларса ĕлĕкхиллех малалла тăсаççĕ.

Виççĕмĕшĕнчен, Тăрăн чиркĕвĕнче Чăваш енрен тухнă пĕрремĕш çеттуй Герман епископ пачăшкăра ĕçленĕ. Чăвашсен паллă художникĕн Алексей Кокелĕн тăван шăллĕ Григорий Афанасьевич Кокель 1883 çулхи

ноябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн районти Турханта хресчен çемьинче çуралнă. Çивĕч ăс-тăнлă çамрăк земство шкулне пĕтерсен дипломсăрах Патăрьелĕнчи чиркӳ прихут шкулĕнче учительте ĕçленĕ. Кайран вăл хамăр таврари чиркӳсенче псаломщикре, стихарьте вăй хунă. Хусанти миссионерсен курсне пĕтернĕ хыççăн ăна пачăшкă санне панă та Тăрăн чиркĕвне çирĕплетнĕ. Кунта вăл 1909–1912 çулсенче пачăшкăра тăрăшнă. Григорий аттен мăшăрĕ те Патăрьел хĕрĕ пулнă. Çак çулсенче вĕсем йывăр хуйха тӳссе ирттернĕ – пĕр ачи çамрăклах вилнĕ. Ăна чиркӳ çумне пытарнă. Йывăç хĕресĕ ларнине те лайăх ас тăваççĕ ял çыннисем.

Йывăр та хĕн-хурлă иртнĕ Григорий Афанасьевичăн ĕмĕрĕ. Совет влаçĕн çулĕсенче ăна темиçе хутчен те арестлесе тĕрмене хупнă. Маларах Чĕмпĕр епархине кĕнĕ Улатăр хулинче, унтан Пăкăрăслан, Кузнецк, Барнаул, Никольск-Уссурийск (вăхăтлăха – Владивосток, Хабаровск, Томск...) епархийĕсене ертсе пынă епископа «контрреволюциллĕ агитаци тунăшăн» тесе (Бамлаг, Амур облаçĕ) 1937 çулта персе пăрахнă. Тĕрĕслĕх хăçан та пулин çиеле тухатех. Чиркӳ умĕнчи пысăк та пархатарлă ĕçĕшĕн 2001 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче Таса Синод хушăвĕпе ăна Раççейĕн асапланса вилнисен йышне кĕртнĕ. Кун пек чыса халĕччен пĕр чăваш та тивĕçмен. Çавăнпа Турханти ентешĕсемпе пĕрлех Тăрăнсем те çеттуй Германпа тивĕçлипех мухтанаççĕ.

Юлашки 50–60 çул хушшинче Тăрăн чиркĕвĕн хорĕ республикăн кăнтăр пайĕнче чи лайăххисен шутĕнче тăрать. Аслă та пысăк праçниксенче икĕ хор тăватă саспа кăмăла çемçетекен тĕлĕнмелле хитре юрлакан сахал мар пулнă. Николай Русаков регент-псаломщикпа унăн мăшăрĕ, Алешевсен çемьи, Патăрьелĕнчи Анна кĕмĕл саспа юрă шăрантарнине халĕ те ас тăвакан пайтах».

«Авангард» хаçат, 2012 çулхи кăрлачăн 11-мĕшĕ (пуçламăшĕпе вĕçĕ), «Хыпар» хаçат, 2012 çулхи утă уйăхĕн 4-мĕшĕ.

ХАЯР ВĂРÇĂ ÇУЛĔСЕМ

2011 çулхи çĕртме уйăхĕн (июнĕн) 22-мĕшĕнче фашистла Германи Совет Союзĕ çине сĕмсĕрле тапăнни 70 çул иртрĕ.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех Чăваш АССРĕнчи пĕтĕм хуласемпе ялсенче митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Унта хутшăннă ĕç-хĕлĕхсем хăйсен пĕтĕм вăйне, кирлĕ пулсан пурнăçне те шеллемесĕр Тăван çĕр-шывшăн пама хатĕрри çинчен хĕрӳллĕ сăмахсемпе тухса калаçнă. Паллах, ун чухне вăрçă нумай вăхăт хушши пырасси çинчен, миçе миллион çемьене инкек кӳрессине шутлама та пултарайман. Ватти-вĕтти вăрçă хирне тухса каякансене кĕске вăхăт хушшинчех тăшмана çапса аркатса киле таврăнасса шанса тăнă. Вăрçă пуçлансан малтанхи уйăх хушшинчех республикăн районсенчи военкомачĕсене 2162 вăйпитти арçынпа яш, 374 хĕрупраçпа хĕрарăм Хĕрлĕ çар ретне илме заявлени панă. Паллах, мобилизаци йĕркипе хĕрарăмсемпе хĕрсене те çар ĕçне, медицина тата çыхăну енĕпе вĕреннĕ специалистсем пулнă май, военкомата чĕнсе илсе вăрçă хирне ăсатнă. Вĕсенчен хăш-пĕрисем медсестра, сандружиница пулса госпитальсенче, телефонисткăсемпе радисткăсем пулса штабсемпе çарсенчи çыхăну уйрăмĕсенче вăй хунă. Вăрçă çулĕсенче пирĕн республикăран кăна 208 пин çын фронта тухса кайнă, вĕсенчен çурри каялла таврăнайман. Патăрьел районĕ тăрăх «Патăрьел энциклопедийĕ», 1 том) илсен вара вăрçă хирĕнчех выртса юлнисен, хыпарсăр çухалнисен шучĕ киле таврăннисенчен те пысăкрах: 8377 çынран 6034-шне çĕнтерӳ кунне кĕтсе илсе çывăх тăванĕсене, ял-йыша урăх курма тӳр килмен.

Ĕçпе вăрçă ветеранĕ Д.Р. Гордеев, унпа тĕл пулса калаçнă чухне вăрçă çулĕсене аса илнĕ май, мана çапла каласа панăччĕ.

Вăрçă пуçлансан тепĕр уйăхра, 1941 çулхи утă (июлĕн) уйăхĕн 28-мĕшĕнче Тăрăн ялĕнчен малтан вăрçă хирне улттăн: Гордеев Дмитрий Романович, Ду-

милин Алексей Николаевич, Думилин Павел Николаевич, Думилин Тихон Владимирович, Емельянов Алексей Николаевич, Крылов Алексей Иванович тухса кайнă. Вĕсенчен Думилин А.Н. вăрçăран килне таврънайман, хыпарсăр çухалнă.

Нимĕç фашисчĕсем Прибалтикăпа пирĕн çĕршыври хĕвел анăçра вырнаçнă республикăсемпе облаçсене хупăрласа илсен, пирĕн Чăваш республикине тăшман пусмăрлăхĕнчен тарса 70 пин çын ытла Украина, Белорусси, Прибалтика республикисенчен, Ленинградпа Смоленск облаçĕсенчен беженецсем çитнĕ, вĕсенчен 18 пинĕшĕ – çула çитмен ачасем. Эстони, Литва, Латви республикисенчен, Ленинградран эвакуацине килнĕ çемьесене Тăрăн ял тăрăхĕнчи ялсенче пушă çуртсене вырнаçтарнă. Вĕсем валли колхозсем столовăйсем уçса апат çитернĕ. Çитĕннисем колхозри ĕçсене хутшăннă, ачасем кĕркунне шкула çӳреме тытăннă, пĕчĕккисем валли ялсенче садиксем уçнă. Вăрçă пуçлансан малтанхи уйăхсенчех колхозсенчи ăратлă лашасене вăйпитти арçынсемпе пĕрле эшелонсем çине тиесе фронта ăсатнă, тыр-пул пухнă çĕрте вырмара вĕсем вырăнне айван лашасемпе вăкăрсене кӳлсе 12–15 çулти ачасемпе шур сухаллă ватăсен тулли тырă миххисемпе мекĕçленме тивнĕ. Пухса илнĕ тырра лавсем çине тиесе ун чухне Йĕпреç элеваторне турттарнă.

18.08.1941 çулта Чкаловски районĕнчи (22.02.1939 çултан тытăнса 20.11.1957 çул таран Патăрьел районĕ Чкаловски районĕ шутланса тăнă) парти райкомĕ йышăннă постановленинчен çакна курма пулать.

Районти чылай колхозсем: Киров ячĕпе тăракан, Ленин çулĕпе, Роза Люксембург, «Красное Батырево» тата ытти колхозсем Хĕрлĕ çара 6–9 сортлă лашасем тăратнă (Госархив современной историиЧР – ф.№200, оп.2, д.1).

1941 çулхи Чкаловски районĕнчи колхозсем тыр-пул пухса илес енĕпе пăхнă график тăрăх:

Колхозсем	çурхи пĕрчĕллĕ культура (га)	ĕç лашисем (пуç)	лаша кӳлмелли сеялкăсем (штук)
Красное Батырево	227	24	4
Роза Люксембург	396	52	3

Тăшман Мускав патнеллех талпăннине пула партипе Совет органĕсем Чăваш республикинче те нимĕç эшкерĕсенчен хӳтĕленес енĕпе Улатăр патĕнче танксем каçмалла мар таран траншейăсем чавма йышăннă. Çакăн пирки ЧАССР Совнаркомĕ 28.10.1941 çулта Сăр патĕнче тата Хусан енне тухакан çулсене танк-пушкăсемпе иртсе каймалла мар чăрмавсем тата тăшманран хӳтĕленмелли канавсем хатĕрлеме постановлени кăларнă. Çула çитмен çамрăксемпе хĕрарăмсене, ĕçлеме пултарнă ватăсене те явăçтарнă çак ĕçе. Унта ĕçлекенсене Явлей ялĕнчи çуртсене вырнаçтарнă, хăш-пĕр колхозри яваплă выраннта ĕçлекенсем тимсĕрлĕхне пула траншея чавакансем, вăрман касакансем выçăпа аптрани, шăнса чире кайни те пулнă ун чухне.

1941 çулхи юпа уйăхĕн (октябрь) 27-мĕшĕнче районти парти комитечĕ бюрори ларура пăхса тухса пĕтĕм колхозсен ертӳçисемпе ял Канашĕсен председателĕсене Сăр юханшывĕ хĕррипе тăшманран хӳтĕленме чăрмавсем тума ĕçлеме пултаракан çынсене лашасемпе тата ĕç хатĕрĕсемпе тивĕçтерес, çак массăлла ĕçре ертсе пыма яваплă çынсем уйăрас пирки хушу кăларать. Аялларах тăватă колхоз çинче чарăнса тăрăпăр.

Задание
по выделению рабочей и конной силы с инструментами для строительства оборонных сооружений по колхозам.

Колхозы	людей	лошадей	лопаты	поперечные пилы	топоры	носилки	продольные пилы
Р.Люксембург	250	10	50	10	50	25	2
Кр.Батырево	220	9	45	10	44	22	2
Октябрь ялавĕ	120	7	25	7	24	12	1
Путь Ленина	225	20	85	20	85	43	3

Список
бригадиров, рабочих бригад по колхозам по строительству оборонных сооружений.

Путь Ленина	Р.Люксембург	Кр.Батырево	Октябрь ялавĕ
Ежов Николай Ег-ч	Аканов Константин	Фролов Николай	Журавлев Алексей
Сидоров Никита М.	Илехметов Иван А.	Сергеев Василий	
Халдырмин Федор	Васильев Тимофей В.	Никитин Василий	
Медведев Алексей	Макаев Дмитрий Н.		
Ляллин Сергей В.			
Яковлев Федор К.			
Маллин Александр Г.			

Танксем каçмалла мар канавсене Сăр тăрăхĕнче Улатăртан тытăнса Етĕрне хулине çитиччен чавса 1942 çулхи раштав уйăхĕнче вĕçленĕ. Тăшманран хŭтĕленме çав канавсемсемсĕр пуçне 1607 дзот, 1490 çĕр пŭрт (землянка) туса хатĕрленĕ.

Çак ĕçре хастарлăх кăтартнăшăн Чкаловски районĕнчи колхозсенчен ятарлă бригадăсемпе янă палăрнă ертŭçĕсемпе колхозниксене пурлăх тата мо-

раль енчен хавхалантарнă. ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотине 6.12.1941 çулта «Роза Люксембург» колхозра платник пулса ĕçлекен Шекеев Илларион Николаевича тата «Красное Батырево» колхоз бригадирне Долматов Никита Долматовича парса чыслантă.

Вăрçă пуçлансан малтанхи уйăхсенчех, ялсенчен вăйпитти арçынсем вăрçă хирне тухса кайсан, колхозсенче тыр-пул пухса илес пирки йывăрлăх тухса тăнă. Чăваш республинчи 30-мĕш çулсенче районсенче, çавăн пекех Чкаловски районĕнче те МТС йĕркелесен комбайнсемсемпе тракторсем тата ял хуçалăх техники МТСра шутланса тăнă. Трактор бригадисене районти колхозсем çумне çирĕплетнĕ. Кашни тракторист-комбайнер, ака-суха тăвассишĕн, тыр-пул пухса илессин пахалăхĕшĕн яваплă пулнă. Трактор бригадин бригадирĕсенчен уйхир ĕçĕсене ертсе пырассипе япăхтарсан çирĕп ыйтнă. Тепĕр енчен илсен, малта пыракан бригадирсемпе уй-хир ĕçченĕсене мораль тата пурлăх енчен хавхалантарнă. МТСра ĕçлекен арçынсем фронта кайсан вĕсене улăштарма çамрăксене трактористсен курсĕнче вĕрентес ĕçе йĕркелесе ярасçĕ. Хăш-пĕр трактор бригадисенче хĕрсемпе хĕрарăмсем (тĕслĕхрен, районти пĕрремĕш трактористкăсем Татьяна Кудановăпа – Кивĕ Ахпăртрен, Ксения Шашкина – Туçаран 1935 çултан тытăнса) вăрçă пуçланичченех тракторпа ĕçлеме тытăннă. Патăрьел МТСĕнче 1937 çулта çуракине тухас умĕн хĕрарăмсен икĕ трактор бригадине йĕркеленĕ. Вĕсенчен пĕрне Татьяна Иванова, тепĕр бригадине Александра Ванюшкина бригадирсем ертсе пынă. А.Т. Ванюшкина, Комсомольски районĕнчи Нĕркеç ялĕнче çуралса ӳснĕскер, 1936 çулта Канашри механизаци шкулне вĕренсе пĕтерсенех трактор бригадинче бригадир пулăшаканĕ пулса ĕçленĕ. Тепĕр çулхине, хĕрарăмсен трактор бригадине йĕркелесе ярсан, А.Т. Ванюшкина ертсе пыракан 12 трактористкă Тăрăнпа Кĕçĕн Патăрьел хирĕсенче ака-суха тунă, каярах ытти хуçалăхсене куçнă.

Вăрçă вăхăтĕнче Чкаловски тата Первомайски районĕнчи хĕрарăм-трактористкăсем çĕрне-кунне пĕлмесĕр, канмалли куна пăхмасăр, арçынсенчен кая мар ака-суха тунă, комбайнерсем тыр-пула пухса кĕртессишĕн вăй-халне шеллемен. Чылай арçынна фронта илсе кайсан, тракторсемпе ĕçлекенсенчен 60 процент ытла хĕрарăмсем пулнă. Хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсене ХТЗ-7 маркăллă кустăрмаллă тракторсене хускатса ярасси чĕр нуша пулнине эпĕ хам та вăрçă çулĕсенче тракторпа ĕçленисенчен пĕрре кăна мар илтнĕ. Хĕллехи сивĕсенче техникăна юсаса тертленнĕ. Çапах та ун чухне нăйкăшса тăма май пулман, чăтма хăнăхнă çамрăксем малаллах пăхнă, умри задание тепĕр чухне икĕ хут ирттерсе тултарни те пулнă. Тылри ял ĕçченĕсем фронтра мĕнле йывăррине чун-чĕрипе ăнланнă, тăшмана çĕнтерессе шанса тăнă, хăйсен çитĕнĕвĕпе çĕнтерӳ кунне çывхартма тăрăшнă. Наталья Мефодьева, Гельбану Куликова, Евдокия Константинова тата ытти трактористкăсемпе комбайнерсем ĕçре хастарлăх кăтартнăшăн тĕрлĕ шайри Хисеп хучĕсемпе паллă ятсене тивĕçнĕ. Вĕсен Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче малта пыракансен опычĕпе паллашма тӳр килнĕ, Чăваш АССР депутатне суйланă. Зинаида Скворцова, Комсомольски районĕнчи Исемпел ялĕнче çуралса ӳснĕскер, МТСра трактористкăсен хушшинче 1936 çулхи ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухнăскер, Чăваш республикипе кăна мар, çĕршывĕпех палăрнă. Ăна çав çулхине ытти 18 трактористкăпа пĕрле Пĕтĕм Союзри премие панă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче (1941–1945 çç.) районти МТСра ĕçленĕ чухне хастарлăх кăтартнăшăн чылай хĕрарăм-механизатора (вĕсен шутне трактористсемпе комбайнерсем кăна мар, плугарьсем те кĕнĕ) медальсем парса чысланă. Вĕсен хушшинче Кĕçĕн Патăрьелĕнчен Александра Максимовна Андреева, Александра Илюткина, Анастасия Илюткина, Феодосия Рубцова, Зинаида Скворцова, Вера Хурась-

кина; Треньелёнчен Ольга Митрофанова тата Ефросинья Паймина илме тивёçлё пулнă. Çак медальпе Чăваш Ишек хёрёсене МТСра плугарь пулса ёçленё Маргарита Куракова (Коннова) тата Александра Саламатова (Ермолаева) трактористкăна (вёсем кайран çак районти Тăрăн ялне качча килнё) наградăланă. (Коннова Маргарита пирён анне пулать – Д.К.)

Çӳлерех асăннă пирён тăрăхри хăш-пёр хёрсен вăрçă вăхăтёнчи ёçри паттăрлăхё пирки районти хаçатра кăна мар, Чăваш республикинче тухса тăракан хаçатсенче те мухтаса çырнă. «Красная Чувашия» хаçатра вăрçă вăхăтёнче тёрлё çулсенче тухнă статьясем çинче чарăнса илер-ха эппин.

Девушки возвращаются к тракторам.

Призыв депутата Верховного Совета СССР, знатной трактористки Паши Ангелиной нашел живой отклик среди молодых девушек колхозного села. Они приходят в правления колхозов с требованием – направить их на краткосрочные курсы трактористов, комбайнеров, машиноведов и весовщиков. Руководство МТС пошло им навстречу. На курсы приняты более 100 девушек. Среди них лучшие ударницы колхоза, носящего имя германской революционерки Розы Люксембург – С.Думилина, М.Илехметова, С.Ермолаева, передовая звеньеводка колхоза «Пламя Октября» М.Такмакова и др. Занятиями руководят лучшие бригадиры тракторных бригад: А.Коновалов, А.Елагин, И. Васильев, механики: В.Северов, И.Артемьев и др.

М.Алексеев. 05.07.1941 г.

Тракторная бригада Константиновой.

7-я женская тракторная бригада Александры Константиновой – одна из лучших нашей МТС. На 1 сентября она выполнила годовой план на 119 процентов, выработав в среднем по 340 га условной пахоты на каждый колесный трактор. Трактористка Илюткина А.(Александра – Д.К.) выполнила задание на 122 процента при значительной экономии горючего. А.(Александра

Максимовна – Д.К.)Андреева еще до начала уборки выработала за свои смены 211 га, против 165 га по норме. Бригада Контантиновой в этом году обслуживала колхозы «Родина» и «Большевик», которые считались раньше отстающими в районе.

Ф.Архипов – директор Чкаловской МТС.
15.09.1944 г.

Иртнĕ ĕмĕрĕн вăтăрмĕш-хĕрĕхмĕш çулĕсенче, уйрăмах вăрçăн йывăр çулĕсенче, Патăрьел, Чкаловски, Первомайски районĕсенчи МТСсем пирĕн республикăра малтисен шутĕнче пынă. МТС ертӳçисемпе хăш-пĕр трактор бригадисен бригадирĕсем, трактористсемпе комбайнерсем, механизаторсемпе ытти специалистсем тĕрлĕрен хисеп паллисем, орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă. Трактор бригидисен бригадирĕсем: Василий Ерофеевич Пыркин, Алексей Александрович Михайлов, Иван Александрович Ситов тата ытти вăтам шайри ертӳçĕсем – МТСри трактористсемпе комбайнерсемшĕн тĕслĕх шутланса тăнă.

Мухтава тивĕçнĕ çаван пек çынсем çинчен Патăрьел районĕнчи «Сельхозтехника» пĕрлешĕвне чылай çул ертсе пынă Л.Н. Раськин çырнă «Первопроходцы и последователи» кĕнекинче тĕплĕнрех вуласа пĕлме пулать.

Вăрçă пуçлансан ял-хуçалăха ертсе пыма пултаракан вăйпитти арçынсем фронта кайнипе колхозсенче кадрсен ыйтăвĕ çивĕчленнĕ. Ял-хуçалăх ĕçченĕсенчен чылайăшĕн колхозсене, бригадăсемпе фермăсене ертсе пыма вĕренӳ шайĕ пĕчĕк пулнă, хăш-пĕри пачах та çырма пĕлменни те пулнă вăл вăхăтра. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш республикинчи хăш-пĕр районсенче ял хуçалăх специалисчĕсене вĕрентсе кăларма Улатăрпа Вăрнар зооветеринари техникумĕсен çумĕнче виçĕ уйăхлă курссем уçнă. Агрономсене Улатăр, Чкаловски, Канаш, Сĕнтĕрпе Шупашкар районĕсенчи вăтам ял хуçалăх шкулĕсенче вĕрентсе хатĕрленĕ. Колхозсене ертсе пыракансене тата бригадирсене председатель

пулса ёçлеме тытăниччен Чăваш ял хуçалăх институчĕ çумĕнче йĕркеленĕ колхоз ертӳçисене хатĕрлекен курса вĕренме янă.

Вăрçăччен те, вăрçă вăхăтĕнче те колхоз ертӳçисем час-часах (3–6 уйăхран) улшăнса тăнине пула архивсенчи материалсенче вĕсен хушамачĕсем тухмарĕç. Иртнĕ ĕмĕрĕн 30–40 çулĕсенче «Роза Люксембург» колхоз председателĕн пуканне, ваттисем каланă тăрăх, Сапожников Николай Александрович, Краснов Александр, Емельянов Андриян, Паймуков Александр Григорьевич, Думилин Никон Петрович йышăннă. Паймуков вара хут ёçне, çырма-вулама та пĕлмен, ун валли ятарласа пичет туса панă. Кӳршĕри «Красное Батырево» колхоза çаван пекех кĕске вăхăт хушши асăннă çулсенче Воробьев, Алякин Владимир Степанович, Рубцов Алексей Антонович, Каллин К. (ячĕсем паллă мар), Владимиров Дмитрий Тихонович тата ыттисем ертсе пынă. «Октябрь ялавĕ» колхозра та председательсем çав çулсенче улшăнсах пынă: Юманов Иван, Краснов Павел, Матвеев Семен, Тихонов Василий Егорович, Зайцев, Степанов Александр Иванович, Макаров Иван, Лысов Иван Семенович, Эльмуков Яков Терентьевич, Игорев Терентий Викторович, Логунов Дмитрий Иванович, Пчельников Алексей Петрович 3–6 уйăхран тытăнса икĕ-виçĕ çул таранччен çеç хуçалăх пуçлăхĕн пуканне йышăнма пултарнă. Асăннă ертӳçĕсенчен чылайăшне колхозсене малалла аталантарас енĕпе палăрмалла çитĕнӳсем тунă тесе ваттисем те калаймаççĕ, вĕсенчен хăшне-пĕрне пĕлмеççĕ те. Архивсенче протоколсемпе паллашнă май вĕсенчен хăш-пĕрин хушамачĕсем анчах тĕл пулчĕç, хăйсен тата ашшĕсен ячĕсем те паллă мар. Çапах та вăрçă вăхăтĕнчи йывăр çулсенче «Красное Батырево» колхоз председателĕсем А.Хураськинапа (1942 ç.) Д.Т. Владимиров (1943 ç.) нумай вăхăт хушши ёçлемен пулин те вĕсем лайăх енĕпе палăрма ĕлкĕрнĕ, уй-хирте тыр-пул туса илессипе колхоз районта малтисен ретĕнче пулнă. Çакăн пирки архиври протоколсем

çирĕплетсе параççĕ. Ака-сухана кĕске вăхăтра ирттерсе тыр-пула тăкаксăр хиртен пухса илессине ун чухне пысăк тимлĕхпе пăхнă, колхоз председателĕпе бригадиртан парти органĕсем çирĕп ыйтнă. Колхоз пурлăхне вăрланăшăн е салатнăшăн, тимсĕрлĕхе пула ял хуçалăх техникине юрăхсăра кăларсан тата ĕç дисциплинине сĕмсĕррĕн пăснăшăн, колхозниксене хĕненĕшĕн асăннă ертӳçĕсене вăрçă вăхăтĕнчи саккунпа следствие ирттерсе судпа айăпланă. Ун пек тӳнтерлĕ пулăмсене хăш-пĕр тĕслĕхпе çирĕплетме пулать.

Протокол № 129 от 27.12.1942 г.
совместного заседания бюро Чкаловского райкома ВКП(б) и райисполкома.

Слушали: по колхозу «Октябрь Ялавĕ» т.Эльмуков умышленно затягивает обмолот хлебов.

Постановили: За саботаж в деле выполнения хлебозаготовок председателя колхоза «Октябрь Ялавĕ» Эльмукова отдать под суд. Поручить райпрокурору Катыкову привлечь его к уголовной ответственности по законам военного времени.

Протокол № 2 от 20.02.1945 г.
заседания бюро РК ВКП (б)

Председатель колхоза «Октябрь Ялавĕ» Игорев Т.В. за избиение подростков осужден 5 годам меры социальной защиты; Юманов И.Ф. – бригадир этого колхоза за нанесение побоев колхозников осужден к 2 годам к такой же мере наказания. (Госархив современной истории ЧР, ф.200, оп.2, д.100).

Вăрçă вăхăтĕнче патшалăха тыр-пул продукцине тăратасси ӳснĕ май колхозниксен ĕç кунĕпе тивекен апат-çимĕç продукцийĕ чакса пынă, пĕр çын пуçне çулталăкри ĕç кунĕ тăрăх вăтамран 73,2 кг çăкăр, 43 кг çĕрулми, е 200 гр. çăкăрпа 118 гр. çĕрулми валеçсе панă. Тĕрлĕ сăлтава пула (çу уйăхĕсем çумăр çумасăр

типĕ тăнăран тырă пулманнипе е колхоз ертӳçисем тыр-пула пухса илессине йĕркелеменнипе тата ыт. те) колхозниксем тырă продукчĕсене илейменни те пулнă. Çавна пула хырăма лăплантарас тесе вăрманта йĕкел пуçтарнă, йывăç кăчки-хупписене авăртса çăнăх тунă, çуркунне юр ирĕлсен иртнĕ çулхи уй-хирте çĕрулмие çĕрсе пухнă, çавăн крахмалĕнчен пашалу, тĕрлĕрен курăкран яшка пĕçерсе çинĕ. Вар-хырăм, тиф чирĕсене пула çитĕннисемпе ачасен хушшинче вилнисем те пулнă. Харпăр хăйĕн хуçалăхĕнче выльăх-чĕрлĕх усраса тата пахча-çимĕç туса илсе пурнăçа сыпăнтарса пыма та май пулман – пысăк налуксем хурса ял çыннисене нушалантарнă, уйрăмах ачасене йывăр килнĕ.

Çуллахи хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче уй-хирте е выльăх фермисенче ватăрах арçынсемпе танах 13–16 çулхи ачасен те вăкăрсемпе ĕнесене кӳлсе иртен пуçласа каçчен ĕçлеме тивнĕ. Колхозсенче юлнă лашасем ырханнипе вĕсене хире çураки тунă çĕре тата ытти ĕçе кӳлсе тухма юрăхлă пулман. Çавăнпа вăкăрсемпе ĕнесене хирти ĕççене кăна мар, вăрманта каснă йывăççене турттарнă çĕрте те усă курас тесе кӳлме тивнĕ. Çулла кăна мар, хĕллехи вăхăтра та çамрăксенчен асларахчисене вăрçа каяссинчен хăтарнă, вĕсене ватă арçынсемпе, хĕрарăмсемпе пĕрле вăрмана вутă хатĕрлеме явăçтарнă.

Вăрçă вăхăтĕнче тылри çула çитмен çамрăксен нушаллă пурнăçне районта тухса тăракан хаçатăн пĕр номерĕнче кун çути курнă «Тылри ӳкерчĕксем» статьяран илсе кăтартас тетĕп.

Вăрçăн чи йывăр вăхăчĕ. Фронтра хаяр тытăçусем пыраççĕ. Хĕç-пăшал, апат-çимĕç кирлĕ салтаксене. Çавсене хатĕрлесе фронта ăсатасси вара тыла юлнисем, ытларах çамрăк хĕрарăмсемпе ачасем çинче юлнă. Вĕсем заводсенче, уй-хирсенче çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшнă. Çавăн пекех хĕç-пăшал, апат-çимĕç хума ытларах та ытларах ещĕк, фанера хатĕрлемелле пулнă. Çав хатĕр продукци валли хурăн йывăççи кирлĕ, тăршшĕ

пĕр метр та сакăр вунă сантиметр. Йывăçа алă пăчкипе касса йăвантармалла, пĕр тан пайласа купасем тумалла. Ёçре вара пĕтĕмпе тенĕ пекех хĕрарăмсем вăй хунă. Кире вăрманĕнче хĕрӳ ĕç пырать... Чăваш Ишек ялĕнчи вун тăххăра пуснă хĕрсем – Марги, паспорт çинче Маргарита Куракова, Марье Абужарова, Маттĕрне Семенова пĕр ушкăнра ĕçлеççĕ. Бригадăра – 10-12 çын. Виçĕ çул тăрăшрĕç вăрманта Чăваш Ишек хĕрĕсем. Урисенче – çăпата, тăла чăлха, çире – фуфайка... Кулленхи апачĕ – пăрçа çăнăхĕнчен пĕçернĕ пашалу, ясмăк шӳрпи.

...Ялсенче хĕрарăмсем тырă выраççĕ. Тырри лутра, сайра, пиçенлĕ. Лутраскерне çĕр çумĕнченех вырнăран, пилĕк ыратса хуçăлсах анать. Тĕл-тĕл вырма та çук çĕрте хĕрарăмсем ăна кăкласçĕ... Хĕрарăмсен тепĕр ушкăнĕ вăкăрсемпе кĕлте турттарать. Вăрçă вăхăтĕнче Юхма тăрăхĕнче вăкăрсем кӳлсе çӳреме вĕренчĕç. Вăкăрсене çеç мар, ĕнесене те кӳлеççĕ. Вăкăр çапах та лаша мар: темле хăваласан та васкамасть, аран çеç уткалать, çур сехетре те çур çухрăм кăна каять. Шыв курсан вара чараймастăн. ...Чăтать çав хĕрарăм. Чылайăшĕн мăшăрĕсем, каччисем, çывăх тăванĕсем пуç хучĕç вăрçăра. Вĕсем çинчен аса илсе мĕн чухлĕ куççулĕ юхтарман пулĕ. Фронта кирлĕ япаласемпе тивĕçтерес тесе мĕн чухлĕ тар кăларнă, выçăллă-тутăллă пурăннă, çĕр çывăрман. Çапах та вăрçăран тавăннисенчен чылайăшĕ вĕсене: «Мĕн курнă эсир, хĕрарăмсем тылра, окопри çăра пылчăкра выртман, атакăсенче этем пурнăçне татас тесе таврара шăхăракан пульăсене хирĕç ыткăнман, шывра, юр çинче тăшманран пытанса выртман. Ларнă кунта алă усса, хуçалăхсене юхăнтарса янă», – тесе хăртма именмен.

– Кӳрентерекен сăмахсене те, йывăрлăхсене те нумай чăтнă ĕнтĕ, – аса илет халĕ çитмĕлтен иртнĕ Марги аппа. Чăнах та, шухăш çăмхи сӳтĕлме тытăнсассăн тытса та чараймастăн.

«Палан хыççăн пилеш те тутлă», – теççĕ халăхра. Чăваш Ишек çамрăкĕсем вăрçă хыççăн та икĕ çул

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç тăрăхĕнче вăрман каснă. Çав шутра Серафима Майкова, Евгения Краснова, Николай Кураков, Валентин Курманаев. Вĕсем хушшинче çитĕнсе çитнĕ хĕр Маргарита Куракова та пулнă. Хĕрсем йывăç йăвантарнă, купаланă, арçын ачасем турттарса тăнă. Вутă-шанкă шкулсене, кантурсене, фермăсене ăшăтма та кирлĕ. Çурт-йĕр купалама та йывăç кирлĕ. Хăйсен йывăр шăпине ылханнă çамрăксем, вăрçăра пуç хунă çамрăксемшĕн хумханнă.

– Манпа пĕр çулхисенчен, вăрçа кайнисенчен яла пĕр Якку Цыпленков çеç каялла таврăнчĕ. Пирĕн вăхăтри хĕрсен савнă туспа калаçасси çыру вĕçне юлнă. Анчах çырусем те сасартăках килме пăрахнă. Ялта тĕрлĕрен хыпар çӳренĕ вара: «вилнĕ», «тыткăна лекнĕ», «аманнă», – тет Марги аппа.

Çавах та ырри те аса килет. Чăваш Ишек ялĕ çумĕнчи вăрман уçланкине вăййа тухатчĕç çамрăксем. Ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн чăннипех канма лайăх пулнă унта. 1949 çулта шăпах çакăнта Марги яла тăванĕсем патне хăнана килнĕ 22-ри Тăрăн йĕкĕчĕпе – Миккуль Конновпа палашнă. Çуркунне вĕсем пĕрлешнĕ. Çичĕ ача пăхса çитĕнтернĕ.

– Хуйха та, савăнăçа та пĕрешкел, никама та палăртмасăр чăтса, пытарса çӳреме вĕренсе çитнĕ хĕр пулнă вăл. Чăвашсен «Аллу хуçăлсан – алса ăшне пытар» текен каларăшĕ пек ытлашши сăмах та вĕçерĕнсе кайман унăн, – каласа парать мăшăрĕ Николай Сергеевич.

Чăнах та, хуйхă чух хуйхăрмасăр, савăнăçлă чух хаваснанмасăр, екки пур чух калаçмасăр чăтма пысăк чун вăйĕ кирлĕ. Кунта Марги аппан хăйне евĕр темĕнле çирĕплетекенни – йывăр вăхăт, выçлăх çулĕсем, вăрçă вăхăчĕ – пулнă. Асăннă пулăм шăпах вăрçă тапхăрĕнче хĕрсен кăмăлне те, сăн-питне те ĕмĕрлĕхех витĕм çапнă.

1927 çулта çуралнă ачасем тискер вăрçа пурте лекмерĕç, вăрçă асапне тылри ĕçре курчĕç. Шăпах çавăн пек шăпа пулнă Марги мăшăрĕн. Саккăрта чух-

нех тăлăха юлать вăл. Малтан Вăтаелĕнче кукамăшĕ патĕнче пурăнать, каярахпа Тăрăн ялне пурăнма куçать. Ашшĕ-амăшĕн çурчĕ хупăнса тăнă. 1941 çултан пуçласа вунтăваттăри ача колхоз ĕçне кӳлĕнет. Нăрваш-Шăхаль, Хурама Твар тăрăхĕнчи вăрмансенчен вăкăрпа вутă-шанкă, çурт-йĕр купалама пĕренесем турттарать. Каярахпа çарта службăра тăрать. Пĕр-пĕринпе пĕрлешсен çамрăксем ураланма пуçлаççĕ.

– 1954 çулта ялта ĕне усрама тытăнтăмăр. Кил-çуртра виçĕ пĕчĕк ача-çке, сĕтсĕр май çук. Маленков вăхăтĕнче хресченсене чылай çăмăллăхсем пачĕç, налуксенчен хăтарчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче эпĕ плугарьте те ĕçленĕ. Каярахпа фермăра тăрăшнă, çулла кĕтӳ кĕтнĕ. Çирĕм çул пĕр тухмасĕр конюхра, сакăр çул скотникре ĕçлерĕм, ултă çул ферма кĕтĕвне кĕтрĕм. Çăмăл-и, йывăр-и – чăтнă, найкăшман. Аслă ачасем, Митя, Петя, Володя та ял кĕтĕвне кĕтрĕç, – хурланса аса илет Миккуль тете.

Тăван çĕршыв Аслă вăрçин мĕнпур халăх паттăрлăхне аса илнĕ вăхăтра Марги аппапа Миккуль тете «1941–1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн» медальсем çине пăхаççĕ, куççулĕсене шăлаççĕ.

Юрий Михеев.

Патăрьел районĕнче тухса тăракан «Авангард» хаçат, 05.07.1994 çул.

Вăрçă вăраха тăсăлнă май Хĕрлĕ çара тăшмана аркатса тăкма вăйпитти çынсем кăна мар, самолетсемпе танксем тата ытти йышши хĕç-пăшал та çителĕклĕ кирлĕ пулнă. 1942 çулхи кĕркунне Сталинград хулинче йывăр çапăçусем пынă чухне пĕтĕм Совет Союзĕпех тăван çĕр-шыва пулăшас тĕллевпе патриотла юхăм пуçланса каять. Çак пуçарăва Чăваш республикинче те фабрикăсемпе заводсенче, кохозсемпе учрежденисенче ырласа йышăнаççĕ: пурлăх фондне уçма тытăнаççĕ. Пухăнса пынă укçа-и вăл е ĕç укçин пĕр пайĕ, ял-хуçалăх



Николай Сергеевичпа Маргарита Игнатьевна Конновсем

продукцийĕ е ăшă тумтир – пурте Хĕрлĕ Çар валли, «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» танк колонни тунă çĕре кайнă. Республикăри комсомол организацийĕсем «Комсомолец Чувашии» ятпа самолетсен эскадрилйи тума укçа пуçтарнă.

1942 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 29-мĕшĕнче ВКП(б) Чăваш обкомĕ ГКО председателĕ И.В.Сталин патне телеграмма çитернĕ. Унта çырнă тăрăх, Чăваш АССРĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тата трактористсем танк колоннисем тума: «Колхозник Чувашии» валли 30 млн. 75 пин тенкĕ, «Тракторист Чувашии» валли 1 млн. 477 пин тенкĕ укçа хывнă. Паллах, çак патриотла юхăмра Чкаловски районĕнчи МТС механизаторĕсемпе колхозсенчи малта пыракан çĕр ĕçченĕсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те пысăк хастарлăх кăтартнă.

Çак патриотла юхăм Чкаловски районĕнчи хăшпĕр колхозсемпе МТСра, шкулсенче çĕнтерӳ кунне

çывхартас ёçре колхозниксемпе колхозницăсем, механизаторсемпе шкул ачисем оборона фондне укçа тата облигаци хывас ёçре хăйсен тӳпине хуни çинчен 1943 çулта Чкаловски районĕнче тухса тăнă «Коммунизм байрагы» (Коммунизм ялавĕ – Д.К.) хаçатĕнчи статьясем тăрăх тата 1975 çулта Патăрьел районĕн «Авангард» хаçатри «Вăрçă кунĕсен хроники» статьяра вуласа пĕлме пулать.

Колхозниксем Хĕрлĕ çара апат-çимĕç ытларах парса тăрас тесе, кăçал ял-хуçалăх продукчĕсен пур обязательствине те вăхăтра пурнăçа кĕртрĕç. Çар фондне 150 пăт тырă хыврĕç. (27.02.1943 ç.)

«Боец всеобуча» ятлă танксен колонни тума тума.

Тăрăнти всеобуч пунктĕнче вĕренекенсем танксен «Боец всеобуча» ятлă колоннине тума хăйсен хушшинче 2800 тен. укçа пухса пачĕç. Всеобуч пунктĕнче вĕренекен хĕрсенчен çак ĕç валли нумайăшĕ 100 тенкĕрен пуçласа 400-шер тенкĕ хыврĕç.

П.К. (28.03.1943 ç.)

Фронтовиксен çемйисене пулăшатпăр.

Тăрăн ялсоветне кĕрекен Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем хăйсен пухăвĕнче фронтовиксен çемйисене пулăшма 3 ц çăнăх, 1 ц кĕрпе, 5 кг какай, 150 çăмарта тата ытти япаласем те уйăрса хунă. Кунсăр пуçне колхозниксен хушшинче 3 ц çĕрулми тата ытти япаласем те пухнă. Вунă кунлăх вăхăтĕнче 12 сысна çури тата ытти япаласем парса 32 çемьене пулăшнă.

И. Думилин. (01.04.43 ç.)

«Вăрçă кунĕсен хроники» статьяран:

1943 çул

Январĕн 1-мĕшĕ. «Маяк» (Кызыл Чишма) колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем «Колхозник Чувашии»

танк колонни тума 432 пин тенкĕ укçа, 1200 пăт тырă хывнă. Çак колхоз председателĕ З. Минаев хăй кăна 100 пин тенкĕ панă. Государствăн Оборона Комитетне янă çырура вăл хăй укçипе тунă самолета Сталинграда хŷтĕлекенсене пама ыйтнă. Çак колхоз членĕ Гарифулла Латфуллин 50 пин тенкĕ хывнă.

Январĕн 5-мĕшĕ. Чкаловски районĕнчи «РОКК» колхозри (Кивĕ Ахпŷрт ялĕ) комсомолецсемпе çамрăксем Чăваш АССРĕнчи колхозсемпе предприятисенчи тата учрежденисенчи комсомолецсемпе çамрăксене «Комсомолец Чувашии» самолетсен эскадрилйине тума укçа пухма республикăри пуçару тунă.

«Комсомолец Чувашии» самолетсен эскадрилйине тума пĕр кун хушшинче районĕпе 714 пин тенкĕ пухнă. «РОКК» колхоз членĕсем 300 пин тенкĕ, çак колхозри комсомол организацийĕн секретарĕ А.П. Еливанов 25 пин тенкĕ, колхоз председателĕ Каргин 25 пин тенкĕ хывнă. Чăваш Сăкăт ялĕнчи «Красное Знамя» колхоз членĕсем пĕр кун хушшинче 107 пин тенкĕ пухнă. Н. Тинюков колхозникхăй кăна 50 пин тенкĕ, комсомол организацийĕн секретарĕ Н. Пирогов 15 пин тенкĕ панă.

Январь.

Чкаловски районĕнчи Кызыл Чишма ял Советĕнчи «Кызыл-Тан» колхоз председателĕ Г.К. Камалов «Комсомолец Чувашии» эскадрилйи тума 300 пин тенкĕ панă. Колхоз председателĕ Я. Кузнецов 50 пин, В. Веревкин 30 пин, 59 çулхи Г. Наперсткин 25 пин, Д. Наумова колхозница 15 пин, Дергунова 5 пин тенкĕ хывнă. Киров ячĕпе хисепленекен колхоз (Вăтаел) ĕçченĕсем 50 пин тенкĕ, «Восток» (Татмăш ялĕ) – 75 пин тенкĕ: «Çăлтăр» (Анат Туçа) çар самолечĕсем тума 300 пин тенкĕ хывнă. Кузнецов 13 пин, С. Торговцев – 15 пин, А. Заплаткин – 10 пин, Л. Плешков çамрăк колхозник 8 пин тенкĕ панă. 1943 çулхи январĕн 31-мĕшĕ тĕлне районта пурĕ пĕр миллион та 152 пин тенкĕ пухăннă.

Январĕн 31-мĕшĕ. Чкаловски МТСĕнчи трактористсемпе трактористкăсем «Тракторист Чувашии»

танк колонни тума укçа пухас ёçе хастар хутшăннă. И. Ситов бригадир 20 пин тенкĕ, Люкин 10 пин, А. Андреева комбайнерка 4 пин тенкĕ панă.

Январĕн 31-мĕшĕ. Эвакуаци йĕркипе Ленинградран килнĕ Патăрьелĕнчи вăтам шкулта вĕренекенсем Инна тата Валя Лазаревасем, Юра Никифоров, Наташа Набатова оборона фондне 600 тенкĕ укçа тата 650 тенкĕлĕх облигаци хывнă, Чăваш республикинче пурăнакан Ленинград ачисене хăйсенчен тĕслĕх илме чĕнсе каланă.

«Авангард» хаçат, 18.03.1975 ç.

Кĕске справка: Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1944 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче йышăннă тăрăх Чкаловски районĕн центрне Чкаловскинчен Патăрьелне куçарнă, район ячĕ ылмашăнман.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăнни çинчен Александр Иванович Алексеев учитель-пенсионер аса илĕвĕнчен.

1. Хăрушă хыпар.

1941-мĕш çулхи июнĕн 21-мĕшĕ. Патăрьелĕнчи педучилище пĕтернĕ çамрăксем савăнăçлăн сывпуллашу каçĕ ирттерчĕç. Кашни яшăн-хĕрупраçăн малашнехи ĕмĕтсемпе тĕллевсем, пурнăçри шанчăк тĕвĕленнĕ.

Июнĕн 22-мĕшĕ. Яланхи пекех ирхине ирех ялта ĕççи пуçланнă, ĕне-выльĕх макĕрни, кĕтӳ хăвалакан хĕрарăмсен сасси илтĕннĕ. Кăнтăрла çитеспе ял хушшинче уяр аçа çапнă евĕр хĕрушă хыпар сарăлчĕ: «Вăрçă пуçланнă». Халăх унталла-кунталла хĕвĕше пуçларĕ. Çар службинчен тавраннă командирсем 4–5 кун хушшинче военкомата çул тытрĕç. 10–15 кунран ялти вăйпитти арçынсем те çемйисемпе, кӳршĕ-аршăсемпе, ял-йышпа сывпуллашрĕç. Кашни килте сывпуллашу. Ашшĕ-амăшпе, савнă мăшăрĕпе, ачи-пăчипе куççуль юхтарса уйрăлаççĕ вăрçа тухса каякансем. Çак вăрçа пирĕн ялтан 200-тен те ытла çын тухса кайрĕ. Çурри



ытларах вёсенчен Тăван çёршывшăн нимёç фашисчёсене хирёç пынă хаяр вăрçă хирёнче паттăррăн çапăçса пуçёсене хучёç. Хăш-пёр çемьерен 4–5-шер арçын вăрçă вутне кёнё. «Роза Люксембург» ятпа тăракан колхоз вăрçă валли ятарласа ӳстернё (РККА фончё) 25 лаша фургонсем кӳлсе, колхозра лайăх ёçленё çынсен аллине парса (А. Крылов, В. Орлов, Андрей Алексеев) вăрçа ăсатнă. Лялькин Никита ятлă старик 3 ывăлне: Матвине, Михаляна, Якова тата Николай мăнукне (Матви ывăлне) ăсатнă, анчах пёри те киле таврăнайман вăрçăран. Думилин Николай виçё ывăлне: Ивана, Степана, Алексее вăрçă хирёнчен кётсе илеймен. Хёрсем те: Шекеева Елена Илларионовнапа Тихонова Вера Николаевна вăрçа кайнă. Ялта ватăсем, хёрарăмсемпе ачасем çеç тăрса юлнă, пётём йывăр ёç вёсем çине тиеннё. Вăрçă çитнё вырăнсенчен яла беженецсем килсе тулчёç. Ял халăхё, пуçлăхсем вёсене кăмăлтан кётсе илчёç, май килнё таран апат-çимёçпе пулăшатчёç, хваттерсене вырнаçтарчёç. Вёсенчен чылайăшё Эстонинчен пулнă. Хăш-пёр килсене вăрçăра пуçне хунисем çинчен хурлăхлă хыпарсем çите пуçларёç, арăмёсем, ачи-пăчисем тăлăха юлчёç. Пёрин хыççăн тепри вăрçă хирёнчен аманса-сусăрланса, алăсăр-урасăр киле таврăна пуçларёç (И.В. Думилин, П.П. Краснов, П.Р. Сорокин).

Ял халăхё çёнтерӳ кунне çывхартас тесе фронта тырпул, аш-какай, çăмарта ăсатнă, салтаксем валли ăшă тумтир, алса-чăлха хатёрленё, çар техники валли

укçа-тенкĕ хывнă. Вун çичĕ-вун сакăр çулхисем ят тухсан вăрçа кая пуçларĕç. Пирĕн çулхисем (1924 ç.): эпĕ, И. Илехметов, И. Кузьмин, В. Макаев пĕрле 1942 çулхи август уйăхĕнче ялтан тухса кайрăмăр.

2. Хĕрлĕ çар ретĕнчи малтанхи кунсем.

Парттă хушшинченех çара илнĕ çамрăксене салтак тумтирне тумлантарикченех васкавлăн хĕç-пăшал тыткалама, çапăçура унпа усă курма вĕрентетчĕç. Эпĕ Мускав облаçĕнчи Дмитров хулинче вырнаçнă 26-мĕш запаскри зенитнăй артиллери полкĕнче çар ăсталăхне алла илтĕм. Унта икĕ уйăх хушши хатĕрлесе пире зениткă туппине пилĕк пӳрнене пĕлнĕ пек пĕлекен турĕç. Темиçе хутчен: «Тяжело в учении, легко в бою» – текен А. Суворов сăмахĕсене ăнлантарса парса, халран кайиччен хăвалатчĕç. Çимелли вара начар та сахалччĕ, хăçан фронта лекĕпĕр-ши, теттĕмĕр. Унта хăрушă пулсан та хырăм тутăрах пулĕччĕ, çи-пуçра та салтак тумтирĕ пулĕччĕ, теттĕмĕр. Кун каçиччен ывăнса çитнĕ салтаксене 11 сехетре каçхи тĕрĕслеве илсе тухатчĕç, ун хыççăн стройпа юрласа уттаратчĕç. Хаяр старшина: «Алексеев, запевай!» – тесе кăшкăратчĕ. «Тачанка», «Катюша», «По долинам и по взгорьям» юрăсене юрласа утаттăмăр. Каярах тата «Вставай страна огромная» юрра та вĕрентĕмĕр. Çапла вара икĕ уйăх нушаланнă хыççăн 1942 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче фронта ячĕç, 1119-мĕш зенитнăй артиллери полкне лекрĕм.

Пĕрремĕш хут тăшманпа Воронеж облаçĕнчи Грязи станцинче тĕл пулма тӳр килчĕ. Нимĕçсем пирĕн çине бомбăсем тăкма пуçларĕç, анчах хăватлăн орудисенчен персе тăнипе, тăшман самолечĕсем станци çине пĕр бомба та пăрахмасăрах пăрăнса кайрĕç. Çакă пирĕншĕн «боевое крещение» пулчĕ.

3. Сталинград патĕнчи çапăçусем.

1942 çулхи çуллахи кунсенче Совет çарĕшĕн Сталинград патĕнче питĕ йывăр лару-тăру пулнă. Тăшман Атăл патне талпăннă, нимĕçсен çарĕ пур енĕпе те Хĕрлĕ

çартан çак участокра вăйлăрах пулнă. Пирĕн командовани çак йывăр-ларăва, пысăк хăрушлăха сирсе яма тĕплĕн план туса хатĕрленĕ, çак вăрçă участокне пысăк вăйсем пуçтарса тăшмана хирĕç контрнаступлени пуçласа яма палăртнă. Танк, артиллери, авиаци вăйĕсене çакăнта пуçтарса хăватлăн çапса салатма палăртнă. Çак операцие хутшăнма Воронеж фронтĕнчен пирĕн полка та Сталинград патне куçарчĕç. Тăшмана систермесĕр, çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса, çулсем начаррине пăхмасăр, çырма-çатра, юхан шывсем урлă каçса ноябрь пуçламăш кунĕсенче çурçĕр енчен Сталинград патне çĕрле çитсе вырнаçрăмăр. Ахăртнех, пире тăшман асăрханă. Тул çутăла пуçласан иртен пуçласа тĕттĕм пуличчен пĕр чарăнми минăсемпе снарядсем тăкса тăчĕ. Пирĕн енчен çухатусем çавăн чухне пысăк пулчĕç. Ноябрĕн 13-мĕшĕнче пире панă ориентир çине-çинех персе тăма хушнă. Çав кун Хĕрлĕ Çар нимĕçсене хирĕç контрнаступлени пуçласа ячĕ. Верховнăй Главнокомандовани плана пурнăçа кĕртме пуçласа Сталинград патĕнчи нимĕçсен группине кăнтăр енчен Сталинград фрончĕ (командующи Еременко), Ставкăран Жуков, Конев, Василевский аслă командирсем те унтах тетчĕç. Оборона тарăнăшĕ 150–180 км. таран çирĕпленсе тăнă; блиндажсем, траншеясем тата çурçĕр енчен Юго-Западнăй фронт (командующий Ватутин) хупăрласа ункăна çавăрса илчĕç, 5 кун хушшинче нимĕçсен 22 дивизине (330 пин çын) çавăрса илсе ункăна хĕссе пычĕç. Калач-на-Дону патĕнче тĕл пулчĕç. Халĕ ункă шал енчен те наступлени пычĕ. Çак çитĕнĕве тума тăшман кĕтмен çĕртен танк, артиллери, авиаци вăйĕпе хăватлăн пырса çапни пулăшрĕ.

Сталинград ункинчи нимĕçсене сывлăшран кашни кун 300 самолет турттарса тăчĕ: хĕç-пăшал, продуктăсем, медикаментсем парашютпа пăрахатчĕç. Çав самолетсене хирĕç пирĕн летчиксем, зенитчиксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр çапăçатчĕç. Сталинград çине Гитлер çĕнĕрен те çĕнĕ вăйсем пăрахатчĕ. Анчах усси сахал пулнă. Нимĕçсемпе пĕрле ку участокра пире хирĕç румынсемпе венгрсем, итальянецсем те çапăçатчĕç.

Вёсене вара пирён йышлăн тыткăна илетчёç. Ункăра çапăçакан тăшманăн кунёсем чаксах пычёç. Вёсене капитуляци тума икё хутчен ультиматум пачёç, анчах Паулюс фельдмаршал йышăнмарё. Çавăн хыççăн пирён командовани (Сталинградпа Дон фрончёсем) наступление вăйлатса ячёç.

1943-мёш çулхи январён 31-мёшёнче Паулюс фельдмаршал капитуляцие йышăнчё. 22 дивизи хёç-пăшал пăрахса парăнчё. Çак çёнтерӳ питё пысăк пёлтерёшлё пулчё, нимёçсене хёвеланăçалла хăваласа пырса çапăçусене пысăк пулăшу пачё. Кăнтăр-хёвеланăç фрончё пётёмёшле наступление малалла хăватлăн аталантарса пычё. Пирён 1119 зенитнăй полка каялла Воронеж фронтне куçарса килчёç.

4. Донăн çӳлти тăрăхёнче.

1943 çулхи январь уйăхёнче эпир Оскол шывё хёрне тухрăмăр. 2 сехет хушши тупăсемпе минометсенчен персе тăнă хыççăн танксем малалла ыткăнчёç. Ун хыççăн пехота тата кавалери наступление кёрсе кайрёç. ПВО-ра 46 ытла зенитнăй полксем, вёсен шутёнче пирён 1119 ЗАП та тăратнă тата ытти зенитнăй дивизион хатёр тăнă.

5 июльте тăшман наступлени тума тытăниччен 10 минут маларах пирён командовани хăватлă артподготовка пуçларё. Пирённисем 6 орудирен 30 минут хушши пёр чарăнми тăшман çине персе тăчёç. Вёсен çуррине яхăн батарейисем пăчланса ларнă. Икё сехетрен çеç тăна кёнё тăшман артиллеринчен пеме пуçларё, пёр 50–100 самолечё пирён çине бомбăсем тăкрёç, унтан вёсен танкёсем çапăçу хирне тухрёç. Пуçланса кайрё вара халиччен пулман хаяр çапăçу. Кунне 5–6-шар атака. Тёнчере халиччен пулман танксен кёрешёвё пулнă. 5–6 июльтен 15 июльччен Прохоровка çывăхёнче икё енчен те 1,5 пин танк пётнё, авиаци калама çук пысăк аркату тунă тăшмана. 15 июльсенче лăпкăлăх пуçланнă. Курск патёнчен 23 июльте, Орел патёнчи плацдарма август

уйăхĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен хăрушлăхне сирсе янă. 5 августра Белгород, 30 августра Харькова ирĕке кăларнă. Çапла вара Украинăна нимĕçсенчен тасатма тытăннă.

5. Днепр юхан шывĕн сылтăм çыранĕнчи Украинăна ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусем.

Асăннă çапăçусенче артиллери вăйĕпе усă курни пирĕн çарсене малалла хăвăртрах хĕвел анăç еннелле куçса пыма май панă. Чи малтанах Центральнăй тата Воронеж фрончĕсен çарĕсем Днепр леш енне плацдарм йышăнса (на Букринской излучине) Днепр шывĕ урлă мĕнле май килнĕ, çапла каçнă: кимĕсемпе, плотсемпе, уйрăм юхакан йывăççенчен тытса пырса тата ытти майпа 10–11 кун хушшинче артиллерипе авиаци тăкакан вут-çулăм айĕнче Днепр шывĕ урлă саперсем 700 м тăршшĕ кĕпер туса хунă. Июль уйăхĕнче пирĕн фронт Днепр леш енче 9 плацдарм туртса илчĕ, унта çирĕпленсе ларса нимĕçсене аркатма пуçланă. Днепр шывĕ урлă каçнă чухнехи çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн 2 пин ытла офицерсемпе салтаксем Совет Союзĕн Геройĕ ята илнĕ, вуншар пин çынна орденсемпе тата медальсемпе наградăланă.

20.09.1943 çулта Воронеж фронтне 1-мĕш Украина фрончĕ ятне пачĕç – командующи Ватутин. Çеçенхир фронтне – 2-мĕш Украина фрончĕ (20.10.43 ç.), Хăвел анăç фронтне – 3-мĕш Украина, Кăнтăр фронтне – 4-мĕш Украина фрончĕ. 1-мĕш Украина фрончĕ Киев çине наступлени пуçларĕ. Кунта Рыбалко маршалăн 3-мĕш танк армийĕ тĕп вырăнта пулчĕ. Эпир çĕрле Киев еннелле маскировка йĕркипе орудисене алă вĕççĕн сĕтĕрсе автомашинăсен çутисене сӳнтерсе куçрăмăр. 2 пин орудисемпе минометсем, 500 «Катюша» (1 км çинче 300 шт. пулнă). Ноябрĕн 3-мĕшĕнче пĕтĕм çар хатĕрĕсенчен тата авиацисенчен харăссăн вут тăкма пуçларĕç. Ноябрĕн 5-мĕшĕнче Киев хули таврашĕнче, тепĕр кунне хула урамĕсенче хаяр çапăçусем пычĕç.

Ноябрён 6-мёшёнче çёрле 1 сехетре Украинăри парти ЦК çурчё çинче хёрлё ялав вёлкёшме пуçларё. Ирхине 4 сехетре Киева пётёмпех ирёке кăларса тăшмана каялла хăвалама пуçларăмăр. 1943-мёш çулхи кёркунне тата 1944-мёш çулхине 500–600 км малалла куçрăмăр. Днепр çыранён сылтăм енче вырнаçнă Украина территорийё 1944 çулта ирёке тухрё.

7. Польша Республикине ирёке кăларса çёнтерӳ туни.

Украинана пётёмпех ирёке кăларнă хыççăн пирён çарсем малалла Висла–Одер операцие хутшăнса Польша çёрё çине кёрсе кайрёç. 1-мёш Украина фрончё, Висла шывё урлă каçса, Сандомир плацдармне çирёпленсе ларчё. Çак плацдармра пирён 8-мёш уйрăм зенитнăй дивизион та пулчё. Çак выränта тăнă чухне Елчёк районёнчи Çуткӳль каччипе Воронов Петр Герасимовичпа тёл пулма тиврё. Халь вăл ялтах пурăнать.

1945-мёш çулхи январь-март уйăхёсенче Бреславль хулинчен малалла Берлин çине наступлени пычё. Апрелён 16-мёшёнче 1-мёш Украина фрончёпе (командующи И.С. Конев) 1-мёш Белорусси фрончё Берлин çине наступлени пуçларёç. Эпир кăнтăр енчен 1-мёш Белорусси фрончёпе апрелён 21-мёшё тёлне Берлин çывăхне çитрёмёр. Апрелён 30-мёшёнче Берлинра Рейхстагшăн çапăçусем пуçланчёç. Нимёçсем хăйсем парăнни çинчен пёлтерсе шурă ялавсем кăлара-кăлара çакнă. Майăн 2-мёшёнче 15 сехетре Берлин пётёмпех парăнчё.

Майăн 8-мёшёнче нимёç командованийё капитуляци тунипе килёшсе договор çине алă пуснă. 1-мёш Украина фрончён малта пыракан групписем Эльба юхан шывё çине тухса американецсемпе, 1-мёш Белорусси фрончё акăлчансемпе тёл пулнă.

Майăн 9-мёшё Аслă çёнтерӳ кунё пулчё. Çав кун – нихçан та асран каймн кун, фашистсене çапса аркатнă кун – çёр чăмăрё çинчи ёç халăхёшён калама çук пысăк уяв кунё пулса тăчё. Çак куна пирён дивизионри командирсемпе салтаксем пысăкран та пысăк хаваспа кётсе

илчĕç. Çутăличченех митинг пулса иртрĕ, кашнин пичĕ çинче савăнăç, кулă, ыталанса çĕнтерӳпе саламлани, çавăнтах савăнăç куççулĕ те куçран пăчăртанса тухать, мĕн тери пысăк мăнаçлăх çуралать кашни çĕнтерӳçĕ кăкринче. Анчах кунта вăрçă пĕтмен-ха, Венгрипе Чехословаки халăхĕсене ирĕке кăларнă çĕре хутшăнчĕ пирĕн артиллери дивизионĕ. Мана икĕ кунтанах командира вĕрентесшĕн Совет Союзне ячĕç. Çапла эпĕ 1945 çулта май уйăхĕнче тăван çĕршыва çĕнтерӳпе тавăрăнтăм.

Кунта çакна аса илсе хăварни выränлă пуль тетĕп. Вăрçа тухса каякан кашни çыннăн, тăван ялне, хăйĕн çемйине çĕнтерӳпе чĕрĕ те сывă тавăрăнас ĕмĕт пулнă паллах. Анчах та шăпа тени тĕрлĕрен килсе тухнă. Вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче çапăçăва кĕричченех пирĕн миçе салтак тăшманăн вут-çулăмĕ айне пулса пĕтнĕ, миçе пиншер çынран тăракан дивизи дивизипе тыткăна лекнĕ. Тыткăнра пулнисене киле тавăрăнсан та НКВД-ăн фильтраци енĕпе ĕçлекен уйрăм пайĕсем тĕплĕн тĕрĕсленĕ. Вăрçă хыççăн малтанхи çулсенче те, каярах та вĕсене вăрçă ветеранĕсем пекех чыслани пулман, хисепе тивĕçмен, тепĕр чухне сутăнчăк тесе кӳрентерни те пулнă. Иртнĕ ĕмĕрти 80-мĕш çулсен вĕçĕнчен тытăнса анчах вĕсене вăрçă ветеранĕсен йышне кĕртсе чыслама тытăнаççĕ, тĕрлĕрен çăмăллăхсемпе усă курма ирĕк параççĕ. Паллах, пирĕн тăрăхран та пулнă вăрçă вăхăтĕнче пин-пин салтакран нимĕçсене сутăннă темиçе çын. Сахал мар Совет салтакĕ тыткăнран тарса тухнă, Хĕрлĕ Çар ретне тăрса нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăрăн çапăçнă. Теприсем хамăр çĕршывăн тăшман йышăннă территорийĕсенчи партизансен отрячĕсенче кăна мар, ют çĕршывсенче те партизансен отрячĕсенче çапăçса паттăрлăх кăтартнă. Çакăн пек çынсенчен пĕри вăл пирĕн хушăрах пурăннă. Маларах эпĕ вулакана А.И. Алексеев аса илĕвĕпе паллаштарнăччĕ, вăл хăй пурăннă чухне хамăр республикăри тата районти хаçатсенче вăрçă ветеранĕсем çинчен статьясем çырнă. Вĕсенчен пĕрин çинче чарăнса тăрасшăн та ĕнтĕ эпĕ.



Крылов Федор Иванович




Крылов Антон Васильевич



Алексеев Иван Иванович



Коннов Тит Павлович




Угасев Антон Васильевич



Кошкин Петр Николаевич

Паттăр партизан

Василий Петрович Воробьев



Патăрьелĕнчи вăтам шкулта юлашки экзаменсем вĕçленчĕç. Вĕренекенсен те, учительсен те пичĕсем çинче савăнăç вылять. Июнĕн 21-мĕш каçхине вуннăмĕш класс пĕтернĕ хĕрсемпе каччăсем тăван шкулпа, учительсемпе тата пĕр-пĕринпе сывпуллашмалли каçа пухăнчĕç. Кашнийĕнех пуçĕнче тĕрлĕрен шухăшкăмăл, пысăк ĕмĕт, чĕрисенче çирĕп туслăхпа юрату. Çутăличченех пычĕ сывпуллашу каçĕ. Хаваслă, савăнăçлă, ĕмĕрлĕх асра юлмалла иртрĕ вăл.

Анчах та та тепĕр кун, июнĕн 22-мĕшĕнче, кăнтăрла çитеспе Кĕçĕн Патăрьелĕнче те усал хыпар – фашистла Германи пирĕн çĕршыв çине сĕмсĕррĕн тапăнса кĕни – кĕтмен çĕртен, хăрушшăн сарăлчĕ.

Вун сакăр çулхи Василий Воробьевшăн та ку хыпар çеçке сарнă улмуççие касса янă пекех туйăнчĕ. Арканчĕç ĕмĕт-шухăшсем, илемлĕ хаваслă туслăх, вĕçленчĕ çамрăклăх телейĕ. Шалтах тĕлĕннипе вăл малтанах ним тума аптăраса тăчĕ. Ун пуçĕнче сĕмсĕр тăшмана тавăрас, тăван халăха тăшманран хŭтĕлеме алла хĕçпăшал тытас шухăш çуралчĕ. Çак шухăшсемпех районти çар комиссариатне çул тытрĕ. Кунта вара ăна нумай кĕттермерĕç – ĕнерхи шкул ачи салтак пулса тăчĕ. Василий Воробьева Çурçĕр Кавказ енне илсе кайрĕç. Часах унта вăл тăшманпа куçа-куçăн тĕл пулса темиçе

хутчен те хаяр çапăçусене хутшăнчĕ, паттăрлăхпа хăюлăх кăтартрĕ. Анчах тăшман хаяр, пирĕннисенчен чылай йышлăн тата вăйлăрах пулнă. Татти-сыпписĕр, вăрахчен пынă çапăçура В. Воробьевпа ытти салтаксене фашистсем çавăрса илсе тыткăнлаççĕ. Мĕнле кăна нуша курман пулĕ вăл фашистсен лагерĕнче! Унăн пуçĕнче çак хăрушă кунсемпе каçсенче лагерьтен тарса хăтăлас шухăш тухма пĕлмен. Икĕ хутчен тарма та хăтланса пăхнă, анчах кашнийĕнчех çакă ăнăççăр вĕçленнĕ. Лагерьтен лагере куçара-куçара ăна Австрие илсе çитернĕ. «Çак хăрушă кунсене аса илме питĕ йывăр. Вилĕмрен аран-аран çăлăнса юлнă вăхăтсем те темиçе хутчен пулчĕç», – каласа парать Василий Петрович шывланнă куçĕсем витĕр.

– Пĕррехинче çĕр варринче лагерь çывăхĕнчех автоматсенчен пенĕ сасăсем илтĕнсе кайрĕç. Часах алăка уçса: «Тухăр, эсир ирĕкре! Эпир Франци партизанĕсем. Атьăр пирĕнпе!» – тесе кăшкăрчĕç. Çапла эпир Францире нимĕçсене хирĕç çапăçакан Сопротивлени отрядне лекрĕмĕр. Французсен партизан отрячĕсем хăйсен çĕршывне нимĕçсенчен тасатассишĕн вирлĕ кĕрешетчĕç. Эпир те вĕсенчен юлмастăмăрччĕ. Кунта Аслă Отечественнăй вăрçă вĕçленичченех пултăмăр, – аса илет вăрçă ветеранĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă чарăнсан, Францири Сопротивление организацине Совет Союзĕн посольствинчи çар енĕпе ĕçлекен атташе пынă, тыткăнра пулнă вырăс салтакĕсене хамăр çĕршыва илсе килнĕ. Тыткăнран ирĕке кăларнисене Харьков хулинче хамăр салтаксен тумтирне парса тумлантарнă, кирлĕ документсем çырса хатĕрленĕ те демобилизаци йĕркипе киле каймалли çинчен пĕлтернĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă нушисем хыçала юлнă, салтаксен чунĕ-кăмăлĕсем тăван вырăна таврăнас савăнăçпа тулса ларнă.

– Вăрçă пынă вăхăтри кашни кун паянхи пек асра тăрать. Хăрушă тĕлĕксем халĕ те курăнаççĕ-ха, – тет фронтовик.

Василий Петрович тăван яла тавpăнсан алла усса лармасть. Çийĕнчех колхоз ĕçне хастар хутшăнать. Каярахпа Патăрьелĕнчи МТСри трактористсен бригадине ĕçлеме куçать, малтанласа плугарь, каярахпа заправщик ĕçĕсене туса пырать. Хастар ĕçчене унта часах асăрхаççĕ, бригадăна ертсе пыма шанаççĕ.

Халĕ Василий Петрович тивĕçлĕ канура, анчах та ватă тесе алă усса лармасть вăл. «Була» ял хуçалăх предприяти ĕçне хутшăнать. Тĕрлĕ çĕрте вăй хума ĕлкĕрет. Вăл – строитель, весовщик, колпредри ревизи комиссийĕн членĕ.

Хăйĕн мăшăрĕпе – Пелагея Андриановнапа пĕрле 4 ывăлпа 3 хĕр çуратса пăхса ӳстернĕ. Халĕ вĕсем тĕрлĕ хулапа ялсенче ĕçлесе пурăнаççĕ. Кашниех çемье çавăрнă. Кĕçĕн ывăлĕ – Анатолий Васильевич «Була» ялхуçалăх предприятийĕнче бригадирта ĕçлет.

Совет халăхĕ, пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă этемлĕх Аслă çĕнтерӳ тунăранпа 50 çул тултарнине паллă тума хатĕрленет. Василий Петрович Воробьевшăн та çак çывхарса килекен пысăк уяв асра юлмалли кунсемпе палăрса тăрать. Нумаях пулмасть Франци çĕршывне нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларни 50 çул тултарнине паллă тунă май, Франци патриочĕсен Сопротивлени Ассоциацийĕ, çак юхăма хутшăннă фашистсене хирĕç алла хĕç-пăшал тытса çапăçнă паттăрсене палăртма çĕнĕ медаль туса хатĕрленĕ. Çак наградăна илме тивĕçлĕ пулчĕ пирĕн ентеш В. Воробьев. Ку çеç те мар-ха. Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Указĕпе Аслă Отечественнăй вăрçăра хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Василий Петрович Воробьева «За отвагу» медальпе наградăланă. Çак медале район администраци пуçлăхĕ В. Петров кăçал вăрçă ветеранĕн кăкăрĕ çине çакса ячĕ. Çапла, никам та, нимĕн те манăçмасть. В. Воробьев та 50 çула яхăн тунă вăрçăри паттăрлăхшăн тивĕçнĕ наградăна çур ĕмĕр иртсен алла илчĕ».

90-мĕш çулсенче 1941–1945 ç.ç. вăрçă ветеранĕсене тата инваличĕсене социаллă çăмăллăхсемпе тивĕçтерес пирки Раççей тата регионсен шайĕнче саккунсем тухаççĕ. В.П. Воробьев Францире вăрçă инкекне тӳсекен тата вăрçă ветеранĕсемпе ĕçлекен Министерствăна хăй Францире партизансен отрядĕнче нимĕçсене хирĕç çапăçни çинчен ĕнентерӳ хучĕ ярса пама ыйтать. Унăн ыйтăвне тивĕçтерсе Ассоциаци (Межрегиональная Ассоциация ветеранов Французского сопротивления «Комбатан Волонтер») свидетельство вырăсла куçарса ярса панă.

Свидетельство

Я, нижеподписавшийся Рене Руссель, кличка Филип, офицер Национальный Ликвидатор Движении СО (Специальная операция), НФ (Национальный Фронт), ФФИП (Французские Франтиреры и Партизаны) клянусь честью, что Советский: Воробьев Василий Петрович принадлежал к роте советских партизан, впервые под командованием грузина Мохамед Унатмева, помощник лейтенант Борис Дианцев и участвовал с 1-го июня до 1-го сентября 1944 г. во всех боях проведенных этой частью совместно с ротой ФФИП под командованием Макса (Макс Кавруа), который был убит во время боев, затем под начальством лейтенанта Шарль Рено, часть которая действовала в районе находившаяся на стыке департаментов Нор и Эн, в особенности в боях за Ваденкур, 2ИЗ, Вервен в Эни затем в лесу Сен-Монтель–Мондрепул в Нор.

Выдано в Париже 28-го декабря 1993 г. чтобы быть использованным для всех легальных прав.

Печать МАВФС «Комбатан Волонтер»
Подпись: Рене Руссель
Офицер Почетного Легиона.

Перевела переводчик МАВФ: Зоя Леонидовна Асс
Президент МАВФС: Подпись О.Н. Озерова

1944 çулхи август уйăхĕнче гитлерла оккупантсене çĕмĕрсе тăкса Франции ирĕке кăларнăранпа 50 çул çитнине паллă туса Франци Сопротивлени ветеранĕсен Регионсен хушшинчи «Комбатан Волонтер» Ассоциацийĕ юбилей медалĕпе Франци партизанĕсене чыслама йышăннă. Çак медальпе 1994 çулхи августăн 25-мĕшĕнче В.П. Воробьева та наградăланă. 2003 çулхи асăннă Ассоциаци Президенчĕ О.Н. Озеров Василий Петровича 80 çулхи юбилей ячĕпе саламланă.



Тăрăнта пурăннă вăрçă ветеранĕсем сулахайран сылтăмалла: Краснов Федор Васильевич, Думилин Тихон Владимирович, Краснов Александр Александрович, Думилин Николай Николаевич, Кошкин Николай Николаевич, Емельянов Николай Иванович, Гордеев Дмитрий Романович, Алексеев Александр Иванович, Емельянов Николай Васильевич, Сорокин Дмитрий Романович, Коннов Тит Павлович, Алексеев Михаил Дмитриевич, район представителĕ, Илехметов Иван Григорьевич. 1984 çул.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен çĕнтерӳпе тавраннă Тăрăн ял тăрăхĕн çыннисем çаксем:

Тăрăнтан:

1. Алексеев Александр Иванович
2. Алексеев Иван Иванович
3. Алексеев Михаил Димитриевич
4. Антонов Михаил Александрович
5. Антонов Николай Михайлович
6. Бородкин Иван Иванович
7. Васильев Дмитрий Васильевич
8. Васильев Тимофей Васильевич
9. Васюткин Александр Алексеевич
10. Воробьев Владимир Осипович
11. Гаврилов Макар Филиппович
12. Гордеев Дмитрий Романович
13. Думилин Тихон Владимирович
14. Думилин Иван Васильевич
15. Думилин Алексей Петрович
16. Думилин Николай Николаевич
17. Думилин Никон Петрович
18. Думилин Петр Васильевич
19. Думилин Илья Алексеевич
20. Емельянов Алексей Николаевич
21. Емельянов Никон Васильевич
22. Емельянов Иван Васильевич
23. Емельянов Иван Ильич
24. Емельянов Николай Васильевич
25. Емельянов Николай Иванович
26. Илехметов Алексей Иванович
27. Илехметов Василий Федорович
28. Илехметов Иван Андреевич
29. Илехметов Иван Григорьевич
30. Илехметов Михаил Александрович
31. Илехметов Николай Александрович
32. Илехметов Петр Александрович
33. Илехметов Федор Андреевич
34. Илеменов Никон Алексеевич
35. Илеменов Анисим Александрович
36. Илеменов Владимир Алексеевич

37. Ибетов Иван Максимович
38. Искачкин Андрей Петрович
39. Искачкин Василий Петрович
40. Ильин Василий Ильич
41. Карпов Матвей Яковлевич
42. Краснов Александр Александрович
43. Краснов Виктор Александрович
44. Краснов Иван Иванович
45. Краснов Петр Павлович
46. Краснов Николай Егорович
47. Краснов Федор Васильевич
48. Крылов Антон Васильевич
49. Крылов Алексей Иванович
50. Крылов Дмитрий Васильевич
51. Крылов Николай Владимирович
52. Крылов Петр Васильевич
53. Крылов Петр Николаевич
54. Крылов Федор Иванович
55. Крылов Федор Михайлович
56. Коннов Петр Петрович
57. Коннов Тит Павлович
58. Кошкин Иван Васильевич
59. Кошкин Николай Николаевич
60. Кошкин Петр Николаевич
61. Кузьмин Иван Васильевич
62. Курманаев Захар Трофимович
63. Лялькин Василий Гаврилович
64. Лазарев Георгий Егорович
65. Лазарев Дмитрий Иванович
66. Медведев Максим Григорьевич
67. Медведев Семен Григорьевич
68. Михеев Иван Семенович
69. Михайлов Аркадий Гаврилович
70. Мидаков Дмитрий Александрович
71. Мидаков Иван Иванович
72. Орлов Дмитрий Порфирьевич
73. Орлов Максим Леонтьевич
74. Петров Аркадий Никифорович
75. Савоськин Иван Иванович
76. Самакин Александр Степанович

77. Самакин Дмитрий Васильевич
78. Сорокин Дмитрий Романовч
79. Сорокин Емельян Иванович
80. Сорокин Иван Николаевич
81. Сорокин Николай Васильевич
82. Сорокин Михаил Николаевич
83. Сорокин Петр Иванович
84. Сорокин Петр Романович
85. Думилин Павел Николаевич
86. Угасев Антон Васильевич
87. Угасев Иван Николаевич
88. Угасев Николай Николаевич
89. Шекеев Александр Петрович
90. Шекеев Иван Алексеевич
91. Шекеев Павел Александрович
92. Шуряшкин Иван Евдокимович
93. Шуряшкин Николай Васильевич
94. Шуряшкин Семен Евдокимович
95. Ялуков Александр Андреевич
96. Ялуков Николай Павлович.

Йӑлӑмран:

1. Алексеев Василий Федорович
2. Алякин Владимир Степанович
3. Владимиров Дмитрий Тихонович
4. Волков Иван Маркович
5. Воробьев Василий Петрович
6. Воробьев Николай Александрович
7. Воробьев Федор Антонович
8. Гордеев Василий Николаевич
9. Гаврилов Илья Гаврилович
10. Долматов Петр Никитович
11. Долматов Никита Долматович
12. Егоров Герасим Константинович
13. Илюткин Александр Николаевич
14. Илюткина Елена Герасимовна
15. Ильин Иван Федорович
16. Кадеев Александр Константинович
17. Каллин Василий Петрович
18. Каллин Иван Дмитриевич

19. Каллин Федор Григорьевич
20. Кальметов Илья Федорович
21. Кальметов Николай Федорович
22. Марков Василий Егорович
23. Михайлов Алексей Александрович
24. Никитин Василий Семенович
25. Никитин Матвей Кузьмич
26. Николаев Никифор Александрович
27. Никифоров Федор Никифорович
28. Одиноков Иван Егорович
29. Одиноков Терентий Егорович
30. Петров Алексей Петрович
31. Петров Павел Павлович
32. Рубцов Алексей Антонович
33. Рубцов Николай Сергеевич
34. Сергеев Василий Сергеевич
35. Сидоров Александр Сидорович
36. Сидоров Никон Сидорович
37. Соловьев Виктор Романович
38. Соловьев Дмитрий Афанасьевич
39. Соловьев Кирилл Тихонович
40. Тихонов Иван Владимирович
41. Тихонов Павел Игнатьевич
42. Тихонова Вера Николаевна
43. Фролов Илья Иванович
44. Хураськин Яков Константинович
45. Цветков Емельян Дмитриевич
46. Цветков Никифор Александрович
47. Яковлев Александр Федорович
48. Яковлев Иван Федорович
49. Ситов Александр Александрович
50. Цветков Иван Дмитриевич
51. Рубцов Дмитрий Александрович
52. Рубцов Василий Дмитриевич

Треньелёнчен:

1. Абужаров Василий Осипович
2. Абужаров Иван Васильевич
3. Алексеев Афанасий Алексеевич
4. Владимиров Егор Владимирович

5. Галкин Федор Игнатьевич
6. Галкин Григорий Игнатьевич
7. Дмитриев Иван Алексеевич
8. Журавлев Василий Васильевич
9. Журавлев Матвей Васильевич
10. Игорев Терентий Викторович
11. Иванов Николай Константинович
12. Кошкин Иван Максимович
13. Краснов Василий Иванович
14. Краснов Иван Ефимович
15. Лапшин Петр Максимович
16. Лысов Сидор Иванович
17. Логунов Димитрий Иванович
18. Логунов Павел Николаевич
19. Логунов Петр Иванович
20. Лимкин Федор Исаевич
21. Лепешкин Иван Павлович
22. Лепешкин Павел Тимофеевич
23. Макаров Никита Андреевич
24. Мидюков Василий Михайлович
25. Мидюков Федор Михайлович
26. Митрофанов Иван Митрофанович
27. Михайлов Василий Васильевич
28. Михайлов Петр Николаевич
29. Мясников Антип Михайлович
30. Мясников Алексей Сергеевич
31. Носов Иван Ильич
32. Паймин Иван Федорович
33. Паймин Леонтий Федорович
34. Паймин Николай Константинович
35. Паймин Осип Федорович
36. Паймин Константин Федорович
37. Пчельников Алексей Петрович
38. Пчельников Иван Васильевич
39. Пчельников Максим Петрович
40. Положин Игнатий Петрович
41. Портнов Василий Филиппович
42. Петров Антон Петрович
43. Петров Петр Петрович
44. Салмин Иван Ильич
45. Соловьев Иван Иванович

46. Семенов Александр Порфиьевич
47. Сергеев Иван Сергеевич
48. Сорокин Николай Михайлович
49. Сурков Петр Трифонович
50. Тарасов Петр Тарасович
51. Терентьев Павел Терентьевич
52. Тихонов Василий Егорович
53. Тихонов Максим Васильевич
54. Эльмуков Василий Михайлович
55. Эльмуков Николай Ильич
56. Эльмуков Яков Терентьевич
57. Юманов Илья Федорович
58. Юманов Леонид Федорович
59. Юманов Леонид Федорович.

Октябрь революци пулнăранпа 50 çул çитнĕ ятпа Треньелĕнче 1967 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче вăрçăра вилнĕ тата çухалнисене асăнса лартнă палăка уçнă. Ăна çав çулхине Патăрьел ял Канаш ĕçтăвкомĕн председателĕ А.А. Ахмеев пуçарнипе Иванова Римма, Савельева Клавдия, Муськина Анна строительсем купаланă (бригадир А.Ф. Логунов).

Ялти палăка уçни çинчен шкул директорĕ А.Т. Краснов çырса хăварни шкул музейĕнче упранать. Ăна вулакан патне çитерес тетĕп.

«1967 çулхи ноябрĕн çиччĕмĕшĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче паттăрăн çапăçса пуç хунă Треньел çыннисене асăнса шкул умне, ял варрине, туса лартнă палăка уçнă. Вăл кун çуллахи куна аса илтеретчĕ. Палăк умне пĕтĕм ял-йыш пуçтарăннăччĕ. Савăнăçлă та, хурлăхлă та ку митинг. Ăна Патăрьел ял Совет председателĕ Ахмеев уçрĕ. Палăк çине карса хунă шурă пусмана вăрçă ветеранĕ Иван Иванович Соловьев сирчĕ. Митинг малалла пырать. Халăх пичĕ çинче савăнăç та пур, хурлăх та. Чылайăшĕ куççульпех йĕреççĕ. Виçĕ ывăлне (Егор, Александр, Лазарь – Д.К.) вăрçăра çухатнă Паймина Татьяна çĕр çине вырт-сах макăрчĕ, паянхи пек астăватăп. Эпĕ палăка уçнă чухне те строительсен ĕçĕпе интересленсе тăраттăмччĕ. Палăк никĕсне

янă чухне кĕленче ăшне çирĕп хупласа вăрçăра вилнисен списокне хурса хăвартăмăр».

Вăрçăран çавăн пекех Степановсен: Александр, Василий, Петр; Мясниковсен тăватă ывăлĕ тăван çĕршыва хŭтĕленĕ, вĕсенчен виççĕшĕ: Иван, Куприан, Николай вăрçă хирĕнче вырtса юлнă.

Çак списоксенчи вăрçă ветеранĕсенчен паянхи кун пурăнакансем юлманпа пĕрех; Тăрăн ял тăрăхĕпе те вĕсем виççĕн анчах юлчĕç: Тăрăнта Николай Владимирович Крыловпа Йăлăмра Вера Николаевна Тихонова пурăнаççĕ. Тăрăн ялĕнчен вăрçа кайнă Крылов Федор Иванович, Шупашкарта пурăннăскер, 2012 çулхи юпа уйăхĕнче пурнăçран уйрăлса кайнă. Петров Аркадий Никифорович Шупашкар çумĕнчи Лапсар поселокĕнче пурăнать. Пурнăçран уйрăлса кайнă вăрçă ветеранĕсем пурăннă пулсан, кашни хăй вăрçă хирĕнче утса тухнă кун-çулне каласа парĕччĕç те... Çапах та вăхăт сисĕнмесĕрех шăвать: вăрçă хыççăн çуралнисем те паянхи кун ваттисен шутĕнче.

2007 çулхи авăн уйăхĕнче эпĕ хамăрăн кŭршĕ пулнă, ачаранах лайăх пĕлекен 95 çулхи вăрçăпа ĕç ветеранĕ Д.Р. Гордеев патне килне ятарласа (ун чухне ун пек ватти ял тăрăхĕнче пулман та) унпа калаçма, вăл ĕлĕкхи вăхăтсене аса илнине çырса илме тесе, Тăрăн ялне çул тытрăм. Унпа калаçнă май эпĕ унăн çулне кура мар ăстăнĕ çирĕп пулнинчен тĕлĕнсе лартăм. Уйрăмах вăл 1918 çулта пирĕн таврара Граждан вăрçи вăхăтĕнче Петр Егорович Крепков хĕрлĕ комиссар хăйĕн отрячĕпе шуррисене хирĕç паттăрла çапăçни, вăтăрмĕш çулсенче колхозсем йĕркелени çинчен каласа панисем тĕпчев документчĕсемпе пĕрешкел килни тĕлĕнтерчĕ. XX-мĕш ĕмĕрте пулса иртнĕ историлле пулăмсем малашнехи ăрусемшĕн те усăллă пулмалла. Вăрçă асап-нушине те курнă Дмитрий Романович хăй вăхăтĕнче. Ун пирки вулакан районти хаçат корреспонденчĕ çырнă: «Хĕм сапмасть ветеран сан куçу, кăлкан пек кăвакарнă çŭçŭ», – очеркра вуласа пĕлме пултарать.

«Мĕтри тетен ыйхă килмен каçсем пайтах пулаççĕ. 67 çул йăтса çӳрекен осколок кĕрсе ларнă ури паян та çĕрĕпех канăçсăрлантарчĕ. Пĕç кăкĕнченех туртса ыратать вăл: сăрр, сăрр тăвать... Ытти шăм-шакĕ те пăтлă пукан çакса янă евĕр йывăр. Ара, ветеранăн çулĕсем те шултăра-çке: вăл 96 çулта. Тепĕр тăватă хĕл каçсан пĕр ĕмĕр тултарать! (Кунта тӳрлетсе хушăпăр: ун чухне Дмитрий Романович 95 çул çурăра пулнă – Д.К.)

Акă хĕрлĕ питлĕ шуçăм тӳпене çутатса майĕпен-майĕпен тĕнчене вăратрĕ. Чăтаймарĕ ватă, ыттисем ура çине тăриччен картишне тухрĕ, мунча хутма вуттине хатĕрлерĕ, унта-кунта çаврăнкаласа çӳрерĕ. Çулне кура мар кил-тĕрĕшре кăшăтăртатса çӳреме кăмăллать вăл. Турта çине таянса ӳснĕ тиха пек, мĕн ачаран ĕçе кӳлĕннĕскер, пурнăçра нихçан та алă усса ларман. Эпĕ пынă чухне вара ветеран кăштах канма выртнăччĕ. Хам мĕн çăмăлпа килнине пĕлтерсенех салтак-ветеран яштах тăрса ларчĕ. Чĕтрекен сасси тата ытларах татăлчĕ, сăмахĕсене ерипен сыпăнтарчĕ, хăй пăлханчĕ, хĕм сапма пăрахнă куçĕнчен куççуль тумламĕ шăрçаланчĕ...

– Пирĕн атте пек чăтăмлă та пысăк вăй-хăватлă çынсем сахалтăр. Унăн шăпи тертлĕ те, асаплă та, хĕн-хурлă та, – каласӑва пуçларĕç унпа пĕрле пурăнакан Лидяпа Римма хĕрĕсем.

Кĕтмен вăрçă сасартăк пуçлансан улттăмĕш куннех ăна çар комиссариатне чĕнтереççĕ, виçĕ ача ашшĕне, кладовщикра пикенсех ĕçлекен арçынна, ревизи тумасăрах повестка тыттараççĕ. Тăрăнтан унпа пĕрле каякансем тата та пулнă. Пулас салтаксене малтан Мускава илсе çитернĕ, унтан Ленинград çывăхĕнчи çар хулинче пулнă. Çар хăнăхăвне алла илсенех салтака малти линие тăратнă.

– Тăшмана хирĕç тапăнса пынă чухне куçа нимĕн те курăнмастчĕ. Пуçра вара пĕртен пĕр шухăшчĕ – ăна парăнтарасси, çĕнтересси, – хаш! кăларчĕ вăл йывăр сывлăша ăшран.

Пĕр хĕрӳ çапăçура ăна тӳрех виçĕ çĕртен амантаççĕ. Госпитальте кăштах сипленнĕ хыççăн каллех алла пăшал тытнă, çапăçăва кĕнĕ. Шăпи каллех синкерлĕ пулса тухнă. 1942 çулхи март уйăхĕнче тепĕр хутчен йывăр аманнă салтак финсен аллине тыткăна лекет. Виçĕ çула яхăн чĕрĕ тамăкра пулнă вăл. Çемйисем ăна хыпарсăр çухалчĕ пуль тесех шутланă. Çав синкерлĕ кунсен «кучченеçне» салтак кашни кунах тытса пăхать.

Ёнси çинчи хур çăмартинчен те пысăкрах мăкăлĕ – лагерь пичечĕ. Çаппа çарамаслантарнă салтаксене черетпе сак çине выртта-рса, вĕри шывра пĕçернĕ хăва хуллипе юн сирпĕниччен ислетнĕ... Шăла çыртса чăтнă вĕсем çак мăшкăла. Пĕр хутчен çеç те мар вĕт-ха, кашни кунах çапла кулнă лагерьтисенчен. Хавшакраххи-сем чăтаймасăр сайраланнă, вилнĕ. Пытарнă та пытарнă вĕсене йытă вилли пек пĕр пысăк шăтăка. Ара, купăста яшкипе хывăхран пĕçернĕ пĕчĕк татăкĕпе чуна епле вăрах усрайăн-ха... Ку тĕлĕшпе вара Мĕтри тетене ырă Турă çав тери пулăшнă темелле. Паян çак лутра та имшертерех ветеран çине пăхатăн та, ирĕксĕрех унăн çăл куç пек тапса тăракан вăй-халĕнчен тĕлĕнетĕн: вăт тĕреклĕ çын!

Лагерь хыççăнхи пурнăçĕ те «ылтăн сăпкара» сиктермен Дмитрий Романовича. Вунпĕр çул икçĕр метр çĕр айĕнчи шахтăра кăмрăк кăларнă. Йывăр ĕçре хавшатăр та пĕттĕр тесех янă-тăр вĕсене унта. Вăйпитти арçын кунта та аптраман, пуçа усман. Кăтартуллă шахтерăн ячĕ яланах Хисеп хăми çинче пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна вырăнтах юлма та сĕннĕ, анчах çемье пуçлăхĕ ачисен, мăшăрĕн сăмахне итленĕ, тăван Тăрăнах таврăннă, вăрçăчченех çавăрнă йăвине çĕнетнĕ, йыш хушнă, пурнăçа сыпăнтарса янă.

Хуйхă, нуша, терт-асап этем чĕрине тимĕре тутăх çинĕ евĕр кăшлать теççĕ. Çак хисеплĕ çула çитсе вăл ветеранăн та самай хавшанă-тăр. Ĕмĕр тăршшĕпе ылтăн алăллă вашават чăваш тĕрлĕрен ĕçре ĕçлесе ят-сум, чыс çĕнсе илнĕ. Мĕтри тете иртнĕ кунсемшĕн ӳкĕнмест. Шăпашăн кама-ха ятлăн. Хăйĕн юратнă мăнукĕсене, мăнукĕн ачисене çеç ырă та телейлĕ кун-çул пиллет. Вĕсем вара кукашшĕн çителĕклех: 15-ĕн!

– Пурте ман пек вăрăм ĕмĕрлĕ, сывлăхлă, ĕçчен, хисеплĕ пулччăр. Шӳтлеме те юратчăр. Питĕ анекдот калама юрататăп. Вăл пурнăçа вăрăмлатать, – терĕ каласа пĕтĕмлесе. Вăрăм ĕмĕрĕн вăрттăнлăхне çапла систерчĕ ветеран».

А. Егорова. «Авангард» хаçат, 07.05.2008 ç.

Пурăннă пулсан Митя тете 2012 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче хăйĕн 100 çулхи юбилейне паллă тунă пулĕччĕ. Вăл хăй пурнăçĕнче çыншăн ырă ĕç нумай тунипе, кăмăлĕ енчен савăк пулнипе палăрса тăратчĕ. Ял-йыш ăна ырă кăмăлĕшĕн, ăста платник-столяр ĕçне



Дмитрий Романович Гордеев хăйĕн килĕнче

пултарнипе хисепленĕ. Пӳтсĕр çыннăн кăмăлне те вăл шӳтпе çемçетсе яма пултарнă. Колхозри платниксен бригадинче ĕçленĕ май кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче вăл юлташĕсене пĕр ушкăна пухатчĕ те тытăнатчĕ вара вĕсене култарма. Ун пек чухне пирĕн атте калатчĕ: «Гордей Митя тете каллех хăватлă анекдот каласа парса култарать ĕнтĕ бригадири платниксене». Лешсем вара чăнах та вар тытса кулатчĕç пĕр хушă шăп тăнă хыççăн. Хам пĕлнĕ тăрăх та Дмитрий Романович çынпа вăрçăнма-хирĕçме юратман, ĕçчен те вăр-вар çемье пуçлăхĕ пулнă. Пĕр юлташ ун пирки каласа пани те аса килет. Митя тете килĕнче икĕ хĕрĕпе, Лидя аппапа тата Римма аппапа пурăнни пирки маларах асăннăччĕ ĕнтĕ. Вĕсем иккĕшĕ те çулĕсемпе ватăскерсем. Тахăшĕ вĕсенчен сарай тăррине хăпарса кайнă тем сăлтавпа. Çакна Митя тете курнă тет те, тĕтĕрет кăна тет хĕрне: мĕн тума хĕрарăм пуçпа унта хăпарса кайрăн, килте арçын пĕтнĕ-им, ӳксе вилетĕн ак, – тесе. Вăл çулĕсемпе чылаях ватă пулсан та чиперех çӳренĕ чухне хĕрарăмсем ӳксе аманасран-суранланасран шикленсе вĕсене лупас-сарай çине хăпарма ирĕк паман. Хăй виличчен юлашки ик-виçĕ çул анчах унăн шăмшаксем йывăрланнă, хăй те çăмăлах çӳреймен.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен тавăнманнисем виçĕ ялпа Астăвăм кĕнеки тăрăх шутласан çапăçусенче çапăçса вилнисемпе хыпарсăр çухалнисен хисепĕ çакăн пек курăнать:

Тăрăн ялĕ тăрăх – 110 çын, Йăлăмран – 72, Треньелĕнчен – 61.


Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен тавраńайман
Тăрăн ял çыннисем:



Сапожников Николай
Александрович
лейтенант



Михайлов Зинон
Гаврилович
кĕçĕн политрук



Мидаков Александр
Александрович
кĕçĕн лейтенант



Лялькин Матвей
Никитич
аслă лейтенант



Лялькин Василий
Николаевич
сержант



Лялькин Иван
Александрович
аслă лейтенант



Ибетов Алексей
Максимович



Ашмарин Иван
Николаевич



Лаханов Андрей
Григорьевич





Тăрăн ялĕнчи вăрçăра вилнисене асăнса лартнă палăк (халь унта урăх палăк тăрать), унпа юнашар сăнӳкерчĕк çинче йывăççем лартса парк уçнă (1993 ç.).



ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ ЙЫВĂР ÇУЛСЕМ (1945–1953 çç.)

Тăватă çула яхăн тăсăлнă вăрçă Совет Союзĕнче пурăннă 27 млн. çын пурнăçне татнă, мĕн чухлĕ хулапа ял çунтарса ишĕлчĕк айне туса хăварнă нимĕç фашисчĕсем – ăна историксемпе тĕпчевçĕсем те тĕрĕссипе калаймаççĕ пуль. Чăваш республикинче çапăçу хирĕнче тата хыпарсăр çухалнисем çинчен «Астăвăм» кĕнеки тăрăх кашни районти тата хулари военкоматсенчен вăрçа тухса киле таврăнайманнисен хушамачĕсене кĕртнĕ. Çак кĕнеке тăрăх Тăрăн ял тăрăхĕнче пурăнакансем хăйсен çывăх тăванĕсем вăрçă хирĕнче хаяр тăшманпа çапăçса пуçĕсене хуни çинчен, теприсем хыпарсăр çухални пирки пĕлме пултараççĕ. Паллах, «Астăвăм» кĕнеки çинче те çухалнисем пирки тӳрлетме тивет (хăш çулхине, ăçта çапăçса е тыткăнра вилни çинчен тупса палăртнă хыççăн).

Тылри халăх вăрçă хăрушлăхне курман пулсан та, ял хуçалăх юхăнса кайнипе ăна ура çине тăратмалла пулнă. Вăрçăран чĕрĕ-сывă таврăннă фронтовиксем мирлĕ ĕçе кӳлĕннĕ. Колхозсемпе совхозсене, МТСа малалла вăй илмешкĕн вăйпитти арçын алли çитменни палăрнă. Вăрçă умĕн те, вăрçă вăхăтĕнче те тĕрлĕ сăлтава пула ялсенче колхоз ертӳçисем улшăнсах пынă. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх фермисемпе витесем йăванса каяс пек ларнă, шалтан пăхсан хĕллехи каçсенче тӳпере уйăх та çăлтăрсем курма пулнă, пурçук ял хуçалăх техники юр айĕнче юхăнса-тутăхса выртнă. Выльăхсем начар та ăратсăр пулнипе вĕсенчен тупăш илесси те пĕчĕк пулнă. 1946 çулхи çуркуннехи кăтартусем тăрăх, «Роза Люксембург» колхозра 17 лашаран пĕри те вăрман кăларас ĕçре усă курма юрăхлă пулман. Çатан евĕр ырханккаскерсем хăйсен кӳлепине аран сĕтĕрсе çӳренĕ. Юрăхлă лашасем «Октябрь Ялавĕ» тата «Пламя Октября» колхозсенче те пулман. Асăннă колхозсенче тыр-пул продукцийĕ пирки те çавнах ка-

лама пулать. Вăл çулхине тата çанталăк условийĕсем лайăхах пулманнипе Чăваш республикинчи чылай колхозсенчи пекех Чкаловски районĕнчи колхозсен те пĕрчĕллĕ тыр-пул питĕ сахал, гектартан 6–8 центнер çеç пухса илнĕ. Ваттисем каланă тăрăх, çав çулсенче хиртен вырнă тырра киле кĕсьене тултарса кайнăшăн та сутпа айăпланисем пулнă.

1947-мĕш çул. Çуркунне çитсе пырать, çут çанталăк хĕл ыйхинчен вăранать. Колхозсенче акана тухма хатĕрленеççĕ: анчах та «Роза Люксембург» колхозра уйхирте акма-лартма тырă, улма вăрлăхĕ çитмест.

Çак çитменлĕхсем пирки Чкаловски районĕнче тухса тăракан «Коммунизм байрагы» 20.03.1947 ç. номерти «Тăрăнра васкамаççĕ» статьяран та курăнать.

«Тăрăнри «Р. Люксембург» колхозра халĕ те çуракине хатĕрленсе çитмен. Колхозăн 114 ц ытла вăрлăх çитмест. ВКП(б) ЦК Пленумĕ йышăннă постановление сӳтсе явнă хыççăн колхоза Т.Макаева колхозница 15 пăт сĕлĕ, А.Карпова – 20 кг вир, Т.Васильев, А.Крылов юлташсем чылай çĕрулми пачĕç. Сеялкăсем виççĕшĕ те юсавсăр лараççĕ. Лашасем начар. Вĕсене кирлĕ пек пăхмаççĕ».

З.Ахсянов.

Хуçалăх ертӳçисем ĕç çине сӳрĕккĕн пăхнипе Тăрăн ял çыннисем пуху ирттерсе колхоз ертӳçин тилхепине Николай Васильевич Сорокина шанса параççĕ. Çĕнĕ колхоз председателĕ вырăнти парти организацин 1947 çулхи мартăн 25-мĕшĕнче иртнĕ пухăвĕнче колхоз йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкни çинче чарăнса тăрать. Протокола вырăсла çырнă.

Пред. колхоза Сорокин Н.В.: «План посева составляет 342 га. Не хватает 112 ц семян зерновых, еще не хватает семена картофеля 146 ц. Насчет тягловой силы тоже плохо. Бензин постараемся найти».

Колхоза çĕрулми вăрлăхĕ валли Николай Васильевич хăйĕн килĕнчен 9 пăт çĕрулми леçнĕ. Ытти колхозниксем пулăшнипе тата колхоз председателĕ хăй енчен пуçарулăх кăтартса уй-хирсене, ăçта техникăпа, ăçта лаша-вăкăрпа акса-лартса çуракине йĕркеллех ирттернĕ.

Ваттисем каланă тăрăх, вăл çулхине кĕркунне тырă аванах çитĕнтерсе пухса кĕнĕ. Колхозниксене пĕр ĕç кунĕ пуçне икĕ килограмм тырă валеçсе панă. Ку вăл колхозшăн та, колхозниксемшĕн те ун чухне аванах çитĕнӳ пулнă. Н.В. Сорокин пуçарăвĕпе тыр-пула лайăх пахалăхпа пухса кĕнĕ ятпа колхозниксем ака пăтти уявне хиртех ирттернĕ, пысăк хурансем лартса шӳрпе, пăтă пĕçернĕ. Сăмах май, ваттисем аса илнĕ тăрăх Н.В. Сорокин хăй колхоз председатель вырăнĕпе усă курса кермен пек çурт та лартса пурăнма пултарнă. Анчах та вăл коммунист ятне варалас темен курăнать, çав вăхăтра ял çыннисенчен аван мар тесе, хăй хуçалăхĕнче сарай та туман тет. Хăш-пĕр ертӳçĕсем вара иртнĕ ĕмĕрти 30-мĕш çулсенче кулаксем тесе тĕреклĕ хуçалăхпа пурăнакан Мидаковсемпе Воробьевсен кĕлечĕсене туртса илсе колхоза панăскерсене, 40-мĕш çулсенче ерипен-ерипен сӳтсе хăйсен хуçалăхĕсем патнелле турттарнă.

Маларах асăннăччĕ ĕнтĕ, «Роза Люксембург» колхозра уй-хирте ака-суха тума, тыр-пул пухса илнĕ çĕрте усă курма, вăрман касса турттарма юрăхлă ĕç лашисем çитмен. Çавна шута илсе, 1947 çулта колхоз председателĕ Н.В. Сорокин Улатăр колонинчен тырăпа улăштарса 12 вăйпитти ĕç лаши илсе килтернĕ. Ун пек лашасем фермăсемпе хуçалăхри ытти ĕçсем тунă чухне те вăл вăхăтра питĕ кирлĕ пулнă. Колхозра çитменлĕхсемпе йывăрлăхсем нумай юлнă пулин те, колхозниксен пурнăçĕ кăштах çăмăлланнă.

ВКП(б) Тĕп Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ 1946 çулхи сентябрĕн 16-мĕшĕнче «О мерах по ликвидации нарушений Устава сельскохозяйственной артели в колхозах» ятпа постановлени йышăннă. Çак постанов-

лени тухсан республикăри колхозсенче ял хуçалăх артель Уставне пăхăнса ёçленине тёрёслеме комиссисем туса хураççё. Асăннă Устава йышăннă чухне колхозниксен пурнăç условийёсене çăмăллатасси çине çýлти влаçра ларакансем сахалтарах пăхни курăнать. Ял çынни ытларах çёрпе усă курса та нумайрах выльăх усраса пуярăн хăранă-ши ун чухне патшалăх ертýçисем е урăх сăлтавё пулнă? Паянхи куçпа пăхсан, ун чухнехи политикăна эпир тен, ăнланса та пётерейместпёр.

Ял хуçалăх артелёсен Уставне пурнăçа кёртсе пырас пирки комиссисем кашни районти колхозсенче тёрёслевсем ирттернё. Çак Устав тăрăх ял çыннисем нормăпа пăхнинчен ытлашши çёрпе усă курма, выльăх усрама юраман; лаша-вăкăрсене колхоза памалла пулнă, вётёрех выльăх-чёрлёхе патшалăха суттарнă. Ытларах çёрпе усă курнăшăн сутпа айăпласа тёрмене хупса хунисем те пулнă. Выльăх-чёрлёх усракансене ял хуçалăх налукё хурса нушалантарнă, туса илнё продукцие патшалăха (аш-какай, сёт, çăмарта, сурăх çăмё, сысна тирё) памалла пулнă. Ытлашшине кăтартас мар тата çемйене çăмăлтарах пултăр тесе, ял çыннисем килти выльăхёсене вăрттăн пуснă. Уйрăм хуçалăхсенче выльăх-чёрлёх шутне тёрёслекен агентсенчен ялсенче прокурор-милицинчен те ытларах хăранă пуль ун чухне.

1947-мёш çул ăнăçлă тыр-пул пухса илсе пурнăç условийё çăмăлланасси пирён республикăшăн кăна мар, çёршывёпех палăрнă. Çавна пула декабрь уйăхёнче СССР Министсен Совечёпе ВКП(б) ЦК «Укçа-тенкё системине улăштарса лайăхлатасси тата апат-çимёçпе промышленность таварёсем илмелли карточкăсене пётересси çинчен» постановлени кăларнă.

«...Халăх хушшинче çýрекен укçа-тенкё халăх хуçалăхне кирлинчен чылай ытларах пулчё, укçа-тенкён тавар туянмалли вăйё чакрё. Çавăнпа та СССР Министрсен Совечёпе ВКП(б) ЦК укçа-тенкё системине улăштарса лайăхлатма йышăнчёç. Укçа-тенкё системине улăштарса лайăхлатни вăл халăх хушшинче

çӳретме тулли хаклӑ укçа кӑларма, халӑх хушшинче çӳрекен суя укçа-тенке, çавӑн пекех йӳнетнӗ кивӗ укçа-тенке каялла пухса илме палӑртать.

Хальхи вӑхӑтра халӑх хушшинче çӳрекен тата çынсен аллинче тӑракан укçа-тенке чакарса улӑштарса параççӗ – кивӗ 10 тенкӗ вырӑнне 1 тенкӗ укçа параççӗ.

Апат-çимӗç, промышленнӑç таварӗсене карточка тӑрӑх сутмалли системӑна çак йӗркепе пӗтереççӗ:

1) Апат-çимӗçпе промышленнӑç таварӗсене уçӑ суту-илӳ йӗркипе карточкӑсемсӗрех сутмалла тӑваççӗ;

2) Хальхи пысӑк (коммерчески) хаксемпе паек хакӗсем вырӑнне государствӑн ваккӑн сутмалли пӗр пек хакӗсене туса параççӗ;

3)...»

Асӑннӑ постановление 16.12.1947 çулхи «Коммунизм байрагы» хаçатра чӑвашла куçарса пичетленӗ.

Партипе Правительство йышӑннӑ документ пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулни каламасӑрах паллӑ: алӑра е перекет кассинче укçа нумай тытни, сентре çинче тавар пулмасан, унӑн хакӗ чаксах ларать. Ун пек чухне пӗр чӑматан укçапа лавккаран пӗр буханкӑ çӑкӑр та туянаймӑн. Çӗршывра вӑрçӑ хыççӑн заводсемпе фабрикӑсем промышленность таварӗсемпе ял хуçалӑхра кирлӗ техника çителӗклӗ кӑларайман. Çапах та 1948 çулта тавар çаврӑнӑш майӗпен ӳсме тытӑнать; колхоз пасарӗсенче тӗрлӗрен апат-çимӗç продукчӗсемпе суту-илӳ тума тытӑнни те хаксем чакнин сӑлтавӗсенчен пӗри пулнӑ.

Иртнӗ ӗмӗрӗн 30–50-мӗш çулӗсенче ял çыннин колхозри тата хӑйӗн хуçалӑхӗнчи ӗçсемсӗр пуçне кӗркуннепе хӗллехи сезонта патшалӑх валли вӑрман кӑларас нуша пулнӑ. Ун чухне районта 38 колхоз пулнӑ.

Чӑваш АССР ВКП(б) обкомӗ «Вӑрмана массӑллӑн касса хатӗрлемелли тата турттармалли уйӑхлӑх çинчен» ыйту пӑхса тухать.

Вăрман касса хатĕрлес, уйрăмах туртта-рас тата Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе республика кая юлса пынине пĕтерес тесе, ВКП(б) обкомĕ 1948-мĕш çулхи январĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа февраль 5-мĕшне çитиччен Чăваш республикинче вăрмана массăллăн касса хатĕрлемелли тата турттармалли уйăхлăх ирт-терме йышăннă.

Обком партийĕ районсенчи парти органĕсем урлă хăй йышăннă директивăна парти организацийĕсене, ял Совечĕсене, колхоз правленийĕсене çитерсе, çак уйăхлăх çинчен колхозниксене анлăн ăнлантарса пама, вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсене урăх çĕре куçса каяссине пĕтерме, ... вăрмантан тухмалла мар ĕçлемелле тума республикăра тата районсенче тухса тăракан хаçатсем урлă 08.01.1948 ç. чĕнет.

Партин Чкаловски районĕнчи активĕ январĕн 3-мĕшĕнче иртнĕ пухăвĕнче «Район вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçласси çинчен» райĕçтăвком председателĕ В.А. Алексеев тунă доклада итлесе сӳтсе явнă. Пуху партин Тĕп органĕ «Правда» хаçат пирĕн республика вăрман хатĕрлессипе япăх ĕçленине кăтартса критиклени хамăр района та пырса тивнине палăртнă.

Çак доклад тăрăх илсен *«...вăрман хатĕрлес, уйрăмах турттарас ĕçре Красномайск, Сăкăт, Алманчă, Çĕнĕ Ахпӳрт ял Совечĕсем; Ленин, Киров ячĕллĕ, Ырлăх, Канаш тата ытти уйрăм колхозсем чăтмалла мар кая юлса пыраççĕ.*

Вăрмана каяссинчен пăрăнса ĕçе чăрман-таракансене суда парасси таранах çирĕп ответ тыттармалла».

Республикăри парти тата Совет органĕсем патшалăха вăрман хатĕрлесе парас пирки кашни колхоза тата ял Канашĕсем тăрăх единоличниксене план антарса панă.

Тăрăн ял тăрăхне кĕрекен 12 вăйпитти единоличникăн 1948–49 çулсенчи кĕрхи-хĕллехи сезон-

та вăрман хатĕрлемелли план тăрăх 720 куб.м вăрман вутти хатĕрлесе памалла пулнă.

Асăннă ял тăрăхне кĕрекен виçĕ колхоза панă план тăрăх аяларах çакна курма пулать.

ПЛАН

осенне-зимних лесозаготовок на сезон 1948–49 г.г. по колхозам Чкаловского района.

Колхозы	в куб.м			ежедневный выход		
	заго-товка	под-возка	вывоз-ка	пе-ших	кон-ных	на во-лах
Красное Батырево	890	350	620	12	7	–
Р.Люксембург	1300	380	740	18	5	6
Октябрь Ялавĕ	980	220	450	13	4	–
Всего по району:	27190	10000	16000	362	201	41

«Роза Люксембург» колхозпа Тăрăн ял Совечĕ вăрман касса кăларассине 1948 çулта пуçланă пулин те, çак ĕçе вĕсем вăраха янă. Кун пирки асăннă хаçат 29.01.1949 ç. «Вăрман хатĕрлес ĕçре татăклă улшăну тумалла» статьяра çапла çырнă:

«Уйрăм ял Совечĕсемпе колхозсем вăрман хатĕрлессипе питĕ япăх ĕçлеççĕ.

Тăрăн ял Совечĕпе (председатель В.Илехметов) Р.Люксембург колхоз (Н.Сорокин), парторганизаци (секретарĕ Дмитрий Сорокин) ку таранччен те 1300 куб.м вырăнне 592 фестметр çеç вăрман каснă, плана 28% тултарнă».

Вăрман касса хатĕрлесси ун чухне асăннă ял Советне кĕрекен колхозсенче кăна мар, республикипех çăмăлах пулман курăнать.

Ун чухне, паллах, вăрмана çунтармалли вутă валли кăна мар, строительствăра тата промышленнăçа

малалла аталантарма, строительствăра кирлĕ стратегилле материал шутланнипе ăна çителĕклĕ хатĕрлемелле пулнă. Ахальтен мар пуль ĕнтĕ ВКП(б) обкомĕнче «Вăрмана массăллăн касса хатĕрлемелли тата турттармалли уйăхлăх çинчен» йышăну кăларнă.

Вăл вăхăтра тракторсемпе лебедкăсем, вăрман турттаракан автомашинăсем тата ытти механизмсем пулманнипе вăрман касса турттарассине алă вĕççĕн тума тивнĕ. Çăмăлрах ĕç шыраса е вĕренме хулана каяс тесе шутласан та, вырăнти пуçлăхсенчен ирĕк илеймен, алла паспорт паман ун чухне. Паспортсăр хулара нимĕнле ĕçе те вырнаçаймăн, çапкаланса çӳрекенсене пуçтарса ирĕксĕр ĕçлеттерекен лагерьсене янă. Вăрман ĕçĕнчен пăрăнакансене суд туса айăпланă. Вулакана аяларах район хаçатĕнче çапăнса тухнă суд ларăвĕнчен илнĕ статьясемпе кĕскен паллаштарăпăр.

«Вăрман хатĕрлеме каймасăр тăнăшăн.

Тăрăн ял Советĕнчи единоличник Николай Сорокин пĕр сăлтавсăрах вăрман хатĕрлеме каймасăр тăнă, çапла вара вăл государство умĕнчи ĕç повинноçне пурнăçлассинчен пăрăннă. Çак ĕçе районри халăх сучĕ пăхса тухрĕ. Сорокина УК-н 61-мĕш статьин иккĕмĕш пайĕпе айăпласа пĕр çул хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă».

«Вăрманта ĕçлессинчен пăрăннăшăн.

Патăрьел ялĕнче пурăнакан Людмила Полякова вăрмана ĕçлеме кайма килĕшмен. Районри прокуратура Л.Полякована çавăншăн суда панă. Районри халăх сучĕ çак ĕçе 1948 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче пăхса тухрĕ, Полякована пĕр çул хушши тĕрмене хупса усрама йышăнчĕ».

А.Ильин.

Паянхи кун 80 çулхи ватăсемпе тĕл пулса вăрçă çулĕсемпе ун хыççăнхи çулсем çинчен сăмах хускатсан хăйсен çамрăк чухнехи вăхăтне аса илеççĕ. Улатăр

районне кӗрекен Киря, Паснапуç, Кивӗ тата Çӗнӗ Эйпеç ялӗсен таврашӗнчи вӑрмантан тухмасӑр вӗсем вӑрман кӑларса-турттарса тар юхтарнӑ. Куб турттарнӑ тетчӗç вӗсем вӑрман хатӗрленине. Тен, вутӑ касса хатӗрлемелли план панине кубометр çине куçарса пысӑк пулнипе çапла каланӑ.

Кӗрхи-хӗллехи сезонта ӗçленӗ чухне çав вӑрман çӗрринчи ялсенче хваттерте пурӑнакан çамрӑксем пулас мӑшӑрӗсене тупса çемье çавӑрнисем те пулнӑ.

Паян пурӑнакан ватӑсенчен вӑрçӑ хыççӑнхи çулсенче торф кӑларнӑ çӗрте ӗçленӗ ял çыннисене пӳрнепе шутласа кӑларма пулать. Атӑл леш енчи торф предприятине çамрӑксене ӗçлеме кайма районсене разнарядка ярса панӑ. Ӗç условийӗ йывӑр пулнипе, апат-çимӗç çителӗксӗррипе, хӗллехи сивӗре ӗçленӗ хыççӑн тумтире типӗтме, канма хӑтлӑ та ӑшӑ çуртйӗрпе тивӗçтерменнипе унта ӗçлекенсем пӑрахса кайнӑ тӗслӗхсем пулнӑ. Паллах, вӑрçӑ вӑхӑтӗнче вӑрман касассинчен пӑрӑнакансене, вӑрçӑ хыççӑн торф кӑларнӑ çӗртен ирӗк илмесӗр пӑрахса каякансене СССР Аслӑ Канашӗн Президиумӗн 1940 çулхи июнӗн 26-мӗшӗнче йышӑннӑ Указӗ тӑрӑх сут туса уголовлӑ йӗркепе айӑплама та пултарнӑ.

Ваттисем каланине астӑватӑп-ха: каçхине торф кӑларса барака таврӑнсан, рабочисем хуппипе улма пӗçерсе шӑнса кайнӑ çӑкӑра ӑшӑтса çинӗ. Çамрӑксем (ытларах хӗрсемпе хӗрарӑмсем пулнӑ) ушкӑнпа хур чӗпписем пек пӗр çӗре чӑмӑртанса ӑшӑнса çывӑрнӑ. Кунӗпе ӗçлесе чул пек шӑнса хытнӑ çӑпатасемпе тӑла чӑлхасем çӗр каçиччен те типсе çитеймен. Ирхине тӑрсан вӗсене тӑхӑнса татах ӗçлеме каймалла. Выçӑллӑ-тутӑллӑ, ӑшӑ та хӑтлӑ хӗллехи тумтир, урана тӑхӑнма çӑматӑ пулманнипе йывӑр чирлесе хӗне кайнӑ тӗслӗхсем те пулнӑ.

Сӑмах май, ял çынни кӑкарчӑкри йытӑ евӗр пулнӑ вӑрçӑ хыççӑнхи çулсемпе 50-мӗш çулсенче. 1959 çулта вара Чӑваш республикинчи ялсенчен Красноярск,

Чита, Саратов облаçёсене, Хабаровск крайне тата халăх сахал пурăнакан ирĕк çĕрсем çине куçса кайма тытăнаççĕ. Хресчен хăй пурăннă выpăнтан, колхозран ирĕк илмесĕр ĕçлеме хулана кайма пултарайман. Колхоз председателĕсем кĕске вăхăт хушши ĕçлеме хулари предприятисене договорпа килĕшсе янă тĕслĕхсем пулнă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче колхозсене çуракинче акса хăвармалли тĕш тырă, пахча-çимĕç тата ытти культурăсене вĕсен çĕр лаптăкĕн калăпăшне кура патшалăх планĕ панă.

Аяларах 1948 çула виçĕ колхоза панă патшалăх планĕ çинче чарăнса илĕпĕр, ăна выpăсла çапла çырса кăтартнă.

Государственный план весеннего сева по колхозам на 1948 год.

колхозы:	итого ярового сева	яровая пшеница	овес	горох	чечевица	просо	гречиха	вика на семена
Кр. Батырево	321 га	60	100	10	7	3	8	3
Р.Люксембург	377	108	150	16	10	8	8	5
Октябрь Ялавĕ	258	54	120	12	10	6	8	4

полба	итого	всего техн.	в том числе			
		зерновых культур	к о к - согыз	конопля волокна	карто-фель	овощи
10,5	201,5	13	5	8	10	2
13	318	18	4	14	23	3
10	224,5	12	4	8	10	2

Паянхи кун маларах кăтартнă тĕш-тырă тата ытти культурăсем çинчен вăтам çулсенчи тата çамрăк ăру пурне те пĕлсех каймасть, вĕсене мĕнле çитĕнтерсе пух-

са илес пирки вара калаçу та пулма пултараймасть. Иртнĕ ĕмĕрти 50-мĕш çулсенче кок-сыгыз, ясмăкпа пăрине, каярах вире те (вырăсла-чечевица, полба, просо) колхозсем акма пăрахнă. Тен, асăннă пĕрчĕллĕ культурăсен тухăçĕ пирĕн тăрăхра пысăк маррипе, çавна пула тупăш паманнипе çыхăннă. Кантăра 80-мĕш çулсенче те колхозсенче çитĕнтерсе унран сӳс туса фабрикăсене ăсатнă пулсан, каярах çак культурăра наркомани упракан япаласем пуррине тупса палăртнипе ял хуçалăх предприятисенче акма чарнă.

Вăрçă хыççăнхи малтанхи пилĕк çул, çавăн пекех 50-мĕшĕн малтанхи çулĕсенче колхозниксен пурнăç условийĕ йывăр пулнă. Асăннă тапхăрта юхăнса кайнă выльăх-чĕрлĕх производствине аталантарас, тыр-пул тухăçне агротехникăна пăхăнса ĕçлеме пултаракан вăтам звеносене пĕлсе ертсе пыракан ял-хуçалăх специалисчĕсемпе ертӳçисем çитменни нумай чăрмав кӳнĕ. Çӳлерех асăннă виçĕ колхозра та хуçалăх ертӳçисем тата вăтам звеносене ертсе пыракансем улшăнса тăнипе – уйрăмах çак пысăк çитменлĕх «Октябрь Ялавĕ» колхозра палăрнă – ĕç дисциплини те хавшанă. Колхозсенчи хăш-пĕр ертӳçĕсем, фермă заведующийĕсемпе уй-хир бригадирĕсем хăйсене шанса панă ĕç çине сӳрĕккĕн пăхнипе, ĕçкĕпе аташнипе ĕç производствин кăтартăвĕсем те япăх пулнă. Ун пек чухне тыр-пул, выльăх-чĕрлĕх продукцине патшалăха памалли плана пурнăçласан, хуçалăх валли хăварма тата колхозниксене ĕç кунĕ тăрăх валеçсе памалли тырри-пулли, пахча-çимĕç продукцийĕ çителĕклĕ юлман. Çакăнпа паллах уй-хирте е фермăра тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекен ял халăхĕ кăмăлсăр пулнă.

Хăш-пĕр колхозсенче тыр-пул пухса илессине тата çуракине тухма япăх хатĕрленнипе ВКП(б) Чкаловски парти райкомĕн бюровĕ ларусенче хуçалăх ертӳçисене ĕççине вăхăтра тата лайăх пахалăхпа ирттерме хушнă.

Аяларах парти райкомĕн ларăвĕн 1948–1949 çулĕсенчи хăш-пĕр протоколĕсем çинче чарăнса илĕпĕр.

Протокол № 18 от 07.07.1948 г. – О готовности к уборке урожая колхоза Роза Люксембург.

«... в колхозе Р. Люксембург не готова ни одна жнейка, не отремонтирована зерносушилка, не приведены в порядок крытые тока, не подготовлены складские помещения. Колхоз к уборке урожая не готов.

Постановили: Обязать Сорокина Н.В. и секретаря парторганизации Сорокина Д.Р. в двухдневный срок завершить подготовку к уборке урожая и сдачи хлеба государству».

Тыр-пул пухса кĕртнĕ тапхăра колхозри вăтам звеносене ертсе пыракан специалистсенчен тата ытти выränта ĕçлекен ял çыннисенчен яваплă комисси туса хунă, унта çаксене кĕртнĕ:

1. Самакин Дмитрий Васильевич – 1-мĕш бригадăн бригадирĕ;

2. Илехметов Алексей Иванович– 2-мĕш бригадăн бригадирĕ;

3. Илеменов Николай Алексеевич – 4-мĕш бригадăн бригадирĕ;

4. Васильев Тимофей Васильевич – МТФ заведующийĕ;

5. Паймуков Александр Григорьевич – пушар дружинин начальникĕ;

6. Дерякова Екатерина Захаровна – шкул заведующийĕ;

7. Краснов Петр Павлович – вулавăш çурчĕн заведущийĕ.

Протокол № 4 от 10.03.1949 г. – О подготовке живого тягла к весенне-полевым работам в колхозе «Красное Батырево».

«В этом колхозе, где председатель Рубцов, секретарь парторганизации Скворцова, к весенне-полевым работам подготовились неудовлетворительно. Из имеющихся 14 рабочих лошадей 2 головы истощены, 4 – нижесредней и 6 голов средней упитанности, и только 2 головы хорошей упитанности. По существу к предстоящему весеннему севу подготовлены

только 3 лошади. Меры по завершению лесовывозки не принимаются».

(Госархив современной истории, ф.200, оп.3, д.160).

1949 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чкаловски райкомĕ бюро ларăвĕнче «Р. Люксембург» колхоз председателĕ пулма Илехметов В.Ф. кандидатурине çирĕплетет. Çурхи акана асăннă колхозсенче май килнĕ таран ирттерсе янă пулин те, умра тыр-пула хиртен хăвăртрах та тăкаксăр пухса пӳлмене кĕртесси, патшалăха план тăрăх вăраха ямасăр парса татас ыйту тухса тăрать.

«Красное Батырево» колхоз ертӳçисем вара вырмана тухма хатĕрленмен: тыр-пул вырмалли машинăсене юсаса пĕтереймен, колхозниксем çу вăхăтĕнчи ĕç нормине тултарман. «Р. Люксембург» колхозра тырра çавапа çулнă лаптăксенче хире пучахсем нумай юлнипе вырма вăхăтĕнче çухатусем пулнă. Патшалăха тырă леçесси те вăраха тăсăлнă.

«Роза Люксембург» колхоз умне тухса тăнă йывăрлăхсем уй-хирсенче тыр-пул пухса илессипе кăна мар, выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма ăшă витесем çукки те ура хунă. Ишĕлсе анас пек витесенче те витĕр çил шăхăрни, вĕсен тăрринчен çумăр анни, пĕлĕтри çăлтăрсем те курăнни, паллах, фермă ĕçченĕсен кăмăлне хуçнă. Выльăхсем валли хĕл каçма апат çителĕклĕ хатĕрлесе çитерменни сĕт сăвассипе, аш-какай тата ытти продукцисене туса илессипе патшалăх тăратнă плана тултарма май паман.

Çак ыйтăва та ВКП(б) райком бюровĕ хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухма тивнĕ.

Протокол № 32 от 28.09.1949 г. – О ходе подготовки животноводческих помещений к зимнему содержанию скота в колхозе им. Р.Люксембург.

«Районный комитет партии постановил:

1. Указать на несерьезное отношение секретаря парторга-

низации Сорокина и предколхоза Илехметова к делу своевременной подготовки животноводческих помещений к зимнему содержнию скота и обязать их немедленно организовать постоянную строительную бригаду, приступить к ремонту старых и строительству новых помещений и все работы закончить к 25 октября сего года.

2. Предупредить Сорокина и Илехметова о строгой партийной ответственности».

(Госархив современной истории ЧР, ф.200, оп.3, д.160–161)

«Р.Люксембург» колхозра хуçалăха ертсе пыракансем, çулталăк иртсе кайнă пулин те, ёне ферине туса пётерсе хута ярайман, 4 лаша витинче юсав ёçёсене пётермен. Вёсен алăкёсем çуккипе вёсенче çил выляна, витесен тăррисем те шăтăк-шатăк пулнă. Çитес çулсенче те фермă ёçченёсен ăшă та хăтлă витесенче выльăхсенчен ытларах сёт суса илесси, сыснасем самăртса патшалăха аш-какай валли парасси, сурăхсенчен çăм касса, чăхсенчен çăмарта ытларах илесси çинчен ёмётленме кăна тивнё. Çак хуçалăхра выльăхсен вилессин хисепё те пысăк пулнă. Çавна пулах 10.06.1950 çулхи планпа пăхнинчен выльăх-чёрлёх шучё кăтартусем тăрăх лашасем 4 пуç, ёнесем – 14, сурăхсем – 3, сыснасем – 50 пуç, чёх-чёпсем 531 штук сахалтарах пулнă. Выльăхсен ăратлăхне çёнетес пирки те тивёçлё ёçсем туман, учетпа отчет ирттерессине япăхтарса янă.

Çӳлерех асăннă çулсенчи çак виçё колхоз экономикине вăрçă умёнхипе танлаштарас пулсан, вёсем вăйсăр хуçалăхсен йышёнчех пынă. Уй-хирте тырпул пухнă, ăна патшалăха леçнё çёрте усă курма тата вăрман кăларма юрăхлă лашасем сахал пулнипе вăкăрсемпе ёнесене те турта хушшине тăратма тивнё. Çакăнта 1951 çулхи тыр-пул пухса кёртес пирки пăхса тухнă график тăрăх хăш-пёр цифрăсемпе те танлаштарма пулать.

Площади ранних по колхозам	в (га)	кол-во рабочих лошадей	конные сеялки
Красное Батырево	227	24	4
Роза Люксембург	396	52	4
Октябрь Ялавĕ	281	40	3

1951 çулхи отчет тăрăх, «Р.Люксембург» колхозăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе пăхнă кăтартусем тăрăх çакна курма пулать:

выльăх-чĕрлĕхсем	*план*	*фактически*	*çитмест*
1. Лашасем	26	30	
2. Шултра маййракаллă выльăх	70	70	
вĕсен шутĕнче ĕнесем	23	10	13
3. Сурăхсем	145	129	16
4. Сыснасем	130	107	23
5.Чăхсем-чĕпсем	650	316	334

Çӳлерех чарăнса тăнă «Роза Люксембург» колхоз пекех ытти икĕ хуçалăх «Красное Батырево» тата «Октябрь ялавĕ» те экономика енчен районти вăйсăр колхозсен шутĕнче пынă. Вĕсенче те уй-хирти тыр-пул тухăçлăхĕ енĕпе те, фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессипе те çитменлĕхсем сахал мар пулнă, кадрсем пирки татса паман ыйтусем пайтах пуçарăннă.

Кĕске справка: 10.10.1950 çулта Чкаловски районĕнчи райком ларăвĕнче колхозсенче радиофикацилесси çинчен ыйту пăхса тухнă. «Роза Люксембург» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсен ертӳçисем çак колхозсенче радио кĕртме тытăнас ĕç çине сӳрĕккĕн пăхни пирки асăрхаттарнă.

«Красное Батырево» колхоз ĕçченĕсем вара иккĕмĕш çул ĕнтĕ радио тăрăх тĕнчери, çĕршыври хыпарсене пĕлнĕ, чăвашла Шупашкар артисчĕсем спектакльсенче вылянине радио çумĕнчен хăпмасăр итлесе савăннă. Тăрăн ял çыннисем патне радио сасси 1951 çулта çитет.

ПĔРЛЕШŬЛЛĔ ВĂЙПА – МАЛАЛЛА (1951–1973 çулсем)

1951 çулхи нарăс уйăхĕнче «Роза Люксембург» (Тăрăн ялĕ), «Красное Батырево» (Йăлăм) тата «Октябрь ялавĕ» (Треньел) колхозсен членĕсем пухусем ирттереççĕ, виçĕ хуçалăха пĕр колхоза пĕрлештерсе Мичурин ячĕпе тăракан колхоз йĕркелеме килĕшеççĕ. Çĕнĕ колхоз йĕркелени çинчен кăларнă йышăнăва пуш уйăхĕн 8-мĕшĕнче Чкаловски райĕçтăвкомĕ çирĕплетнĕ. Виçĕ ял пĕр колхоза чăмăртаннă пулин те, çăва тухнă çĕре мĕнле выльăх-чĕрлĕх фермисем хăш ялта пулассине татса парайман. Йăлăмпа Треньел ялĕсенчи чылай колхозниксем çĕнĕ колхозăн председателĕ В.Ф. Илехметов юлнипех килĕшесшĕн пулман, вăлах председатель çумĕ те шутланнă. Хăш-пĕр бригадирсем вăл хушнине пурнăçа кĕртме васкаман. Йăлăм ялĕнче пуху ирттерсе колхоз председателĕ пулма А.Петрова суйланă. Анчах ку йышăну та ял хуçалăх артель Уставĕпе килĕшсе тăманни куç кĕретех паларнă.

Çĕнĕ колхозăн экономика енчен çак çул та малтанхи çулсенчи пекех, лайăх улшăнусем пуласси туйăнман. Ĕç условийĕсем тивĕçлĕ шайра пулманнипех фермăра ĕçлекенсем те нумай тытăнса тăман. Ферма заведующийĕ Сорокин хăйĕн тивĕçĕ çине ал сулнă. Çакна колхозниксем те ăнланса илнĕ, 1951 çулхи раштав уйăхĕнче колхоза ертсе пыма учитель пулса ĕçленĕ М.Ф. Гаврилова шаннă. Виçĕ ялтан тăракан хуçалăха малалла хускатса яма пултаракан, çĕр ĕçне ăнланакан хресчен тупăнман-ши ун чухне шкул ачисене вĕрентекенсĕр пуçне? Мичурин ячĕпе тăракан колхоза ахрат çырминчен туртса кăларма нумай вăй хумалла пулнă. Çапах та çитменлĕхсене çĕнĕ председатель те пĕтерме васкаман, вĕсем вара уйхир ĕçĕнче те, колхозăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те çителĕклех пулнă.

1951 çулта план тăрăх пĕр ĕнерен 1500 кг сĕт суса илмелле пулсан, 406,5 кг, çăмарта пĕр чăх пуçне 70 шт.

вырăнне 29 шт., çăм пĕр сурăхран 2,5 кг вырăнне 1,7 кг анчах илнĕ. Колхоз выльăхсем вилессипе вара района малти вырăнта пынă. Çулталăк хушшинче кăна 4 лаша, 52 сурăх, 91 сысна, ĕнесем 17 пуç вилнĕ.

Колхоз председателĕпе пуçламăш парторганизаци секретарĕ пирки Чкаловски парти райкомĕн бюро ларăвĕнче 1952 çулта пĕрре кăна мар пăхса тухнă. Вĕсенчен хăш-пĕр протоколĕсем çинче чарăнса илĕпĕр.

Заседание бюро Чкаловского райкома ВКП(б) от 22.04.1952 г.

Итоги поверки соблюдения Устава сельхозартели в колхозе им. Мичурина.

«...Серьезные недостатки на животноводческих фермах, нормальные бытовые условия для обслуживающего персонала не созданы, помещения для содержания скота не утеплены, отсутствуют кормушки, инвентарем не обеспечены. Грубые корма скоту давались не обработанном виде, скот не был обеспечен водой. Поэтому в течение 1951 года и 3 месяцев 1952 года пало 5 голов лошадей, 28 голов КРС, свиней 184 головы, овец 78 голов и птицы – 3259 голов. Учет животноводческих продуктов на фермах отсутствует, на МТФ не производится контрольный удой молока.

Первичная парторганизация не осуществляет в должной степени контроль хозяйственной деятельности правления колхоза, в некоторых случаях мирится с фактами грубого нарушения Устава сельхозартели».

Протокол №1 заседания бюро Чкаловского РК ВКП(б) от 2 сентября 1952 года.

Секретарь РК – Тимофеев П.Т.
прокурор – Ласточкин
нарсудья – Ермолаев и другие
члены райкома партии.

Слушали: О ходе выполнения решения бюро РК ВКП(б) от 22.04.1952 г. по итогам проверки соблюдения Устава сельхозартели в колхозе им. Мичурина.

(т.т. Гаврилов, Илехметов, Думилин, Ялуков)

«Председатель колхоза Гаврилов и секретарь парторганизации Илехметов по прежнему безразлично относятся к фактам грубых нарушений Устава.

Колхоз серьезно отстает с проведением сельскохозяйственных работ, в заготовке кормов, уборке урожая и хлебозаготовок, неудовлетворительно выполняется план развития общественного животноводства, находится под угрозой срыва выполнения плана ремонта и строительства животноводческих и других построек.

Запущена в колхозе контрольно-ревизионная работа. В 1952 году проведена лишь одна ревизия. Председатель ревизионной комиссии тов. Думилин не выполнил решения бюро РК с целью выяснения полученной соломы председателем колхоза Гавриловым. Учет и отчетность в колхозе запущены, и.о. старшего счетовода Ялуков к своим обязанностям относится халатно. Думилину за проведение разных проверок начислено лишних 137,5 трудодней.

РК постановляет:

Председателю колхоза Гаврилову объявить строгий выговор с занесением в учетную карточку и предупредить, что если он не примет решительных мер к устранению фактов нарушений Устава сельхозартели, он будет исключен из партии и отдан под суд.

За плохую постановку учета и отчетности считать невозможным дальнейшего оставления Ялукова счетоводом колхоза.

...Думилина считать невозможным дальнейшего оставления председателем ревизионной комиссии, о выборе нового председателя ревизионной комиссии вопрос поставить на следующем собрании колхозников».

(Госархив современной истории, ф.200, оп.4, 112-мĕш ĕç.)

Паллах, вырăнти парторганизаци колхоз правленипе унăн ертӳçисене контрольлесе тăнипе, çавăн пекех парти райкомĕ колхоз председательне асăрхаттарнипе хуçалăхăн лавĕ вырăнтан тапранайман. Кунта колхоз председателĕн пуçарулăхĕ, ял халăхĕпе ĕçлеме пĕлни,

вăтам звенори пултарулла кадрсене тупса, вĕсене уйхирсенче ĕçлекен колхозниксемпе фермă ĕçченĕсене ертсе пыма пулăшни кирлĕ пулнă.

40-мĕш çулсен вĕçĕнче тата 50-мĕш çулсенче маларах асăннă колхозсенче вăтам звенора тăрăшакан пултарулла специалистсем пулнă. Вĕсенчен чылайăшĕ вăрçă çулăмĕ витĕр тухнă хисеплĕ ял çыннисем уйхир бригадисенче вуншар çул бригадирсем пулса чыспа хисепе тивĕç пулнă. Çавăн пек ĕç паттăрĕсем Тăрăнти Алексей Иванович Илехметов, Иван Николаевич Сорокин уй-хир бригадин бригадирĕсем тата Дмитрий Васильевич Самакин строительство бригадин бригадирĕ, Йăлăмри выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ Дмитрий Тихонович Владимиров, Треньелĕнчи уй-хир бригадин бригадирĕ Матвей Васильевич Анисимов тата ытти вăтам звенори ертӳçĕсем, фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем, уйхирте ĕçлекен механизаторсемпе колхозниксем пулнă. Пултарулла ял ĕçченĕсен çитĕнĕвĕсем çинчен каярах вуласа пĕлĕпĕр-ха.

1952 çулхи справка тăрăх, асăннă Мичурин ячĕпе тăракан колхозпа çакна курма пулать.

Госакт тăрăх хуçалăх çинче 2338,41 га çĕр шутланса тăрать, ун шутĕнче: сухаламалли – 1850,23 га. Колхозра 437 уйрăм хуçалăх, 806 вăйпитти колхозник. Колхозăн уйăрман фонд 01.01.1952 çула 738121 тенкĕ шутланса тăрать. Пĕрчĕллĕ культурăсен вăтам тупăшĕ 1951 çулта гектартан 13,50 ц пулнă.

Выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессипе: пĕр ĕнерен 416 литр сĕт суса илнĕ, пĕр сурăхран 1,6 кг çăм каснă, пĕр чăхран 30 штук çăмарта илнĕ. 1951 çулта укçа çине куçарнă тупăш планпа пăхнă 610000 тенкĕ илмелле пулсан, 443449 тенкĕ анчах илнĕ. Уйăрман фонд çине планпа 91500 тенкĕ укçа куçармалла пулсан, 665 тенкĕ анчах куçарнă.

Колхозниксене пĕр ĕç кунĕ пуçне: тырă – 2,2 кг, укçа – 30 пус, улăм – 2,4 кг валеçсе панă.

Мичурин ячёпе тăракан колхоз хăй умне йышăннă производство планне чылай енёпе пурнăçлаймасăрах 1952 çула япăх кăтартусемпе вёçлесе, 1953 çула кёнё. Колхозниксем пурнăç лайăхланасси председатель улшăнмасăр пулас çуккине паллах ăнланнă. Çавăнпа та 1953 çулхи нарăс уйăхён 20-мёшёнче колхозниксен пёрлехи пухăвёнче Ситов Александр Александровича Мичурин ячёпе тăракан колхоз председателё пулма суйлаççё.

Александр Александрович Ситов
(1916–1974)



А.А. Ситов 1916 çулта Кёçён Патăрьелёнче çуралса ӳснё. Колхозри çамрăксен шкулне вёренсе пётерсен, вăл «Красное Батырево» колхозра ёçлеме тытăнать. Ветеринарсен курсёнче вёренет. Тăван çёршывăн Аслă вăрçине хутшăннăшăн ăна орден-медальсемпе наградăланă. Вăрçă хыççăн А.А. Ситов «Гвардия» ятлă инвалидсен артелён председателё.

1953 çулта ăна Мичурин ячёпе тăракан колхоз председателё пулма суйланă. Çак яваплă ёçре вăл 1959 çулта «Путь Ленина» колхозпа пёрлешичченех вăй хунă. «Путь Ленина» колхозра 2-мёш уйрăмăн управляющи, колхоз председателён çумё пулса 1974 çулччен ёçленё.

Ёçри çитёнӳсемшён Александр Александровича Ёçлёх Хёрлё Ялав орденёпе тата СССР ВДНХ медалёсем парса чыслана.

А.А. Ситов ертӳçё пуканне йышӑнсан тепёр икё уйӑхранах колхоз юпа тиха пек малалла тапса сикеймен, ёçке ерённё, хӑйён ёçё çине сӳрёккён пӑхакан хӑшпёр бригадирсемпе ферма заведующисене ёçрен хӑтарма тивнё. Правлени йышне пултаруллӑ специалистсемпе колхозниксене кёртнё. 3–4 уйӑх хушшинче 3 бригадира, 3 ферма заведующине, уй-хире пӑхса тӑракана тата ытти выраннти специалистсене пуçаруллисемпе улӑштарнӑ.

Колхозӑн лавё тапранса малалла кайни çёнёрен суйланӑ выраннти парторганизаци (секретарё А.И. Алексеев) 1953 çулхи февраль-август уйӑхёсенчи ёç итогёсем тӑрӑх тунӑ отчетран лайӑх курӑнать.

Çурхи тёш-тырра планпа йышӑннӑ 500 га выраннне 509 га акса çуракине 8 кун хушшинче вёçленё. Кёрхисене те шутласан мён пурё 1009 га акнӑ, вёсенчен сортлӑ вӑрлӑхсемпе – 812 га. Кёрхи тырра пухса кёртессине 7–8 кунта вёçлесе, авӑн çапма тата улӑма урана хума тытӑннӑ. Августӑн 15-мёш тёлне 50 процент ытла авӑн çапса урана хывнӑ. План тӑрӑх патшалӑха 1342 ц тырӑ памалла пулсан, августӑн 14-мёш тёлне 1500 ц леçнё.

Çапах та колхоз умёнчи обязательствӑсене: выльӑхчёрлёх продукцине патшалӑха тӑратассипе çак вӑхӑт хушшинче колхозӑн плана пурнӑçлама май килмен-ха.

Çавӑн пекех выльӑх-чёрлёх ёрчетессипе те план тулманнипе фермӑсемпе илес пулсан йывӑрлӑхсем пулнӑ. Аяларах паллашӑпӑр хӑш-пёр цифрӑсемпе:

Выльӑх-чёрлёхсем:	план тӑрӑх	пурнӑçланӑ
Шултра мӑйракаллӑ выльӑх	240 пуç	212 пуç
сурӑхсем	480	412
сыснасем	400	538
лашасем	146	167
пыл хурчёсем	50	38
чӑх-чёпсем	2000	1424

1953 çулхи раштав уйăхĕнче А.А. Ситов колхозниксен умĕнче тухса каланă чухне колхоз хăш-пĕр енĕпе палăрмаллах тунă çитĕнӳ çинче чарăнса тăнă. Тыр-пул тухăçлăхĕ иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан самаях ӳснĕ, çакă уйрăмах 2-мĕшпе 6-мĕш бригадăсенче палăрнă, выльăхсен шучĕ те, чăх-чĕпсене шутламасан, хутшăннă. Çĕнĕрен ферма çуртне туса лартнă, виçĕ фермăра алă вĕççĕн шыв кăлармалли водокачка лартнă. Çапах та 1954 çулхи уй-хирти тыр-пула пухса кĕртнĕ хыççăн та Тăрăнти ĕне фермине туса пĕтерейменнипе правлени ларăвĕнче кĕркуннене кĕриччен çак ĕçе пĕтерме, ферма ĕçченĕсене йĕркеллĕ ĕçлеме услови туса пама хуçалăх ертӳçисене вăхăт парса хăварнă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчи демократи тапхăрне кĕрсен пире ертсе пыракан парти органĕсем пĕтиччен организацисемпе учрежденисен, предприятисемпе патшалăхăн тĕрлĕрен органĕсенчи пуçлăхсем тата колхоза ертсе пыракан председательсем парти номенклатури шутланса тăнă. Районти парти комитечĕ бюрора çирĕплетсен анчах вĕсем пуçлăх пуканне йышăнма пултарнă.

Колхозсенче председательсене кăна мар, вăтам сыпăкри специалистсене те районти парти комитечĕ килĕшмесĕр колхозниксем суйланипе анчах ĕçлеме пултарайман. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра 18.01.1955 çулта парти райкомĕн ларăвĕнче 1-мĕш уй-хир бригадирĕ пулма В.В. Цветкова, 2-мĕшне – Алексей Иванович Илехметова, 3-мĕшне – Иван Николаевич Сорокина, 4-мĕшне – Николай Павлович Краснова, 5-мĕшне – Пимен Григорьевич Попова, выльăхсем валли апат хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ пулма Емельян Дмитриевич Цветкова, Треньелĕнчи сурăх ферминче заведующи пулма Николай Ильич Эльмукова çирĕплетнĕ. Йăлăмра сысна ферминче заведующи пулса маларах та, каярах та Клавдия Васильевна Анисимова ĕçленĕ. Çак çулсенчех выльăх фельдшерĕсем пулса Тăрăнти ĕне ферминче Анна Ивановна Шуряшкинапа Йăлăмри

сысна ферминче Петр Никитич Долматов ĕçлетчĕç. Çак пултарулла вăтам сыпăкри чылай ертӳçĕ районти колхозсен хушшинче кăна мар, республикăра та палăрнă. Вĕсене ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн пурлăх тата мораль енĕпе хавхалантарнă, патшалăх наградисем – орденмедаль парса чысланă. Республикăра тата районта тухса тăракан хаçатсенче вĕсене мухтаса çырнă статьясем тухнă. Хăш-пĕр çавăн пек ертӳçĕсем, механизаторсемпе ферма ĕçченĕсем, ял хуçалăх специалисчĕсемпе колхозниксем çинчен хаçатсенче кун çути курнă статьясем çинче каярах чарăнса тăрăпăр. Мухтава тивĕçнĕ ял хуçалăх ĕçченĕсем çинчен вуласа хăйсене аса илĕпĕр, пĕлменнисем вара вуласа пĕлĕç.

Мичурин ячĕпе тăракан колхозăн механизаторĕсен пĕр ушкăнĕ 1952 çулхи ака хыççăн, Йăлăмри бригадăра тата сысна ферминче ĕçлекенсен тепĕр ушкăнĕ 1953 çулта сăн ӳкерттернĕ.



Сулахайран сылтăмалла лараççĕ: *Пĕрремĕш ретре:* 1. Михайлов Иван Николаевич, плугарь, Треньел; 2. Васильев Петр Дмитриевич, плугарь, Тăрăн; 3. Медведев Александр Дмитриевич, плугарь, Тăрăн; 4. Муськин Петр Федорович, плугарь, Треньел; 5. Мясников Анатолий Антипович, плугарь, Треньел.

Иккĕмĕш ретре: 1. Тихонов Николай Николаевич, тракторист, Йăлăм; 2. Тихонов Дмитрий Николаевич, тракторист, Йăлăм; 3. Соловьев Владимир Владимирович, тракторист, Йăлăм; 4. Михайлов Василий Васильевич, тракторист, Треньел; 5. Пчельников Николай Иванович, тракторист, Треньел; 6. Муськин Николай Федорович, тракторист, Треньел.


Виççĕмĕш ретре тăраççĕ: 1. Воробьев Василий Петрович, заправщик, Йăлăм; 2. Васильев Лев Иванович, плугарь, Тăрăн; 3. Хураськин Владимир Егорович, тракторист, Йăлăм; 4. Краснов Федор Васильевич, тракторист, Тăрăн; 5. Мессе Павел Александрович, плугарь, Тăрăн; 6. Краснов Петр Иванович, тракторист, Тăрăн.



Сулахайран сылтăмалла (*пĕрремĕш ретре*) ларааççĕ: Анна Николаевна Фролова, Нина Прокопьевна Артемьева, Анастасия Дмитриевна Цветкова, Александра Терентьевна Григорьева сысна пăхакансем, варринче – колхоз председателĕ Александр Александрович Ситов.

Иккĕмĕш ретре: Анна Ильинична Петрова, сысна пăхакан, Клавдия Васильевна Илюткина, ферма заведующийĕ, Анна Ивановна Шуряшкина, ветеринари фельдшерĕ, Раиса Николаевна Рубцова, сысна пăхакан, Александра Павловна Илюткина, сысна пăхакан.

Виççĕмĕш ретре тăраççĕ: Алексей Петрович Петров, агроном-полевод, Наталия Никитична Долматова, сысна пăхакан, Мария Александровна Воробьева, лаша пăхакан, Агафия Кузьминична Акимовапа Александра Егоровна Ситова сысна пăхакансем тата Емельян Дмитриевич Цветков бригадир.



Мичурин ячёпе тăракан колхозăн бригадирёсемпе ялсенчи ытти специалистсен ушкăнё районти ял хуçалăх выставки хыççăн (*пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла лараççĕ*): Анисимов Матвей Васильевич, Треньелёнчи уй-хир бригадин бригадирё; Александр Александрович Ситов, Мичурин ячёпе тăракан колхоз председателё (Йăлăм); Иван Николаевич Сорокин, Тăрăнти 3-мёш бригадăн бригадирё; Иван Федорович Яковлев, Тăрăн ял Канашён ёçтăвком председателё; Николай Павлович Краснов, Тăрăнти 1-мёш бригадăн бригадирё.

Иккĕмĕш ретре тăраççĕ: Алексей Иванович Крылов, колхозник (Тăрăн); Александр Тихонович Краснов, Треньелёнчи вулавăш çурчён ертӳçи; Пимен Григорьевич Попов, Треньелёнчи сурăх фермин заведующийё; Иван Федорович Муськин, Треньелёнчи уй-хир бригадин бригадирё; Емельян Дмитриевич Цветков, Йăлăмри выльăх-чёрлёх валли апат хатёрлекен бригадăн бригадирё.



Сăнӳкерчĕк çинче Мичурин хуçалăх ертӳçи А.А. Ситов колхозниксен хушшинче. *Сулахайран сылтăмалла:* уй-хир бригадин бригадирĕ П.М. Никитин, М.А. Воробьева лаша пăхакан, В.А. Тихонов хăма çуракан, П.Д. Рубцов тракторист, Треньелĕнчи уй-хир бригадин бригадирĕ И.П. Савельев, А.А. Ситов, Н.В. Сорокин заправщик, Н.А. Михайлов тимĕрçĕ, Н.В. Тихонов тракторист тата В.И. Угасев кладовщик.

1955–56 çулсенче партипе правительство ял-хуçалăха аталантарасси çине тимлĕрех пăхма тытăннă: ял хуçалăх артелĕн Уставне çĕнĕлĕхсем кĕртсе колхозсене уй-хир ĕçĕсем пирки план тунă чухне тĕштырă тата ытти культурăсене акмалли-лартмалли çĕр лаптăкне улăштарма ирĕк панă. Малта пыракансене мораль тата пурлăх енчен хавхалантарасси, колхозсемпе ял хуçалăх отраслĕсенче ĕçлекенсен хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарасси çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Асăннă Уставпа килĕшсе колхозсем те акмалли культурăсен калăпăшне тата мĕнле культурăсем пулмаллине хăйсем йышăннă план тăрăх палăртса хунă. Колхозниксен çулталăкри ĕç кунĕн минимумне, ĕçшĕн хушма тӳлев, йывăр çын пулнă хĕрарăмсене отпуск па-

расси, уйрăм хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх йышне, пăхса хăварнă.

1956 çулхи çуркунне Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А.А. Ситов колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче çак хуçалăх экономики çинче, малашне тумалли ĕçсем çинче чарăнса тăнă. Унăн пухура тухса каланисене 08.04.1956 ç. «Авангард» хаçатра «Артель хуçалăхне çирĕплетессишĕн» статьяра çырнинчен илсе кăтартăпăр.

«Колхозăн экономики вăрçă умĕнхи çулсемпе танлаштарсан чылай ӳсрĕ. Тĕш тырăсен тухăçлăхĕ кашни кун ӳссе пырать. 1955-мĕш çулта кăна, 1954 çулхипе танлаштарсан, тыр-пулсен тухăçĕ 2 хута яхăн ӳсрĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес ĕç те çултан çулах вăйланса пырать. Пирĕн колхоза, паллах, çак Уставăн кивеле пуçланă хăш-пĕр положенийĕсем тивĕçтермеççĕ. Кунта уйрăмах колхозниксене аванс, ĕçкунĕсен минимумне палăртас, йывăр çын пулнă хĕрарăмсене отпуск парасси тата ытти те».

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 1956 çулхи уй-хирти ĕç кăтартăвĕсем тăрăх, районти малти колхозсен шутне кĕнĕ. Асăннă колхозран районти ял хуçалăх выставкине колхоз ертӳçипе специалистсем, бригадирсемпе ытти çĕр ĕçченĕсем тĕш-тырă тата ытти культурăсем туса илессипе çитĕнӳсем тунăшăн çаксем хутшăнма тивĕçнĕ.

1-2. Алексей Иванович Илехметовпа Илеменов Никон Алексеевич уй-хир бригадин бригадирĕсем, ыраш, силослăх кукуруза тата вир культурисен тухăçĕ енĕпе (Тăрăнсем);

3. Пимен Григорьевич Попов, уй-хир бригадин бригадирĕ, кĕрхи ыраш тата силослăх кукуруза тухăçĕ енĕпе (Треньел);

4. Яков Ильич Илюткин, уй-хир бригадин бригадирĕ, кĕрхи ыраш тата çĕрулми культурисен тухăçĕ енĕпе (Йăлăм);

5. Илья Иванович Фролов, колхозăн сад ĕрчетекен бригадин бригадирĕ, купăста культурин тухăçĕпе тата сад ĕрчетес енĕпе (Йăлăм);

6. Думилин Николай Александрович, колхозăн кукуруза туса илекен звено звеньевойĕ, кукуруза тухăçĕ енĕпе (Тăрăн);

7. Владимир Григорьевич Медведев, колхозăн пахчаçимĕç туса илекен звено звеньевойĕ, купăста культурин тухăçĕ енĕпе (Тăрăн);

8. Леонтий Федорович Паймин, колхозăн пахчаçимĕç туса илекен звено звеньевойĕ, купăста тухăçĕ енĕпе (Треньел);

9. Александр Александрович Ситов, колхоз председателĕ, колхозăн мĕн-пур кăтартăвĕсем енĕпе (Йăлăм);

10. Федор Архипович Архипов, колхоз агрономĕ, колхозăн мĕнпур кăтартăвĕсем енĕпе (Тăрăн);

11. Василий Федорович Илехметов, колхозри паторганизаци секретарĕ, колхозăн мĕнпур кăтартăвĕсем енĕпе (Тăрăн);

12. Иван Александрович Ситов, МТС-ăн Мичурин ячĕпе тăракан колхозра ĕçлекен трактор бригадин бригадирĕ, колхозăн мĕнпур кăтартăвĕсем енĕпе (Йăлăм);


13. Василий Васильевич Журавлев, колхоз счетовочĕ, колхозăн мĕнпур кăтартăвĕсем енĕпе (Треньел);

14. Петр Романович Сорокин, колхозăн транспорт тата çул-йĕр бригадин бригадирĕ (Тăрăн);


15. Дмитрий Васильевич Самакин, колхозăн строительство бригадин бригадирĕ (Тăрăн);

16. Антон Васильевич Угасев, колхоз шоферĕ (Тăрăн).

Сăмах май, А.В. Угасев Мичурин ячĕпе тăракан колхозра малтанхи шофер пулнă, пĕр вăхăт хушши выränти парторганизацине ертсе пынă. Вăл пĕрремĕш хут руль умне вăрçă пуçланиччен «Роза Люксембург» колхоз чухнех ларнă.



Самакин Дмитрий Васильевич
строительство бригадирĕ



Попов Пимен Григорьевич
уй-хир бригадирĕ



Эльмуков Николай Ильич
сурăх фермин заведующийĕ



Цветков Емельян Дмитриевич
выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлекен бригадăн ертӳçи

Мичурин ячёпе тăракан колхоз малалла аталанса пынине пăхса тухас пулсан, çак хуçалăхра ёçлекен колхозниксем уйрăмах 1956–1958 çулсенче уй-хирте пысăк тухăçлă тыр-пул тата ытти культурăсем пухса кёртессипе, фермăсенче выльăх-чёрлёх продукци илессипе пысăк çитёнӳсем тунине палăртмалла.

Колхоз ертӳçи А.А. Ситов 1956 çулта хуçалăхри уй-хир тата выльăх-чёрлёх фермисенчи ёç итогёсене пётёмлетнё май район хаçатёнче тухнă «Савăнтаракан итогсем» статьяра çапла çырса пёлтерет:

«Пилёк çул каялла, 1951 çулта, пирён колхоз, виçё пёчёк колхозран тин çеç пёрлешсе пысăкланнăскер, акакан çёрсем те, улăх-çарансем те, выльăх-чёрлёх те, çынсем те хальхи пекех пулнă пулин те, вăйсăрччё. Вăл ун чухне тыр-пултан та, выльăх-чёрлёхрен те тупăш сахал илекен хуçалăх пулнă. Вăл çулхине эпир фермăсенче, сăмахран, мăйракалльă шултра выльăх 213 пуç, 351 сысна, 430 сурăх, 37 ёне усраттăмăр. Кашни ёнерен 416 литр сёт, сурăхсенчен 1,69-шар килограмм çăм илнё. Тёш-тырă тухăçёпе те мухтанма çукчё. Кашни гектартан 1,67 центнер хуратул, 1,57 ц вир, 6,56 ц пăрça, 6,23 ц урпа пухса илтёмёр.

Выльăх апачё те çитместчё, витесем те çителёксёрччё. Ёçри йывăрлăхсене эпир ăнăçлă çёнтертёмёр, выльăх апачён базине çирёплетессишён çине тăрса тăрăшрăмăр, витесем те чылай турăмăр.

Хамăрăн мёнпур тёллеве юлашки çулсенче партипе правительство ял хуçалăхне аталантарас тёлёшпе йышăннă решенисене пурнăçлас ёçе пăхăнтарса, эпир выльăх-чёрлёх тухăçлăхне, вёсен шутне чылаях ӳстертёмёр, тёш-тырă, пахча çимёçё ытларах туса илме тытăнтăмăр. Пилёк çул хушшинче ёнесен шучё 2,6 хут, сыснасен – 2,2 хут, сурăхсен – 1,4 хут ӳсрё. 1956 çулта пирён колхоз кашни ёнерен 1766 кг, усă куракан çёрсен кашни 100 гектарё пуçне 64,6 центнер сёт, кашни 100 га пуçне 17,14 ц какай, вăл шутран 14,9 ц сысна ашё туса илчё.

Паллах, çакăн пек çитĕнӳсем пĕр тăрăшмасăрах пулман. Вĕсене тума пирĕн колхоз ĕçченĕсем малтанхи кунтан пуçласа паянхи кунчен хастар ĕçлерĕç, малашне те çитĕнӳсем ӳстерсех пырĕç. Акă сысна ферминех илер. Кăçал колхоз членĕсем йышăннă план тăрăх, пирĕн фермăра октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 500 сысна пулмаллаччĕ, вĕсен шутне 757 пуçа çитертĕмĕр; фермăра 72 ама, вĕсем 1281 çура туса пачĕç. çакă кашни ама 17,7 çура туса панине пĕлтерет. Кăçал 200 сысна самăртрăмăр. Кашни сысна ами 4,25 центнер аш пачĕ. Юлашки çулчченех пирĕн сурăх ферми юлса пыратчĕ, тупăш та сахал паратчĕ. Кăçалхипе иккĕмĕш çул ĕнтĕ çак фермăран тупăш ытларах илетпĕр. Кăçал фермăри кашни 100 сурăх пуçне 122-шер путек илтĕмĕр, çăм касса илесси те ӳсрĕ. Фермăра ĕçлекен Александра Журавлева овцевод вара кашни 100 сурăх пуçне 176 путек илме хастарлăх çитерчĕ.

Мĕнле тума пултартăмăр-ха эпир çак çитĕнӳсене. Кам хавхалантарса пычĕ пире çавăн пек татăклă улшăнусем тума. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕсем, партин XX съезчĕн решенийĕсем кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама пирĕн колхозра та мĕнпур майсем пурри уççăн курăнчĕ. Çак задачăсене пурнăçлас тĕллевпе хавхаланнă колхоз членĕсем хăйсен мĕнпур вăй-халне колхоз экономикине тĕреклетес ĕçе пачĕç. Ку тĕлĕшпе колхоз правленийĕпе партин пуçламăш организацийĕ вĕсене тĕрĕс ертсе пычĕç. Выльăх-чĕрлĕх, тĕш-тырă тухăçлăхĕсене ӳстерес тĕлĕшпе туса пынă хамăрăн пархатарлă ĕçре эпир колхозниксен пурнăç условийĕсене лайăхлатса пыма тăрăшрăмăр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, вĕсенчен тупăш ытларах илес тесе, фермăсене опытлă кадрсемпе тĕреклетнĕ, вĕсен ĕç условийĕсене лайăхлатнă. Выльăхсене тăрантарма апат çителĕклĕ уйăрса панă. Кивĕ витесем вырăнне çĕнĕрен, стандартлă витесем ытларах тума тăрăшнă. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне

пире фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилесе пыни те нумай пулăшрĕ. Ĕне фермине автопоилка лартнă, çакăнса тăракан тимĕр çул кĕртнĕ. Сысна ферминче те çавăн пекех ĕçе çăмăллатнă, унта шыва насоспа уçласа кăлараççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерме чи кирлĕ услови вăл çапах та – апат çителĕклĕ пулни. Унсăрăн, апат çителĕксĕр пулсан, выльăхсем ĕрчетме май çук. Ку тĕлĕшпе пире кукуруза питех те пысăк пулăшу парать. Çак культурăна эпир кăçалхипе виççĕмĕш çул акрăмăр.Вăл малтанхи çулах ăнăçлă пулчĕ. Кăçал эпир ăна 235 гектар çинче ӳстертĕмĕр. Вăл кашни гектартан вăтамран 526 центнер тухрĕ, çапла вара обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли 1750 тонна силос хывма май пачĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркене çирĕп пурнăçласа пыни çинчен те манса хăварма юрамасть. Ăна эпир йăлана кĕртнĕ.

Пилĕк çулхи ĕç итогĕсене пăхса тухнă май, колхозри тырпул ăстисем çинчен те асăнмасăр иртме çук. Колхозниксем, чăннипех те, вăйлă тырпул ӳстерме вĕренсе çитрĕç. Малта пыракансен опытне вĕренсе тата ăна пурнăçа кĕртсе пынине пула, тĕштырă тата пахча çимĕç туса илесси кашни çулах ӳссе пырать. Пирĕн колхоз виççĕмĕш çул ĕнтĕ ыраша тата çуртрисене Мальцев меслечĕпе çемçетнĕ çĕр çинче акса çитĕнтерет. Кăçал колхоз çак меслетпе акнă 220 гектар çинчен 17,6-шар центнер ыраш пухса кĕртнĕ. Ытти культурăсен тухăçĕ те колхозниксене чĕререн савăнтарать. Кăçал кĕркунне эпир 80 гектар çинчен 173-шер центнер çĕрулми, 30 гектар çинчен 20,2-шер центнер вир, 20 гектар çинчен 16,2-шер центнер вăрлăхлăх вика, 6,5 гектар çинчен 380-шар центнер пахча-çимĕç пухса кĕртрĕмĕр. Уйрăм бригадăсен кăтартăвĕсем татах та пысăкрах. Ку тĕлĕшпе уйрăмах А.Илехметов, Я.Илюткин. П.Попов юл-

ташсем ертсе пыракан бригадăсен ĕç кăтартăвĕсене палăртмалла. А. Илехметов иртнĕ çулхи ĕç итогĕсем тăрăх, кăçал Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнма тивĕçлĕ пулчĕ. Асăннă бригадирсем кăçалхи ĕç итогĕсем тăрăх республикăри ял хуçалăх выставкине хутшăнчĕç.

Пирĕн колхоз – малалла аталанса пыракан нумай отрасльлĕ хуçалăх. Тунă çитĕнӳсемпе пĕрлех пирĕн çитменлĕхсем те сахалах мар. Пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл – ял хуçалăх продукчĕсем туса илме каякан ĕç вăйне нумай расхутлани. Хăшпĕр чухне сахал вăй хурсах нумай продукци туса илме ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курма пĕлменни чăрмантарать. Малта пыракан опытпа та кирлĕ пек усă куратпăр теме çук-ха.

Анчах та пирĕн колхозниксем вăя шеллесе тăмаççĕ. Вĕсем, партин XX съезчĕн решенийĕсемпе хавхаланса, колхоз умне тухса тăракан задачăсене чыслăн пурнăçлама, колхозлă яла пуянлатса чечеклентерме, хăйсен пурнăçĕпе культурине лайăхлатма малашне те хастар ĕçлеме пулаççĕ».

Асăннă хуçалăх ертӳçин сăмахĕсене Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкинче Мичурин ячĕпе тăракан колхоза 1956 çулхи выставкăра хутшăннăшăн панă свидетельство та çирĕплетсе парать.

Мичурин ячĕпе тăракан колхозра çулсеренех саман кирпĕч нумай çапаççĕ. Кăçал çавăн пек кирпĕч 43 пин штук çапнă. Вĕсенчен кăçал кăна 80 ĕне вырнаçмалли вите, тырă хумалли кĕлетсем туса пĕтернĕ, бензохранилище, 9 автомашина вырнаçмалăх гараж тунă. Часах мастерской туса пĕтереççĕ. Тата 2500 чăх вырнаçмалăх чăх-чĕп вити, 250 сурăх вырнаçмалăх вите тума тытăннă.

(«Авангард» хаçат, 09.09.1956 ç., 28.10.1956 ç.)



Дояркăсем валли саманран тунă общежити.

1956 çулхи ĕç кăтартăвĕсем тăрăх Мичурин ячĕпе тăракан колхозри выльăх-чĕрлĕх пăхакансем республикăра мала тухнисен ятне тивĕçнĕ. Вĕсен хушшинче çаксем:

Крылова Нина Михайловна, ĕне сăвакан.

Сысна пăхакансем:

1. Анисимова Федосия Васильевна,
2. Григорьева Александра Терентьевна,
3. Долматова Клавдия Никитична,
4. Илюткина Анастасия Ильинична,
5. Афанасьева Анна Егоровна,
6. Ситова Александра Егоровна.

Сурăх пăхакансем:

1. Журавлева Александра Матвеевна.
2. Шурбина Матрена Александровна.
3. Дмитриева Таисия Ивановна.
4. Лепешкина Елена Федоровна.


Лаша пăхакансем:

1. Илехметова Елена Ивановна.
2. Илюткина Евдокия Николаевна.

Пăру пăхакансенчен: Носова Анна Архиповна.

Ферма заведующисенчен: Эльмуков Николай Ильич.

Чкаловски райёçтăвкомĕ районти «Гвардеец» тата Мичурин ячёпе тăракан колхозсем 1956 çулхине выльăх-чёрлёх продуктивлăхне ӳстерес енёпе, выльăхсене самăртса патшалăха сутассипе тата тупăш илессипе хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ирттерсе тултарнăшăн, çак колхозсене патшалăхран преми шучёпе автомашинăсемпе тивёçтерме постановлени кăларнă.



Мичурин ячёпе тăракан колхозра лашасене кӳлнĕ косилкăсемпе тырă выраççĕ. Иртнĕ ĕмĕрти 50-мĕш çулсем.

Справка: 1957 çулта Тăрăнпа Йăлăм ялĕсем хушшинче Мичурин ячёпе тăракан колхозăн хăма çуракан рама ёçлеме тытăннă.

1957 çулхи 10 уйăхри ёç итогёсем тăрăх пăхсан Мичурин ячёпе тăракан колхозри фермă ёçченёсене республикăри чи лайăх свинаркăсен шутне çаксене кёртнё:

1. Анисимова Федосия Васильевна, кашни амаран 26 çура илнё.

2. Долматова КлавдияНикитична, кашни амаран 25 çура илнё.

3. Ситова Александра Егоровна, кашни амаран 22 çура илнё.

4. Илюткина Александра Павловна, кашни амаран 21 çура илнё.

Мичурин ячёпе тăракан колхозри пултарулла бригадирсем çинчен эпё маларах асăннăччё ёнтё. Çавсенчен Тăрăн бригадин 3-мёш тата 2-мёш уй-хир бригадирёсен И.Н. Сорокинпа А.И. Илехметов çитёнёвё пирки районта тухса тăракан «Авангард» хаçат страницисенче И. Марков корреспондент «Кашни гектартан 171 пăт пăрçа» тата «Çын ёçпе мухтава тухать» ятлă очерксенче çапла çырса кăтартнă:



И.Н. Сорокин, А.И. Илехметов тата М.В. Анисимов
уй-хир бригадирёсем

«Иртнё çулхи ял хуçалăх çулёпе танлаштарсан, Мичурин ячёпе тăракан колхоз членёсем кăçал тёштырăсен тухăçлăхне икё хут ӳстерчёç, çакăншăн вёсем сахал мар вăй хучёç, ырми-канми ёçлерёç. Ку тёлёшпе виççёмёш уй-хир бригадинче ёçлекен колхозниксен те савăнмалăх пур. Ку бригадă хăйне çирёплетсе панă 137,95 гектар çинчен вăтамран 16,5-шер центнер тёштырă пухса кёртнё. Уйрăмах пăрçа тухăçлăхё пысăк. Вăл кашни гектартан 27,35-шер центнер тухнă. Çакăншăн бригадăри колхозниксем те, унăн бригадирё Иван Сорокин та сахал мар тăрăшнă. Вăл уй-хир бригадин бригадирё пулса 11 çул хушши ёçлет. Мёнле туса илме пултарнă-ха çавăн пек пысăк тухăçлă пăрçа.

Чăн малтанах çёр лаптăкне 24 см тарăнăшёнчен кая мар сухаланă, удобрени сапнă, хёллехи вăхăтра юр тытнă.

Çуркунне пăрçана акиччен имçамланă, агротехникăлла тата сортлă вăрлăхсене сроксенче акса хăварнă. Пăрçана кураксем çиесрен хурал тăратнă. Пăрçа пулса çитнĕ хыççăн, ăна пухса кĕртес вăхăта тăсма юраманнине лайăх пĕлсе, колхозниксем ăна кĕске вăхăт хушшинче пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ.

Бригадă членĕсем ытти тырăсене те вăйлă тухăçлă çитĕнтернĕ. 1954 çулта кашни гектартан 9,87 центнер ыраш, 7,25 ц тулă, 12,7 ц сĕлĕ, 1,54 ц, вăрлăхлăх вика туса илнĕ. Уйрăмах Т.С. Мальцев меслечĕпе çемçетсе акнă 3 гектар çинчи тулă ăнса пулнă. Вăл кашни гектартан 28 центнера яхăн тухнă. Халĕ бригадă членĕсем çитес çулхи çуракине хатĕрленеççĕ».

20.11.1955 ç.

«Отечественнăй Аслă вăрçă пĕтсессĕн, демобилизаци йĕркипе тăван ялне таврăнсан, Алексей Иванович Илехметов фронтовика 1946 çулхинех Тăрăн ялĕнчи Роза Люксембург ячĕпе хисепленекен колхозăн бригадирĕ пулма суйласа хучĕç. Унтанпа чылай çул иртрĕ, колхоз пурнăçĕнче те палăрмалла улшăнусем пулса иртрĕç. Çак колхоз хăйĕнпе кӳршĕллĕ «Красное Батырево» тата «Октябрь ялавĕ» колхозсемпе пĕрлешсе пысăкланчĕ. Вак бригадăсене те пĕрлештерчĕç.

Калас пулать, малтанхи çулсенче юлса пыракан бригадăна ертсе пыма çамрăк бригадира çăмăлах пулман: ĕç дисциплинине çирĕплетмелле пулнă. Активлă, тăрăшса ĕçлекенсем çине таянса, бригадир çак задачăна ăнăçлă пурнăçланă. Çултан-çулах бригада тухăçлă тĕштырă пуçтарса илме тытăнчĕ. Сăмахран, А.Илехметов юлташ ертсе пыракан бригада пĕлтĕр кашни гектартан 17,5 центнер тулă, 18,5 ц сĕлĕ, 14,8 ц пăрça пухса кĕртрĕ. Кукуруза тухăçĕ 600 центнертан та иртрĕ. Çапла вара А.Илехметов ертсе пыракан бригада ытти бригадăсем хушшинче кашни çулах пĕр пек çирĕп тухăçлă тырпул туса илнипе палăрса тăрать. Хастарлă ĕç чапа кăларать. Ку чăннипех те тĕрĕс. Çуллен вăйлă тырпул ӳстернĕшĕн

А.Илехметов бригади 1956, 1957, 1958 çулсенче Пётём Союзри ял хуçалăх выставкине хутшăнма тивёçлё пулчё. Бригадира темиçе хутчен выставка мёдалёсемпе, дипломсемпе наградăланă, 1958 çулта вăл пёчёк кёмёл медаль тата алла çыхса çӳремелли сехет илме тивёçлё пулнă. 1951 çултанпах А. Илехметов ял Совечён пёр улшăнми депутачё пулса тăрать. 1956 çулта ăна ялти коммунистсем парти ретне илчёç.

Уй-хирте хёрӳ ёç пуçланчё. А. Илехметов ертсе пыракан бригада членёсем типшёрнё çёртме пуссине тата кёрхи калча лаптăкёсене суйласа сӳрелеççё. Кунпа пёрлех вёсем акма та тытăнчёç. Çурхи кун çулталăк тăрантарать теççё. Çакна асра тытса, бригада членёсем çуракине чи кёске срокра, 5–6 кун хушшинче, вёçлессишён тăрăшаççё. Бригада кăçал кашни гектартан 15 центнертан кая мар ыраш, 15,5 ц тулă, 16 ц сёлё, 14 ц, пăрçа тата 600 центнертан кая мар кукуруза çулçипе туни пухса кёртме пулчё. Иккёленмелли çук, колхозниксем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçлёç, мёншён тесен вёсене ку ёçре опытлă бригадир А. Илехметов юлташ ертсе пырать».

И. Марков. 23.04.1959 ç.


ВСХВ

ВСЕСОЮЗНАЯ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННАЯ ВЫСТАВКА

АТТЕСТАТ

ВТОРОЙ СТЕПЕНИ

ПРИСУЖДЕН КОЛХОЗУ ИМЕНИ МИЧУРИНА, БАТЫРЕВСКОГО РАЙОНА, ЧУВАШСКОЙ АССР

ЗА ВЫСТАВЛЕННЫЕ В 1958 ГОДУ ЭКСПОНАТЫ

КУЛЬТУРЫ УБРАННОЙ НА СИЛОС ПО 485 Ц С ПЛОЩАДИ 100 ГА



СВИДЕТЕЛЬСТВО

*Выдано настоящее свидетельство колхозу имени Мичурина Батыревского района Чувашской АССР*_____

*участнику Всесоюзного смотра натуральных экспонатов кукурузы на силос*_____

*на Выставке достижений народного хозяйства СССР в 1959 году за выращенные и представленные образцы:*_____

*кукурузы на силос по 561 центнеру с площади 130 гектара*_____

_____

Начальник Управления по разделу сельского хозяйства — *Председатель экспертной комиссии* — *Члены*

Подпись — *Подпись* — *Подписи*

Печать

А.Илехметов бригади 1956, 1957, 1958 çулсенче Пётём Союзри ял хуçалăх выставкине хутшăнма тивĕçлĕ пулчĕ. Бригадира темиçе хутчен выставка мĕдалĕсемпе, дипломсемпе наградăланă, 1958 çулта вăл пĕчĕк кĕмĕл медаль тата алла çыхса çӳремелли сехет илме тивĕçлĕ пулнă. 1951 çултанпах А. Илехметов ял Совечĕн пĕр улшăнми депутачĕ пулса тăрать. 1956 çулта ăна ялти коммунистсем парти ретне илчĕç.

Уй-хирте хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. А. Илехметов ертсе пыракан бригада членĕсем типшĕрнĕ çĕртме пуссине тата кĕрхи калча лаптăкĕсене суйласа сӳрелеççĕ. Кунпа пĕрлех вĕсем акма та тытăнчĕç. Çурхи кун çулталăк тăрантарать теççĕ. Çакна асра тытса, бригада членĕсем çуракине чи кĕске срокра, 5–6 кун хушшинче, вĕçлессишĕн тăрăшаççĕ. Бригада кăçал кашни гектартан 15 центнертан кая мар ыраш, 15,5 ц тулă, 16 ц сĕлĕ, 14 ц, пăрça тата 600 центнертан кая мар кукуруза çулçипе туни пухса кĕртме пулчĕ. Иккĕленмелли çук, колхозниксем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçлĕç, мĕншĕн тесен вĕсене ку ĕçре опытлă бригадир А. Илехметов юлташ ертсе пырать».

И. Марков. 23.04.1959 ç.





СВИДЕТЕЛЬСТВО

*Выдано настоящее свидетельство колхозу имени Мичурина Батыревского района Чувашской АССР*_____

*участнику Всесоюзного смотра натуральных экспонатов кукурузы на силос*_____

*на Выставке достижений народного хозяйства СССР в 1959 году за выращенные и представленные образцы:*_____

*кукурузы на силос по 561 центнеру с площади 130 гектара*_____

_____

Начальник Управления по разделу сельского хозяйства — *Подпись*

Председатель экспертной комиссии — *Подпись*

Члены — *Подписи*

Печать

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50–60 çулĕсенче выльăхсем валли силос хывма кукуруза акса ӳстересси çине колхозсем пысăк тимлĕх уйăратчĕç. Çав çулсенче учительсем шкулта вĕренекен ачасене кукуруза початки пуçтарма колхоз хирне илсе каятчĕç. Паянхи ватă çынсем ас тăваççĕ ĕнтĕ кукуруза çăнăхĕнчен пĕçернĕ çăкăра çинине. Çав çăкăр тути лайăхчĕ, анчах вăл часах типсе каятчĕ.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз ытти колхозсемпе пĕрлешичченех кукуруза ӳстерессипе районта малтисен шутĕнче пулнă.

1956 çулхи тыр-пул пухса кĕртессипе ĕç итогĕсем тăрăх 130 га лаптăк çинчен силос валли 526 ц кукуруза туса илсе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн асăннă колхоз ĕçченĕсене ЧАССР Аслă Канашăн Президиумĕн 1957 çулхи пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх Хисеп грамотисемпе аяларах асăннă ертӳçĕсемпе вăтам звенори специалистсене тата колхозăн ытти уй-хир ĕçченĕсене чысланă.

1. Ситов Александр Александрович, колхоз председателĕ.

2. Архипов Федор Архипович, агроном.

3. Илехметов Алексей Иванович, 2-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ. Вăл ертсе пыракан бригада 30 га çĕр лаптăкĕ çинчи пĕр гектартан 612 ц кукурузăн силос массине хатĕрленĕ.

4. Илюткина Вера Николаевна, звено ертӳçи, 16 га çĕр çинчи 1 гек-ртан 532 ц. (08.04.58 ç., уй-хир бригадирĕ)

5. Цветков Василий Никифорович, звено ертӳçи, 22 га ___»»___ «» ____»»___

6. Ялукова Клавдия Петровна, колхозница.

7. Ситов Иван Александрович, МТСăн Мичурин колхоза çирĕплетнĕ трактор бригадин бригадирĕ. Унăн бригадин хастарлăхĕпе колхоз хирĕнчи 130 га лаптăкĕ çинчи 1 га кукурузăн силос массине 526 ц хатĕрленĕ.

8. Алексеев Дмитрий Иванович, тракторист, ХТЗ-7 тракторпа кĕске вăхăт хушшинче тата лайăх пахалăхпа 130 га çинчи кукуруза хушшисене кăпкалатса тухнăшăн.

Сăмах май, Д.И. Алексеев 1962 çулхи ĕç итогĕсем тăрăх та «Республикăри чи лайăх механизатор» ята çĕнсе илет.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ паянхи «Исток» çĕр ĕç фирмă çуртĕнчен хĕвел анăç енче вырнаçнăччĕ. «Путь Ленина» колхозпа пĕрлешсен çак çуртра Тăрăн производство участокĕн правленийĕ турĕç. 1962 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнче çĕрле аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче çак правление аçа çапса çурт пĕтĕмпех çунса кайрĕ. Унта бухгалтери тата ытти документсемпе кирлĕ хутсем çунса кĕлленнĕ.



Мичурин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ. 1959 çулхи пуш уйăхĕ.

КПСС Тĕп Комитечĕн 1958 çулхи нарăс уйăхĕнчи Пленумĕ хыççăн колхозсене пĕрлештерес юхăм çĕршывĕпех сарăлма тытăнать.

Тимошев Валериан Семенович
(1921–2006)



Тимошев В.С. 1921 çулхи çурла уйăхĕн 28-мĕшĕнче Патăрьелĕнче çуралнă. Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн Сăкăтри шкула учитель пулса ĕçлеме янă. 1939 çулта çар службине илсен вăл танк механикне вĕренсе тухать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçаннă чухне Киев хули çывăхĕнче службăра тăнă. Пĕлĕвĕ пысăккине кура Валериан Семеновича авиацие куçарнă. Механиксен шкулĕнчен вĕренсе тухсан ăна Хĕрлĕ Ялавлă, уйрăм тĕллевлĕ авиаци дивизине янă. Ку дивизи чи аслă Тĕп командованин ставкине (Сталина) тӳреммĕнех пăхăннă. Ставкăна лайăх тивĕçтернĕшĕн В.С. Тимошева Хĕрлĕ Çăлтăр, иккĕмĕш степеньлĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçă орденĕсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Вăрçăран тавраннă хыççăн 1946 çултан пуçласа вăл Чкаловски ВКП(б) райкомĕнче вăй хурать, унта пĕтĕмĕшле пай заведующи таран ӳсет.

Валериан Семенович партин Аслă шкулĕнчен вĕренсе тухсан, колхозсене ура çине тăратма каякан 30 пин кадр шутĕнче, 1959 çулта «Красное знамя» тата Мичурин ячĕллĕ колхозсем «Путь Ленина» колхозпа пĕрлешсен, çак пысăкланнă хуçалăха ертсе пыма пуçлать.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăх экономика тĕлĕшĕнчен вăйланса районти чи тĕреклĕ колхозсенчен пĕри пулса тăрать. Ăста йĕркелӳçе КПСС обкомĕ Патăрьел районне ертсе пыма суйлама сĕннĕ. Района ертсе

пынă тапхăрта В.С. Тимошев пултарулăхĕпе палăрнă. Патăрьел районĕ республикăри чи лайăх районсенчен пĕри пулса тăнă. Пысăк çитĕнӳсемшĕн Валериан Семеновича Ёçлёх Хёрлё Ялав тата «Хисеп Палли» орденсемпе наградăланă.

1973 çулта КПСС обкомĕ В.С. Тимошева Шупашкара куçарса кайнă, хаçат-журнал издательствин çуртне ĕçе кĕртме хушнă. Ку тивĕçе те вăл вăхăтра, тĕплĕ пурнăçланă.

Валериан Семеновича темиçе хутчен те Чăваш АССР Аслă Канашне тата Патăрьел район Канашне депутата суйланă. Вăл колхозниксен Пĕтĕм Союзри съездне кайнă чăвашсен делегацине ертсе пынă.

Тимошев В.С. 2006 çулхи пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлса кайнă.

1959 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 15-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи виçĕ колхоз: «Путь Ленина» (Патăрьел ялĕ), «Красное Знамя» (Сăкăт) тата Мичурин ячĕпе тăракан колхоз (Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьелпе Треньел ялĕсем) пĕрлешсе «Путь Ленина» колхоз йĕркелеççĕ. Колхозниксем çĕнĕ хуçалăх тилхепине тытса пыма В.С. Тимошева шанаççĕ. Колхоз председателĕн çумĕсем: В.Енилин (Патăрьел), А.А.Ситов (Йăлăм), И.В.Марков (Сăкăт). Колхозри парторганизаци секретарĕ пулма коммунистсем Треньелĕнче пурăнакан Д.И.Логунова суйланă.

1959 çулта Первомайски районне пĕтерсен çак районти чылай колхоз Патăрьел районне кĕнĕ. Вара мĕн пурĕ 19 колхозран 36 колхоза çитнĕ.

Çав çулхинех Тăрăн, Патăрьел тата Сăкăт ял Канашĕсем раштав (декабрь) уйăхĕн 2-мĕшĕнче пĕрлешсе Патăрьел ял Канашĕ йĕркелеççĕ. Çак йышăнăва ЧАССР Президиумĕн Аслă Канашĕ хăйĕн Указĕпе çирĕплетет.

Асăннă колхозсене «Путь Ленина» колхозпа пĕрлештернĕ хыççăн экономикă кăтартăвĕ тăрăх çĕнĕрен

йĕркеленĕ хуçалăхра усă куракан çĕр 7239 гектар шутланса тăнă, вĕсенчен сухаласа тыр-пул çитĕнтермелли хирсем – 6401 га., 16 выльăх-чĕрлĕх фермисенче шултра мăйракаллă выльăхсем – 311 пуç, вĕсенчен ĕнесем – 311 пуç, сыснасем – 1840, сурăхсем – 1471, чăхсем – 5558, лашасем – 449 пуç.

1959 çулхи 9 уйăхри колхозăн укçа çине куçарнă услам 2634608 тенкĕ пулнă.

Малтанхи пĕр-икĕ çул хушши пилĕк ялтан тăракан пĕрлештернĕ хуçалăх вăльăх-чĕрлĕх çитĕнтерсе тата уй-хирсенчи тыр-пула пĕр тăкаксăр, пысăк тухăçпа пухса илсе патшалăха договор тăрăх сутас ĕçре йывăрлăхсемпе çитменлĕхсем те пулнă. 1962-мĕш çула «Путь Ленина» колхозăн хуçалăхра усă куракан çĕр лаптăкĕ 7239 гектартан 7094 гектар таранччен чакнă пулин те, районĕпе çак колхоз чи пысăкки шутланса тăнă. Иккĕмĕш вырăнта «Гвардеец» колхоз – 6408 га, «Герой» колхозăн çавăн пек çĕр лаптăкĕ – 4388 га (3-мĕш вырăнта) йышăннă.

«Путь Ленина» колхоз 1961 çулта договорпа хăй çине илнĕ обязательство тăрăх патшалăха вăрлăх викă тата аш-какай сутмалли, çавăн пекех фермăсенче сурăхсен, сăвакан ĕнесемпе сысна амисен йышне ӳстерес енĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнманнине пула плана тултарайман. Çавăн пекех чăх-чĕпсем, сысна тата пăру витисем тăвассине хĕле кĕриччен пĕтермесĕр вăраха янă. Çак ыйтусене 1961 çулта райкомăн бюро ларăвĕсенче пăхса тухса колхоз ертӳçисене асăннă çитменлĕхсене пĕтерме хушса хăварнă.

Йывăрлăхсемпе çитменлĕхсене çĕнтерсе пĕрлешӳллĕ хуçалăх малаллах аталанса пынă: комплексла бригадăсемпе фермăсенче выльăхсем валли витесем тата ытти çурт-йĕрсем тума тытăнаççĕ. Çапла вара, уйхир тата фермă ĕçченĕсем çулран çул вăй хунине кура колхоз уралансах пынă, районта вăтаммисен, каярах малтисен шутне кĕнĕ.

Колхозра уй-хир тата выльăх фермисен вăтам звеносене ертсе пыма çамрăк та пултарулла ертӳçĕсене явăçтараççĕ. 1962 çулта Тăрăнти ĕне фермин заведующи пулма правлени Н.И. Ибетова, Треньелĕнчи комплекслă бригадăн бригадирĕ пулма Мичурин ячĕпе тăракан колхоз чухне 5-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ, ун хыççăн çав колхозрах сурăх фермин заведующи пулса ĕçленĕ П.Г. Попова çирĕплетет. Вĕсем кайран та нумай çул хушши уй-хир бригадине, ĕнепе сурăх фермисенчи коллектива ăнăçлă ертсе пынă. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче, çаван пекех уй-хир бригадисенче вăй хуракан ял çыннисен отпуск та, канмалли кун та пулман. Уйрăмах çутçанталăкăн çурхи-кĕрхи йĕпе-сапа вăхăчĕ ял çынни умне хăйне евĕр йывăрлăхсем кăларса тăратать. Колхозра выльăх-чĕрлĕх пăхакана ĕç условийĕ туса парасси, унăн нушине çăмăллатасси правленипе председательтен кăна мар, ферма заведующинчен те нумай килнĕ. Хăтлă та ăшă витесенче ăратлă выльăх валли çителĕклĕ апат пулни, фермă ĕçченĕсен ĕç условийĕсене çăмăллатни вĕсене ытларах çитĕнӳсем тума май панă. ĕçпе чапа тухнă ĕне сăвакансемпе сурăх пăхакансем, механизаторсемпе уй-хир ĕçченĕсем тата ял тăрăхĕнчи ытти колхозниксем çинчен вулакана каярах тĕплĕн паллаштарăпăр. Хальлĕхе 1964 çулхи ĕç итогĕсем тăрăх «Путь Ленина» колхозри мала тухнă хăш-пĕр уй-хир ĕçченĕсем çинче чарăнса илĕпĕр.

1964-мĕш çулхи социализмлă ăмăртăван итогĕсем тăрăх «Путь Ленина» колхоз бригадирне «Пысăк тухăçлă çĕр улми ăсти» ятне Иван Федорович Яковлева панă (уй-хир ĕçченĕсем районĕпе тăваттăн). Вăл 30 га çинчен пĕр гектар пуçне 205 ц. çĕр улми туса илнĕ.

«Республикăри чи лайăх механизатор-комбайнер» ята асăннă колхозран Петр Иванович Краснов тивĕçнĕ. Вăл СК-4 маркăллă комбайнпа 5860 ц. тырă çапса илнĕ. Районĕпе – 37 комбайнер.

(«Авангард» хаçат, 13.01.65 ç.)

Тепĕр çулхи вырмара асăннă колхозран çак ята П.И. Краснов – 6669 ц., Н.Д. Самакин – 5672 ц. тата П.П. Лепешкин – 5209 ц. тырă çапса илнĕшĕн çĕнсе илнĕ.



В.И. Илюткин тракторист «Путь Ленина» колхоз уй-хирĕнче акара.



Тăрăнти шкул ачисем хирте кукурус початки пуçтарнă хыççăн, 1960 çулхи авăн уйăхĕнче вĕрентекенсемпе пĕрле.

Республикăра ял хуçалăх продукцине туса илессине аталантарас шутпа 1962 çулта патшалăх тата парти органĕсем хула тата яллă районсене уйрăммăн ертсе пырас тĕллевпе 21 района ялсенчен тăракан 9 района пĕрлештерме йышăнаççĕ. Производствăлла управленисемпе парти комитечĕсем 2–3 района, тепĕр чухне 4 района та пĕрлештерсе тăнă. Республикăн кăнтăр пайĕнче вырнаçнă 4 района: Патăрьелпе Комсомольски, Елчĕкпе Шăмăршă районĕсене пĕр района пĕрлештерсе Патăрьел районĕн производствăллă колхоз управленийĕ туса хураççĕ. Партком секретарĕ пулма бюро ларăвĕнче Петр Тимофеевич Тимофеева суйлаççĕ, райĕçтăвком председателĕ пулма Георгий Иванович Савинова шанаççĕ. Çак çĕнĕрен йĕркеленнĕ районти парткомпа производство управленине паллах, 42 колхозпа тата ытти ял хуçалăх предприятийĕсен кулленхи ĕçне йĕркелесе пыма питĕ йывăр пулнă. Вăл вăхăтра ялсен хушшинчи çулсем япăх пулни, почтăпа телефон çыхăнăвĕсем тата ял хуçалăх предприятийĕсене транспортпа тивĕçтерейменни асăннă управлени умне нумай чăрмав кăларса тăратнă.

РСФСР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1965 çулхи кăрлач (январĕн) уйăхĕн 12-мĕшпе 29-мĕш кунĕсенче кăларнă Указ тăрăх Чăваш АССРĕн администрацине территори пайланăвĕнчи улшăнусене кĕртет. Çак Указ тăрăх ял хуçалăх районĕнчен Патăрьел, Комсомольски, Елчĕк тата Шăмăршă районĕсем малтанхи пекех уйрăм районсем пулса тăраççĕ. Çакăн хыççăн Патăрьел районĕн территорийĕнче 1962-мĕш çулта районсем пĕрлешичченхи пекех 13 колхоз юлать.

1965 çулта улшăнусем çавăн пекех «Путь Ленина» колхозра та пулса иртеççĕ. Колхоз председательне Валериан Семенович Тимошева КПСС Патăрьел райкомĕн пĕрремĕш организациллĕ пленумĕ кăрлач уйăхĕн 30-мĕшĕнче парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма суйланă. Çакăн хыççăн вара нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕнче колхозниксем колхоза ертсе пыма Александр Порфирье-

вич Табакова суйлаççĕ. Сăкăт ялĕ районта пысăк ялсенчен пĕри шутланса тăрать. Çак ялти колхоз членĕсем хăйсем уйрăм пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа пурăнма шухăшланă. Вĕсем пуху ирттерсе «Путь Ленина» колхозран тухса «Красное знамя» колхоз йĕркеленĕ, председатель пулма Иван Васильевич Маркова шаннă. 19.04.1965 ç. колхоз уйрăм пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем çине пайланнă май унăн пурлăхне уйăрма икĕ енчен комисси йĕркелеççĕ. Унта райĕçтăвком представителĕсем те хутшăнаççĕ.

Табаков Александр Порфирьевич
(06.02.1920–21.03.2005)



А.П. Табаков 1920 çулхи нарăс уйăхĕн 6-мĕшĕнче Патăрьелĕнче çуралса ӳснĕ. 1939 çулта Патăрьелĕнчи педучилищĕ вĕренсе пĕтерсен Шăнкăртамри вăтам шкулта вĕрентнĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче 126-мĕш стрелковăй дивизинче миномет расчечĕн командирĕ пулса тăшмана хирĕç çапăçнă. Çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Мухтав орденĕн виçĕ степенĕпе тата ытти орден-медальпе наградăланă. А.П. Табаков Мускавра виçĕ хутчен çĕнтерӳ парадне хутшăннă.

Вăрçă хыççăн А.П. Табаков шкулсенче учитель, директор пулса ĕçленĕ. 1963 çулта «Путь Ленина» колхозри колхозниксем ăна председатель пулма суйлаççĕ. Александр Порфирьевич хуçалăх тилхепине 1973 çулччен ăнăçлă тытса пырать. Колхоз районта малтисен шутĕнчех пулнă.

А.П. Табаков çавăн пекех Патăрьелĕнчи улмаçырла питомникĕн директорĕ, ВДПО райсовечĕн председателĕнче тăрăшнă.

1973–82 çулсенче Патăрьелĕнчи ял хуçалăх профтехучилище директорĕ пулса ĕçленĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистла Германие çĕнтернĕ чухне А.П. Табаковăн тӳпи пысăк пулнине шута илсе, обществăллă пурнăçри хастарлăхшăн 1978 çулта унăн ятне Чăваш АССР ĕç мухтавĕпе Паттăрлăх Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ, нумай-нумай Хисеп грамотипе чысланă.

«Путь Ленина» колхозри правлени членĕсем пĕрлешӳллĕ хуçалăх 4 ялтан тăнине шута илсе ялсенче комплекслă бригадăсене ертсе пыма çаксене шанаççĕ:

Александр Александрович Ситова – Тăрăнти комплекслă бригадăна ертсе пыма, Пимен Григорьевич Попова – Треньелĕнчи, Вера Николаевна Илюткинана – Йăлăмри комплекслă бригадăсене. Çав вăхăтрах Тăрăнти производство участокне ертсе пырас тивĕç А.А. Ситов çинчех юлать. Патăрьел производство участокне ертсе пыма колхоз правленийĕ А.Н. Краснова шаннă.

1967 çул. «Путь Ленина» колхоз Патăрьел районĕнчи ытти хуçалăхсен хушшинче ура çинче çирĕп тăраканнисен шутĕнче тăнă ĕнтĕ. Вăл ял хуçалăх продукцине туса илессипе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе 3–4-мĕш вырăнта пынă. Тĕш-тырă колхозĕпе пĕр гектартан вăтамран 20 ц пухса кĕнĕ. Патшалăха тырă сутмалли плана икĕ хутчен ытти колхозсенчен маларах тултарнă. Паллах, çак çитĕнӳ колхоз председателĕпе правлени, вăтам сыпăкри специалистсем хуçалăха пысăк пуçарулăхпа ертсе пынинчен, çавăн пекех уйхир тата фермă ĕçченĕсен тăрăшулăхĕнчен нумай килнĕ.

Колхоз правленийĕ 02.02.1968 ç. иртнĕ çулăн ĕç итогĕсене пăхса тухса тыр-пул пухса илессипе пысăк çитĕнӳсем тунă специалистсене Мускаври ял хуçалăх

выставкине яма йышăнать. Çак чыса колхозăн тĕп агрономĕ Е.В.Спиридонов, председатель çумĕ А.А. Ситов, бригадирсем П.П. Никитин, Н.И. Ибетов тата А.И. Илехметов тивĕçнĕ.

«Путь Ленина» колхозăн малалли утăмĕ çинчен колхоз председателĕн çумĕ А. Ситов 1968 çул ĕç итогĕсене районта тухса тăракан «Авангард» хаçатăн 1969 çулхи январĕн 9-мĕшĕнчи статьяра пĕтĕмлетнĕ тăрăх курма пулать. Вулакана эпĕ çак пĕтĕмлетӳпе ăна кĕскетсе паллаштарасшăн.

«...Хальхи вăхăтра пирĕн пĕрлешсе пысăкланнă колхозăн 5268 гектар çĕр, вăл шутран 4721 гектарĕ сухалаканни шутланать. Выльăх-чĕрлĕх шучĕ те хушăнса пырать. Мăйракаллă шултра выльăхсем 1475 пуç, çав шутра сăвакан ĕнесем – 564, сыснасем – 735, лашасем – 224, сурăхсем – 600, чăх-чĕпсем – 5600 пуç.

Колхозăн техника та нумайланса пырать. Хальхи вăхăтра 34 трактор, 22 автомашина, 11 тĕш-тырă комбайнĕ тата ытти ял хуçалăх машини йышлă. Колхоз хăйĕн экономикине те çулсеренех ӳстерсе пырать. Пирĕн ялсен сăн-сăпачĕ улшăнчĕ, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланчĕ. Сăмахран, 1964 çулта колхозăн пĕтĕм тупăшĕ 579 пин тенкĕ пулнă пулсан, иртнĕ çулта пĕр миллион тенкĕрен те иртнĕ.

Тырă тухăçĕ те юлашки çулсенче ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Пилĕк çул каялла эпир кашни гектартан вăтам шутпа 10,5 центнер тĕш-тырă пухса кĕртнĕ пулсан, 1964 çулта – 12,8-шар центнер, виçĕм çулпа пĕлтĕр 20-шер центнера яхăн тĕш-тырă туса илтĕмĕр. Ку вăл пирĕн колхозниксем çĕр çине чăн-чăн хуçалла пăхма тытăннинчен, агротехника хушнисене тимлĕрех пурнăçлама пуçланинчен нумай килчĕ.

Кăçал артель кашни гектартан 22 центнер, çитес çулта 24-шар центнер тĕш-тырă туса илме, çĕрулми, кукуруза, выльăх кăшманĕн тухăçне палăрмаллах ӳстерме задача лартрĕ».



Тăрăнти производство участокĕн ертӳçи А.А. Ситов уй-хир бригадин бригадирĕпе Н.И. Ибетовпа Тăрăнти тырă сăвăракан ток çинче ĕçлĕ калаçу вăхăтĕнче, 1968 çул.

КПСС обкомĕпе Чăваш АССР Министрсен Совечĕ «Путь Ленина» колхоза çитĕнӳ тунă ятпа саламланине район хаçатĕнче «Государствăна тырă сутмалли плана срокчен тултарнă» статьяра 21.09.1968 ç. çапла çырса кăтартнă:

«Пилĕкçуллăхра тырă сутмалли плана Патăрьел районĕнчи «Путь Ленина» колхоз ĕçченĕсем 2 çул та 9 уйăхрах 108 процент, çулталăкра аш-какай сутмалли плана 102, сĕт сутмалли плана 124, çăмарта – 113, çăм – 146 процент тултарчĕç».

1968 çулта çанталăк условийĕсем лайăх пулнипе тыр-пул уй-хирсенче ăнса пулнă. Малта пыракан колхозсемпе уй-хир бригадисем пĕрчĕллĕ тĕш-тырă пĕр гектартан 30 ц та ытла пухса илнĕ. Сăмахран: «Гвардеец» колхозри А.А. Егоров бригади 200 гектартан 34.5 ц тĕш-тырă туса илнĕ.

1968 çулхи социализмла ăмăртăвĕн малта пыракан «Пысăк тухăçлă тĕш-тырăпа пăрçа йышши культурăсен ĕçченĕсем» списокне «Путь Ленина» колхозăн тĕп агрономĕ Емельян Васильевич Спиридонов, Николай Иванович Ибетов – Тăрăнти уй-хир бригадин бригадирĕ (бригада 356 гектартан 24,9 ц тĕш-тырă туса илнĕ), тата трактор бригадин бригадирĕ Иван Александрович Ситов (бригада 961 гектартан 21,9 ц тĕш-тырă илнĕ) тивĕçлĕ пулнă.

1969 çулхине те колхоз уй-хирте пĕрчĕллĕ тĕш-тырă туса илессипе лайăх ĕçленине палăртмалла. Колхозĕпе вăтамран пĕр гектар çĕр çинчен 23 ц пĕрчĕллĕ тĕш-тырă пухса кĕртнĕ. Выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессипе вара хуçалăх малтисен шутĕнче пулнă: сĕт суса илессипе районта 3-мĕш вырăнта, сурăх çăмне касса илессипе 1-мĕш вырăнта пынă, чăхсенчен çăмарта илес плана та ирттерсе тултарнă.

Колхоз правленийĕ Тăрăнти ĕне ферминче ĕçсем япăхса кайнипе 19.11.1969 çулта ферма заведующийĕ пулма Н.И. Ибетова çирĕплетет. 1970 çулхи август уйăхĕнче фермăра 211 ĕне шутланнă, вĕсене 17 дояркăна (кашни çынна 11–13 ĕне) шанса панă. Маларах асăннăччĕ ĕнтĕ: Николай Иванович ку ĕне фермине 1962 çул пуçламăшĕнче ертсе пыма тытăннă. Колхоз правленийĕ ăна кая юлса пыракан уй-хир отрасльне бригадир пулма куçарсан, ĕне ферминче ĕç дисциплини хавшама пуçланă, ĕне сăвакансемпе пăру пăхакансен ĕç условийĕсене çăмăллатасси çине те сӳрĕккĕн пăхнă фермă пуçлăхĕсем. Н.И. Ибетов коллектив нушине ăнланса, выльăх продукци туса илессине пысăк тимлĕх уйăрнипе 1970 çултан тытăнса ферма ĕçченĕсем колхозĕпе кăна мар, районта та сĕт суса ăна патшалăха сутассипе малти вырăнсене йышăнма тытăнаççĕ.

Районти 18 колхоз хушшинчи ăмăртура 1970–72-мĕш çулсенче патшалăха выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем

сутмалли плана мĕнле пурнăçланине сводка тăрăх пăхсан çакна курма пулать.

«Путь Ленина» колхоз 1970–71 çулсенче кашни ĕнерен сĕт суса тата кашни сурăхран çăм касса районта 1-мĕш вырăна, кашни чăхран çăмарта илессипе 3-мĕш вырăна тухнă. Уй-хирте тата выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте ĕçлекенсем асăннă хуçалăхпа илсен пысăк çитĕнӳсемпе уйрăмах 70-мĕш çулсенче палăрнă. Çапах та Тăрăнти ĕне фермипе Йăлăмри сысна ферминче тăрăшакансен йывăрлăхсем пулни пысăк çитĕнӳсем тума чăрмантарнă. Тăрăнти ĕне ферми кивелнĕ, выльăхсен шучĕ ӳснипе те тепĕр вите тăвасси, транспортер ĕçлеменни çинчен, Йăлăмри сысна фермине механизацилес пирки 1973 çулта Н.И. Ибетовпа А.А. Ситов правлени ларăвĕсенче пĕрре кăна мар ыйту лартнă. çавăнпах та пуль сĕт суса тата аш-какай туса илессин тухăçĕ 1972 çулхипе танлаштарсан чакнă. Патшалăха аш-какай сутас плана тултарайман. Выльăх-чĕрлĕх шучĕ 15.03.1973 çул тĕлне колхозĕпе вара сахал мар пулнă: ĕне фермисенче шултра мăйракаллă выльăх – Тăрăнта 678 пуç, Патăрьелĕнче 971 пуç, сыснасем – Йăлăмра 1185 пуç, Патăрьелĕнче 443 пуç, чăхсемпе автансем – 8309, сурăхсем – 1041, лашасем – 135 пуç.

Кĕске справка: 1975 çулта кĕркуннене кĕриччен строительсен бригади Тăрăн ферминчи икĕ вите урайĕсене тĕпрен юсанă, пĕр вите урайне цементпа сарнă, алăксемпе чӳречесене юсанă. Çав вăхăта ĕневыльăх шучĕ фермăра 816 пуçа çитнĕ.

1973 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче «Путь Ленина» колхозăн правленийĕ хăйĕн ларăвĕнче «Путь Ленина» колхозăн тава тивĕçлĕ колхозникĕ» хисеплĕ ята парас пирки йышăну кăларнă. Çак ята пĕрремĕш колхозница районта малтисен шутĕнче пыракан доярка Краснова Анна Ивановна тивĕçнĕ.

Кашни колхозрах çулталăк пуçламăшĕнче иртнĕ çулăн итогĕсене пăхса тухса ĕçре уйрăмах палăрнă кол-

хозниксене колхозри тата районти Хисеп хăмисем çине кĕртнĕ, республикăри чи лайăххи хисеплĕ ята панă, уй-хир ĕçченĕсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансене тĕрлĕ шайри Хисеп хучĕсем парса чыслантă, ĕç паттăрĕсене орден-медальпе наградăланă. Çаксене аяларах «Путь Ленина колхозпа тата «Батыревский» совхоз çине куçсан уйрăм тĕслĕхсемпе çирĕплетме пулать.

Тĕслĕхрен, «Путь Ленина» колхозри Тăрăн ĕне ферминче Анна Архиповна Носова 1954-мĕш çултанпа ĕçлеме тытăннă. Ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн ăна пĕрре кăна мар районти Хисеп хăми çине кĕртнĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе тата Ленин юбилейĕн медалĕпе наградăланă. 1971 çулта А.А. Носова кашни ĕнерен 5282 кг сĕт суса районти доярккăсен ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă. 1972 тата 1973 çулхи ĕç итогĕсем тăрăх та вăл малти вырăна тухнă, ăна «Республикăри чи лайăх доярка» ята панă. Вулакан çак пултаруллă ĕçчен çинчен каярах район хаçатĕнче ятарласа кăларнă очерк вуласа пĕлĕ. Çавăн пекех «Республикăри чи ăста механизатор» ята «Путь Ленина» колхоз «Батыревский» совхоза куçнă хыççăн 1975 çулта Д.И. Алексеев, Н.П. Ялуков тата А.Е. Капустин, çавăн пекех «Республикăри чи лайăх заведующи» ятне П.Г. Попов (Треньельти сурăх ферма заведующийĕ) тивĕçнĕ. Çулран-çул ака тата вырма вăхăтĕнче колхоз-совхозĕпе, районта малти вырăнсене йышăннăшăн Тăрăн уй-хир бригадинчи комбайнерсене: Петр Иванович Красновпа Николай Дмитриевич Самакина, Петр Павлович Лепешкина; трактористсене: Николай Васильевичпа Александр Иванович Тихоновсене, Дмитрий Иванович Алексеевпа Владимир Владимирович Соловьева, Василий Яковлевич Эльмукова; уй-хир бригадин бригадирĕсене: Матрена Дмитриевна Цветковапа Елена Ивановна Каллинана; сурăх пăхакансене: Александра Матвеевна Лепешкинапа Лидия Григорьевна Логунована, Елена Егоровна Соловьевапа Мария Леонтьевана;

сысна пăхакансене: Валентина Федоровна Воробьевапа Анастасия Ильинична Смирнована; лаша пăхакансене: Евдокия Николаевна Илюткинапа Мария Александровна Воробьевана; колхозницăсене: Вера Дмитриевна Крыловапа Лидия Дмитриевна Самакинана Хисеп хăми çине пĕрре кăна мар кĕртнĕ, Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи знакпа, укçан преми тата Хисеп хучĕ парса хавхалантарнă.



Н.В. Тихоновпа А.Е.Капустин ĕç ветеранĕсем

Капустин А.Е., Тихонов Н.В., Думилина А.М., Ситов А.А., Цветкова М.Д., Воробьева В.Ф. унсăр пуçне орденсемпе медальсем илме тивĕçнĕ.

Кашни ĕнерен сĕт сăвассипе тата пăру илессипе малти вырăнсене çаван пекех асăннă фермăра ĕçленĕ Карпова Лидия Матвеевна дояркă та темиçе çул хушши йышăнса пынă. 1973 çулта ăна «Ĕçри паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă, тепĕр çулхине «Республикăри дояркăсенчен чи лайăххи» ята панă. Çак чыса Патăрьел районĕнчи дояркăсенчен вăл анчах тивĕçнĕ. 1977 çулта социализмла ăмăртура кашни ĕнерен 4427 кг сĕт суса илсе Карпова Л.М. «Районти чи лайăх доярка» ята илнĕ. Унпа пĕрле ĕçлекен Бородкина (Медведева) Лидия тата Лазарева Ольга иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăна тухнă.

1977 çулхи плана, социализмла обязательствăсене пурнăçлас ĕçре çитĕнӳсем тунăшăн СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1978 çулта мартăн 30-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх, «Батыревский» совхоз доярки-не Л.М. Карпована III-мĕш степеньлĕ ĕç Мухтавĕн орденĕпе наградăланă. 24.06.1978 çулта ăна ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕ, КПСС обкомĕпе ЧАССР Министрсен Совечĕ Хисеп грамоти парса чысланă.

1974 çулта ял хуçалăх производствинче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн СССР халăх хуçалăх (ВДНХ) бронза медальпе «Батыревский» совхозри сурăх ферминчи çак ĕçченсене наградăланă; ферма заведующине – П.Г. Попова, сурăх пăхакансене – Л.Г. Логунована, Е.Е. Соловьевана тата А.М. Лепешкинана.

1973 çулхи нарăс уйăхĕн (февралĕн) 24-мĕшĕнче «Путь Ленина» колхозри уполномоченăйсен пухăвĕ пулса иртет. Пухура А.П. Табаков хăйне председатель ĕçĕнчен хăтарма ыйтнă заявление пăхса тухса унăн ыйтăвне тивĕçтереççĕ. Тепĕр пухура 13.03.1973 çулта колхоз председателĕ пулма Василий Павлович Краснова суйлаççĕ.

КОЛХОЗРАН СОВХОЗА КУÇНИ (1974–1991 çулсем)

РСФСР Министрсен Совечĕ 1974-мĕш çулхи августăн 30-мĕшĕнче йышăннă Чăваш АССРĕнче совхозсем йĕркелесси çинчен постановлени кăларнă.

1974 çулхи сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче «Путь Ленина» пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн пухăвĕнче «Дружба» колхозпа пĕрлешес пирки пăхса тухаççĕ. Çавăн хыççăн октябрĕн 4-мĕшĕнче КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССРĕн Министрсен Совечĕ ячĕпе пĕрлешнĕ хуçалăхсенчен «Батыревский» совхоз йĕркелесси çинчен постановлени кун çути курать. Çак документа Патăрьел районĕн ĕçтăвкомĕ 29.11.1974 çулта хăйĕн ларăвĕнче çирĕплетет. Çĕнĕрен йĕркеленнĕ совхоза Патăрьел, Тăрăнпа Йăлăм тата Треньел ялĕсемсĕр пуçне Ыхра Çырмипе Чăваш Ишек ялĕсем кĕреççĕ. Совхозăн тĕп кантурĕ Патăрьелĕнче пулать.

1980-мĕш çулта уй-хирти вырма ĕçĕсене «Батыревский» совхоз ăнăçлă ирттернĕ тесен те йăнăш пулмасть пуль. Тыр-пула вырма вăхăтĕнче колхозсемпе совхоз епле пухса кĕнине, ĕç геройĕсен çитĕнĕвĕсем çинчен ялкорсем район хаçачĕн страницисем çинче кашни эрнерех çутатса тăнă.

Сăмахран: «Батыревский»совхозра ĕçлекен Алексей Петрович Лепешкин СК–5 «Нива» комбайнпа вырма вĕçленсе пынă вăхăта 7416 ц тĕш-тырă çапнă. Абужаров Аркадий Иванович водитель ГАЗ–53 автомашинăпа 9107 ц. тырă турттарнă. Вĕсем районта 1-мĕш вырăна тухнă. Абужаров А.И. 1980 çулхи ĕç итогĕсем тăрăх «Чăваш Республикинче 1980-мĕш çулхи чи лайăх шофер» ята илме тивĕçнĕ. Асăннă совхозрах тракторист-машинист пулса ĕçленĕ Курамшин Аркадий Григорьевича ĕçри çитĕнӳсемшĕн Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

А.А. Носова доярка
(1930–2004)



Хăш-пĕр уй-хир паттăрĕсем çинчен район хаçачĕ çинче çырнă статьясемпе эпĕ маларах паллаштарнăччĕ ĕнтĕ. Çавăн пекех пултаруллă та хастар, ĕçре пысăк çитĕнӳсемпе палăрнă хăш-пĕр фермă ĕçченĕсен кунçулĕпе вулакана, вĕсене пĕлнĕ ял-йыша хаçатра çырнă статья тăрăх тĕплĕнрех паллаштармаллах тесе шутлатăп. Вĕсенчен пĕри вăл – Анна Архипова Носова доярка, Чăваш Республикипе палăрнă. Комсомольски районĕнчи Хирти Выçли ялĕнче çуралса ӳснĕскер, Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче пурăнса, çак ялти фермăрах ĕçлесе чапа тухнă.

Статья ячĕ – **Анна Архиповна.**

«Кунсем нихçан та черетсĕр килмеççĕ. Анчах савăнăçпа хуйхăн ун пек, кун пек черечĕ çук вара. Вĕсем сасартăк, кĕтмен çĕртенех килсе тухаççĕ. Çак каçхине çурçĕр çитеспе çил тухрĕ, йывăç тураттисем чӳрече кантăкне лексе кăтăртаттарчĕç. Кăштахран çиçĕм çиçрĕ, аслати сасси илтĕнчĕ. Унтан çумăр тăкса антарчĕ. Хветуç аппа çаплах сывламасăр тенĕ пек выртрĕ. Мĕн çинчен шухăшларĕ-ши вăл ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупас умĕн? Паллах – ачисем çинчен. Ара, Анюк пурĕ те çулталăк çурăра çеç-çке. «Шел ăна, питĕ шел», – пăшăлтатрĕç тутисем. Пӳртри ытти çынсем ним калама аптраса тăчĕç. Тепĕр кунне ирех Выçли ялĕнче Эрхип арăмĕ Хветуç вилнĕ текен хыпар сарăлчĕ.Тăватă ача аннесĕр тăрса юлчĕç. Çапла вара унăн чун

ăшшине Анюк курса та юлаймарĕ. Халĕ те вăхăта астумасть вăл. Анчах ку çеç-и? Çулталăк хушшинче каллех тепĕр виле... ашшĕ.

Çук, тăлăх хĕрача пулин те, ялтан яла çăкăр шырама тухса каймарĕ Анюк. Тăрăн ялĕнче, аппăш килĕнче – лайăх-и, начар-и – ялти ача-пăчапа пĕр пек ӳсрĕ. Çамрăклах колхоз ĕçне кӳлĕнчĕ, бригадир ăçта хушрĕ, унта çӳрерĕ. Торфне те кайрĕ. Треньел–Çĕрпӳел хушшинче çул хăпартса тунă çĕрте наçилккепе çĕр йăтрĕ тата ытти те. Ниçта та çăмăл марччĕ. Кашни кун киле лачкам йĕп-йĕпе е шап-шурă юр пулса килетчĕ. Хăй çаплах: аппа сана куратăп та, ывăнни те иртсе каять, тетчĕ.

1953 çулхи июнĕн 9-мĕш кунне нихăçан та манмасть Анна Архиповна. Ăна колхоза пăру пăхма пыма хушрĕç. Утса мар, чупса, вĕçсе çитрĕ вăл фермăна. Анчах хăлхана ушкăнри «инкесенчен» тахăшĕ каланă сăмах чуна çурса кайрĕ: «Чавса тăршшĕ кăна хăй, пăру пăхма килесшĕн...». Анюк вара хăюсăррăн кăна çапла ответлерĕ: «Эпĕ тӳнсе каймăп, ура çинче çирĕп пулăп». Хăшĕ-пĕрисем хĕрхенсе, унăн нушине ăнланса çав сăмахсене чун патне хучĕç, ырă тăвасшăн мĕнпе те пулсан пулăшасшăн пулчĕç.

Çапла кунсем пĕрин хыççăн тепри малалла черетленчĕç. Кашни пăрăвне каçсерен, ирсерен сăнасах, пăхсах тăчĕ вăл. Айсарăмне ытларах сарчĕ, тислĕкне тасатрĕ, вăхăтра çитерчĕ. Мĕнпур ĕçе хăнăхса пычĕ темелле. Тăрăшулăх, хăюлăх – этем çуначĕ. Усма юрамасть иккен çуната. Кирек мĕнле йывăрлăхран та тухма чăтăмлăх çитермелле. Енчен те хăшĕсем фермăри ĕçе тамăкри пурнăçпа танлаштарма хатĕр пулчĕç пулсан, Анюк вĕсене хирĕçлерĕ: «Çук, тĕрĕс мар ку», – терĕ. Çакна кулленхи ĕçпе çирĕплетрĕ.

Çитĕнӳсемшĕн кашни çулталăкрах Мухтав хучĕсем илме тивĕç пулчĕ. Виçĕ çул иртсен ăна колхоз правленийĕ, пултарулăхне кура, пĕр ушкăн ĕне çирĕплетсе пачĕ. Тен, ку ĕçре те çăмăлах пулмарĕ пуль малтанхи çулсенче, чăтăмлăх тени пайтах кирлĕ пулчĕ. 1956 çулта пулчĕ ку. Унтанпа вара Анна Архиповна пĕр Пăла сĕт сурĕ пуль! «Маттур», тесе мухтарĕç ăна ялан. Ăмăртура куллен çĕнтерсе пынăшăн чыса тивĕç пулчĕ.

– 1971 çулхи çитĕнӳ манăн чи пысăкки, – тет А.Носова. – Кашни ĕнерен 5252 килограмм сĕт суса илме пултартăм. Çакна тума доярка пĕрмай çĕннине шырарĕ, ăна ĕçе кĕртес тесе ыйхă çинчен манса кайсах тăрăшрĕ. Ыр ут хыççăн пин ут пырать, тенĕ пек ыттисене те çапла ĕçлеме хăнăхтарчĕ. Ара, пĕр çын çитĕнĕвĕпе сĕт кӳлли туса хураймăн-çке. Çапла Анна Носова кашни çулталăка тулли кăмăлпа пысăк савăнăçпа вĕçлерĕ. Савăнмасăр, асăннă тӳпене вăл района çеç мар, республикăра пуринчен малтан çитрĕ.

1971 çулта ăна райхаçатри Хисеп хăми çине, 1972 çулта КПСС райкомĕпе райсовет ĕçтăвкомĕн 9-мĕш пилĕкçуллăхри ĕç вахтин Хисеп кĕнекине кĕртрĕç. 1971 тата 1974 çулхисен чи пысăк кăтартусемшĕн Нина Архиповна Носова доярккăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăларĕç.

1976 çулта пирĕн район Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура çĕнтерсе КПСС Центральнăй Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн тата ВЦСПСăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тивĕç пулчĕ. Кунта Анна Носова доярккăн та тӳпи пĕчĕк пулмарĕ. Çавăншăн ăна савăнăçлă ларура тав çырăвĕ пачĕç.

1971 çулта панă Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, 1973, 1976, 1978, 1980 çулсенчи «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» знаксем, СССР Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен выставкин Ылтăн медалĕ, В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул тултарнă ятпа кăларнă юбилей медалĕ, 9-мĕш пилĕкçуллăх ударникĕн знакĕ, «Ĕç ветеранĕ» медаль тата ыттисем илĕртеççĕ халь унăн кăкăрне.

Акă унăн ĕнисем паян та кĕтӳрен кĕчĕç те ретĕн-ретĕн тăрса тухрĕç. Хăйсен хуçине аякранах палларĕç. Алăкран кĕрсенех пуçĕсене ун еннелле çавăрчĕç. Çирĕм виççĕн вĕсем. – Амăшĕпе пăрушĕ «Дорожкăпа» «Женя» куллен 16–17 килограмм сĕт антараççĕ. «Сирень» вара 20 кг.-ран та ирттерет, «Точка», «Маруся»... Пурте сĕтлĕ, – кăмăлтан паллаштарчĕ Анюк аппа. Çынпа калаçнă пек пуплерĕ вĕсемпе. Кашнийĕн çинех ăшă куçпа пăхса илчĕ. Юратнă ĕçĕ ăна мăшăр çунат хушнă тейĕн.

– Мĕншĕн-ха сан ушкăнри ĕнесен сĕт нумай, тепĕр ушкăнрисемех сахал параççĕ? – ыйтрăмăр эпир. Кун пирки Анна

Архиповна Носова пĕр çулхине республикăри малта пыракан доярккăсен слетĕнче тухса каланă-мĕн. Халĕ çав сăмахсене каллех аса илчĕ:

– Президиумрах лартăм эпĕ унта. Питĕ хумхантăм: хамăн ĕçе, хам шухăша уçса парайăп-ши? – терĕм. – Ара, питĕ пăлханнипе пулĕ ман умри доярка ним калаймасăрах трибуна умĕнчен анса кайрĕ. Çак намăса курас марччĕ тесе йĕркипех пуçларăм. Чи малтан ăратлăха лайăхлатас пирки ыйту хускатрăм. Руководительсене ку енĕпе çаврăнăçуллăрах пулма чĕнтĕм. Залра алă çупса янине те туймарăм. Йăлтах хам пурнăçри ĕç опычĕ çинчен каларăм.

Такам та туять, такам та курать ĕнтĕ: пĕлтĕрхипе виçĕмçул каяллине мар, 30 çул каяллине хаклама нимĕнле виçе те юрăхлă мар ĕнтĕ. Çак улшăнура Анна Архиповнан чун-чĕрипе кăмăлĕ мĕн анлăш ӳсрĕ-ши? Йывăрлăхне те, ăна-кăна та тӳсмелле пулчĕ пуль. Çаксене аса илнĕ чухне Анюк аппа калассинчен пăрăнма тăрăшрĕ.

– Ĕне пăруланă вăхăтра çĕрĕ-çĕрĕпе витерен тухман, фермăри çулсем, картишсем пылчăк, е апат çук, е скотник çук. Мĕнпур ĕçе алăпа тумалла. Вăхăт-вăхăтпа ларса та йĕнĕ. Тĕрĕссипе каласан, темĕнле йывăрлăхсене те тӳсрĕм. Çапах юратса турăм, хисеплерĕм хам ĕçе. Пурнăçăма пĕтĕмпех колхоз пурнăçĕпе çыхăнтартăм, – терĕ юлашкинчен.

Çамрăк мар халь Анна Архиповна Носова. Паян вăл 55 çул тултарать, сĕт сăвассипе пилĕкçуллăхри плана пурнăçлать. Хисеплĕ канăва тухать пулин те, сывлăх пур чухне, малашне те юлташĕсемпе алла-аллăн тытăнса ĕçлеме пулать. Епле уйрăлăн Вера Кузьминаран, Елизавета Емельяноваран, Ольга Лазареваран, Лидия Карповаран тата ыттисенчен те. Вуншар, çирĕмшер çул пĕрле ĕçленĕ-çке!»

Е. Крылова.

(«Авангард» хаçат. 03.08. 1985 ç.)

1973 çулта ӳкерттернĕ сăнӳкерчĕк çинче, «Путь Ленина» колхозри Тăрăн производство участокĕн пуçламăш парторганизацинчи коммунистсен ушкăнĕ:



Пĕрремĕш ретре (*сылтăмран сулахай еннелле*): Иван Федорович Яковлев, колхозри партком секретарĕ Геннадий Петрович Задоров, Тăрăн участокĕн управляющи Александр Александрович Ситов, парти райкомĕн представителĕ Сергей Александрович Инжа, Василий Федорович Илехметов, уй-хир бригадин бригадирĕ Алексей Иванович Илехметов.

Иккĕмĕш ретре: колхозри тĕп инженер Иван Александрович Самакин, Петр Иванович Ибетов шофер, Дмитрий Иванович Алексеев тракторист, Владимир Николаевич Шуряшкин шофер, автотрактор паркĕн механикĕ Иван Александрович Ситов.

1985-мĕш çулхи социализмла ăмăрту итогĕсем тăрăх «Батыревский» совхозри Йăлăм ферминчи сысна самăртакансем: Н.И. Рубцовапа А.И. Смирнова (кашни сысна талăкра вăтамран 620 грамм ӳт хушнă) районта малти вырăна тухнă. Анастасия Ильинична «Районти сысна самăртакансенчен чи лайăххи – 85» ята тивĕçнĕ. Нина Ильиничнăна 1989 çулта вăл пăхакан сыснасем талăкне 670 грамм ӳт хушса мала тухнăшăн çак ята панă.

1990–2010-МĔШ ÇУЛСЕМ: ПОЛИТИКĂРА – ВЛАÇРИ УЛШĂНУСЕМ, ЭКОНОМИКĂРА – РЕФОРМА. КОЛХОЗСЕМПЕ СОВХОЗСЕМ САЛАНАÇÇĔ. КООПЕРАТИВСЕН-АГРОФИРМĂСЕН МАЛАЛЛИ ÇУЛ-ЙĔРĔ

1990-мĕш çулсен пуçламăшĕнче çĕршывра демократин хăш-пĕр енĕсем: уççăнлăх, темиçе парти пуласси, суйлав вăхăтĕнче пĕр кандидатран та ытларах çын тăратас тапхăр аталанма тытăнать. Совет Союзĕ саланса кайса союзла республикăсем хăйсем уйрăм патшалăх пулса тăрсан, КПСС та, влаçра тăракан Советсем те, политикăра хăйсен вăйне çухатаççĕ. Чăваш республикинче депутатсем йышăннă çĕнĕ Конституцине тата саккунсем тăрăх республикăра саккун кăларас, йĕркелесе тата контроль туса пырас функцисем Аслă Канаш аллине куçнă. Чăваш Республикинчи Президентăн вара ĕç тăвакан влаç пуçĕнче тăрса çынсен прависемпе ирĕклĕхне хŭтĕлессине, Чăваш енчи Конституцине саккунсене пăсассинчен сыхă тăмалла пулнă. 1993 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче Чăваш Республикинче президента суйлаççĕ, суйлав пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх Н.В. Федоров ытларах сасă пухса çĕнтернĕ. Президентпа Аслă Канаш (Госсовет) хушшинче влаçа пайлас пирки Раççей шайĕнчи Конституцине килĕшсе тăракан Конституци проекчĕ пулманнипе тата ытти сăлтава пула Чăваш Республикинче часах Конституци йышăнайман. 2000 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче анчах Чăваш Республикин Конституцине йышăннă.

1990-мĕш çулхи декабрь уйăхĕнче Раççей Правительстви ял хуçалăхĕнче тĕрлĕ енлĕ харпăрлăх пулмалли çинчен постановлени кăларать. Çак постановлени тăрăх колхозсемпе совхозсен шутне чакарса индивидуальная форма хозяйствования текен харпăрлăха (инхоз тейĕпĕр) чĕртсе ярас пирки реформа вăя кĕрет. Вулаканпа халь шутласа пăхăпăр: иртнĕ ĕмĕрĕн 30–50-мĕш

çулĕсенче колхоза кĕмен уйрăм хуçалăхпа пурăнакан ял çыннине инхоз тесе тĕрлĕрен налук хурса ăшне пĕçернĕ, ытти енĕпе те ăна влаçпа усă куракансем хĕстернĕ. 1993-мĕш çулхи январь уйăхчен колхозсемпе совхозсен хăйсен харпăрлăх формине улăштарса çĕнĕрен регистраци витĕр тухмалла пулнă. Патăрьел районĕнчи «Батыревский» совхозпа ытти колхозсем Чăваш енчи чылай колхозсемпе совхозсем пекех реформа пуçланнă тĕле 1991-мĕш çулта юхăннă хуçалăхсен шутĕнче пулман. Ял хуçалăх техникипе уй-хиртен кĕске вăхăтра тыр-пулне пухса кĕртнĕ, выльăх-чĕрлĕх продукцине те начар мар туса илнĕ.

1992-мĕш çулхи çĕр реформи хыççăн ялсенче хресчен (фермер) хуçалăхĕсем аталанма тытăнаççĕ. 2004 çулта Патăрьел районĕнче ХФХ шучĕ 174 таранччен çитнĕ. Ял çыннисем коллективлă хуçалăхсенчен хăйсене тивĕçекен пурлăх тата çĕр пайĕпе тухса хăйсен çемйисемпе пахча-çимĕç, тĕш-тырă, утă-улăм çитĕнтерсе илме хресчен-фермер хуçалăхĕ йĕркелеççĕ. Теприсем вара хăйсен çĕр пайĕсене коллективлă е фермерсене парса тыр-пуллипе, çаван пекех хăйсен уйрăм хуçалăхĕнчи çĕр çинче туса илнĕ ытти продукципе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ.

1992 çулта Тăрăн тата Йăлăм ялĕсенче пурăнакансем пĕр коллективлă предприятине пĕрлешсе ăна «Була» ят параççĕ, унăн председателĕ пулма Федор Владимирович Медведева суйлаççĕ. Треньельсем хăйсем пĕр ял КПП (коллективлă пайлă предприяти) «Новокотяковское» йĕркелесе предприятине ертсе пыма Николай Александрович Кошкина шанаççĕ.

Асăннă предприятин малашнехи кун-çулĕ çинчен предприяти директорĕ Н.А. Кошкин «Авангард» хаçат корреспонденчĕпе тĕл пулсан унăн ыйтăвĕ çине панă хуравпа кĕскен вулакана паллаштарас тетĕп. Ку калаçу çинчен статья 1992 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче кун çути курнă.

Статья ячĕ: «Самани хавхаланса ĕçлемелли мар»,– тет колпред директорĕ Н. Кошкин.

«Кăçал Патăрьел тăрăхĕнче «Новокотяковское» хуçалăх çуралчĕ. «Батыревский» совхозăн бригадине кĕрекенскерне ялхуçалăх предприятийĕ туса хунă. «Чувашагропромстрой» пĕрлешĕве кĕрекен кирпĕч завочĕ çумне пĕтĕçнĕ çĕр ĕçченĕсем, промышленность предприятийĕн рабочийĕсемпе килĕшсе, пĕр никĕс хывнă.

Корреспондент:

– Николай Александрович, çĕнĕ предприяти епле йĕркеленни çинчен кĕскен каласа парăр-ха?

– «Батыревский» совхоз пысăкки, ăна ертсе пыма кансĕрри унччченех паллăччĕ-ха вăл, уйрăмсем хушшинчи пĕр-пĕрне ăнланманлăх та ĕлĕкхи чирех. Бригада рабочийĕсем уйрăлса, уйрăм хуçалăх тăвас пирки икĕ çул каяллах решени йышăннă. Анчах ун чухне çул паман халăх ĕмĕтне пурнăçлама. Колхозсемпе совхозсене урăхлатса йĕркелесси çинчен тухнă Указ нумай ыйтăва васкавлăн татса пама май пачĕ. Шăпах çав вăхăтра, кăрлач уйăхĕнче, иртрĕç те ĕнтĕ пухусем. Малтан ялта, унтан – заводра. Хальхинче çӳлти органсенчен хирĕçлекен сахал пулчĕ.

– Совхоз сире валли мĕнле еткерлĕх хăварнă?

– Мĕн еткерĕ унта! Пĕр кĕлет те пĕр вите, пирĕн ялта урăх нимĕн те пулман. Ĕç алли те, 617 гектар çĕр юлнă предприяти валли. Чăн та, техника пайланă чухне пире кӳрентермерĕç. Хамăра тивĕçлине пурне те пачĕç: тракторне те, комбайнне те. Уншăн тав.

– Мĕнпе уйрăлса тăрать сирĕн предприяти ытти кӳршĕллĕ хуçалăхсенчен?

– Чăн малтанах кирпĕч завочĕ пуррипе. Ялхуçалăх культурисене илес пулсассăн, эпир пурне те акнăлартнă. Тырри те пур, улми-чĕкĕнтĕрĕ те, хăмла çеç çук. Специалистсем çĕнĕ пирĕн, çамрăк. Опыт çук-ха. Хама та çав шута кĕртетĕп. Анчах хăрамалли çук. Ĕçлетпĕр. Вĕренетпĕр. Хăнăхатпăр пек.

– Халĕ уй-хир ĕçĕсен итогĕсем паллă ĕнтĕ.

– Вĕсене, паллах, малта пыракан хуçалăхсемпе танлаштарма йывăр. Апла пулин те кăтартусем унччченхи

çулсенчен самаях пысăк. Акă, тырă-пулă гектартан 28,4 центнер тухрĕ. (Ёлĕк 18–20-рен нихăш çул та иртмен.) Çĕрулми – 130 центнер. Кукурузăпа выльăх кăшманĕн тухăçĕсем те аптрамаççĕ. Минераллă удобренисемпе усă курманнине шута илсе, ку кăтартусене аван темелле. Государствăна аш-какай, çĕрулми сутмалли плансене ăнăçлă тултарнă. Тырăпа вара икĕ хут ирттерсе пурнăçланă. Çĕрпе те, пурлăхпа техника никĕсĕ енчен те чылай пысăк «Герой», «Гвардеец» колхозсем планран ирттерсе 200 тонна тырă панă пулсан, эпир 120 тонна ăсатма пултартăмăр. Куншăн пире йӳнĕ хакпа (40 процентне государство хăй тӳлет) автобус пама шантарчĕç. Мĕншĕн çакна коллектив çитĕнĕвĕ тесе шутлас мар.

– Коллективлă хуçалăхсен калăпăшĕ пирки тавлашуллă калаçу пырать халь. Пĕрисем пысăккисем аван тесе ăнлантараççĕ, теприсемшĕн пĕчĕкки лайăхрах. Эсир мĕн шутлă?

– Тӳрех хуравлама йывăр. Пĕр енчен илсен, пысăк мар хуçалăхпа ĕçлеме меллĕрех. Пурте куç умĕнче. Пуçлăхсемшĕн те производство çывăх. Ĕç результатне курса тăратăн, танлаштаратăн. Хамăр предприятине илес пулсан, пирĕн пĕри мар-тăк, тепри туртать. Акă, кăçал çулла районта чылай колхозпа совхозсем ĕçлекенсене шалу параймарĕç. Эпир вара графика пĕрре те пăсман. Кирпĕч цехĕн тупăшĕ мĕнпур рабочисене ĕç укçипе тивĕçтерме май пачĕ. Тӳлесси те пирĕн патăрта, сăмахран кӳршĕри «Пăла» хуçалăхпа танлаштарсан, икĕ хут пысăкчĕ. Авăн уйăхĕнче эпир ăна тата 50 процент ӳстертĕмĕр. Тепĕр енчен илсен çитменлĕхсем те пур. Акă, эпир тем пекех тапаçлансан та «Дон» йышши комбайн илейместпĕр. «Гвардеец» колхозшăн вара вăл нимех те мар.

– Мĕнле ыйтусемпе ĕçлетĕр паян?

– Уй-хирте ĕçсем пĕтнĕ ĕнтĕ. Анчах лăпланса ларма вăхăт çук. Халĕ пикенсех кирпĕч хĕртетпĕр, халăх валли вутă турттаратпăр. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем куллен фермăна утаççĕ. Апат çителĕклĕ. Ку отрасле малалла аталантарма шутлатпăр. Акă, икĕ вите тума

пуçларăмăр. Пĕри 150 выльăх самăртмалли пулать. Тепри сăвакан 60 ĕнепе çавăн чухлех пăру валли.

70 ача вырăнлăх ача сачĕ тума пикентĕмĕр. Пĕрремĕш хутĕнче врач амбулаторийĕ уçасшăн: 11 пӳлĕм пăхнă ун валли. Тухтăрĕ тахçанах хатĕр. Ача сачĕ пулни пире малашне ялта вăтам шкул уçма услови туса парĕ. Хальтерех кăна учительсем валли виçĕ хваттерлĕ çурт никĕсне ятăмăр. Тырă кĕлечĕ (унта вăрлăх хумалли, сортламалли вырăнсем пулмалла) çĕкленет. Кăçал икĕ урама асфальт сарнă. Тата икĕ кас çеç юлать.

– Çĕр реформипе килĕшӳллĕн килти хушма хуçалăха аталантарма вырăнти Советсем пĕр гектар чухлĕ çĕр уйăрса параççĕ. Мĕнле усă кураççĕ сирĕн çынсем çак йĕркепе?

– Пирĕн халăх кил-çурт çумĕнчи лаптăка ӳстермен. Анчах уншăн никам та ӳпкелешмест. Предприяти çĕрĕ çинчен эпир кашни хуçалăх валли 25–30 сотăйлăх курăк акса ӳстернĕ. Тоннă çуршар типĕ утă уйăртăмăр. Тыррине те нумай илнĕ, 1,5–2,5 тонна таранччен ех. Çĕрулми пуçтарнăшăн вунă процентне, выльăх кăшманĕшĕн пилĕк процентне ĕçлекенсене панă. Мĕн чухлĕ кирлĕ, улăм турттарчĕç ял-йышсем, хайхи гектар пуçтарăнчĕ те.

– Кирпĕч завочĕ пурри аван-ха вăл. Вăхăт юлать-и ун нушисемпе ĕçлеме?

– Тупас пулать. Проектпа пирĕн патăрта çулталăкра 2,6 миллион кирпĕч кăлармалла. Пĕлтĕр эпир 5,4 миллион сутнă, кăçал чăнах та, кăшт сахалрах – 4,5 миллион. Йӳнĕ мар хакĕ те. Паян эпир халăха пĕр кирпĕче 3 тенкĕ те 20 пуспа, организацисене 4 тенкĕпе сутатпăр. Ют облаçсене тата та хакларах. Юлашки вăхăтра кирпĕч илекенсем йышланчĕç. Çитес çул завода реконструкци тума шутлатпăр. Малашне алăпа ĕçлемелле пулмасть унта».

Малалла мĕнле ĕçлесе пынă-ха треньелсем, виçĕ çул иртсен мĕнле улшăнусем пулса иртнĕ «Новокотяков-

ское» предприятинче? Тĕплĕрех пĕлес тесе, тепĕр автор «Авангард» хаçатрах çырнă «Авăнмасăр, вăй хумасĕр тулли пулмĕ кĕреке» ятлă очерк çинче чарăнса илер-ха.

«Шупашкар–Сызрань трасси çинчен Треньел ялне асфальтлă çул кĕрет. Тĕп çулран пĕрре те япăх мар вăл. çатма пек тикĕс çул. Çурчĕсем пĕринчен тепри капмар. Пĕр касра çеç мар асфальтлă çул. Кашни урамра сарнă ăна. Районти пĕр хуçалăхра та çакнашкалли çук тесен те тĕрĕс пулĕ. Тĕп урампа паралельлĕ çĕнĕ кас çĕкленет. çамрăксен урамĕ иккен. Çурт-йĕрсем чылай купаланă кунта. Кирпĕчрен. Паянхи условисенче уйрăлса тухса çурт-йĕрпе хуралтăсем çавăрма вăй çитерекенсем пурха. Ытти стройкăсем те пыраççĕ. Учительсене пурăнма виçĕ хваттерлĕ çурт, фельдшерпа акушер пункчĕ кăçал хута каймалла. Мастерскойпа гараж никĕсне хывнă. 200 ĕнелĕх витере монтаж ĕçĕсем çеç юлнă. Йĕтем çине çĕнетнĕ тата ытти те. Пурне те тенĕ пекех «Новокотяковское» предприяти вăйĕпе тата выränта кăларакан продукципе. Урăхла каласан – кирпĕчпе. Çав усранă треньелсене, халĕ те тăрантарать вăл. 1992 çулхи январь уйăхĕччен кирпĕч завочĕ хăйне уйрăм предприяти пулнă. Ял халăхĕ, çĕрĕсем вара «Батыревский» совхозра шутланса тăнă. Администраци центрĕнчен аякка вырнаçнăскерне, куç хŭрипе çеç пăхнă. Строительство пыман, ял халăхне ĕçпе тивĕçтерес тесе тăрăшман. Çăмăллăхсемпе усă курайман. Чылайăшĕ Ульяновск еннелле сезонлăха ĕçлеме кайнă. Выльăх-чĕрлĕх усрама та йывăр пулнă. Пĕрле пуçтарăнса халăх совхозран хăйсене тивĕçекен çĕрпе уйрăлса кирпĕч завочĕпе пĕрлешнĕ.

Виçĕ çул хушшинче кунта чылай улшăнусем пулнă. Каллех халăха паракан кулленхи çăмăллăхсенчен пуçлар. Предприятинче халĕ ятарлă уй-хир бригади çук: выльăх-чĕрлĕх, уй-хир отраслĕсем тата кирпĕч завочĕ. Паян предприяти членĕ ирпе фермăра ĕçлет, кăнтăрла е каç кŭлĕм хире тухса çум çумлать, пухса кĕртет тата ытти те. Пĕр фермă ĕçченĕ çеç çапла мар. Заводра-и, шкулта-и,

ытти çĕрте вăй хурать вăл, пурпĕрех. Пай тăвассине кăмăлпах пурнăçлаççĕ. Хавхалантарăвĕ те пур. Акă, нумай çул ӳсекен куräксене пĕрремĕш хут çулмалли вăхăт çитет. Лаптăка виçĕ пая уйăраççĕ. Икĕ пайне хуçалăх валли типĕтсе кĕртеççĕ, пĕрне халăха параççĕ. Çак кун хире тухман çын юлмасть. Килтине те, предприятинне те мĕн тĕрлĕ техникăпа çеç турттармаççĕ. Ана тухăмрах тирпейленет. Утă пахалăхлă кĕрет. Çумăр айне пулса çĕрсе каяс хăрушлăх çук.

Районти хăш-пĕр хуçалăхсенче çу каçипех газ проблеми тăрать. Треньелсен запасра пур. Хакĕ те çыртмасть. Май уйăхĕнче тăрăшшĕпех ял халăхĕ ăна ултă пинпе туяннă.

Ушкăнпа ĕçлеме çăмăлрах. Пай çинче вăй хума ӳркенменрен, кĕркунне ял халăхĕ утăллă, тырăллă, выльăх кăшманĕллĕ, çĕрулмиллĕ, суханлă, укçатенкĕллĕ пулать. Хĕл каçма мĕн кирлĕ тата. Вутă. Ăна кашни киле пĕрер машина турттарса килсех параççĕ. Водопровод ĕçлет. Пĕр касран тепĕр урама шыв шырама чупасси çук. Яла район центрĕнчен автобус çӳрет.

Хыçра кашни çемьенех пахча пур. Унта ытларахăшĕ çĕрулми туса илет. Сухаланăшăн, сӳреленĕшĕн, культиваци тунăшăн, лашапа усă курнăшăн тӳлемеççĕ. Предприяти членĕ арман авăртнăшăн çур хак çеç тӳлет тата ытти те. Ăçта пур-ха çакăн пекки?

Çăмăллăхсем пур. Вĕсемшĕн савăнмалла. Анчах вĕсене вырăнтах тăваççĕ-çке. Тĕплĕнрех паллашарха предприятипе. Усă куракан 504 гектар çĕр пур. Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсем 380 гектар йышăнаççĕ. 72 гектарĕ – кĕрхи ырашпа тулă. Аванах хĕл каçнă вĕсем. Пĕрчĕллисене вăхăтра акса хăварнă. Кирлĕ чухлĕ удобренисем панă. Çумкурăксенчен тасатас тĕллевпе гербицид сапнă. Вăрлăх хакланнăран, хăш-пĕр хуçалăхсенче кăçал кукуруза акаймарĕç. Треньелсем ăна 17 гектар çинче çитĕнтереççĕ.

Çитĕнекен ăру çĕр ĕçне вĕренсе ӳсет. Хăйсене валли шкул столовăйĕнче кирлĕ пахча-çимĕç хатĕрлет.

Çуллахи вăхăтра шкул ачисем пĕрре те ĕçсĕр лармаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле пай çинче ĕçлеççĕ. Аслă классенче вĕренекенсем вара кирпĕч заводĕнче вăй хураççĕ. Иртнĕ çул та сезон вăхăтĕнче вĕсем 100–150 пиншер тенкĕ укçа ĕçлесе илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ пысăках тесе калама çук-ха предприятинче. Анчах ĕмĕчĕсем аслă. 200 вырăнлăх витене хута ярсан вĕсем мăйракаллă шултра выльăхсен йышне ӳстересшĕн. Халĕ 16 сăвакан ĕне пулсан çул вĕçленнĕ тĕле 30-а çитересшĕн. Ĕнесене ăратлисене кăна тытаççĕ. Апрель уйăхĕнче кашнийĕшĕ 13-шер килограмм сĕт антарнă. Май уйăхĕнче вара сăвăм тата та ӳснĕ. Сыснасем 287 пуç шутланаççĕ. Выльăхсене патшалăх умĕнчи тивĕçе пурнăçлама, бартер çыхăнăвĕсем тума, халăха çулталăк тăрăшшĕпех ĕçпе тивĕçтерме те тытаççĕ. Халĕ акă çамрăк пăрусене пуçтараççĕ. Вĕсен шутне çĕре çитересшĕн. Выльăхшăн кирпĕч параççĕ.

Çулталăкĕпех, çулталăклăх укçа паракан çăлкуç вăл – кирпĕч. Хальхи вăхăтра завод виçĕ сменăпа ĕçлет. Хĕрнĕ кăмакасене чармаççĕ. Çапнă çĕрте вăй хуракансем вара икĕ сменăпа ĕçлеççĕ. Ытти ĕç пĕр сменăпа пурнăçланса пырать. Тăм кăларнă çĕрте вунвиççĕмĕш çул ĕнтĕ Михаил Паймин экскаваторщик ĕçлет. Ю.Муськин водитель вара тăма цеха турттарать.

Треньел – пысăк ял мар, вăтам, 130 кил унта, 120 çын вара куллен ĕçе тухать. Тӳлевĕ ĕçне кура ĕнтĕ. Апрель уйăхĕшĕн ĕç укçипе татăлнă. Куллен кассăна 5–6 миллион тенкĕ укçа кĕрет. (Паллах, кунта паянхи кунпа пăхас пулсан хаксем ун чухне йӳнĕ пулнипе сахалтан та икĕ нульне кăларас пулать – Д.К.)

Предприяти хутăш пулнăран, ял хуçалăхĕпе выльăх-чĕрлĕх отраслĕ çине пысăк тимлĕх уйăраймасть. Урăхла каласан, сортлă вăрлăхпа ăратлă выльăх çитĕнтерессишĕн ĕçлеймест. Çавăнпа та районăн вăтам кăтартăвĕнчен аванни те, пĕчĕкреххи те пур.

Хăйсем çине шанса, хăйсен ĕçлес пултарулăхне тĕрĕслесе пăхас шутпа уйрăлнă треньелсем

патăрьелсенчен. Пуçлăхĕ, ертсе пыраканĕ пулма вара Николай Александрович Кошкина суйласа илнĕ. Пĕчĕк йышпах тыр-пул çитĕнтерессĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессĕ, çурт-йĕр çĕклессĕ, кирпĕч çапаççĕ треньелсем».

А. Астраханцева. 06.06. 1995 çул.

90-мĕш çулсенче «Була» предприяти чылай хуçалăхсем пекех хăйĕн статусне улăштарать: коллективлă ял хуçалăх предприяти те, ял-хуçалăхăн производствă кооперативĕ те пулса пăхать. Республикăра та, районта та çав çулсенче тата 2000-мĕш çулсенче колхозсемпе («Восток», «Заря», «Первомайск», «Ленинец», «Ишаки» т.ыт.те) ял хуçалăх кооперативĕсем саланса каяççĕ. Пур пек кивелнĕ ял-хуçалăх техникине, выльăх-чĕрлĕхне сутса пĕтереççĕ. Çак шăпа 2000-мĕш çулсенче «Новокотяковское» коллективлă предприятине те пырса тивет. 1997-мĕш çулхине районта тĕрлĕрен формăллă хуçалăх предприяти – колхоз шутланса тăнă пулсан, çулталăк иртсен 33 хуçалăх юлнă – иккĕшĕ банкрута тухнă. Статистика кăтартăвĕсем тăрăх Чăваш енчи ял хуçалăх хăйне хăй тытăнса тăрайманнин сăлтавĕ вăл – çĕршывĕпех çунтармалли-сĕрмелли материалсемпе (ГСМ) электроэнерги, тракторсемпе машинăсен хакĕсем ытлашши хакланса кайни. Çавна пула колхозсемпе коллективлă предприятисем, хресчен хуçалăхĕсем йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ. 1993 çултан тытăнса патшалăх ял хуçалăхне тракторсемпе комбайнсем, автомашинăсемпе ытти техника, удобренисем тăратма пăрахать. Чылай ял хуçалăх предприятийĕсем çав çулсенчен тытăнса вунă çула яхăн трактор-машинă паркне кивелнĕ, юрăхсăра тухнă техникă вырăнне çĕннисене илме вăй çитереймен. Выльăх-чĕрлĕх тата уй-хир продукцийĕсене сутса та колхозсемпе ял хуçалăх предприятийĕсем малалла аталанма вăй çитереймен. Çултан çул апат-çимĕç продукчĕсемпе промышленность таварĕсем ӳссе пынă, сăмахран: сĕтпе аш-какай 40–60 хут ӳснĕ пулсан, тракторсен хакĕ 800–1300 хут

ӳснĕ. 2001 çулта Т–150 маркăллă трактор туянма 134,2 тонна тулă сутмалла пулнă.

Паллах, йывăр вăхăтсем тăрăнсемпе йăлăмсен те çав тапхăрта пулман мар. Çапах та предприяти-кооператив хăйĕн пурлăхне сыхласа хăварать: кивелнĕ техникăна юсаса çуркунне уй-хирте ака-суха тăвать, кĕркунне тыр-пулне пухса илет. Выльăх-чĕрлĕхне те хуçалăхра тытса, унран илнĕ продукцине патшалăха сутса тупăш илет. Çапла вара пăртак та пулин сывлăш çавăрса ярать. Çапах та 2000-мĕш çулсенче хуçалăхăн экономики чылай ял хуçалăх предприятийĕсем пекех хавшаса пырать. Уй-хирте туса илнĕ апат-çимĕç тата выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ йӳнĕ хакпа сутăннипе тĕш-тырă, ытти культурăсем акса-лартса илмелли çĕр лаптăкĕсене, çавăн пекех выльăх шутне нумай предприятисенче чакарнă.

1992 çул вĕçленнĕ тĕле «Була» ял хуçалăх предприятинчи ĕне ферминче пурĕ 700 пуç ытла мăйракаллă шултра выльăх, вĕсенчен сăвакан ĕнесем 150, самăртакан вăкăрсем 135 пулнă, хĕл каçарма вĕсем валли çителĕклĕ апат хатĕрленĕ. Раштав уйăхне кĕнĕренпе кашни ĕнерен талăкра 8 кг ытла сĕт суса илнĕ. Ялти халăха кашни уйăхрах 500–600 кг сĕте йӳнĕ хакпа сутнă. Ачапăча учрежденийĕсене 180–200 кг-шар тӳлевсĕр панă. Тăрăнти тулли мар вăтам шкул кашни уйăхрах 200 кг, Треньелĕнчи кирпĕч завочĕ 300 кг сĕт илнĕ. Çавăн пекех ял хуçалăх предприятийĕнче вăй хуракан кочегарсене, тимĕрçĕсене, сварщиксене, сывлăхшăн сиенлĕ ытти çĕрте ĕçлекенсене сĕтпе кулленех тивĕçтернĕ. Ытлашши продукцие вара çу заводне леçнĕ. Ытти колхозсемпе ял хуçалăх предприятийĕсем пекех «Була» предприяти Патăрьелĕнчи çу завочĕпе Канашри аш-какай комбинатĕнчен выльăх-чĕрлĕх продукчĕшĕн услам укçине вăхăтра илеймен. Çакă, паллах, ял ĕçченĕсене ĕç укçине темиçешер уйăх куçпа курманни кӳрентернĕ, ĕçлес хастарлăха чакарнă. Çапах та ферма ĕçченĕсем пуçа усман, рынок тапхăрĕнче ырă улшăнусем пуласса

шанса çанă тавăрса ĕçленĕ. Ку фермăра Лидия Карповапа Вера Михеева çав вăхăтра 19 ĕне пăхса кунне 90-шар пăт сĕт суса илнĕ. Ольга Лазарева ĕнесене самăртнă выränта вăй хурса вăл пăхакан кашни ĕне талăкне 893 гр. ӳт хушнă. 20 çул ытла вăй хурса вĕсем ытти фермă ĕçченĕсемшĕн ырă тĕслĕх шутланнă. Лидия Бородкина, Маргарита Краснова, Нина Кузьмина, Мария Илехметова дояркăсем те коллективра хăйсен тăрăшулăхĕпе паläрнă, малтисен ретĕнче пынă.

1997 çулталăк итогĕсем тăрăх, «Була» тата «Новокотяковское» ял хуçалăх предприятийĕсенчи ĕне фермисем районти çавăн пек предприятисемпе колхозсен 20 фермă хушшинче 9-мĕш тата 11-мĕш выränа йышăнса вĕçленĕ. Тепĕр çул вара Тăränти ĕне ферми тухăçлăрах ĕçлесе 7-мĕш выränа хăпарнă.

«Була» коллективлă ял хуçалăх предприятийĕ уйхиртен тыр-пул пухса кĕртессипе 1992–1995 çулсенче ăнăçлă ĕçленине курма пулать. 1994 çулта вăл пĕр гектар çĕр çинчен 37,8 центнер (бункер виçипе 40,2 ц) пухса районта иккĕмĕш, тепĕр çулхине пĕрремĕш выränа (30,1 ц) тухнă. Çак хуçалăхра П.П. Думилин ертсе пыракан бригадă амбар виçипе 38 ц, бункер виçипе 40,3 ц тĕштырă пухса районта 45 бригадă хушшинче виççĕмĕш выränа йышăннă. 1993, 1995-мĕш çулсенче те унăн бригади уй-хирти тыр-пула пухса кĕртессипе ăнăçлă ĕçленĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна 1997 çулта Чăваш Республикин Президиумĕн Указĕпе ял хуçалăх ĕçченĕсен уявĕ ячĕпе «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Акă мĕн çырать-ха «Авангард» хаçат Петр Павлович пирки «20 çул ытла бригадирта» очеркра.

«Çулталăк вĕçленчĕ ĕнтĕ. Çавна май ял хуçалăх ĕçченĕсен хăшпĕр итогĕсене пĕтĕмлетме майсем пур. Уй-хирти мĕнпур тыр-пула, çĕрулмине, сахăр чĕкĕнтĕрне, выльăх кăшманне, утă-улăма, сухан-севока, пуçлă сухана вăхăтра тирпейлĕ пуçтарса кĕртрĕç «Була» коллективлă ял хуçалăх предприятийĕн

ĕçченĕсем. Тыр-пул тухăçĕ начар мар. Гектартан вăтам шутпа 37,8 центнер (бункер виçипе 40 центнер ытла) пуçтарса илчĕç. Хăш-пĕр пĕрчĕллĕ культурăсем ытларах та тухрĕç. Урпана акă, гектар пуçне 50 центнертан ытларах вырса çапрĕç.

Иккĕмĕш çăкăр – çĕрулми те тухăçлă. Гектартан 130,3 центнер пулчĕ. Выльăх кăшманне буртсене хунă. Сахăр чĕкĕнтĕрне завода леçсе панă. Çакăнпа çеç ĕç вĕçленмен-ха. Халĕ пĕрлешӳллĕ ял хуçалăх предприятийĕнче килес çул валли вăрлăх хатĕрлеççĕ. Мĕнпур ял хуçалăх ĕçне пĕрин хыççăн тепĕрне, пĕр харăс та пурнăçласа пыма тăрăшрĕç. Нумай енлĕ уйхир ĕçĕсене вăхăтра туса пыма мĕн чухлĕ алă вăйĕ, тĕрлĕ йышши техника тата транспорт хатĕрĕсем кирлĕ пулчĕç. Хĕрӳ ĕççинче никама та çăмăл пулмарĕ.

Организаторла пуян опыт, агрономипе техника ĕçне ăста пĕлсе тăни, хастарлăхпа ĕçри çаврăнуçăлăх коллективлă предприятие ертсе пыма сахал мар пулăшрĕç Ф. Медведев руководителе. Рабочисем, механизаторсем, бригадирсем çĕрне-кунне пĕлмесĕр тенĕ пек тăрăшса ĕçлерĕç. Акă, уй-хир бригадин бригадирне П. Думилина илер-ха. Петр Павловичăн пур ĕç патне те алли çитет. Кашни çĕр лаптăкне лайăх пĕлет вăл. Кашни ĕç участокне çын уйăрать. Юлашкинчен вĕсем мĕнле вăй хунипе интересленет, мĕн чухлĕ ĕç тунине тĕрĕслет, ĕç пахалăхне хаклать. Пурнăçланă ĕçшĕн тӳлессине тĕрĕс те вăхăтра çырса пырать. Кашни кунах ирпе ирех ял тавра çаврăнса çынсене ĕçе йыхăрать. ĕçченсем валли апат леçтересси те, транспорт хатĕрĕсем тупса парасси те бригадир çинчех. Пурне те каласа та пĕтереймĕн. Унăн паха енĕсен шутне пысăк тӳсĕмлĕх, çынсемпе ăшшăн калаçма пĕлни, ĕçе тавçăрулăхпа туни те кĕрет. Çак ĕçре вăл 20 çул ытла вăй хурса паха опыт пухнă. Ĕçри пултарулăхĕ çулсеренех ӳссе пырать. Яланах пысăк ответлăхпа пăхать хăйĕн тивĕçĕ çине Петр Павлович. Рабочисенете çакна хăнăхтарса пырать.

Ырă сăмахсем тата калама пулать П. Думилин пирки. Çар ретĕнче вăл кавалери чаçĕнче службăра тăнă. Служба тивĕçне кирлĕ пек пурнăçласа пынă. Унта лашасене юратса пăхнă. Час-часах командованинчен тав сăмахĕ илтнĕ. Чăваш ачи, П. Думилин Чернобыльти атомлă электростанцинче пулнă авари хыççăнхи хăрушлăха пĕтерес ĕçе хутшăнса та хăйне лайăх енĕпе, харсăр ĕçленипе кăтартса панă.

Йышлă çемьере хастарлă, туслă пурăнасси, хуçалăхра ĕçе кар тăрса пурнăçласси йăлана кĕнĕ Думилинсен. Çиччĕн пĕртăван пулнă вĕсем: ашшĕпе амăшĕ тăватă ывăлпа виçĕ хĕр çитĕнтернĕ.

– Атте, вăрçă ветеранĕ, пире пĕчĕклех ĕç çумне çыпăçма хăнăхтарса пыратчĕ. Çамрăклах колхоз ĕçне хутшăнтаратчĕ. Лашапа ĕçлеме те вĕрентетчĕ, выльăх пăхма та хăнăхтаратчĕ, – аса илет Петр Павлович.

Çак йĕрке йăлара çирĕпленнĕ, ăруран ăрăва куçса пырать. П. Думилинăн мăшăрĕ те хастар. Людмила Дмитриевна чылай çул хушши фермăра ĕçлет, вăкăрсем самăртать. Ытти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче ырăпа палăрса тăрать вăл.

Думилинсем пĕр ывăлпа хĕр ӳстерсе çитĕнтернĕ. Ывăлĕ тăван предприятинче ĕçлет, хĕрачи çемьеллĕ, кӳршĕ ялта пурăнать.

Петр Павлович – ялта хисеплĕ çын. Çакна вăл сăпайлă пулнипе, кашни çынна май çитнĕ таран пулăшма тăрăшнипе, ĕçченлĕхĕпе çĕнсе илнĕ».

Тăрăн ялĕ. А. Алексеев.
05.01.1995 çул.

Чăваш Республикинче 2001 çулта агропромыш-ленность комплексне аталантарас енĕпе йышăннă программа тăрăх колхозсемпе ял хуçалăх предприятийĕсене тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсене ура çине тăма тĕрлĕрен çăмăллăхсем пама тытăнаççĕ. Çапах та «Була» ял хуçалăх кооперативĕ 2005 çулта малалла каяс вырăнне чаксах ларать. Çĕнĕ формăллă ял хуçалăх





предприятийĕ йĕркелесе ямасăр ахрат çырминчен тухаймассине районти пуçлăхсенчен тытăнса кооперативра ĕçлекенсем таранччене ăнланса илеççĕ. Панкрута тухнă кооперативран çĕнĕрен йĕркеленĕ «Исток» агрофирмăна 600 гектар таранччен çумкурăк пуснă уй-хир, кивелсе-юхăнса кайнă выльăх-чĕрлĕх фермисемпе ытти хуралтăсем куçаççĕ. Агрофирмăна ертсе пыма район пуçлăхĕ сĕннипе Александр Леонидович

Илюткин килĕшет. Паллах, юхăннă хуçалăха ура çине тăратма опытлă та пысăк пĕлӳ илнĕ, çĕр çинче ĕçленĕ специалиста та çăмăл мар. Çамрăк ертӳçĕне вара пушшех те. Йывăр вăхăтра ăна унччен районти çыхăну уйрăмĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Иван Кириллович Соловьев агрофирмăн директорĕн çумĕ пулса пысăк пулăшу пама тытăнать.

Çĕнĕ хуçалăх ертӳçисем фермăсенче сăвакан ĕнесен шутне, пĕрчĕллĕ культура, çĕр улми акса-лартса илме усă курман çĕр лаптăкне ӳстерме пуçласçĕ. 2009 çула агрофирмăн паха усă куракан çĕр 3000 гектара çитет. 2008 çулта çак хуçалăхра тĕш-тырă ăнса пулнă: гектартан 38 центнер ытла пухса (республикăра вăтамран 21 ц), вăтамран кашни ĕнерен (110 сăвакан ĕне) 5000 кг сĕт суса илсе районта малти вырăнта пынă. Юлашки çулсенче «Исток» саланса кайнă «Заря» кооперативпа Крепков ячĕпе тăракан хуçалăх çĕрĕсенчен хăйсен пайĕсемпе тухнă çынсен çĕр лаптăкĕсене арендăна илсе тĕрлĕрен культурă акать-лартать. Асăннă агрофирмăра çĕр улми, сахăр чĕкĕнтĕрĕ çине тимлĕх уйăра пуçларĕç. Вĕсен тухăçĕ те лайăх, вырнаçтарма та пулать кирлĕ çĕре. Паха сортлă çĕрулмине аякри Самара, Волгоград, Оренбург тата ытти облаçсенчен пысăк та вăрăм автомашинăсемпех туянма килеççĕ.

2008 çулта хуçалăхра мĕн пур технологие пăхăнса çитĕнтернĕ çĕрулми лаптăкĕ 100 гектар çинчен тухăçĕ начар мар пулнă: гектартан 300 центнер тухнă. Тырпул пуçтарса илессипе те районта чи пысăккисенчен пĕри – гектартан 40 центнера яхăн çитернĕ çĕр ĕçченĕсем.

Тыр-пул, çĕр улмипе сахăр чĕкĕнтĕрĕ тата ытти йышши культурине туса илессипе пысăк çитĕнӳ тăвасси – хуçалăхри агрономран нумай килет. çавăнпа та ку енĕпе «Исток» тунă çитĕнӳ унăн тĕп агрономĕнчен – Федор Владимирович Медведевран нумай килнĕ. Медведев Ф.В. Совет Союзĕ саланса кайиччен «Герой» колхоза ертсе пырса районта кăна мар республикăра малтисен йышĕнче тытса пынă. Пысăк çитĕнӳсемшĕн ăна чылай

орденсемпе тата медальсемпе наградăланă, «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ» ята панă. 90-мĕш çулсенче вăл «Була» коллективлă предприятине ертсе пыма килĕшет. Вăл ертсе пынă çулсенче хуçалăх ура çинче аванах тăнă. Тĕп агроном пулса, вăл хăйĕн пуян ĕç опытне, унăн вăрттăнлăхне çамрăк специалиста – Д. Ерофеев агронома вĕрентсе хăварма шутлать.

Район пуçлăхĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн «Исток» агрофирмă çур акине вăхăтра тата пысăк шайра ирттернине палăртнă. Уйрăм выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче ытти хуçалăхсенче ĕçлекенсемпе пĕрле асăннă хуçалăхри Мария Илехметова пăру пăхакана, пĕтĕмĕшле 71 центнер самăртнăшăн тата çур акинче хастар ĕçленĕ механизатора Николай Тихонова çĕнтерӳçĕ тесе йышăннă, вĕсене диплом тата укçан преми парса хавхалантарнă. Н.В. Тихонов МТЗ–1221 тракторпа 3 сеялкăллă агрегатпа 953 гектар пĕрчĕллĕ культура акнă. Сăмах май, 1999-мĕш, 2000-мĕш çулсенчи вырмара СК–5 комбайнпа 5451 ц, 6400 ц тĕш-тырă çапса илсе вăл районта малти выраăна тухнă.

Вулакана, уйрăмах Тăрăн ял тăрăхĕнче пурăнакансене, асăннă Николай Васильевич Тихонов пирки (Йăлăм ялĕнчен вăл) çакна асăрхаттарас, тетĕп. «Путь Ленина» тата «Батыревский» совхозра иртнĕ ĕмĕрти 60–80 çулсенче тракторист пулса ĕçленĕ, ĕçпе чапа тухнă, чылай наградăна тивĕçнĕ çак ялтах пурăнакан Тихонов Николай Васильевичпа пăтраштармалла мар. Паянхи уй-хир паттăрĕ Н. Тихонов вара тракторпа акара кăна мар, вырма вăхăтĕнче те пысăк çитĕнӳсем тăвать. 2008 çулхи вырмара вăл «Полесье» комбайнпа 18983 центнер тырă çапса тĕшĕленĕ.

Раççейри сахăр туса кăларакан «Союзроссахар» союзĕпе РФ Ял хуçалăх министерстви «Раççейри 2007 çулхи чи лайăх сахăр завочĕ» тата «Раççейри сахăр чĕкĕнтĕрĕ çитĕнтерекен чи лайăх хуçалăх» итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Конкурса 79 сахăр завочĕпе сахăр чĕкĕнтĕрĕ ӳстерекен 106 хуçалăх хутшăннă.

Палăртма кăмăллă, призерсен хушшинче пирĕн районти «Исток» çĕр ĕç фирми те пур. Хуçалăх «Франц клайн» маркăллă çĕнĕ технологи туяннă. Çуллен гектар пуçне 350–400 центнер продукци туса илет. «Исток» – «Чăваш Республикинчи чи лайăх 100 предприяти» клуб членĕ шутланса тăрать.

АПК предприятисемпе строительство организацисен, туса хатĕрлекен промышленноçăн 2008 çулхи производствăпа финанс кăтартăвĕсемпе ӳсен-тăран отраслĕнчи кăтартусемшĕн «Исток» агрофирмăна (ертӳçĕ А. Илюткин) лайăххи тесе палăртнă.

Машина-трактор паркĕ çĕнĕ техникăпа пуçтарăна пуçларĕ: тырă пухса илмелли пысăк тухăçпа ĕçлекен «Полесье» маркăллă комбайн, кустăрмаллă МТЗ маркăллă икĕ трактор ытти техникăна агрофирмă лизингпа, çавăн пекех агрофирмă илнĕ тупăшпа 13,2 миллион тенкĕлĕх «хурçă ут» туяннă. Вырма ĕçне районта аякра вырнаçнă Тури Чакă, Аслă Чемен тата ытти ялсенченех, ваттисăмрăкки те хутшăнаççĕ. Вĕсене ĕçленине кура ĕç укçи 8–9 пин таранчченех тӳлеççĕ. Комбайнерсем çак ĕççи вăхăтĕнче тыррине (натуроплата тейĕпĕр) панине шутламасăр 40 пин тенкĕне яхăн алла илеççĕ.

2009 çулхи авăн уйăхĕнче, районти АПК предприятийĕсемпе хутшăну йĕркелекен пайĕнчи комисси пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем хĕле мĕнле хатĕрленнине тĕрĕсленĕ. Çавăн пекех тĕрĕслекенсем «Исток» агрофирмăн сысна фермине те çитсе курнă. Рейд бригади тĕрĕслев итогĕсем çинчен мĕнле хак панине районта тухса тăракан хаçат тăрăх çакна пĕлме пулать.

«Таçтанах шап-шуррăн курăнса тăраççĕ «Исток» хуçалăхăн сысна витисем. Вĕсене шалтан та, тултан та шуратнă. Урайсене çĕнетнĕ. Сысна фермин заведующийĕ В. Илюткин шыв башнине те улăштарнине пĕлтерчĕ. Улăма ферма çывăхнеллех турттарса хунă. Хĕле хатĕрленни кашни утăмра сисĕнет. Хăй вăхăтĕнче йĕпе-сапаллă чухне ĕне ферми территоринче ашса тухайми пылчăк çăрăлнă, хире тăкăнайман тислĕк нумайăшне тарăхтарнă.


Халь ак пыр та кур. Навус çук, пур çĕрте те тирпейлĕх хуçаланать. Витесене йăлтах шуратса дезинфекциленĕ, маччасене те манса хăварман. Шыв пăрăхне çĕнетнĕ, чӳречесене карнă, шăтса пĕтнĕ çатăрка хутсене тепĕр хут улăштарма пикеннĕ. Витене кĕнĕ çĕрте урайне кăна бетонпа хытармалла, ăна валли стройматериалсем хатĕрленĕ. Пĕлтĕр пĕр пушă витене çурри таран тĕплĕн юсанă, халĕ унта самăртма хупнă пăрусем тăраççĕ. Транспортер лайăх ĕçлет.

Выльăхсем валли апат çителĕклĕ янтăланă, хĕлле ыйткалама каймалла пулмасть.

Фермăсенче ĕç-хĕл мĕнле аталанасси ферма заведующинчен, тĕп специалистсенчен, вĕсем пĕр-пĕрне ăнланса вăй хунинчен питĕ нумай килет. «Исток» хуçалăхра кĕске вăхăтра çакăн пек лайăх улшăнусем пулни пурне те савăнтарчĕ.»

Рейд бригади: Г. Салмина, Н. Шихранов, О. Павлова – хаçат корреспонденчĕ.

23.09. 2009 çул».



АПК предприятийĕсемпе хутшăну йĕркелекен пай пуçлăхĕн çумĕ, тĕп зоотехник Г. Салмина «Исток» агрофирмăн сысна ферми заведующийĕпе В. Илюткинпа хĕле мĕнле хатĕрленни пирки калаçаççĕ.

Сăмах май, «Исток» агрофирмăра сыснасене 2011 çулта пĕтернĕ. Сăлтавĕ тен, унăн районта вăйлă конкурент тупăннипе. Пăлакасси ялĕнчен инçе те мар иртнĕ ĕмĕрти 90-мĕш çулсенче сысна ĕрчетекен комплекс панкрута тухнă хыççăн юлашки çулсенче ăна хамăр республика шайĕнчи пуçлăхсем çĕнĕрен чĕртсе лартма йышăннă. Çак предприяти çĕнĕ оборудованисем вырнаçтарнă, паянхи кун ют çĕршывсен технологи тăрăх сысна ĕрчетет.

Чăвашстат отчечĕпе пăхсан 2011 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕш тĕлне Патăрьел районĕнче 37 ял хуçалăх организацийĕ, 400 фермер хуçалăхĕ, 13,4 пин килти хушма хуçалăх шутра тăни курăнать. Çак çулхи 10 уйăхра сĕт сăвассипе малта пыракан хуçалăхсем: Ленин ячĕллĕ çĕр ĕç фирминче 5129 килограмм, «Батыревский» хупă акционерлă пĕрлешӳре 4880 кг, «Исток» çĕр ĕç фирминче 4495 кг. сĕт суса илнĕ.

Уй-хир тĕрĕслевĕ хыççăн, район администрацийĕн пуçлăхĕн Н. Глуховăн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн, акана пысăк пахалăхпа пурнăçланă хуçалăхсене диплом тата укçан преми парса хавхалантарма йышăннă.

Çур акине вăхăтра тата пысăк шайра ирттернĕшĕн тулли мар яваплă «Агрофирма «Исток» пĕрлешӳ (ертӳçĕ – А. Илюткин, тĕп агроном – Д. Ерофеев, тĕп инженер – А. Лялькин) пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче асăннă хуçалăхри В. Михеева ĕне-выльăх самăртаканпа И.Шурбина сысна самăртакана ырăпа асăннă.

2012 çулхи ака уйăхĕ тĕлне кăтартусем тăрăх «Исток» агрофирма 3000 гектара яхăн çĕрпе усă курать. Тĕрĕсрех каласан – 2689 гектар. Кунта Кĕçĕн Патăрьел, Тăрăн çĕрĕсемсĕр пуçне Катекĕн, Треньелĕн тата Еншикĕн арендăна илнĕ пайĕсем те кĕреççĕ. Кăçал 600 гектар тулă, 500-шер урпапа нумай çул çитĕнекен куräксем, 250 – çĕрулми, 40 – пăрçа, 30 – сĕлĕ никĕсе хывма палăртнă. Сахăр кăшманĕн лаптăкĕ те пысăк, вăл 300 гектар йышăнать. Пĕтĕм культурăна минераллă

удобренипе акнă. Çĕртме уйăхĕнче тăпрана апатлантарас тĕллевпе ферма çывăхĕнчи тислĕке хире кăларнă.

Мĕнле пыраççĕ-ха асăннă хуçалăхри ĕне-выльăх ферминчи ĕçсем юлашки вăхăтра? Лайăх енчен улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем çинчен «Авангард» хаçатра «Ĕмĕчĕсем пурнăçланаççĕ, малашлăхпа пурăнаççĕ» ятлă статьяра вуласа пĕлĕпĕр.

«Улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем вите патне пынă чухнех сисĕнчĕç. Унччен çул пылчăкпа çăрăлатчĕ. Халь кунта вак чул сарнă. Алăксем те çĕнĕ. Шалалла кĕнĕçем улшăнусем пĕрин хыççăн тепри куçа курăнаççĕ. Кашни ĕне умĕнче шыв ĕçмелли пĕчĕк тимĕр пичкесем вырнаçтарнă. Сăвăнакан сĕте те халь флягăпа йăтса нушаланмаççĕ. Вăл пăрăх тăрăх тӳрех ятарлă температура таран сивĕтекен цистернăна каять. Витере йывăр шăрш тăманни те тĕлĕнтерчĕ.

– Апрель уйăхĕнче сĕт пăрăхĕсене Шупашкарти «Новая агротехнология» фирмăран килсе вырнаçтарчĕç. Ытти ĕçсене вара ĕнесене кĕтĕве илсе тухсан пурнăçлама пуçларăмăр. Çавăн чухнех поликарбонатран вентиляци шахтине те турăмăр. Халь сывлăш та уçăрах, витере те çутăрах, – каласа парать «Исток» агрофирмăн тĕп зоотехникĕ Марат Азизов. Кирпĕч урайĕнче тислĕк çук. Вĕр çĕнĕ транспортер шăкăлтатса çеç ĕçлет. Каяш картишĕнче ларакан контейнер çине пухăнать. Ĕне каяшне ятарлă выpăна кайса тăкаççĕ. Витере санитари кунĕсене туса тăнине, дояркăсем эрнере пĕрре пăрăхсене, шыв валашкисене çунине пĕлтерчĕ М. Азизов.

Выльăхсене халĕ апата алăпа валеççе памаççĕ. Çăнăх миххисене те йăтмаççĕ. АКМ–9 миксер утта, сенажа, пурра, улăма, тăвара, концентрата лайăх пăтратать, унтан умĕсене хурса тухать

– Кун пек тусан, апат та сая каймасть, ĕнесем те лайăхрах çиеççĕ, – каласа хутшăнать С. Солдатов ферма заведующийĕ.

Фермăна çĕнетнĕ май вăй хуракансен ĕç, кану пӳлĕмĕсене те сăн кĕртнĕ. Çывăх кунсенчех сĕтел-пукан вырнаçтарса лартма палăртнă. Паянхи пурнăç ыйтакан условисене пурне те тума тăрăшаççĕ. Дояркăсен ĕçĕ кунта та çăмăлланнă. Пĕр хут тасатнă аппаратсене малалла машинă чӳхет. Шыв кĕрет, тухать.

– 40 çул фермăра тăрăшатăп. Паян вăй хума та кăмăллă. Пенсие кайнă пулсан та кунтан каяс килмест, – тет В. Михеева.

Улшăнусем витере кăна мар иккен. Агрофирмăра ăратлăх патне те тимлĕх ытларах уйăрма пуçланă. Ĕнесене Америкăран илсе килнĕ вăрлăхпа йăхтараççĕ. Пăрăвĕсен пуçĕсем пĕчĕкрех пулаççĕ, çавна май амăшĕсене пăрлама çăмăлрах-мĕн. Вăкăрĕсем ӳт лайăхрах хушнине, ĕнесем сĕт ытларах антарнине палăртаççĕ специалистсем. Пĕрремĕш мăклашкасене çĕнĕ çул хыççăн алла илĕç.

– Элĕк районĕнчи «Новая путь» хуçалăхра çак ăратлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсен опычĕпе паллашма кайсан курса килтĕмĕр, хамăр патăрта та усă курас терĕмĕр. Çавăн пекех кӳршĕ регионсенчи хуçалăхсене те çитетпĕр, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăкланатпăр, çĕнĕлĕхсене вырăнта пурнăçа кĕртме тăрăшатпăр, – тет Марат Ринатович. Пăрлаттармалли витере таса, тирпейлĕ. Пĕчĕк пăрушкасен клеткисене шуратса дезинфекциленĕ. Кунта та ăшă шыв яланах пур. Скотниксем хушшинче каçхи дежурство йĕркеленĕ.

Чӳк уйăхĕ çитнĕ пулин те çанталăк ăшă тăнăран выльăхсене паян та кĕтĕве илсе тухаççĕ, нумай çул ӳсекен курăк тата кĕрхи культура анисенче çӳретеççĕ. Кӳпĕнесрен улăма тракторпа леçсе параççĕ. Инкек куриччен асăрханма çăмăлрах. Çавăнпах чир-чĕре хирĕç профилактика тăвассине те çирĕп пăхăнаççĕ.

«Исток» агрофирмăра 450 ытла выльăх, унтан сăвăнаканни 150 пуç. Пĕр ĕнерен куллен вăтамран 12 кг сĕт сăваççĕ. Сиплĕ шĕвеке «Батыревское молоко» пĕрлешӳ илсе тăрать.

Асăннă хуçалăх ĕçченĕсем малашлăхпа пурăнаççĕ: йыша та ӳстересшĕн. Çак ĕмĕтпех витене те реконструкциленĕ те ĕнтĕ».

О. Бельдекова. 10.11.2012 çул.





Тăрăнти ĕне ферминчи М. Азизов зоотехникпа С. Солдатов ферма заведующийĕ сивĕтнĕ сĕте тĕрĕслеççĕ.



Сулахайран сылтăмалла: Ольга Скворцова лаборантка, Нина Михеева, Луиза Солдатова тата Вера Михеева дояркăсем, Ирина Маркова осеменатор ирхи сăвăм хыççăн. 2012 ç.

Районти «Коммунизм байрагы» тата «Авангард» хаçатсене тухнă хăш-пĕр кĕске хыпарсем:

«Радио кашни колхозник килĕнче пулмалла.

Радиофикаци пирĕн çĕршывра хăватлăн сарăлса пырать. Пирĕн районта та çыхăну кантурĕ çумĕнче радиоузел ĕçлет. Район центрĕнчи, Йăлăм Патăрьелĕнчи чылай ĕççыннисем радиоузел урлă хăйсен килĕсенче радио итлеççĕ. Роза Люксембург, Молотов колхозсен членĕсем хăйсен колхозĕсене райцентрти радиоузел вăйĕпе радиофикацилеме йышăнчĕç. Анчах çак колхоз председателĕсем строительство материалĕсем хатĕрлеме тата çыхăну кантурĕпе договор тума васкамаççĕ».

«Коммунизм байрагы» хаçат, 31.03.1949 çул.

«Автомашинă туяннă.

Çак кунсенче колхоза ГАЗ-51 автомашинă кӳрсе килнĕ. Çитес кунсенче тата ГАЗ-69 çăмăл автомашинă илсе килмелле».

«Авангард» хаçат, Л. Хураськин. 30.06.55 çул.

«Радио кĕртрĕç.

Мичурин ячĕпе тăракан колхозри Треньел ялĕнче халиччен радио çукчĕ. Нумай пулмасть унта мĕн пурĕ 116 киле радио кĕртрĕç. Ялти пĕр киле те радио кĕртмесĕр хăварман».

Н. Эльмуков. 02.08.56 ç.

«Çĕнĕ клуб ĕçлет.

1964-мĕш çулăн пуçламăшĕнче Тăрăн ялĕнче клуб ĕçлеме тытăнчĕ. Кунти сцена çинче район культура çумĕнчи драма кружокĕн коллективĕ «Айдар» пьеси тăрăх спектакль лартса пачĕ».

А.Хлебников. 22.01.64 ç.

«Хăмла типĕтме – сушилкă.

«Путь Ленина» колхозăн Тăрăнти 3-мĕш комплекслă бригадинче хăмла плантацийĕ 4 га йышăнать. И.Краснов ертсе пыракан звено кăçал пĕрремĕш хут хăмла туса илет. Пухнă хăмлана типĕтме Д.Сорокинпа В.Ляльким ертсе пыракан строительсен звенисем сушилкă тăваççĕ.

Йăлăм Патăрьелĕнче колхоз правленийĕ пулăшнипе пуçламăш шкул çуртне туса пĕтерчĕç. Шкул ачисем валли çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле пысăк парне пулчĕ.

Тăрăнта хальхи вăхăтра хăмла типĕтмелли çурт, Кĕçĕн Патăрьелĕнче сысна ферми валли кормокухня, столовăй, Треньелĕнче лаша вити тăваççĕ».

А.Ситов. 22.07., 03.08., 07.08.1965 ç.ç.

«Тăрăн ял варринче ял клубĕ çумĕнче тин çеç чулран çĕнĕ магазин купаласа лартнă».

«Палăк пулать.

Тăрăнта палăкăн никĕсне хыврĕç. Ял çыннисем воскресникĕ хутшăнса ăна лартмалли вырăна решетке тытса çаврăнчĕç. Палăка Октябрь революцийĕ 48 çул тултарнă тĕле уçма палăртнă».

Л.Ялькин. 10.08., 12.08.1965 ç.

Майăн 9-мĕшĕнче Тăрăнти клуб умне халăх йышлăн пухăнчĕ. Палăк уçнă ятпа чаплă линейкă пуçланать.

Л. Лялькин. 14.05.1966 ç.

«Путь Ленина» колхозра нумаях пулмасть Кĕçĕн Патăрьелĕнчи сысна ферминче ĕçлекенсен валли тунă çĕнĕ общежити çуртне ĕçе ячĕç. Колхоз правленийĕ телевизор илсе пачĕ.

И. Яковлев, ферма заведующийĕ. 24.02.1970 ç.

«Треньелсен – савăнăç.

«Новокотяковское» коллективлă пайлă предприятин дирекцийĕ ĕçлекенсен социаллă ыйтăвĕсене татса парасси çине яланах тимлĕ пăхнă, пăхать те. Çакна тепĕр савăнăçлă фактпа çирĕплетме пулать. Июлĕн 16-мĕшĕнче Треньел–Патăрьел маршрутпа автобус çӳреме пуçларĕ. Вăл ял çыннисемшĕн меллĕ самантсенче кунне виççĕ пулать: ирхине, кăнтăрла, каçхине.

Малтанхи хут пынă автобуса ял-йыш ăшшăн кĕтсе илчĕ. Предприяти дирекцийĕ водителе парне – пĕр центнер урпа парса чысларĕ.

Паллах, автобус çӳреме май тăвиччен чылай ĕç тунă, çула асфальт сарнă, çаврăнмалли площадка хатĕрленĕ, çул-йĕр паллисем лартнă тата ытти те».

А. Алексеев. 20.07.1993 ç.

2009 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче Кĕçĕн Патăрьел ялĕнчи хĕвел тухăç енче «Олимп» спорт комплексĕ уçăлнă. Çак хаваслă мероприятине Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров, Ял хуçалăх министрĕ М.Игнатьев тата район администрацин пуçлăхĕ Н. Глухов хутшăннă.

«Авангард» хаçатран. 14.10.2009 ç.

Пирĕн малашлăхсем.

«Труд», «Батыревский», «Красное знамя», «Исток» хуçалăхсем пысăк клейковинăллă тулă, çак хуçалăхсемех тата Куликов ХФХ-пе Ленин ячĕллĕ çĕр ĕç фирми сăра тумалли урпа çитĕнтерес енĕпе специализациленеççĕ».

19.11.2011 çул.

Цифрăсемпе фактсем.

Патăрьел районĕнче 19 ял тăрăхĕ, 56 ял. Кашни яла çитиех асфальт сарнă.

2010 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнчи çырав итогĕпе районта 38618 çын пурăнать. Вĕсенчен 48,6 проценчĕ – арçынсем, 51,4 проценчĕ – хĕрарăмсем.

Пĕр ялтан çеç тăракан ял тăрăхĕсем: Алманчă, Пăлапуç Пашьел, Сăкăт, Тутар Сăкăт. Çав вăхăтрах Туçа ял тăрăхĕ сакăр, Пикшикпе Первомайск ултшар ялтан йĕркеленнĕ.

Çын шучĕпе чи пысăк ял – Патăрьел (5431) çын, иккĕмĕш вырăнта Шăнкăртамсем (5418), виççĕмĕшĕнче – Сăкăтсем (1666).

Çын шучĕпе чи пĕчĕк ялсем – Чĕпкас (19), Апрушнай (Ясная Поляна) (30), Люля (58), Шăхаль Выселки (42), Кĕçĕн Шăнкăртам (89).

Районта пĕр ĕмĕр тултарнă 5 çын пурăнать: Кивĕ Катекре А. Исаевапа А. Платонова, Пăлапуç Пашьелĕнче А. Агашева, Шăнкăртамра Б. Айнетдинова, Тутар Сăкăтĕнче М. Хафизова.

21.03.2012 ç.

«Истокăн» – чи пысăк сăвăм.

Выльăх-чĕрлĕх отрасльне аталантармасăр хуçалăх малалла талпăнайманнине «Исток» агрофирмăра питĕ лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа тимлĕхне те ытларах уйăрма тăрăшаççĕ. Кăçал агрофирма ĕне фермине 8 млн. тенкĕлĕх реконструкцилеме, сĕт пăрăхĕсемпе апат валеçекен хатĕр вырнаçтарма палăртнă. Ĕнесене пăрлаттармалли уйрăма тунă хыççăн шурă шĕвекĕн пахалăхне лайăхлатас тата доярккăсен ĕçне çăмăллатас тĕллевпе сĕт каймалли пăрăхсене вырнаçтарма пикеннĕ. Кĕтĕве те çĕнетеççĕ. Елчĕк районĕнчи «Комбайн» хуçалăхран ăратлă 30 пушмак пăру туяннă. Паяна кунта ĕне-выльăх 455 пуç шутланать, вĕсенчен сăвăнаканни – 115. Пĕр ĕнерен кунне вăтамран 16,6 килограмм сĕт сăваççĕ. (Ку кăтарту хĕллехи вăхăтра

– кăрлач уйăхĕнче – Д.К.) Районта чи пысăкки! Хуçалăхра вара Верăпа Нина Михеевасен кăтартăвĕсем ыттисенчен те лайăхрах.

Ĕне-выльăхăн апат рационĕ те пуян. Тырă фуражĕ, силос, сенаж çитернисĕр пуçне жом, вăрă чусти тата ытти минераллă хутăшсем параççĕ».

28.01., 26.05.2012 ç.

«Исток» агрофирмă ĕçченĕсем Роза Люксембург ячĕпе, «Красное Батырево» тата «Октябрь ялавĕ» колхозсен никĕсĕ çинче тăрса, хăй вăхăтĕнче Патăрьелсемпе пĕрлех «Путь Ленина» колхозра тата «Батыревский» совхозра вăй хунă. Мĕнле пурăнать-ха паянхи кун «Истокăн» кӳрши – хальхи «Батыревский» акционерсен хупă обществи?

Кĕскен каласан, çак хуçалăх юлашки çулсенче ура çинче çирĕп тăрать. Уй-хирте ака-суха тума, тырпул пухса илме трактор-машинă çителĕклех, выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илме хăтлă витесем тунă. П.В. Ялуков ертсе пынипе АХО «Батыревский» ĕçченĕсем çулран çул тухăçлă тĕш-тырă, çĕрулми çитĕнтерсе пысăк тупăш илеççĕ, районта малти вырăнсене йышăнаççĕ.Республикăри тата районти хаçатсене пăхса пырас пулсан 2012 çулта «Батыревский» АХО районта пуринчен малтан уй-хирте тыр-пул пухса кĕртнĕ. Тухăç пĕр гектартан вĕтамран 27 центнера яхăн тухнă. Усă куракан 1700 гектара яхăн çĕр. Пин гектар çинче тыр-пул çитĕнтереççĕ, çĕр улми 301 гектар лартнă, ыттине нумай çул ӳсекен курăк акнă. Çĕр улми – иккĕмĕш çăкăр, аванах тупăш парать ку хуçалăха. Пĕр гектартан вăтамран 287 центнер тухнă, пурĕ 8645 тонна пуçтарса илнĕ. Хĕл кунĕнче те çĕр улми туянма аякри облаçсенченех килеççĕ Патăрьелне. Хуçалăхăн 600 ĕне, çав шутран сăваканни – 240. Кашни ĕнерен вăтам сăвăм куллен – 12 литр. Выльăх-чĕрлĕх валли утă-улăм, сенаж, силос çителĕклĕ хатĕрленĕ.



Район администраци пуçлăхĕ Н.И. Глухов тата «Исток» агрофирма ертӳçи А.Л. Илюткин сахăр чĕкĕнтĕр уй-хирĕнче. 2010 çул.


Машинăпа трактор паркĕнче 21 гусеницăллă тата кустăрмаллă, ĕçе тухма юрăхлă трактор, вырмана хатĕр 5 комбайн. Хирти тымар-çимĕçе 3 ятарлă комбайнпа кăларнă.

Тен, «Батыревский» АХО çитĕнĕвĕн вăрттăнлăхĕ унăн ертӳçи специалистсемпе пĕрле канашласа малалла тумалли ĕççене палăртса хуни, йăнăшсене вăхăтра тӳрлетни. Тăрăшса ĕçлекен уй-хир тата фермă ĕçченĕсене тивĕçлипе ĕç укçи тӳлеме те, тупăш енчен хавхалантарма та пĕлеççĕ асăннă хуçалăх ертӳçисем.

Юлашки çулсенче уй-хирсенче тыр-пул, çĕр улми пухса кĕнĕ чухне «Исток» агрофирмăна тата «Батыревский» пĕрлешĕве аякри ялсенчен килсе ĕçлеççĕ. Вĕсене ĕç укçине те ĕç калăпăшне пурнăçланă тăрăх тӳлеççĕ.



«Исток» Агрофирмăн комбайнĕсем вырмара.



Çĕр улми уй-хирĕнче хĕрӳ ĕç пырать.

Колхозсем тата вĕсен председателĕсем:

1. «Красный паровоз» колхоз, Тăрăн ялĕ (30.01.1930–1931 çулччен).

1) Медведев Семен Григорьевич – çав вăхăтра.

2. «Роза Люксембург» (26.02.1931 – 08.03.1951 ç.ç.)

2) Васильев Тимофей Васильевич (26.02.1931–1932)

3) Крылов Михаил Димитриевич (1932–1936)

4) Медведев Павел Григорьевич (январь 1937–25.05.1938)

5) Груздев Федор Степанович (июнь 1938 – 1939)

6) Коннов Андрей Павлович (1940–1941)

7–8) Емельянов Андриян Ивановичпа Паймуков Александр Григорьевич (1941 çулхи юпа уйăхĕнчен тытăнса 1942 çулхи пуш уйăхчен).

9) Думилин Никон Петрович (1942 çулхи пуш уйăхĕнчен тытăнса 1943 çулхи авăн уйăхчен).

10) Крылов Петр Васильевич (1943 çулхи авăн уйăхĕнчен 1944 çулхи пуш уйăхчен).

11) Крылов Алексей Иванович (07.03.1944–28.02.1947)

12) Сорокин Николай Васильевич (01.03.1947–28.02.1949)

13) Илехметов Василий Федорович (15.03.1949–30.11.1951)

3. «Малое Батырево» (19.04.1930–1932 ç.ç.)

1) Соловьев Афанасий Яковлевич (19.04.1930–02.03.1931)

2) Хураськин Егор Николаевич (02.03.1931–16.02.1932)

4. «Красное Батырево», Кĕçĕн Патăрьел, (16.02.1932–30.11.1951).

1) Рубцов Сергей Тимофеевич (16.02.1932–1934)

2) Воробьев Иван Сергеевич (1936–1937)

3) Рубцов Алексей Антонович (1937–1938)

4) Алякин Владимир Степанович (1938)
5) Рубцов Алексей Антонович (1939)
6) Соловьев Афанасий Яковлевич (1939)
7) Каллин К. (1940–1941)
8) Хураськина Александра (1942)
9) Рубцов Алексей Антонович (1942)
10) Владимиров Дмитрий Тихонович (01.09.1942–07.03.1944)
11) Фролов Илья Иванович (07.03.1944 – 05.04.1946)
12) Рубцов Иван Александрович (06.04.1946–08.03.1951)

5. «Паянхи сас» (Треньел), 1930–1931 çулсем.
1) Юманов Иван (25.01.1930 – февраль 1931)
2) Галкина Ольга Ивановна (февраль 1931 – март 1932)

6. «Октябрь ялавĕ» (март 1932 – 08.03.1951).
2) Краснов Павел Иванович (март 1932 – 17.08.32 – 1933)
3) Матвеев Семен (1934–1935)
4) Тихонов Василий Егорович (1936–25.07.1937)
5) Зайцев Александр Митрофанович (август–ноябрь 1937)
6) Степанов Александр Иванович (декабрь 1937 – 1938)
7) Макаров Иван Антонович (1938–1939)
8) Лысов Иван Семенович (1941–1942)
9) Эльмуков Яков Терентьевич (октябрь–декабрь 1942)
10) Игорев Терентий Викторович (1943–1944)
11) Логунов Дмитрий Иванович (апрель 1945 – 1947)
12) Пчельников Алексей Петрович (1948–1951)

1951 çулхи пуш уйăхĕн 8-мĕшĕнче виçĕ колхоз: «Роза Люксембург», «Красное Батырево» тата «Октябрь ялавĕ» Мичурин ячĕпе тăракан колхоза пĕрлешеççĕ. Каярах 1959 çулхи юпа уйăхĕн 15-мĕшĕнче çак ялсенчи

колхозниксем Патăрьел тата Сăкăт ялĕсемпе пĕрлешсе «Путь Ленина» колхоз йĕркелеççĕ.

7. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз (08.03.1951–15.10.1959)

1) Илехметов Василий Федорович (15.03.1951–30.11.1951)

2) Гаврилов Макар Филиппович (10.12.1951–27.03.1953)

3) Ситов Александр Александрович (27.03.1953–27.01.1959)

4) Алексеев Александр Иванович (24.02.1959–15.10.1959)

7. «Путь Ленина» (15.10.1959 – 04.10.1974)

1) Тимошев Валериан Семенович (15.10.1959–26.02.1965)

2) Табаков Александр Порфирьевич (26.02.1965–24.02.1973)

3) Краснов Василий Павлович (13.03.1973–30.08.1974)

1974 çулхи çурла уйăхĕн 30-мĕшĕнче РСФСР Министрсен Канашĕн РСФСРта, çавăн пекех Чăваш АССРĕнче те совхозсем йĕркелес пирки постановлени тухать. Çак документпа килĕшсе КПСС Чăваш обкомĕн бюро тата Чăваш АССРĕн Министрсен Канашĕ 1974 çулта юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче «Путь Ленина» колхоза кĕрекен Патăрьел, Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьел, Треньел, «Дружба» колхоза кĕрекен Ыхра Çырми тата Чăваш Ишек ялĕсен çĕрĕсене, çавăн пекех обществăлла пурлăхне пĕрлештерсе «Батыревский» совхоз тума постановлени кăларать. Совхоз правленийĕ вара Патăрьелĕнче пулать.

8. «Батыревский» совхоз (04.10.1974–07.02.1992)

Директорĕсем:

1). Краснов Василий Павлович (04.10.1974–1975)

2) Галялетдинов Фарид Галялетдинович (1975–1978)

3) Кудрявцев Александр Петрович (1978–1991)

9. КСХП (КЯХП) «Була» (21.01.1992–03.04.1997)

Председатель: Медведев Федор Владимирович.



«Батыревский» совхозри орден-медаль илме тивёçнё уй-хир тата фермă ёçченёсен ушкăнё. *Сулахайран сылтăмалла:* Евдокия Дмитриевна Митина доярка (Патăрьел), Владимир Павлович Енилин бригадир (Патăрьел), Нина Ильинична Рубцова сысна пăхакан (Йăлăм), Александр Сергеевич Ляллин тракторист (Патăрьел), Александра Михайловна Думилина колхозница (Тăрăн), Емельян Васильевич Спиридонов тёп агроном (Патăрьел), Анна Архиповна Носова доярка (Тăрăн), Юрий Иванович Кошкин Патăрьел уйрăмён ферма заведующийё. 1975 çул.

10. СХПК (ЯХПК) «Була» (03.04.1997–28.09.2007)

Председателёсем:

1) Смирнов Владимир Иванович (03.04.1997–09.02.2001)

2) Самакин Иван Александрович (09.02.2001–30.01.2003)

3) Соловьев Иван Кириллович (30.01.2003–28.09.2007)

11. ООО «Агрофирма «Исток»

Генеральный директор – Илюткин Александр Леонидович (16.02.2005 ç. – паянхи кунчченех ёçлет).

Совхоз директорёсен, кооперативсемпе агрофирма ертӳҫисем:

И.К. Соловьев

Ф.В. Медведев

Ф.Г. Галялетдинов

А.Л. Илюткин

И.А. Самакин

А.П. Кудрявцев

1992 çулхи кăрлач уйăхĕн 21-мĕшĕнче «Батыревский» совхозăн 2-мĕш уйрăмĕн ĕçченĕсем (Тăрăнпа Кĕçĕн Патăрьел ялĕсем) пуху ирттереççĕ, «Була» ят парса коллективлă ялхуçалăх предприяти (КЯХП) йĕркелеççĕ. Асăннă предприятине ертсе пыма нумай çул юнашарти «Герой» колхоза ертсе пынă Федор Владимирович Медведева шанаççĕ. «Батыревский» совхозăн 1-мĕш уйрăмĕнче ĕçлекенсем çав çулхи кăрлачăн 26-мĕшĕнче КЯХП «Батыревский» çине куçарса хăйсен пухăвĕнче совхозăн статусне улăштараççĕ.

1997 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче ял-хуçалăх ятне çаплах хăварса производствăлла кооператив çине куçараççĕ. Асăннă хуçалăх ахрат çырмине анса пынă пек производствăпа экономика енчен йывăрлăха кĕрсе ӳксе панрута тухать. Чăваш Республикинчи Арбитраж сучĕн 2007 çулхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнче кăларнă определени тăрăх «Була» ялхуçалăх производствă кооперативне пĕтерсе хураççĕ. Асăннă кооператив пĕтсе лариччен çак хуçалăхра ĕçлекенсем хăйсен пайĕсемпе уйрăлса тухса 2005 çулхи нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕнче ООО «Агрофирма Исток» йĕркелеççĕ. Паянхи кунченех çак Агрофирмăн лавне çамрăк ертӳçĕ Александр Илюткин туртса пырать.

Маларах асăннăччĕ ĕнтĕ «Батыревский» совхозран уйрăлса тухса Тăрăнпа Йăлăм ял çыннисем пĕр хуçалăх, треньелсем хăйсем кирпĕч завочĕпе пĕрле тепĕр хуçалăх йĕркелени çинчен.

Треньелĕнчи кирпĕч заводне туса пĕтерсен 60-мĕш çулсенче «Чăвашколхозстрой пĕрлешĕвĕн Патăрьелĕнчи СМУ çинче шутланса тăнă. 1986 çулхи пуш уйăхĕнче пĕрлешӳ ячĕ «Агропромстрой» ят çине куçать. Çак заводăн директор пуканне Н.А. Кошкин йышăнсан Треньелĕнче палăрмаллах улшăнусем пулса иртеççĕ. Унăн пуçарăвĕпе пысăк мар ялта 9 класс вĕренмелли икĕ хутлă шкул проектне хатĕрлесе тепĕр çулта ял халăхĕ, шкул ачисенчен тытăнса ваттисем таранччен, А.Т. Краснов ертсе пынипе шкула хăпартса хурать. Çак пĕчĕк ял çыннисемшĕн тепĕр пысăк çитĕнӳ вăл – пĕтĕм урам – тăкăрлăка Треньел кирпĕч завочĕн вăйĕпе тата ДПМК техникипе (тĕп

инженер И.Н. Иванов ертсе пыраканĕ) асфальт сарса тухни. Паянхи кун районта пĕр ял та çакăн пек çулсемпе мухтанма пултараймасть пуль.

1992 çулхи кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕнче «Батыревский» совхозăн Треньел бригадинчи тата «Агропромстрой» пĕрлешĕвĕн Треньелĕнчи кирпĕч завочĕн рабочисемпе служащисем пуху ирттерсе «Новокотяковское» коллективлă пай предприятийĕ йĕркелесси çинчен йышăну кăлараççĕ. Ăна район администраци пуçлăхĕ 1992 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче регистрациленĕ.

2000 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнче «КДП Новокотяковское» коллективлă пай предприяти хăйĕн статусне улăштарса ялхуçалăх производство кооперативĕ (СХПК) «Новокотяковский» пулса тăрать.

Тепĕр пилĕк çултан кооператив панкрута тухнипе Чăваш Республикинчи Арбитраж сучĕ 2005 çулхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче определени кăларать, çапла вара ЯХПК «Новокотяковский» кун-çулĕ саккун тăрăх вĕçленет.

Çапах та предприяти-кооператив пĕтсен те унăн ертӳçи пулнă Н.А. Кошкин çав лаптăк вырăнне ял çыннисене хуçалăхра кирлĕ строительство материалĕсем кăларма предприяти тăвать. Тен, çĕнĕ ООО «Возрождение» ятлă предприяти çывăх çулсенче халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе продукци кăларса анлăн ĕçлесе кайĕ.

Н.А. Кошкин кĕске автобиографийĕпе унăн хăш-пĕр ырă ĕçĕсем:

Николай Александрович Кошкин 1961 çулхи раштав уйăхĕн 19-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Треньелĕнче çуралнă. Ыхра Çырминчи шкулта 8 класс вĕренсе пĕтерсен, Чулхулари юхан шыв училищине вĕренме кĕрет. Унтан вĕренсе тухса «рулевой моторист» специальнăçне алла илет.

Совет çарĕнче салтак тивĕçне пурнăçласа киле таврăнсан, Н.А. Кошкин Патăрьелĕнчи пушар хуралĕн уйрăмĕн ертӳçи пулса тăрăшать.

1986 çулта ăна Треньелĕнчи кирпĕч завочĕн директорĕ пулма шанаççĕ. Кĕске вăхăтрах предприяти ура çине тăрса малтисен ретне тухать.



1992 çул пуçламăшĕнче Треньел ялĕнчи уй-хир бригади «Батыревский» совхозран уйрăлса кирпĕч завочĕпе пĕрлешет, коллективлă уйрăм предприяти пулса тăрать. Кăрлач уйăхĕнче вара Н.А. Кошкина çак предприятине ертсе пыма шанаççĕ. Хуçалăх ĕçĕсене йĕркелесе янипе пĕрлех çĕнĕ председатель социаллă ыйтусене татса парас енĕпе калама çук пысăк ĕç тăвать. Ялти мĕн пур урама асфальт çулĕ сарас, çӳлти урама водопровод кĕртес ĕçе йĕркелет. Ял сăн-сăпачĕ палламалла мар çĕнелсе улшăнать, пĕтĕмĕшле тĕп пĕлӳ паракан шкул çурчĕ хута каять, каярахпа садик, фельдшер пункчĕ тата ытти уйрăм çурт çĕкленет. Треньел–Патăрьел автобус маршручĕ уçăлать, культура çуртне те çĕнетеççĕ. Ялта массăллă телефон кĕртме май тупăнать.

Н.А. Кошкин выränти халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн тата нумай ырă ĕçсем тунă. Ăна ялйыш хушшинче сумлă та чыслă çын пулнине шута илсе кашни суйлаврах район тата ял канашĕсен депутачĕ пулма шанаççĕ.

Вĕрентӳ ĕçне аталантарас енĕпе пысăк пулăшу кӳнĕшĕн Николай Александровича «Раççей Федерацийĕн вĕрентӳ ĕçĕн отличникĕ» тата «Хура тăпраллă мар зонăн хисеплĕ строителĕ» ятсене панă.

Хуçалăхăн паянхи ĕçĕ-хĕлĕ, унăн малашлăхĕ куç умĕнче: уй-хир тата фермă ĕçченĕсем мĕнле çитĕнӳсем туни çинчен вулакан патне çитертĕмĕр пуль. Мухтава тивĕçлĕ ял тăрăхĕн çыннисем çинчен кĕскен те пулин асăнса хăвармаллах пуль, тетĕп.

ТĂРĂН ЯЛ ТĂРĂХĔНЧЕ ÇУРАЛНĂ, ПУРĂННĂ, ПУРĂНАКАН, ТĔРЛĔ ĔÇРЕ ПАЛĂРНĂ ПИРĔН ЕНТЕШСЕМ

1. **Васильев Алексей Васильевич**, çĕр ĕç халăх комиссарĕ, 1897 çулта Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Çак ялтах пуçламăш шкулта, Аслă Арапуçĕнчи 2 класлă училищĕре, Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Çавăн хыççăн ăна тĕнче вăрçине илсе кайнă. 1918 çулта вăрçăран таврăнсан Васильев А.В. Именкассинче, унтан Елчĕк районĕнчи Шăмалакри шкулсенче ачасене вĕрентет. Граждан вăрçи пуçлансан Колчака хирĕç çапăçма хутшăнать.

Алексей Васильевич 1920–1924 çулсенче Пăва тата Патăрьел уесĕсенче халăха вĕрентес тĕлĕшпе вăй хунă. Унтан ăна партипе совет органĕсене куçарнă.

Районсем йĕркелесен ВКП(б) Чăваш обкомне ялти ĕççен пайне ертсе пыма шаннă. 1929 çулта А.В. Васильева республикăра тухса тăракан «Канаш» хаçат редакторĕ пулма лартаççĕ.

Пирĕн ентеше унăн пултарулăхне, тăрăшса ĕçленине шута илсе, 1932 çулта çĕр ĕç халăх комиссарĕ пулма çирĕплетнĕ. Çак яваплă ĕçре вăл пилĕк çул хушши вăй хунă. Кĕске вăхăт хушшинчех ял ĕçченĕсем тухăçлă тыр-пул пухса илсе малти вырăнсене йышăннăшăн Чăваш республикине 1933 çулта Пĕтĕм Союзри Хĕрлĕ хăма çине кĕртнĕ. 1935 çулта Чăваш АССРĕ Ленин орденне тивĕçнĕ. Тата икĕ çултан республикă Раççей Федерацийĕнче чи тухăçлă тыр-пул пухса илнĕ. Пысăк çитĕнӳсем туни паллах А.В. Васильев тăрăшмасăр пулман, çапах та вăл Сталин репрессийĕнчен хăтăлайман. Ăна контрреволюцилле организаци членĕ пулса ял хуçалăхне сăтăрлă ĕççем тунă тесе, РСФСР Аслă сучĕ перспе вĕлерме приговор кăларнă. 1940 çулта çав приговора СССР Аслă сучĕ улăштарса Алексей Васильевича тĕрмене хупмалла тунă. Киле вăл 17 çултан анчах таврăнать. Унăн таса ятне 1956 çулта тавăрнă.

Ирĕке тухсан А.В. Васильев Чăваш АССР çĕр ĕç министерствинче пай пуçлăхĕ, республикăн сад ĕрчетес енĕпе ĕçлекен тĕп агрономĕ пулнă.

Хăй вăхăтĕнче ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, нумай медальсемпе наградăланă. Алексей Васильевич Васильев 1983 çулта вилнĕ.

2. **Цветкова Матрена Дмитриевна**, 1924 çулта Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Çак районти «Победа» колхозра уй-хир бригадинчи звеньевой пулса ĕçленĕ. 1947-мĕш çулхи вырмара пысăк тухăçлă тĕш-тырă (пĕр гектартан 39 ц) пухса кĕртсе республикипе мала тухнăшăн ăна 1948 çулта Социализмла Ĕç Геройĕ ятне панă, Ленин орденĕ парса чысланă.

Цветкова М.Д. Кĕçĕн Патăрьелне кайра килсе çемье çавăрсан, ăна кок-сагыз культурине ӳстерекен, пахчаçимĕç çитĕнтерекен бригадăн бригадирĕ пулма шаннă. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн вăл 1973 çулта «Хисеп Палли» орден тата медальсем илме тивĕçнĕ. 1969 тата 1973 çулсенче ăна район Канашне депутат пулма суйланă. Паянхи кун вăл тивĕçлĕ канура, ывăлĕн çемйипе пурăнать.

3. «Октябрь революци» орденĕпе:

Хураськин Яков Константинович, Патăрьел районĕн «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнчи слесарь – 1971 çулта наградăланă (Кĕçĕн Патăрьелĕнче пурăннă).

4. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе:

1) Носова Анна Архиповна, «Путь Ленина» колхозăн Тăрăн ферминче доярка, 1971 çул (Тăрăн).

2) Медведев Федор Владимирович, «Герой» колхоз председателĕ – 1971, 1973 ç. (Тăрăн).

3) Воробьева Валентина Федоровна, «Путь Ленина» колхозăн Кĕçĕн Патăрьелĕнчи сысна ферминче свинарка (Кĕçĕн Патăрьел).

3) Ситов Александр Александрович, «Путь Ленина» колхоз председателĕн çумĕ – 1973 ç. (Кĕçĕн Патăрьел).

4) Капустин Алексей Егорович, «Батыревский» совхоз тракторисчё – 1986 ç. (Кёçён Патăрьел).



Капустин Алексей Егорович 1935 çулта Патăрьел районёнчи Çёнё Ахпӳрт ялёнче çуралнă. Шкулта 7 клас вёренсе тухсан Мичурин ячёпе тăракан колхоз уй-хир бригадинче ёçленё. 1954–1957 çулсенче Совет çарёнче хёсметре тăнă.

1963 çулта Канашри профтехучилищёрен вёренсе тухнă механизатор «Путь Ленина» колхозра тракторист пулса ёçлеме тытăнать. Каярах А.Е. Капустин «Батыревский» совхозра, «Була» ял хуçалăх кооперативёнче вăй хурать.

Алексей Егорович асăннă хуçалăхсенче 30 çул ытла тракторпа çуракинче сухаласа, тыр-пул акса, çёр улми лартса тата ытти уй-хирти ёçсене тăрăшса пурнăçланă. Ырми-канми ёçлесе вăл хуçалăхра кăна мар, районта та механизаторсен хушшинчи ăмăртусенче çулран çул малти вырăнсене çёнсе илнё.

Çёр улми туса илессипе пысăк çитёнӳсем тунăшăн (278 ц/га) ăна 1986 çулта Ёçлёх Хёрлё Ялав орденёпе, «Ёçри хастарлăхшăн» тата ытти медальсемпе наградăланă. Ёç ветеранё 1997 çулта тивёçлё канăва тухнă.

5. III-мёш степеньлё Ёç Мухтавён орденёпе:

1) Шуряшкин Иван Иванович, Челябинскметаллострой, мастер – 1976 (Тăрăн).

2) Крылова Анна Дмитриевна, Батыревское СМУ, каменщица – 1975 ç. (Тăрăн).

3) Карпова Лидия Матвеевна, «Батыревский» совхозри доярка – 1978 çулта (Тăрăн).

4) Сорокина Зинаида Николаевна, Мускаври СМУ-161, строитель – 1980 ç. (Тăрăн).

6. Халăхсен Туслăхĕ орденĕпе:

Кальметов Николай Николаевич, «Батыревскагрохимия» производство пĕрлешĕвĕн тракторисчĕ – 1986 ç. (Кĕçĕн Патăрьел).

7. «Паттăрлăхшăн» орденпа:

Думилин Петр Павлович, Чернобыль атом станцине сиенсĕрлетес ĕçре паттăрлăх кăтартнăшăн – 2002 çулта (Тăрăн).

«Хисеп Палли» орденпа:

Думилина Александра Михайловна, «Путь Ленина» колхозри колхозница – 1973 ç. (Тăрăн).

Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура çĕр ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илес енĕпе ялхуçалăхĕнче тата ытти ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата пысăк хастарлăх кăтартнăшăн СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ тĕрлĕ çулсенче кăларнă Указ тăрăх СССР медалĕсемпе наградăланă. Вĕсен хушшинче пирĕн ял тăрăхĕнчен те пулнă.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе:

1. Лидия Григорьевна Логунова – «Батыревский» совхозри Треньел ферминче сурăх пăхакан, 1975 ç.

2. Василий Матвеевич Самакин – «Батыревский» совхозри Тăрăн ферминче скотник, 1975 ç.

3. Алексей Егорович Капустин – тракторист, 1973 ç.

4. Крылов Вениамин Михайлович – Батыревское РО «Сельхозтехника» шоферĕ (Тăрăн), 1973 ç.

5. Рубцов Леонид Алексеевич – Батыревское РО «Сельхозхимия» тракторисчĕ (Кĕçĕн Патăрьел), 1981 ç.

6. Петр Петрович Хураськин – «Батыревскремтехпредприяти» юсавпа техника предприятин тимĕрçи (Кĕçĕн Патăрьел), 1986 ç.

7. Лидия Ивановна Кошкина – «Батыревский» совхозри Тăрăн ферминче ĕне сăвакан, 1986 ç.

«Ĕçре палăрнăшăн» медальпе:

1. Алексей Александрович Михайлов – Патăрьел районĕнчи МТСра трактор бригадин бригадирĕ (Кĕçĕн Патăрьел), 1955 ç.

2. Нина Васильевна Каллина – «Путь Ленина» колхозри Кĕçĕн Патăрьелĕнчи сысна ферминче сысна пăхакан, 22.03.1966 ç.

3. Феодосия Федоровна Ашмарина – «Путь Ленина» колхозри Тăрăн ферминче пăру пăхакан,1973 ç.

4. Анисим Петрович Воробьев – Патăрьелĕнчи эксплуатацип техникăлла çыхăну узелĕнчи участок ертӳçин çумĕ, 1974 ç. (Кĕçĕн Патăрьел).

5. Федор Владимирович Медведев – «Герой» колхоз председателĕ, 1966 çул (Тăрăн).

6. Рубцова Нина Ильинична – «Путь Ленина» колхозри сысна пăхакан», 1974 ç. (Кĕçĕн Патăрьел).

7. Михеева Вера Степановна – Патăрьелĕнчи тĕп больницăри медицина сестри, 1981 ç. «Отличник здравоохранения СССР» (Тăрăн).

Ял хуçалăх производствинче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн СССР халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен Выставкин Тĕп комитечĕ пирĕн районти Тăрăн ял тăрăхĕн ĕçченĕсене медальсемпе наградăланă.

1956 çулхи раштав уйăхĕн 30-мĕшĕнче Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкин Тĕп Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх Кĕçĕн Патăрьел ялĕнче пурăнакан:

Михайлов Алексей Александровича – Патăрьелĕнчи МТСра трактор бригадин бригадирне пысăк кĕмĕл медальпе;

Хураськин Яков Константиновича – çав МТСри комбайнера пĕчĕк кĕмĕл медальпе;

Ситов Александр Александровича – Мичурин ячёпе тăракан колхоз председательне, 1956 çулта кёмёл, 1958 çулта бронза медальсемпе наградăланă.

Илехметов Алексей Ивановича – уй-хир бригадин бригадирне 1958 çулта пёчёк кёмёл медальпе;

1972 çулта Носова Анна Архиповнăна – «Путь Ленина» колхозри ёне сăвакана ылтăн медальпе;

Медведев Федор Владимировича – «Герой» колхоз председательне, пёр кёмёл, икё бронза медальпе;

Карпова Лидия Матвеевнăна – «Батыревский» совхозри ёне сăвакана, бронза медальпе.

1974 çулхи ёç итогёсем тăрăх бронза медальпе:

1. Попов Пимен Григорьевича – «Батыревский» совхозри Треньел ферма заведующийё. Çаваn пекех сурăх пăхакансене:

2. Логунова Лидия Григорьевнăна,

3. Соловьева Елена Егоровнăна,

4. Лепешкина Александра Матвеевнăна.

Çӳлерех кăтартнă фермă ёçченёсем 1975 çулта «Республикăри сурăх пăхакансенчен чи лайăххи» ята тивёçнё.

5. Ситов Николай Александровича – «Батыревский» совхоз управляющине, 1985 çулта бронза медальпе.

6. Капустин Алексей Егоровича – тракториста 1984 ç. бронза медальпе.

Çӳлерех асăннă виçё ял уйрăмшар колхозсем пулса юнашар 20 çул хушши йывăрлăхсене çёнтерсе малалла аталанса пынă. Вăл тапхăрта ял çыннин темле нуша та курма тивнё пуль, ăна халь астăвакансем сахалланcах пыраççё. Паллах, нумай çул тӳрё кăмăлпа колхозсовхозра, коллективлă предприятире, çаваn пекех ытти вырăнта ёçлесе канăва тухнисем сахал мар пулнă. Пурне те çак кёнекене кёртме май килмерё пуль. Çапах та хам пёлнё таран тата архиври материалсене йёрлесе пынă май кăшт та пулин вёсене асăнса хăварасшăн.

1971 çулхи район хаçатĕнче «Илюткина Евдокия Николаевнапа Воробьева Мария Александровна Кĕçĕн Патăрьел ферминче вăтăр çула яхăн: пĕри вун çичĕ, тепри 16 лаша пăхса çав вăхăт хушшинче çĕршер лаша колхоза ӳстерсе панă» тесе çырнăччĕ. Вĕсем 80-мĕш çулсенче те ĕçленĕ пулсан («Красное Батырево» колхозран тытăнса «Батыревский» совхоз таранах) кашнийĕшĕн ĕç стажĕ 40-шер çул ытла та пуль. Хĕрарăмшăн сахал мар вĕт-ха çак çул тăршшĕ. Мухтава тивĕçлĕ мар-и ялсенчи çаван пек уй-хир тата ферма ĕçченĕсем? Вĕсем тивĕçлĕ канăва тухсан колхоз пенсине те питĕ сахал илнĕ, паян та мухтанмалли çук. Иртнĕ ĕмĕрĕн 40–70 çулĕсенче Тăрăнта Лагерева Клавдия Сергеевна, Аканова Анна Ивановна колхозницăсем, Макаев Петр Семенович шофер, Крылова Нина Михайловнапа Емельянова Елизавета Алексеевна ĕне сăвакансем, Мидакова Мария Тимофеевна пахча-çимĕç тата хăмла бригадисен бригадирĕ, Кĕçĕн Патăрьелĕнче – Цветков Емельян Димитриевич бригадир, Яковлев Александр Федорович шофер тата ыттисем пирки ырăпа асăнатчĕç ял-йышсем – паллах пурне те каласа-çырса пĕтерме çук. Кашни çыннăн пурнăçĕ вăл-хăй пĕр кĕнеке.



Светлана Александровна Енилина 1973 çулта Патăрьел районĕнчи Треньелĕнче çуралса ӳснĕ.

1990–1997 çулсенче вăл «АНКО» пĕчĕк предприятинче вăй хурса тĕп бухгалтера çитет. Çав вăхăтрах вăл аслă пĕлӳ илме те тăрăшать.

1996 çулта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухсан химипе биологи учителĕн профессине, тепĕр çул, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухса, экономист специальнăçне алла илет.

1997–2003 çулсенче С.А. Енилина «Аудит-Консалтинг» хупă акционерлă обществин оценщикĕ, тĕп бухгалтер, финанс енĕпе директор пулса тăрăшать.

2001 çулта С.А. Енилина хăйĕн пĕлĕвне Халăхсен хушшинчи академинче ӳстерет.

07.2003–08.2010 çулсенче – Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ.

2007 çулхине ял хуçалăхне патшалăх енчен йĕркелесе пырас ĕçпе стажировкăра Канадăра, тепĕр икĕ çултан Раççей Федерацин Президенчĕ çумĕнчи патшалăх службин академинче хăйĕн пĕлĕвне малалла ӳстернĕ. Светлана Александровна – экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн М.В. Игнатьевăн 19.09.2010 çулхи Указĕпе С.А. Енилинана республикăн пурлăхпа çĕр ĕç хутшăнăвĕсен министрĕ пулма çирĕплетнĕ.

Ĕçри çитĕнӳсемшĕн пирĕн ентеше 2006 çулта

Раççеей Федерацийĕнчи ял хуçалăх Министерствин Хисеп грамотине парса чысланă.

2007-мĕш çулта вăл Пĕтĕм Раççейри 2006 çулхи ял хуçалăх переписĕнче тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн медаль илме тивĕçнĕ. 2010 çултанпа «Раççейри агропромышленнăç хисеплĕ ĕçченĕ».

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ 2012 çулхи раштав уйăхĕн 19-мĕшĕнче Енилина Светлана Александровнана **«Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ экономисчĕ»** хисеплĕ ят панă.

Федор Владимирович Медведев 1936 çулта Тăрăнта çуралнă. Вăтам шкул вĕренсе пĕтерсен Мичурин ячĕпе тăракан колхозра вăй хурать, Совет çарĕнче хĕсметре тăрать. 1958 çулта Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренме кĕрсе, тепĕр пилĕк çултан ученăй-агроном специальнăçне алла илнĕ.

Федор Владимирович «Герой» колхозра тĕп агроном, 1970–1985 çулсенче колхоз председателĕ пулса тăрăшать. 1985 çултан тытăнса 1992 çул таран вăл «Батыревский» совхозри 2-мĕш уйрăмра малтан агроном, каярах çав совхозрах тĕп агроном шутланса тăрать.

90-мĕш çулсенче колхозсемпе совхозсенчен ял хуçалăх, кооперативсемпе акционерлă пĕрлешӳсем çине куçсан, 1992 çулта Ф.В. Медведева «Була» коллективлă ял хуçалăх предприятине ертсе пыма шанаççĕ. Çак хуçалăх тилхепине пилĕк çул хушши тытса пырать. çакăн хыççăн та вăл 2000 çулсенче асăннă кооперативра тĕп агроном пулса уй-хир специалисчĕсене хăйĕн паха опытне парса хăварма тăрăшать.

Нумай çул хушши тӳрĕ кăмăлпа ял хуçалăха аталантарассишĕн вăй хунăшăн В.Ф. Медведева икĕ хутчен «Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав» орденĕпе, «Ĕçре палăрнăшăн», «В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул», «Ĕçри хастарлăхшăн», СССР ВДНХ медалĕсемпе наградăланă. Çавăн пекех ăна Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕ Хисеп грамоти парса чысланă. 1970 çулта Федор Владимировича **«Чăваш АССР тава тивĕçлĕ агрономĕ»** хисеплĕ ят панă.



Петр Васильевич Самакин 1947 çулта Тăрăнта çуралса ӳснĕ. Патăрьелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухсан Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренме кĕнĕ, 1969 çулта ученăй-агроном специальнăçне алла илет.

1969–1971 çулсенче вăл «Герой» колхозра агроном, тĕп агроном пулса тăрăшать. 1971–1974 çулсенче ВЛКСМ районти комитечĕн иккĕмĕш секретарĕ, ун хыççăн 1978 çул таран парти райкомĕнче вăй хурать.


1978 çулта Петр Васильевича Патăрьел райĕçтăвкомĕн ял хуçалăх управленин тĕп агрономĕ пулма шанаççĕ. Районти хуçалăхсен агрономи службине вăл 17 çул ертсе пынă.

1995–2001 çулсенче П.В. Самакин Патăрьел районĕн çĕр йĕркелӳ комитечĕн председателĕ, ун хыççăн «Исток» Агрофирма пĕрлешĕвĕнче тĕп агроном пулса тăрăшать.

Чăваш АССР Аслă Канашăн Президиумĕн Указĕсемпе 1982 çулта ăна Хисеп грамотипе наградăланă, 1987 çулта «**Чăваш АССР тава тивĕçлĕ агрономĕ**» хисеплĕ ята панă.

Петр Павлович Думилин 1949 çулта Тăрăнта çуралса ӳснĕ. Совет çарĕнчен тавăнсан 1972 çулта ăна «Путь Ленина» колхозри уй-хир бригадин бригадирне суйлаççĕ. Çак яваплă ĕçре 1998 çулччен тӳрĕ кăмăлпа вăй хурать. Петр Павловичăн ĕçри тăрăшулăхĕ çинчен, унăн ĕçри ӳсĕмĕсем çинчен вулакан маларах паллашрĕ пуль тетĕп.

1986 çулта кĕркунне вăл Чернобыльти атом



станцийёнче авари пулнă вырăна сиенсёрлетес ёçе хутшăннă, çак радиацип варланнă вырăна тасатас тесе, сывлăхшăн хăрушлăх тухса тăрассине пăхмасăр, тӳрё кăмăлпа пурнăçланăшăн ăна «Паттăрлăхшăн» орденпа наградăланă.

П.П. Думилин çавăн пекех 1997 çулта **«Чăваш Республикин ял хуçалăхён тава тивёçлё ёçченё»** хисеплё ята илме тивёçнё.



Владимир Евдокимович Паймуков 1949 çулта Тăрăн ялёнче çуралса ӳснё. Патăрьелёнчи вăтам шкултан вёренсе тухсан, вăл Чăваш патшалăх университечён пётёмёшле техника факультетне вёренме кёрет. Ёçленё вăхăтрах вăл 1980 çулта Чулхулари инженер-строительство институтёнчен вёренсе тухать.

Совет çарёнчен таврăнсан, В.Е. Паймуков нумай вăхăт хушши Шупашкарти «Чăваш ял хуçалăх проект» институтёнче, строительство организацийёсенче инженер, директор пулса тăрăшать.

2002 çултан тытăнса Шупашкарти УАО «Монолитстрой» организацинче техника енёпе (технический) директор ёçёнче вăй хурать. Вăл тӳреммён республикăри

строительство ёçёсене хутшăннипе тĕп хуламăрта пысăк пĕлтерĕшлĕ административлă нумай этажлă çуртсемпе ытти обьектсем хута кайнă.

Строительствăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн 2001 çулта В.Е. Паймукова **«Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ»** хисеплĕ ят панă.


Иван Кириллович Соловьев 1958 çулта Кĕçĕн Патăрьелĕнче учительсен çемйинче çуралса ӳснĕ. Патăрьелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухсан 1975 çулта Чăваш ял хуçалăх институчĕн механизаци факультетне вĕренме кĕрсе тепĕр пилĕк çултан ял хуçалăх производствин инженер-механик специальнăçне алла илет. Çавăн хыççăн пĕр çул Патăрьел районĕнчи «Гвардеец» колхозра инженер-энергетик пулса, ун хыççăн пилĕк çул хушши райпон хатĕрлев кантурĕнче вăй хурать.

1986–1990 çулсенче Иван Кириллович «Чăвашэнерго» пĕрлешĕвĕн ЮЭС предприятийĕнче мастер, ун хыççăн пĕр çул хушши – районти çыхăну уйрăмĕн ертӳçи.

1993 çултан тытăнса 2003 çулччен вăл «ВолгаТелеком» УАО Чăваш Республикин филиалĕн Патăрьелĕнчи ЭТУС ертӳçи пулса ĕçленĕ. И.К. Соловьев ертсе пынипе çак çулсенче кăнтăр енчи тăватă районти линипе техника цехĕсене пĕрлештерсе тăракан организаци пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем туса ирттернĕ. 2000-мĕш çул тĕлне Патăрьел, Шăмăршă, Елчĕк, Комсомольски районĕсенче çыхăну енĕпе халăха тивĕçтерекен çĕнĕлĕхсем кĕреççĕ: факсимиле аппарачĕсем вырнаçтарса, электронлă почтăпа усă курасси, «Интернет» çыхăнăвĕпе усă курас текенсене ĕçлеме май туса парасси пурнăçа кĕрсе пырать.

ЭТУСăн пурлăхпа производство, техника базине çĕнетес, малалла аталантарас енĕпе те ертӳçĕ нумай вăй хунă. 12 çул хушшинче организацин производство бази самаях тĕрекленнĕ: çĕнĕ икĕ хутлă çурт хăпартса лартнă, асăннă пур районта та производствăн çуртйĕрĕсемпе гаражĕсене тĕпрен юсанă.

И.К. Соловьева ёçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн 2003 çулта «**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ çыхăну ёçченĕ**» хисеплĕ ят панă.



Владимир Иванович Краснов Тăрăнта 1951 çулта çуралса ӳснĕ.

1969–1973 çç. Калининград облаçĕнчи Советски кинотехникумра вĕренет. Чăваш Ене таврăнсан çамрăк специалист Муркашпа Канаш районĕсенчи киносетьсен техника ертӳçи пулса тăрăшать.

1975 çулхи ака уйăхĕнчен тытăнса 2001 çул вĕçленичченех Краснов В.И. пĕр улшăнми Патăрьел районĕнчи киносеть директорĕ.

Владимир Иванович 1983 çулта «СССР кинематографи отличникĕ», 1995 çулта «Раççейри хисеплĕ кинематографист» ята тивĕçнĕ. Çаван пекех ăна тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисемпе хисеплĕ ятсем парса чыслана.

1986 çулта В.И. Краснов «**Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ёçченĕ**» ята илме тивеçнĕ.

Анатолий Иванович Яковлев 1964 çулта Кĕçĕн Патăрьелĕнче çуралса ӳснĕ. Тăрăнти 8 çул вĕренмелли шкула пĕтерсен, шофер, унтан механизатор профессийĕсене алла илнĕ. 1972–74 çулсенче Совет çарĕнче хĕсметре тăнă. Малтанхи çулсенче шофер пулса 40 çула яхăн «Батыревский» совхозра, «Була» тата «Исток» Агрофирмăра механизаторта вăй хурать.

Ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ёçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ёçленĕшĕн Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2013 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче кăларнă

Указпа килĕшӳллĕн Патăрьел районĕнчи «Исток» агрофирма» тулли мар яваплă обществин трактористне А.И. Яковлева «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă. Çавăн пекех Анатолий Ивановичăн хамăр республика тата район шайĕнче панă Хисеп грамотисем те пур.



Владимир Николаевич Фролов дзюдо кĕрешĕвĕпе Раççей Федерацин спорт мастерĕ, 1955 ç.ç. (Кĕçĕн Патăрьел), Омск хулинче пурăнать. В.Н. Фролов **Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ.**

Анатолий Николаевич Думилин 1951 çулта Тăрăнта çуралса ӳснĕ. 1973 çулта Чăваш ял хуçалăх институтĕнче вĕренсе инженер-механик специальнăçне илсен, Калинин облаçĕнчи пĕр колхоза хăй вĕреннĕ специальнăçпа ĕçлеме яраççĕ.



1974–1975 çулсенче Совет çарĕнче салтак службине вĕçлесен Патăрьел районĕн «Сельхозтехника» пĕрлешĕвне ĕçе вырнаçать.

1977 çулхи нарăс уйăхĕнчен тытăнса 34 çул хушши

Анатолий Николаевич Патăрьел районĕнчи Гостехнадзор инспекцийĕн ертӳçи пулса ĕçленĕ.

Нумай çул хушши хăйне шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пынăшăн А.Н. Думилина 2001 çулта Раççей ял хуçалăх Министерстви Хисеп грамотипе наградăланă, 2008 çулта «Гостехнадзорăн Хисеплĕ инженер-инспекторĕ» ят парса чысланă. Çавăн пекех унăн Чăваш Республикипе район шайĕнчи Хисеп грамотисемпе Тав хучĕсем упранаççĕ.

Анатолий Дмитриевич Самакин 1949 çулта Тăрăнта çуралса ӳснĕ. 1966 çулта Патăрьелĕнчи вăтам шкултан, 1973 çулта Канашри финанс техникумĕнчен вĕренсе тухнă.

1968–70 çулсенче Совет çарĕнче хĕсметре танк механик-водителĕ пулса салтак службине ирттернĕ.

1984 çулта вăл, Мускаври Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх институтне куçăмсăр майпа вĕренсе пĕтерсе, ял хуçалăх производствинчи экономист-йĕркелӳçĕ специальнăçне алла илет.


Анатолий Дмитриевичăн ĕç стажĕ «Путь Ленина» колхозран тытăннă. 1970–1974 çулсенче райĕçтăвкомра – инспектор, РĔК-ăн финанс уйрăмĕнче аслă экономист. Ун хыççăн ял хуçалăх управленийĕнче планпа экономика пайĕн ертӳçи пулса вăй хурать. 1980 çултан тытăнса районти план комиссийĕн председателĕнче, 1982 çултан КПСС райкомĕн ял хуçалăх пайĕн заведующийĕнче, 1986–1990 çулсенче Патăрьел райпо правленийĕн председателĕ пулса ĕçленĕ.

1990 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнчи тата 1991 çулхи раштав уйăхĕн 8-мĕшĕнчи суйлавсенче ăна Патăрьелĕнчи райĕçтăвком председательне суйланă.

Ĕçри çитĕнӳсемшĕн А.Д. Самакина тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисемпе наградăланă.

Николай Иванович Лазарев 1949 çулта Тăрăнта çуралнă. 1966 çулта Патăрьелĕнчи вăтам шкултан

вёренсе тухнă çамрăк Челябинск хулине çул тытать. Унта вăл Челябинскметаллургстрой трестёнче вăй хурать.



1968–1970 çулсенче Совет çарёнче хёсметре тăнă. Тăван яла таврăнсан пирён ентеш Росгосстрахăн Патăрьел уйрăмёнче инспектор, аслă экономист пулса тăрăшать. 1979 çулта ăна инспекци пуçлăхён çумё пулма çирёплетеççё.

1971–1973 çулсенче Лазарев хăйён пёлёвне Канашри финанс техникумёнче ӳстерет.

Николай Ивановичăн тивёçлё канăва тухичченех пёр ёç вырăнё, унăн юлашки должнăçё – ООО «Росгосстрах–Поволжье» Чăваш Республикинчи тёп Управленийён Филиалён начальникён çумё, корпоративлă йёркепе сутакан тёп менеджер.

Н.И. Лазарева ёçри çитёнӳсемшён СССР Министрсен Канашё, РСФСР финанс Министерстви, Раççей тата Чăваш Республин ведомствисем Хисеп грамоти, Диплом, Тав çырăвё парса чысланă.

А.Н. Думилинпа Н.И. Лазарев ёç ветеранёсене ялйыш 2006 тата 2011 çулсенчи суйлавсенче Тăрăн ял Канашён депутачёсем пулма суйланă.

Маргарита Александровна Замчинская 1957 çулта Треньелёнче çуралнă. Чăваш патшалăх университетёнчен вёренсе тухсан 1978 çултан тытăнса Комсомольски районёнчи «Гигант» колхозра бухгалтер, тёп бухгалтер пулса ёçленё. Шупашкара куçсан вăл – куçса çӳресе кёпер тăвакан колоннăра «Оскар» производствăпа коммерци центрён тёп бухгалтерё.

1994 çулта вăл «Аудит–Консалтинг» ХАО коммерци енĕпе аудитор фирмине йĕркеленĕ, унăн Генеральнăй директорĕ, çавăн пекех Шупашкар территорийĕнчи профессионал бухгалтерсене хатĕрлекен институт Президенчĕ шутланса тăрать.

М.А. Замчинская Пĕтĕм Раççейре бухгалтерсен хушшинче ирттернĕ конкурсра çĕнтернĕ. Ăна «2003 çулăн Раççейри чи лайăх бухгалтер» хисеплĕ ят панă.

Лидия Максимовна Никитина (Медведева) 1949 çулта Тăрăнта çуралнă. 1969 çулта Канашри медицина училищинчен вĕренсе тухнă. Нумай çул хушши Шăмăршă районĕнчи санэпидстанцинче врач-эпидемиолог пулăшуçи пулса ĕçлет. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Л.М. Никитинăна 1994 çулта РФ Госнадзорслужба Тав хучĕ парса чыслана, 1995 çулта вăл «РФ санэпидслужба отличникĕ» ятне илнĕ.



Иван Ильич Думилин 1948 çулта Тăрăнта çуралса ӳснĕ. Совет çарĕнче салтак тивĕçне пурнăçласа киле таврăнсан, шофер специальнăçне алла илнĕ çамрăк Патăрьелĕнчи ветеринари лечебницинче, унтан районти больницăра ĕçлеме пуçлать.

1972 çултанпа 11 çул хушши Чăвашколхозстрой пĕрлешĕвĕн Патăрьелĕнчи СМУ–МПМК–МСОра водитель, 1983 çултан тытăнса 2007 çулччен инженер-снабженец пулса вăй хурать. Ĕçленĕ вăхăтрах вăл куçăмсăр майпа Çĕрпӳри техникумра вĕренсе техник-механик специальнăçне алла илет.

Ялти строительство ёçёнче нумай çул тăрăшса ёçленёшён «Нечерноземагрпромстрой» корпорацин правленийё Иван Ильича 1998 çулта Хисеп грамотипе, 2002 çулхи постановленипе килёшӳллён «Нечерноземагропромстрой Хисеплё строителё» ят парса чысланă. Çавăн пекех унăн ёçри çитёнӳсемшён хамăр республика, район шайёнче панă Хисеп грамотисем те упранаççё.

И.И. Думилин 2007 çултанпа ООО «Теплоэнергосервис» пёрлешӳре маçтăр пулса тăрăшать.



Аркадий Николаевич Кошкин (1930–2010 ç.ç.). 1944–1945 çулсенче Тăван çёршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, полк ывăлё пулса разведкăна çӳренё. Вăрçă хыççăн 1947–52 çулсенче вăл Инçет Хёвел тухăçёнче флотра аслă матрос, чукун çул техникумне вёренсе пётерсен вара Еврей автономи облаçёнче Сковородино станцийёнче тепловоз-па электровоз машинисчё пулса ёçленё.



Тăрăн ял тăрăхĕнчи малтанхи летчиксем: пĕр тăвансем: Коннов Петр Петрович (1925–2000 çç.), Коннов Федор Петрович (1927–1999 çç.) иккĕшĕ те Тăрăн ялĕнче çуралса ӳснĕ.

Сăнӳкĕрчĕк çинче Ф.П. Коннов.

Тăрăнта çуралса ӳснĕ паровоз–электровоз–тепловоз машинисчĕсенчен тепри – **Илехметов Николай Федорович** (1926–2005 ç.ç.) Ленинградра (Питĕр) хулинче ĕçлесе пурăннă.

Пирĕн ентешсем – ăслăлăхсен докторĕ тата кандидачĕсем

Надежда Никоновна Юрченко (Думилина)

1955 çулта Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче çуралнă. 1981 çулта Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухсан, пурнăç çулĕ ăна Магнитогорск хулине илсе çитерет. Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан университетра истори предмечĕпе пĕлĕвне 1989–93 çулсенче аспирантурăра ӳстерет.

1996 çулта Н.Н. Юрченко Магнитогорск патшалăх университетĕнчи истори факультечĕн авалхи тĕнче истори кафедринче студентсене вĕрентме тытăнать.


1997 çулта Надежда Никоновна çак профессипе ăслăлăх кандидачĕн диссертацине ăнăçлăн хӳтĕленĕ. 2003 çулта вăл педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ ята тивĕçет.



2006 çултанпа пирĕн ентешĕмĕр Магнитогорск патшалăх университетĕнчи истори факультетĕнче деканăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса тăрăшать. Профессор.

Н.Н. Юрченко ывăлĕ Антон та амăшĕн çулĕпех кайнă: 2004 çулта вăл çак факультетранах хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă. 2006 çулта философи ăслăлăхĕсен кандидатне, 2012 çулта вара доктор диссертацине хӳтĕленĕ. Вăл çак университетри экономикăпа управлени факультетĕнчи менеджмент кафедринче тăрăшать.

Иванов Николай Николаевич 1955 çулта Треньелĕнче çуралса ӳснĕ. 1971 çулта Ыхра Çырминчи вăтам шкултан вĕренсе тухсан, вăл Хусанти механикăпа математика факультетне вĕренме кĕрет. 1976 çулта çак аслă вĕренӳ заведенийĕнчен вĕренсе тухнă çамрăк специалиста Омскри авиаци заводĕнчи конструктор бюровне ĕçлеме яраççĕ (хальхи вăхăтра Патшалăхăн унитарлă предприятин Кон-



структор бюровĕ – «Полет ФГУП ПО «Полет»). Юлашки çулсенче вăл Тĕп конструкторăн проект ыйтăвĕсемпе ĕçлекен çумĕ шутланса тăрать.

Н.Н. Иванов 1996 çулта техника ăслăлăхĕсен кандидачĕн диссертацине хŭтĕленĕ. Вăл шутласа кăларнă 18 ĕçшĕн панă свидетельствăпа патент авторĕ тата унăн 11 ăслăлăх статйи пичетленнĕ.

Ракетăпа космос техникине аталантарас ĕçре пысăк çитĕнŭ тунăшăн Николай Николаевича СССР Космонавтикин Федерацийĕ М.В. Келдыш ячĕллĕ медаль парса чыслана. Çавăн пекех ăна «Раççей космонавтикин ветеранĕ» хисеплĕ ята панă.

Элеонора Федоровна Архипова – медицина ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Тăрăн ялĕнче çуралнă, Омск хулинче пурăнать.

Геннадий Макарович Гаврилов 1937 ç.ç. (Тăрăн), биологи аслăлăхĕсен кандидачĕ, Питĕр хулинче пурăнать.

Надежда Никоновна Юрченко 1958 ç.ç. (Тăрăн), истори;

Светлана Александровна Енилина 1973 ç.ç. (Треньел), экономика;



Дмитрий Григорьевич Илехметов (1935–1991), Тăрăн, философи;

Елизавета Леонтьевна Паймина 1923 çулхи çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Треньелĕнче çуралса ӳснĕ. Унтах тăватă класлă шкула çӳренĕ, ун хыççăн Тăрăнти шкулта çичĕ класс пĕтернĕ. Учительница пулас ĕмĕтпе вăл Патăрьелĕнчи педучилищĕне вĕренме кĕрет, унтан лайăх паллăсемпе вĕçлесе çывăхри ялсенче ачасене вĕрентме тытăнать.

1944–45 çулсенче Треньелĕнчи пуçламăш шкулта заведующи пулса тимлет. Ун хыççăн Елизавета Леонтьевнăна Анат Туçари шкула куçарнă.

Хăйĕн пĕлĕвне малалла ӳстерес шутпа Шупашкара куçса кайса пединститута вĕренме кĕрет, 1948 çулта ăна хĕрлĕ дипломпа пĕтерет. Тĕп хулари 6-мĕш номерлĕ шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Çав вăхăтрах Паймина Е.Л. аспирантурăра вĕреннĕ, филологи кандидачĕ ята илнĕ, пединститутра чăваш чĕлхи уйрăмĕнче студентсене вĕрентме тытăннă.

Ăслăлăх енĕпе вăй хунă май пирĕн ентеш калавсемпе повеçсем çырать. 1962 çулта «Тăван Атăл» журналта унăн ял çыннисем çинчен çырнă «Пирĕн ял хĕрĕ» ятлă повеçĕ çапăнса тухнă. Пултаруллă педагог-ученăй хăй пурăннă вăхăтра чăваш писателĕсем çинчен «Пилĕк портрет» ятлă кĕнеке кăларнă. Паллах, Елизавета Леонтьевнан тăван литература аниче вăй хурса ĕçлес ĕмĕчĕсем пысăк пулнă, анчах йывăр чире пула вăл 1963 çулта вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

ШКУЛ ПУРНĂÇĔ. ПИРЕ ВĔРЕНТЕКЕНСЕМ

1917–18 вĕренӳ çулĕнчен тытăнса çут ĕç министерствин 1 класлă училищисен, земство училищисемпе чиркӳ-прихут тата грамота шкулĕсен ĕлĕкхи ячĕсене пĕтерсе 3 çул вĕренмелли 1-мĕш сыпăклă пуçламăш шкул, унччĕнхи икĕ класлă училищĕсене 5 çул вĕренмелли 2-мĕш сыпăклă шкул туса хураççĕ. Çакăн пек улшăнусем Пăва уесĕнчи Патăрьел, Турхан тата Шăнкăртам вулăсĕсенчи ялсенче те пулса иртеççĕ. Тăрăнта тата Треньелĕнче вара 1-мĕш сыпăклă шкул йĕркеленет, Йăлăмра пурăнакансен ачисем Тăрăна вĕренме çӳреççĕ.

1920 çулта Чăваш Автономи облаçне туса хурсан, Пăва уесне кĕрекен Патăрьел вулăсĕ малтан Çĕрпӳ уесне кĕнĕ, каярах Патăрьел уесне йĕркеленĕ. Тепĕр икĕ çултан Тăрăнта 4 çул вĕренмелли 1-мĕш сыпăклă шкул пулса тăрать, Треньелĕнчи шкул çулне çитнĕ ачасем çав ялти 1-мĕш сыпăклă шкула вĕренме каяççĕ. Вĕсене 1922–1928 вĕренӳ çулĕсенче Мария Павловна Павлова вĕрентнĕ. Нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн ăна 1951 çулта Ленин орденĕпе наградăланă.

Тăрăнти 1-мĕш сыпăклă шкултан 4 класс вĕренсе тухнă Тăрăн тата Кĕçĕн Патăрьел ялĕсенчи ачасем çинчен шкул заведующийĕ П.П. Петров 1928 çулхи çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнче Аслă Патăрьел райĕçтăвкомне отчет тăратнă. Вулакана эпĕ çав документ содержанийĕпе паллаштарасшăн. Вĕренекенсен списокĕнче çак икĕ ялта çуралса ӳснĕ ун чухнехи шкул ачисем çинчен вĕсен паянхи кун пурăнакан ачисемпе мăнукĕсем, тăванĕсемпе ял çыннисем вуласа пĕлме пултараççĕ.

Отчет
по проведению выпуска учеников по Туруновской школе.

Осенью 1927 г. в IV группу Туруновской школы поступили 12 учеников, из них 2 выбыли по болезни. К выпуску подлежали 10 учеников.

Список
учеников, оканчивающих курс учения школы IV класс
на 5.06.1928 г.

1. Илехметов Семен Федорович, 26.04.1918 г.р.
2. Илехметов Василий Федорович, 14.01.1915 г.р.
3. Кононов Тит Павлович, 12.02.1915 г.р.
4. Медведев Максим Григорьевич, 4.11.1914 г.р.
5. Смирнов Федор Андреевич, 1.02.1917 г.р.
6. Медведев Александр Иванович, 3.11.1913 г.р.
7. Медакова Мария Александровна, 21.03.1915 г.р.
8. Рубцов Ванифатий Антонович, 11.12.1913 г.р.
9. Ситов Александр Александрович, 11.08.1916 г.р.
10. Цветков Алексей Александрович, 04.03.1914 г.р.

Уполномоченный РИКа Ф.Иванов. Зав.школой Петров. Представитель сельисполкома И.Ашмарин.

(*ЧР ПТА, ф.№2320, оп.1, 82 ĕç*)

1930 çулхи чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнче ЧАССР Тĕп ĕçтăвкомĕ 5-мĕш сессийĕнче вĕренменнине пĕтерсе талккăшпех пуçламăш вĕренӳ çине куçасси çинчен пĕлтернĕ.

Кĕçĕн Патăрьелĕнчи ачасене пуçламăш классенче вĕренме ялта шкул çуккипе, хĕллехи сивĕ çанталăкра Тăрăн шкулне çӳреме тивнине шута илсе, Тăрăн ял ĕçтăвкомĕн Пленумĕ çавăн пек йышăну кăларать.

Протокол
Туруновского СИК (сельского исполкома – Д.К.)
от 24 августа 1930 года.

...2. Об открытии школы в дер. Мало-Батырево.

Постановили: В связи с ведением всеобщего обязательного обучения детям дер. Мало-Батыревой весьма трудно в зимнее время посещать в Туруновскую школу, а потому Пленум счи-

тает необходимым открыть в дер. Мало-Батырево школу I и II групп.

Председатель: Степанов

Секретарь: Петров

Вăтăрмĕш çулсенче пуян çынсене кулак тесе хăйсене çемйипех çурчĕсенчен кăларса колхоз правленийĕ, ял Канашĕ е колхоз правлени çурчĕсем тунă. Йăлăмра вара Воробьев Павел çемйине кăларса, вĕсен çуртĕнчен шкул туса, ялти ачасем икĕ группа çавăнта çӳренĕ.

1934 çулта ВКП(б)ăн XVII съездĕнче 7 çул вĕренмелли шкулсем уçас пирки йышăну кăларнă. Тăрăнта иккĕмĕш сыпăклă шкул чиркĕвĕн сылтăм енче Воробьев Петр Осипович хуçалăхĕ çывăхĕнче вырнаçнă пулнă. 1929–30 çулсенче Мидаковсен çурчĕсене кулак тесе туртса илсен, пĕр çуртне кайран 7 çул вĕренмелли шкул тунă çĕре куçарнă. Тепĕр çуртĕнчен çак шкула хирĕç çул урлă клуб туса хунă. Темиçе çурта пĕрлештерсе пĕренесенчен хăпартнă пĕр хутлă шкул Еншик ялне каякан çулăн çурçĕр енче (паянхи кун ларакан икĕ хутлă шкултан кăнтăрта), клуб çулăн кăнтăр енче пулнине пирĕнпе пĕр çулараххисемпе аслăраххисем астăваççĕха. Çак шкулта малтанхи директор Никифор Павлович Павлов пулнă.

Паянхи кун 60 çул урлă каçнă Тăрăнти асатте-асаннесем манман пуль, 1959–1960 вĕренӳ çулне çак ялти пĕр хутлă кивĕ шкулта вĕçленĕ. Çак П буква евĕрлĕ вĕренӳ çуртĕнче 1–7 классемсĕр пуçне ĕçлев урокĕнче ачасене арçын ĕçне вĕрентмелли мастерской та пурччĕ. Пуртă-мăлатук тыткалама, хăма тавраш савалама пире, арçын ачасене кăна мар, хĕрачасене те (вĕсене мĕншĕн йĕп тытма вĕрентмен-ши?) Кирилл Тихонович Соловьев хăнăхтаратчĕ. 1960 çулхи кĕркуннене çак кивĕ шкултан çурçĕр енне икĕ хутлă çĕнĕ шкул хăпартса лартса, платниксем шалти ĕçсене вĕçлерĕç. Çĕнĕ вĕренӳ çулне манпа пĕр вăхăтри ачасем çĕнĕ шкулти çап-çутă классене пуçтарăнса партăсем хушшине лартăмăр. Ача-

сен те, пире вĕрентекенсен те савăнăçне каласа пĕтерме çук. Çакăн пирки акă мĕн çырса пĕлтерет пире вĕрентнĕ Леонид Матвеевич Лялькин «Авангард» хаçатăн харсăр обществăлла корреспонденчĕ «Çĕнĕ шкулта» очеркра.

«Каçхи çумăр хыççăн Тăрăнти икĕ хутлă шкул çурчĕ тата капăрланса кайрĕ. Чӳрече кĕленчисем çинче хĕвел шевли вылять. Çĕнĕ шкул ир-ирех хаваслă шăв-шавпа тулса ларчĕ. Сахал-им çуллахи вăхăтра ĕçленĕ, каннă кунсене аса илмелли!? Экскурсисенче пулнă, походсене çӳренĕ, ĕçленĕ – пурин те çакăн çинчен юлташĕсене пĕлтерес килет. Владимир Шуряшкин, Иван Думилин, Петр Михеев, Иван Сергеев, Лидия Лазарева, Зоя Самакина – акă вĕсем ĕнерхи çамрăк уй-хир ĕçченĕсем.

Сакăр сехет çурăра вăрăм коридорта ачасем чаплă линейкăна тăраççĕ. Рапортсем пани илтĕнет. Вĕренӳ отличникĕ Нина Каллина линейка умне дружина ялавне йăтса тухать. Горн, барабан сасси янăраса каять.

Паян шкула хаклă хăна килнĕ. Ачасем районти ватă учитель-пенсионера Иван Тарасович Тарасова алă çупса ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Аслă пионервожатăй кĕске сăмах каланă хыççăн шкул директорĕ Иван Григорьевич Илехметов сăмах илет.

– Паян пирĕншĕн асра юлмалли кун. Кăçалхи вĕренӳ çулне эпир çĕнĕ шкулта пуçлатпăр, – тет вăл. – Çавăнпа пĕрлех хамăр шкул паян 120 çул тултарнине асăнса хăвармалла. 1872 çулта пирĕн шкулта Ленинăн ашшĕ И.Н. Ульянов пулни пурне те савăнтарать.

Çак паллă куна чылай ачасем лайăх çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç. Шкул директорĕ вĕренӳ отличникĕсене: Анатолий Соловьева, Нина Каллинăна, Нина Марковăна, Юрий Алексеева Мухтав грамотисем панине пурте алă çупса саламлаççĕ. Унсăр пуçне 65 ача вĕренӳри çитĕнӳсемшĕн парнесем илеççĕ.

«Хаваслăн, савăнăçлăн иртрĕ
Вăрмансенче, хирте çулла

Сисмерĕмĕр – сентябрь çитрĕ

Пире вăл йыхăрать шкула», –

янăраса каять 4-мĕш класра вĕренен Зоя Кузьмина сасси. Ачасем пĕрин хыççăн тепри сăвăсем тухса калаççĕ.

9 сехет çитсе пырать. Ачасен стройĕ умĕнчен 1-мĕш класа килекенсем утса иртеççĕ. Кашнийĕнех аллисенче – чечексем. Часах йыхравлă пĕрремĕш шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ.

Пĕрремĕш шăнкăравпа, пĕрремĕш хут çĕнĕ шкула!»

04.09.1960 çул.



Тăрăнти икĕ хутлă шкул çурчĕ

1960 çулхи вĕренӳ çулне Тăрăнти икĕ хутлă шкул çурчĕпе юнашар ялти строительсем Д.В. Самакин ертсе пынипе мастерской, пионерсен пӳлĕмĕ тата столовăйпа кухня валли икĕ çĕнĕ çурт хута янă. Сăмах май, Дмитрий Васильевич колхозри строительство бригадин бригадирĕ пулса 20 çула яхăн ĕçленĕ, çав вăхăтрах ăна районти депутат пулма та суйланă.

1961–62 вĕренӳ çулĕсенче Тăрăнти 7 çул вĕренмелли шкула 8 çул вĕренмелли шкулсен йышне куçараççĕ.



Тăрăнти 8 çул вĕренмелли шкулти вĕрентекенсен ушкăнĕ. 1963 çул. Сулахайран сылтăмалла:

1-мĕш ретре: Мазякова пионервожатăй, Алексеев Михаил Дмитриевич, Илехметов Иван Григорьевич директор, Уруков Владимир Ильич, Алексеев Александр Иванович.

2-мĕш ретре: Федоськина Елена Ивановна, Алексеева Евгения Павловна, Соловьева Мария Егоровна, Матросова Евдокия Алексеевна завуч, Ресметова (Кадеева) Елена Исааковна, Соловьева Елена Моисеевна.

3-мĕш ретре: Казенова Мария Емельяновна, Казанцева Вера Васильевна, Махмутова Клавдия Степановна, Лялькин Леонид Матвеевич, Яковлева Лидия Михайловна, Семенова Нина Николаевна, Шадирякова Галина Кузьминична.



1973 çул. Сулахайран сылтăмалла:

1-мĕш ретре: Казенова Мария Емельяновна, Илехметова Мария Павловна, Илехметов Иван Григорьевич директор, Алексеев Александр Иванович директор çумĕ, Алексеева Любовь Михайловна пионервожатăй, Шуряшкина Анна Емельяновна библиотекарь.

2-мĕш ретре: Перепелкина Александра Илларионовна, Соловьева Мария Егоровна, Казанцева Вера Васильевна, Воробьева Вера Сергеевна, Журавлева Мария Ивановна, Алексеева Евгения Павловна, Тихонова Антонина Петровна.

3-мĕш ретре: Алексеев Михаил Дмитриевич, Гаврилов Макар Филиппович, Тихонов Николай Павлович, Лялькин Леонид Матвеевич, Клычкова Роза Галимзяновна, Сорокина Луиза Григорьевна, Медведева Александра Петровна.

70-мĕш теçеткере пынă май эпĕ халь пире вĕрентекенсен сăнӳкерчĕкĕсене пăхса иртнĕ ĕмĕрĕн 50–60-мĕш çулĕсене аса илетĕп те вĕсене пурне те чĕререн тав сăмахĕ калас килет пире йĕркеллĕ çын тăвас тесе чун-чĕрине панăшăн. Шел пулин те, вĕсенчен чылайăшĕ çут тĕнчерен уйрăлса кайрĕç. Çак кĕнеке авторĕ пулнипе усă курса, эпĕ уйрăммăн вĕрентӳ енĕпе палăрнă нумай çул хушши пире ăс панă вĕрентекенсем çинче чарăнса тăрасшăн.



Кашни çыншăн пĕрремĕш вĕрентекен пурнăçра асра юлакан çын шутланса тăрать тесен йăнăшмастăп пуль. Манпа пĕр çулаллисене 1–4-мĕш классенче **Вера Васильевна Казанцева** вĕрентрĕ. Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинченех 1938 çулта пирĕн аттесене вĕрентме тытăннăскер, 40 çул хушши Тăрăн шкулĕнче пуçламăш классенчи ачасенчен ăслă-тăнлă çынсем пулччăр тесе сахал мар вăй хунă. Вера Васильевна пире, сăмса шăлайман шăпăрлансене, ручка-кăранташ тытма кăна мар, çын хушшинче йĕркеллĕ пулма, аслисене хисеплеме вĕрентнĕ. Вăл пире 4-мĕш класс таран вĕрентсе



Тăрăнти 4 класс вĕренсе пĕтернĕ шул ачисем В.В. Казанцевапа пĕрле.

çитернĕ, ачасенчен 5-шĕ, Тăрăнти 8 çул вĕренмелли шкултан «5» паллăпа çеç вĕренсе тухнăскерсем, Хисеп грамоти илнĕччĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ Патăрьелĕнчи вăтам шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухрĕç. Çур класс ытла лайăххисен шутĕнче пулнă. Паллах, çавăн пек çитĕнӳ вĕрентекен тăрăшмасăр, вăй хумасăр, педагог таланчĕсĕр пулман ĕнтĕ.

Нумай çул иртрĕ пулин те, эпир хамăр юратнă вĕрентекенсене манасшăн мар-ха, вĕсемпе тĕлпулусем ирттеретпĕр, çак ырă йăлана вĕсем пурăннă чухне малалла та тăсасшăн.



Илехметова Мария Павловна 1927 çулта Патăрьел районĕнчи Тури Туçа ялĕнче çуралса ӳснĕ.

1944 çулта вăтам шкултан вĕренсе тухсан, вăл Шупашкара учительсем хатĕрлекен института çул тытать. Институтра историпе филологи факультечĕн чăваш чĕлхи уйрăмĕнче икĕ çул пĕлӳ илнĕ çамрăк учительницăна Патăрьел районĕнчи Алманчă ялне çичĕ çул вĕренмелли шкула яраççĕ. Мария Павловна кунта 1946–49 çулсенче ачасене вĕрентет.

1949 çулта Тăрăнти шкула куçсан, вăл çак ялтах хăйĕн телейне тупать: Иван Григорьевич Илехметовпа вĕсем çемье çавăраççĕ, виçĕ ача ӳстереççĕ. Çапла вара вĕсем кашни кун шкула кăна мар, ĕмĕр каçалăкне те пĕр çулпах пĕрле утса тухаççĕ. Ĕмĕр тăрăшшĕ çеç кашнийĕн хăйĕн уйрăм. Тăрăнпа Йăлăм ялĕсенчен кăна миçе ача вĕсен алли витĕр тухман-ши 34–36 çул хушшинче, кам шутланă тата ăна?



Тăрăн шкулĕнчи 8 клас вĕренсе тухнă ачасен ушкăнĕ класс ертӳçипе М.П. Илехметовапа пĕрле. Эпĕ ун хыçĕнче тăратăп. 1965 çулхи çу уйăхĕ.

Мария Павловна, нумай çул хушши шкулта ачасене вĕрентес ĕçре уçă уроксенче çĕнĕ меслетсемпе усă курнă, вĕренекен тавра курăмлăхне аталантарас тесе сахал мар тăрăшнă. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна нумай çул хушши шкулта çитĕнекен ăрăва воспитани парас енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн 1976 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Пирĕн хисеплĕ вĕрентекенĕмĕр çавăн пекех «СССР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» ята илме тивĕçнĕ, ăна 1982 çулта «Ĕç ветеранĕ» медаль парса чысланă.

Çулсем, уйрăмах çур ĕмĕр урлă каçсан, ытла та хăвăрт шуса иртеççĕ пулин те, çамрăк чухнехи çулсем ирхи тĕтре сирĕлсе уяр та хĕвеллĕ çанталăк пек яр уççăн аса килеççĕ, чун-чĕрене вара тунсăх пусать.

1960 çулхи вĕренӳ çулĕ пуçлансан пире 8 арçын ачана 5-мĕш «б» класа тăватă çул пĕрле вĕреннĕ тустантăшсенчен уйăрса Йăлăм ял ачисемпе вĕренме куçарчĕç. Пĕр шкултах вĕренмелле пулин те, унччен хутшăнман ачасемпе малтанхи вăхăтра ютшăннă та

пуль. Пире Мария Павловна, клас ертӳçи пулнӑ май, ачасен психологине питĕ лайӑх пĕлнĕрен, икĕ ял ачисене часах çывӑх юлташсем туса хучĕ. Лайӑх çемьери ачасен ырӑ амӑшĕ пек кирлĕ чухне вӑл йӑпатса та илетчĕ, тепĕр чухне, килте тумалли ĕçсене урока хатĕрленмесĕр килсен, çирĕп ыйтни те пулнӑ. Уроксем пĕтсен вĕренӳре ĕлкĕреймен ачасемпе ларма тивнĕ пирĕн вĕрентекенĕн. Унӑн урокĕнче шухӑ ачасем те шӑп кӑна итлесе ларатчĕç. Чӑваш чĕлхине тӑван литературӑна юратса вĕреннĕрен те пуль, мана Мария Павловна урока хатĕрленсе килменшĕн е шкулти йĕркене пӑснӑшӑн асӑрхаттарнине астумастӑп. Тӑрӑнти шкултан вĕренсе тухни çур ĕмĕр çывхарса пырать пулин те, эпир, пĕрле вĕреннĕ тантӑшсем хамӑр юратнӑ вĕрентекене, класс ертӳçине манмастпӑр. Унпа тĕл пулса калаçни, хамӑр çамрӑк хунав вӑхӑтне аса илни те теме тӑрать. Тӑрӑнти 8 çул вĕренмелли шкула пĕрле вĕренсе тухнӑ тантӑшсемпе кашни пилĕк çулта пĕрре пуçтарӑнса тĕлпулу ирттеретпĕр. Паллах, вĕсенчен чылайӑшне курманни 45–47 çул та пур: çитес тĕлпулӑва тĕрлĕ сӑлтава пула хӑш-пĕри килеймĕ те. Шел пулин те, пурнӑç кустӑрми каялла кусса пынӑ май пирĕн хушӑри асатте-асанне пулнӑ тантӑшсен йышĕ чакнӑçем чаксах пырать...

1970 çулсен пуçламӑшĕнче районти шкулсенче ачасен шучĕ ӳссе пынипе хӑш-пĕр ялсенче 8 çул вĕремелли шкулсене вӑтам шкула куçарнӑ, Чӑваш Ишекĕнче, Треньелĕнче тата хӑш-пĕр ялсенче 8 çул вĕренмелли шкулсем уçнӑ.

Треньелĕнче уçнӑ шкулсене (1905 тата 1935 çулсем) илес пулсассӑн, эпĕ çак шкулта вĕрентнĕ А.А. Мясниковпа директор пулса ĕçленĕ А.Т. Краснов аса илĕвĕсем çинче чарӑнса илесшĕн. Вĕсен пĕтĕмлетĕвĕпе килĕшес пулсассӑн, çак ялта малтанхи шкул 1905 çулта уçӑлнӑ. Вӑл М. Мясников çуртĕнче вырнаçнӑ. Пĕрремĕш вĕрентекен Алманчӑ çынни Ф. Волков пулнӑ. Шкул валли уйрӑм çурт 1935 çулта анчах туса лартнӑ.



Йăлăмра 4 класс вĕренсе тухнă ачасем Лидия Михайловна Яковлева вĕрентекенпе пĕрле. 1963 çулхи çу уйăхĕ.

1922–28 çулсенче шкулта учительница, заведующи пулса М.П. Павлова ĕçленĕ. Шкулсенче нумай çул хушши тухăçлă ĕçленĕшĕн ăна 1951 çулта Ленин орденĕпе наградăланă.

1982 çулта Треньелĕнче кирпĕчрен купаласа 4 класс вĕренмелли çĕнĕ шкула хута янă.

1990 çулта ял историнче паллă тапхăр пулса иртет: Треньел халăхĕ кар тăрса, ватти-вĕтти нимелле пуçтарăнса, кирпĕчрен икĕ хутлă шкул çурчĕ купаласа хураççĕ. Райĕçтăвком çав çулхи çу уйăхĕн 30-мĕшĕнче Треньелĕнче тулли мар вăтам шкул уçăлни çинчен йышăну кăларать пулин те, шкул ачасене йышăнма хатĕр пулайман-ха. Вĕренӳ çулне шкула хута яма ĕлкĕреймеппипе ачасен Ыхра Çырминчи вăтам шкула çӳреме тивет. Тулли мар вăтам шкул, ача сачĕ ĕçе пикенет. Çак çĕнĕ шкул директорĕ пулма Александр Тихонович Краснова шанаççĕ. Çак яваплă ĕçре вăл 2001 çулта тивĕçлĕ канăва кайиччен вăй хунă.




Треньелĕнчи кивĕ шкул çурчĕ.



Треньелĕнчи кирпĕч завочĕн директорĕ Н.А. Кошкин А.Т. Красновпа пулас шкулăн вырăнне палăртаççĕ. 1989 çулхи çу уйăхĕ.



Треньелĕнчи икĕ хутлă шкул хăпарсах пырать. Н.А. Кошкин строительсене малалли ĕç планĕпе паллаштарать. 1990 çулхи кăрлач уйăхĕ.



Треньелĕнчи çĕнĕ шкул çурчĕ

XX ёмёр вёçёнче шкулта вёренекенсен шучё районёпе 1970–1971 вёренӳ çулёсенче уйрăмах йышлă пулнă: 1971–2006 çулсенчи хăш-пёр цифрăсемпе Тăрăн шкулё тăрăх вулакана каярах паллаштарăпăр.

Патăрьел районёнчи Тăрăн ял тăрăхёнчи шкулсен директорёсемпе вёсен çумёсем (завучсен) списокё (1926-мёш çултан тытăнса).

Тăрăн шкулё тăрăх:

1-мёш сыпăклă шкул заведующисем:

1. Сявась-Леонтьев Василий Леонтьевич (1926–1927 çулсем).
2. Петров Петр Петрович (1927–1932 ç.ç.)
3. Акимов Филипп Васильевич (1932–1933 ç.ç.)
4. Борисова Александра Павловна (1933–03.02.1934 ç.ç.)

Тулли мар вăтам шкул директорёсемпе вёсен çумёсем, завучсем:

1. Павлов Никифор Павлович (03.02.1934–12.12.1934)
2. Петров Петр Петрович (12.12.1934–21.09.1935)
3. Дмитриев Петр Тимофеевич (15.08.1935– 28.11.1939)

Завуч: Захаров Аркадий Михайлович (31.08.1938–31.08.1939)

4. Захаров Аркадий Михайлович (28.11.1939– 30.06.1942)

Завуч: Горшкова Варвара Павловна (31.09.1939–01.09.1942)

6. Дерякова Екатерина Захаровна (30.06.–11.09.1942) директор ёçне туса пыраканё.

Завуч: Дерякова Екатерина Захаровна (11.09.1942–26.05.1943)

7. Думилин Алексей Петрович (11.09. – 31.10.1942)
8. Раськин Афанасий Иванович (31.10. – 18.12.1942)
9. Николаев Илья Николаевич (20.12.1942– 26.05.1943)
10. Дерякова Екатерина Захаровна (26.05.1943–10.08.1946)
11. Сапожников Кирилл Иванович (10.08.1946– 23.08.1947)

Завуч: Дерякова Екатерина Захаровна (10.08.1946–15.08.1949)

12. Еслюков Трофим Осипович (25.08.1947– 25.08.1949)
13. Илехметов Иван Григорьевич (01.09.1949– 19.08.1985)

Завучсем: 1). Каримова Мария Ивановна (15.08.1949–07.03.1951)

2) Алексеев Александр Иванович (21.03.1951–12.02.1959)

3)Алексеев Михаил Дмитриевич (12.02.1959–15.08.1960)

Директор çумĕсем:

1) Матросова Евдокия Алексеевна (15.08.1960– 03.09.1966)

2) Алексеев Александр Иванович (03.09.1966– 31.08.1984)

3) Гаврилова Людмила Александровна (23.08.1984–31.08.1988)

14. Шихранов Валерий Кириллович (19.08.1985–11.08.1988)

15. Карягин Владимир Арсентьевич (31.08.1988–18.01.1989)

Директор çумĕ: Клементьева Людмила Александровна (31.08.1988–31.08.1989)

16. Алексеева Светлана Геннадьевна (18.01.1989–30.01.1998)

Директор çумĕ: Медведева Александра Петровна (01.09.1989–06.09.1999)

17. Клементьева Людмила Александровна (02.03.1998–19.07.2001)

Директор çумĕ: Рубцова Марина Владимировна (07.09.1999–07.09.2006)

18. Прохоров Владимир Леонтьевич (07.09.2001–17.08.2006)

19. Рубцова Марина Владимировна (07.09.2006 – паянхи кунччен)

Тăрăнти 1-мĕш сыпăклă, тулли мар вăтам, çичĕ çулпа сакăр çул вĕренмелли шкулта 1900-мĕш çулсенчен тытăнса ĕçленĕ учительсем.

1. Полетаев Александр Михайлович (1909–1931 çулсем)

2. Петров Петр Петрович (1910–1915), (1919–1927, 1935–37 ç.ç.)

3. Симулин Дмитрий Федорович, Матвеев Федор Алексеевич, Дерякова Екатерина Захаровна, Петров Николай Петрович, Сявась-Леонтьев Василий Леонтьевич, Наперсткин Владимир Николаевич, Борисов Егор Борисович, Саперов, Рогожин А.В., Сапожникова Анастасия Александровна, Бахтина А.М., Молодцыгина Н.М. (1920–1930 çулсем).

4. Захаров Аркадий Михайлович (1934–1939)

5. Акимов Филипп Васильевич (1934–1941)

6. Уськин Аркадий Сергеевич (1935–1941)

7. Дмитриева Мария Николаевна (1935–1937)

8. Мартынов П.Я., Михайлова Антонина, Константинова А.К., Наумов И.Я., Воробьева Л.С., Миловидова Н.И., Стеклов Н.И., Никитина М.П., Красавцева В.Е.,Скворцова Мария Петровна, Лялькина Елена Леонтьевна, Бородова Елизавета Антоновна, Захаров Николай Петрович, Маркова Александра Петровна, Селенин Александр Анисимович (1930–1940 çулсем).

9. Николаев Илья Николаевич (1935–1940 ç.ç.)

10. Казанцева Вера Васильевна (1938 – 31.12.1978 ç.ç.)

11. Майрина Зоря Ефремовна (15.08.1939– 22.05.1940)

12. Губанова Любовь Георгиевна (1939–15.08.1942)

13. Румянцева Анастасия Митрофановна (01.09.1964–16.08.1976)

14 Бабайкин И.Н. (12.15.1940 – 1942)

15.Уськин Александр Семенович (10.12.1940 – 1942)

16. Алексеев Михаил Дмитриевич (1940–15.03.1942, 25.08.1947–01.09.1979)

17. Коромыслов Иван Андреевич (1935–31.01.1942)

18. Думилин Алексей Петрович (1938–02.02.1942)

19. Раськин Афанасий Иванович (20.03.1942 – 8.12.1942)

20. Деомидова Мария Васильевна (01.09.1942 – 01.09.1956)

21. Васюткина Лидия Сергеевна (19.10.1942 – 05.08.1946)

22. Соловьева (Лялькина) Елена Моисеевна (1946 – 01.11.1967)

23. Алексеева Лидия Владимировна (1945 – 1948)

24. Алексеева Евгения Павловна (20.03.1946 – 15.08.1973)

25. Алексеев Александр Иванович (21.08.1948–21.03.1951, 01.02.1960–03.09.1966, 01.09.1984–15.08.1987 çулсем)

26. Селенина Феня Илларионовна (15.08.1949 – 31.08.1952–22.08.1958–)

27. Елистратов Родион Федотович (25.08.1949 – 31.08.1950)

28. Илюткина Мария Ильинична (11.10.1943 – 01.08.1951)

29. ШуряшкинаЕкатерина Леонтьевна (15.08.1946 – 01.08.1951)

30. Илехметова Мария Павловна (15.08.1949 – 01.09.1983)

31. Махмутова Клавдия Степановна (1950 – 1963–)

32. Федоськина Елена Ивановна(25.08.1953 – 15.08.1967)

33. Яковлева (Титова) Лидия Михайловна (15.08.1954 – 22.01.1962)

34. Горшкова Варвара Павловна (15.08.1956 – 01.08.1957)

35. Семенова Нина Николаевна (1947–31.08.1949, 1950 – 01.09.1968)

36. Владимиров Виталий Владимирович (1955 – 01.09.1956)

37. Маков Валерий Сидорович (15.08.1960 – 16.08.1965)

38. Стеклова Зинаида Андреевна (1958 – 01.09.1960, 20.08.1965)

39. Хлебников Анатолий Иванович (1957– 04.08.1967)

40. Шадирякова Галина Кузьминична (1958 – 1963)

41. Соловьев Кирилл Тихонович (15.08.1961 – 01.09.1970)

42. Уруков Владимир Ильич (01.08.1962 – 1966)

43. Задорова (Чекушкина) Виталина Семеновна (01.08.1962 – 01.01.1965)

44. Казенова Мария Емельяновна (01.08.1962 – 01.09.1984)

45. Илюткина Екатерина Степановна (01.09.1964–15.08.1988...)

46. Гаврилов Макар Филиппович (15.08.1963 – 16.08.1976)

47. Табакова Валентина Зиноновна (15.08.1963 – 01.08.1965)

48. Воробьева Вера Сергеевна (1962–15.08.1964, 15.08.1966–16.08.1976)

49. Лялькин Леонид Матвеевич (15.08.1964 – 12.01.1981)

50. Исаева Людмила Васильевна (01.04.1965 – 1973)

51. Матросова Евдокия Алексеевна (03.09.1966 – 27.08.1970)

52. Теребилова Валентина Ивановна (01.09.1967 – 25.08.1970)

52. Федотова Мария Ивановна (15.08.1970 – 1973...)

53. Шекеев Семен Яковлевич (05.09.1966–01.09.1973), (25.08.1975–15.08.1980)

54. Тихонова Антонина Петровна (01.09.1968 – 01.09.1984)

55. Сорокина Луиза Григорьевна (15.08.1969 – 01.09.2006)

56. Журавлева Мария Ивановна (1971–1973, 15.08.1979–01.09.1980)

57. Медведева Александра Петровна (15.08.1970 – 30.08.1989)

58. Тихонов Николай Павлович (24.08.1970 – 19.04.1976)

59. Медведева Людмила Николаевна (15.08.1973 – 15.08.1975)

60. Васильев Николай Дмитриевич (01.09.1974 – 01.09.1976)

61. Шакурова (Клычкова) Роза Галимзяновна (15.08.1971 – 1973)

62. Аканов Юрий Дмитриевич (01.09.1976 – 1998)

63. Илюткина Мария Анисимовна (15.08.1976 – паянхи кунччен)

64. Сорокина Надежда Александровна (15.08.1976 – паянхи кунччен)

65. Падисова Людмила Николаевна (15.08.1976 – паянхи кунччен)

66. Клементьева Людмила Александровна (15.08.1980 – 31.08.1988)

67. Соловьева Мария Егоровна (15.08.1952 – 1979)

68. Махмутова Клавдия Степановна (1958 – 1963...–)

69. Шадирякова Галина Кузьминична (1958 – 1968)

70. Падисов Владимир Петрович (25.08.1981 – 1989)

71. Маков Валерий Сидорович (1960 – 1963)

72. Алексеева Светлана Геннадьевна (15.08.1982–18.01.1989, 30.01.1998–2006)

73. Медведев Юрий Федорович (15.08.1988–1999)

Асăрхаттарни: çӳлерех кăтартнă учительсен списокне асăннă шкулта 1 çултан каярах тата 90-мĕш çулсенчен тытăнса ĕçленĕ учительсем кĕмен.

Орден-медаль, тава тивĕçлĕ ятсене илнĕ учительсем

Иван Григорьевич Илехметов
(1924–2001)

1924 çулта Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1938 çулта çак ялтах 7 класс вĕренсе пĕтерсен, вăл Патăрьелĕнчи педучилищĕне вĕренме кĕрет. 1941 çулта çамрăка, учитель специальнăçне илнĕскере, Аслă Чемен ялĕнчи вăтам шкула пуçламăш

кларси ачасене вĕрентме янă. Унта пĕр çул ĕçленĕ хыççăн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçма тухса каять. Вăрçăран орден-медальсемпе киле таврăнсан, 1947 çулта Иван Григорьевич Чăваш педагогика институтне куçăмсăр уйрăмне вĕренме кĕрет. Çав вăхăтра Ыхра Çырминчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта ачасене вĕрентет.



1949 çултан тытăнса 1985 çул таран И.Г. Илехметов, 36 çул хушши пĕр улшăнмасăр, Тăрăнти тулли мар вăтам шкулта директор пулса ĕçленĕ. Вăл ертсе пынипе 1960 çулта пĕренесенчен икĕ хутлă 8 çул вĕренмелли шкул туса пĕтерсе хута ячĕç. Эпир вара, шкул ачисем, вĕренӳ çулне çак çĕнĕ шкулта пуçларăмăр.

Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вĕрентӳ енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн Иван Григорьевича СССР вĕрентӳ отличникĕ тата «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ» ятсене панă. Ăна районти Хисеп хăмипе республикăри Хисеп кĕнекине кĕртнĕ. Ял-йыш нушине ăнланаканскере нумай çул хушши район тата ял Канашĕсен депутатне суйланă. Пирĕн асра яланах упранĕ хамăр вĕрентекенĕмĕрĕн сăнарĕ, вăл пире айвансене пурнăç çулĕ çине йăнăшсемсĕр тухма вĕрентнĕ. Ăс панă сăмахсем, унăн ырă та пархатарлă ĕçĕсем манăçмĕç. Таймапуç пиртен ăна тата ытти вĕрентекенсене!

1978–79 вĕренӳ çулне Тăрăнти 8 çул вĕренмелли шкулти 1–8 классенче 323 ача вĕçленĕ, вĕсенчен 163-

шĕ хĕр ача. 5–8 классем параллельлĕ классем шутланса тăнă. 1978 çулта 8-мĕш «а» тата 8-мĕш «б» классенчен 44 ачана вĕрентсе кăларнă. Пуринчен те ытларах 5 класра (икĕ параллельлĕ клас) вĕренекенсем 47-ĕн пулнă.

1992–93 çулсенче вара асăннă тулли мар вăтам шкулта мĕн пурĕ 170 ача вĕреннĕ, вĕсенчен 78-шĕ хĕр ача. Çав çулхине шутланса тăракан вунă класран параллельлĕ классем 9-мĕш класс (31 вĕренекен) анчах юлнă. Ытти классем тăрăх пăхсан пуринчен те ытларах 6-мĕш класра вĕреннĕ – 23 ача.

Çак çулсенче Треньелĕнчи тулли мар вăтам шкулта 87 вĕренекенрен 31-шĕ хĕр ача.

Патăрьел районĕнчи администраци пуçлăхĕн 2005 çулхи раштав уйăхĕн 20-мĕшĕнче кăларнă йышăнăвĕ тăрăх, администрацин вĕренӳпе çамрăксен политикин управлени ятне улăштарса, Патăрьел район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕ тунă.

Тăрăнти тулли мар вăтам шкулта 2005–06 вĕренӳ çулĕнче 9 класра 77 ача вĕреннĕ, вĕсенчен 35-шĕ хĕр ача. 9-мĕш класра 16 ача вĕреннĕ пулсан, 2-мĕш класра вара 7 ача çеç вĕреннĕ. Треньел шкулне вара 88 ача çӳренĕ, вĕсенчен 36-шĕ хĕр ача.

Вулакан асăрхарĕ пуль ĕнтĕ, çак илсе кăтартнă çулсенче Треньелĕнче шкулта вĕренекен ачасен шучĕ палăрмаллах мар ӳснĕ пулсан, Тăрăн шкулĕнче вара пачах урăхла: юлашки пилĕк çул хушшинчех вĕренекен ачасен йышĕ пĕтсех ларнă, вĕсен шутне пĕр алăри пӳрнесене хуçлатсах шутлама пулать.

Çамрăксен йышĕ чакасси паллах, ялсенче çулсерен ача сахалрах çуралнипе, шкулсенчен вĕренсе тухса аслă пĕлӳ илме хуласене кайсан ялсене каялла таврăнманнипе те çыхăннă. Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьел, Катек ялĕнчи шкул çулне çитнĕ ачасем Патăрьелĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш вăтам шкулсене 2000-мĕш çулсенчченех çуран çӳренĕ. Демографи лару-тăрăвĕ япăхланнине пула пирĕн республикăра 2000–2001 çулсенче пĕчĕк комплектлă шкулсен тытăмне улăштарса çĕнетмелли

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ
ПАТĂРЬЕЛ РАЙОНĚ

ПАТĂРЬЕЛ РАЙОНĚН
ПУÇЛĂХĚ

ЙЫШĂНУ

«03» 08 2006ç. 249 №
Патăрьел ялě

ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА
БАТЫРЕВСКИЙ РАЙОН

ГЛАВА
БАТЫРЕВСКОГО РАЙОНА

ПОСТАНОВЛЕНИЕ

«03» 08 2006г. № 249
село Батырево

О переименовании образовательного учреждения

В соответствии с постановлением Правительства Российской Федерации от17 декабря 2001г. № 871 «О реструктуризации сети общеобразовательных учреждений, расположенных в сельской местности», в целях обеспечения позитивных изменений в образовательной системе района,

ПОСТАНОВЛЯЮ:

1. Муниципальное образовательное учреждение «Туруновская основная общеобразовательная школа» Батыревского района переименовать в муниципальное образовательное учреждение «Туруновская начальная общеобразовательная школа» Батыревского района.

2.Руководителю вышеназванного образовательного учреждения осуществить в установленном законодательством порядке организационно-правовые действия, связанные с переименованием МОУ «Туруновская ООШ».

3. Контроль над выполнением настоящего постановления возложить на Отдел образования администрации Батыревского района Чувашской Республики.

Глава Батыревского района Н.И.Глухов

Патăрьел районĕн пуçлăхĕ 2006 çулхи çурла (август) уйăхĕн 03-мĕшĕнче Тăрăн шкулĕ пирки çакăн пек йышăну кăларать.

программăна пурнăçлама тытăннă. Çак программа тăрăх Тăрăнти тĕп пĕтĕмĕшле вĕренӳ шкулне те районти хăш-пĕр шкулсем пекех реструктуризаци тесе пуçламăш шкул çине куçарнă. Пуçламăш шкулсем паянхи куна ахаль шкулсем кăна мар. Вĕсем пурте çиччĕ тултарман ачасене хăйсен хӳттине илнĕ, çавăнпа шкул-садик шутланаççĕ. Тăрăнти шкул-садике çичĕ çула çитменнисем 20 ача, шкула вĕренме вара 4 ача çеç çӳреççĕ. Треньелĕнчи 4 çул вĕренмелли шкула 2012 çулхи вĕренӳ çулĕнче 9 ача, шкул çулне çитмен 57 ача садике утаççĕ. Треньел шкул ачисем 5-мĕш класран тытăнса Ыхра Çырминчи вăтам шкула çӳреççĕ, ачасене шкул автобусĕсемпе илсе каяççĕ. Патăрьелĕнчи вăтам шкула вĕренме çӳрекенсене, шел пулин те, шкул автобусĕ тивĕçмест.

Треньелĕнчи пуçламăш – тулли мар вăтам шкул заведующисем.

1. Миронова Т.Г. (1933–14.05.1934 ç.ç.)
2. Сорокин (14.05.1934 – .....)
3. Паймин Лазарь Леонтьевич (31.08.1939 – 23.11.1939 ç.)
4 Салмин Василий Иванович (23.11.1939 – 22.12.1939)
5. Мясников Петр Федорович (1940 – 01.08.1941 çç.)
6. Васильева Мария Зиновьевна (1942 – 20.07.1944 çç.)
7. Паймина Елизавета Леонтьевна (20.07.1944–16.08.1945 çç.)
8. Салмина Анна Ивановна – заведующи ĕçне туса пыраканĕ (16.08.1945 – 01.12.1945 ç.ç.)
9. Дмитриев Иван Александрович (01.12.1945–25.05.1948 çç.)
10. Краснов Василий Павлович (12.08.1948–10.08.1949 çç.)
11. Лысова Серафима Ивановна (01.09.1949–05.06.1951 çç.)
12. Спинова Нина Алексеевна (01.09.1951–31.08.1960 çç.)

1960 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 1990 çулччен Треньел шкулĕ Ыхра Çырминчи вăтам шкулăн филиалĕ пулнă. 1990 çулхи майăн 30-мĕшĕнче А.Т. Краснова-па Н.А. Кошкин тăрăшнипе Треньелĕнче тулли мар вăтам шкул – ача сачĕ уçăлать.

13. Краснов Александр Тихонович – директор (01.09.1990 – 27.08.2001)

14. Тямина Татьяна Николаевна (27.08.2001 – паянхи кунччен)

Треньел шкулĕнче нумай çул вĕрентнĕ тата вĕрентекенсем:

1. Краснов Александр Тихонович
2. Алексеева Валентина Даниловна
3. Мясников Анатолий Антипович
4. Зайцева Альбина Анатольевна
5. Руссакова Ангелина Трифоновна
6. Логунов Юрий Дмитриевич
7. Порфирьев Геннадий Аркадьевич
8. Кальметов Николай Николаевич
9. Кошкина Ирина Александровна
10. Тямина Татьянеа Николаевна
11. Алексеев Николай Николаевич
12. Гаврилова Алина Николаевна
13. Петрова Ольга Петровна
14. Рубцова Светлана Семеновна



П.Ф. Мясников учитель Треньелĕнчи пуçламăш шкулти вĕренекенсемпе пĕрле. 1941 çул.



Треньелёнчи пётёмёшле шкулти педагогсен коллективё. *Сулахайран сылтăмалла*: Лисицина Л.Г., Прокопьева Н.Н., Алексеева В.Д., Краснов А.Т. (директор), Казакова Э.П. (воспитатель), Мясников А.А., Кошкина И.А., Хамдеев Р.З., Руссакова А.Т., Марков Н.П. 01.09.1990 ç.

Кёçён Патăрьелёнчи пуçламăш шкул заведующисем.

1. Чернышева (14.05.1934 – .....)
2. Кафорина (.....до 02.02.1935)
3. Молодцыгина М.Н. (04.02.1935 – 20.08.1935)
4. Сапожникова Парасковья Александровна (20.08.1935 – 09.02.1940)
5. Тимофеева Александра Моисеевна (1940 –1942)
6. Иванова Анна Алексеевна (1942 – 21.08.1944)
6. Семенова Нина Николаевна (06.09.1944 – 1946)
7. Зайцева Евдокия Моисеевна (01.09.1946–20.08.1948)
8. Семенова Нина Николаевна (01.09.1948–16.02.1952, 1955–13.06.56)
9. Стеклова Вера Порфирьевна (16.02.1952 – 1955)
10. Яковлева Лидия Михайловна (1956–1961)

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче пуçламăш шкулсем вăтам тата тулли мар вăтам шкулсен филиалĕсем пулса тăнипе Треньел шкулĕ Ыхра Çырми вăтам шкулĕн филиалĕ, Кĕçĕн Патăрьел шкулĕ Тăрăн тулли мар вăтам шкулĕн филиалĕ пулса юлать. Асăннă пуçламăш шкулсен заведующисен должноçне çав çулсенчен тытăнса пĕтереççĕ.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2003 çулхи нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕнче йышăну кăларнă: *«Присвоить имя Краснова Александра Тихоновича Новокотяковской основной общеобразовательной школе Батыревского района»*.

Асăннă шкул ятне А.Т. Краснов ятне панă чухне, паллах, Министрсен Кабинечĕ учитель-педагогăн, директорăн шкулти ачасене вĕрентес, çамрăксене мораль енчен воспитани парас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунине шута илнех. Ахальтен мар пуль Александр Тихоновича пĕр вĕренекенĕ ăна вырăссен аслă педагогĕпе В.А. Сухомлинскипе танлаштарнă. Ман шутпа, çак танлаштару питĕ вырăнлă. Хăйĕн вĕрентекенĕпе шкул ачи ял, шкул таврашĕ, çырма-çатра ешертĕр тесе йывăç лартать, ăна шăварать пулсан, çав ачаран ӳссен, обществăшăн йĕркеллĕ çын пулатех ĕнтĕ. Икĕ хутлă шкула кирпĕчрен купаласа тунă чухне те Треньел ялĕнчи урамсенче, çырма-çатрасенче, вăрçăра вилнисене асăнса аллея, кĕрхи-çурхи вăхăтра йывăççем лартса тухнă чухне те, А.Т. Краснов çамрăксене ертсе пырса вĕсене малашне вĕренме лайăх услови пуласса шантарса, ял халăхĕшĕн ĕçлеттерме пĕлнĕ. Çамрăксемпе хăй те кĕреçе тытса йывăç хунавĕсем лартса хавхалантарса пынă. 15–20 çул ытла каялла лартнă йывăççем çамрăк вăрман пек курăнаççĕ, вĕсем халь Треньелне йĕритавра çавăрса илнĕ. Çуркуннерен кĕркунне таранччен «Çамрăклăх утравĕ», тĕрлĕ йывăççен ăшне путнăскер, уявсене ирттерме, ватти-вĕттисемшĕн канма, шыва кĕрсе тухма лайăх вырăн. Вăрçăра вилнисене асăнса лартнă йывăççен аллейипе урамсенче çул айккипе ӳссе кайнă йывăççем уйрăмах çулла илем кӳреççĕ.

1992–2002 çулсенче Треньелĕнчи шкул, унăн директорĕ А.Т. Краснов пуçарулăх кăтартнăран, вĕренӳ çулне хатĕрленессипе ирттерекен районти шкулсен хушшинче малти вырăнсене тухса хаклă парнесем илме тивĕçнĕ.

2000 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче республикăра ирттернĕ «Çулталăк шкулĕ» конкурсра шкул 3-мĕш вырăн йышăннăшăн унăн ертӳçине Александр Тихоновича çӳлти квалификаци категорине параççĕ. Çав çулхинех вăл Кремль Керменĕнче вĕренӳ ĕçченĕсен Пĕтĕм Раççей канашлăвне хутшăнать.



Александр Тихонович Краснов 1932 çулхи раштав уйăхĕн 5-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Треньелĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Ялти пуçламăш шкула вĕренсе пĕтерсен, вĕренĕве Тăрăнти шкулта малалла тăснă. Патăрьелĕнчи педучилищĕне вăл 1947 çулта вĕренме кĕрет.

1951 çулта Туçари вăтам шкулта вăл учитель пулса пуçламăш класри ачасене вĕрентет.

1959 çулта Ыхра Çырминчи 8 çул вĕренмелли шкула ĕçлеме куçать. Куçăмсăр майпа пединститут вĕренсе пĕтерсен çак шкултах биологипе хими урокĕсем ирттерет Шкулта вăл нумай çул Ыхра Çырминчи вăтам шкул директор çумĕ, каярах директор пулса вăй хурать.

1990 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче Треньел ял çыннисен тахçанхи ĕмĕчĕ пурнăçланать – ялтах 9 çул

вёренмелли шкул, ачасен сачё уçăлать. Шкул директорё пулма А.Т. Краснова çирёплетеççё.

Александр Тихоновича пёлнё, пёр ялтах пурăннăёçленё çынсем каланă тăрăх ватти те, çамрăкки те ăна лайăх педагог пулнипе кăна мар, ырă кăмăлёшён, кулленхи тёрлё ыйтупа пулăшнăшăн, кашни çыннах итлеме пёлнёшён хисепленё. Пурнăçа вăл юратнă, малашнехи ёмётсемпе пурăннă. Шкула Треньел ялёнчех хута яни Н.А. Кошкинпа пёрлех А.Т. Краснов тӳпи те пысăк пулнă. Унти вёренӳпе техника базине çирёплетесси çине, ачасене ёçпе, эстетикăпа экологи енёпе воспитани парас ыйтупа ашшё-амăшё, общественность çине таянса ёçлессине вăл, педагог пулнă май, пысăк тимлёх уйăрнă. Хăй виличчен Александр Тихонович шкул музейё йёркелесе хăварнă.

Треньелсем Александр Тихоновича манмаççё: унăн ячёпе кашни çул тёрлёрен конкурссем, спорт ăмăртăвёсем ирттереççё.



Алексеева Валентина Даниловна 1951 çулхи юпа уйăхён 3-мёшёнче Комсомольски районёнчи Кёçён Çёрпӳел ялёнче çуралса ӳснё. Ялти 8 çул вёренмелли шкултан вёренсе тухсан, вăл Канашри педагогика училищине çул тытать. Алла диплом илнё çамрăк специалиста направленипе Патăрьел районне яраççё. Валентина Даниловнăн педагогика ёçён стажё Ыхра Çырминчи вăтам шкулта пуçланать. Чăваш Ишек ялёнче пуçламăш класра пёр вăхăт ёçленё хыççăн

ăна чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме куçараççĕ.

Ёçленĕ вăхăтрах вăл хăйĕн пĕлĕвне ӳстерме тăрăшать, 1975 çулта И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет, 1980 çулта филолог-преподаватель дипломне алла илет.

Вĕрентӳ, наука тата аслă шкул министерстви В.Д. Алексеевана «шкул ачисене вĕрентес тата воспитани парас ĕçри çитĕнӳсемшĕн» темиçе хутчен те Хисеп грамотипе чысланă. Çавăн пекех вăл 1984 çулта «Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» ята илме тивĕç пулнă.

Ёç ветеранĕн пурнăçĕнчи чи пысăк наградă вăл – патшалăх ăна хисеп туни: Чăваш Республикин Президенчĕн 2001 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнчи Указĕпе Валентина Даниловнăна «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ят панă.

В.Д. Алексеева тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те вăхăта ахаль ларса ирттермест. Унăн авторитетне шута илсе тĕрлĕрен комиссисенче хутшăнма, конкурссенче ларма шанаççĕ. Пĕрремĕш хут кăна мар ĕнтĕ ăна Треньел халăхĕ ял тăрăхĕн депутатне суйланă. Суйлавçăсен ыйтăвĕсене вăл туллин тивĕçтерме тăрăшать.

Тăрăн, Треньел шкулĕсем тăрăх орден-медальсене тивĕçнĕ вĕрентекенсем.

(цифрăсем – орден-медаль хăш çулта панине пĕлтерет)

Ленин орденĕпе:

1. Зайцева Евдокия Моисеевна – 1949 ç.
2. Павлова Мария Павловна – 1951 ç.

Ёçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе:

Илехметова Мария Павловна – 15.03.1976 ç.

Хисеп Палли орденĕпе:

1. Дерякова Екатерина Захаровна – 01.09.1951 ç.
2. Краснов Александр Тихонович – 27.06.1978 ç.

«Ёçре палăрнăшăн» медальпе:

1. Казанцева Вера Васильевна – 06.05.1949 ç.
2. Федоськина Елена Ивановна – 01.09.1951 ç.
3. Соловьева Мария Егоровна – 22.08.1952 ç.

4. Соловьева Елена Моисеевна – 22.08.1952 ç.
5. Румянцева Анастасия Моисеевна – 22.08.1952 ç.
6. Алексеева Евгения Павловна – 03.11.1953 ç.
7. Алексеев Михаил Дмитриевич – 06.10.1954 ç.
8. Лысова Серафима Ивановна – 22.08.1952 ç.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе:

1. Казанцева Вера Васильевна – 06.09.1954 ç.
2. Соловьева Мария Егоровна – 06.09.1954 ç.
3. Дмитриев Иван Александрович– 06.09.1954 ç.
4. Спинова Нина Алексеевна – 03.11.1953 ç.
5. Краснов Александр Тихонович.

«Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ», «Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» хисеплĕ ятсене, СССР тата РСФСР шайĕнчи вĕренӳ министерствин Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ вĕрентекенсем.

1. Илехметов Иван Григорьевич, Тăрăн шкул директорĕ. СССР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ (1969 ç.), ЧАССР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ (1973 ç.).

2. Краснов Александр Тихонович, Треньел шкул директорĕ. Раççей Федерацийĕн халăха вĕрентес ĕç отличникĕ (1975 ç.), Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ (1995 ç.).

3. Зайцева Евдокия Моисеевна, ЧАССР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ.

4. Алексеева Валентина Даниловна, Треньел шкул директорĕн çумĕ, Раççей Федерацийĕн халăха вĕрентес ĕç отличникĕ (1994 ç.), Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ (2001 ç.).

5. Кошкин Николай Александрович, «Раççей Федерацийĕн вĕрентӳ ĕçĕн отличникĕ».

1. Казанцева Вера Васильевна, РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ – 1963 ç.

2. Илехметова Мария Павловна, РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ – 1963 ç.

3. Алексеев Александр Иванович, РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ – 1969 ç., РСФСР вĕрентӳ Министерствин Хисеп хучĕ – 1965 ç.

4. Теребилова В.И., ————»»————»»———— – 19.06.1969 ç.

5. Алексеева Евгения Павловна, ———— «»———— – 12.11.1971 ç.

ПИРЁН ЯЛА ПЫРСА КЁРСЕН...

Кирек мёнле яла илес пулсан та ёлёк-авал кашни ялтах çёнё вырӑна куçса килсен çуртсене мёнле меллёрех пулнă – çавӑн пек лартса тухнă кашни хăйён çемйипе. Тăван-хурӑнташсем çурт-йёрне, хуралтисене юнашар лартма тăрӑшнă. Юхма ен Пăла тăрӑхёнчи нумай ял юхан шыв хёрне пырса вырнаçнă. Çакна Патăрьел районён картти çине тинкерсен те Тăрӑнпа Кёçён Патăрьел тата ытти ялсене асăрхама пулать. Ялти ватăсем каланă тăрӑх, Треньелёнчи малтанхи урамсем Ыхра юхан шывё çывӑхнерех ялăн кăнтăр енне вырнаçнă. Çав вырӑнта тупнă укçасем, килти выльăхчёрлёх шăммисем, тимёр ёç хатĕрёсем, пус пури юлашкисем çакăн çинчен çирёплетеççё. Хальхи Кооператив урамё аслă урам шутланнă, Центральная ятлă урам вара 120–150 çул каялла йёркеленсе кайнă.

Чăваш Республикинчи ялсенче пурӑнакансем юлашки 20 çул хушшинче пурнăç условийёсем çăмăл марине пăхмасăр, патшалăх енчен тёрлёрен çăмăллăхсем панипе усă курса, çурт-йёрне хăпартса лартма, выльăхчёрлёхне усраса тупăш курма вăй-хал çитереççё. Паянхи кун чылайăшён хăйён хуçалăхёнче автомашина, ытти ял хуçалăх техники пур. Ку ёмёре кёрсен, кашни ватти-вётти кёсье телефонёпе усă курма тытăнчё, юлашки çулсенче компьютерпа интернета тухса тёнче хёрринче пурӑнакан тус-тăванпа хире-хирёç ларса тенё пек каласа пулать. Çакăн пек техника тёлёшпе этем пурнăçёнче хăвӑрт аталану пуласса иртнё ёмёрён иккёмёш çурринче ял çынни тёлёкре те тёлленмен.

Ялта пурӑнаканăн пурнăç условийёсем çăмăлах мар пулсан та, лайăхрах пурӑнас тесе малаллах тапаланать, пурӑнакан вырӑнта ёç тупаймасан, аяккарах кайса ёçлесе çемьене пурӑнма укçа туса килет. Тепри фермер хуçалăхё йёркелесе, пахча-çимёç, тыр-пул е ытти культура ӳстерсе тупăш илме тăрӑшать. Уйрӑм хушма хуçалăх тытакан ял çыннине те, фермерсене те



1960-мĕш çулсен вĕçĕнче ӳкернĕ сăнӳкерчĕк çинче Тăрăн ялĕнчи Симĕс урамри «вĕтĕ ура кассисем».

çурт-йĕр тума, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме, çĕрпе усă курма патшалăх тĕрлĕрен кредит, субсиди парса хавхалантарать. Паянхи кун ялти çамрăксем çĕнĕ урамсенче проектпа пăхнă кирпĕчрен купаласа хитре те пурăнма хăтлă çуртсем лартаççĕ. Ун пек çуртсем халь Тăрăн ял тăрăхĕнчи ялсенче те асăрхама пулать.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче ялсенчи çамрăксем уйрăм хуçалăхпа тухса капăр çуртсем лартма тытăнчĕç. Çамрăксен урамĕсем Тăрăн ялĕн хĕвел анăç енче, çавăн пек ятпах Йăлăмра çурçĕр енче, Треньелĕнче Николаев урамĕ, 2000 çулсенче Хирти касăн (ул. Напольная) хĕвел анăç енче, ялпа аслă çул хушшинче вара Çамрăксен урамĕнче çĕнĕ çуртсем ӳссе ларнă. 2009 çулта Кĕçĕн Патăрьелĕнчен Катек ялне тухса каякан çул хĕрри (Придорожная) урамĕсем хутшăнчĕç.

2008 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнче Треньел ял çыннисем Тăрăн ял тăрăхне ялти Центральная урамне улăштарса Н.А. Кошкин ятне парас пирки заявленипе

тухнă. Çав çулхине утă уйăхĕн 28-мĕшĕнче депутатсен пухăвĕнче Николай Александровичăн ял çыннисен пурнăç условийĕсене çăмăллатас, шкулпа садике пурлăх енчен пулăшнине шута илсе, урамсене лайăхлатас енĕпе пысăк ĕçсем тунăшăн Центральная урама унăн ятне панă.

Ял хуçалăхне аталантарма, çынсен пурнăç условине çăмăллатас, сывлăха çирĕплетес енĕпе республика шайĕпе тĕрлĕрен проект, программăсем йышăннă юлашки çулсенче. Хамăр районти ялсенчех çамрăк специалистсем валли проектпа пăхнă çурт-йĕр, газ, шыв кĕрсе тухмалла, спорт комплексĕсем, урамсенче асфальт çулсем сараççĕ. Çакăн пек тĕслĕх çинчен районта тухса тăракан «Авангард» хаçатри «Республика Президенчĕ – Патăрьелĕнче» статьяран пĕлме пулать.

«Чыслă хăна килессе кĕтсех-тĕр шăматкун Юхмапа Пăла тăрăхĕнче хĕвеллĕ те уяр çанталăк тăчĕ. Çак куна Кĕçĕн Патăрьелсем ыйтса илнĕнех туйăнчĕ. Кашнин питĕнче хавас кулă палăрать. Вĕсем пурте «Олимп» комплекслă спорт площадкине пуçтарăннă. Чăваш Республикин Президентне Н.Федорова район пуçлăхĕ Н.Глухов, Тăрăн ял тăрăхĕн ертӳçи В.Рубцов кĕтсе илчĕç.

Кунта республика ертӳçине чĕнме сăлтавĕ те пур. Николай Васильевич кăçалхи январĕн 19-мĕшĕнче ял хуçалăхне аталантарма тивĕçлĕ майсем туса парас тĕллевпе ял тăрăхĕсенче çурт-йĕре комплекслă майпа компактлă лартас тата вĕсене тирпей-илем кĕртес енĕпе проекта пурнăçласси çинчен Указ кăларнăччĕ. Вăхăчĕ нумай та мар. Çак хушăра кунта тĕлĕнмелле чаплă кермен çĕкленнĕ. Ăна хута яма 40 миллион тенкĕ ытла тăкаклана. Объектра «Спецстройкоммуникаци» (ертӳçи В. Миронов), «Шыгырданы» (З. Халитов), «Энергосетьстрой» (А. Смирнов) пĕрлешӳ ĕçченĕсем вăй хунă. Шыв та пур. Çутă кĕртнĕ. Автомобиль çулĕпе тротуар сарнă тата ытти те. Пăхсан тĕлĕнмелле. Халапри евĕр.

Патăрьелсем тăрăшуллă, ĕçчен халăх пулнине палăртрĕ Н. Федоров. Çакна спорт объектне кĕске хушăрах çĕкленипе тепĕр хут çирĕплетрĕ. Çавна

май хăйĕн сăмахĕнче тепĕр Указ кăларнине асăнчĕ. 2010 çулта Республика кунне Шупашкарта тата Патăрьелĕнче ирттерессине пĕлтерчĕ.

– Патăрьел районĕ кунран кун çĕкленсе, çĕнелсе пырать. Çакна муниципаллă районсем хушшинчи конкурсра çĕнтерни те çирĕплетет. Малашлăхра тата та тăрăшарах ĕçлемелле сирĕн. Уява района сумлă хăнасем килĕç. Вĕсемпе ĕçлĕ, туслă çыхăнусем пуçарма пулĕ, – терĕ Чăваш Ен ертӳçи.

Çакнашкал спорт объекчĕсем ĕмĕтре çеç пулнă. Чылай регионсенче вĕсем çинчен пĕлмеççĕ те. Çĕр-шывĕпе те çакнашкал спорт комплексĕ 144 çеç. Вĕсенчен 16-шĕ вара пирĕн республикăра. Спорт комплексĕсем çĕклессипе Раççейĕпе виççĕмĕш вырăнта пынишĕн епле хĕпĕртемĕн. Ачасен пуласлăхĕшĕн мар-и-ха çакă? Кунта ватти-вĕтти килсе сывлăха çирĕплетме пултарать.

Паха кермен уçнишĕн чунтан савăннине аэробика занятине çӳрекенсем те палăртрĕç. Н. Глухов вара ачасене çамрăкранпах спортпа пиçĕхтерсе ӳстерни тĕнче класлă спорт маçтăрĕсем хатĕрлеме пулăшнине тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ. Тĕслĕхе И. Калентьевăна, А. Деверинскаяна асăнчĕ. Сумлă хăнасем асăнмалăх йывăç лартрĕç.



Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров тата Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев Александрпа Оксана Илюткинсен хушма хуçалăхĕпе паллашрĕç. Чăн-чăнах кермен ку! Вĕсене пӳртне тума патшалăх енчен сумлă пулăшу тивĕçнĕ. Президентăн «Ялсен производство сферине ертсе пыракан кадрсемпе тивĕçтерес ĕçри специалистсене патшалăх енчен хушма пулăшу парасси çинчен» Указĕпе килĕшӳллĕн ăна пĕр миллион тенкĕ уйăрса пулăшнă. «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проекчĕпе çăмăллатнă кредит та илнĕ çемье. Çурта, хуралтăсене хăтлă çавăрнă. Икĕ ача ӳстереççĕ. Çĕрпе усă курса пахча-çимĕç çитĕнтереççĕ. Малашлăхра выльăх-чĕрлĕх те усрасшăн.

Çул хĕрри (Придорожная) урамĕнче çамрăксем пурăнаççĕ. Хула условийĕсенчен пĕрре те кая мар кунта, çурт умне асфальт çитнĕ. Газ, шыв кĕрет. Çул урлă – компактлă спорт площадки».



1927 çулта Чăваш Республикинче вулăссене районсем çине куçариччен те, куçнă хыççăн та, ытти районсенчи пекех Патăрьел районĕнче те ял Канаш председателĕсем улшăнсах тăнă.



ЧР Президенчĕ Н.В.Федоров (сылтăмра) «Олимп» спорткомплексне уçма килнĕ. 2009 çул.



Йăлăмри çул хĕрри урамĕ.

Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьел, Треньел тата Патăрьел ял Канашĕсен, ял администрацийĕсемпе ял тăрăхĕсен председателĕсем, вĕсен çумĕсемпе секретарĕсем:

ЧР Тĕп Архиври ял Канашĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырса пынă протоколсем тăрăх 1927-мĕш çулхи кăрлачăн 15-мĕш тĕлне Треньелĕнчи ял Канашĕн председателĕ Лепешкин Федор, секретарĕ Галкина Ольга Ивановна пулнă. Çав вăхăтра Кĕçĕн Патăрьелĕнче Соловьев Афанасийпе Илюткин Николай пулнă пулсан, 01.04.1927 çул тĕлне ку ял Канашĕн председателĕпе секретарĕ пулса Хураськин Григорийпе Лампасов Кирилл, Тăрăнта Крылов Михаил Димитриевичпа Медведев Семен Григорьевич тимленĕ. Вĕсем çав çулхи юпа уйăхĕнчи районти тата ялсенчи суйлавчченех хăйсен тивĕçĕсене пурнăçласа пынă.

Патăрьел районне туса хурсан 1927 çулхи кĕркунне райĕçтăвком пайĕсене туса хураççĕ, ялсенче ял Канашĕсене председательсемпе вĕсен çумĕсене тата секретарьсене суйлама çав çулхине юпа уйăхĕнче суйлавсем иртеççĕ.

Тăрăн ял Канашне малтанхи суйлав хыççăн 1927–28 çулсенче Г.Н. Хураськин председатель пулса 1928-мĕш çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕш таранччен пурнăçлать.

Тăрăн ял Канашĕ тăрăх (унта Тăрăнпа Кĕçĕн Патăрьел ялĕсем кĕреççĕ):

Председатель: Хураськин Григорий Николаевич (октябрь 1927–17.09.1928)

Секретарьсем: Медведев Семен Григорьевич (октябрь 1927–12.04.1928),

Думилин Василий (12.04.1928 – 27.08.1928).

Треньел ял Канашĕпе:

Председатель: Лимкин Николай (...28.02.–20.04.1928–17.09.1928)

Унăн çумĕ: Романов Павел Романович (————»»————)

Секретарь: Краснов Тихон Матвеевич (28.02.1928–27.08.1928)

1928 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче Тăрăнпа Треньел ял

Канашёсене пёрлештерсе Тăрăн ял Канашё йёркелеççё, унăн пёрремёш председателё пулма Тăрăн ялёнче пурăнакан Т.В. Васильева суйлаççё.

1. Председатель: Васильев Тимофей Васильевич (17.09.1928–29.01.1930)

Унăн çумё: Цветков Петр Дмитриевич

Секретарь: Краснов Тихон Матвеевич (27.08.1928–24.08.1930)

Секретарь: Васильев Тимофей Васильевич (24.08.1930 – 14.12.1930)

2. Степанов Александр Степанович, Треньел (06.02.1930–27.12.1930)

Унăн çумё: Журавлев Алексей Васильевич (08.07.1929 – 27.12.1930)

Секретарь: Ашмарин Иван Николаевич (14.12.1930–1931)

3. Крылов Михаил Димитриевич, Тăрăн (27.12.1930 – 31.12.1931)

Унăн çумё: Рябов Василий Романович (1931)

Секретарь: Дмитриев Александр Т.

4. Романов Павел, Треньел (1932 – 1933)

5. Хураськин Григорий Николаевич, Кёçён Патăрьел (1933–25.04.1934)

Секретарь: Прохоров Иван (1934)

6. Хураськин Егор Николаевич, Кёçён Патăрьел (май 1934 – май 1935)

7. Сапожников Николай Александрович, Тăрăн (май 1935 – 1936)

8. Крылов Михаил Димитриевич (1936 – 13.02.1946)

9. Илехметов Василий Федорович, Тăрăн (17.07.1946–29.01.1949)

Секретарь: Кузьмин Иван Васильевич

10. Яковлеь Иван Федорович, Кёçён Патăрьел (29.01.1949 – 30.05.1958)

Секретарьсем: Яковлев Петр Александрович (27.01.1951 – 07.03.1953-)

Смирнова Надежда Петровна (... – 12.03.1955)

Яковлев Петр Александрович (31.05.1955–30.05.1958)

11. Архипов Федор Архипович, Тăрăн (30.05.1958–06.03.1959)

12. Мясникова Валентина Федоровна, Треньел (06.03.1959 – 02.12.1959)

Секретарь: Крылов Александр Петрович (...09.03.1957 – 02.12.1959)

1959-мĕш çулхи юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче Тăрăн ял Канашĕн ĕçтăвкомĕ 6-мĕш сессинче райĕçтăвкома Патăрьел ял Канашĕпе пĕрлешес пирки ЧАССР Аслă Канашăн Президиумне ходатайствăпа тухма ыйтать. Çак ыйтăва республика шайĕнче тивĕçтерсен Тăрăн ял Канашĕн ĕçтăвкомĕ 1959 çулхи раштав уйăхĕн 2-мĕшĕнче хăйĕн юлашки ларăвĕнче Патăрьел тата Сăкăт ял Канашĕсемпе пĕрлешес пирки йышăну кăларать. Çав вăхăта Патăрьел ял Канашĕн ĕçтăвком председателĕ пулнă П.И. Клычков хăйĕн тивĕçĕсене малалла тăсса пырать.

13. Клычков Петр Иванович, Патăрьел (10.11.1959 – 04.06.1963)

Секретарь: Краснов Александр Тихонович (02.12.1959 – март 1961)

14. Краснов Владимир Петрович, Патăрьел (14.03.1963 – 16.03.1967)

Секретарьсем: Демидова Мария Родионовна (04.06.1963 – 13.10.1965)

Рубцов Михаил Степанович (13.10.1965 – 1969)

15. Ахмеев Александр Афанасьевич, Патăрьел (16.03.1967 – 29.04.1974)

16. Спиридонов Емельян Васильевич – Патăрьел (29.04.1974 – 13.12.1974)

Председатель ĕçне туса пыраканĕ:

Ахмеев Александр Афанасьевич (13.12.1974 – 23.06.1975)

17. Атнашкин Владимир Иванович, Патăрьел (23.06.1975 – 29.12.1977)

Секретарь: Демидова Мария Родионовна (1969 – 10.07.1975)

18. Смирнов Иван Карпович, Кĕçĕн Патăрьел (29.12.1977 – 29.06.1978)

Секретарь: Алексеева Любовь Михайловна (14.10.1975 – 11.05.1978)

19. Краснов Василий Павлович, Патăрьел (19.10.1978 – 10.02.1989)

Секретарь: Ляллина Нина Васильевна (11.05.1978 – 10.02.1989.)

20. Курнусов Валерий Сергеевич, Патăрьел (10.02.1989 – 27.03.1990)

Секретарь: Лепешкина Галина Николаевна.

21. Енилин Валерий Михайлович, Патăрьел. Патăрьел ял Канашĕн председателĕ (27.03.1990 – 08.12.1990)

22. Крылов Геннадий Федорович, Тăрăн. Патăрьел ял Канаш ĕçтăвкомĕн председателĕ (27.03.1990–08.12.1991)

Чăваш ССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1992 çулхи кăрлач уйăхĕн 30-мĕшĕнче Патăрьел районĕнче Тăрăн ял Канашĕ йĕркелес пирки Указ кăларнă. Çак документ тăрăх асăннă ял Канаш территорине Тăрăн, Кĕçĕн Патăрьел тата Треньел ялĕсем кĕреççĕ. Ял Канашĕн тĕп вырăнĕ Тăрăн ял шутланать.

Патăрьел район администрацин пуçлăхĕ 1992 çулхи нарăс уйăхĕн 24-мĕшĕнче Г.Ф. Крылова Тăрăн ял администрации пуçлăхĕ пулма хушу кăларать. Ял администрацийĕсен пуçлăхĕсене суйланă хыççăн вăл Тăрăн администрацийĕн пуçлăхĕ (глава) пулса тăрать.

Чăваш Республикинчи Аслă Канашĕн Президиумĕ 1993 çулхи юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи çӳлти шайри патшалăх влаçĕн органĕсене тата халăх депутачĕсен вырăнти Канашĕсене реформа туса ирттерес пирки саккун йышăннă. Çак саккуна тĕпе хурса Чăваш Республикин Аслă Канашĕ çĕнĕ çӳлти представительлĕ патшалăх влаçĕн органне тата вырăнти представительлĕ органсене суйлав ирттермелли çинчен постановлени кăларать. 1993 çулхи чӳк уйăхĕнчи 19-мĕш хыççăн ял администрацисен ячĕ улшăнать, вара Тăрăн ял администрацийĕнчен Тăрăн ял хăй тытăмлăхĕ пулса тăрать, унăн пуçлăхĕ Крылов Г.Ф. (глава Туруновского сельского самоуправления) юлать.

24. Крылов Геннадий Федорович (24.02.1992 – 08.12.1996 – 26.02.2001)

25. Илюткин Александр Леонидович, Кĕçĕн Патăрьел (26.02.2001 – 31.10.2005)

26. Рубцов Валерий Петрович, Кĕçĕн Патăрьел (01.11.2005 – 05.05.2010

27. Михеев Константин Федорович, Тăрăн (11.05.2010 – паянхи кунччен).

2010 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче Тăрăн ял тăрăхĕнчи депутатсем, В.П. Рубцов пуçлăх пуканне пушатса Патăрьелĕнчи çул-йĕр участокĕн ертӳçи пулма куçнă май, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма çитес суйлавччен К.Ф. Михеева шанаççĕ.



Васильев Т.В.



М.Д. Крылов



И.Ф. Яковлев



А.А. Ахмеев




В.П. Краснов



Г.Ф. Крылов



С.П. Рубцов



Константин Федорович Михеев 1963 çулта Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче çуралнă. Ĕç стажĕ унăн вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн Патăрьелĕнчи совхозран пуçланнă. Совет çарĕнче салтак тивĕçне пурнăçласа вăл Чăваш еннех таврăнать. Кооперативтехникумне вĕренсе тухсан 11 çул сутуçăра ĕçленĕ. Треньелĕнчи кирпĕч заводĕнче, ун хыççăн казначействăра хурал начальникĕнче тăрăшнă. 2009 çулта Ф.К. Михеев Чăваш патшалăх университечĕн Патăрьелĕнчи филиалĕнче юридика факультетĕнче куçăмсăр майпа вĕренсе аслă пĕлӳ илет.

2010 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче иртнĕ хăй тытăмлăх органĕн суйлавĕ хыççăн Константин Федоровича халăх ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма саккунпа пăхнă ултă çула официаллă йĕркепе шаннă.

Тăрăн ял тăрăхĕнчи çынсен, хуçалăхсен йышĕ мĕнле аталанса пыни çинчен статистика.


1858 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче Чĕмпĕр кĕпĕрнине кĕрекен Пăва уесĕнчи виçĕ ялти çынсене шута илнĕ чухнехи кăтартусем (ревизская сказка):

Тăрăн ялĕпе: пĕтĕмпе 375 çын; арçынсем – 176; хĕрарăмсем – 199.

Кĕçĕн Патăрьел : 168 çын; арçынсем – 77, хĕрарăмсем – 91.

Треньел: 184 çын; арçынсем – 88, хĕрарăмсем – 96.

(УОПА, фонд 156, оп.2, 617 ĕç, 81-мĕш листа)



Тăрăн ял тăрăхĕн администраци çурчĕ. 2007 ç.

1917 çулта ялти хуçалăхсене шута илнĕ чухне Патăрьел вулăсĕнчи виçĕ ялти кăтартусем çакăн пек:

Кĕçĕн Патăрьел – 89 хуçалăх, Треньел – 98, Тăрăн – 154 хуçалăх.

(ЧР ПТА, ф.3, оп.1, 186-мĕш ĕç, 31-мĕш л).

Чăваш Республикинчи вулăссем районсем çине куçиччен 1927 çула Аслă Патăрьел вулăсĕнче 28 ял пулнă. Çак ялсенче 3870 хуçалăхпа 20248 çын пурăннă, вĕсенчен 9650 арçын, 10598 хĕрарăм (тин çуралнă арçын ачи, хĕр ачине шутласа).

Виçĕ ялпа:	хуçалăх	çынсен шучĕ	арçынсем	хĕрарăмсем
Тăрăн	160	828	394	418
Кĕçĕн Патăрьел	100	557	275	282
Треньел	101	484	230	256


(ЧР ПТА, ф.605, оп.1, 75-мĕш ĕç, 24-мĕш л.)

1939 çул: Тăрăн ялĕ – 981 çын, Кĕçĕн Патăрьел – 678, Треньел – 609.


Ваттисем каланă тăрăх, Тăрăн ял Канашĕн çурчĕ валли 1948 çулта Йăлăмран Хураськин Якур çуртне куçарса, хăйне пĕчĕкрех çурт парса, Йăлăмрах лартнă, каярах Тăрăнти шкула хирĕç куçарса лартнă. Çулсем иртнĕ май ăна пăсса шкул столовăйĕ туса хунă.

2010 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейпе халăх йышне çырса шута илнĕ хыççăн Патăрьел районĕнчи Тăрăн ял тăрăхĕпе çакăн пек кăтартусем тухса тăраççĕ.

Ялсен ячĕсем	çынсем	çав шутра		процентпа	
	мĕн пурĕ	арçын	хĕрарăм	арçын	хĕрарăм
Тăрăн ял тăрăхĕпе	1787	841	946	47.1	52.9
Кĕçĕн Патăрьел	691	307	384	44.4	55.6
Тăрăн	677	320	357	47.3	52.7
Треньел	419	214	205	51.1	48.9



Пăла юхан шывĕ.



Улăх тăрăх юхать Пăла шывĕ,
Çут хĕвел çутипе ялтăрать.
Ку йăлтах тăван ен – ман çĕр-шывăм,
Чунăма ачаран тыткăнлать.

ВĔСЕМ ХĂЙСЕН ТИВĔÇНЕ ЧЫСЛĂН ПУРНĂÇЛАНĂ (Афганистан – Чечня вăрçисем)

1979 çулхи раштав вĕçĕнче Совет Союзĕ Афганистанри çивĕчленнĕ лару-тăрăва çăмăллатас тата чикĕри хăрушсăрлăха çирĕплетес тĕллевпе çак çĕршыва хăйĕн артиллерийĕпе мотопехотине тата сывлăш-çар вăйĕсене илсе кĕнĕ. 10 çула яхăн пынă вăрçă вут-çулăмĕ витĕр, çар историкĕсем шутланă тăрăх, пирĕн республикăран 6 пине яхăн çын аякри çĕр-шывра душмансемпе çапăçнă. Вĕсенчен 113-шне тăван кĕтесе тавăнма шăпа пӳрмен, 4-шĕ хыпарсăр çухалнă, 176-шĕ аманнă, 414 çын инвалид пулса юлнă, киле тавăнсан тата тĕрлĕ çулсенче чире пула миçе çын вилнĕ пуль.

Асăннă вăрçа Патăрьел районĕнче çуралса ӳснĕ 283 салтакпа офицер тата медицина сестри хутшăннă. Вĕсенчен çиччĕшĕ туллă-сăртлă, вĕри çеçенхирлĕ çĕршывра душмансемпе çапăçса пуçĕсене хунă. Паттăр та хăюллă интернационалист-салтаксене асăнса районти çар комиссариачĕ умĕнче палăк лартнă. Унта вилнĕ салтаксен хушамачĕсене çырнă.

Афганистан вăрçине, çавăн пекех Чечня боевикĕсемпе террорисчĕсене пĕтерес çар операцийĕсене Тăрăн ял тăрăхĕнчи яшсем те хутшăннă. Вĕсенчен хăш-пĕри аманса пулин те, телее, тăван кĕтесне пурте тавăннă.

Çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн орден-медаль илме тивĕçнисем те пур вĕсен хушшинче.

Аялрахри йĕркесенче вĕсене хушаматпах кăтартса хăварас тетĕп.

Афганистан вăрçине хутшăннисем (вĕсенчен тăваттăшĕ вăхăтсăр вилнĕ):

1. Лялькин Владимир Васильевич, 1960 ç.ç., Тăрăн ялĕ.

2. Медведев Анатолий Максимович (1964–2005), Тăрăн ялĕ.

3. Воробьев Анатолий Николаевич (1969–2005), Тăрăн ялĕ.

4. Кальметов Геннадий Николаевич (1966–2010), Кĕçĕн Патăрьел, ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

5. Терентьев Николай Михайлович, 1966 ç.ç., Треньел.

6. Логунов Петр Алексеевич, 1966 ç.ç., Треньел, ăна «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă.

7. Эльмуков Станислав Васильевич (1966–1998), ăна «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă.

8. Галкин Валерий Иванович, Треньел.

9. Михайлов Василий Николаевич, Треньел.

Михайлов В.Н. аса илĕвĕнчен: «Малтанхи вăхăтра унти пурнăçа хăнăхма йывăрччĕ. Чи малтанах Афганистан чиккине сыхлама ячĕç. Алăра яланах автомат. Эпĕ Туркменире десантно-штурмовая группăра пулнă. Çапла пĕррехинче эпир тăваттăн тăраттăмăрччĕ, эпĕ ăнлантараттăмччĕ вĕсене. Çулла 1981 çул. Сасартăк ман çумри юлташсем тĕшĕрĕлсе анчĕç. Эпĕ тĕлĕнсе пăхса тăратăп. Ăнланмастăп, мĕнле сывă юлнă эпĕ. Турă çăкăр çиме çырнă пулĕ.

Шыв çукчĕ тата. Пит-куçа та çăваймастăмăрччĕ тепĕр чух. Пур пулсан та, ăна наркăмăшласа хуратчĕç. Хăрушăччĕ çав унта, мĕн чухлĕ çамрăкăн ĕмĕрĕ татăлмарĕ-ши!»

Чечня боевикĕсемпе террористсене пĕтерес операцисене хутшăннă салтаксем:

1. Ашмарин Андрей Валерьевич 1974 ç.ç., Кĕçĕн Патăрьел.

2. Баринов Владимир Витальевич 1985 ç.ç., Кĕçĕн Патăрьел.

3. Ильин Юрий Николаевич 1983 ç.ç., Кĕçĕн Патăрьел.

4. Арланов Илья Николаевич, 1977 ç.ç. Упамсара, Кĕçĕн Патăрьелĕнче пурăнать.

5. Галкин Геннадий Леонидович, 1975 ç.ç., Треньел, 1995 ç. «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă.

6. Иванов Алексей Юрьевич, 1979 ç.ç.———»»———

7. Петров Дмитрий Петрович, 1981 ç.ç. ———»»———

8. Степанов Владимир Николаевич, 1976 ç.ç.———»»———

9. Юманов Михаил Васильевич, 1980 ç.ç. ———»»———

10. Шуворов Владислав Петрович, 1983 ç.ç. ———»»———

11. Журавлев Олег Михайлович, 1977 ç.ç. ———»»»———

12. Положин Владимир Александрович, 1978 ç.ç. ———»»———, II-мĕш ушкăнри инвалид, ăна «Хăюлăхшăн» орденпа наградăланă.

13. Крылов Александр Вениаминович, 1979 ç.ç., Тăрăн.

ВĂРĂМ ЁМЁРЛЁ ЯЛ ÇЫННИСЕМ

90 çул тултарнă тата унтан та ытларах пурăннă, çавăн пекех паянхи кун пурăнакан Тăрăн ял çыннисем:

1. Иванова Мария 1715 çулта çуралнă, 15.09.1806 çулта вилнĕ, 110 çул пурăннă.

2. Сапожникова Мария Федоровна (25.03.1883–13.02.1987 ç.ç.), (103 çул та 11 уйăх).

3. Думилин Кузьма (1824–25.06.1926) – 101 çул.

4. Тихонова Мария (1715–23.05.1816) – 100 ç.

5. Иванов Кузьма (1691–16.10.1791) – 100 ç.

6. Аканова Анна Ивановна (1903–17.11.2000 ç.ç.) – 96 çул та 10 уйăх.

7. Самакина Ксения Матвеевна (16.01.1902–31.08.1998) – 96 çул 7 уйăх.

8. Илеменова Анна Романовна (07.11.1906–28.05.2003) – 96 ç. 6 у.

9. Медведева Матрена Кузьминична (14.10.1903–23.11.1999) – 96 ç. 1 у.

10. Воробьева Агрипина Петровна (1806–20.02.1963) – 96 çул.

11. Гордеев Дмитрий Романович (15.11.1912–17.08.2008) – 95 ç. 9 у.

12. Думилина Елена Федотовна (29.05.1916–19.08 2011) – 95 ç. 2 у.

13. Краснова Анна Ивановна (09.07.1912–27.02.1999) – 95 ç. 7 у.

14. Думилина Вера Ивановна (25.07.1912–06.01.2008) – 95 ç. 6 у.

15. Емельянова Агафия Васильевна (14.02.1904–20.11.1998) – 94 ç. 9 у.

16. Васильева Мария Матвеевна (06.02.1913–25.04.2007) – 94 ç. 2 у.

17. Лялькин Александр Павлович (02.08.1892–20.06.1986) – 93 ç. 10 у.

18. Краснова Александра Антоновна (27.02.1918–23.10.2010) – 93 ç.

19. Самакин Дмитрий Васильевич (02.11.1911–06.02.2005) – 93 ç. 3 у.

20. Ялукова Анна Николаевна (02.09.1911–09.01.2004) – 92 ç. 11 у.

21. Сапожникова Татьяна Васильевна (13.01.1918–31.08.2010) – 92 ç. 7 у.

22. Ялукова Акулина Федоровна (05.07.1886–26.12.1978) – 92 ç. 5 у.

23. Лазарева Анна Никифоровна (04.04.1919–2010) – 91 ç.

24. Думилин Николай Николаевич (04.05.1915–19.10.2005) – 90 ç. 5 у.

25. Угасева Анна Михайловна (16.01.1919–07.02.2009) – 90 ç. 1 у.

26. Шуряшкина Ирина Трофимовна (...–18.06.1960) – 90 ç.

27. Медведева Александра Васильевна (... 08.12.1962) – 90 ç.

28. Крылов Федор Иванович (31.01.1916–20.10.2012) – 96 ç. 8 у.

29. Куракова (Аканова) Анна Матвеевна (01.09.1918 ç.ç.–пурăнать-ха).

30. Коннова Маргарита Игнатьевна (10.02.1921 ç.ç.–пурăнать-ха).

90 çула çитеймен çак ял çыннисем:

1. Макаева Фекла Васильевна (28.09.1907–06.08.1997) – 89 çул 10 уйăх

2. Самакина Мария Федоровна (31.03.1882–29.11.1971) – 89 ç. 8 у.

3. Думилина Хрестиния Семеновна (27.09.1890–04.05.1979) – 89 ç. 7 у.

Кĕçĕн Патăрьел ялĕ тăрăх:

1. Никитина Евдокия Федоровна (Сăкăт ялĕнче 09.03.1875 çулта çуралнă – 25.05.1975 çулта вилнĕ) – 100 çул та 2 уйăх пурăннă.

2. Вьюшкина Елизавета Матвеевна (..... – 02.03.1965 çул) – 98.

3. Воробьева-Степанова Матрена Архиповна (08.03.1914–08.01.2010) – 95 ç. 10 у.

4. Каллина Екатерина Кузьминична (18.11.1914–20.02.2010) – 95 ç. 4 у.

5. Данилова Агафия Васильевна (..... – 09.12.1963) – 95 ç. .

6. Петрова Дария Григорьевна (17.03.1895–16.06.1989) – 94 ç. 3 у.

7. Егоров Герасим Константинович (27.02.1895–13.03.1988) – 93 ç. 1 у.

8. Сафьянова Наталия Степановна (... – 14.07.1961) – 91 ç.

9. Ситова Александра Захаровна (10.08.1883 – 11.05.1974) – 90 ç. 9 у.

10. Волкова Татьяна Гавриловна (24.12.1894–27.071985) – 90 ç. 7 у.

11. Илюткина Вера Николаевна (15.07.1894–03.09.1984) – 90 ç. 2 у.

12. Лампасова Татьяна Ивановна (25.12.1917– 06.10.2010) – 92 ç. 9 у.

13. Смирнова Надежда Федоровна (22.09.1916–03.04.2007) – 91 ç. 6 у.

14.Воробьева Мария Александровна (08.07.1920 – 06.12.2012) – 92 ç. 5 у.

15 Соловьева-Наперсткина Мария Егоровна(03.11.1918 ç.ç. – пурăнать-ха).

16. Ситова Феона Ефимовна (02.06.1923 ç.ç. – пурăнать-ха).

17. Тихонова Вера Николаевна (15.11.1923 ç.ç. – пурăнать-ха).

18. Воробьева Анна Тимофеевна (09.05.1924 ç.ç. – пурăнать-ха).

Треньел ялĕпе

1. Галкина Мария Терентьевна (13.05.1887–14.01.1984) – 96 çул 8 уйăх.

2. Леонтьева Васса Романовна (04.04.1900–21.04.1994) – 94 ç.

3. Мидюкова Мария Петровна (14.10.1919–23.03.2011) – 91 ç. 5 у.

4. Кошкина Анна Леонтьевна (09.07.1915–11.12.2006) – 91 ç. 5 у.

5. Тимошева Мария Осиповна (04.11.1919–06.06.2011) – 91 ç. 7 у.

6. Матвеева Матрена Матвеевна (12.11.1912–12.05.2004) – 91 ç. 6 у.

7. Эльмукова Анна Петровна (1896–15.05.1987) – 91 ç.

Нумай çул пурăнакан ăрусем (Тăрăн ялĕ тăрăх):

1. Самакина Мария Федоровна (1882–1971) – 89 çул 8 уйăх;

Самакин Василий Васильевич (1880–1961) – 81 ç.

Вёсен ачисем:

1) Пыркина Анастасия Васильевна – Еншике кавча кайнă (1905–2001), 96 ç. 2 у.

2) Макаева Фекла Васильевна, Тăрăн (1907–1997) – 89 ç. 10 у.

3) Самакин Дмитрий Васильевич –»– (1911–2005) – 93 ç. 3 у.

2. Гордеев Дмитрий Романович (1912– 2008) – 95 ç. 9 у.

3. Унăн аппăшĕ: Илеменова Анна Романовна (1906–2003) – 96 ç. 6 у.

Кĕçĕн Патăрьел (Йăлăм) ялĕ тăрăх (пĕр тăвансем):

1. Медведева Матрена Кузьминична, Тăрăна кавча кайнă (1903–1999) – 96 ç. 1у.

2. Каллина Екатерина Кузьминична, Йăлăм (1914–2010) – 95 ç. 4 у.

3. Ракчеева Наталия Кузьминична, Комсомольски районĕнчи Йăвашкелне кавча кайнă, (1923–2008) – 85 ç.

4. Федорова Мария Кузьминична, Патăрьел районĕнчи Кивĕ Катек ялĕнче пурăнать, 1926 ç.ç.

Ёлёк-авалтан пирён несёлсене хăрушă чирсем: холерă, чума, оспа, чахотка, тиф, туберкулез, трахома – асаплантарнă, çемйи-çемйипех çак хăрушă чирсене пула вилсе пётнё. 1920–30 çулсенче асăннă чылай чиртен патшалăх енчен пысăк тимлёх уйăрнипе хăтăлма май пулнă. Çапах та туберкулез, трахома чирёсем вăрçă хыççăн та сарăлнă чирсен шутне кёнипе вёсене пётерес пирки больницасем тума, 1944 çул тёлне кашни ялтах трахпункт уçма тивнё. Трахсестрасем трахомпа чирлё кашни çын патне килне çӳресе куçёсене сипленё.

1953 çулта Шăнкăртамри 50 койкăллă больницăна ятарласа туберкулезран сыватмалли çурт туса хунă.

Çак кёнекере пире вёрентекенсем çинчен çырнă чухне эпё Вера Васильевна Казанцева çинчен асăннăччё. Унăн ашшё Казанцев Василий Николаевич иртнё ёмёрён 30-40 çулёсенче Тăрăнти фельдшер пунктёнче фельдшер пулса тăрăшнă. Чылай çынна вăл медицина пулăшăвё панă, ватти-вёттине сыватас тесе вăй-халне шеллемен. Ваттисем каланă тăрăх, вăл хăлха пăявён шыççипе (свинка) аптракансене операци туса ура çине тăратнă.

Ялсенче трахома чирё анлăн сарăлнине пула ăна хирёç кёрешесси сывлăх хуралёнче ёçлекенсене кăна мар шухăшлаттарнă, патшалăхăн тивёçлё органёсенче ёçлекенсен те тивёçлё мерăсем йышăнмалла пулнă. Çак ыйтăва 1955 çулхи чӳк уйăхён 25-мёшёнче Тăрăн ял Канашён ёçтăвкомён ларăвёнче пăхса тухнă. Асăннă çул тёлне трахомпа Тăрăнта 84 çын, Кёçён Патăрьелёнче – 48, Треньелёнче 117 çын чирлё пулнă. Ялсенче чирлисем нумай пулнипе кашни ялта икшер трахсестра ёçленё. Çак ларура медицина ёçченёсем чире çёнтерме ял Канашёнчен пулăшу пулмасан сывăх вăхăтра çёнтерме пулмасть, тесе каланă. Çапах та ёçтăвком 1956 çулта виçё ялёпех трахома пётерес пирки йышăну кăларать. Çак чир вара халăха тата 12 çул хушши нушалантарать.

Трахома чирĕ ялсенче вăрăма тăсăлни сыватмалли медицина препарачĕсем ситменнипе кăна мар, тепĕр чухне чирлисем сипленессинчен пăрăннипе те çыхăннă. Ун пек çынсен списокне трахсестрасем ял Канашĕн ĕçтăвкомне тăратнă. Унта вĕсене штраф парса яваплăх тыттарнă, тепĕр чухне судпа та айăпланисем пулнă. Сăмах май, вырăнти пичетре кун çути курнă пĕр тĕслĕх илсе кăтартăпăр.

«Ирĕксĕр ĕçлеттермелле тунă.

Патăрьел çынни В. Мураков трахома чирĕнчен сывалассинчен пăрăнса çӳренĕшĕн халăх сучĕ ăна 6 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле турĕ».

А. Кошкин – милици участокри уполномоченнăйĕ.

«Авангард» район хаçачĕ. 17.05.1959 çул.

Ялсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсенчи сывлăх хуралĕн ĕçченĕсем.

Тăрăн ялĕнче:

Фельдшер пункчĕн заведующиĕ: Архипова Надежда Петровна (1945–11.07.1953– 27.08.1963 – 1964)

Трахсестрасем ялсенче 1968 çулччен икшер пулнă:

Лялькина Марфа Моисеевна (1946–1980),

Кальметова (Думилина) Вера Алексеевна (1954–1956 ç.ç.),

Самойлова (Игнатьева) Людмила (1965–1966),

Медведева Мария Владимировна (1966–1976),

Салмина Людмила Алексеевна (1976–1.03.1977),

Шекеева Зинаида Дмитриевна (1.03.1977 – июль 2008),

Воробьева (Лялькина) Алина Владимировна (июль 2008 – паянччен).

1953 çулхи утă уйăхĕн 11-мĕшĕнче Тăрăн ял Канашĕн сессийĕнче виçĕ ял территоринче трахома чирне хирĕç кĕрешесси çинчен ыйту пăхса тухнă. Тăрăнти Архипова Н.П. фельдшерица каланă тăрăх, ялти çынсен 60–65 проценчĕ трахома чирĕпе нушаланать. Анчах та сыва-

тас енĕпе услови çуккипе чирлисене сыватас ĕç йывăр тăни пирки ял Канашĕнчен пулăшу ыйтнă. Унпа пĕрлех Кĕçĕн Патăрьелĕн тата Треньел трахпункт сестрисем Фролова Анастасияпа Данилова Валентина та çав çитменлĕхсем çинчех чарăнса тăнă.

Треньелĕнчи трахпункт вулавăш çуртĕнче пулнă, çавăнтах конюхсем дежурствă чухне пурăннă. Çавăн пекех Йăлăмра та медицина ĕçченĕ валли уйрăм кĕтес пулман. Çапах, ĕçлеме çителĕклĕ услови пулмасан та, трахом чирне çĕнтерес тесе сестрасем вăй-халне те, вăхăтне те шеллемен.

Кĕçĕн Патăрьелĕнче:

трахсестра: Фролова Анастасия Ивановна (...1948–1968)

медсестрасем: Тихонова Валентина Ивановна, Раськина А.М., Кальметова (Медведева) Мария Владимировна, Елдратова ИринаМихайловна, Еслюкова Галина Аркадьевна.

Треньелĕнче:

трахсестрасем: Маскарева Мария ... (1943 – 1945...),
Данилова Валентина Федоровна (...1951–06.03.1959),
Соловьева Елизавета Владимировна (1951–1955),
Галкина Анна Васильевна (1955 –1956),
Галкина Вера Тимофеевна (16.03.1956–1960).

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсемччен Треньелĕнче трахома хирĕç кĕрешме икĕ сестра шутланса тăнă пулсан чире пĕтерсе пынă май вĕсен йышне чакарнă. 1960 çулта, фельдшер-акушер пунктне уçсан, унта Мясникова В.Ф. малалла ФАП заведующи пулса ĕçленĕ.

Мясникова Валентина Федоровна (1960 – 1981)
Сайдашева Федания Сейфулловна (1981 – 1985)
Галкина Вера Тимофеевна (1985 – 1986)
Мясникова Раиса Николаевна (1987–1988)
Логунова Татьяна Алексеевна (1989 – 1991)
Краснова Светлана Ивановна (1991 – 1992)
Макарова Альбина Алексеевна (1992 – 1993)
Логунова Татьяна Алексеевна (1993 – паянхи кунчен).

Т.А. Логунована сывлăха сыхлас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Хисеп грамотисем панă, вăл фельдшерсен хушшинче ирттернĕ конкурссенче икĕ хутчен малти вырăнсене йышăннăшăн диплом илме тивĕçнĕ.

Треньелĕнчи ФАП сывлăха сыхлас учрежденисен хушшинче малти опытлă шутланса тăрать. Кунта темиçе уйăхри ачаран тытăнса ватă асаттеасаннесем таранччен сывлăха тĕрĕслеме, кирлĕ пулсан малтанхи медицина пулăшăвĕ пама медицина ĕçченĕсен пултарулăхĕ те, вĕсен ĕçри условисем те пур. Треньелĕнчи фельдшерпа акушер пунктне 2000 çулта ĕçе кĕртсе хута янă. Вăл ача сачĕн çуртĕнче пĕрремĕш хутра вырнаçнă. Аялти хутрах – спортзал, ачасен ташламалли зал, тĕслĕхлĕ вулавăш вырнаçнă.

Çак кĕнекен маларахри сыпăкĕсенче эпĕ пирĕн енчи чăвашсен йăла-йĕрки ĕлĕк-авалтан куçса пырса хальхи вăхăта çитни çинчен çырнăччĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ: Сурхурипе Çăварни, Мăнкунпа Çимĕк тата ыттисем те – чиркӳ уявĕсемпе çыхăннипе, православи тĕнне йышăннă пирĕн мăн асаттесем çирĕп тытса пынă. Хăш-пĕр йăла-йĕрке тĕнпе çыхăннă, çавăн пекех вăл чăвашсен çак тĕне йышăничченех ăруран ăрăва куçса пынăскер, паянхи куна çухалман-ха. Çапах та чылайăшĕ яланлăхах манăça тухрĕ пуль.

Паянхи кун чăваш халăхĕн пуян культурине, йăли-йĕркине малашнехи ăрусем валли упраса хăварасси паллах, ватăсенчен, шкулта вĕрентекенсенчен, уйрăмах вара культура ĕçченĕсенчен нумай килет. Чăвашлăха халăхра аталантарса пырас ĕçре вулавăш ĕçченĕсен те ялта юлнă çамрăксемпе тĕрлĕрен викторина, диспут, паллă ентешсемпе тĕлпулу тата ытти культурăллă мероприятисем ирттерсен усă пулмалла. Сăмах май 2000-мĕш çулсенче районсенчи вулавăш (библиотека) çурчĕсенче модернизаци енĕпе çĕнĕлĕхсем кĕрте пуçларĕç. 2003 çултан тытăнса Патăрьелĕнче тĕслĕхлĕ вулавăш уçаççĕ. Треньелĕнче çавăн пек вулавăш 2007 çулта П.Логунова заведующи чухне хута кайнă. Ун

хыççăн –Тăрăнта (заведующи Н.Коннова), районта 36 вулавăшран 26-шĕ тĕслĕхлĕ шутланаççĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50–80 çулĕсенче çĕршыври, çавăн пекех хамăр пурăнакан вырăнти паллă кунсем умĕн ялсенчи клуб тата культура çурчĕсенче ял çамрăкĕсем асăрааххисемпе пĕрле ĕç хыççăн концерт-спектакль кăтартса куракансене савăнтаратчĕç, уявсене тĕрлĕрен смотр-отчет хатĕрлетчĕç. Район хаçатĕнче кĕскен çавăн пек очерк та тухнăччĕ.

«Культура работникĕсен профсоюзĕн районти пухăвĕнче Культура пайĕн заведующийĕ В. Ильметов колхозсемпе ял Совечĕсен Ленинла смотр-отчĕтĕпе паллаштарчĕ. Уйрăмах вăл «Рассвет», «Путь Ленина», «Знамя» колхозсенчи хорпа ташă коллективĕсем тата уйрăм çынсен ăсталăхне палăртрĕ.

С. Шекеев. «Авангард» хаçат. 02.06.1970 ç.»

«Путь Ленина» колхозри художествăлла пултарулăх кружокĕн активлă членĕсем: Маркел Емельянов, Аркадий Николаев, Петр Самакин, Валентин Падюкин, Василий Крылов тата ытти çамрăксем смотр-отчĕта хатĕрленнĕ май, хăйсен ăсталăхĕпе чылай куракансене савăнтарнă юрри-ташшипе Тăрăн тата Патăрьел Культура çурчĕсенче. Артисткăран пĕрре те кая мар шăрантаратчĕç Елена Крылова, Зоя Кузьмина, Антонина Семенова тата ыттисем те пĕччен юрламалли юрăсене. Вĕсенчен пĕри – Е.А. Крылова юрланă «Салампи юрри» паянхи кунчченех манăн асра юлнă. Ҳам та çак колхозри художествăлла пултарулăх кружокне 1968–1970 çулсенче хутшăннăран, астăватăп-ха ĕç хыççăн каçсенче Тăрăн клубĕнче çамрăксем репетицисене çӳретчĕç. Аврам Бурундуков композитор баянпа ертсе пырса юрă-ташă ăсталăхне пире алла илме хăнăхтарчĕ. Сцена çинче Герман Лебедев кĕвĕленĕ «Тăван çĕршыв» юрра мăнаçланса юрлаттăмăр, кайран вара вăл Чăваш Республикин гимнĕ пулса тăчĕ. Чăн

та çав çулсенче «Путь Ленина» колхозăн пултарулăх кружокĕ районта лайăххисен шутĕнче пулнă. Культура вучахне çак ялта Л.М. Лялькинпа В.Я. Петров музыкантсен пуçарулăхĕпе те сӳнме паман, ытти ялсене час-часах тухса çӳресе концертсем кăтартнă.

Тăрăнти культура учрежденийĕн ертӳçисем.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн Тăрăн ялĕнче вăрçăран тавăнманнисене асăнса лартнă палăк вырăнĕнче лавккапа юнашар кивелнĕ çурт пĕренисенчен пуçтарса клуб, ун çумне тĕртсе вулавăш çурчĕ тунăччĕ. Малтанхи клуб заведующийĕ вăрçă инваличĕ Петр Павлович Краснов пулнă. 50–60-мĕш çулсенче çак культура çуртне ертсе пыракансем улшăнсах пынă.

1. Воробьев Петр Иванович (1948 – 1949 çулсем)
2. Думилин (Алексей Петрович?) (1950 – 1952 ç.ç.)
3. Алексеева Мария Ильинична (1953 – 1958 ç.ç.)
4. Бородова Елизавета Антоновна (1958 – 1960 ç.ç.)
5. Самакин Иван Александрович (1960 – 1962 ç.ç.)

Ишĕлсе анас патне çитнĕ кивĕ клубра кăмака хутсан та хĕллехи сивĕ каçсенче ăшăнайманнипе ял çыннисен паллах, юрлама-ташлама, кино е спектакль курма çӳресси чĕр нуша пулнă. Çавăнпа та 1960-мĕш çулта клуб ертӳçин тилхепине тытнă И.А. Самакин малтанах çĕнĕ клуб тăвас пирки яваплă организацисемпе вĕсен пуçлăхĕсем патне хутлама пикенет. «Путь Ленина» колхоз председателĕнчен В.С. Тимошевран клуб тунă çĕре строительство материалĕсем уйăрас пирки ыйтса çине тăрать. Çурт никĕсне янă хыççăн çав çулхине Улатăр енчи вăрмантан йывăç касса Патăрьелĕнчи хăма çуракан рама патне турттарнă.

1962 çулта клуба кирпĕчрен хăпартса лартса строительство ĕçĕсене вĕçлесе пĕтериччен çăва тухсан Иван Александровичăн Совет çарне тухса кайма тивет.

Клуб проектне тунă чухне пĕтĕмпех пăхса хăварманнипе, строительство материалĕсем çителĕклĕ пулманнипе, çавăн пекех çурт тăррине шиферпа лайăх витменнипе те пуль, Тăрăн ял Канашĕн ĕçтăвкомĕ 1963 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче çакăн пек çитменлĕхсем пирки йышăну кăларать.

«...выделить деловой хвойный лесоматериал в количестве 30 ф.м. для достроительства Туруновского сельского клуба, на приобретение инвентаря, монтажной работы и для окраски выделить финансовые средства в сумме 5000 руб. для строительства моторной будки и отопления водяной – 800 руб».

Тепĕр ларури (17.02.64 ç.) протокол: «О ходе строительства Туруновского клуба».

Тимошев В.С. «Помещение Туруновского сельского клуба крыто шифером неважно, течет вода». Решили: Выделить из районного бюджета средства на достроительство Туруновского клуба 1000 руб. и перечислить на счет колхоза «Путь Ленина».

Çав çул укçа уйăрнă хыççăн тин клуб çумне кинобудка, кочегарка купаласа хураççĕ, çуртăн шал енче шывпа ăшăтма тимĕр пăрăхсем вырнаçтараççĕ. Каярах çурт тăрринчен çумăр аннипе шиферне те улăштарса çĕнĕрен витсе тухаççĕ.

И.А. Самакин хыççăн малалла клуб заведующи пулса ĕçленĕ:

6. Ашмарина Тамара Петровна (1962 – август 1963 çç.)
7. Лялькина Мария Григорьевна (02.09.1963–10.03.1964 çç.)
8. Медведев Иван Егорович (11.03.1964 – декабрь 1964 çç.)
9. Илеменова Роза Семеновна (январь 1964 – 30.03.1965 çç.)
10. Крылов Валерий Алексеевич (01.04.1965 – март 1966 çç.)
11. Самакин Иван Петрович (март 1966 – март 1968 ç.ç.)
12. Крылов Александр Петрович (апрель 1968 – март 1970 çç.)
13. Алексеев Николай Андреевич (апрель 1970 – 1972 çç.)
14. Крылов Александр Петрович (1972 – май 1974 çç.)
15. Шуряшкин Владимир Николаевич (15.06.1974 – 1975 çç.)
16. Петрова Лидия Григорьевна (1975 – 1976 çç.)
17. Самакин Иван Петрович (1977 – 1978 ç.ç.)

18. Алексеев Анатолий Дмитриевич (1979 – 1983 çç.)
19. Илехметова Валентина Петровна (1984 – 1985 çç.)
20. Куракова Валентина Пантелеймоновна (1985 ç.)
21. Солдатов Сергей Васильевич (1985 – 1986 çç.)
22. Медведева Татьяна Николаевна (1987 ç. – 2009)

2009 çулта Тăрăн ял тăрăхĕнчи культура учрежденийĕсемпе вулавăшсене (библиотекăсене) пĕрлештерес енĕпе организацилле улшăнусем пулса иртеççĕ. Ял халăхне вулавăшсемпе тивĕçтерес тата культура аталантарас енĕпе ĕçлекен центр ĕçлеме тытăнать: центр директорĕ пулма П.Л. Логунована çирĕплетнĕ. 2009 çултан тытăнса Т.Н. Медведевапа Е.А. Сорокина Тăрăнти тата Треньелĕнчи культура çурчĕсен администраторĕсем пулса юлаççĕ. Муниципаллă культура учрежденийĕн центр директорĕ пулса 2011 çултан тытăнса паянхи кунччен Ольга Николаевна Маркова ĕçлет.



Кĕçĕн Патăрьелĕнчи 60-мĕш çулсенчи клуб (халь вăл çук).

Кĕçĕн Патăрьелĕнчи клуб заведующийĕсем пулса тĕрлĕ çулсенче çаксем ĕçленĕ: Богданова Анна Михайловна (1963 ç.), Рубцова Е.Н. (1970), Тихонов Ю.П. (1973), Илюткина Е.Я. (1976 ç.), Платонова Зоя Федоровна (1981 ç.), Воробьев Анатолий Васильевич (1985 ç.), Лампасов Николай Александрович (1989), Цветков Сергей Петрович (1994) тата ыт. те.



Треньелĕнчи тĕслĕхлĕ вулавăшра: П. Логунова (библиотекарь), Галка Ваçлейĕ, А. Галкина, И. Кошкина. 2008 ç.

Треньелĕнчи культура учрежденийĕсемпе вĕсен ертӳçисем

1947 çулта Треньелĕнче вулав çурчĕ уçнă, вăл «Октябрь ялавĕ» колхоз правленийĕн пĕр пӳлĕмĕнче вырнаçнă. Каярахпа трахпунктпа пĕрле уйрăм çурта куçаççĕ.

2007 çулхи нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕнче Треньелĕнчи ача садĕнче тĕслĕхлĕ вулавăш пӳлĕмĕ уçнă. Пĕрремĕш библиотекарĕ Полина Логунова пулнă.

1957 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче Мичурин ячĕллĕ колхоз вăйĕпе клуб валли уйрăм çурт туса хута ярса ăна клуб статусне панă.

1999 çулхи раштав уйăхĕнче «Новокотяковское» хуçалăх вăйĕпе кирпĕчрен хăпартса лартнă çĕнĕ культура çуртне хаваслă лару-тăрура уçнă.

Тĕрлĕ çулсенче клуб – культура çурчĕн ертӳçи пулса аяларах кăтартнă çак ял çыннисем ĕçленĕ:

1947–1953 çулсенче – Логунов Дмитрий Иванович.
1953–1959 ç.ç. – Краснов Александр Тихонович.
1959–1960 ç.ç. – Кошкин Александр Иванович.
1960–1962 ç.ç. – Мясников Анатолий Антипович.
1962–1963 ç.ç. – Алексеев Петр Иванович.
1963–1990 ç.ç. – Галкина Анна Михайловна.
1991–1992 ç.ç. – Лепешкин Николай Михайлович.
1992–1999 ç.ç. – Галкина Александра Алексеевна.
2000–2002 ç.ç. – Логунова Полина Леонидовна
2003–2005 ç.ç. – Галкина Александра Алексеевна
2005 – паянхи кунччен – Сорокина Елена Алексеевна.




Тăрăнти культура çурчĕ.



2012 çулхи раштав уйăхĕн 15-мĕшĕ. Тăрăнти малтанхи клуба тунăранпа 50 çул çитнине паллă тума культура çуртне 13 сехетре Тăрăн ял çыннисем йышлă пуçтарăннă. Фойере стена çинче çур ĕмĕр хушшинче клубра ĕçленисен сăнӳкерчĕкĕсем тата культура вучахне тытса тăрас тесе тăрăшакансем çинчен фотостенд вырнаçтарнă.

Пуçтарăннă халăх лăплансан малтан Тăрăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ К.Ф. Михеев сăмах илсе клуб историне, унта ĕçленĕ çынсен ячĕсене асăнчĕ, вĕсене тав хучĕсем пачĕ. Çавăн пекех тухса калаçакансен хушшинчекультура çурчĕн администраторĕ Т.Н. Медведева, клуб заведующийĕсем пулнă И.А. Самакин, Л.Г. Петрова пенсионерсем тухса хăйсем ĕçленĕ чухнехи вăхăта аса илчĕç. «Исток» агрофирмăн ертӳçин çумĕ И.К. Соловьев, А.И. Самакин предприниматель тата шкул-сад ертӳçисем культура çурчĕ валли парнесем пачĕç. Çавăн хыççăн Аслă Арапуç, Чăваш Ишек ялĕсенчен килнĕ культурă çурчĕсен çумĕнчи художествăлла пултарулăх ушкăнĕсем тата уйрăммăн концертсем пачĕç. Тăрăнти 40–50 çул каялла хорта юрланă ватăсем тата халь-

хи фермă, культурăпа медицина ĕçченĕсем чăвашла тата вырăсла юрăсемпе курма килнĕ ял çыннисене савăнтарчĕç. Вăхăта нумай тăсмасăр художествăлла пултарулăх ушкăнне йĕркелесе ярса паянхи асатте-асаннесем малашне концертсемпе ялта кăна мар, районти ытти ялсене те концертсемпе тухса çӳреме шухăш тытрĕç. Вĕсем ялти культура вучахне 1960–1980 çулсенчи пек ялкăшса тăмалла тăвасшăн.



Треньелĕнчи çĕнĕ клуб.

Спорт вăййисем пирĕн пурнăçра.

Ĕлĕк-авалтан ял çынни хирти ĕçсене пĕтерсен канма улăха–лапама, е вăрман хĕррине тухса халăх хушшинче сарăлнă спорт вăййисенче тупăшнă: вăй-питти арçынсем те, ачасем те, пĕр-пĕрне пиçиххинчен ярса тытса кĕрешнĕ, пĕр центнер тултарнă пăрçа миххине кам аяккарах йăтса кайма пултарнипе ăмăртнă. Ушкăнпа ăмăртмалли вăйăсем те пулнă ун чухне. Атте каласа панă тăрăх, вăл ача чухне иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче çитĕннисем Пăла хĕрринчи лапамра икĕ ушкăна пайланса лапталла выляннă. Ун чухне кăна мар,

каярах та (хам та астăватăп) çав вылямалли хатĕрне (тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕрен калаççĕ – тупă, пӳске, мечĕк) лавккара сутман. Ăна лаша, е ĕне çăмĕнчен йăваласа, йывăрăшĕ пулма варрине чул татти хурса выляннă.

Ачалăхри вăйăсене аса илме ыйтсан пирĕнпе тантăшлисем тата кĕçĕнреххисем чылайăшĕ ушкăнпа выляннă çуллахи вăйăсенчен – вăрçăлла, патшалла, футбол, лапталла, чушкăлла, хĕлле вара йывăçран ăсталанă коньки çине тăрса пăрпа витĕннĕ Пăла çийĕн мечĕкпе хоккей вылянисене аса илеççĕ. Ботинкăллă конькисем 60-мĕш çулсенче анчах ялсене çитрĕç. Республикăри тĕрлĕ районта кăна мар, тĕрлĕ ялта уйрăм вăйăсем выляннă. Çавăн пекех пĕр вăйăн ячĕ те тĕрлĕрен пулнă. Чушкă вăййинех Тăрăн ачисем «вун шар», «патакла» вăйăа «вуник шар» ят панă. Çак «вуник шар» вăйăи валли ачасем малтан хăма, каска е вут сыппи, вун икĕ штук пĕр шитрен вăрăмрах (18–20 см) кĕске патак хатĕрленĕ. Хăмана вут сыппи çине пĕр вĕçне çĕре перĕнтерсе урлă хунă, çав еннех патаксене вырнаçтарнă. Тепĕр вĕçĕ тупă кĕпçи евĕр сывлăшалла каçăрăлса тăнă. Шăпа ярса пĕр выляканĕ хăман сывлăшра тăракан пуçĕ çине икĕ урипе сиксе пусать те патаксем çӳлелле хăпарса каяççĕ. Çав вăхăтрах пурте тарса пытанаççĕ, хăма патĕнче юлаканни çĕр çине ӳкнĕ патаксене пуçтарса хăма çине хурать. Хăй вара ыттисене шырама тытăнать, пурне те тупса пĕтерсен, малтан тупаннă вăйçине хăма патне тăратса хăй хăмана тапса патаккисене сывлăшалла вăркăнтарать. Тупса пĕтериччен вăйă вылякансенчен пĕри те пулин хăма патне унăн хуралçинчен маларах çитсе хăмана тапсан хăма хураллаканни татах патаксене пуçтарса хăма çине хурать. Ыттисем çав вăхăтра тарса пытанаççĕ.

Эпир ялти пĕр урам ачисем «наккули» текен вăйă выляттăмăр. Çак вăййа выляма икĕ патак (пĕри 60–70 см тăршшĕ), тепри икĕ вĕçне те шĕвĕртнĕскер, 18–20 см) кирлĕ. Çĕр çинче малтан шĕвĕртнĕ кĕске патакăн пĕр вĕçĕ кĕмелĕх шăтăк чаваççĕ. Вара çав патакне пĕр вĕçĕпе чалăшшăн шăтăка чиксе тепĕр вĕçĕнчен вăрăм патакпа малалла çапса ямалла. Çĕр çине ӳкнĕ

вырăнтан, сăмахран кашни вăйçă 10 хутчен çав пĕчĕк патакне малалла çапса пырса шăтăкран аяккарах каять, çав çĕнтерӳçĕ пулса тăрать. Çак вăйăа вылякансем уйрăммăн та командăсемпе те хутшăнма пултараççĕ.

Хĕрачасем çĕр çине пурăпа чĕрсе тăваткăлсем, йĕрсем тăватчĕç, Хулăн кĕленче ванчăкне хăрах ура çине тăрса çав йĕрсем урлă каçарса сикмелле вылятчĕç.

Яшсен-хĕрсен йышне кĕрсен эпир вара каçпа клубра пиçиххи пăрахмалла выляттăмăр. Ĕнерхи каç кам мĕнле хĕре ăсатма кайнине пĕлес тесе урайне пиçиххи пăрахатчĕç. Хĕре кăмăлланине, каçхине килне ăсатнине пытарсан, йĕкĕтне пиçиххипе çаптаратчĕç.

Хăш-пĕр вăйăсем пурнăç çĕнелсе улшăннăçемĕн, кивелсе манăça тухаççĕ. 60–70 çулсенче Тăрăн ачисем футбол вăййипе питĕ интересленетчĕç, ял çамрăкĕсем «Путь Ленина» колхозĕн пĕрлештернĕ командинче вылякансем те пурччĕ. Вениямин Кошкин, Юрий Алексеев, Владимир Одиноков, Иван Ашмарин тата ыттисем те ытти район командисене хирĕç те выляннă колхоз ятне хӳтĕлесе. Арман лаппине вара Тăрăн, Йăлăм ялĕсенчен ватти-вĕтти футбол вăййине курма анатчĕç. Пурăна киле çак вăйă икĕ ялта сĕвĕрĕлсе пырать пулсан, Треньелĕнче вара М.А. Зайцевпа И.Н. Иванов пуçарса янипе футбол вăй илсе каять. 1970 çулсенче вĕсен эстафетине В.Л. Муськинпа П.А. Романов йышăнаççĕ, çамрăксене ертсе пырса тĕрлĕ предприятин командисемшĕн хутшăнса районта кăна мар, республикăра та палăра пуçларĕç.

Н.А. Кошкин кирпĕч завочĕн ертӳçи пулса ĕçлеме тытăнсан вăл хавхалантарса тата пулăшса пынипе Треньел çамрăкĕсем «Керамик» футбол команди йĕркелеççĕ. Тĕрлĕ вăйăсенче вăл пĕрре кăна мар районта малти вырăнсене йышăнать. 1994-мĕш çулта çак футбол команди районта мала тухса çĕнтерӳ кубокне те выляса илнĕччĕ.

Тăрăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.Илюткин пуçарнипе 2003 çулхи кăрлач уйăхĕн 18-мĕшĕнче А.Т. Краснов вĕрентекене асăнса республикăри юр çинче вылямалли футбол турнирĕ иртнĕ.

Каласа хăварас килет çапах та – хăш-пĕр вăйăсене: çăмăл атлетикăпа танах, лапта, чушкă, тата ытти ял спорт ăмăртăвĕсене Патăрьел районĕнчи ачасен спартакиадин списокне, çавăн пекех республикăра ялти спорт вăййисен программине кĕртнĕ.

2010 çулхи çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче Патăрьелĕнче районсем хушшинче ялсен çуллахи спорт вăййисем пулса иртнĕччĕ. Унта пирĕн районти чушкăлла выляканскем малти вырăна тухса çав çулхинех Тутарстанри Елабуга хулинче пулса иртнĕ Пĕтĕм Раççейри ялсен çуллахи спорт вăййине хутшăнчĕç. Çав виçĕ спортсменран тăракан командă (Г. Елкин, Д. Коннов тата А. Орлов) 2012 çулта та Шупашкарта иртнĕ Пĕтĕм Раççейри ялсенчи спорт вăййисене хутшăнса лайăх ăмăртакан 10 команда ушкăнне кĕчĕ. Çак спорт вăййисен ăмăртăвĕнче Чăваш Республикин пĕрлештернĕ команди Раççейри ытти командăсем хушшинче пĕтĕм программа тăрăх пĕрремĕш вырăна тухма пултарчĕ.



Сулахайран сылтăмалла: Г. Елкин, А. Орлов, Д. Коннов. Шупашкарти «Олимпийский» стадион. 2012 ç.



Треньелĕнчи футболистсен пĕр ушкăнĕ. *Малта:* М.Фроловпа А.Анисимов; *варринчи ретре:* Ю.Макаров, В.Зайцев, В.Макаров, В.Задоров; *хыçалти ретре:* А.Пизенев, И.Романов, В.Паймин, О.Романов, О.Анисимов, В.Журавлев. 1998 ç.

55 çул каялла районти «Авангард» хаçатра тухнă кĕске очерк:


«Городкилле вылярĕç.

Татмăш ялĕнчи çамрăксем урамсен командисем хушшинче тĕл пулу ирттерчĕç. Турикас команди 10 фигурăна 17 патакпа çапса кăларса мала тухрĕ».



Паллă спортсменсем:

1. Юманова Ирина Петровна 1990 çулта Треньелĕнче çуралнă. Хăвăрт утассипе тĕнче класслă спорт мастерĕ, Европа кубокĕн бронза призерĕ, Тĕнче чемпионачĕн кĕмĕл призерĕ. 2012 çулта вăл Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетне вĕренсе пĕтернĕ.



2. Сорокина Зинаида Николаевна, 1952 ç.ç. (Тăрăн), çăмăл атлетика енĕпе СССР спорт мастерĕ (1974), Мускавра пурăнать.

Фролов Владимир Николаевич, дзюдо кĕрешĕвĕпе Раççей Федерацин спорт мастерĕ, 1955 ç.ç. (Кĕçĕн Патăрьел), Омск хулинче пурăнать.

Цветков Сергей Петрович, ирĕклĕ майпа кĕрешсе Раççей Федераци спорт мастерĕ, 1973 ç.ç., 1994 ç.,(Кĕçĕн Патăрьел).

Цветков Александр Николаевич, 1981 ç.ç., ирĕклĕ майпа кĕрешсе Раççей Федерацин спорт мастерĕ, 2005 ç. (Кĕçĕн Патăрьел).



3. Фролов Кирилл Михайлович, 1993 ç.ç., хăвăрт утассипе Раççей Федерацин спорт мастерĕ (2012 ç.), Раççей чемпионатĕн бронза призерĕ, юниорсен хушшинче Тĕнче кубокне тата ылтăн медаль çĕнсе илнĕ (Треньел), Мускавра патшалăх педагогика университетĕнчи физкультурăпа спорт факультетĕнче вĕренет.

Патăрьел районĕнче кашни çул Акатуй-Сабантуй уявĕнче халăха пуçтаракан спорт вăййи вăл – иппо-



В.Илютин Патăрьел Акатуйĕнчи ăмăртăва хатĕрленет. 2009 ç.

дромра çăмăл кӳме кӳлнĕ лашасен ăмăртăвĕ. Çак анлă сарăлнă хăйне евĕрлĕ спорт вăййине район тулашĕнчен кăна мар, ытти республика-обласран килсе хутшăнаççĕ. «Исток» агрофирмăра фермă заведующи пулса ĕçленĕ Валерий Илюткин та сахал мар çаван пек ăмăртусене районта, хамăр республика тулашĕнче хутшăннă. Малти вырăнсене тухса вăл тĕрлĕрен парне-приз илме тивĕçнĕ.

ПИРĔН ЕНТЕШСЕМ – ЛИТЕРАТУРА, ПОЭЗИ ТАТА ИСКУССТВО ĔÇЧЕНĔСЕМ

Пăлаçи Юхма ен çыннисем Совет самани чухне тырпул пухса илессипе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе кăна чапа тухман. Патăрьел районĕнчи ялсенче паллă ученăйсем, çар çыннисем, çавăн пекех писатель-поэтсемпе артистсем çуралса ӳснĕ. Вĕсем хăйсен çитĕнĕвĕсемпе районпа республикăра кăна мар, çĕршывĕпех палăрнă. Чылайăшĕ хисеплĕ, тава тивĕçлĕ ятсене илме тивĕçлĕ пулнă, литература, искусство анинче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн вĕсене хисеплĕ е тава тивĕçлĕ ят парса чысланă, тĕрлĕрен премисемпе хавхалантарнă. Çавăн пек пултаруллă çынсем Тăрăн ял тăрăхĕнче те пулнă, пур та, малашне те пулĕç. Вĕсенчен иккĕшĕ: И.П. Думилин тата Ф.А. Ситов Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса пуçĕсене хунă.

Илья Петрович Думилин



1911 çулхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче Тăрăн ялĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Ялти пуçламăш шкулта вĕренсе тухсан Туçари хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче пĕлӳ пухнă. Ачаранах сăвăсем çырма тытăннă. Д.Р. Гордеев аса илĕвĕ тăрăх, вĕсем пĕр вăхăтра ялта пĕр касрах çуралса ӳснĕ, ача-пăча чухне вăхăта пĕрле выляса ирттернĕ. Çамрăклах Илле сăвăсем çырма тытăннă, вĕсене вуласа панă хăйĕн тантăшĕсене. «Яш çулĕсенче хирте утă çулнă чухне е авăн çапнă вăхăтра тата ытти хирти ĕçсене тунă чухне пĕр вăхăт хушши çухалса

илетчĕ. Апат вăхăтĕнче е каннă вăхăтра хут листи çине шăрçаланă сăввисемпе тухса ĕç çыннисене шӳтлĕ сăвăсем вуласа парса кăмăл-туйăма çĕклетчĕ», – тет вара. И.П. Думилин республикăра тухса тăракан «Канаш» (хальхи «Хыпар») хаçатра сăвăсем кăна мар, ял пурнăçĕ çинчен статьясем те çырса тăнă. 17 çултах вăл Шупашкара асăннă хаçат редакцине ĕçе вырнаçать, каçхине хăйĕн пĕлĕвне малалла тăсать. Çамрăка пултарулăх çулĕ çине тухма унăн паллă ентешĕ Митта Ваçлейĕ те пулăшнă, ăна ырă канашсем панă.

1928 çулта Илле Думилинăн малтанхи сăввисемпе калавĕсем пĕрин хыççăн тепри республикăри хаçат-журналсенче пичетленсе тухма тытăнаççĕ. Тепĕр çулах вăл инçетри çурçĕре тухса кайнă, унти паллă стройкăсем тăрăх курса çӳренĕ. 1933 çулта каллех яла тавăннă. Вăл районти ытти çамрăк литераторсем пекех (Хветĕр Çитта, Пракка Сатурĕ, Митта Пĕтĕрĕ) «Паянхи сас» (хальхи «Авангард») хаçатра вăй илнĕ, унта сăвăсем, калав-очерксем çырса пичетленĕ. 1934 çулта Чăваш патшалăх издательстви И.П. Думилинăн сăввисене «Хумсем» ятлă уйрăм кĕнекене пуçтарса кăларать. Тăван çĕршыв, тăван тавралăх, туслăх, юлташлăх – çаксем унăн пултарулăхĕнчи тĕп темăсем. Илья Петрович лирикăлла сăввисене вуланă чухне яка та çăмăл, ярăнса утса пынă пек пĕр такăнмасăр шутарса пыратăн. Пурнăç илемĕ вĕсенче çырма тĕпĕнчи çăлкуç тапса тăнă евĕрлĕ юхса тăрать. Çакна унăн «Елисса», «Юрă», «Мăйăр» тата ытти сăвăсенче те асăрхама пулать. Çавăнпа та сăвăçăн пĕр сăввине те пулин вулакан патне çитерес килчĕ.

Мăйăр

Юрларăм та юрларăм – юрă тупрăм.
Вăрманта çӳрерĕм – мăйăр пухрăм.
Çулçă ӳкрĕ, вĕçрĕ çиле май –
Эп çăп-çăмăл утрăм киле май.

Мăйăр пухрăм – кĕсьене кĕмерĕ,
Пĕр хĕре тĕл пултăм, вăл илмерĕ.

(Малтанхи хут куртăм ку хĕре –
Хăвăрт-хăвăрт тапрĕ ман чĕре.)

Хĕре сĕнтĕм: «Тăхтасам, чĕкеçĕм.
Ме-ха пĕр ывăç шĕшкĕ кучченеçĕ.
Хам суйланă тутлă кучченеç,
çимесен те пăх-ха катса çеç».

Хĕр йăл! кулчĕ, – ытарма çук капăр.
– Маййăр, – терĕ, – манăн хамăн та пур,
Ан тив, санăн тутлă пултăрах,
Хам татни çапах та тутлăрах.

Çурçĕртен тăван ене тавраńсан пирĕн ентеш пуçламăш шкулсенче учительте ĕçленĕ. 1937–38 çулсенче Турханти «Коммунар» район хаçачĕн секретарĕ пулнă, ялти драмкружока ертсе пынă. 1938–1939 вĕренӳ çулĕсенче вăл Шăхачри çичĕ çул вĕренмелли шкулта чăваш чĕлхине вĕрентнĕ, тепĕр çулĕнче хальхи Улатăр районне кĕрекен Кивĕ Эйпеçри вăтам шкулта вĕренӳ пайĕн заведующийĕнче ĕçленĕ. 1940–41 çулсенче çак шкултах директор пулнă. 1941 çулхи фашистла Германи пирĕн çĕршыва вăрçăпа тапăнса кĕрсен раштав уйăхĕнче çамрăк арăмне хăварса Илья Петрович Думилин фронта тухса кайнă. Вăрçă хирĕнчен тавраńса хăйĕн хĕрне курма ăна турă пӳрмен, 1942 çулхи чӳк уйăхĕнче вăл Сталинград патĕнчи çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ.

Патăрьел районĕн çыннисем Илья Петровича манмаççĕ, унпа тивĕçлипе мухтанаççĕ. Унăн «Салтак тӳмисем» ятлă сăввине Тăрăнта пурăнакан Л.М. Лялькин сăвăç тата хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор юрă çине хурса илемлетнĕ.

2011 çулхи утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче Тăрăнти культура çуртĕнче чăваш поэчĕ И. Думилин çуралнăранпа 100 çул çитнине паллă тунă. Унта район администрацин пуçлăхĕ Н.Глухов, Илья Петровичăн хĕрĕ Нина Ильинична ывăлĕн çемйипе, пирĕн ентеш – паллă поэтесса

Раиса Сарпи, Светлана Асамат композитор-юрăç, Тăрăн ялĕнче çуралса ӳснĕ, халь Шупашкарта пурăнакан «Кĕрсе тух» лавкка директорĕ А.Самакин предприниматель килнĕ. Поэтăн паллă кунне çавăн пекех унăн тăванĕсемпе ял çыннисем, Тăрăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ К.Михеев хутшăннă.

Федот Александрович Ситов (Хветĕр Çитта)



1914 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнче хальхи Патăрьел районне кĕрекен Кĕçĕн Патăрьелĕнче çуралнă. 16 çулта чухнех комсомола кĕнĕскер, вăл «Малое Батырево» колхоза йĕркеленĕ çĕре хутшăнать. Педагогика техникумне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн пĕр çул хушши Сăкăт шкулĕнче учитель пулса ĕçлет. Çамрăк журналистăн сăввисемпе калавĕсем, Патăрьел район хаçат редакцийĕнче ĕçлекен Митта Ваçлейĕ хавхалантарса пынипе республикăри хаçат-журналсенче пичетленме тытăнаççĕ.

1932 çулта вăл «Пионер сасси» хаçат редакцине ĕçлеме куçать. Кунта вăл паллă писательсемпе тăтăшах тĕл пулнипе вĕсенчен вĕренсе çырас ăсталăха тата ӳстернĕ. Асăннă хаçатра ĕçленĕ май Ф. Ситов ачасем валли те калавсемпе пьесăсем çырса кĕнекесем кăларнă.


Пичет ĕçĕпе интересленнине тата литература пултарулăхне шута илсе Хветĕр Çиттана, 22 çулхи чăваш ачине, Ленинградри журналистика институтне вĕренме янă. 1938 çулта ăнăçлă вĕренсе тухсан ăна Чăваш Патшалăх издательствин редакторĕ пулма

çирĕплетнĕ. Çав çулхинех кĕркунне Ф. Ситова Хĕрлĕ çара илнĕ. Малтан вăл салтак, кайран, çар училищинчен вĕренсе тухсан, политрук пулнă, майора çити ӳснĕ. 1939 çулта дивизири «Красноармеец» хаçатăн ответлă секретарĕ пулнă, шурă финсене хирĕç пынă вăрçа хутшăннă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вăл малтанхи кунранах. Ханко çур утравĕнче оборонăра тăнă, Ленинград хулине сыхланă. Пăшалпа та, перопа та кĕрешнĕ, дивизин «Защитник Родины» хаçатра малтан секретарь, 1942 çултанпа – редактор.

Çитта хаçат кăларнипе кăна çырлахман. Час-часах ăна малти позицире, окопсемпе траншейăсенче курнă. Салтаксемпе кăмăллăн, чуна уçса калаçма юратнă, вĕсене хавхалантарнă.

Гварди майорĕ Ф.А. Ситов 1944 çулхи нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнче çапăçу хирĕнче йывăр аманнă, темиçе кунран ĕмĕрлĕхех куçне хупнă.

Галкин Василий Григорьевич (Галка Ваçлейĕ)



1929 çулхи пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче Треньелĕнче çуралса ӳснĕ. Çамрăклах çул çӳреме юратнăскер, вăл тĕрлĕ çĕре çитсе курать. Малтанах Екатеринбург таврашне вербовкăпа ĕçлеме тухса каять. Çул çитсен тăватă çул хушши çар хĕсметĕнче пулма тӳр килет унăн. Пушăрах вăхăтра чылай хайлав çырса хатĕрлет. Пулас сăвăç Мускав тăрăхĕнче, Казахстанра тата Кавказра пулнă хыççăн çуралнă ялне тавраçнать. Çавăн чухне пуль унăн пуçĕнче тăван еншĕн,

тăван килшĕн, çывăх çынсемшĕн тунсăхланă май «Яла тавраннипе» сăвă йĕркисем шăрçаланаççĕ.

Хавхаланса та хумханса
Ир кӳлĕм
Эп тавраннапа
Çуралнă ялăма.
Сенкер тӳпе те
Ылтăн пек уй-хирĕм
Ынатлăн йышăнсамăр
Салама.

Умра йăлтăртатса
Юхать «Ыхра»,
Ача сăпки пек
Илемлĕ эсĕ!
Хыçра арман, ав,
Тарăн ыйхăра
Канать, мăнтарăн,
Ман сасса илтмесĕр.

Илтмеççĕ Сассăма
Масартисем те,
Пуçа тайса эп
Асăнап сире...
Ял еннелле
Куç ывăтса ал сĕлтрĕм,
Пăлханнипе
Сиксе тапать чĕре.


Çуралнă кил!
Ытла та-çке эс çывăх,
Ялтан хакли
Курмарăм çӳресе.
Сире пулах, тен,
Тавраптăм эп сыввăн,
Чун тӳсейми
Тунсăхлăха сирсе.

Хутлать тул шалăн
Тӳсĕмлĕ аннеçĕм,

Пире кӳресшӗн чыс
Чӑвашӑн йӑлипе.
Ак, тантӑшсем ман
Калаçса кӗреççӗ,
Сас илтӗнет
Ача чухнехи пек...

Галка Ваçлейӗ вулакан патне нумай çул ӗнтӗ сӑвӑсем çырса районта тухса пыракан хаçат урлӑ çитерет. Унӑн лирикинче тӑван çӗр-шыв, çут çанталӑк, ялти пурнӑç паллӑ вырӑн йышӑнать, çавӑн пекех юрату лирики те айккинче юлмасть. Ку тарана çитиччен поэмӑсемпе сӑвӑсем, статьясен пухнисем, куçару ӗçӗсем 5 кӗнекере кун çути курнӑ. Вырӑссен паллӑ поэчӗсен А.С. Пушкинӑн, М.Ю. Лермонтовӑн, А.А. Блокӑн, С.А. Есенинӑн сӑввисене чӑвашла куçарса пичетленӗ.

Пирӗн ентеш, Раççей Федерацин Писательсен союзӗн членӗ Василий Григорьевич Галкин, 2013 çулхи нарӑс уйӑхӗн 13-мӗшӗнче пурнӑçран уйрӑлса кайрӗ. Йывӑр тӑпри çӑмӑл пултӑр.



Леонид Матвеевич Лялькин 1936 çулхи июлӗн 2-мӗшӗнче Патӑрьел районӗнчи Тӑрӑн ялӗнче çуралса ӳснӗ.

1954 çулта Патӑрьелӗнчи педучилищӗрен вӗренсе тухсан, икӗ çул хушши ялти библиотекӑн пӗрремӗш заведующийӗ пулса ӗçлет. Стена хаçачӗсем, боевой листоксем кӑларса тӑнӑ, вырмапа çураки вӑхӑтӗнче ӗçлекенсем патне тухса калаçусем ирттернӗ, агитбригада йӗркеленӗ. «Ленин çулӗпе» нумай тиражлӑ хаçата кӑларса тӑма пулӑшнӑ, редколлеги членӗ пулнӑ.

Л.М. Лялькин 1956 çулта Алтай крайне çул тытать.

Унти шкулсенче ачасене 3 çул вĕрентнĕ хыççăн тăван яла таврăнать, шкула вырнаçать. Кунта вăл вырăс чĕлхи, рисовани, музыка предмечĕсене вĕрентетчĕ. Ĕçленĕ хушăрах куçăмсăр майпа Чăваш педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Паянхи кун та астăватăпха, Леонид Матвеевич, пирĕн вĕрентекен пулнă май, пире, 7–8 классенче вĕренекенсенчен хор йĕркеленĕскер, ялсене концертсемпе илсе çӳретчĕ. Ялти çамрăксенчен художествăлла пултарулăх ушкăнĕ йĕркеленинче те унăн тӳпи пысăк пулнă. Сывлăхĕ япăхланнипе вăл 1981 çулта шкулта вĕрентме пăрахать. Çапах та Леонид Матвеевичăн çамрăк чухнехи пекех (60 çул хушши) ялкор пулнă май, сăвăсемпе статьясем район хаçатĕнче тăтăшах çапăнса тухаççĕ. Пирĕн вĕрентекен сăвăç кăна мар, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор-юрăç тата хор дирижерĕ, педагогика ĕçĕн ветеранĕ. Леонид Матвеевич 500 яхăн сăвă çырнă, 100-е яхăн юрă кĕвĕленĕ. Вăлах районти конкурса хутшăнса район гимнĕн сăмахне те, кĕввине те çырнăччĕ.

Л.М. Лялькин хайлавĕсенче тăван çĕршыва, чăвашлăха, тăван яла, аннене чĕре патне илсе юратни уйрăмах палăрать. Çавăнпа та унăн пĕр-икĕ сăввине те пулин çак йĕркесем çине вырнаçтарса вулакан патне çитерес килет.

Тăван ялăм ялан асăмра (сăвва кĕскетнĕ – Д.К.).

Эп çуралнă кĕтес, тăван енĕм –
Тăрăн ялĕ ларать ман умра.
Хăй патне йыхăрать тăван килĕм.
Тăван ялăм, эс ман асăмра.

Сăрт çинче капăр шкул,– куç илеймĕн,–
Çунатланнă вĕçсе каясла.
Авалхи ват чиркӳ – ял илемĕ
Чан сасси янăрать таврара.

Ытарма çук сана, тăван ялăм,
Йăмрасем хумханаççĕ çилпе.
Кĕркунне урамсем пит янравлă
Шурă хур, кăвакал сассипе.

Улăх тăрăх юхать Пăла шывĕ,
Çут хĕвел çутипе ялтăрать.
Ку йăлтах тăван ен,– ман çĕршывăм,
Чунăма ачаран тыткăнлать.

Мухтанатăп санпа, тăван ялăм,
Пархатарлă ĕçчен çыннусем.
Кунсерен хушăнать ман вăй-халăм,
Асăмрах тăван ен çутисем.

Анне чĕри

Мĕнле чăтан-ши эс, анне чĕри
Мĕнле тӳсен-ши? Эс лăпкă та вĕри.
Чунра, тен йывăр – пурпĕр вашават,
Кашни тăваншăн ырă, тарават.

Санпа, тен, юнашар пурнатпăр-и,
Пин çухрăмран килсе çитетпĕр-и,–
Кашни чĕри пĕр харăс тапнине
Туятăн эсĕ, ытарми анне.

Чĕрепеле туятăн ачуна,
Нуша курса ӳстернĕ ывăлна,
Кашни ачу патне сукмак хыван,
Чи кирлĕ, ăшă, ыр сăмах тупан.

Эпир кăшт пăрăнсассăн чăн çултан,
Эс хуйхăрса вĕри вутпа çунан.
Е халăхра ачу ыр ят тупсан,
Çунатланан, ача пек савăнан.

Нихçан ан ватăл, ан чирле, Анне,
Пуçтар пире килти çунат айне.
Чĕрӳ ăшши ан сӳнтĕр ĕмĕрне,
Пилле, упра хăвăн ачусене.

Леонид Матвеевич хайлавĕсен пуххи тахçанах уйрăм кĕнекепе тухса вулакан патне çитмелле. Пирĕн пултарулла ентешĕн сăвăсенчен тăракан кĕнеки çывăх вăхăтра кун çути курса вулакан патне çитес шанчăк пур.

Михайлов Юрий Николаевич журналист, 1966 çулта Кĕçĕн Патăрьелĕнче çуралса ӳснĕ. Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Журналист ăсталăхне вăл Пушкăрт Республикинчи Пелепей районĕнче тухса тăракан «Малалла» хаçат редакцинче туптанă. Унта вăл редактор çумĕ пулса тăрăшнă.

1990 çултанпа пирĕн ентеш асăннă республикăра «Урал сасси» хаçатăн тĕп редакторĕ. (*Патăрьел район энциклопедийĕнчен, 143 стр.*)



Валентина Петровна Ситова 1960 çулхи авăн уйăхĕнче Кĕçĕн Патăрьелĕнче çуралса ӳснĕ. Шкултан вĕренсе тухсан çамрăк хĕр Шупашкара çул тытать, пир-авăр комбинатне ĕçе вырнаçать. Çав вăхăтранах ăна артистка пулас ĕмĕт канăç паман. Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче çамрăксене артиста вĕренме кайма конкурс уçăлать. Çак конкурс витĕр тухнă чухне Мускав специалисчĕсем пирĕн ентешĕн пултарулăхне асăрхаççĕ. Çапла вара Валентина тĕп хулари М.С. Щепкин ячĕллĕ театр училищине вĕренме кĕрет. Çак училищĕрен вĕренсе тухсан В.П. Ситова 1983 çулта Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче выляма пуçланă. Валентина

Петровна аса илнĕ тăрăх ăна пĕрремĕш хут В.Беловăн «Çутă шыв хĕрринче» спектакльти тĕп роле выляма çăмăл пулман. Пысăк опытлă, пултаруллă артистсенчен нумай вĕреннĕ вăл. Артисткăн уйрăм пьесăри хăй юратнă А.Пăрттан «Турă пӳрмен юрату» пьесинчи Русалина рольне палăртмалла.

В. Ситова малтанхи хут театр сцени çине тухнăранпа паянхи кунччен миçе спектакль-пьесăри сăнарсене калăпламан-ши, мĕн чухлĕ чăваш çыннине савăнтарман-хумхантарман пуль хăйне шанса панă рольсене ăста вылянипе?

Валентина Петровна калăпланă рольсене хамăр республикăра кăна мар, унăн тулашĕнче те пысăк хак параççĕ. Критиксемпе журналистсем Хусан тата Ярославль хулисенчи фестивальсенче А. Тарасовăн «Инçет телей çути» пьесинчи Лисук рольне ăста вылянине шута илнĕ. Ахалтьен мар пуль ĕнтĕ ăна 1998 çулта Раççей Федерацийĕнчи театр искусствин Патшалăх премине пачĕç.

Сцена искусствинчи çитĕнӳсемшĕн В.П. Ситовăна 1998 çулта **«Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ»**, 2005 çулта **«Чăваш Республикин халăх артисчĕ»** хисеплĕ ятсене панă.

Кăçал 2013 çулта Валентина Петровна театр сцени çине тухса пĕрремĕш роле калăплани 30 çул çитет. Çавăн пекех К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академийĕн драма театрĕ нарăс уйăхĕн вĕçĕнче 95 çул тултарать. Çак паллă кунсене халалласа асăннă театрти паллă артистсемпе пĕрле В.П. Ситова ентешĕсем патне Патăрьелĕнчи Культура кĕрменне килчĕç. «Василисса кин кĕртет» спектакльти тĕп роле – Василиссана вăл питĕ ăста выляса хăйĕн артист пултарулăхне куракансене кăтартса савăнтарчĕ. Залра туллиех пуçтарăннă театра юратакан халăх спектакль пĕтсен тав туса артистсене тăвăллăн нумай вăхăт хушши алă çупса сцена çинчен антармарĕ.

Валентина Петровна малашне те Юхма енне ытти

спектакльсемпе килме шантарчĕ. Эппин, ăна сцена ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тума, спектакльсенчи рольсенче артист пултарулăхне кăтартма çирĕп сывлăх та чăтăмлăх, çемьере юрату, телейлĕ кун-çул сунар.



Александр Самакин хăйĕн ентешне – Чăваш Республикин халăх артисткине, Раççей Федерацийĕн Патшалăх премин лауреатне Валентина Ситована юбилей ячĕпе саламлать. 2010 ç.

Тăрăн ял тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ çар (запасри) офицерĕсем

Тăрăн ялĕнчен:

1. Алексеев Иван Иванович 1921 çулта çуралнă, майор
2. Илехметов Иван Григорьевич (1924–2001 ç.ç.), аслă лейтенант
3. Илехметов Михаил Александрович 1925 ç., майор
4. Кошкин Петр Николаевич 1921 ç., майор
5. Кошкин Николай Николаевич 1924 ç.ç., кĕçĕн лейтенант
6. Крылов Федор Иванович (1915–2012 ç.ç.), майор
7. Лялькин Иван Александрович (1917–1942 ç.ç)., аслă лейтенант, вăрçăра вилнĕ.
8. Лялькин Матвей Никитич (1903–1944 ç.ç.), аслă лейтенант, вăрçăра вилнĕ.
9. Мидаков Александр Александрович (1923–1943), кĕçĕн лейтенант, в.в.
10. Михайлов Зинон Гаврилович (1916–1942), кĕçĕн политрук, в.в.
11. Угасев Иван Николаевич (1922–2005 ç.ç.), лейтенант
12. Сапожников Николай Александрович, (1910–1945 ç.ç.), лейтенант, в.в..
13. Алексеев Анатолий Михайлович, 1947 ç.ç., полковник
14. Илеменов Борис Владимирович, 1942 ç.ç., подполковник
15. Шекеев Александр Александрович, 1953 ç.ç., майор
16. Ялуков Николай Васильевич, 1960 ç.ç., çар летчикĕ, капитан
17. Кондратьев Юрий Аркадьевич, 1962 ç.ç., капитан
18. Сорокин Федор Петрович, 1962... ç.ç., капитан



Анатолий Михайлович Алексеев 1947 çулта Тăрăн ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1965 çулта Патăрьелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухсан Тюменьри çар-инженер училищине вĕренме кĕрет. Унтан вĕренсе тухнă Совет çарĕн офицерĕ хăй илнĕ специальнăçĕпех малалла вĕренме шутлать.

Анатолий Михайлович 1972 çулта В.В. Куйбышев ячĕпе тăракан çар-инженер академинчен вĕренсе тухать. Совет çарĕнчи тĕрлĕ должноçсенче 33 çула яхăн хĕсметре тăрса, вăл расчет начальникĕн пулăшуçинчен тытăнса 49-мĕш арминчи штаб службин начальникĕ должноçне çитет.

А.М. Алексеева çар службин тĕрлĕрен медалĕсемпе наградăланă. Отставкăри полковник Краснодар крайĕнче çемйипе пурăнать.

Кĕçĕн Патăрьелĕнчен:

1. Ситов Федот Александрович (1914–1944 ç.ç.), гвардии майор, вăрçăра вилнĕ
2. Михайлов Максим Александрович (1913–1943 ç.ç.), лейтенант, в.в.
3. Михайлов Илья Александрович (1915–.....ç.ç.) капитан
4. Смирнов Карп Александрович (1913–1942 ç.ç.), лейтенант, в.в.
5. Сидоров Никон Александрович, 1934 ç.ç., капитан
6. Михайлов Илья Алексеевич, 1951 ç.ç., подполковник
7. Соловьев Николай Кириллович, 1953 ç.ç., подполковник

8. Антонов Юрий Витальевич, 1968 ç.ç., 2-мĕш рангри капитан

9. Платонов Николай Агентьевич, 1937 ç.ç., инженер-капитан

10. Рубцов Валерий Николаевич, 1941ç.ç., аслă лейтенант

11 Илюткин Вячеслав Александрович, 1960 ç.ç., 3-мĕш рангри капитан

12. Лампасов Николай Васильевич, 1941 ç.ç., аслă лейтенант

13. Романов Леонид Иванович, 1960 ç.ç., капитан

Треньелёнчен:

1. Иванов Александр Иванович (1924–1944), лейтенант, вăрçăра вилнĕ.

ТĂРĂН ЯЛ ТĂРĂХĔНЧЕ ПУРĂННĂ ТАТА ПУРĂНАКАНСЕН ХУШМА (ПРОЗВИЩЕ) ЯЧĔСЕМ

«Чăвашсем хушшинче ĕлĕк хушма ят вырăнне тăрăхласа, шӳтлесе чĕнекен ятсем питĕ анлă сарăлнă, вĕсем паян та çуралаççĕ. Çынна мĕнле хушма ят парасси унăн унăн сăн-сăпачĕпе кăмăлĕнчен, ĕçĕ-хĕлĕнчен, тыткаларăшĕнчен, уттинчен килнĕ.

Л.П. Сергеев «Чăваш сăмахĕ» кĕнекере çырулăх сарăлнине пула хушма ятсене вырăсла куçарса е вырăсла формара çырса чăвашсем хушаматсем тунă тесе ăнлантарать (Шăнкăрч – Скворцов, Мулкач – Зайцев, Шăпчăк – Соловьев, Кушак – Кошкин, Тăрна – Журавлев).

Çын ăçта, мĕн ĕçленине кура та хушма ятсем панă иккен, вĕсенчен вара хальхи хушаматсем пулса кайнă имĕш (Пчельников, Попов, Мясников, Портнов).

Треньелĕнче хушма ят йышлă, хăшĕсем ламран лама куçса пыраççĕ, теприсем çĕнĕрен çуралаççĕ».

В.Д.Алексеева ал çырăвĕнчен.

Тăрăн ялĕпе		*Кĕçĕн Патăрьел*	*Треньел*
1. Катăркас	41. Сатвари	1. Паланччă	1. Армян
2. Упа	42. Лявкка	2. Маркис	2. Скорпион
3. Хĕлипка	43. Люскă	3. Паклашкă	3. Шартти
4. Куньккa	44. Лаврук	4. Пĕремĕк	4. Майор
5. Илюр	45. Пăлунтăр	5. Кушак	5. Капитан
6. Ăтăр	46. Кăрт	6. Мики	6. Лакăм
7. Кăрăç	47. Шурпуç	7. Мучи	7. Шапа
8. Ути	48. Мăнюк	8. Киркка	8. Шĕпĕн
9. Шимккă	49. Мăхти	9. Абзи	9. Тăрна
10. Нимуй	50. Артист	10. Мăхти	10. Улпут
11. Кантĕр	51. Краça	11. Шемей	11. Шĕвĕр
12. Землемер	52. Шӳреке	12. Негр	12. Хуралкка
13. Пассир	53. Шекки	13. Тарзан	13. Батя

14. Пежир
15. Чышкă
16. Шаккаман
17. Михет
18. Кушак
19. Тямик
20. Курпун
21. Тăпăр
22. Селевер
23. Сухан
24. Кукша
25. Поворот
26. Путап
27. Чукăн
28. Шĕвĕр
29. Куттус
30. Мамай
31. Кăтра
32. Вирьял
33. Калюк
34. Савăçка
35. Ярмуш
37. Мĕкĕте
38. Армян
39. Чăлах

54. Лаххан
55. Кăсăл
56. Йĕс
57. Аккăн
58. Шăмăсăр
59. Мерчен
60. Катăк
61. Титти
62. Чăпай
63. Сариван
64. Шалун
65. Чернăй
66. Катир
67. Тяпик
68. Емелькке
69. Детей
70. Жигал
71. Чĕлĕм
72. Пăшатан
73. Муçур
74. Çăпата
75. Шемей
76. Ваçильи
77. Хватей
78. Кешап

14. Пацан
15. Крахьяна
16. Илькка
17. Шăши
18. Вăрăм
19. Вĕçкĕн
20. Король
21. Кăвакал
22. Композитор
23. Полковник
24. Мишанкка
25. Саксаул
26. Паттян
27. Цыган
28. Майор
29. Титя
30. Тиха
31. Куссуй
32. Шапа
33. Гагарин
34. Чебурашка
35. Цыбуля
36. Шемей
37. Сухан
38. Батя

14. Вĕлтти
15. Пауша
16. Кртьăк
17. Ханша
18. Прапорщик
19. Мăтьăк
20. Катир
21. Харис
22. Гуливер
23. Пăштик
24. Пратяк
25. Пашалу
26. Шăнкăрч
27. Салма
28. Шăпчăк
29. Муçка
30. Хăлха
31. Някатя
32. Тута
33. Качака
34. Йăкăрт
35. Мăтю
36. Лимкка
37. Чинкам
38. Метек

ЯЛСЕНЧИ ПЁТНЁ
ТАТА ÇЁНЁРЕН ХУТШĂННĂ ХУШАМАТСЕМ

Тăрăн ялёнче:

Арбузов
Добронравов
Шухайкин
Миронов
Телегин
Саперов
Матвеев
Павлов
Казаков
Михайлов
Лаханов
Шалунов
Жигалов
Сапожников
Вирьялов
Кудряшов
Деряков
Казанцев

Кĕçĕн Патăрьелёнче:

Лагерев
Юнусов
Захаров
Груздев
Симулин
Архипов
Каллин
Александров
Куприянов
Мессе
Жаворонков
Мясников
Иванов
Васюткин
Капитонов
Ларкин

Треньелёнче:

Вьюшкин
Долматов
Прохоров

Максимов
Акимов
Иванов
Волков
Митрофанов
Скрипачев
Герасимов
Суйманов
Гордеев
Козлов

Владимиров
Жидков
Лысов
Немцев
Рябов
Федоров
Яковлев
Поспелов

Чайков
Носов
Лапшин
Пилишников
Дмитриев
Федотов
Такмаков
Карзаков
Кириллов тата ыт.

Ялсене килнĕ çĕнĕ хушаматсем:

Лепешкин
Егоров
Мыльников
Патшин
Тимофеев
Волков

Эриванов
Матросов
Бульба
Горшков
Токсаров

Лепешкин
Игнатьев
Фомин
Осипов
Львов

Логинов
Карпов
Порфирьев
Раськин

Юрмин
Кураков тата ыт.

ТОПОНИМИКА – ГЕОГРАФИ ОБЪЕКЧĔСЕН, ÇЫРМА-ÇАТРАСЕН, КӲЛĔСЕМПЕ ЮХАН ШЫВСЕН ЯЧĔСЕМ ТАТА ЫТ. ТЕ

Треньел таврашĕнче:

1. Гриша варĕ (Гриша ятлă çын шăнса вилнĕ).

2. Колхоз пусси (хальхи ачасен садикĕ хыçĕнче лаша ферми пулнă).

3. Матвей сăрчĕ (Матвей хуçалăхĕ пулнă).

4. Йĕм пĕççи – икĕ çырма, пĕри ялăн хĕвел тухăç енчен, тепри кирпĕч завочĕ пулнă вырăнтан, пĕве патне тухаççĕ.

5. Тĕмеске – çав вырăнта ĕлĕк Треньел, Катек, Йăлăм çамрăкĕсем вăййа тухнă, нумай тĕслĕ курăк ӳснĕ. Ыхра юхан шывне пĕвелесен тĕмеске пĕве варрине юлса шывпа хупланнă. Типĕ çул пĕвере шыв чаксан тĕмеске шывран тухса утрав варрине юлать.

6. Аслă çул – ĕлĕкхи аслă çул Йăлăм ялĕ енчен пырса маларах асăннă тĕмескен çумĕнчен иртсе Канаш еннелле тăсăлнă.

7. Çамрăклăх утравĕ – пĕве çинчи утрава ял çамрăкĕсем иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче тĕрлĕрен йывăç лартнă. Çыран енчен выльăх-чĕрлĕх утрав çине кĕрсе йывăççене хуçса пĕтересрен карта тытнă,

8. Завод кӳлли – кирпĕч завочĕн хĕвел тухăç енче бульдозерпа чавса кӳлĕ тунă, унта пулă ĕрчетме янă.

9. Тăм пусси – кирпĕч завочĕ валли çав вырăнта тăм кăларнă.

10. Тăрна çырми – Журавлевсен хуçалăхĕ çумĕнчен çырма пĕвене тухать.

11. Чутар варĕ, 12. Хурăн вар, 13.Тарăн вар.

14. Ыхра Çырми юхан шывĕ. Çак пĕчĕк юхан шыв Ишек вăрманĕнчен тытăнса Ыхра Çырмипе Треньел ялĕсен кăнтăр енĕпе юхса иртсе Катек ялĕ еннелле каять. Треньел тĕлĕнче ăна пĕвеленĕ.

15. Пайкет çырми, 16. Качака кӳлли.

17. Ёне карти – ёнесене шыв ёçме тапӑра Ыхра Çырми юхан шывне пёвеличчен ёлёкхи Аслӑ çул иртекен вырӑна антарнӑ.

18. Тёттём пай. 19. Çирёк. 20. Çинçе çерем. 21. Чулкаç. 22. Упрушнай.

23. Татмӑш çырми – Татмӑш ялне каякан çултан инçе мар хирте вырнаçнӑ.

24. Чикё – Ыхра Çырмипе Треньел ялёсем хушшинчи чикёре йывӑçсем лартса тухнӑ. Ялӑн тепёр енче (хёвел тухӑç) Треньелпе Катек ялёсен хушшинчи хирте чикёре çырма пур.

25. Матюк çырми. 26. Елюк çырми. 27. Униç аппа çырми.

28. Салтак масарё. Ыхра шывё хёрринчи Йӑлӑм çёрё çинчи тёмеске. Унта пирвайласа П.Е. Крепков отрядёнчи паттӑр салтаксене пытарнӑ.

Тӑрӑн таврашёнче

1. Апсулхи – çак ят Хапӑс улӑхё сӑмаха кёскетсе каланипе пулса кайнӑ пулмалла. Темиçе ёмёр каялла Хапӑс ятлӑ пуян арçыннӑн Тӑрӑн ялён хёвел анӑç енче, Пӑла юхан шывёнчен инçе те мар, хирте улӑх пулнӑ. Ваттисем каланӑ тӑрӑх, 1920–30 çулсенче те çав улӑх варринче вырнаçнӑ кӳлёре пулӑ, кайӑк-кёшёк нумай пулнӑ, çуллахи уй-хир ёçёсенчен пушансан ял çыннисем лашасене шыва кёртнё. Пурӑна киле çав кӳлё типсе ларнӑ, лапам анчах тӑрса юлнӑ. Пӑла хӑйён çулне улӑштарса халь Апсулхи урлӑ юхса выртать. Çав вырӑнтан инçе те мар, Еншик ялё çывӑхёнче, хыр вӑрманё ешерет.

2. Киремет вырӑнё – Тӑрӑн таврашёнче киремет йывӑççи, çак ялтан Чӑваш Ишеке каякан çул айккинче пулнӑ. Ёлёк-авал унта пырса ял çыннисем киремете чӳк туса япаласем, укçа-тенкё, савӑт-сапа, выльӑх-чёрлёх пусса панӑ. Пурӑна киле йывӑç çёрсен, хирте суха тунӑ вӑхӑтра çав вырӑна та сухаласа пётернё.

3. Арман лаппи – Тăрăн ялĕнчи анаткасран кăнтăр енче, Пăларан çурçĕр енче вырнаçнă çерем. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулсенччен Патăрьелĕнче пурăннă Вотяков пуянăн Пăла çинче çак вырăнта пĕр шыв арманĕ пулнă.

4. Ехрем çырми – Арман лаппинче пĕвеленĕ çырма, е канав çине ĕлĕкхи вăхăтра Ехрем ятлă çын шывармань лартса ĕçлеттернĕ.

5. Куршăн çырми – Магистральная тата Кăнтăр урамĕсем урлă К. Михеев хуçалăхĕ çумĕнчен Арман лаппи патне тухать.

6. Йăкăнат çырми – Тăрăн фермин хĕвел анăç енчен пуçланать те, Солдатов Владимир пахчи çумĕнчен иртсе кайса Улăх (Луговая) урамĕпе улăха тухать. Ăна Йăкăнат ятлă арçын ячĕпе каланă.

7. Чураквар – Тăрăн ялĕн хĕвел анăç енче вырнаçнă çырма П.П. Крылов хуçалăхĕ умĕнчен иртсе урампа кăнтăр еннелле тăсăлса Пăла юхан шывне тухать.

8. Шай лаппи – Тăрăнти чиркӳ патĕнчен П.О. Воробьевсен хуçалăхĕ умĕнчен Улăх урамĕпе кăнтăралла Пăла енне утсан Шай лаппи улăхĕ патне тухма пулать.

9. Хăйăрлă – Пăла хĕрринче Апсулхи лапамĕн хĕвел тухăç енчи хăйăрлă вырăн. Иртнĕ ĕмĕрти иккĕмĕш çурринче те çав лапамра каюрасем ĕрченĕ.

10. Саранча – ĕлĕк-авал шурлăх пулнă вырăн. Хальхи вăхăтра та сухаламан айлăмра Ыхра Çырмин кăнтăр, çавăн пекех Шупашкара каякан асфальт çулăн сулахай енче 300–400 метрта вырнаçнă çаран. Ваттисем каланă тăрăх иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче çăва тухсан кăнтăр енчен вĕçсе çитнĕ саранча ушкăнне çав вырăнта тупса тĕп тунă.

11. Ăтăркасси (Площадь Советов) – çак сăмах шывра пурăнакан чĕрчун Ăтăр ятран тухса кайнă. Çак вырăнтан инçе те мар иртсе каякан Пăла юхан шывĕнче ĕлĕк ăтăрсем ĕрченипе çак касса çапла калама пуçланă пуль.

12. Пăла юхан шывĕ – Патăрьел районĕнчи чылай ял çумĕпе юхса выртать. Эпир ача-пăча чухне çуллахи шăрăх кунсенче шывра сахал мар чӳхеннĕ, çӳллĕ çыранран пуç хĕрлĕ чăмнă. Выränĕ выränĕпе шыв тарăнăш 2–2,5 метра çитетчĕ.

«Пăла» ят тĕпчевçĕ-таврапĕлӳçĕсем шучĕпе (сăмахран – И.С. Дубанов), тутар чĕлхинчи «буа» сăмахран улшăнса чăваш чĕлхине пĕве сăмахпа куçарăнса кĕнĕ. Ĕлĕк-авалтан çак юхан шыва тăршшĕпех темиçе выränта пĕвеленĕ, шывармансем лартса çăнăх та авăртнă пуль пирĕн мăн асаттесем. Пăла юхан шывĕ Йĕпреç районĕнчи Липовка ялĕ çумĕнчи вăрмантан тытăнса Патăрьел районĕнчи Пăлапуç Нурăс çывăхĕнчен иртсе каять. Малалла Первомайски, Тикеш, Тăрăн, Йăлăмпа Патăрьел тата ытти ялсем çумĕнчен иртсе Елчĕк районĕ урлă Тутарстанри Сĕве юханшывне юхса кĕрет. Çапла вара Чăваш Республикинчи виçĕ район урлă юхакан Пăла тăршшĕ 92 çухрăма, пĕтĕмпе 127 çухрăма çитет. Пĕр ĕмĕр каялла Пăла хальхи пек Тăрăнпа Йăлăм çумĕнченех юхса выртман. Патăрьел ялĕн хĕвел анăç енче вырнаçнă Юхма касси çывăхĕнчен иртсе хĕвел тухăçнелле иртсе кайнă çак юханшыв. Шыв юппи çулсерен çурçĕрелле куçса пынă май асăннă икĕ ял çывăхне тата Патăрьелĕнчи Канаш урамĕ хĕрринех çыран ишĕлсе çитнĕ. Çавна пула Патăрьел çывăхĕнчи Пăлана тӳрлетсе ячĕç пĕр виç-тăватă çул каялла.

Кĕçĕн Патăрьел таврашĕнче:

1. Киремет выränĕ – Кĕçĕн Патăрьелĕнчи (Йăлăмри) Çул хĕрри урамĕнчен Катек ялне тухса каякан çул айккинче ĕлĕк-авал Киремет йывăççи ларнă. Унтан инçе те мар çырма урлă пĕчĕк кĕпер хунă.

2. Кайăк купарчи – Йăлăмран Катеке каякан çулпа пĕчĕк кĕпер патне çитсен сад енне пăрăнас пулать. Çав

садăн кăнтăр хăвел тухăç енче çаврака тĕмеске пур. Ячĕ вара, кайăк купарчи евĕр пулнипех-ши, халăх хушшинче çаван пек сарăлнă.

3. Укахви кӳлли – ялăн хĕвел тухăç енче вырнаçнă Крепков палăкĕ çумĕнчен иртсе Треньелне каякан çулпа хире тухсан (1967 çулччен Канаша çав çулпа Треньел ялĕн хĕвел тухăç енчен иртсе çӳренĕ) Укахви ятлă хĕрарăм ятне панă кӳлĕ пулнă. Ваттисем астăваççĕха, çак хирте сухаласа тыр-пул аксан, унта выльăх кĕртмен. Çавăнпа та хир варринчи кӳлĕ вырăнĕнче çаран пулса кайнă, çав вырăнта курăк лайăх ӳснĕ, ял çыннисем выльăхсем валли çулса утă хатĕрленĕ. Юлашки çулсенче çарана сухаласа пĕтернĕ, ун вырăнне тырпул акса çитĕнтереççĕ, çавăнпа кӳлĕ вырăнĕ те юлман.

4. Ишĕлекен çырма пуçĕ – Треньелĕн хĕвел тухăç пайĕнче Ыхра çырмин юханшывне ишĕлсе тухакан çырма. Çакăн пек ятлă çырма пуçĕ Тăрăн çĕрĕ çинче те пур.

5. Саринке çырми – Йăлăмри Хветĕр Çитта урамĕнчи Тихонова Вера хуçалăхĕ умĕнчен Пăлана çурса анакан çырма.

ВЫРĂСЛА-ЧĂВАШЛА ÇУЛТАЛĂКРИ УЙĂХ ЯЧЁСЕМ

Январь – кăрлач	июль – утă
февраль – нарăс	август – çурла
март – пуш	сентябрь– авайн
апрель – ака	октябрь – юпа
май – çу	ноябрь – чӳк
июнь – çёртме	декабрь–раштав

Кёскетнё сăмахсен списокё

РГАДА – Российский государственный архив древних актов
ЧГИА – Чувашский государственный исторический архив
ЦГА ЧР – Центральный государственный архив Чувашской Роеспублики
ЧР ТПА – Чăваш Республикинчи тёп патшалăх архивё
ЧГИГН – Чувашский государственный институт гуманитарных наук
НА РТ – Национальный архив Республики Татарстан
ГАУО – Государственный архив Ульяновской области
УОПА – Ульяновск облаçёнчи патшалăх архивё
РЁК – Районти ёç тăвакан комитет
ХАО – Хупă акционерлă общество
МТС – машино- тракторная станция
ед.хр. – единое хранение
ф. – фонд
оп. – опись
д. – дело
л. – лист

Усă курнă литературăпа ытти материалсем

1. Смирнов А.П. Древняя история чувашского народа. Чебоксары, 1948.

2. В.Д. Димитриев. 1) Чувашские исторические предания. Чебоксары, 1993. 2) XIV ĕмĕр вĕçĕнче тата XV ĕмĕр пуçламăшĕнче Атăлçи Пăлхар çĕрне çаратса тустарни, «Хыпар» кĕнеки, 23/3№, Шупашкар, 1997, çĕртме, 21.

3. В.Ф. Каховский. Происхождение чувашского народа. Чебоксары, 2003.

4 В.В. Николаев. История предков чувашей XXX в. до н. э. – XV в. н. э. Чебоксары, 2005.

5. Сборник историко-статических материалов по Симбирской губернии. Симбирск, 1868.

6. История Чувашии новейшего времени: книга I. Чебоксары, 2001.

7. История Чувашии новейшего времени: книга II. Чебоксары, 2009.

8. Л.Ю. Браславский. Православные храмы Чувашии, Чебоксары, 1995.

9. Книга памяти жертв политических репрессий, тома 1, П.Чебоксары, 2009.

10. Г.Н. Ксенофонтов. Долгожители Чувашии. Чебоксары, 2009.

11. Крестьянское восстание 1921 года в Чувашии: Сборник документов, Чебоксары, 2009.

12. Николаев В.Н. Тури чăвашсем. Çĕрпӳ, 1973.

13. Моисеев Ю.Ф., Пахомов И.И., Табаков В.А. Патăрьел: ĕнер тата паян, Шупашкар, 2002.

14. Раськин Л.Н. Первопроходцы и последователи (исторические очерки). г.Чебоксары, 2005.

15. Батыревская энциклопедия I и II тома, Чебоксары, 2005 и 2010.

16. Елчĕк тăрăхĕ (ялсен историйĕ, халăх кун-çулĕ, çынсен пурнăçĕ) Шупашкар, 2002.

17. Справочник административно-территориального деления Симбирской губернии – Ульяновской области за 1648–1985 гг. (Государственный архив Ульяновской области).

18. А.Н. Зерцалов Материалы по истории Симбирского края XVII и XVIII в.в., издание Симбирской Губернской уче-

ной Архивной комиссии под ред. Красовского. Научно-общественная библиотека, г. Ульяновск.

19. В.Э. Красовский. Хронологический перечень Симбирской губернии 1372–1901 г.г. (найти в этой же библиотеке).

20. Макаров М.П. «И.Н. Ульянов и просвещение чуваш» ЧГИЗ, Чебоксары, 1958.

21. Симбирская земская газета за 28.03.1882 г. XVII Очередное Буинское уездное собрание (Ульяновская общественно-научная библиотека).

22. В.В. Владимиров (Наперсткин) Из истории Батыревского района и Юго Востока Чувашии. Село Шемурша, 1997.

23. И.С. Дубанов. Географические названия Чувашской Республики (краеведческий словарь). Чуваш. кн. изд-во, 2010.

Хаçатсем:

1. «Чувашский край», 14.03.1922 г. Госархив печати ЧР.

2. «Красная Чувашия», 16.04.1933 г. Национальная библиотека ЧР.

3. «Хыпар».

4. «Советская Чувашия».

5. Патăрьел район хаçачĕ «Паянхи сас» – «Авангард», 1931–2012 çç.


6. Симбирская земская газета за 28.03.1882 г.

Тупмалли

В. Станьял. Тĕрĕслĕхрен хакли çуках 4
Ум сăмах 10

Ăçтан эпир, камсем эпир? 13
Ылтăн Урта пусмăрĕнче. Хусан ханстви, ăна вырăс патшалăхĕпе пĕрлештерни 16
Юхма енчи Тăрăн ял тăрăхĕнчи ялсем пуçланса кайни 24
Пирĕн таврари халăхсене православи тĕнне кĕртни. Пирĕн енчи малтанхи чиркӳсем 41
Ялсенче удельни шкулĕсемпе училищĕсем уçаççĕ 44
XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ: Столыпин çĕр реформи. Революци. Граждан вăрçи. Советсем йĕркеленни 55
Пирĕн таврара хĕрлисемпе шуррисем çапăçни çинчен аса илӳсем. Хĕрлĕ çар комиссарĕ П.Е. Крепков 66
Чăваш Автономи облаçне, Патăрьел вулăсĕпе уесне йĕркелени. Выçлăх çулĕсем 86
Чăваш Автономи облаçĕн административлă территори ыйтăвĕсем. Уес центрне Йĕпреç станцине куçарни 98
Чăваш Автономи Республикине йĕркелени. Уессемпе вулăссем вырăнне – районсем 102
Вăтăрмĕш çулсем: колхозсем йĕркелени. Кулаксемпе чухăнсем – камсем вĕсем? 107
Политика репрессийĕн синкерлĕ тапхăрĕсем 151
Партипе Совет органĕсем тĕн организацийĕсене хирĕç пуçарнă юхăм 166
Хаяр вăрçă çулĕсем 206
Вăрçă хыççăнхи йывăр çулсем 249
Пĕрлешӳллĕ вăйпа – малалла 264
Колхозран совхоза куçни 305
1990–2012-мĕш çулсем: политикăра – влаçри улшăнусем, экономикăра – реформа. Колхозсемпе совхозсем саланаççĕ. Кооперативсен-агрофирмăсен малалли çул-йĕрĕ 311

Тăрăн ял тăрăхĕнче çуралнă, пурăннă, пурăнакан, тĕрлĕ ĕçре палăрнă пирĕн ентешсем 348
Шкул пурнăçĕ. Пире вĕрентекенсем 370
Пирĕн яла пырса кĕрсен... 400
Вĕсем хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçланă (Афганистан – Чечня вăрçисем) 415
Вăрăм ĕмĕрлĕ ял çыннисем 417
Медицина. Культура. Спорт 421
Пирĕн ентешсем – литература, поэзи тата искусство ĕçченĕсем 439
Тăрăн ял тăрăхĕнче пурăннă тата пурăнакансен хушма (прозвище) ячĕсем 454
Ялсенчи пĕтнĕ тата çĕнĕрен хутшăннă хушаматсем 456
Топонимика – географи объекчĕсен, çырма-çатрасен, кӳлĕсемпе юхан шывсен ячĕсем тата ыт. те 457
Вырăсла-чăвашла çулталăкри уйăх ячĕсем 462
Усă курнă литературăпа ытти материалсем 463



Александр Иванович Самакин – кĕнеке спонсорĕсенчен пĕри.

1962 çулхи кăрлач уйăхĕн 16-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăтам шкул вĕренсе пĕтерсен 1989 çулта вăл Шупашкара çул тытать. Шĕкĕр хуламăрта агрегат заводĕнче слесарь-сборщик пулса ĕçлеме тытăнать.

1980–82 çулсенче СССР Хĕç-пăшаллă Вăйăсен сывлăш-десант çарĕнче полк разведкинче хĕсметре тăрать. Салтак тивĕçне пурнăçласа Самакин А.И. Шупашкарах агрегат заводне тавăрнать, унта оператор ĕçĕнчен тытăнса цех маçтăрне çитиччен ӳсет.

1987 çулта вăл Шупашкарти трактор тăвакан завода куçать, маçтăр, юсав цехĕн механикĕ, экономист, ОВК бюро пуçлăхĕ.

1991 çултан тытăнса пирĕн ентеш АООТ «Промтрактор–Брокер» исполнительнăй директорĕ. Александр Иванович ĕçленĕ вăхăтрах И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн экономика факультетĕнчен вĕренсе тухса, аслă пĕлӳллĕ экономист специальнăçне алла илет.

1998 çултанпа вăл индивидуальнăй предприниматель, «Заходи» магазинăн директорĕ, 2006 çултан тытăнса – ООО «Торговый дом» «Заходи» директорĕ.

А.И. Самакин Шупашкар хулинчи депутатсен пухăвĕн виççĕмĕшпе (2001–2005 çç.) тăваттăмĕш (2005–2010 çç.) суйлавсен депутачĕ пулнă.

Александр Иванович республикăри, çавăн пекех тĕп хулари обществăлла пĕрлешӳсенче активлă хутшăнать, йывăра кĕрсе ӳкнĕ çынсене пулăшма тăрăшать.

Библиотека Чувашской народной академии наук и искусств

Коннов Дмитрий Николаевич

Туруновское сельское поселение Батыревского района Чувашской Республики

Исторические очерки

Редактор Алексеева В.Д.
Корректор Логунова П.Л.

Компьютерный набор *Коннова Е.Д.*
Компьютерная верстка *Шутеевой Н.П.*
Дизайн обложки *Дикановой А.С.*


Подписано в печать 24.05.2013. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать офсетная.
Гарнитура Schoolbook. Физ.печ.л. 29,25.
Тираж 500 экз. Заказ № К-94.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 32-33-53, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru.

Батыревский район




План села Туруново




170.8

План деревни Малое Батырево



План деревни Новое Котяково






Nestlé




ГОМСЕЛЬМАШ